К С(Чув)
А94
29918 чув

ПОРФИРИЙ
АФАНАСЬЕВ

# ПУРĂН, ЮРАТУ!



Национальная библиотека ЧР
4-029218

КОНТРОЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР

29218 шув

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

Моргаушская т. З. 1253 Т. 10.0000

ПОРФИРИЙ
**АФАНАСЬЕВ**

# ПУРĂН, ЮРАТУ!

ПОВЕÇСЕМПЕ
КАЛАВСЕМ

Шупашкар
Чăваш
кĕнеке
издательстви
1985

ББК 84 Чув 7
А 94

Обяз. экз.

ПРОВЕРЕНО
20 10 11 ОКТ 2017

29218-чув

...ская
...
БИБЛИОТЕКА
им. ... Горького

**Афанасьев П. В.**

А 94 Пурӑн, юрату! Повеҫсемпе калавсем. Шупашкар: Чӑваш кӗнеке издательстви, 1985.— 256 с.

Хытӑ хупл.: 1 т. 10 п., 10000 экз.

Ҫак кӗнекене кӗртнӗ повеҫсемпе калавсенче хальхи вӑхӑтри ҫамрӑксен пурнӑҫӗпе ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен хавхалануллӑ кӑмӑлпа ҫырса кӑтартнӑ. Ҫав хушӑрах: «Паянхи ырлӑх йывӑрлӑх тӳсмесӗр килмен»,— тесе каласшӑн автор. Ана эпир «Пурӑн, юрату!» повеҫе вуласа тухсан куратпӑр.

**ББК 84 Чув 7**

**А** $\frac{\textbf{4702650000—089}}{\textbf{М 136(03)85}}$ **34—85**

© Чӑваш кӗнеке издательстви, 1985 ҫ.

## АРÇУРИ

Ĕç кунĕ пĕтсе пыратчĕ ĕнтĕ. Сĕтел çинчи хутсене пуçтарас та хамăр бухгалтерпа, Николай Филипповичпа, пĕрик хутчен шахматла выляса илес тесе лараттăм. Кĕтмен çĕртен пӳлĕме секретарь-машинистка килсе кĕчĕ те: «Сире çыру»,— тесе, сĕтел çине хулăн конверт хурса хăварчĕ.

«Тата кам пуçне пырса кĕтĕм-ши çак шартлама сивĕре?»—текелесе, çырăва васкамасăр алла илтĕм. Молдавирен. Районĕ, ялĕ, хушамачĕ çук. Ячĕ ...Ячĕ — Иванна. Иван. Çук — Иванна.

Арçури! Ара, Иванна-Арçури вĕт эсĕ! Çĕр çăттăрах!

Çук, шахматла вылясси те, пӳлĕмре ирĕклĕн пирус мăкăрлантарса ларасси те пулмасть текех. Иванна-Арçури тупăннă! Пурăнать, эппин, тĕнчере. Тĕрĕс-тĕкелех, чипчиперех пурăнать.

Пысăк вольтлă ток пырса çапрĕ-и пуçран, ăна-кăна тĕрткелесе, васкаса пуçтарăнтăм та, çырăва кĕсъене чиксе, урама тухрăм. «Ар-çу-ри, Ар-çу-ри»,— тăнлавра шаккать çак сăмах, унпа çыхăннă кашни асăилӳ, пĕр-пĕриипе ăмăртнă пек, çиелерех те çиелерех тухма тăрăшать...

* * *

Арçурие пуçласа хăçан курнине те, ун ятне хăçан илтнине те калаймастăп ĕнтĕ халĕ, мĕншĕн тесен хама хам астума пуçланă вăхăтранпах çак тĕксĕмрех питлĕ те чăлт-шурă шăллă хĕрачапа пĕрле выляттăм эпĕ. Çакна вара лайăх астăватăп: ытти ачасем пек, Арăслан тесе мар, Руслан тесе чĕнетчĕ вăл мана. Куншăн хĕпĕртеттĕм эпĕ, çак ни вырăс, ни чăваш хĕрачин калаçăвĕ юлташсем хушшинче чыса та, мăнкăмăллăха та ӳстеретчĕ. «А-ах, Руслан, ав мĕнле хитре санăн вырăсла яту»,— çăварĕсене карса, ман çине тĕлĕнсе пăхатчĕç хам пекех çутă çанăллă вĕт-шакăр ачасем. Эпĕ вара сисмесĕрех урамра чи хисеплисенчен пĕри пулса тăтăм. Туяттăм: нимшĕн те мар, Арçурипе çывăх

пулнăран хисеплеççĕ мана урам ачисем. Мĕн кăна тума пĕлместчĕ-ши Арçури! Шыва кĕме кайсан, Елля кукринчи чи çӳллĕ çырантан пуçхĕрлĕ сикесси ним те марччĕ уншăн, ялти чи вăрăм йăмра çинчи курак çăмартине те вăл илсе анатчĕ, вăлах утса пыракан лаша айĕнчен вĕлт çеç чупса тухма пултаратчĕ. Пĕр шутласан, Арçури ятне илме тивĕçлех пулнă пулĕ çав Иванна, вăрçă хыççăнхи лăпкă чăваш ялĕнче çак пĕчĕк те чăрсăр хĕрача хăйне хăй мĕнле тыткалани тĕлĕнтернех ĕнтĕ çынсене. Ҫайран, Арçури пирĕн ялтан тухса кайсан та, чылайччен манмасăр пурăннăччĕ çынсем ăна.

Арçури амăшне эпир Алякка карчăк теттĕмĕр. Ҫăн-кăвак çӳçлĕччĕ вăл, куçĕ хăнчăртарахчĕ. Ачасемпе калаççсах каймастчĕ. Тухса ларатчĕ те картлашка çине чĕлĕм паклаттаратчĕ. Арçури килне эпир, Алякка карчăкран шикленнипех ĕнтĕ, нихçан та кĕрсе курман.

Анчах пĕррехинче манăн кĕмеллех пулчĕ çав çурта.

Юр ларма ĕлкĕрейменччĕ-ха, çырмасем вара шăнса пăрланнăччĕ ĕнтĕ. Шăнкăрч Улатимĕрĕ пире: «Пичче мана йывăç коньки туса пачĕ, эх, сирĕн те пулсассăнччĕ, пĕлетĕр-и мĕнлерех лайăх пулмалла пăр çинче»,—терĕ. Ҫав кунах ман атте Улатимĕр конькине унталла-кунталла çаваркаласа пăхрĕ те пире, Арçурипе иксĕмĕре, тĕпне тимĕр çапса, ик мăшăр коньки ăсталаса пачĕ.

Анчах ярăнса киленесси пулаймарĕ. Ҫырма хĕррине анса пĕр-ик утăм тунăччĕ кăна, малалла хăлаçланма ĕлкĕрнĕ Арçури айĕнчи пăр çатăртатса аванчĕ те, эпир çыран хĕррипелле сикме васканă вăхăтра хĕрача шыва мăй таран кĕрсе ӳкрĕ. Хыпăнса, хăраса, çӳхе пăра çатăрла-çатăрла тытса, çак хăрушлăхран хăвăртрах хăтăлма хăтланчĕ Арçури. Пăр каталсах пычĕ.

— Эй, эсир, пулăшăр!— кăшкăрчĕ тарăхнă Арçури. Шанк хытса тăраканскерсене, пире тинех чун килсе кĕчĕ пулмалла.

— Лерелле мар, кунталла, çыран хĕррипелле çавран, Иванна! Ак сана патак, çирĕпрех тыт!— терĕм те, чĕркуççи таран пăрлă шыва кĕрсе тăрса, Арçури еннелле патак тăсрăм.

Тепĕр самантран иксĕмĕр те çыран çине тухса тăтăмăр. Арçури тăрăх шыв шапăртатать, кăвакарса кайнă ун сăнпичĕ. Ман хамăн та тăла пуртенккесем лăчăртатса тăраççĕ. Хăвăртрах киле çитесчĕ халь, çак йĕп-йĕпе тумтире хывса пăрахса, ăшă утиял айне чăмасчĕ.

— Чупар, Иванна!

Тепĕр самантран эпĕ Алякка карчăкăн тайăлнă çил

хапхи умёнче чаранса татам. Кёрес и, кёрес мар-и?

— Мён эсё?— анланаймасар пахрё ман ҫине Арҫури.— Уру шанса таталать вёт. Атя, кёр хавартрах, мён куттсе таратан.

Шикленсе, тар-тар чётресе, алак урати урла ярса пусрам.

Қам пёлет, тен, ҫаван чух Арҫури шыва кёрсе ӳкмен пулсан е тата вал вахатра ҫыран хёрринче эпё хам пулман пулсан, ял варринчи ҫак лутрарах ҫуртри икё ҫыннан пурнаҫё маншан ку таранччен тупмалли юмах ҫеҫ пулса юлатчё пулё.

Ҫав тарлавсар кун Арҫурипе пёрле Алякка карчак патне кёрсе курман пулсан, хаман ҫак пёчёк телейёме туйса тама та пёлейместёп пуль эпё.

Алак чёриклетсе уҫалчё те, эпё тӳрех Алякка карчака асархарам. Вал тураш кётессинче чёркуҫленсе ларать, пёр вёҫёмсёр тем пашалтатать. Пӳрчё пёчёк, сивё. Кётесре йываҫ кутник, ун ҫине тёрлё саплаксенчен ҫёленё ула-чала утиял витнё. Чӳрече анисем ҫине шыв кӳлленсе ларна. Стена ҫумне ҫапна патасем ҫинче кивё ҫёлёксем, тикётпе варалання шалавар, фуфайка ҫаканса тараҫҫё. Тураш кётессинче... Чим, тураш кётессинче тураш мар, виҫё каччă сане! Чан-чан этемсемех! Пёри, ав, ман ҫине куларах пахать, тепри аллипе тенкел хыҫё ҫине тёреннё, виҫҫёмёшё салтак тумёпе — кара та ҫилёллё. Тураш кётессинче — ҫын санёсем! Иванна, мёне пёлтерет ку?

Эпё тёлённине туйрё пулмалла Арҫури.

— Шап,— терё вал, ятсар пӳрнине ҫёклесе, вара камака хыҫне кёрсе кайрё те йёпе тумтирне хывма васкарё, ҫав вахатрах мана пысак кивё каҫата ыватса пачё.

Ҫавранса та пахмарё пирён ҫине Алякка карчак. Ҫаплах пёр хускалмасар чёркуҫҫи ҫинче ларать хай, пёр вёҫёмсёр пашалтатса калаҫать.

Пӳртре виҫё этем пур пулин те, сём-чёмсёр шаплах тани харатма пуҫларё мана. Тепёр самантран кил хуҫи хёрарамё темёнле урмаш сасапа кёвёлесе макарма тытанчё те, ҫака мана пушшех ҫӳҫентерсе, тар-тар чётретсе ячё.

— Эй, Элексантар, мана пёчченҫёме пăрахса хаварса, хаш ҫулпа утатан?.. Эй, Питтимёр, манан ваталах пепкеҫём, мёншён манса кайран мана, мёншён хыпар тумастан?.. Эсё тата, Сахрун, эс те пулин тавран-ха таван киле, тёнче касса ан ҫӳре текех. Эй, ываламсем, ывалам-сем, кашни кун шантаратар та мана ҫапла, темшён тавранма васкамастар-ҫке. Аҫар та кётсе илеймерё ака сире, мана пёр-пёччен хаварса, вал та пулин парахса кайрё ҫак

тĕнчерен. Тавранăр-ха, ывăламсем, тавранăр-ха, пĕрех хутчен, хĕрхенĕр мана, мĕскĕне, ватлăх кунсенче тăлăха пăрахса ан хăварăрах çапла!..

— Ан хăра вăл карчăкран, Арăслан,— терĕ мана анне каярах. — Виçĕ ывăлĕ вăрçăра пĕтрĕ, упăшки фронтран йывăр аманса тавранчĕ те çĕре кĕчĕ. Шанчăкĕ те çав хĕрача кăна унăн...

Çын хуйхине, çын инкекне ăша илме пĕлетчĕ анне. Алякка карчăка вăл кивĕ чăлха-нуски, кĕпе-тумтир леçе-леçе паратчĕ, каярах, атте пасартан хăрах мăйракаллă, хушка çамкаллă ĕне илсе килсен, ăна сĕт-турăхпа хăналатчĕ. Анне кăна та мар, пĕтĕм ял хĕрхенетчĕ тăлăх карчăка. Анчах çакă та пулăшмарĕ пулмалла çав ăна, сывмарлансах-сывмарлансах пычĕ Алякка карчăк, ăстăнне çухатрĕ, урамсем тăрăх тĕлли-паллисĕр çӳресе, ача-пăчана хăратрĕ. Пĕррехинче вара,— çиччĕмĕш класра вĕренеттĕмĕр ун чух Арçурипе,—шкултан таврăнсанах анне мана çапла пĕлтерчĕ: «Алякка карчăк кĕпер çинчен ӳксе вилнĕ».

Эпĕ çавăн хыççăн çĕр варринчех вăрана-вăрана каякан пултăм. Куç умне турăш кĕтесси çывăхне кукленсе хӳхлекен Алякка карчăк туха-туха тăрать: «Эй, ывăлăмсем, ывăлăмсем, тавранăр пĕрех хутчен...» Нумайччен Иванна çинчен шутласа пуç çĕмĕреттĕм эпĕ. «Мĕнле-ха капла, епле пурăнĕ вăл малашне пĕр-пĕччен?..» Хама ун вырăнне хураттăм, атте те, анне те çук пек туйăнатчĕ вара, тĕлĕрсе кайсан, нумайччен тарăннăн ĕсĕклесе йĕреттĕм. Леш лапсăркка хура тумлă, хаяр саслă сăнар хăвалатчĕ мана, пыра пăвма пикенетчĕ, унран пимĕнле çăлăнăç та çук пек туйăнатчĕ.

* * *

Пăрахмарĕ Арçурие тăван ял. Ун шăпи пирки калаçма районтан килчĕç, пĕр-пĕр ача çуртне ярасшăн пулчĕç. Каймарĕ. Малтанлăха Алякка карчăкпа пĕртăван Унепи мăнакка пăхса пурăнчĕ ăна, кайран, эпир саккăрмĕш класа кӳршĕ ялти шкула çӳреме пуçласан, ăна тӳрех интернатри повар Елинкка аппа хăй патне илсе кайрĕ.

Вăрçă çулĕсенче çуралса ӳснĕ ачасене, пире, тăраничченал хасса савăнма та, ачалăх тĕнчинчи ырлăхсене астивме те памарĕ вăхăт. Аслă Çĕнтерӳ хыççăн виçĕ-тăватă çул иртсен те-ха юртан тасалнă пахчасенче пĕлтĕрхи çĕрулмине пухса çӳреттĕмĕр, вĕлтрен е «куккук çăкри»—чавкапуç тататтăмăр, серте е пултран яшкине турăхпа юрпă пулсан, ăна каçса кайса çиеттĕмĕр... Мĕн каласси, йывăрччĕ вăхăт. Иванна-Арçурие вара пушшех те шеллемен

ылханлă вăрçă, çав имшеркке хĕрачана вăл çитĕннĕ çынна та тӳсме йывăр шăпа уйăрса панă.

* * *

Вуннăмĕш класа çитнĕ çĕре пĕвĕпе мĕнпур арçын ачаран иртсе кайрĕ Арçури. Хăва хулли пек çинçе мăйĕ тăрăх хуп-хура çӳçĕ кăтраланса анать, çивчĕ куçĕнче яланах темле чеелĕхпе вăрттăн илĕртӳлĕх пур: пăхать те сан çине, шалт аптраса ӳкетĕн вара,— таçтан, урăх планетăран килнĕ хĕрача мар-и сан умăнта, тесе тĕлĕнетĕн.

— Эсĕ — виçĕ «А»,— теттĕм Арçурие.

— Анлантар,— тĕлĕнсерех ыйтатчĕ вăл.

— Асоль, Аэлита тата... Арçури.

— Çук, Арçури çеç,— килĕшместчĕ Иванна.

Пĕр кĕтмен-туман çĕртен палăракан йăла-йĕркесем çурални сисĕне пуçларĕ ун хăтланăвĕсенче: е чуна тыткăнлакан сассипе пĕрре тунсăхлă, тепре хаваслă кĕвĕсем ĕнĕрлесе çӳрет вăл, е, сăлтав çукранах, каçса кайса ахăлтатса кулса ярать, е тата кунĕ-кунĕпе пĕр чĕнмесĕр, тарăн шухăша путать. Вăл шухăша путнă чухне уйрăмах йывăрччĕ пирĕншĕн, урокра учитель ыйтсан-тусан та, концертамĕне хатĕрленнĕ чух ушкăнĕпех ӳкĕтлетпĕр пулсан та — усăсăр. Чĕнмест Арçури — екки каймасăр пырса та ан çыпçăн ун çумне. Мĕн пулчĕ ăна? Алякка карчăк вилсен пĕчченлĕхе кĕрсе ӳкнипе улшăнчĕ-и вăл, мĕнле те пулин чир-чĕр аптратать-и ăна?—теттĕм эпĕ. Айванскер, Аруçури хĕр çулне çитнине шута илмен пулĕ çав.

* * *

Тепĕр уйăхран экзаменсем парса пĕтеретпĕр те, аттестат илсе, шкулпа сывпуллашатпăр тесе пуриннă чух Иваннăшăн кĕтмен япала сиксе тухрĕ. Юр ирĕлсе пĕтсенех яла электриксем килчĕç. Çичĕ йĕкĕт. Килнĕ-килменех хĕрӳ ĕçе кӳлĕнчĕç вĕсем. Таçтан вăрăм юпасем турттарса килеççĕ, теодолитсемпе аппаланаççĕ, шăтăксем алтаççĕ. Çамрăк вăй-хăват вĕрет вĕсенче, хаваслăх çиçет. Каçсерен клуб умĕнче, баян каласа, ялти яш-кĕрĕме пуçтараççĕ вĕсем, вара сĕм-çĕрлеччене вăйă-кулă янраса тăрать.

Эпир те, шкулта вĕренекенсем, питĕ кăмăлларăмăр вĕсене, кĕске вăхăтрах паллашма ĕлкĕртĕмĕр, пĕр-пĕрне ятран чĕнме вĕренсе çитрĕмĕр.

Хитреччĕ, илемлĕччĕ тавралăх. Ял çуммипе çурхи пăтранчăкран тасалнă çап-çутă Çарăмсан юхса выртать, ун икĕ аяккипе ешĕл тум тăхăннă ĕшнесенче чăлт-шурă çĕмĕрт йывăççисем ырă шăршипе хăйсем патне туртаççĕ.

Уроксем çинчен манса кайса çав ёшнесене çул тытаттăмăр эпир çĕнĕ юлташсемпе. Баян калакан Женя-электрик шăпчăксене алхастарать, лешсем, пĕр-пĕринпе ăмăртнă пек, ши-ши шăхăрма, каçăхса кайса сыпăкăн-сыпăкăн кĕвĕ карăнтарма пуçлаççĕ. Çамрăклăх пирĕнпе, çутă ĕмĕтшухăш, пуласлăх пирĕнпе!

Пĕр каçхине, ушкăн хыççăн Иваннăпа пĕрле утнă чухне, эпĕ унран çапла ыйтрăм:

— Итле-ха, Иванна, çак каç сана тек нихăçан та таврăнас çук пек туйăнмасть-и?

— Тĕнчере нимĕн те икĕ хут пулас çук,— терĕ вăл, пĕр пăлханмасăр. — Мĕн эс?

— Темле, тунсăхлă мана. Эс, акă, савăнăçлă. Ялан çапла: эп савăннă чух эсĕ кичем, мана кичем чух—эсĕ...

— Сан чуну лайăх,— терĕ Иванна. — Анчах санпа эпир расна çынсем. Мĕншĕн пĕрмаях савăнăçлă пулас-ха ман, Руслан? Сăлтавĕ çук. Шухăшла-ха, сан акă аттестат илнĕ каç аçу-аннӳ пырĕ шкула. Хĕпĕртĕç, мухтанĕç санпа...

Каллех малалла утатпăр.

— Пурте ăнланатпăр-çке-ха, Иванна, сан аçу пирĕн телейлĕ пурнăçшăн çапăçса вилнĕ,—тетĕп, Иваннăпа йăпатас тесе.

— Ăçтан пĕлетĕн?— ыйтать вăл, шарт сиксе.

— Ак тĕлĕнтермĕш! Ара, мĕнпур ялйыш калаçать. Мĕн эс?— ăнланаймастăп эпĕ.

Иванна чĕнмест. Унтан, тем хушăран:

— Ман атте мар вăл, Руслан,— тесе хурать.

— Мĕн пакăлтататăн, Иванна?— тарăхатăп эпĕ.

— Тĕрĕсех, Руслан,— çав-çавах ерипен калаçать вăл.— Мана Алякка карчăк эпĕ иккĕре чухне район центрĕнчен илсе таврăннă. Анне эвакуаципе килнĕ пулнă кунта. Пурăнайман мĕскĕн...

— Ăçтан пĕлетĕн?— шанас килмест манăн.

— Пурпĕрех мар-и?— тет Иванна. —Еликкка аппаран, эппин. Вăрçă вăхăтĕнче вăл районти больницăра ĕçленĕ.

...Алякка карчăк çинчен, ун çуртĕнче тахçан курнă виçĕ сăнӳкерчĕк çинчен, Иванна çинчен, унăн чăн-чăн ашшĕпе амăшĕ çинчен, леш лапсăркка хăрушă мĕлке çинчен тарăн шухăша путса утрăм эпĕ малалла. Акă вăл, çыннăн шăпи. Мĕне пула, кама пула хăй ăçта çуралнине те, камран çуралнине те пĕлеймесĕр утать-ха Иванна? Кирлĕччĕ-и унăн кунçулне çавăн пек сĕмсĕррĕн, вăрă-хурахла, тискеррĕн пăтратса яма? Кашни этем çĕр çине телейлĕ пурăнма çуралатьçке-ха! «Эй, эсир, çынсем, мĕн туса хутăр?»— тесе ӳпкери

мĕнпур сывлăшран кăшкăрса ярас килчĕ манăн, чышкă чăмăртанчĕ, чун кÿтсе çитрĕ. «Çынсем...» Çук, фашистсем! Чуппллисем! Çăхансем!..

Майĕпен иртсе кайрĕ Иванна чĕринчи пăшăрхану. Манран вăл, ним пулман пек, кÿршĕ класри Хветюк çинчен мĕн шутланине ыйтса пĕлчĕ, çакă вăл хăйне мар, Санюка кăсăклантарни çинчен систерчĕ.

— Лайăх ача,— терĕм эпĕ. — Питĕ лайăх ача. Анчах... ытлашши йăваш, сăпайлă. Мемме теме те май пур...

— Йăвашлăх тĕрлĕ пулать. Пĕри чăнах та мемме пуль, теприн вара çав йăвашлăхра — таса та илемлĕ чун...

— Тепри, сан шутупа, Хветюк ĕнтĕ?

— Тепри — Хветюк... Итле-ха, Иванна...

— Мĕн, Руслан?

— Тен... А тен, пурăнать вăл?..

— Кам?

— Аçу...

Иванна ман çине пер хушă чĕнмесĕр пăхса тăчĕ, ĕненмесĕр пуçне пăркаларĕ, тепĕр самантран эпĕ унăн куçĕсем уйăх çутинче шывланса йăлтăртатнине асăрхарăм.

— Пурăнать пулсан, шыранă пулĕччĕ,— терĕ вăл йăвашшăн.

— Аçтан пĕлетĕн, шыранă та пуль,— йăпатасшăн пултăм Иваннăна. — Мĕн чухлĕ кино куратпăр, кĕнеке вулатпăр, тĕрлĕ пулать... Ман шутпа, сан хăвăн шырама пуçламалла.

— Чăнах калатăн-и эсĕ, Руслан?— тĕлĕнсе, çав-çавах ĕненмесĕр куçран пăхрĕ Иванна.

— Чăнах пулмасăр.

— Руслан!— мĕнпур таврана илтĕнмелле кăшкăрса ячĕ хĕрача, унтан качака путекки пек малалла чупса кайрĕ.— А, тен, пурăнать!.. А, тен, пурăнать!—ашшĕ тупăннă пекех хĕпĕртерĕ Иванна.

Аякка тăрса юлнăччĕ эпир юрласа пыракан çамрăксенчен. Сасартăк пирĕн сукмак çине Женька баянист сиксе тухрĕ, Иванна çулне пÿлчĕ.

— Аммм,—терĕ вăл çуллă сассипе, Иванна çине куç айĕн пăхса. Вара такмаклама пуçларĕ: — Паллашар: эсĕ — гени, эп — Евгени. Баянистсăр вăйă илемĕ çук, Арçурисĕр — юмах илемĕ. Юмаха ачаран юрататăп, Арçурие — паянтан.

Унтан Женька мана асăрхарĕ.

— Кунта пĕчĕк «арăслан» та пур-çке,— терĕ вăл. —Пĕчĕккине çывăрма вăхăт, чăхсем пасăрах кашта çинче, пĕчче шикленетĕн пулсан, ав, ушкăна хуса çит,—терĕ те

вăл ларт тутарчĕ баянĕпе, шик шăхăрса илчĕ вĕçкĕннĕн.

Çакă мана тарăхтарса ячĕ. Эпĕ Иванна çине пăхрăм. Кулать вăл. Женькăн тăрлавсăр шӳчĕ килĕшрĕ-и ăна? «Утах, эп часах çитетĕп»,— тесе, лăпкăн ăсатса ячĕ мана.

Çук, юрату тавраш пулман пирĕн. Пĕвĕмпе чăнах та пĕчĕкчĕ çав, намăсланаттăм, ырă мар туяттăм хама. Анчах çавăн чух чĕрере темле, унччен пулман туйăм çуралнине сисрĕм эпĕ...

* * *

Тепĕр кун ир-ирех шкул картишне тирпей-илем кĕртме пухăнтăмăр. Куçпа Арçурие шырарăм, анчах тупаймарăм. «Чылай çӳренĕ ĕнтĕ вăйăçпа, çывăрса юлнă»,—тарăхса-кĕвĕçсе шухăшларăм ăшра.

Вутă-шанкă пуçтартăмăр. Çӳп-çапа шăпăрпа шăлса кайрăмăр, волейбол площадкине тикĕслерĕмĕр. Хĕрсе ĕçленĕ вăхăтра çакна асăрхарăм: пĕрмаях ман тавра Чуппа явăнса çӳрет. (Çак самăр ачан хушамачĕ Чупинччĕ, анчах учительсемсĕр пуçне çапла никам та чĕнмен ăна,—Чуппа теттĕмĕр пурте). Сисетĕп: шăл йĕрсе тем каласшăн, тем пĕлтересшĕн вăл мана. Йăл-йăл кулкалать, темле вĕçкĕннĕн шăхăрашăхăра илет.

Канма лартăмăр. Чăтаймарĕ Чуппа, хăйĕн сăмахне пуçларĕ-пуçларех.

— Çанталăкĕ хитре паян! Хĕвел, кăвак пĕлĕт, тăрисем юрлаççĕ: тю-тю-тю-тю,— ман куçран пăхрĕ Чуппа.

— Хитре,— ăнланаймарăм эпĕ.

— Ахă. Саншăн та-и?—куçне сиктерсе кăларчĕ Чуппа.— Ĕненместĕп.

— Мĕн сӳпĕлтететĕн эс, Чуппа?— тарăхтара пуçларĕ мана унăн ăнланма йывăр хăтланăвĕ.

— Тӳрлететĕп: Чуппа мар — Чупин. Ара, çак хĕвел те хитре-и саншăн паян? Çĕркаç çавăн пек мăшкăл курнă хыççăн та-и? Эх вĕт, ачасем, курасчĕ сирĕн. Король пек пырать Арçури хыççăн. Сăмси каçăр. Ак çапла,—пуç пӳрнипе сăмсине пĕрсе кăтартать Чуппа.

— Халех чарăнмасассăн, Чуппа, сан сăмсу чăн та çавăн пек пулса ларать,— аран чăтса ларатăп вырăнта.

Ачасем ахăлтатса кулаççĕ. Хветюк çеç чĕнмест. Куç айĕн сиввĕн пăхать вăл ман çине. Чим, ара, Арçури ĕнер ун çинчен ыйтса пĕлнĕччĕ. Ав мĕнле иккен. Вăрттăн юрату.

— Анчах, ачасем, ку вăл пуçламăшĕ çеç-ха. — Ман сăмах пĕртте хăратмарĕ Чуппана. — Королева текеннин

урăх король пур. Баянлă король. «Қаçарăр,— тет вăл Арăслана. — Сире çывăрма вăхăт. Чăхсем кашта çине ларнă. Аннÿ пĕçерккĕ парĕ». Утаççĕ вара корольпе королева улăх тăрăх. Қайсан-кайсан лараççĕ, ларсан-ларсан... Ай-уй, эп ун пеккине нихăçан та курман. Қинора та кăтартсах пĕтермеççĕ ун пек-кун пеке.

— Суятăн!— чи малтан сиксе тăчĕ Хветюк.

— Ан пакăлтат, йĕрĕнчĕк!—чышкă чăмăртарăм эпĕ те.

— Ак — хĕрес. Хам куçпа хам...— нăйăлтатать Чуппа.

Лăштăрах кайрĕ ман чĕркуççи. Мĕн пулса иртет, мĕн пулса иртет? Сурас килет манăн Чуппа куçĕнчен, ăна çак вăхăтра туртса-çурса пăрахас килет. Суять вăл! Кун пек пулас çук. Ун пекки мар Арçури.

Тивмерĕ Чуппана Хветюк. Нимĕн те чĕнмерĕ вăл текех, çаврăнчĕ те утрĕ йывăррăн ансăр тăкăрлăкпа. Эпĕ хам ним тăхтамасăр Иванна патне чупасшăнччĕ, анчах çак самантра тахăшĕ: «Шшш, хăй килет»,— тесе хучĕ. Чăнах та, шкул картишне Иванна килсе кĕчĕ, ăна-кăна чухламанскер, пирĕнпе юнашар ларчĕ.

— Қаçарăр, ачасем, çывăрса юлнă,— терĕ вăл. Çак сăмахсене каламалла марччĕ хăть Арçурин! Унччен шыв сыпнă пек ларакан ачасем çакна кăна кĕтнĕччĕ темелле, хаш сывласа ячĕç вĕсем пĕр харăсах, пĕлетпĕр, йăлтах пĕлетпĕр тенĕ пек, пĕрисем куç айĕн пăхрĕç Иванна çине, теприсем, йĕрĕненçи пулса, сура-сура илчĕç. Мĕн тери савăнчĕ çавăншăн пирĕн Чуппа! Қашнин умĕнчен çĕнтерÿçĕ автан пек ута-ута иртрĕ вăл, юлашкинчен Иванна умне пырса тăчĕ те, питне-куçне темтепĕрле вылятса, хĕрачаран уççăнах кулма пуçларĕ.

— Ачасем,— терĕ тăруках хыпăнса ÿкнĕ Иванна,— мĕне пĕлтерет ку, ачасем?

Çав-çавах никам та ним те чĕнмест.

— Арăслан,— ман куçран пăхрĕ аптранă енне Иванна.— Қала, Арăслан, мĕн ку?..

Çĕççĕн касать ман чĕрене унăн сăмахĕ. Мĕнле пĕлтерес ăна çак çапкаланчăк Чуппа сăмахĕ çинчен? Қалаймастăп. Пуçа пăратăп.

— Мĕн эсир?..— ĕнтĕ тути сиксе чĕтрет шурса кайнă Арçурин.

Ун умĕнче каллех Чуппа явкаланать. Тарăхтарса ячĕ ку мана. Çаплах ейкеленме пăрахмасассăн, эпĕ ун çине тигр пек сиксе ÿкетĕп е çак шăпăрпа пуçран паратăп. Анчах ĕлкĕреймерĕм. Тÿрлетме çук йывăр пысăк йăнăш куç умĕнчех пулса иртрĕ.

— Çветтуя перетĕн. Эпĕ-çке хам куçпа хам...—çуталса кайрĕç Чуппа куçĕсем. — Çĕркаç... Çĕмĕрт айĕнче...

— Мĕн пулнă çĕмĕрт айĕнче?..— ăнланайманнипе тарăхса ыйтрĕ Иванна.

— Калама намăс çав,— сăмахне çăтрĕ Чуппа.

— О-охх!— манпа юнашар тĕшĕрĕлсе анчĕ Иванна. Ним тăва пĕлмесĕр пĕр хушă унталла, кунталла пăхрĕ вăл, вара таранăн, `пĕтĕм кĕлеткипе чĕтресе ĕсĕклеме пуçларĕ.

Çак самантра шыçăнса кайнăн туйăнакан самăр Чуппа, вăрă-хурах хăй ĕçне туса пĕтернĕ пек, шиклĕн пăхса илчĕ те пирĕн çине суллана пачĕ хăй çулĕпе.

Тайкаланса, Иванна ура çине тăчĕ. Чăтма çук йыварччĕ пире кашнине. Тин çеç Чуппан наркăмашлă сăмахĕсенчен ахăлтатса кулса ларнă ачасемшĕн Иванна хуйхи кашнин харпăр хăй хуйхи пулса тăчĕ. Анчах çамрăк пулнăран, пурнăç тути-масине пĕлейменрен нимпе те пулăшаймарăмăр эпир хамăр тантăша. Пĕлместĕп, пулăшма пулатчĕ-ши ăна çавăн чух мĕнпе те пулин?

Куçпа ăсатса ятăмăр кăшкăрса-йĕрсе пыракан Иваннăна шкул картишĕнчен. Класри чылай ачашăн Арçурипе яланлăхах уйрăлнă вăхăт пулчĕ çакă.

Каç пулчĕ, ир пулчĕ—килмерĕ Иванна шкула. Елинкка аппа патне темиçе те кая-кая пăхрăмăр: çухалчĕ Арçури. Пĕтĕм шкул ура çине тăчĕ. Ним тума пĕлеймесĕр çӳрерĕç учительсем. Женька баяниста ял Советĕнчех усранă тетчĕç çав кунсенче. Милиционерсем хĕвĕшрĕç ялта. Усăсăр. «Нимĕн те пулман, ман айăп çук»,— тенĕ пулать вара Женька. Чи пысăк айăпли çак пăтранура, пирĕн шутпа,— Чуппа, урăх никам та мар, пĕр çавă çеç пулса тăчĕ.

Çывăхри вăрманта, ял таврашĕнчи çырма-çатрасенче пĕтĕм класпа, ялти комсомолецсемпе темиçе хут та шыраса пăхрăмăр эпир Арçурие — хăйне те е вăл пулни çинчен калакан паллăсене те тупаймарăмăр.

* * *

Вăхăт иртсех пычĕ. Экзаменсем çывхарчĕç. Арçури çинчен çав-çавах сас-хура илтĕнмерĕ.

Çав кунсенче пулнă тепĕр япалана халĕ те манаймастăп эпĕ. Ыран-паян вĕренӳ çулĕ вĕçленет тенĕ чух шкултa комсомолецсен пухăвне пухрăмăр. Вĕренӳ çулĕнчи ĕçсене пĕтĕмлетрĕ пуху. Анчах асра юлни ку мар-ха, тепĕр ыйту пулчĕ. Кĕске вăхăтлă тăхтав хыççăн президиум сĕтелĕ умне милицин аслă лейтенанчĕ тухрĕ. Пирĕн çине ăшшăн

пăхса илчĕ вăл, çамки çине шуса аннă кăвак çӳç пайăркине тӳрлетрĕ.

— Ачасем, çамрăк комсомолецсем,— терĕ вăл лăпкă сассипе,— итлесе лартăм-лартăм та паян сирĕн ĕçĕрсем çинчен каласа панине, хăвăр калаçнине, пытармастăп — савăнтăм. Мĕн каласси, эпир, сиртен аслăрах çынсем, ватăлса пыратпăр ĕнтĕ, эсир акă пирĕн вырăна тăма хатĕрленетĕр, урăхла каласан, пурнăç хуçисем, çĕршыв хуçисем пулса тăратăр. Çăмăл япала мар вăл, Тăван çĕршыв хуçи пуласси. Кунта халăха юратни те, партипе комсомол ĕçне чунтан парăнни те, тарăн ăспа çирĕп кăмăл-туйăм та, вăйхал та кирлĕ. Кунта ларакансенчен нумайăшĕн çак пахалăхсем пур, кун пирки иккĕленмелли те çук. Анчах пурин те мар тесшĕн эпĕ. Акă Чупин Ксенофонтах илер. Юлашки вăхăтра ун айĕпĕпе шкулта мĕн пулса иртнине пурте пĕлетĕр. Çакăн çинчен темиçе хут та калаçса пăхрăмăр унпа. «Ачасене култарас килчĕ, çавăнпа суйрăм»,— тет Чупин. Ку ĕнтĕ çак вунçиччĕри ача пурнăç çине, туслăхпа юлташлăх çине, этем чысĕ çине ытла çăмăлттайла пăхни çинчен калать...

Пурте Чуппа çине çавăрăнса пăхрăмăр. Каллех çав йĕрĕнчĕк кулă палăрать ун сăн-питĕнче.

— Шăлна йĕрсе ан лар, Чупин!— асăрхаттарчĕăна комитет секретарĕ Шура Головина. — Кур-ха, епле герой! Тăр ура çине!

— Ман шутпа, пирĕн ретре пулма сăлтав çук унăн,— чăтса тăраймарĕ хыçалти ретре ларакан Надя Валерова.— Мĕн туса хучĕ! Пĕлместпĕр-ха эпир: сывă-и Иванна, сывă мар-и. Анчах Чупин, ман шутпа... каçарăр та, çын вĕлерекен пекех туйăнать...

Пуху сĕрлеме пуçларĕ. Шуралса кайрĕ Чуппа, куç айĕн Надя çине пăхса илчĕ.

— Чарăнăр, ачасем, мĕн эсир, пуху пынине манса кайрăр-и?—кăранташпа шаккаса шăпланма ыйтрĕ Шура.— Тен, хăйне итлесе пăхар? Каласа пар-ха, Чупин, мĕн хĕтĕртрĕ сана çавăн пек хăтланма?

Чупин чĕнмерĕ. Шыв сыпнă пек тăчĕ вăл урайне пăхса. Тем вăхăт иртсен, Чупина тархаслани усăсăр пулнине курa, Головина урăх сĕнӳ пачĕ:

— Апла пулсан, Чупин хăтланăвне сӳтсе явма пуçлар. Кам калаçас тет?

— Мĕн калаçмалли унта,—тарăхса каларĕ Зоя Вяткина,— Надя сĕнĕвĕпе килĕшмелле те — ĕçĕ те пĕтрĕ.

— Тĕрĕс!— кăшкăрчĕ пĕр харăс темиçе хĕрача. —Комсомолец тесе мĕнле калăн-ха ăна?!

Головина класс руководителĕ çине — Аверкий Кузьмич çине — пăхса илчĕ. Пуху шăпланчĕ. Çак кунсенче шутсăр кичем çÿрекен, пулса иртнĕ ĕçшĕн пиртен те ытларах кулянакан Аверкий Кузьмич питĕ кĕскен каларĕ.

— Чуппин шăпи йăлтах ун юлташĕсенчен килет,— терĕ вăл. —Эпĕ урăх нимĕн те калаймастăп.

Пĕр саслă пулса, Чупина комсомолтан кăларма йышăнтăмăр.

* * *

Акă ĕнтĕ класпа юлашки хут пухăнтăмăр пулмалла. Ачасем шурă кĕпесем çине галстуксем çыхса пынă, туфлисене йăлтăртатса тăмалла çутатнă. Хĕрсем тата, хĕрсем мĕнлерех! Шап-шурă лĕпĕшсем пек вĕсем паян. Вăт тĕлĕнтермĕш, мĕн чухлĕ пĕрле пулнă эпир класри хĕрсемпе, çук, асăрхаман вĕсен илемне. Халĕ акă, кирек хăшĕ йăл кулсан та, чĕре сиксе тухассăн туйăнать. Уйрăлу касĕ çитсе лекнĕрен-ши çакă?

Хитре чечексем йăмăхтараççĕ куçа, шкул вальсĕн чуна çурса ярасла кĕвви чĕрере тунсăхлă туйăм çуратать. Атте-аннесем тăраççĕ пĕр енче пăлханса, тепĕр енче —учительсем. Вĕсем çине тинкерсе пăхатăп та эпĕ, вĕсене ăнланасшăн çунатăп, вĕсен сăнарне ĕмĕрлĕхех чун-чĕрере усрама тупа тăватăп... Акă, Сергей Никандрович. Директор пек кăра та атте пек çепĕççскер, кашнин аллине хытă чăмăртаса, пире çитĕнсе çитни çинчен калакан аттестат парать. Çитĕнсе çитни çинчен! Мĕнлерех янăрать.

Акă, класс руководителĕ Аверкий Кузьмич, вăрăм та çинçе кĕлеткеллĕскер. Ыттисем пек галстук çыхма юратмасть вăл, çухисене йÿле янăран унăн мăйĕ паян тата вăрăмрах пек туйăнать. Пултăрах — пирĕншĕн вăл пурпĕрех чи лайăххи. Аслă та ырă куçĕпе кашнине сăнаса çаврăнать вăл, «мĕнле пурăнăр мансăр малашне?»— тесе ыйтнă пек туйăнать.

Хисеплĕрен те хисеплĕ Мария Хрисановна! Шан пире, чăваш ятне ямăпăр эпир, тăван чĕлхене сан пекех тирпейлĕ упрăпăр, çĕр пин юрра, çĕр пин сăмаха ыттисем патне çитерме тăрăшăпăр, чĕрене тунсăх пуссан, Çеçпĕлĕн кăвар сăмахĕсене аса илĕпĕр.

Эсĕ мар-и, Елена Александровна, пире, çиччĕмĕш класран килнĕскерсене, ырă кукамай хăйĕн мăнукĕсене ертсе çÿренĕ пек, хими кабинетĕнчи асамлă реактивсене кăтартса çÿрерĕн. Мĕншĕн çÿçÿсем кăвак тĕспе витĕнчĕç санăн?

Эсĕ тата, Николай Егорович? Эпир Ньютон саккунĕсене йĕркеллех ăнкартнăшăн савăнатăн-и паян?

Илсе çӳре-ха пире, хаклă Кирилл Константинович, тепĕр хут авалхи Греци çĕршывĕ тăрăх. Египет фараонĕсем çинчен каласа кăтарт пире. Орфей юррисене аса илтер тепре!

Эх, иртрĕ пуль çав ĕнтĕ ачалăх... Пирĕн учительсем эпир палламан ачасем валли юлĕç, ыттисен сассипе тулса ларĕ çак шкул кашни кĕркунне çитмессерен. Эпир — уйрăлатпăр. Вăхăт туртса илет пире ачалăхран. Хăватлă моторсемпе кĕрлекен, асамлă кĕвĕсемпе янракан пурнăç туртса илет.

Хитре тĕлĕк пек тăрса юлчĕ уйрăлу каçĕ. Ташăра çавраçил пек çаврăнни, aслă юлташсене чи ырă сăмахсемпе тав туни, ял хĕрринче, Çарăмсан çыранĕнче кăвайт хурса юрăсем юрлани — пурте кĕске те илемлĕ кинофильм пек çеç тăрса юлчĕ асра. Килсене эпир тул çутăласпа кăна салантăмăр. Тип çеç пысăк та шавлă кĕтӳрен тăрса юлнă выльăх пек, пĕр-пĕччен утрăм эпĕ ял урамĕпе. Мĕн тĕрлĕ шухăшсем килсе капланмарĕç пуль пуçа? Акă, терĕм эпĕ, пурнăçри пĕр тапхăр вĕçленчĕ. Япăххи те, ырри те сахал мар пулчĕ пирĕншĕн. Тен, паян-ĕнер çуралнисемпе таплаштарсан, ытларах та лекрĕ пуль пирĕн ӳсĕме. Темех мар, аслăрах ăрусем, ав, кун пеккине кăна мар курнă. Чи пахи — эпир çунатлантăмăр. Пĕтĕм суран витĕр шăтса тухса тĕреклентĕмĕр. Апла-тăк Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕç тата пысăкрах, тата хисеплĕрех пирĕн. Çакна туятпăр эпир. Пурте туяççĕ.

Каллех класри ачасем куç умĕнче. Хăшĕ парăнĕ? Шура-и, Шăнкăрч-и, Зоя Вяткина-и, Хветюк-и? Хветюк... Тем пулчĕ ăна юлашки вăхăтра, ни ун çинчен, ни кун çинчен калаçмасть. Хăй ăшне путрĕ каччă. Нивушлĕ Арçури пиркиех-ши?

Арçури... Пысăк хурлăх пулса тăтăн эсĕ пирĕншĕн пуриншĕн те. Мĕн пулса тухрĕ-ши санпа çав кун? Тен, учительсен сăн-питĕнчи паянхи тунсăх сан пирки те ытларах палăрнă пек туйăнчĕ пире? Аçта çӳретĕн эсĕ, Иванпа? Сывах пулсан, мĕншĕн мана та пулин пĕлтерместĕн хăвăн çинчен?

Пĕлместĕп, пур-ши телепати текен япала тĕнчере, çук-ши — Аверкий Кузьмич пире çав тĕлĕнтермĕш çинчен сахал мар каласа кăтартнă-ха,—анчах çак самантра ман çул çине тĕм-хура куçлă икĕ кăтра йĕкĕт сикрĕç тухрĕç. Камсем вĕсем, çак çынсем? Ку ялта курман эпĕ вĕсене халиччен. Сиксе тухрĕç те шак хытса тăчĕç ман умра. Ним ăнланаймасăр юпа пек тăтăм пĕр вăхăт, унтан хăраса ӳкрĕм, вара, каштах лăпланса, çапăçу-мĕн пуçланса кайсан мĕнле хӳтĕленесси çинчен шутларăм. «Вăй тан мар,

темлерен çак урасем хăтарсан кăна ĕнтĕ. Çапах та тӳрех пăрахса тарни ытла та кулăшла пулнă пулĕччĕ».

— Мĕн кирлĕ сире?— аран-аран сывлăш çавăрса, сăмах хушрăм эпĕ.

Йĕкĕтсем мана шăтарасла пăхаççĕ, тĕрĕслеççĕ, виçеççĕ.

— Камсем эсир?— çав-çавах ăнланаймастăп вĕсен хăтланăвне.

— Только без шуток. Она тебя видеть хочет,— вырăс сăмахĕсене хуçкаласа тинех сăмах хушрĕ пĕри.

— Кам курас тет мана? Ыйхăсăр çӳрекен те пур-и ялта?

Çак самантра йывăç хыçĕнчен хĕрача кĕлетки курăнса кайрĕ. Акă вăл пирĕн паталла утать.

— Иванна!

— Тише, дорогой,— асăрхаттарчĕ мана паçăрхи сасă.

Иванна ман ума пырса тăчĕ, куçран пăхрĕ те пуçне пĕкрĕ.

— Руслан, ман санпа калаçмалли пурччĕ,— терĕ вăл.

Каччăсем иккĕшĕ те, йывăç хыçнелле кайса, куçран çухалчĕç.

— Иванна...— кĕтмен тĕлпулуран тĕлĕнсе, ним калама аптраса тăтăм эпĕ.

— Нимĕн те ан кала мана, Руслан. Курас килчĕ, çавăнпа килтĕм. Çывăх юлташсем-çке-ха эпир санпа.

— Çывăх пулмасăр, çывăх пулмасăр...

— Тен, урăх çĕре тухса кайăн. Пĕлтерсе хăварас терĕм хам çинчен.

— Тавтапуç, Иванна. Анчах ăçта пурăннă эсĕ ку таранччен, мĕнле пурăннă?

— Çак юлташсемпе.

— Çак арçын ачасемпе-и?

— Усал ан шухăшла вĕсем çинчен, Руслан. Çемйи пысăк вĕсен.

— Камсем вĕсем?

— Чикансем.

— Анчах ку вăл... лайăх мар пулĕ?

— Юн пĕрре пек туйăнать. Куртăн пуль, санпа та пĕр пекрех.

— Мĕн пакăлтататăн, Иванна?

— Юррисем, ташшисем килĕшеççĕ. Ĕмĕр вĕсемпе пурăннă пекех.

— Ăнланатăп сана, ирĕк чунлă ăмăрткайăк... Ну, юрĕ. Эсĕ хăть пĕлетĕн-и, сан хыççăн мĕн пулса иртрĕ унта пирĕн?

— Пĕлетĕп. Калаçмăпăр ун çинчен.

— Мĕн çинчен калаçăпăр вара? Чим, Иванна, общежи-

тирисем выртман пулĕ-ха, атя, сывпуллаш ачасемпе юлашкинчен.

— Класпа... сывпуллашнă эпĕ.

Иванна куçĕсем сывлăмпа йĕпеннĕ хура çĕмĕрт пек йăлтăртатаççĕ. Çавна курса тăнăран пыра тем капланса килет. Çак ирхи шăплăх кăмăла таптаса пусарать: нимле çăлăнăç çук, йĕрсе ярас марччĕ пĕрех хутчен. Кала, Иванна, мĕн те пулин, кала халех. Мĕн тери ютшăнтăмăр эпир пĕр-пĕринчен, акă ĕнтĕ хамăр шухăша калама та иметпĕр иккен.

— Каятăп, Руслан...

— Аçталла çул тытасшăн?

Иванна тутине çыртать, манран куççульне пытарма тăрăшса, хăяккăн çавăрăнса тăрать.

— Аçта куç курать — çавăнта... Аттене шырама...

Çак сăмахсене илтсен хăраса ӳкрĕм эпĕ. Çак шухăша эпĕ хам панăччĕ-çке Иваннăна. Тĕрĕс сĕнӳ пулчĕ-ши вăл? Усăсăр пулмĕ-ши шырани? Хĕрачан аманнă чĕрине пушшех ыраттармĕ-ши ахаль çӳрени?

«Апла пулас çук,— тепĕр шухăш вĕçсе илчĕ пуçра.— Ĕмĕтлентĕрех Иванна ашшĕ çинчен! Шыратăр ăна. Тен, чăнах та, ăçтан пĕлен... Хурапа çеç палăртман пуль-ха ун шăпине те...»

— Тархасшăн, никама та ан пĕлтер кĕçĕр мана курни çинчен. Çапла лайăхрах пулĕ. Тен, ара, хăçан та пулин тĕл пулăпăр-ха тепре,— терĕ Иванна, уйрăлма вăхăт çитнине систерсе.

Аякка, аякка кайса пычĕ ун кĕлетки ирхи хăмăр тĕтреленхре.

— Иванна, тен, Шупашкарта пулăп эпĕ, манса ан кай!— çакна çеç калама ăс çитертĕм Арçурипе уйрăлнă чух.

* * *

Çыру! Ман кĕсъере хулăн çыру. Пурăнатăн, эппин, Иванна! Улшăннă-и эсĕ? Ĕлĕкхи Арçури паллисем юлнă-и санра? Аçта çӳренĕ халиччен? Мĕн çухатнă, мĕн тупнă? Тен, çемьеленме те ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ? Апла пулсан, кама суйласа илтĕн-ши ху валли? Телейлĕ-ши, кăмăллă-ши ху пурнăçупа?

Киле çитрĕм те тумтире хывмасăрах çырăва уçма васкарăм.

— Асанне çыйю çыйнă-им?—тет ман пата чупса пынă ывăлăм.

— Асаннӳ мар, Руслан,— тетĕп ăна,— пĕр лайăх аппа çырнă-ха кăна.



29218-чв
Чувашская Республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. Горького

— Аннейен лайăх аппа çук,— тет ывăлăм.
— Ну, эппин, аннŭ пекех лайăххи,— тетĕп ывăлăма.
Хамăн куççем ĕнтĕ çырури йĕркесем тăрăх чупса кайрĕç.
«Сывă-и, Арăслан?
Инçетри Молдавирен сана кăнтăр хĕвелĕ пек хĕрŭллĕ салам!
Ара, мĕн тери тунсăхламарăм пулĕ саншăн, шуйттан илесшĕ! Халĕ акă упăшкам хăйĕн çĕршывне яла кайса килчĕ те, тупăнчĕ санăн çул-йĕрŭ. Текех çухалаймăн ĕнтĕ пиртен. Ҫанма тухсан, кунта килсе курмасан-и сана...
Эх, Арăслан, ларасчĕ халĕ пĕр сĕтел хушшинче, калаçасчĕ, калаçасчĕ, пĕр кун, ик кун. Эрне калаçсан та пĕтмĕччĕ сăмах. Ара, мĕн чухлĕ шыв юхса каймарĕ пуль эпир уйрăлнăранпа! Вуникĕ çул хушшинче, тăванăм, тем курмалăх та, тем шухăшламалăх та, тем тумалăх та пур. Эсĕ институт пĕтернĕ авă, Шăнкăрч пирĕн Норильскра иккен. Шура Головина комсомол райкомне ертсе пырать тет. Надя Валерова ăста агронома тухнă, орден илме тивĕçлĕ пулнă. Пултарать Надя! Ача чухнех хастарччĕ çав.
Мĕн калас-ха сана хамăр çинчен? Ҫапла, нумай вăхăт иртрĕ. Ҫав каç эсĕ атте пирки кĕтмен шухăш парсан, пĕтĕм канăçа çухатрăм. Шкул пĕтерсен, тŭрех Мускава тухса кайăп тенĕччĕ ăна шырама. Анчах ху пĕлетĕн, тŭрех тухса каясси пулмарĕ. Ҫаçар, ун çинчен çырса тăмастăп, асăнас та килмест, ытла хура йĕр хăварчĕç чĕрере çав йывăр кунсем. Ҫын куçне курăнас темесĕр тарса çŭрерĕм, нумай шухăшларăм, вара, аптранă енне, чикансемпе хутшăнса кайрăм. Ҫапах ырă çынсем пулчĕç вĕсем. Мана хăйсен тăван хĕрне пăхнă пек пăхрĕç. Аттене шырама та вĕсемех пулăшрĕç. Районти архивра аннен документĕсене тупса пачĕç ырă çынсем. Молдаванка пулнă иккен ман анне. Вăрçă пуçлансан, унтанах эвакуаци йĕркипе Чăваш çĕршывне куçса кайнă. Шел, пурăнайман мĕскĕн, эпĕ иккĕре чухне йывăр чирлесе вилнĕ. Атте йĕрĕ çине те ŭкрĕм, анчах йĕрĕ çине çеç çав... Районти çар комиссарĕ аттен вăрçăри çул-йĕрне пĕлме Подольска, çар архивне, çыру çырма пулчĕ. Анчах çыру çŭретсе вăхăт ирттерес килмерĕ манăн. Эпир вара, чикансен ушкăнĕнчи Маркка пиччепе, васкасах çав хулана тухса кайрăмăр. Мĕн кăна шухăшламарăм-ши çул тăрăх? Акă мана пĕр пакунлă пичче ăшшăн кĕтсе илĕ те: «Аçта пурăннă эсĕ ку таранччен, аçу сана хăçантанпа шырать, акă адресне ил те вĕçтер хăвăртрах», тейĕ. Эпĕ вара никамран вăтанмасăрах тăпăртатса, ташласа илĕп, пакунлă пиччене ыталаса чуптăвăп та халех, халех, самолет çине

ларса, Молдавие вĕçтерĕп. «Атте! Атте!»— кăшкăрăп эпĕ ăна курсан. Тĕреклĕ те вăйлăскер, вăл мана ача пек çӳле çĕклĕ. «Хĕрĕм, аннӳ ăçта вара?»— тесе ыйтĕ. Вара сăмахсăрах ăнланĕ. «Юрĕ,—тейĕ вăл мана,— мĕн пулнине тӳрлетеймĕн, эс пурришĕн те телейлĕ эпĕ...» Вара тăван киле утса кайăпăр...

Анчах хама çак шухăшсемпе йăпатни кăлăхах пулчĕ.

Сирĕн аçăр 1941 çулхи июнь уйăхĕнче Молдавири Единцы хули патĕнче Тăван çĕршыв чиккине сыхласа, паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ терĕç мана. Пĕртен-пĕр ĕмĕт те тăрукках татăлнăран эпĕ кăшкăрса макăрса ятăм.

Чылайччен ӳкĕтлерĕ мана кăвак çӳçлĕ, ырă сăн-питлĕ майор.

— Санăн хăвăн аçупа мухтанмалла çеç,— терĕ вăл мана. — Хăюллă та çирĕп кăмăллă пулнă вăл. Эс пур... Ну, шăлса типĕт питне-куçна. Акă мĕн, кĕр-ха ман пата тата икĕ кунтан. Тен, сан тăванусене шыраса тупăпăр.

Мĕнпе ырă тумалла ман çав майора? Пĕлетĕн-и, Арăслан, кĕтĕм те тепĕр икĕ кунтан, вăл мана хут тыттарать. Унта темле адрес çырса хунă.

— Ну, хĕрĕм,— тет хайхи,— аслаçу кĕтет унта сана. Ваталнă пулин те, сана курмасăр вилесшĕн мар-ха вăл.

Тав тума ăс çитертĕм-ши эпĕ ăна ун чух? Пурăнать пулсан, хăçан та пулсан тепĕр хут кĕрсе тухатăпах ун патне. Çав кунах Маркка пичче мана Мускавран Кишинева ăсатса ячĕ. Тупрăм çапла хам çуралнă яла, Арăслан. Чĕре сиксе тухасла тапать. Урамра вылякан вĕт-шакăртан асатте ăçта пурăннине ыйтса пĕлтĕм.

Çак тĕнчере асатте те, асанне те пур иккен манăн, Арăслан! Аттепе пĕртăван Петрусь пичче те пур! Анчах майор вĕсене эп пурри çинчен пĕлтермен пулнă иккен-ха.

Кĕтĕм хайхи пĕр çурта алăк уçса. Телейлĕ вăхăт тĕлне пултăм — карчăкпа старик апат çисе лараççĕ. Тĕлĕнсе пăхаççĕ ман çине. Пыра тем пӳлсе лартрĕ, кăшкăрса йĕрсе ярас марччĕ тесе аран чăтса тăратăп.

— Ирт-ха, ирт тĕпелелле,— тет асанне,— Марыç патне пуль-ха. Тем, килеймерĕ-ха ĕçрен.

— Асанне!— чăтса тăраймасăр кăшкăрса ятăм та эпĕ, ун патне чупса пырса, мăйĕнчен çакăнтăм. — Эпĕ таврăнтăм, асанне! Сирĕн мăнукăр, Иванна эпĕ!..

Куççуль шăпăртатса юхать куçăмран. Асатте ура çине сиксе тăчĕ, ним ăнланаймасăр, сухалне чĕтреткелерĕ. Унтан — тăна илчĕ пулмалла та: «Мăнукăм!»— терĕ хулăн сассипе, вара иккĕш те мана ыталама, çупăрлама пуçларĕç.

Çапла тĕл пултăмăр тăвансемпе. Петрусь пиччен хĕрĕ

Марыҫ сакӑр класс пӗтернӗскерччӗ. Тӳрех унпа ӗҫе ҫӳреме пуҫларӑмӑр эпир. Колхозӑн виноград сачӗ пысӑк. Мӗн тери лайӑх унта ӗҫлеме!

Асаттепе асаннен ҫеҫ мар, пӗтӗм ялйышӑн юратнӑ хӗрӗ пулса тӑтӑм эпӗ. Кӗркунне ҫитсен, колхоз председателӗ киле пырсах Кишинева виноград ӑстине вӗренме кайма ӳкӗтлерӗ мана. Килӗшрӗм. Тепӗр икӗ ҫултан техникум пӗтертӗм те каллех тӑван колхоза таврӑнтӑм.

Лайӑх пирӗн ялта. Ҫамрӑксем нумай. Эх, Арӑслан, сакӑн ҫинчен ҫырма манас марччӗ тата. Упӑшка яла кайса килчӗ терӗм-ха. Пӗлетӗн-и, кам вӑл? Акӑ, итле.

Пирӗн колхоза пограничниксен заставин шефа илнӗ. Уявсенче те, ахаль чух та час-часах пӗрле эпир вӗсемпе. Ялти клубра концертсем те кӑтартаҫҫӗ вӗсем. Эпир те парӑмра юлмастпӑр, заставӑна тӑтӑшах кая-кая килетпӗр.

Пӗрре ҫапла, техникум пӗтерсен пулчӗ-ха ку, салтаксем пире виноград пухса пулӑшма килчӗҫ. Хам кӗтсе илеймерӗм вӗсене, ӗҫпе района кайнӑччӗ. Кӑнтӑрла тӗлне тин таврӑнтӑм плантацие. Пӑхатӑп: пирӗн колхозниксемпе пӗрле хӗрсех ӗҫлеҫҫӗ хайхи пограничниксем. Утатӑп кусен ӗҫне тӗрӗслесе. Пӗрне сывлӑх сунтӑм, тепӗрне. Пӗлетӗн-и, Арӑслан, мӗнле тӗлӗнтермӗш пулать тӗнчере! Виҫҫӗмӗшӗ хыҫҫӑн утатӑп. «Эй, салтак юлташ, татмасӑр хӑварнӑ, кун пек лайӑх мар»,— тетӗп. Ҫаврӑнчӗ те ку ман енне — ҫӗр ҫӑттӑрах, ара, Хветюк тӑра парать ман умра. Ӳснӗ, тӗрекленнӗ хӑй. Пӑхать, пӑхать ман ҫине юпа пек хытса тӑраканскер. Унтан ахӑлтатса кулса ячӗ.

— Ҫаҫарӑр, агроном юлташ, йӑнӑша тӳрлетӗпӗр,— терӗ те ман пата чупса пычӗ. — Мӗнле майпа кунта эсӗ, Иванна?— тет.

Вутла ҫунаҫҫӗ хӑйӗн куҫӗсем, хам та хытӑ пӑлханса кайрӑм, ачалӑх кунӗсем тухса тӑчӗҫ ума тепӗр хут. Вара ӑнлантӑм, сиртен, манӑн ырӑ туссем, уйрӑласси пулмасть иккен.

Тепӗр ҫулталӑкран Хветюкӑн салтак служби вӗҫленчӗ. Ҫак вӑхӑта ахаль ирттермерӗмӗр пулӗ ҫав. «Сан патӑнтан ниҫта та каймастӑп»,— терӗ Хветюк. Ман хамӑн та ниҫта та ярас килмерӗ ӑна. Пӗтӗм застава, пӗтӗм ялйыш пулчӗ пирӗн туйра. Ҫав кунах эпир атте вилтӑпри ҫине кайрӑмӑр. Шурӑ, хӗрлӗ розӑсемпе витӗннӗ ҫак вырӑн. Хӗрлӗ ҫӑлтӑрлӑ обелиска пограничниксем пӑхса тирпейлесе тӑраҫҫӗ. Кӑвак мрамор ҫине ҫакӑн пек сӑмахсем ҫырса хунӑ: «Лӑпкӑн сывӑрӑр, Тӑван ҫӗршыв паттӑрӗсем. Сирӗн умӑрта эпир ӗмӗрӗмӗр пуҫ тайӑпӑр». Атте вилтӑпри ҫине виҫӗ чечек кӑшӑлӗ хутӑмӑр: аннерен, хамран, упӑшкаран. Ак ҫакӑн пек май-

лашрӗ манӑн пурнӑç, Арӑслан. Телейлӗ-и?— тесе ыйтӑн эсӗ. Ӳпкелешместӗп. Çурт çавӑртӑмӑр Хветюкпа. Шоферта ӗçлет вӑл колхозра, ӗçлеме те пултарать, çемьене те манмасть. Пӗлтӗр ывӑл çуралчӗ пирӗн. Хветюк пекех кӑвак куçлӑ, шурӑ çӳçлӗ. Кукашшӗ ячӗпе Георги тесе чӗнес терӗмӗр. Халӗ утакан пулчӗ ӗнтӗ, «анне», «атте» теме вӗренчӗ.

Эсӗ те авланнӑ иккен, Арӑслан. Ачи те пулмалла, терӗ Хветюк. Çӑва тухсан тархасшӑн, килсе курӑр пирӗн пата пӗтӗм çемйӗрпе. Май вӗçленнӗ чух, июнь пуçламӑшӗнче ытарайми çанталӑк тӑрать кунта пирӗн. Роза çурӑлать, ырӑ шӑршӑ тӑрать таврара. Ял хӗрринчи çерем çинче хӗпхӗрлӗ мӑкӑнь çеçкисем куçа йӑмӑхтараççӗ. Ҫаççерен юрӑ янӑрать ял çийӗн, ирӗклӗ те чуна пырса тивекен юрӑсем, сӑрт-ту юррисем янӑраççӗ. Эп хам та нумай-нумай юрӑ пӗлетӗп ӗнтӗ тӑван чӗлхемпе. Хветюк та перкелешет молдаванла. Анчах юрласса вӑл çаплах чӑвашла юрлать.

Килсе курӑр, Арӑслан. Питӗ, питӗ кӗтетпӗр сире.

Иванна, Хветюк, Георги.

Х. Ç. Кун пек вӑрӑм çыру çырса курманччӗ халиччен. «Ытлашшишӗн каçар, çитменнине çитер», теççӗ халӑхра. Çапла пултӑр ӗнтӗ. Хӑвӑртрах çыру çырса яр».

— Атте, атте, тетӗп...— Пӑхатӑп та, тӑват çулхи ывӑлӑм мӑкӑлтатать ура айӗнче. — Эс мана юйятмастним, атте.

— Ай, пӗчӗк Русланӑм манӑн, ай, пӗчӗк кӑлтӑрмачӑм, мӗн кичем пулчӗ-им сана аçусӑр?— алла тытса, йӑпатма тӑрӑшатӑп ывӑлӑма.

Вӑл мана ыталаса илет те каллех хӑйӗн ыйтӑвӗсемпе аптратма пуçлать.

— Атте, Вьетнамйя вӑйçӑ пӗтнӗ тейӗ анне. Чӑнах пӗтнӗ-им?

— Чӑнах, ывӑлӑм, чӑнах,— тетӗп Руслана.

— Тек нихçан та пулмасть-и вӑйçӑ?

Мӗн калас манӑн Руслана? Чим, ун çуралнӑ кунне самолет илсе хунӑччӗ эпир амӑшӗпе. Менелникчен тепӗр эрне-ха, Руслан хӑй пӗлмест çав тетте çинчен. Ара, пурпӗрех мар-и, хӑть ун чух, хӑть паян пар ӑна çав теттене. Вылятӑр, савӑнтӑр ача!

Тепӗр самантран Русланӑн ниçта шӑнӑçайми телейӗпе тулса ларать пирӗн çурт... Савӑнать, кӑшкӑрать, сиккелет тӑват çулхи ывӑлӑм.

Эпӗ вара Иванна-Арçурие манаймастӑп.

# ХУРКАЙӐК ÇУЛЕ

## 1

Сентябрь уйӑхӗ. Йывӑççен сарӑхнӑ çулçисем, сулхӑн çилпе татӑлса ӳкес мар тенӗ пек, вӗлтӗртетсе чӗтреççӗ. Виçӗмкун çумӑр çуса иртнӗччӗ — çӗр сивӗ те чӗрӗ, çул çинчи кӳлленчӗксем паян та типсе çитеймен.

Илем, нихӑçан йӑлӑхтарми кӗрхи илем. Чӑнкӑ тусем хӗррипе вырнаçнӑ Çӗньялтан тухсанах анлӑ улӑхсем пуçланаççӗ. Çырмана пӗвелесе лартнӑран, шыв çырантан тухнӑ та пӗчӗк варсем тӑрӑх юплене-юплене кайнӑ. Хӗвел çутинче ун пичӗ кӗленче пек йӑлтӑртатса выртать. Çул çинçе пилӗклӗ хӗр-ташӑçӑ аллинчи хӑю пек авкаланать, тусем хӗррипе çаврӑнать те кивӗ шыв арманӗ патӗнче Çарӑмсана юхса кӗрекен пӗчӗк çырма урлӑ каçать, вӑрӑм туран хӑпарса, хыр вӑрманне кӗрсе çухалать.

Çулӑн пӗр енче — çамрӑк та тӳрӗ хыр йывӑççисем, тепӗр енче, çывӑхри юманлӑха çитиччен — сип-симӗс калча. Хутӑш вӑрман пӗтрӗ те улма йывӑççисен питомникӗ пуçланчӗ. Умра — чус витнӗ икӗ пӳрт. Тирпейлӗ çавӑрса тытнӑ картари утӑ капанӗсем граждан вӑрçи вӑхӑтӗнчи салтаксен тӑрнашкаллӑ калпакӗсене аса илтереççӗ, пусӑ тараси, мӑйне тӑсса, сӑмсипе пӗлӗте сӑхать.

Питомник тӗлӗнче алӑ тӑратса чарчӗ мана брезент сумка çакса янӑ вунултӑ-винçичӗ çулсенчи йӗкӗт. Чарчӗ те:

— Çавӑнта, иккӗмӗш посадкӑна çитиччен, лартса кайӑрха, пичче,— терӗ хӑюллӑн.

— Ăçтарах вӑл, инçе-и кунтан?— ыйтрӑм эпӗ.

— Шӑп Йӑмраллӑпа тӗлме-тӗл. Пулса курман-и вара?

— Йӑмраллӑ тетӗн? Шӑп çав яла кайма тухнӑччӗ-ха эпӗ. Лар апла. Çул кӑтартса пырӑн... Кӑмпаран-и-мӗн?

— Çук, кӑмпаран мар. Кӑмпи туллиех те-ха вӑрманта. Атте лесник манӑн. Пӗлтӗртенпех кунта пурӑнатпӑр. Шкула вара Йӑмраллӑна çӳретӗп. Унччен ялтах пурӑннӑ,— терӗ те йӗкӗт йӑпӑр-япӑр хыçалти ларкӑч çине хӑпарса ларчӗ, тыткӑч тупаймасӑр, ман плащран çатӑрласа тытрӗ.

Пӗр тикӗс кӗрлет мотоцикл. Кӗрхи вӑрманӑн йӳçенкӗрех шӑрши сӑмсана кӑтӑклать. Мӗнпур тавралӑх вуншар тӗслӗ катрамран тӑрать тейӗн: ешӗл калча, йӑмӑх хура çул, тӗл-тӗл сап-сарӑ, тӗл-тӗл хӗп-хӗрлӗ çулçӑсем, тӑп-тӑрӑ кӑваклӑхра тӗк пек шурӑ çӑмӑл пӗлӗтсем...

— Пичче, эсир пирӗн енче пулса курман-и?— хӑлха патӗнчех янрать çамрӑк çын. — Эпӗ кунтисем. Çуралнӑранпах кунта. Ниçта тухса курман. Çитес çул каятӑп ӗнтӗ.

Çул хӗрринче пӗчӗк кӳлӗсем пуçланчӗç. Вӗсен тӑрӑ кусӗсенче шереписене тураса ларакан шурӑ хурӑнсем кӑтрашкаланса чӗтреççӗ. Ытарма çук илемлӗ тавралӑх...

Çук, пулмасть, епле иртсе кайӑн çак илемрен! Пӗр тӑхтамасӑр чаркӑч çине пусатӑп. Йӗкӗт мотоцикл çинчен сиксе анать те, ӑнланаймасӑр, куçран пӑхать.

— Мӗнле чӗнеççӗ-ха çав сана?— лӑпкӑн ыйтатӑп унран.

— Сергей. Тантӑшсем Çеруш теççӗ. Анчах Сергей те, Çеруш та мар эпӗ. Атте мана Серго тесе çыртарнӑ.

— Мӗнле апла?

— Тахçан, хӑй çамрӑк чух, Орджоникидзене курнӑ та...

— Ну, ӑнлантӑм. Сергей апла. Мана Егор Егорович теççӗ. Итле-ха, Сергей, çитес çул кунтан каятӑп терӗн-и-ха? Йӑмраллӑ кӑмӑлна каймасть, эппин?

Сергей çак ыйтӑва кӗтменччӗ пулас, çапах çухалса кайнине кӑтартмарӗ.

— Начар теместӗп-ха. Вӑтам шкул пӗтеретӗп килес çул...

— Апла-и-ха?

Сергей, хурӑнсем енне тинкерсе, ураран урана пускалать, брезент сумкине сиктерсе илет.

— Вӑтам шкул пӗтернипех пурне те пӗлетӗп теме çукçке-ха,— тет вӑл хуллен.

— Вӑл çаплах ӗнтӗ. Мӗнле профессие кӑмӑллатӑн-ха вара?— калаçма хистетӗп ӑна.

— Амм, ну... художник пулас килет,— унччен хинчен те шӑппӑнрах мӑкӑртатать Сергей.

Хурӑн çинчен салакайӑк чӗвӗлтетсе вӗçсе анчӗ те, пӗчӗк хӑрӑк турат хуçӑлса кӳлле чӑмрӗ, хӑй йӗри-тавра çӳхе хумсем салатрӗ.

— Анчах кунашкал шухӑш патне епле пырса тухнӑ-ха эсӗ? Аçу лесник тетӗн. Аннӳ питомникра ӗçлет пулӗ-ха. Эс пур, кӗтмен çӗртен — художник.

— Мӗншӗн кӗтмен çӗртен?— тӑруках çиçсе йӑлтӑртаттарӗç Сергей куçӗсем.

— Тата...

Сергей, шухӑша кайса, пӗр самант чӗнмесӗр тӑчӗ те çапла каласа хучӗ:

— Пӑхӑр-ха, мӗн тери хитре пирӗн тавралӑх?!

— Хитре,— килӗшрӗм эпӗ.

— Йӑмраллӑ та илемлӗ. Анчах... тем çитмест ӑна. Калас-и мӗн? Сӑрӑсем, ман шутпа...

— Сӑрӑсем?

— Пӗлетӗр-и, пулас хуласем пирки мӗн шухӑшланӑ Кампанелла? Çуртсен стенисене çутçанталӑк пулӑмӗсен сӑнлӑхӗсемпе сӑрласа капӑрлатасси çинчен. Кашни çын

мĕнпур япалара тата лайăхрах пурăнма хĕтĕртекен илемлĕх курма пултартăр тенĕ вăл.

— Çапла,— тетĕп эпĕ. — Утопист хăй евĕрлĕ община тăвасшăн пулнă: пурте пуян, ытлă-çитлĕ, çав вăхăтрах пурте чухăн, çĕтĕк-çатăк. Анчах вĕсем Хĕвел хулинче пурăнаççĕ...

— Ун пирки мар-ха эп. Кампанелла монументлă пропаганда çинчен ĕмĕтленнине Владимир Ильич Ленин хăй ырланă. Ку вăл айван шухăш мар, ăна кăштах улăштарсан, унпа пирĕн вăхăтра та усă курма пулать, тенĕ-çке вăл.

— Анчах çуртсене чаплă фрескăсемпе капăрлатма чăннипех ăста художник кирлĕ.

— Пур-ха пирĕн ун пекки,— мухтанарах каларĕ Сергей. — Анчах ватăлса пырать. Малалла пирĕн, çамрăксен, унран вĕренмелле ĕнтĕ.

— Эс мана паллаштарăн-и унпа?

— Хăвăр ăçтан эсир, Егор Егорович?— мана пӳлсе ыйтрĕ Сергей.

— Райхаçатран.

— Йăмраллăна пĕр-пĕр тема шырама килетĕр пулĕ-ха?

— Учитель кунĕ çывхарать. Чим-ха, Сергей, Агафон Ефимч вĕрентет-и сире? Вăт çавăн çинчен очерк çырмалла манăн.

Сергей ман ыйту çине хуравламасăр çӳлелле пăхса тăчĕ. Унтан:

— Курăр-ха, курăр, хуркайăк!— кăшкăрса ячĕ вăл сасартăк, пĕчĕк ача пек хĕпĕртесе.

Янкăр кăвак тӳпене çурса, çуначĕсене çăмăллăн, ирĕклĕн вылятса, виç кĕteслĕ кайăк хур карти кăнтăралла вĕçет. Чим, юнашарах тепĕр карта, леререх виççĕмĕшĕ... «Сыв пул, сыв пул, сыв пул»,— тенĕн илтĕнет хуркайăк сасси. Тунсăхлă сасă.

Хыр вăрманĕ хыçне пытаниччен пăхса ăсатрăмăр эпир инçе çул тытнă вĕçен кайăксене.

— Пĕлетĕн-и,—тетĕп Сергее,— хуркайăк хăй çуралнă çĕршывне кашни çулах таврăнать.

— Тĕрĕсех ĕнтĕ,— тӳрех килĕшет вăл манпа. — Çуралнă çĕршыва мĕнпе танлаштарăн?

Йăмраллă шкулне пырса кĕнĕ чух хамăр редакторăн Илья Степановичăн сăмахĕсене аса илтĕм. Вăл, çак районта чылай вăхăт ĕçлесе, хăш учитель çинчен мĕн çырнине пилĕк пӳрнене пĕлнĕ пек пĕлсе тăраканскер, хальхинче вăрахчен шухăша кайса ларчĕ-ларчĕ те кулса ячĕ: «А итле-ха, кайса кил Йăмраллăна. Унта пĕр кукша учитель ĕçлет. Агафон Ефимч. Пĕр вăтăр çул ĕнтĕ»,— терĕ. «Мĕншĕн кулатăр-ха вара çавăн чухлĕ ĕçлет пулсан?»—кăсăк-

ланса ыйтрăм редактортан. «Çамрăклăха аса илтĕм, ара»— йăл кулчĕ Илья Степанович. Унтан, паçăрхи шухăш тыткăнĕнчен тухаймасăр, пуçне пăркаласа илчĕ те каллех кулса ячĕ: «Училищĕре вĕренеттĕмĕр,—терĕ вăл пăртакран.— Пĕр пӳлĕмре пурăнаттăмăр. Пĕрре Агафон патне килтен шăрттан ярса панă. Ял ачи темерĕн, никама пĕлтермесĕр, вăрттăн çиет шăрттана. Çиет те тумбочка айне пытарса хурать. Тутар ачи Рустем пурччĕ. Пĕррехинче, Агафон çук чух, Рустем урай çума пуçланă та тумбочкăна вырăнтан куçарнă. Кăшкăрать хайхискер: «Слон çăмарти! Слон çăмарти!» Чупса пытăмăр — шăрттан! Ну, кула-кулах çисе ятăмăр. Каçхине Агафон килчĕ те унта-кунта пăхкалать, çапах шарламасть хăй. Кайран та аса илмерĕ шăрттан çинчен. Лайăх мар пулчĕ пулмалла. Ара, çамрăк, хулана пуçласа тухнă. Вăт мĕнле... Кайса кил. Вăтăр çул ĕçлени вăл — хăех паттăрлăх...»

2

Учительсен пӳлĕмĕнче Агафон Ефимча тӳрех палласа илтĕм. Пуçĕ кукша, сăнĕ-пичĕ кӳлшек, çуталарах кайнă пиншакне йӳле янă. Хам мĕн ĕçпе килнине директора пĕлтерсенех, Агафон Ефимч сăнĕ ăшăнса улшăннă пек туйăнчĕ мана.

— Тархасшăн, акă вăл хăй те кунта,— терĕ директор.

Пӳлĕмре виçĕ-тăватă учитель пурччĕ, вĕсем пире чăрмантарас темерĕç пулмалла, тухса кайрĕç. Эпир виççĕнех тăрса юлтăмăр.

— Мĕн кăсăклантарать-ха çамрăк çынна? Каçарăр, хисеплесе чĕнме пĕлеймерĕм-ха,— йăваш сасăпа калаçрĕ Агафон Ефимч.

— Егор Егорович эпĕ,— терĕм ăна. — Сирĕн пĕр-икĕ урокăрта пулса курас кăмăл пур.

— М-м,— тем аса илнĕ пек, пĕр хушă чĕнмесĕр тăчĕ учитель, мана тĕсесе пăхрĕ, унтан çапла каларĕ:— Кăмăлăр пулсан, тархасшăн, эппин. Эсир хирĕç мар-и, Николай Данилч?

Эпир калаçнă вăхăтра васкасах тем çырма ларнă директор хирĕçлемерĕ.

Тепĕр пилĕк минутран эпир шăнкăрав хыççăн та лăпланса ĕлкĕреймен класа пырса кĕтĕмĕр. Учитель хăйпе пĕрле илсе килнĕ хура курак кĕлеткине курсан, ачасем каллех сĕрлесе кайрĕç. Агафон Ефимч пĕр вăхăт класс шăпланасса кĕтрĕ, паян кам çуккине журналта паллă турĕ, унтан лăпкă та пĕр евĕрлĕ сасăпа кайăк ӳт-пĕвĕн

тытăмĕ çинчен кала пуçларĕ. Эпĕ ачасене сăнарăм. Çук, витмерĕ вĕсене учитель сăмахĕ. Пĕри, ав, ыйхăпа аптраса ларать, тепри юлташĕпе тем пăшăлтатать, виççĕмĕшĕ кĕнеке вулать. Учитель хăй те курать-ха ĕнтĕ çакна, ачасене асăрхаттарса, сĕтеле указкăпа шакка-шакка илет вăл. Акă Агафон Ефимч сасси шăпланчĕ, ачасем, кĕнекерен пăхса, курак çунатне тетрадь çине ӳкерме тытăнчĕç. Çапла — шăнкăрав пуличченех.

Иккĕмĕш урок — хими урокĕ — вуннăмĕш класра пулчĕ. Класа кĕрсенех эпĕ тăваттăмĕш ретре ларакан Сергее куртăм та, ун хыçĕнчи парта хушшинче пушă вырăн пуррине асăрхаса, унта лартăм.

Анчах çак урок мĕнле аталанса пыни те килĕшсе каймарĕ мана. Агафон Ефимч вунă-вуникĕ ачана пĕр евĕрлĕ опыт тутарчĕ, вара паçăрхи пекех лăпкă та кичем сасăпа çĕнĕ тема ăнлантара пуçларĕ.

«Çапла,— шухăшларăм эпĕ,— педагогĕ ку чи чаплиех пулмарĕ-ха. Анчах вăтăр çул (редактор та çакнах палăртрĕ) пурнăç çинчен, чĕрĕ çутçанталăк çинчен, Менделеев саккунĕ çинчен ачасене чи малтан çак Агафон Ефимч каласа кăтартман-и-ха? Акă вĕт ăçта пĕтĕм тупсăмĕ. Пурте Сухомлинский пулаймĕç. Кунта, ялти шкулта, учительсем ахаль те çитмен чухне, Агафон Ефимч та хăй вырăнĕнчех ĕнтĕ. Акă уроксем хыççăн унпа çывăхрах паллашăп, тĕплĕнрех ыйтса пĕлĕп, тен, вăл лайăх воспитатель, тен, кружок ертсе пырать, тен, фронтра паттăр çапăçнă. Журналиста улăм пĕрчи кирлĕ, çавăнтан çаклансан, ишсе тухма пĕлĕттĕм-ха...»

Çак вăхăтра умра ларакан Сергей ман енне çаврăнчĕ. Çаврăнчĕ те парта çине хут татки хучĕ. Иксĕмĕр вăрттăн ĕç тунине никам та сисмерĕ-ши тесе, унталла-кунталла пăхкаларăм, хут çине тинкертĕм. «Хăвăр вăхăтăра сая ян çеç. А. Е. очерк геройĕ мар. Ун çинчен кирек хăш учительтен е шкул ачинчен ыйтăр»,— тенĕ унта.

Пит пĕçерсе кайрĕ. Мĕн ку? Мĕншĕн-ха мана ун çинчен никам та каламарĕ? Учительсем те, директор та?.. Пĕлетăркачах... Мĕншĕн-ха?

3

Учительсем виççĕмĕш урока салансан, пӳлĕмре эпир аслă пионервожатăйпа Августина Павловнăпа иккĕнех тăрса юлтăмăр. Пĕр вăхăт иккĕленсе ларнă хыççăн эпĕ ăна Сергей çырса панă хут таткине кăтартрăм. Вăл мана ăнланчĕ пулас. Вара çултаlăк каярах çак шкулта мĕн пулса иртнине тĕпĕ-йĕрĕпех каласа пачĕ.

...Вăхăт шутăр, ирттĕр черетленсе, çулсем ĕмĕр авăрне ăсанччăр, анчах çав кĕрхи командировка пуçран нихçан та тухас çук. Тахçантанпах асăрхатăп ĕнтĕ: чуна хускатса—е пăлхатса, е ăшăтса — хăваракан пĕр-пĕр самант кĕрсе юлать те чĕрене яланлăхах унта вырнаçать. Кайран пурнăçра тĕл пулакан çавăн йышши пулăмсене те унпах танлаштарса тĕрĕслетĕн вара.

Астăватăп-ха, вăрçă хыççăнхи çулсенче пирĕн яла таçтан аякран витре тĕплекен Мингалим пичче пынăччĕ. Пирĕн кӳршĕре, Эрнеслу аппа патĕнче, чарăннăччĕ вăл. Эпĕ, пилĕк-ултă çулсенчи ача, тимĕр шаккакан ăстаçăн асамлă пултарулăхне курма кайрăм çапла, ун çывăхне пыма хăяймасăр, хапха тăррине улăхса, чылайччен пăхса лартăм. Ĕçĕ нумайччĕ пуль Мингалим пиччен, анчах мана, пир йĕмлĕ ачана, курчĕ те вăл мăлатукне те пăрахрĕ.

— Кам пулан-ха эс, малай, атте-анне пур-и сан?— ыйтрĕ вăл, ман çине ăшшăн пăхса.

— Пур та çав, ашшĕ вăрçăран таврăннăранпах вырăнпа выртать,— терĕ маншăн Эрнеслу аппа.

Мингалим пичче ним чĕнмесĕр пĕр хушă ман çине пăхса тăчĕ. Ырă мар пулса кайнипе, эпĕ пуçа пăртăм. Тепĕр самантран вара ăстаçă аллинчи мăлатук тимĕр çинче унчченхинчен те хытăрах, хĕрӳллĕрех ташлани илтĕне пуçларĕ.

— Кил-ха кунта, малай,— чĕнчĕ тем вăрахран Мингалим пичче.

Мĕн тери пысăк чунлă çын пулчĕ витре тĕплекен çак тутар абзи! Тин кăна туса пĕтернĕ вăрăм авăрлă тимĕр курка тыттарчĕ те вăл мана:

— Аннӳне кайса пар, парне пултăр, кил-çуртра кирлĕ пулĕ,— терĕ лăпкăн.

Ытла та ырăччĕ Мингалим кăмăлĕ. Çук, манаймастăп çакна. Тепĕр япала та асран тухмасть.

Вăхăт иртнĕçемĕн, пурнăç лайăхланса пынăçемĕн ура çине тăнă атте бригадăри ут таврашĕ валли сӳс-пăяв яватчĕ. Хĕрлĕ çӳçлĕ, тăсланкă пӳ-силлĕ Клементтей бригадир час-часах пырса çӳретчĕ пирĕн пата. Пакăлтиччĕ хăй. Каçсерен чĕлĕм тĕтĕмĕ явăнатчĕ пӳртре. Хăйĕн халапĕсене чăтăмлăн итлесе ларакан тупăннипе-ши, бригадир пурăна киле таçтан çуршар е пĕрер кĕленче эрех хĕстерсе киле пуçларĕ. Аттен суранĕсем сипленсе çитменччĕха, çавăнпа эрех таврашне ăша илместчĕ вăл. Клементтей вара хăй кучченеçне хăех пушатса тухса каятчĕ.

— Çапах эрех вăл — лайăх эмел,— терĕ пĕррехинче бригадир,— ыраш çăнăхĕнчен тусан, чăн-чăн спирт пулать.

Ҭен, санӑн, Мӗтри пичче, хӑвӑн юхтарма вӗренмелле? Сурану сипленӗччӗ.

— Э, ҫук, ҫук,— терӗ атте.— Тыррине ӑҫтан илес халь. Пулсан, хырӑма тӑрантармалӑх ҫӑкӑр пӗҫерӗттӗмӗрччӗ-ха.

Ҫак калаҫу хыҫҫӑн нумай та вӑхӑт иртмерӗ, пӗрре ҫапҫапла ҫӗрле хапха сасси пулчӗ те, картишне тулли лав нӑтӑртатса кӗчӗ.

— Тух-ха, Мӗтри пичче,— илтӗнчӗ чӳречерен Клементтей бригадир сасси. Ҫак сасӑра кӗтмен ҫын васкани, теме пула хыпӑнса ӳкни сисӗнчӗ.

Атте картишне тухрӗ. Эпӗ ун хыҫҫӑнах пӑлтӑра, чӳрече тума кастарнӑ шӑтӑк патне, йӑпшӑнтӑм.

Хашка-хашка атте ҫывӑхӗнче тем мӑкӑртатрӗ Клементтей.

— Кирлӗ мар,— илтӗнчӗ аттен йӑваш сасси.

— Ухмаха ан ер, Мӗтри пичче,— терӗ бригадир.

— Илсе кай...

— Аҫта хурас? Ну, сӑмакун мар-тӑк, ҫӑкӑр пӗҫер, эппин. Хаклӑ ыйтмӑп.

— Илсе кай,— ҫирӗппрех каларӗ атте.

— Ан лӑпӑртат...

— Халех!— кӑшкӑрчӗ атте. Унтан хапха уҫрӗ: —Халех!

Атте Клементтейӗн тулли лавӗ хыҫҫӑн хапхана хупса хучӗ те, хӑйне хӑй лӑплантарса, чылайччен пусма ҫинче ларчӗ.

Тикӗт пек хура каҫчӗ ҫавӑн чухне...

Асаилӳсем?.. Мӗншӗн пуҫа килчӗҫ вӗсем ҫирӗм-ҫирӗм пилӗк ҫул иртнӗ хыҫҫӑн?

Эпӗ урам хӗррипе, хӑма сарса тунӑ ансӑр ҫулпа, утатӑп. Тин курнӑ ҫынсем, учительсен пӳлӗмӗ, пушӑ коридор, урокларнӑ классенчи ӗҫлӗ калаҫу... Куҫ умӗнче каллех Августина Павловна. Вӑл каласа панине аса илсе утатӑп.

Пурнӑҫ урокӗсем. Ҫынлӑх урокӗсем. Этем чӗринче йӗр хӑвармасӑр иртсе кайма пултарайман уроксем.

Эпӗ ӑнланатӑп вӗсене, ҫулталӑк каярах хӑйсемпе пӗрле кӗреҫесемпе витресем йӑтса шкул пахчине пынӑ ачасене.

Рисованипе черчени учителӗн ырӑ тӗллевне питӗ лайӑх ӑнланатӑп эпӗ паян. Вӑл чи малтан панӑ ҫак шухӑша: «Шкул пахчин пӗр кӗтесӗнче сад ӗрчетме пуҫлас. Кашни ҫулах вӗренсе тухакансем пӗрер улмуҫҫи лартса хӑварччӑр унта. Каярах йывӑҫсем ҫимӗҫ пама пуҫлӗҫ. Ҫакӑ учительсене, ялти мӗнпур халӑха Йӑмраллӑра вӗренсе тухнӑ ҫамрӑксем Тӑван ҫӗршыв ырлӑхӗшӗн ӗҫленине аса илтерсе тӑ-

ре. Мен чухлĕ улмуççи — çавăн чухле хĕрпе каччă. Мен чухлĕ çимĕç, çĕршыва кӳрекен çавăн чухлĕ усă»,— тенĕ. Пĕлетĕп: çак шухăша Иван Ипатьевич хăй ăсăпе мухтанас, çынна тĕлĕнтерес тесе паман.

Çынлăх урокĕ...

Колхоз машини питомнике вĕçтернĕ чух Иван Ипатьевич çӳлте, кăвакарнă çӳçне вĕлкĕштерсе, кабинăн хыçалти чӳречине хӳтĕлеме çирĕплетнĕ решеткерен тытса, савăнăçлăн йăл-йăл кулса пынине те куратăп эпĕ паян. Шалта, шоферпа юнашар, Иван Ипатьевич тантăшĕ Агафон Ефимч ларнă ĕнтĕ. Паллах, унта ларса пынă вăл.

Кайран икĕ юлташ улмуççисем туяннă. Тепĕр кун вара шкул пахчине ачасем пухăннă.

— Ирпе питĕ хитре çанталăк тăратчĕ,—аса килет Августина Павловна каласа пани. — Ачасем шăтăк алтмалли вырăнсене палăртса хучĕç, лаша витине кайса тислĕк илсе килчĕç. Хĕрачасем кĕвенти-кĕвентипе шыв йăтрĕç. Пирвайхи улмуççине чи лайăх паллăсемпе вĕренекен Сергей Назаров лартрĕ. «Халĕ ĕнтĕ вĕренсе тухсан та шкултах юлăн, аçу вăрманта, хăв кунта лесник пулăн»,—шӳтлерĕ Иван Ипатьевич. Тепĕр икĕ сехетрен ĕç пĕтĕмпех вĕçленчĕ. Ачасем канма ларнăччĕ, ушкăнпа юрă юрлатчĕç. Çав вăхăтра хашкаса чупса çитрĕ Агафон Ефимч шкул пахчине. «Манăн улмуççисем, манăн улмуççисем...—сывлăш çавăраймасть хăй. — Каярах юлтăм, пулать ун пекки, темех мар, ачасем...» Унтан Мамуткин енне çаврăнать.

«Мамуткин, эсĕ... ил-ха кĕреçӳне, авă, кĕтесрине калла кăларас пулать, ара, манăн вăл... Хам суйласа илтĕм питомникре... Каярах юлтăм... Темех мар... Вот, вот, çавна, кĕтесрине, унтан... ав çав виççĕмĕшне, çук, йăнăшатăп... Тăваттăмĕшне. Вĕсене пурне те эпĕ хамăн килти пахча валли кăкласа килнĕ...»

Ачасем шăпланчĕç. Пурте Иван Ипатьевич мĕн каласса кĕтеççĕ.

Мĕн пулса иртнине хăй те тăруках ăнкарса илеймерĕ Иван Ипатьевич. Пĕрре шуралчĕ, пĕрре хĕрелчĕ вăл. Анчах Агафон Ефимч чăнласах калаçнине курчĕ те кĕреçине Мамуткина тыттарчĕ. Унтан, куçлăхне илсе, ăна ал тутрипе сăтăркаларĕ... Ачасем çине тепĕр хут пăхса илчĕ... Вара ĕшеннĕн хапха патнелле утрĕ...

— Унтан?— ыйтрăм эпĕ пĕр вăхăт шăп ларнă Августина Павловнăран.

— Çав кун пуçласа юр çурĕ. Йĕпе юр, çумăрпа хутăш... Кайран Назаров вăрмантан пилеш йывăççисем кăларса килчĕ. Агафон Ефимч килне тăпăлтарса кайнă улмуççисем

вырăнне çавсене лартрĕç... Авă, кунтанах курăнать. Пилеш çулçисем халĕ те ешĕл-ха.

Августина Павловна шăпланчĕ. Унтан, тем вăхăтран:

— Шел, чи лайăх учитель ĕçлеме пăрахрĕ,— тесе хучĕ. — Пĕр çулталăк ĕнтĕ Иван Ипатьевич шкула килсе те курăнмасть. Пенсие тухрĕ. Клубра ĕçлет. Ачасем кашни каçах ун патне çӳреççĕ.

## 4

Очерк пулаймасть, Агафон Ефимчпа тепĕр хут тĕл пулас килмест манăн çакăн хыççăн. Халех каялла вĕçтерес-и? Çук. Тем чарса тăрать мана çак ялта.

Университет пĕтерсе райхаçатра ĕçлеме пуçланăранпа иккĕмĕш уйăх çине кайрĕ. Мана, Чăвашра ӳссе çитĕннĕскере, Тутар республикин кăнтăрти районне ячĕç. Кунта та чăвашсем нумай. Анчах (мĕнпе-тĕр) урăхларах вĕсем. Çутçанталăкĕ те урăхларах пек туйăнать ку енче. Чăваш çĕршывĕнчен кăшт кăнтăртарах пулнăран-ши çакă?

Унта, Чăвашра, кашни виç-тăват çухрăмранах ял. Урамĕсенче ватă йăмрасем кашласа лараççĕ, пахчисенче — улмуççи, чие сачĕсем. Çурчĕсене хăшне хыртан, хăшне кирпĕчрен тунă. Çурт умĕнче — шыв колонкисем е тарасаллă пусăсем. Кунта вара, Тутарта, ялĕсем йăвă вырнаçман — вуншар, вунпилĕкшер çухрăм вĕсен хушшисем. Çуртсене ытларах ăвăсран тăваççĕ. Садсем сахалрах. Туллă-сăртлă уйсенче нефть вышкисем мăнаçлăн курăнса лараççĕ. Сăртсем айĕнчен çăлкуççем палкаса тапаççĕ. Чăвашри пекех вăрмансем нумай, анчах хыр е юман вăрманĕ мар — хутăш вăрман: çăка те, ăвăсĕ те, юманĕ те — пурте пĕрле.

Йăмраллă вара районти ытти ялсенчен урăхларах. Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар пек, Куйбышевпа Новокуйбышевск пек, икĕ пая уйăрма пулать çав яла: ĕлĕкхи тата паянхи. Ĕлĕкхинче — пилĕк стеналлă йывăç çуртсем, чӳрече хашакĕсене ăста платниксем чăваш тĕррисемпе эрешленĕ, пӳрт тăррисене шиферпа е шуçпа витнĕ, паянхинче — хулари пек капăр чул çуртсем. Икĕ хутлисем те пур. Тӳп-тӳрĕ урамсене асфальт сара пуçланă. Çитсе тăтăм та çак çуртсем патне тӳрех çул çинче Сергей каланă сăмахсене аса илтĕм. Акă мĕншĕн Кампанелла çинчен, фрескăсем çинчен сăмах тапратрĕ иккен вăл.

Икĕ хутлă çуртăн пĕр енче, алăксăр-чӳречесĕр стена çинче, чеканка меслечĕпе граждан вăрçинчи çапăçусене аса илтерекен пĕр пысăк панно туса хунă. Лашасем çил пек вĕçтереççĕ, пулемет умĕнче матрос кĕпи тăхăннă çын

тăшмана тĕллесе выртать. Ялав йăтса чупакан çын аманнă пулмалла, кăкăрне каçăртса, çĕр çине ӳкес умĕн хыçри тусĕсене кăшкăрса тем калать. Тусĕсем юнашарах, авă, пĕри, ялава илме хатĕрленсе, аллине тăснă.

Юнашар çурт çинче те картина. Унта, тĕрлĕ тĕслĕ чулпа кантăк татăкĕсенчен меслетлесе, пысăк хĕвелпе çап-çамрăк ача ӳкерсе хунă.

Утнăçемĕн çуртсем çинче хушпуллă-тухъяллă хĕрарăмсем, çăпата сырнă, аллине кĕсле тытнă арçынсен мĕлкисем курăнса кайрĕç. Урам варринче — ку вăл ялăн тĕп площачĕ пулĕ-ха — пăшал тытса тăракан салтакăн чул кĕлетки мăнаçлăн курăнса тăрать. Кăшт хыçаларах — Хисеп хăми. Ун çине çуллă сăрăпа ĕçре малта пыракансен сăнĕсене ӳкернĕ. Хăйсен геройĕ те, орденсемпе медальсем илнĕ нумай-нумай ĕçченсем те пур иккен ялта.

Унтан та ытла мана художник тунă япаласен пахалăхĕ тĕлĕнтерчĕ. Чăн-чăн профессионал ĕçĕсем пек вĕсем.

Каç пулса килет. Клуб умне çывхарнă чух эпĕ каллех хамăн çĕнĕ тусăма, Сергее, куртăм. Айăпа кĕнĕн пăхса илчĕ вăл ман çине, эпĕ вара ун умĕнче хам ырăмарлантăм. Телее, шкул пирки сăмах-юмах хускатмарĕ вăл.

— Атьăр хăвăртрах, эпĕ сире пĕр çынпа паллаштарасшăн,— терĕ Сергей. —Анчах эсир хăвăр ăçтанне ан калăр ăна, манăн юлташ е тăван вырăнне пулăр.

Килĕшрĕм.

Алăкран кĕрсенех, эпĕ хама пĕр-пĕр художество галерейине лекнĕ пек туйса илтĕм. Туллиех-мĕн кунта картина, пĕчĕк тумбăсем çинче — шап-шурă бюстсем. Чи варринче — арçын сăнĕ. Çав çыннăн куçĕсем сана тĕпчесе, тĕсесе пăхаççĕ.

— Кампанелла,— ăнлантарчĕ Сергей, эпĕ тӳрех çак портрет патне пырса тăрсан. —Вăл питĕ паттăр, питĕ хăюллă, питĕ пултаруллă çын пулнă. Хăйĕн çĕршывне Испани пусмăрĕнчен хăтарас тесе тăрăшнăшăн вăтăр çул тĕрмере ларнă. Аллă тĕрме курнă хăй пурнăçĕнче. Çичĕ хутчен тискеррĕн асаплантарнă ăна. Çиччĕмĕш хутĕнче хĕрех сехет вилĕм умĕнче тăнă. Пурпĕрех пĕр сăмах та чĕнмен. Юн юхтарса выртаканскере, ăна тарăн шăтăка пăрахнă. Хуçăлман Томазо. Каярах Галилее хӳтĕлеме те вăй тупнă. Ирĕклĕ те телейлĕ çынсен хули çинчен те ĕмĕтленме пăрахман.

— Сергей,— терĕм эпĕ, хам тĕлĕннине пытараймасăр,— çак ĕçсене мĕн, пĕтĕмпех пĕр çын тунă-и?

— Мĕншĕн пĕтĕмпех? Кашни çуллах пирĕн пата художество училищинче вĕренекенсем килеççĕ. Унччен Иван

Ипатьевич вĕрентнĕ йĕкĕтсем. Унсăр пуçне... Эпир те... Çак портретсем — пурте хамăр ял çыннисен сăнĕсем. Пейзажсем те кунтиех. Ну, атьăр-ха ав çав пӳлĕме, хал-халь урок пуçланмалла пирĕн.

Эпир юнашар пӳлĕме кĕтĕмĕр. Вунă-вуникĕ ача мольберт çумне карнă рамка çине тинкерсе пăхаççĕ. Вĕсемпе юнашарах—лутрарах пӳлллĕ, кăвак çӳçлĕ, сăмси çине куçлăх лартнă типшĕм çын тăрать, ыттисем пекех, пир çине тимлĕн сăнаса пăхать. Çаплах ĕнтĕ, ку вăл — Иван Ипатьевич. Акă вăл пĕр вăхăт шухăша кайса тăчĕ, унтан куçлăхне илчĕ те ăна ал тутрипе сăтăркаларĕ, каллех тăхăнчĕ, пĕрре картина çине, тепре ачасемпе тăракан кăтрарах хура çӳçлĕ йĕкĕт çине пăхрĕ.

— Çакна ăнланас пулать, Мамуткин,—терĕ вăл лăпкăн.— Атăл хĕрринчен чăвашсем кунта ахальтен тарса килмен. Эпир халь пурăнакан вырăн вунсаккăрмĕш ĕмĕр варринче чи улах çĕрсенчен пĕри пулнă. Хусан кĕпĕрнинче, Атăл хĕрринче çĕр сахал пулни, çитменнине, вĕсене улпутсем, мăнастирсем турта-турта илни, унтан, паллах ĕнтĕ, вырăс мар халăхсене ирĕксĕр тĕне кĕртни чăвашсене çемйи-çемйипех кунта килме хистенĕ. Акă, Мамуткин, эсĕ Ситукан çак тавралăха килсе лекнине сăнласа парасшăн. Маларах каланине шута илсен, мĕнлерех пулмалла унăн сăн-пичĕ? Вăл хăйĕн пурнăçĕнче пĕрремĕш хут çакăн пек ирĕклĕхе тухса, кунти хура тăпрана, йĕри-тавра аслă вăрмансем хупăрласа тăракан уй-хире курса, савăнмасăр тăма пултарайманах. Халлĕхе вара çав савăнăç палăрмасть-ха Ситукан питĕнче.

Каллех пĕр вăхăт шăп тăчĕ Иван Ипатьевич. Вара сывлăш çавăрчĕ те шкул ачин картинине малалла тишкере пуçларĕ:

— Çакна та манас марччĕ, ачасем. Эпир пĕр-пĕр курăка, йывăçа пир çине ӳкеретпĕр. Акă ку картинăра та йывăçсем пур. Анчах мĕнле йывăçсем вĕсем? Тӳрех пĕлме çук. Искусствăра вара пурте уçăмлă пулмалла. Çуркунне. Ака уйăхĕ. Юр та пĕтĕмпех кайса пĕтмен-ха. Кунта ытти йывăçсемпе çумăн ирех чечеке ларма ĕлкĕрнĕ çирĕк йывăççине ӳкерсе хунă пулсан, питĕ вырăнлăччĕ. Çапла, çапла... Çуркунне çирĕк аякранах курăнса ларать. Унăн тăрри сарă хĕрлĕ кăчкăпа витĕнет. Çак вăхăтра çирĕке çерçи пысăкăш кайăксем илешеççĕ. Çирĕктăрри теççĕ вĕсене. Çирĕк вăрри — вĕсен юратнă апачĕ. Сăмах май каласан, çирĕк хуппинчен хĕрлĕ хăмăр сăрă та тăваççĕ. Çирĕк йĕкелли вара аквариумри шыва таса упрама пулăшать. Вăт çавăн пек вăл, çирĕк. Картинăна чечеке ларнă йывăçа

кёртнĕ пулсан, вăл пир çинчи çын туйăмне лайăхрах уç-са пама пулăшатчĕ пуль.

Кăмăллăн юхса пычĕ калаçу. Вăхăт шунăçемĕн çак тип-шĕм, лутрарах пӳллĕ старик калама çук пысăк чĕреллĕ, ăслă, вĕçĕмсĕр ырă çын пулнине туйса илтĕм. Самантлăха шухăшăмра Агафон Ефимч сăнĕ мĕлтлетрĕ. Вăл ирттернĕ биологи урокне эпĕ тин çеç Иван Ипатьевич çирĕк çинчен каласа панипе танлаштарса пăхрăм. Вара хам шухăшран хам та вăтанса кайрăм. «Айван, мĕнле танлаштару пулма пултартăр кунта»,— тесе тарăхса та илтĕм.

Пĕрер сехет иртнĕ хыççăн ачасем пӳлĕмрен тухрĕç. Эпĕ вара шухăшсен танатинчен хăпаймасăр, такам тухат-нă пек, пĕр вырăнта хускалмасăр тăтăм. Иван Ипатьевич киле кайма васкамарĕ-ха. Сĕтел çинче выртакан папкăри хутсене тепĕр хут пăхкаларĕ вăл, кăранташпа тем паллă турĕ, унтан, аллине кăкăрĕ тĕлне хĕреслетсе тытса, хыçлă тенкел çине таянчĕ. Мана та тин çеç асăрхарĕ пулмалла вăл.

Эпĕ ун патне çывхартăм.

— Костин, райхаçатран,— терĕм ăстаçа. — Калăр-ха, ăçтан çакăн чухлĕ ĕçлеме вăй çитеретĕр эсир?

Вăл, тĕлĕннĕ пек, хулпуççисене сиктерсе илчĕ те пĕр шутласа тăмасăр:

— Ĕççĕр пурнăç та çук,— терĕ.

— Хирĕçлеместĕр пулсан, тепĕр ыйту парам-ха, эппин,— хăюллантăм эпĕ. — Картинăсенчен ытларахăшне исто-ри темипе ӳкернĕ. Ачасем те, авă, ун патнех туртăнаççĕ...

— Ăнланатăп,— пӳлчĕ мана Иван Ипатьевич. — Кура-тăр-и, эпир паян лайăх пурнăçпа пурăнатпăр, малашне та-та лайăхрах пурăнма ĕмĕтленетпĕр, пурăнăпăр та. Нумай пулать-и-ха, акă, хамăр выçă хырăмпа, çĕтĕк-çатăк тумпа çӳрени? Манатпăр тепĕр чух çавна. Кам тунă-ха паянхи тулăх пурнăçа? Çавсем, выçăллă-тутăллă, çĕтĕк-çатăк çӳ-ренĕ çынсем. Ĕнерхине лайăх пĕлсен, ыранхи тата уçăмлă-рах курăнмалла вĕт-ха. Акă мĕншĕн эпĕ «ку вăл—иртни-пĕтни, ку вăл — аваллăх» тенине йышăнмастăп. Тăван çĕршыв кунçулĕ пире пурнăça тĕрĕс хаклама пулăшать. Иртнĕ Аслă вăрçă çулĕсенче вырăссен ĕлĕкхи паллă çар-пуçĕсен паттăрлăхне халăх ахальтен аса илчĕ тетĕр-и? Вĕсен паттăр тĕслĕхĕ те совет çыннисемшĕн тискер тăш-мана çапса аркатма пысăк тĕрев пулчĕ. Çапла мар-и?

— Иртни ăнланмалла-ха вăл, Иван Ипатьевич,— те-рĕм эпĕ. —Вăрçă пулнă, пĕр тĕллев пулнă — çĕнтересси. Халь мирлĕ вăхăт.

— Мирлĕ вăхăт пирĕншĕн çитмен-ха, çамрăк çыннăм,—

пěртте хумханмасăр калаçрě художник. —Пěлместěп, хăшě йывăртарах: те иртнě кунсем, те ку чухнехи вăхăт. Икě тěнче хушшинче идеологире самантлăха та чарăнма пěлмен хаяр кěрешӳ пырать... Эпир çěнě çыншăн, çынсен характерěнчи сиенлě енсене пěтерессишěн вăй-халăмăра шеллемесěр кěрешетпěр. Çав вăхăтра тепри, пирěнпе юнашар пурăнаканниех, вăхăт нушине, халăх нушине виçене хумасăр, пěр хăйшěн çеç хыпăнса, вěтеленсе çӳрет. Çапла, çын тăван халăхěн нуши-тертне пěлмесěр, хăйне çеç юратма пуçлани хăрушă...

...Çěнě уйăх сути çутатать аслă çула. Тӳпере пин-пин ěнчě пěрчипе йăлтăртатса, кайăк хур çулě тăсăлать.

Уçă, ырă.

Пěлетěп: çак кун ěмěрлěхех манăн асăмра тăрса юлě. Çак çул мана пěрре мар çавăрса килě-ха Йăмраллăна. Мана çеç мар, Сергей Назарова та, Мамуткина та, ытти нумай-нумай çамрăка та. Тăван çěршыв вучахě, асаттесем чěртнě вучах сӳнмест, вăл тěлěнмелле ăшă парса, çутă парса, хăйěн паянхинчен те хитререх пуласлăхě патне туртать.

## ВĚÇЕТ ҪĂВАҪАРЧĂН

Ҫорсаковсен çемйи, тěрěсрех каласан, упăшкипе арăмě — Петр Павловичпа Ксения Лукиничпа — çěр варринче çапла тăруках вăранса кайни ялта вуникě çул каярах пушар тухнăранпа та пулманччě-ха. Петр Павлович çурма чăнлăхра, çурма тěлěкре тăрса шыв ěçес килнине ăнланса выртатчě, анчах утиял айěнчи ырлăхран ниепле те хăпаймарě вăл, ун çинчен манса, каллех тутлăн çывăрса каясшăн пулчě. Çапла айкашса выртсах Петр Павлович çитмен çěрсене çитсе курчě: Çěрпӳ пасарěнче çӳрерě, арăмне савăнтарас тесе, лакпа çутатнă туфли туянчě, темшěн-çке, çав туфлие тăхăнса Шупашкара çитрě те пěр пысăк пуçлăх пӳлěмěн алăкне шаккарě. Пуçлăхě тата Хыçалкасра пурăнакан Уксах Якур пулчě тăчě. Унччenхи пек мар, куçлăхлă хăй. Унпа Петр Павлович иртнě вăрçа та пěр кунах тухса кайнăччě-ха, Сталинград патěнче те пěрле çапăçнăччě. Ěлěкхи тусне курнăран Петр Павлович, савăнăçне ниçта чикеймесěр, алăкран кěрсенех утса мар, чупса пычě ун патне. Анчах çывхарса пынăçемěн сěтел хушшинче ларакании Уксах Якур мар, унăн хăй ěçěнчи пуçлăхě, районсем хушшинчи строительство пěрлешěвěн председателě,

тачка сăн-питлĕ, лапсăркка куç харшиллĕ Лизунов пулса тăчĕ. «Ав ăçта килсе çитнĕ иккен эсĕ, эп пур... эп пур, евитлеме килнĕччĕ сан çинчен»,— шухăшларĕ Петр Павлович. Унччен те пулмарĕ,-пӳлĕме палламан çынсем пырса кĕчĕç те Корсакова хăйсем хыççăн утма хушрĕç. «Мана мар, мана мар, ав çавна илсе кайăр. Вăл путсĕр, путсĕр...»— тесшĕн пулчĕ Петр Павлович, анчах чĕлхи çаврăнаймарĕ.

Чанкăррр! турĕ çак самантра хăрушшăн.

Чи малтан вырăн çинчен арăмĕ сиксе тăчĕ.

— Аспати! Петра, Петра, мĕн куратпăр! Тăр-ха часрах!— çĕр çăтас чухнехи пек хыпăнса ӳкрĕ вăл.

Петр Павлович çутă çутмасăрах чӳрече патне чупса кайрĕ.

Икĕ хашак хушшинче йĕкĕр ывăçран кăшт пысăкрах хура чĕрчун çатăлтататъ. «Кайăк, кайăк пырса перĕннĕ кантăка! Эй, эсремет, чун сиксе тухатчĕ»,— тинех тавçăрса илчĕ Петр Павлович. «Кил-ха кунтарах, кил, мĕн çăмăлпаччĕ, кала»,— хăлаçланса хăй патне туртса илме хăтланчĕ вăл кайăка.

Çак самантра Корсаков хапха тăрринчен тем татăлса ӳкнине туйрĕ.

«Мĕн амакĕ?»— тавçăраймарĕ кил хуçи, вараваскасах çенĕке тухрĕ. Алăк уçнă-уçманах кушак аçин урмăш сассине илтрĕ вăл. «Эккей, пулать те иккен чарусăр!»— терĕ те Корсаков ыйхă татса çӳрекен кушак аçине урипе картишнелле тĕртсе ывăтрĕ, унтан, тăр-тăр çӳçенсе, каллех пӳрте кĕчĕ.

— Ырра мар ку,— мăкăртатрĕ Ксения Лукинична, çутă çутса. —Ай-юй, ара, кăвакарчăн вĕт ку. Çук, ырра мар ку, тем тесен те...

Суранланнă кăвакарчăн вăйсăррăн хăрах çуначĕ çине тĕршĕнчĕ.

* * *

...Çирĕм çул каярах килсе лекнĕччĕ Яков Сильвестрович Лизунов ку яла. Вăтăра çитсе пыракан тăп-тăп кĕлеткеллĕ, илемлĕ пит-куçлă, сарлака куç харшиллĕ çак хурарах арçын черченкĕ те ачаш хĕрарăмпа пĕрле килнĕччĕ. Лизуновĕ хăй вăтанса-именсе тăраканни мар, пурнăçри чăрмавсене хăюллăн сирсе пырса, тĕллеве пĕлсе, сарлакан та сулмаклăн утма хăнăхнă çын. Çавна пулах ĕнтĕ Серепенте хăй валли лайăх вырăн шыраса тупрĕ вăл, килнĕ-килменех тир-сăран кантурне ертсе пыра пуçларĕ. Ĕç парсан, Петр Павлович пурăнакан патшалăх çурчĕн пĕр

пӳлĕмне вырнаçрĕ çĕнĕ çемье. Арăмĕ валли çеç тупăнмарĕ юрăхлă ĕç, унта кайса пăхрĕ упăшки, кунта,— çине тămaрĕ курăнать, алă сулчĕ пулмалла та ачаш арăмне килтех хăварчĕ.

Анчах пурăнаймарĕ Яков Сильвестрович арăмĕпе. Малтанлăха ĕç вăхăтĕнчех кунне иккĕ-виççĕ те хваттерне чупса кайса килетчĕ вăл. Пĕр-икĕ уйăх иртрĕ-и çапла, çук-и, пĕрне-пĕри йăлăхтара пуçларĕç вĕсем, сайрарах та сайрарах кайса килме тапратрĕ юратакан упăшки Капитолина Ивановна патне. Тепĕр чух тата арăмне çĕрле пĕччен хăварни те пулкаларĕ. Йăлтах илтĕнетчĕ стена витĕр: хыпăнса ӳксе, макăрса кĕтсе илетчĕ арăмĕ ытарайми Яшенькине. «Ăçта çӳретĕн, чунăм, ăçта пăрахса хăвартăн мана?»— тесе кĕвĕлетчĕ. «Ялсенче пултăм, кăвакарчăнăм, çумăр лӳшкесе çурĕ те, çитсе ӳкеймерĕм сан патна»,— лăплантаратчĕ ăна упăшки. Унăн, кантур пуçлăхĕн, нимĕнле ĕç те пулман-ха ялсенче, мĕншĕн тесен кашни ялпорах тир-сăран пухакан пур. Тĕрĕс-и, тĕрĕс мар-и, кайран илтрĕ Петр Павлович, çук-мĕн, ялсенче çӳремен ун чух Яков Сильвестрович, кантурти бухгалтерпа, ачаллă пĕччен хĕрарăмпа, ирттернĕ вăл çав каçсене.

Каярах Лизунов чĕлхинчен «кăвакарчăнăм» сăмах та тухса ӳкрĕ. Ун вырăнне çуртра харкашни тăтăшах илтĕне пуçларĕ. Юрать-ха нумай пурăнаймарĕ çамрăк çемье. Кĕркуннеччĕ. Пĕрре çапла Капитолина пӳртрен икĕ чăматан илсе тухрĕ те Петр Павловича пулăшма чĕнчĕ. Нимĕн те чĕнмерĕ Корсаков çак ачаш хĕрарăма, нимĕн те ыйтмарĕ унран. Пуçĕнче çеç шухăш хыççăн шухăш çаврăнчĕ: этемле мар, кашкăрла пурăнать унăн çĕнĕ кӳрши. Эх, хăйĕнчен килет пулсан, кăтартĕччĕ вăл ăна хĕрарăмран мĕнле кулмаллине. Вĕсем, ав, Укçинепе улттăмĕш çул шăкăл-шăкăл калаçса пурăнаççĕ ĕнтĕ, ик ача ӳстереççĕ. Утăм тумаççĕ пĕр-пĕрне каламасăр.

Автобус çинех лартса ячĕ Петр Павлович телейсĕр Капитолина Ивановнăна. Çавна çеç астăвать ĕнтĕ халь: хитреччĕ вăл.

Яков Сильвестрович вара çакăн хыççăн тепĕр уйăх та пурăнаймарĕ кунта. Таçта çурçĕре кайнă тени çеç асра юлнăччĕ.

«...Ах, кайăк, кайăк... Ăçтан килсе перĕнтĕн-ха эсĕ кунта? Сана мĕн, ирĕкре вырăн çитмерĕ-и?—мăкăртатрĕ Петр Павлович. —Е санăн та, манăнни пек, чуну тăвăрланса çитрĕ-и паян? Кансĕр ун пек чух этеме, пĕлместĕп, сана мĕнле пуль те... Ара... çавах ĕнтĕ, эсĕ те чĕрĕ чун-çке. Э-э, апăрша, юнланнă та иккен. Чим-ха, чим...»

Петр Павлович сётел сунтăхенчен пĕр пĕчĕк кĕленче кăларчĕ те унти шĕвеке мамăкпа пуçса илчĕ, кайăк суранне сипле пуçларĕ. Кăвакарчăн турткаланма пăрахрĕ, çăварне каркаларĕ, унтан каллех, çуначĕсене пуçтарса, шăпах пулчĕ. Кил хуçи картишне тухса кĕчĕ, çутă сӳнтерсе, каллех вырăн çине кĕрсе выртрĕ.

Ыйхă килмерĕ. Айăн-çийĕн шухăш çаврăна пуçларĕ Петр Павлович пуçĕнче. «Ырра мар пуль»,— терĕ-ха арăмĕ. Тĕрĕсех каларĕ ĕнтĕ. Ырра мар, çапли çаплах-ха вăл. Анчах кăвакарчăн айăплă мар кунта. Ана хăй йăвинчен кушак аçи хăратса янă — кайăк ниçта кайса кĕреймен, сайхах çинчен вĕçсе тухнă та кантăка пырса çапăннă. Çавă çеç. Кăвакарчăн айăплă мар. Кам айăплă-ха? Нивушлĕ хамах? Документсем пур, пуçлăх хушнă — эпĕ çырса панă. Анчах... «Корсаков гражданин, патшалăх пурлăхне уйрăм çынна сутма юраманнине пĕлнĕ-и эсир?»—тесе ыйтĕç. Унтан та ытларах: «Хаксене кăтартнă чух мĕншĕн ваккăн мар, курттăмăн сутма ирĕк панă бухгалтер?»—тейĕç. Калаççех. Тăр-тăр чĕтресе илĕ Петр Павлович, халăх ун çине йĕрĕнсе пăхĕ. Аçта кайса кĕрес-ха çав самантра? Вăл, туртман-ĕçмен çын, çемьене йĕркеллĕ тытса пыракан кил хуçи, халиччен никамран нимле ят илтменскер, унтан та ытларах, вăл, иртнĕ вăрçăран икĕ орденпа икĕ медаль çакса таврăннăскер, мĕнлерех пăхĕ çынсем çине? Ак вĕт аçта тĕнче хĕрри. Тĕнче хĕрри... Чим, камран илтнĕччĕ вăл çак сăмаха? «Тĕнче хĕрри... Ак сана, Петĕр, тĕнчере пурăнма тивĕççĕр тесе, çак çырантан пăрахĕç те, эсĕ вара çӳçенсе илĕн, анчах унăн тĕпне çитнине туяймăн, хĕвел çути, çулçă пăшăлтатни, чечек шăрши, вăхăта туйни манăçа тухĕç сан пуçунтан, эсĕ вара тăпрана куçăн...» Чим, ара, сасси те унăннах-çке... «Нимех те мар, чи ансат вилĕм... Анчах çак пăшал кĕпçи те санран темиçе хут нумайрах «пурăнĕ» çĕр çинче... Ман пурнăçа ывăл малалла тăсĕ-ха. Санăнне вара, Петĕр... Айяй-яй... мамăк-ха сăмсу айĕнче. Шел...»

Сталинградра чух шӳтленĕ сăмахсем пулчĕç кусем пĕтĕмпех. Курпун сăмсалли — Жулидов. Унăн хулпуççийĕ çине аллине хурса тăраканни — Бахрамов.

— Пăрах эс ку философие, Муртаз. Корсаковăн пысăк пурнăçне пĕр-пĕр мĕскĕн фриц татĕ тетĕн-и? Пулмасть ку. Корсаков рядовой, кала-ха эс ăна, миçе награда санăн?

— Икĕ орден, ик медаль, командир юлташ. Пĕрне — Хĕрлĕ Çăлтăр орденне...

— Çитет, çитет. Маттур çын эсĕ, Корсаков рядовой. Илтрĕн-и, Жулидов? Ак сана тĕнче хĕрри.

«Маттур ҫын эсӗ, Корсаков... Маттур ҫын... Маттур...»— янӑрать хӑлхара.

Мӗн тунӑ-ши ҫав путсӗр Лизунов вӗсем Сталинградра типшар курнӑ вӑхӑтра? Ӑҫта пулнӑ-ши? Пулнӑ пуль-ха. Тен, Корсаков пекех паттӑр ҫапӑҫнӑ. Анчах хӑҫан пуҫланӑ вӑл сӗмсӗрленме? Мӗн хӗтӗртнӗ ӑна хӑй валли йӑнӑш ҫул суйласа илме? Йӑнӑш ҫул-и? Ҫук, Яков Сильвестрович хӑй хӑнӑхнӑ ӗҫне чи тӗрӗсси тесех шутлать ӗнтӗ. Ку— паллах. Мӗн паллӑ мар-ха тата?

«Тепӗр хут ыйтатпӑр, Корсаков гражданин. Мӗншӗн курттӑмӑн сутма ирӗк панӑ эсир? Акӑ, тӗслӗхрен, чи пӗчӗк япала — пӑта. Магазинра вӑл 45 пус тӑрать, Лизунов пур, ӑна 17 пуса туяннӑ»,— тесе ыйтӗҫ унран. Ҫав вӑхӑтра ӑна Яков Сильвестрович чеен куҫ хӗссе илӗ, атя кала, тулькка аптраса ан ӳк тесе систерӗ. Мӗн каланӑ пулӗччӗ-ши Корсаков судьяна?

Судра каламалли сӑмахсем пӗрин хыҫҫӑн тепри йӗркеленчӗҫ Корсаков пуҫӗнче. Лизунов ҫине ҫеҫ пӑхас марччӗ. Тем тесен те ун ҫине пӑхас марччӗ.

«Маттур ҫын эсӗ, Корсаков»,—каллех илтӗнет вӑрҫӑ хирӗнчи сасӑ.

Ҫук, Лизуновран шикленмелле мар. Ун куҫӗнчен тӳррӗн пӑхмалла. Ак ҫапла: «Ҫак киревсӗр, ҫак намӑса ҫухатнӑ ҫынна эпӗ ҫирӗм ҫул пӗлетӗп». Е урӑхларах: «Ҫак кӗҫҫе пит ҫирӗм ҫул ӗнтӗ мана тарӑхтарса пурӑнать». Э, ҫук, ҫук, кун пек май килмест. «Эс ху кам?»—ыйтӗҫ ларакансем. Ара, кӗҫҫе пит, эп хам та кӗҫҫе питех вӗт. Мӗншӗн суд сӗтелӗ умне тӑнӑ-ха унсӑрӑн?.. Кӗҫҫе пит пулнӑран тӑнӑ, паллах.

«Маттур, Корсаков...»— хальхинче ӗнтӗ куҫ айӗн пӑхса тӑрӑхлать пек ӑна Бахрамов командир. Йӗплӗ унӑн сӑмахӗ. Кулать вӑл Корсаков салтакран. Кулать... Анчах айӑплӑ мар вӗт-ха эпӗ ним чухлӗ те? Айӑпли — вӑл, Лизунов. Каласа кӑтартас-и, командир юлташ? Итле, эппин.

...Ҫапла, ялтан тухса кайсан, вунултӑ ҫул таҫта, те ҫурҫӗртех ӗнтӗ, ҫапкаланса ҫӳренӗ хыҫҫӑн вӑл каллех Серепене таврӑнчӗ. Ман патах кӗчӗ, мур илесшӗ. «Пӗртен-пӗр ырӑ тусӑм хуса ямасть пулӗ те...»— терӗ вӑл ҫуллӑ сасӑпа. Хӑваласа ярас-и-ха вара пӗрре курнӑ ҫынна? «Пурӑнах»,— тетӗп. Тулькке ахалех йышӑнтӑм эп ӑна, явӑла. Тепӗр кунне ӗҫрен килетӗп те, пӳрт тулли чӑматан лартса тултарнӑ. Аш-пӑш шӑрши перет. Кӗрес тесе пӑхрӑм пӳлӗме: ак, япала, ман хуҫайккӑ та мар унта, пӗр тулли кӑна кӗлеткеллӗ хӗрарӑмпа ҫулсене ҫитсе пыракан хӗрача, куҫ хупанкине кӑвакпа сӑрланӑскер, хӗрсех сӗтел хатӗрлеҫҫӗ.

«Хайхи ачаш та ҫинҫешке хĕрарăм мĕнле пулса кайнă!»— тесе тĕлĕнетĕп. Сисрĕ Яков Сильвестрович ҫакна, «ш-ш-ш!»— терĕ, шăла ҫыртма хушса. Анлантăм—урăх хĕрарăм иккен.

Ĕҫрен таврăнсан, арăм та пĕр сăмах та чĕнмерĕ ҫав. Ҫакă та лăплантарчĕ пулмалла Лизуновсене, пĕр эрне пурăнчĕҫ вĕсем, иккĕ, каярах вара вырнаҫсах ҫитрĕмĕр тесе шутларĕҫ пулас.

Ку юрĕ-ха. Урăххи канăҫ памасть чун-чĕрене. Лизунов, темĕн, пĕр-ик эрне унта-кунта чупрĕ те, ме сана, эпĕ бухгалтерта ĕҫлекен кантурта пуҫлăх пулчĕ ларчĕ. Чĕнтерет пĕр ир хайхи. «Ну, Корсаков, ҫаннуна тавăр, ĕҫлетпĕр»,— тет, татăк пӳрнеллĕ алли ҫине сура-сура. «Эс мĕн-ха,—тет,— чăт, часах ҫурт туса лартатпăр та, унта куҫатăп». Э, шутлатăп хам, ҫурт тăвасси вăл, ваҫка, пукане тăвасси мар, пĕр-ик ҫулсăр та каяҫшăн мар иккен ку ман патран.

«Ара, пĕрле тăвăпăр, эпĕ те пулăшăп»,—тесе хутăм аптранă енне. «Вăт ҫав, эсĕ пулăшни кирлĕ те»,— терĕ Лизунов, темшĕн хытă хĕпĕртесе. Унтан ҫакăн пек хушса хучĕ: «Чăт, Петр Павлович, чăт, ăҫтан пĕлен малашнехине, унта, ав, ҫамрăккисем те килĕштереҫҫĕ пулмалла-ха...»

Ак тамаша! Ман Натульпе хăйĕн, эй, шуйттан, аса илсен, чĕлхе ҫыхланать, Эленур ятлă хĕрĕ ҫинчен калать вĕт ку. Нивушлĕ тĕрĕсех калать? Ҫав таранах ӳссе ҫитрĕ-ши вара ман ывăл? Вунулттăра кăна-ҫке-ха. Чим, мĕнле юрлатчĕҫ-ха ҫав ҫамрăк чух? «Вун-ҫич-ч-чĕр-е-е чу-у-ух ю-ратрăм хĕр-е-е...» Вунҫиччĕре пулнă. Натуль вунулттăра. Вăхăт пуль ҫав. Эх, мур илесшĕ, нивушлĕ тĕрĕс?

Тĕрĕсех пулчĕ. Килетĕп пĕрре ҫапла отчет туса ҫĕрлене юлнă хыҫҫăн кантуртан. Сĕм-тĕттĕм. Кил патнелле ҫывхарса пыратăп. Мăкăр-мăкăр, мăкăр-мăкăр! илтĕнет сад пахчинчен. «Чечек татма вăрра кĕнĕ»,— мĕлтлетрĕ шухăш. Чĕрне вĕҫҫĕн йăпшăнса пытăм та пахча кĕтессинчи юман юпа хыҫĕнчен курах кайрăм... «Мĕн эсĕ тутаран чуптăватăн пĕрмай, ҫамкаран, куҫран чупту»,— тет хĕрĕ, пăшăлтатса. Ак япала, куҫран мĕнле чуптăвăн-ха, шалт тĕлĕнсе кайрăм ку хĕртен. Май ҫук тетĕп хам ăшра.

— Ах, ырă саппа, Леонора-а,— тет арҫын сасси, антăхса кайса.

Унтан каллех чуптунă сасă илтĕнет.

Пĕтрĕ пуҫ! Вăт ватсупнă. Мĕн мурĕ туса тăратăп-ха кунта? Пăрăнса каяс — тӳрех сисеҫҫĕ. Хăв ачу-пăчу куҫне мĕнле курăнăн-ха капла? Тепĕр шухăш та канăҫ памасть хама: пăсса яна вĕт ку сăрлапчăкĕ ман ывăла, йăлтах пăсса янă. Мĕн курăпăр!..

Халĕ ĕнтĕ Лизуновсен ҫемйи маншăн пушшех киревсĕр пулса тăчĕ. Хăйсем те вĕсем пире ҫемйипех курайми пулса ҫитнĕ, анчах, чеескерсем, палăртмаҫҫĕ ҫакна...

* * *

...Стена сехечĕ иккĕ ҫапрĕ. Кантăк ҫинчи кăвакарчăн ҫуначĕсемпе лапсăртатса илчĕ, чĕрнисемпе кантăка катăртаттарчĕ. Тулта кăшт палăрмалла кăвак ҫутă курăнать. Ирĕкелле ăнтăлать ĕнтĕ кайăк, анчах ăҫта кайтăр, кăкăрне ыраттарнă-ҫке, ҫунатне суранлатнă. Ҫак шухăшпа Петр Павлович тепĕр аякĕ ҫине ҫаврăнса выртрĕ. Ҫаплах ыйхи килмерĕ унăн. Талăкĕ-талăкĕпе ҫывăраймасăр ҫӳрекенсем те пур, теҫҫĕ, тĕнчере, еплерех йывăр пуль вĕсене...

...Анчах халь ĕнтĕ ĕҫне туса пĕтернĕ. Ту хĕрринче картина ҫинчи пек хӳхĕм ҫурт ларать. Лизунов ҫемйи тахҫанах унта ыр курса пурăнать. Таврара ҫук вĕт ун пек ҫурт. Стенисене тĕрлĕ тĕспе сăрланă, тăррине хĕҫтимĕр витнĕ. Хапхине ылтăн пĕсехеллĕ, кăлкан хӳреллĕ автансем ӳкерсе эрешленĕ. Петр Павлович хăй те ун умĕнчен именсе иртет. Ҫынсем пурте ун ҫине ӳпкелесе пăхаҫҫĕ пек. Ара, пăхаҫҫĕ ĕнтĕ. Ĕнер, ав, ҫав Ухсах Якурах тĕл пулчĕ-ха ăна. «Ну княҫ вара санăн пуҫлăху, мĕн-и, ыттисемшĕн те ҫаплах тăрăшать-и?»—йĕплесе ыйтрĕ Корсаковран. Чĕнмерĕ Петр Павлович, малалла утрĕ. «Анланмастăп сана, улшăнтăн эс, Петра... Юлташусенчен уйрăлтăн»,— тесе юлчĕ хыҫалтан Якур.

* * *

...Коридорта вĕр-ҫĕнĕ «Кăтарту хăми» ҫакăнса тăрать. Тĕрлĕрен ĕҫ ячĕсене шултра саспаллисемпе ҫырса хунă, вĕсене хирĕҫ цифрăсем кăтартнă: ҫĕр, ҫĕр пĕр те виҫҫĕ вуннăмĕш, ҫĕр иккĕ те ҫиччĕ вуннăмĕш... Пултарать Яков Сильвестрович, мĕн каламалли, хăйĕн ĕҫне кăтартма пĕлет вăл. Акă тепĕр ик-виҫ кунтан район хаҫатĕнче статья пичетленсе тухĕ. «Эпир ҫавна тунă, эпир куна тунă, эпир ҫапла ҫĕнтернĕ...»— каппайланĕ Лизунов. Кварталти ĕҫсем тăрăх рабочисене преми пама та манмĕ пуҫлăх: кама виҫĕ тенкĕ, кама пиллĕк. Виҫҫĕмĕш ҫул ĕҫлесе, унăн йăлийĕркисене йăлтах пĕлсе ҫитрĕ Петр Павлович.

Чăнах та, кăнтăрла иртсен Яков Сильвестрович приказĕ Корсаков ҫĕтелĕ ҫине пырса выртрĕ.

Арланова — пилĕк тенкĕ. Арланова... Икĕ уйăх каярах ӳсĕрпе тракторне йăвантарса янăччĕ вăл. Хăй тепле сывă юлнă. Ун хыҫҫăн мастерскойĕнчен тухаймарĕ. Юсаса ҫи-

тернĕ, эппин. Юрĕ, Арланова — пилĕк тенкĕ, Бикмурзина... Ха, Бикмурзина! Виçĕмкун айĕн-çийĕн тустарса кайрĕ пуçлăха. «Этем-и эс, Лизунов, этем мар-и! Ултă ачапа хăçан çав баракран кăларатăн? Çĕнĕ çурт туса пĕтернĕ, тавай ордер. Тавай ордер! Тухса каймастăп, çемьене илсе килетĕп. Ишь епле ăслă, хăйĕн шоферне, тин авланнăскере, икĕ пӳлĕмлĕ хваттер парать имĕш. Тавай ордер!..»

Темле пĕтрĕ калаçу — Петр Павлович васкавлă ĕçпе райфона тухса кайрĕ.

...Бикмурзина — çичĕ тенкĕ. Горбатова, Жаркова, Карпухина... Чим, Давыдов ăçта? Çĕрне-куние пĕлмесĕр ĕçлекен Иван Никифорович ăçта? Çук. Ара, тĕрĕс мар вĕт ку япала. Мĕнле-ха чи пултаруллă шофера премисĕр тăратса хăварнă?

Шуйттан хистерĕ-и Петр Павловича çакăн пек иккĕленме? Лизунов патне кĕрсе хăй сăмахне каларĕ кăна вăл, леш чăрр! пăхрĕ ун куçĕнчен.

— Тĕрĕс мар пек туйăнчĕ, эппин? — шăл витĕр сăрхăнтарчĕ Яков Сильвестрович, татăк пӳрнеллĕ аллипе пирус кĕлне ерипен сĕтел çинчен шăлса пăрахрĕ те, сĕтел сунтăхĕнчен пĕр хут татăкĕ кăларса, ăна Петр Петровича тăсса пачĕ.

«Районти халăх контроль комитетне, — вуларĕ Корсаков машинкăпа çаптарнă хут листин иккĕмĕш экземплярне. — Штăтра тăман инспектортан А. И. Сыромятниковран.

Июнĕн 16-мĕшĕнче халăх контроль комитетне районти колхозсем хушшинчи строительство пĕрлешĕвĕнче ĕçлекен паллă мар çыннран килнĕ çырăва тĕплĕн тишкерсе тухнă хыççăн çырура кăтартнă тĕслĕхсем тĕрĕс мар пулни палăрчĕ. Я. С. Лизунов юлташ иртнĕ икĕ çул хушшинче хăй валли çурт туса лартнă пулин те, строительство материалĕсене вăл хăй укçипе сутăн илнĕ. Çакна документсем çирĕплетсе параççĕ. Лизунов хăй ĕçлекен предприятие юхăнтарса янă, рабочисемпе çыхăну тытмасть тени те тĕрĕс мар. Иккĕмĕш кварталта предприяти мĕнпур кăтарту енĕпе задание ирттерсе тултарнă. «Слава» колхозра МСО тунă ферма çурчĕ ишĕлсе аннишĕн Лизунова ответ тыттарнă ĕнтĕ.

Элекçĕ-анонимщика, йĕрлесе тупса, суд умне тăратма сĕнетĕп.

К сему **Сыромятников».**

— Тĕрĕс мар пек туйăнчĕ, эппин? — тепĕр хут ыйтрĕ Лизунов, Петр Павлович çырăва вуласа тухнă хыççăн.

Нимĕн те ăнланайман Корсаков пĕр хушă чĕнмесĕр аптраса ларчĕ.

— Сан ĕçÿ вĕт?

— Мĕн эсир, Яков Сильвестрович?— шалт тĕлĕнсе кайрĕ Корсаков.

— Халь ĕнтĕ тунаймăн. Тĕрĕс мар пек туйăнчĕ, эппин?— виççĕмĕш хут каларĕ çак сăмахсене Лизунов. —Мĕнех, йăнăша тÿрлетĕпĕр. Çыр. Эпĕ, Корсаков Петр Павлович, хам ирĕкпе ĕçрен кăларма ыйтатăп тесе çыр. Эс мĕн, ху патăнта пурăнтарнăшăн ман ĕнсе çине хăпарса ларасшăн пултăн-и? Çыр. Акă хут, акă ручка.

— Ăнланаймастăп, Яков Силь...

— Çыр. Унтан ăнланăн. Слав пох, тăванланаймарăмăр. Элеонора хăех сиссе илчĕ кампа çыхланнине. Çыр. Куç ан куртăр.

Кÿтсе, кÿтсе килчĕ Петр Павлович чунĕ. Ах, путсăр çын. ах, хура чунлă этем... Эппин, эпĕ сана чăрмантартăм. Эппин, эпĕ сана кирлĕ мар текех...

— Çыр. Мĕн ларатăн!

— Пĕлетни, мĕн, Лизунов юлташ! Мĕн пакăлтататăн кирлĕ мара!— виçĕ çул хушшинче пĕрремĕш хут сасă çĕклерĕ вăл пуçлăх умĕнче. —Эп ниçта та евитлемен те, çырман та. Ун пек çын мар эпĕ...— сасси вăйсăрланса, вăйсăрланса пычĕ Корсаковăн, вăл тăр-тăр чĕтреме пуçларĕ, тарласа кайрĕ. —Ан кăлар мана ĕçрен, эпĕ... эпĕ айăплă мар...

— Кур-ха эс ăна, хусах матка пек, айăпсăра персе ларать. Кам çырнă апла пулсан?

— Пĕлместĕп, Яков Сильвестрович.

— Заявление пурпĕрех çыратăн. Паян мар-тăк, ыран. Йывăррăн кайса ларчĕ хăй сĕтелĕ хушшине Корсаков. Тĕлли-паллисĕр ăна тытрĕ, кăна тытрĕ вăл, ун куçĕ Хветĕр кассирăн куçĕпе тĕл пулчĕ. Хветĕр те вăрттăн кулать ав унран.

— Мĕн эсĕ, Петр Павлович, чĕрре кĕретĕн? Хуçа пур, ăна курăнарах парать. Рабочисем кĕтеççĕ. Алă пус та— ĕçĕ те пĕтнĕ. Ахалех эс...

Вăрçăрине шутламасан, нихçан та çакнашкал йывăр килменччĕ-ха Корсакова. «Вăрçăри — пачах урăх,— шухăшларĕ вăл,— унта иккĕрен пĕри: е пĕтетĕн, е юлатăн. Кунта вара апла та, капла та чун юлать, кĕлетке юлать. Кĕлетке юлать? Кама кирлĕ-ха путсĕр кĕлетке? Кама кирлĕ вăйсăр-хăватсăр, чĕресĕр кĕлетке? Кĕлетке... Уксах Якурăн ури те йывăçран ав. Çапах пуçĕ пур! Мăнаçлăн тытать вăл ăна. Тÿррĕн кастарать. Пуçлăх-иуншăн, юлташ-и—

куçран калать. Аçтан çавăн пек пулнă-ши вăл? Пĕр шутласан, вĕреннĕ çын та мар, лаша пăхсах irттерчĕ ĕмĕрне...»

Ĕлĕкхи юлташĕ аса килнĕрен савăнса ӳкрĕ Корсаков. Магазина анса, пĕр кĕленче шур эрех илчĕ вăл: сăлтавĕ те пур, Якур нумай пулмасть çĕнĕ çурта куçнă, калаçса ларăпăр, сĕтел çинче çак япала ытлашши пулас çук.

— Ха, кам ку тетĕп, куçăм витĕрех мар та, эсĕ иккен, кĕр, кĕр, хăпа пулăн. Нумайранпа ура ярса пусмарăн. Кĕр, эпĕ акă выльăхсене пĕрер сенĕк пăрахса парам та,— тараватт кĕтсе илчĕ Корсакова Якур.

Петр Павлович кил хуçи ĕçне пĕтеричченех картишĕнче тăчĕ.

Пӳрте кĕчĕç. Ултă кĕтеслĕ çурт пысăк та хăтлă пулса тухнă. Хырпа сăрă шăрши сăмсана кăтăклать.

— Эс мĕн пуль-ха, ирхине каланăшăн çиллентĕн пуль,— терĕ Якур, аллине алшăллипе шăлса типĕтнĕ май.— Хывăнса пăрах, тĕпеле иртĕпĕр. Чей те вĕренĕ ав.

Корсаков çаплах чĕнмесĕр тăчĕ, унтан кĕсйинчен эрех кĕленчи кăларчĕ.

— А-ай, эс кĕленчепех иккен,— терĕ Якур. — Ну, атя, атя, унта ман хамăн та кăштах пурччĕ-ха.

Сĕтел хушшине ларчĕç. Якур арăмĕ Укçине çинчен, ачасем çинчен ыйта-ыйта пĕлчĕ, çав вăхăтра сĕтел çине хатĕрлерĕ.

— Эппин, хĕрӳ те бухгалтер пулать. Натулĕн тата нумай юлчĕ-и-ха салтак срокĕ?— калаçать вăл ĕçленĕçемĕнех. — Тем, яланхи пек мар кăмăлсăр эсĕ паян, атя, эппин, сыпар пĕрер черкке, чун уççи пултăр,— сĕнчĕ Якур.

Сыпрĕç. Ерипен-ерипен калаçу карта лара пуçларĕ. Якур çак кунсенче Чарлан ятлă çамрăк ăйăра кӳлме вĕрентни çинчен каласа пачĕ. Никама та итлемест имĕш, çапса çĕмĕрсе пĕтересрен çуна кӳлсе янă, чăхăмла-чăхăмла пĕрех сĕтĕрет тусанлă çул тăрăх. Пĕрре чĕвен тăрать, тепре тĕршĕнет. Эккей, аппаланаççĕ çамрăксем. Якур килнине курать те имĕш хайхи ăйăр кĕçенсе ярать.

— Чĕлхине пĕлес пулать, калаçма пĕлес пулать выльăхпа та,— те савăнса, те кăшт мухтанса каларĕ Якур.— Пытăм та ăмринчен лăпкарăм, йĕкĕр ывăç сĕлĕ патăм. Пулчĕ те. Атя, Чарлан, турта хушшипе утма хăнăхар-ха тетĕп. Ват лашаран хитререх пырать хайхи...

Тепĕр черкке ĕçнĕ хыççăн уçăлсах кайрĕ Петр Павлович. Ют çын мар, фронтри юлташ, ку ăнланатех тесе, хăйпе паян мĕн пулса иртнине йăлтах каласа пачĕ вăл Якура. Лешĕ сĕтел çине чавсаланчĕ те пĕр пӳлмесĕр итлерĕ. Вăраххăн калаçрĕ Корсаков, Яков Сильвестрович ăна виçĕ çул

хушшинче мĕн тери мăшкăл кăтартнисене пурне те аса илчĕ. Унтан аллине чей курки тытса, сăмахне çапла пĕтерчĕ:

— Вăт мĕнле манăн пурнăç, Якур. Эсĕ пур, юлташусенчен уйрăлтăн, лайăх мар тетĕн. Мĕн тăвас-ха ĕнтĕ халь манăн? Çырăвне эп çырман, Якур. Çĕр çăттăр — эп çырман!

— Э-э-эх-х, юлташăм, юлташăм,— тарăхсах каларĕ кил хуçи. — Çав пĕтерет те... «Эп çырман». Епле хитре калать. Ĕненетĕп — эс çырман. Анчах çырмалла пулнă. Çырмасан, каламалла пулнă. «Эп çырман...» Тĕлĕнтеретĕн эс мана, Петра.

«Мĕн калать ку? Ним ăнланма çук. Те ўсĕрĕлсе кайрĕ ĕнтĕ?»

— Çав пĕтерет те пире,—малаллах калаçрĕ Якур.— Эп курман-илтмен, эп айăплă мар, эп таса çын... А шутласан, каçар та мана хытă каланăшăн, эсĕ икĕ хут айăплă. Халь акă сана çамкунтан çапмалла та анкў-минкўне пĕтĕмпех кăларса ямалла. Кала-ха, Петра, Сталинградра эпир санпа мĕншĕн çапăçрăмăр? Сан Лизуновна ырлăх кăтартасшăн-и е мĕнпур халăха лайăх пултăр тесе-и? Кала, Петра, кала, эс халь пĕчĕк ача мар, ачун ачисене кĕтекен çын.

Эх, пурнăç... Кунта та ăша лăплантарма пултараймарĕ акă Корсаков.

— Ну, юрĕ, ман каяс. Нумай лартăм сўпĕлтетсе,— терĕ те вăл сĕтел хушшинчен тухрĕ. — Мĕн каласшăнччĕ-ха, э-э, мĕн... Якур, чĕлхен шăмми çук, теççĕ, калаçу хамăр хушăрах юлтăр вара...

— Эс те çав,— Петр Павлович куçĕнчен шăтарасла пăхрĕ Якур. — «Икĕ орден, ик медаль...» Астăватăн-и? Вăт-вăт, эп манман-ха. Аса ил Бахрамова, Жулидова... Шел, пурăнаймарĕç. А эпĕ сан вырăнта пулсан... Пĕлетĕн-и, мĕнле ырă çын Косарев? Кай ун патне, каласа кăтарт, çапла-çапла пулчĕ те... Суд пулĕ. Ăнлантар пурне те. Чĕрўне ирĕке кăлар... А так, лармаллаччĕ-ха пăртак, нумайранпа калаçманччĕ.

— Каяс ĕнтĕ, килте те çухатрĕç пуль,— текелерĕ те Корсаков алăка уçрĕ.

«Пĕрремĕш секретарь патне кайма сĕнет Якур, Косарев патне»,— шухăшларĕ Петр Павлович. Унтан каллех вырăн çине тăрса ларчĕ. «Шăк-шак, шăк-шак»,— кĕвĕлет сехет. Ĕнтĕ кун çути те палăра пуçларĕ. Чўрече ани çинчи кăвакарчăн сăмсипе çаплах кантăка таклаттарать. Эх, мĕскĕн, ăçта кайрăн-ха ĕнтĕ. Сывалас пулать-çке....

«Суд пулĕ терĕ-ха Якур. Сучĕ пулатех ĕнтĕ. Анчах мĕнле йышăнĕ ăна çав Косарев? Вăл та элекçĕ темĕ-ши? Çук,

калаймасть. Документсем пур. Сыромятников вара мĕнле документсем пирки ҫырнă-ха? Суя ку, йăлтах суя, пырса та курман вăл пирĕн кантура. Лизунов урлă тунă».

«Вăр-вăр-вăр, вăр-вăр-вăр!»— тутарать ҫĕрлехи хăна. Икĕ хашак хушшинче пĕрре ҫӳлелле хăпарать, тепре чӳрече анине перĕнет кăвакарчăн. Вăт вĕт, ирĕке хăнăхнăскер, ниепле те лăпланаймасть ăшă пӳртре.

«Енчен, куна ирĕке кăларса ярсан?— шухăшларĕ Петр Павлович. — Анчах ҫĕре ӳкĕ те хайхи кушак ҫăварĕ тĕлне пулĕ. Юрĕ, сăнаса пăхам, ҫĕре ӳксен илсе кĕрĕп».

Корсаков усăлакан чӳречесене кăштах урамалла тĕртрĕ кăна, кăвакарчăн ҫуначĕпе лăп-лăп ҫапрĕ те сывлăша тухса ыткăнчĕ.

— Вĕҫет! Вĕҫет!— ача пек савăнса кăшкăрчĕ Корсаков.

— Тата мĕн пулчĕ, Петра?— тăруках вăранса кайнипе куҫне чарса пăрахрĕ Ксения Лукинична. — Мĕн пулчĕ тата?

— Тул ҫутăлчĕ, Укҫине,— терĕ Петр Павлович. —Вĕҫсе кайрĕ кăвакарчăн, хуҫăлман пулнă иккен ҫуначĕ...

## ВИҪĔ КĔМĔЛ УКҪА

Чăнкă ҫыран хĕрринчи шифер витнĕ тăпăл-тăпăл ҫурт хыҫĕнче — ансăр лупас. Ҫуркунне Эльвира ашшĕ, типĕ утă упрама тесе, ун тăррине чуспа витрĕ. Экзаменсем вăхăтĕнче ҫак вырăн Эльвирăшăн питĕ юрăхлă пулчĕ. Вăл тăвăр та пăчă пӳртрен хăйĕн ҫӳхе тӳшекĕпе ула утиялне илсе тухрĕ те пĕлтĕрхи утă ҫине тирпейлĕн вырăн сарса хучĕ, макарон ещĕкне хутпа витсе, ҫыру сĕтелĕ турĕ. Хăй валли калама ҫук ирĕклĕх, чуна лăпкакан ырлăх туяннă пек пулчĕ ăна: куҫ умĕнче кунĕн-ҫĕрĕн Атăл хумĕсем ҫатăлтатаҫҫĕ, шурă пăрахутсем чĕрере тунсăхлă та ҫав вăхăтрах ырă туйăм ҫуратаҫҫĕ.

Йăл кулса пăхать тӳперен июль хĕвелĕ. Ĕнер кунĕпех ҫурутрав ҫинче утă пухса ĕшеннĕрен пилĕк-ҫурăмĕ сăрăлтатать Эльвирăн, енчен енне ҫаврăнкалать вăл, анчах ниепле те тăрса ларaймасть. Ашшĕ те шарламасть-ха, кантăрах, ҫывăртăрах тет ĕнтĕ, хăйĕн пĕртен-пĕр хĕрачине хĕрхенсе.

Эльвира куҫне уҫать Атăл... Пĕрре хумханчăк та кăра вăл, тепре, темле вăрттăнлăх пытарнă евĕр, шап-шурă тĕтре карса илет ăна. Эльвира паянхи пек тӳлек ҫаптаăка юратать. Мĕн тери капăр вăл ҫуллахи пĕлĕтсĕр кун.

Акӑ ун мӑнаҫлӑ та яка ытамӗнче ҫип ҫаппӑ пек тӳп-тӳрӗ хӗвел юпи выртать, лере, инҫетре-инҫетре, юхаппывӑн йӑмӑх кӑвак ҫулӗ ҫӑмӑл кӗрен сывлӑшпа хутшӑнса каять. Ҫыран леш енчи катара, тӗлӗнтермӗш художник киҫтӗкӗ ытахальтен ҫеҫ сӗртӗннӗ пек, хӗрлӗн-шуррӑн каскаланнӑ ҫыранта си-си йывӑҫ тӗмӗсем палӑраҫҫӗ, шупкалса пыракан инҫетлӗхре пач палӑрми пулса, куҫран ҫухалаҫҫӗ. «Ту-ту-ту-у-ут!»— кӑшкӑрать йывӑр баржа. Унтан каллех пӗтӗм тавралӑх шӑпланать. Хумсен хӑнӑхнӑ сасси ҫеҫ тӳлеккӗн чӳхенет хӑлхара: шӗпӗл-шӗпӗл, шӗпӗл-шӗпӗл. Е тата ҫыран хӗррине чарлансен туслӑ ушкӑнӗ килсе тухать те, такама ӳпкелешсе, Эльвирӑна евитлеме тытӑнать.

Эльвира ҫинҫешке пӳрнисемпе куҫне шӑлса илет, пичӗ ҫинче вӗлтӗртетекен ҫӳҫ пайӑркисене хӑлхи хушшине хӗстерет. Кӑпӑшка питҫӑмартисем кӗрен тӗспе ҫиҫеҫҫӗ, тутинче телей кулли вылять.

«Ырӑ, питӗ ырӑ. Пурнӑҫ вӑл ҫак ҫутҫанталӑкках ӗнтӗ— таса, янравлӑ»,—шухӑшлать Эльвира.

Кашта ҫумне икӗ тетрадь хӗстернӗ. «Чим, дневникӗм, пӗртен-пӗр юлташӑм, тусӑм»,— пӑшӑлтатать хӗрача, тетрадьсем патне туртӑнса. Пӗри кӑвак хуплашкаллӑ. «Аркадий Арлановӑн пурнӑҫ кӗнеки»,— тесе ҫырнӑ унта. Теприн хуплашки писев. «Чӑнах ара, мӗншӗн пурнӑҫ кӗнеки тес мар ӑна»,— шутланӑччӗ Эльвира та тӑрӑшсах, «Пурнӑҫ кӗнеки. Эльвира Карабанова» тесе ҫырнӑ чух.

Кӑвак тетрачӗ Эльвирӑна кӗтмен ҫӗртен лекрӗ. Хӑй сӑмсине яланах унта-кунта чикме юратакан Лина айӑплӑ ҫакӑншӑн. Пӗр каҫхине Эльвира патне хашкаса чупса пычӗ те вӑл хӗвӗнчен ҫак тетраде туртса кӑларчӗ. «Ме, вуласа тух, сан ҫинчен пулмалла»,— терӗ. Ҫак вӑрттӑнлӑха хӑй анчах пӗлнине систерсе, куҫӗ хӗпӗртенӳллӗн ҫиҫет. Эльвирӑна та кӑсӑклантарчӗ ҫакӑ. Вӑл вулама пуҫларӗ. Пӗр каҫа ҫырса кӑтартать иккен Аркади. Вуланӑҫемӗн вӑтанса, вӑтанса пычӗ Эльвира, варрине ҫитсен, ҫилли кӳтсе ҫитрӗ унӑн. Чӑрр! пӑхрӗ вӑл Лина ҫине: «Вуларӑн-и?» Лешӗ хӑраса ӳкрӗ. «Мӗн эсӗ, иксӗмӗрӗн те ятсем пур та ку тетрадьре, ҫавна курнипе ҫеҫ ҫаклатса килтӗм. Ап пӑшӑрхан, сисмерӗ»,— тӳрре тухасшӑн пулчӗ вӑл. «Апла-тӑк, ӑҫтан илтӗн, кай та хур ҫавӑнтах»,— терӗ Эльвира. «Мӗн калаҫатӑн, хӑй пӗлсен?»— пушшех шурса кайрӗ Лина.

«Чӑнах та, хӑй пӗлсен?»— шухӑшларӗ Эльвира та. Вара, ним тӑвайман енне, кӑвак тетраде хӑй дневникӗпе юнашар пытарчӗ. Пӗр уйӑх ытла иртрӗ ӗнтӗ унтанпа. Паян, акӑ, кӑмӑл лайӑх, ӗмӗтсен тӳлек вӗҫевӗ пулни-иртнине аса илтерет. Кӑвак тетрадь те хӑй патне туртать.

«...Майăн çирĕммĕшĕ. Пирĕншĕн, вăтам шкул пĕтерекенсемшĕн, вĕренӳ çулĕн юлашки кунĕ. Çав ятпа пире хамăрăн юратнă учитель Николай Петрович Атăл хĕрринчи пĕр илемлĕ вырăна каç выртмаллах кайса килме сĕнӳ турĕ.

Кутамккасене тĕрлĕ ăпăр-тапăр, çĕрулми, каç выртнă чух тăхăнма ăшăрах тумтир персе чикрĕмĕр те шкула пуçтарăнтăмăр. Пурте савăнăçлă, шӳтлеççĕ, алхасаççĕ. Кунтах пионерсен пӳлĕмĕнчен илсе тухнă горн йăлтăртатать, волейбол пӳскине паçăрах тӳнк! те тӳнк! тутарса хĕнеме пуçланă. Эльвира та пур. Вăл тăвăр пĕçĕллĕ шăлаварпа, çанăсăр шурă кофтăпа, хулпуççи урлă «çиçĕм» вăчăраллă кăвак куртка уртса янă.

Горн сасси, таврана янратса, сигнал пачĕ те, эпир, юрă юрласа, çула тухрăмăр. Ялтан инçех те мар — вăрман, унпа пĕр вунă çухрăм утсан, Атăл хĕрринче — калама çук илемлĕ вырăн. Çыран хĕрринчен пуçласа çӳллĕ сăрт тăрне çитичченех тикĕс хӳме пек çăра юманлăх хăпарать, аялта — шап-шурă çĕмĕрт йывăççисем, леш енче — Атăлăн кĕмĕл çамки йăлтăртатать. Кунтах, сăртран анакан тарăн лупашкара, çăлкуç пытаннă: тăрă та сивĕ шыв кăтрине тураса ларакан пĕртен-пĕр лаштра хурăн айĕнчен тапса тухать те шурă, хĕрлĕ вак чул çийĕпе хӳхĕм юрă шăратса юхать. Çапла, кунта Куинджи сăрĕсем те, Чайковскин асамлă кĕввисем те — пурте пĕрле.

Вырăна çитсенех виçĕ пысăк палатка туртса картăмăр. Çăл патĕнче пĕр ушкăн ача кăвайт чĕртсе ячĕ. Хăшпĕрисем Николай Петровичпа пĕрле шыв хĕррине пулă тытма анчĕç, теприсем, хĕрсем ĕнтĕ, чечек татма, виççĕмĕшсем волейболла выляма пикенчĕç. Эпĕ вара рюкзакран хамăн этюдника илтĕм те сăрт çине, икке юпленсе ӳсекен лапсăркка юман патне, хăпартăм.

Нумай лартăм-ши юман патĕнче, сахал-ши, анчах этюдник çумне çирĕплетсе хунă шурă ватман çине ӳкерме нимĕнле композици те тупаймарăм. Çапла аппаланса, пуça çавăрса ларнă хушăра хăлхана хĕрсен кулли пырса кĕчĕ. Наччасах этюдника хупса хутăм, юман çине йăпăряпăр улăхрăм, унăн çулçисем айне пытантăм. Ларатăп çапла, мĕн пуласса кĕтсе.

Хĕрсем çывăхрах ĕнтĕ. Кунтах килеççĕ. Апăрша, Эльвира мар-и ку? Вăлах. Тата Лина. Курас пулсан?

— Ах маттур та çав Илле. Маттур та пултаруллă.

Ку — Лина. Эльвира чĕнмест.

— Теприсем пек чăкăлтăш мар çав. Кăмăлĕ лайăх.

— Кам пек чăкăлтăш мар?

— Пӗлмене перет ӗнтӗ. Аркади пек, ара. Сӑмах калама ҫук — йӗплешет, шӑртланать.

— Ан калаҫ кирлӗ мара. Тӗрӗс мар ку.

Шатӑрт! турӗ ура айӗнчи типӗ турат. Пӗтрӗм! Ҫулҫӑсене вӑтӑрса, ҫӗре персе антӑм. Самаях хӑранӑччӗ пулас хӗрсем, анчах, палласа илсен, аптраса ӳкмерӗҫ, ним пулман пек, пӗр-пӗрин ҫине пӑхса илчӗҫ ҫеҫ.

— Эсӗ вара, ҫамрӑк та интереслӗскер, ҫӑлтӑр вӑрлама хӑпартӑн-им юман ҫине? Ҫӑлтӑрсем те тухман-ҫке,— терӗ те Лина пӗччененех ахӑлтатса кулса ячӗ.

Витӗмлӗ хуравласшӑнччӗ эп ӑна, анчах Эльвирӑн кӑшт салхуллӑрах куҫӗнчен пӑхрӑм та хам та темшӗн хӑраса ӳкрӗм.

— Ҫук,— терӗм Линӑна. — Мана аташса кайнӑ хӗрсене кӑвайт патне ҫул кӑтартса тӑма хушнӑ.

— Апла часовой пекки пулатӑн. Тӑрах, тӑрах, тен, чӑнах пӗр-пӗр ҫӗтсе кайнӑ хӗр килсе тухӗ,— йӗкӗлтесе кулать Лина.

Ку мана тархӑтарсах ячӗ. Ӑна хӑвӑрт-хӑвӑрт каламалли, тивӗҫлипе тавӑрмалли сӑмахсем шырарӑм.

— Санӑн ҫӗтсе каяс килет пулас. Пыр, ҫӳре, чиперукӑм, ав, Илле-гитарӑҫу тахҫанах сан ҫинчен романссем шӑрантарать,— терӗм лач сурнӑ пек. Каларӑм та, курччӑр тесех, этюдника уҫрӑм, алла киҫтӗк тытса, шур листа ҫине тӗлли-паллисӗр пӑнчӑсем лартма пуҫларӑм.

Лина самантрах таҫта тапса сикрӗ. Чӗрине пусарма кайрӗ-ши, шыва сикме-ши? Тепӗр тесен, таси паха.

— Мӗншӗн кӳрентертӗн эс ӑна?— шӑппӑн ыйтать Эльвира.

Чӗнместӗп. Тем чӗмери пулчӗ, кӑкӑр питӗрӗнсе ларчӗ. Хӑюсӑрлантӑм, этюдник ҫаклатмипе выляма пуҫларӑм. Мӗн калас маҥ ӑна? Чи кирлине? Халь каламасан, хӑҫан калӑп? Ҫапла шутларӑм та, мӗнпур вӑя пухса, ун енне ҫаврӑнтӑм.

— Эльвира...

Вӑл, теме ниссе, пуҫне пӗкрӗ.

— Эльвира... эпӗ... эпӗ сана юрататӑп...

Сасартӑк хыпӑнса ӳкрӗ Эльвира, такамран хӑранӑн, яшт тӳрленсе тӑчӗ те хир качаки пек малалла ыткӑнчӗ. Эпӗ те ура ҫине сиксе тӑтӑм. Ун хыҫҫӑн чупрӑм. Анчах Эльвира, лупашкана апса, курӑнми пулчӗ...

Пӗртен-пӗр пирӗштийӗм, ҫут ахахӑм,
Эс ҫук-тӑк — эп те ҫук ҫак тӗнчере.
Анчах куратӑп та сана — ҫӗтет сӑмахӑм,
Ашчик чӗтрет, сиксе тапать чӗре.

...Юрату. Искусство евĕрлех пулĕ çав вăл. «Чăн-чăн искусство çуралнă чух художник чун-чĕри хÿхлесе чĕтрет, кăшкăрса йĕрет, юратупа е курайманлăхпа тулса, пайăн-пайăн таткаланать, хăй çинчен пĕлтерме васкать, çуралакан пулăма мăнаçлă та илемлĕ тăвасшăн çунать»,— вуланăччĕ эпĕ таçта. Çапла пулĕ çав: илемли, ырри, мăнаçли асапра, тертре, сиксе чĕтренĕ вăхăтра, кăшкăрура çуралать пулĕ. Ан тив, хитрелĕхе çуратаканни хăй те илемлех ан пултăр, ан тив,— ĕçĕ унра-им! Суккăр Гомер, уксах Микеланджело, шыçмак сăн-питлĕ Мусоргский, мăн кăмăллă Тургенев — çакă кама та пулин кÿрентерет-и вара? Çук! Пурпĕрех вĕсем—вилĕмсĕр хитрелĕхе туптанă çынсем...»

Çакă çеç. Пĕртен-пĕр кун. Эльвира кăвак тетраде хупса хурать те шухăша путать, анчах куç умне Аркади мар, май уйăхĕн ытармалла мар çав хÿхĕм каçĕ сиксе тухать. Ах, Николай Петрович, чăннипех тĕлĕнтермĕш учитель эсĕ. Çав каç та çителĕклĕччĕ пулĕ кайран сана ĕмĕр-ĕмĕр аса илсе пурăнма. Сисмерĕн, класри хĕрсем чун-чĕререн юратса пăрахнăччĕ сана. Мĕн тăвăн, учитель-çке — сан умăнта хамăра хамăр хăрасарах тыткалани çеç чăрмантарчĕ пире Татьяна пек ăшри кăмăл-туйăма пĕлтерме. Аслă, хăюллă, илемлĕ — тата мĕн кирлĕ-ши хĕр чĕришĕн чăн-чăн арçынтусра?

Эсĕ вара, Аркади? Хи! Пĕр шутласан, кулăшла. Астуха, шăлавар пĕççисене чĕркуççи таран тавăрнă та, тăратăн çыранта, ылтăн пулă килсе тухасса кĕтсе. Ырханкка пулнăран мĕскĕн курăнатăн — кулса вилмелле. Лере тата, юман патĕнче, хут çине мар, çамку çине ÿкересшĕн пулнăччĕ-ши эсĕ пĕр-пĕр картина—мĕнле кăна сăрă çукчĕ унта! Кайран, Линăн çилли иртсе кайсан, сывлайми пуличчен ахăлтатрăмăр çавна аса илсе. Экзаменсем вăхăтĕнче те маларах... Сисрĕм, чĕрем чул мар, миçе хутчен вăтанса та тархасласа пăхмарăн пуль ман çине. Эпĕ курмăш пултăм. Хаклă çыннăм, санра темĕнле ăшă, ыра, ыттисенче пачах курăнман япала пурах çав. Çавăншăн хисеплетĕп эпĕ сана. Тепĕр енлĕ шутласан тата? Пулать-и-ха çавăн пек, мĕн ачаран пĕр урамра пурăнтăмăр, вунă çул пĕр класра вĕрентĕмĕр. Мĕн юратмалли пирĕн, пĕр-пĕрне пилĕк пÿрне пек пĕлсе тăратпăр пулсан? Чим, ыран эсĕ Шупашкара каятăп теттĕн мар-и-ха? Художник пулас шухăшу тухмасть, эппин, пуçунтан. Эпĕ те пырăп ăсатма. Дневникна та йăтсах пырăп, каçару ыйтăп. Шел кăштах, пĕтĕм класс саланса пĕтет çапла. Пуçтарăнăпăр терĕмĕр тепĕр çултан каллех. Пуçтарăнайăпăр-ши?

Писев тетраде уçас килмерĕ текех Эльвиран. Лупас çинчен анчĕ те вăл пӳрте кĕчĕ. Ашшĕ килте çук иккен-ха. Лаша витинче ĕçлет вăл, пур пек лашасене ĕçе кӳлсе ямасăр та киле таврăнаймасть. Вăл килсен, акă, кимĕ çине ларĕç те вĕсем каллех Атăл леш енчи йăлăма утă пухма кайĕç. Амăшĕ ирех унта ĕнтĕ, ăна Кринькка пиччепе Укахви инке лартса кайнă.

Тепĕр икĕ сехетрен тин çула тухрĕç вĕсем. Çырă мăйăхлă лутрарах ашшĕпе Эльвира, кĕсменсем йăтса, Атăл хĕррине анчĕç те, лаптак тĕплĕ кимĕ çырантан уйрăлчĕ. Хĕртсех хĕвел пăхать пулин те, шыв сулхăнĕ хăй çинчен систеретех, -кассăн-кассăн уçă çил вĕрет. Атăл хумĕсем пĕчĕк кимме çункав пек вылятаççĕ. Авăсать ашшĕ, хăвăрт çӳрекен теплоходсем хыççăн юлакан хумсене хирĕç меллĕн тытса пырать хăй киммине. Анчах Атăлĕ сарлака, ашшĕн çамки çине тар пĕрчисем сике-сике тухрĕç. Çулĕ çаплах инçе-ха, çуррине те кайман.

«Ватăлать атте,—шухăшлать Эльвира. —Вăрçă суранĕсем ăна çапла... Ах, вăрçă, вăрçă...» Унтан каллех ашшĕ çине хĕрхенсе пăхать. Пĕтĕм вăйне хурать ашшĕ, кашни авăсмассерен питĕнчи пĕркеленчĕксем туртăнса илеççĕ. Туять хĕрĕ: капла юрамасть, ывăннă атте.

— Эп авăсам-ха, атте. Лар-ха ман вырăна. Лар, лар, эпĕ пултаратăп, манăн вăй çитет. Ывăнсан, каллех сана парăп,— тет вăл, çине тăрса.

Ашшĕ хĕрĕ çине шанмасăртарах пăхать, пĕр хушă йĕри-тавралла тинкерет.

— Ав çав «Ракети» иртсе кайтăр-и-ха ĕнтĕ,— сăмах хушать вăл, хĕрĕпе килĕшсе.

— Темех мар. Эп хамах,— тет хĕрĕ. — Вăл иртнĕ чух чарăнса тăрăпăр.

Халĕ ĕнтĕ кĕсменсем Эльвира аллинче. Итлесшĕн мар вĕсем çинçешке хĕрачана: е шыва çиелтен касса каяççĕ, е, ытла тарăна кĕрсе, кимме унталла-кунталла чалăштараççĕ. Шикленерех пăхать Эльвира ашшĕ çине: алă ывăнĕ те акă, ăна каллех хăй вырăнне лартĕ. Хăйне хăй çилленсе, вăрçса илет Эльвира. «Атăл хĕрĕ тетĕп хама, вунçичче çитсе те кимĕпе ăста ишме пултараймастăп. Намăс». Ашшĕ умĕнче хăйне çавах лăпкăн тытма тăрăшать.

Сĕт пек шурă «Ракета» хумсене çурса хăвăртран хăвăрт çывхарса килет.

— Тăхта, хĕрĕм, каялла май авăс та, кимму чарăнĕ,— тет ашшĕ, теплоход çине пăхса.

Эльвира каялла авăсма хăтланать, анчах хăнăхнă хускануseне улăштараймасть,— пĕр енчен тепĕр енне чалăшать

кимĕ. Акă, хăватлăн кĕрлесе, теплоход çумранах ыткăнса иртрĕ. Ланк! турĕ пĕчĕк кимĕ, таçта чĕмсĕр тĕплĕхе анса кайнă евĕр. «Атте!» — чутах кăшкăрса ямарĕ Эльвира. Унччен те пулмарĕ — кимĕ хум йăранне тепĕр хут анса кайрĕ. Çакна кĕтмен хĕрача аллинчи кĕсменĕ тухса ӳкнине те сисмерĕ.

— Ан яр аллунтан! Мĕн пăхатăн?! — кăшкăрчĕ ашшĕ.

Хăраса ӳкнĕ Эльвира юхса каякан кĕсмене хăлаçланса тытасшăн пулчĕ, тытаймарĕ, кимĕ чалăшса, чалăшса кайрĕ те шыва ӳпĕнчĕ...

Тепĕр самантран Эльвира йĕпе тумтир ӳт çумне çыпăçса ларнине туйрĕ. Çак киревсĕр сĕртĕнӳ ун кăкрине пушшех тăвăрлатрĕ, тăруках сивĕ те хăрушă пулса кайнăран хыпăнса ӳксе, вăл тĕлсĕр-мĕнсĕрех малалла ишме пуçларĕ. Чим, ара, ашшĕ! Урасăр ашшĕ! Эльвира каялла çаврăнчĕ. Ашшĕ унран инçех мар чыхăна-чыхăна ишет. Хĕрĕ ун патневаскать, ăна мĕнле те пулин пулăшма тăрăшать. «Нивушлĕ курмарĕç? — пăшăрханса шухăшлать вăл, шурă теплоход хăйсенчен инçерех те инçерех кайнине туйса. — Мĕн тăвас ĕнтĕ халь? Çыраналла ишес — ытла инçе. Турăçăм! Мĕн тăвас?»

— Çă-ă-лăр! Пута-а-атпă-р! Çă-ă-лăр! — пĕтĕм вăйран кăшкăрса ячĕ Эльвира.

Анчах йĕри-тавра шăпах. Чим, ав, çыран хĕрринче пĕр çын мĕшĕлтетмест-и? Çынах, тем тесен те çын. Авă куклен-чĕ. Авă каллех утать. Çын! Çын!

— Э-эй! Пу-лă-шăр! Пута-а-атпă-ăр!

— Пу-лă-шă-ă-ăр! — кăшкăрчĕ пĕр кана ӳсĕрме чарăннă ашшĕ те.

Çыранти кĕлетке тăп чарăнса тăчĕ, ун-кун пăхкаларĕ, шыв хĕррине чупса анчĕ. Тем вăхăтран лăпкăн та тикĕссĕн мотор сасси кĕрлеме пуçларĕ.

— Килет, атте, килет!

Моторлă кимĕ çывхарнăçемĕн çывхарчĕ. Кăтра çӳçлĕ кĕрнеклĕ çамрăк кимĕç хăйĕн дюраль киммине шывра шăмпăлтатакан Эльвирăпа ашшĕ патне меллĕн пырса тăратрĕ.

— Эсир мĕн ытла шала кĕрсе чăпăл тума шутланă? Хĕрринче шыв ăшăх-и-мĕн? — Эльвира ашшĕне кимĕ çине улăхма пулăшса шӳтлесе илчĕ каччă.

— Ан та кала ĕнтĕ, кăна пĕлнĕ пулсан, килтен те тухас çукчĕ, — çӳçенсе хуравларĕ Эльвира ашшĕ. — Тавах ĕнтĕ сана, ывăлăм.

— Ну, ну, хаваслăрах, хаваслăрах, — йăл кулчĕ кимĕç Эльвирăна та. — Çавнашкал хĕрсен шыва путма юрать-и

вара? Ай-яй-яй, епле асăрханман... Апла юрать-и вара?

Çамрăк çын шывпа тулса ларнă кимме кăкарма пĕшкĕнчĕ. Тинех асăрхарĕ Эльвира: мĕн чухлĕ çупах пулă тытса тултарнă каччă! Пурте пысăк. Çиелтисем, мĕнпур вăйран çатăлтатса, тыткăнран хăтăлма тăрăшаççĕ. «Пĕрпĕр пӳлă организацийĕнче ĕçлет ĕнтĕ»,— шухăшларĕ хĕрача.

— Хăш çырана типме кайса пăрахас сире халь?— каллех шӳтлерĕ каччă.

— Ăçта каясси ĕнтĕ, килех каяр пуль. Ав çав ялтан эпир,— терĕ ашшĕ, аллипе сылтăмалла тĕллеçе.

Тапранчĕç. Ĕнтĕркенĕ ашшĕпе Эльвира юнашар ларaççĕ, вĕсене тин çеç вилĕмрен çăлнă кимĕç газ тросне кирлĕ таран туртать те аллине пусма татăкĕпе шăлса типĕтет, унтан васкамасăр пирус чĕртсе ярать. Вырăнлă, лăпкă унăн хусканăвĕсем. Çиçсе тăракан хура куçĕсем, тухарах тăракан хитре янахĕ унра иксĕлми вăй пуррине, вăл хăйне кирек мĕнле самантра та алăра тытма пултарнине, унăн çирĕплĕхне кăтартаççĕ.

Темиçе уйăх каялла çеç-ха Эльвирăпа унăн юлташĕсем шкулта пĕр интереслĕ калаçу ирттернĕччĕ. «Хальхи вăхăтра паттăрлăх кăтартма пулать-и?»— ыйтнăччĕ вĕсенчен Земфира Павловна, чĕлхепе литература учительници. «Мĕншĕн ан пултăр?»— терĕ ун чух Аркади, ним иккĕленмесĕр. «Ненай, ненай,—йĕплесе нăйкăшрĕ Сенчуков Илле.— Тен, Çурçĕре кайса ярсан анчах?..» Ыттисем те каларĕç хăйсен шухăшне. Эльвирăна çеç черет çитеймерĕ, шăнкăрав пулчĕ. «Акă вăл, чăн-чăн паттăрлăх!— пĕтĕм вăйран калĕччĕ вăл халь хăйĕн юлташĕсене. — Ăна кăкăр çапса кăшкăракансем мар, çак çамрăк пек сăпайлă, тӳрĕ кăмăллă çынсем тăваççĕ. Пăх-ха эс ăна, икĕ çыннăн пурнăçне çăлчĕ, ларать пурпĕрех ним пулман пек, пирус туртса».

Ытараймасăр пăхать ун çине Эльвира. Хăй ытла мĕскĕн, хавшак курăнать пуль ĕнтĕ каччa. Çара урисене йĕп-йĕпе кепе аркипе хуплама тăрăшать, ватаннипе ним тума аптрать. «Часрах киле çитесчĕ те, чечеклĕ шурă кĕпене тăхăнса çак каччă умне тухса тăрасчĕ. Ытла начарах мар пулĕ-ха Эльвира та...»

Акă çыран хĕррине те çитрĕç. Шĕвĕр пуçлă кимĕ çĕре перĕнчĕ те, мотор лăпланчĕ.

— Ну, ăнăçсăрсем, анăр та Атăлпа тек ан выльăр çапла,— терĕ те каччă, кăкарнă кимме салтса, кайма пуçтарăнчĕ.

— Э, çук, çук, ывăлăм. Ан васка. Чей ĕçĕпĕр. Инçе мар,

ав, куратăн-и шифер витнĕ çав çурта? Кайрăмăр, кайрăмăр. Апла юрамасть вăл, сана эпир ĕмĕр-ĕмĕр манас çук!— ача пек тархасларĕ ашшĕ.

Кимĕç пĕр кана иккĕленсе ларнă хыççăн Эльвира çине пăхрĕ.

«Атьăр, атьăр»,— пуçĕпе сĕлтсе, паллă пачĕ ăна хĕрача.

—Юрать, эппин, кĕрсе тухам,— терĕ те вăл çупах пулăсене брезент шăналăкпа витрĕ, тимĕр сăнчăрне çĕре ывăтса, кимĕ çинчен çăмăллăн сиксе анчĕ...

— Чаплă пурăнатăн, старик,— терĕ çамрăк çын кăвакпа сăрланă вырăсла хапхаран кĕнĕ чух.

— Чапĕ-мĕнĕ,— мăкăртатрĕ ашшĕ,— пурăнкалатпăр çапла.

Кимĕçпе старик пÿрте кĕрсе кайрĕç, Эльвира вара пăлтăра çакса хунă чечеклĕ шурă кĕпине илчĕ те лупаса васкарĕ. «Акă вăл, Эльвира, курăр ăна, мĕнрен кая вăл пирĕштирен,— пĕчĕк куçкĕски çине пăхса, хăйпе хăй киленсе пăшăлтатрĕ Эльвира. —«Пĕртен-пĕр пирĕштийĕм, çут ахахăм, эс çук-тăк — эп те çук çак тĕнчере...» Вăт мĕнле килсе тухрĕ, Аркади. Тĕрлĕрен пулать çав. Ан çиллен — шăпаран тараймăн. Ыран эп сана ăсатма пырăп. Юрать-ха паян Атăла путса вилмерĕм, юрать-ха çак каччă тĕлне пултăм. Юрать-ха, юрать-ха,— эй, шĕвĕр сăмса, ларатăн хăвна ху мухтаса. Пÿрте чупмалла, чей лартмалла...»

Эльвира пÿрте çăмăллăн чупса кĕрет. Чунтан килĕштерсе шăкăл-шăкăл калаçаççĕ арçынсем, ашшĕ ăшă тумтир тăхăнса янă, кĕпи çинчен сарлака чĕн пиçиххи çыхса тăрать, кимĕç вара тĕпеле иртме ĕлкĕрнĕ, рамăсене вырнаçтарнă сăнÿкерчĕксене кăсăкланса пăхать.

— Эсĕ, Эльвира, чей лартса яр та какай ăшала, эпĕ наччаслăха пĕр çĕре кайса килем-ха,—тет ашшĕ.

Кимĕç чĕнмест. Çÿллĕ, йăрăс кĕлеткеллĕ вăл, хитре. Эльвира ăна хăй пĕлекен арçын ачасемпе танлаштарса пăхать — уша юнашар тăратма юрăхлине тупаймасть.

— Юрать, атте,—тет те Эльвира хушнă ĕçе тума пикенет. Хăй çаплах палламан каччă пирки шухăшлать: «Пултаруллă каччă, вăйлă»...

— Эльвира,— шартах сиктерет хĕре каччă сасси,—эсĕ, мĕн-и, шкулта вĕренетни-ха?

— Çук, кăçал вĕренсе тухрăм,— ăшшăн кулса, каччă куçĕнчен пăхрĕ хĕрача.

Какайне васкаса турарĕ те Эльвира плитка çине лартнă çатмана хучĕ. Тепĕр самантран чашăлтатса пăсланма пуçларĕ тĕпел кукринче. Эльвира пÿлĕме тухрĕ.

— Акă пирĕн класс,— тĕллесе кăтартрĕ вăл пĕр ÿкер-

чĕк ҫине. — Пурте тенĕ пекех саланса пĕтрĕҫ ĕнтĕ. Эпĕ ҫеҫ кунта юлтăм. Вĕренме килес ҫул ҫеҫ каяс тетĕп.

— Килес ҫул...— каччă уп ҫывăхнерех, ҫывăхнерех пычĕ, куҫне илмесĕр Эльвира ҫине пăхрĕ. Хăй сисмесĕрех Эльвира пĕр-икĕ утăм чакрĕ, чĕри сиксе тухасла тапма пуҫларĕ. «Нивушлĕ мана ыталасшăн вăл? Апла юрать-и вара?»— шикленерех шухăшларĕ хĕрача. Акă юнашарах ĕнтĕ вăл. Ниҫта тарса ўкме те ҫук. «Халĕ ыталать ĕнтĕ вăл»,— шухăшласа илчĕ ҫамрăк хĕр.

Ыталамарĕ ăна каччă. Пĕчĕк ачана ҫĕклесе илнĕ пек вăшт кăна ҫĕклесе илчĕ те пўлĕм тăрăх ҫаврăнкалама пуҫларĕ. Мĕн пулчĕ-ха капла? Ҫав тери лайăх пулса кайрĕ Эльвирăна. Вăл пĕчĕк хĕрача, ăна ашшĕ вăйлă аллисемпе ҫĕклесе илнĕ те сывлăшра ярăнтарать. Лайăх, ытла та лайăх... Самантлăха ачалăх ытамне кĕрсе ўкнĕ ҫамрăк хĕр хавассăн кулчĕ. Хăйне каччăн вăйлă аллисем ҫирĕпрен те ҫирĕпрех ыталама пуҫланине сисмерĕ. Акă ют ҫын сывлăшĕ питрен перĕнчĕ.

«Чим, ăҫта эпĕ, чим, атте ăҫта?»— мĕлтлетрĕ шухăш.

— Ярăр!—терĕ вăл хыттăн, каччăна янахĕнчен тĕксе.— Ярăр, атте килет. Атте килет тетĕп сире, мĕн, ăнланмастăр-и?

Чăнах та, пĕлнĕ пекех пулчĕ, ҫак вăхăтра хапха уҫăлса хупăнни илтĕнчĕ. Эльвира, каччăран вĕҫерĕнсе, йăпăряпăр тĕпеле чупса кĕчĕ, ҫўҫне-пуҫне тирпейлерĕ. Тинех сăмаварти шыв сиксе вĕренине сисрĕ вăл, какай ҫине тăвар яманнине астурĕ. Ҫамрăк ҫын пирус чĕртнĕрен ун тĕтĕмĕ тĕпеле янăнса кĕчĕ, куҫа касрĕ.

Салхуллăн кĕрсе тăчĕ ашшĕ пўрте.

«Риснĕ, тем тесен те сиснĕ, тен, курнă та чўречерен!— шартах сикрĕ Эльвира. — Халĕ мĕн пулать ĕнтĕ? Туса хутăм, ах, туса хутăм... Кимĕҫе ав ним те мар, ларать пирус паклаттарса».

Анчах хăрани ашшĕ калаҫма пуҫласанах иртсе кайрĕ.

— Килте ларать тетни ҫав Кулинене. Пĕтĕм яла лавкка кирлĕ, вăл пур — ирех вăрмана тухса кайнă. Вăт, ывăлăм, мĕн тăвăн, шăпамăр ҫапла килсе тухрĕ пуль ĕнтĕ. Эп, акă, шутларăм-шутларăм та... Каҫ пулсан луччă, ĕҫ хыҫҫăн... Юлташусемпе пĕрле хаваслăрах та пулĕ,— терĕ те старик сĕтел ҫине пĕрер тенкĕлĕх виҫĕ кĕмĕл укҫа кăларса хучĕ.

— Ат-те!— кăшкăрса ячĕ Эльвира, анчах ашшĕ те, каччă та хăй ҫине пит тĕлĕнсе пăхнăран урăх сăмах чĕнмерĕ.

Сăмавар пырса лартнă вăхăтра кĕмĕл тенкĕсем сĕтел ҫинче ҫукчĕ ĕнтĕ. Эльвира ăшалана какай илсе килчĕ, ҫă-

кăр касса хучĕ, икĕ куркана чей тултарчĕ те картишне тухрĕ. Кунта та питĕ пăчă иккен. Тăвăрланса, кӳтсе çитрĕ унăн чунĕ, вăл, шăлне çыртса, Атăл çине пăхса тăчĕ-тăчĕ те, тарăннăн сывлăш çăта-çăта, татăлса йĕме пуçларĕ. «Ытла та мĕскĕн-çке эпĕ, ытла та вăйсăр». Картишĕнче шиплетсе чупса çӳрекен чăх чĕпписемпе танлаштарчĕ вăл хăйне, вĕсенчен пĕрне алла илсе, ăна хĕрхенсе ачашларĕ, йăпатма пикенчĕ.

«Анчах пур вĕт-ха çынсем, пур. Вĕсемшĕн умри çул яланах паллă, шухăш уçă. Витĕр курма пĕлеççĕ вĕсем сана: ăçтиçук-и эсĕ, чăн-чăн çын-и. Çирĕп кăмăллă, мал ĕмĕтлĕ. Çавсем пек пуласчĕ. Мĕн кирлĕ-ши вĕсем пек пулма?..»

Эльвира çанă вĕçĕпе куçне шăлса типĕтрĕ, хăйне хăй алла илме тăрăшрĕ. Акă пӳртум алăкĕ чĕриклетрĕ. Арçынсем тухрĕç. Кимĕç куçĕ каллех Эльвиραннипе тĕл пулчĕ. «Намăс, чăтма çук намăс». Пуç сĕлтсе урама чĕнет каччă. «Çук, тем парсан та!» «Ай-яй-яй»,— тĕлĕннĕ пек, пуçне силлет лешĕ. «Йĕксĕк»,— пĕртен-пĕр сăмах пуçа килет Эльвирăна. Вăл, ним чĕнмесĕр, пӳрте кĕрсе каять. Шутсăр шыв ĕçес килет унăн, чӳречене яри уçса ярать те сĕтел хушшине ларать.

Çук, çиес килмест. Чашăк-тирĕке каллех тĕпеле кайса лартать вăл, унтан хăйĕн савнă вырăнне, лупаса,васкать. Картишĕнче темскер каскалама пуçланă ашшĕ ăна куçĕпе ăшшăн ăсатса ярать: Эльвира ывăннă, кантăрах ĕнтĕ, эх, кунĕ те çав паян...

Выртать Эльвира, çăмăл шурă пĕлĕтсем хĕвелтухăçнелле шунине сăнать. Юхать ушкăн-ушкăн пĕлĕт, çатăлтатать унăн Атăлĕ, çаплах тăвалла-аналла çӳреççĕ шурă пăрахутсем.

«Лайăхчĕ, ырăччĕ, савнă çын теттĕм,— каллех пaçăрхи канăç памасть Эльвирăна. — Мĕн пулчĕ? Нимĕн те ăнланаймастăп. Килчĕ, кайрĕ. Тутлипе килчĕ те йӳççине хăварчĕ».

Тем вăхăт çак шухăш танатинчен уйрăлаймасăр выртнă хыççăн хуллен хупăнаççĕ хĕрача куçĕсем. Пĕрре çӳçенсе чĕтрет Эльвира, тепре чăм-шыва ӳкет. Таçта, çын пырса тĕкĕнмен утрава пырса лекет вăл хăй тĕлĕкĕнче. Нимĕн те ӳсмест иккен унта. Çĕр çинче купи-купипе пĕрер тенкĕлĕх кĕмĕл укçа çеç йăваланса выртать. Темĕн чул кĕмĕл укçа. Хăрушă. «Атя, атя кунтан хăвăртрах»,— хулĕнчен тытса васкатать пек ăна сасартăк таçтан сиксе тухнă Аркади. Васкатать, васкатать. Хăй малалла тинкернĕ. Иккĕшĕ те, сенкер сывлăшра çунат сарса, хĕвел патнелле вĕçеççĕ пек...

# ÇУРАÇНĂ ХĔР

Тахçанхи ĕмĕт çитрĕ: сесси вĕçленсен тепĕр куннех Николай Дмитриевич Старков преподавательпе унăн арăмĕ Валентина, халь çеç филологи факультетĕнче иллĕкмĕш курс пĕтернĕскер, яла кайма тухрĕç. Купене кĕрсе ларсан тин çăмăллăн сывласа ячĕ Старков: ĕнтĕ лекцисем хатĕрлесе çĕрĕ-çĕрĕпе ларма тивмĕ. Икĕ уйăха яхăн пушă вăхăт пур: мĕн тăвас килет — çавна ту, ăçта кайма кăмăл пур — çавăнта кай. Çак туйăм, хĕрӳ ĕç хыççăнхи ирĕклĕх туйăмĕ, ăна инçетри Хăвакассине, арăмĕн тăван ялне, кайма хистерĕ: Валентина тек-текех пĕччен пурăнакан амăшне аса илет. Карчăкĕ те тунсăхларĕ-тĕр, хĕрне çеç мар, кĕрӳшне те курасси килет пуль.

Иккĕмĕш сăлтав та пулчĕ Старковăн яла паянах тухса кайма. Ĕнер Старков ĕçрен таврăннă кăначчĕ, хваттерте телефон шăнкăртатрĕ те, трубкăра вăл ĕлĕкхи тусĕн — Никодимăн — сассине палласа илчĕ. Институтра пĕрле вĕреннĕ юлташĕ тахçантанпах ĕнтĕ хăй патне хăнана чĕнет Николай Дмитриевича. Ĕнер те, акă, çавăнтанах пуçланчĕ калаçу: «Ну, мĕнле, вĕçлерĕн-и ĕçӳсене?.. Ара, мĕн туса тăратăр-ха, эппин?.. Эх, çанталăкĕ мĕне тăрать кунта!.. Пулă вылять Çарăмсанта! Ак çапла, Николай, ыран пуйăс çине ларатăр та тепĕр купне сире станцире манăн шофер кĕтсе илет... Ан турткалан, эс, мĕн, тусусене мантăн-и? Мĕн тери чаплă арăм тупса патăм сана, эс те çав... Итле, машина станцире пулать, номерне астуса юл — 29—96 ТТД. Пулчĕ, кĕтетĕп».

Çак калаçу çинчен Валентинăна каласа кăтартрĕ вăл. Лешĕ шутсăр хĕпĕртесе ӳкнине курсан вара ăнланчĕ Старков: çула пуçтарăнмалла.

«Пулă вылять Çарăмсанта...» Никодимăн çак сăмахĕ пушшех илĕртрĕ ăна. Ара, çав пысăках мар юханшывăн илемне те, унăн пуянлăхне те лайăх пĕлет Старков. Вунă çул каярах, Шупашкарти пединститутра вĕреннĕ чух, пĕрре кăна мар кайса килнĕ вăл Ухунькkana. Пуллине те тытнă, Никодим ашшĕпе пыл та татнă, хĕлле куян та йĕрленĕ. Çапла, пуян çутçанталăк Çарăмсан хĕрринче. Çавăнпах-и,— çынписем хăйне евĕр илемлĕ. Çакна пĕрремĕш хутĕнчех асăрханăччĕ Старков. Анчах пĕррехинче, питрав кунĕ, Никодимпа вĕсем Ухунькkаран виçĕ çухрăмри Хăвакассине уяв курма кайса килчĕç те — улшăнчĕ шухăш: мĕн тери хитре хĕрсем пурăнаççĕ иккен ялĕ-ялĕпе! Ниçта та, нихăçан та курманччĕ вăл Хăвакассинчи пек пĕрре пăхсах

килӗшекен хӗрупраҫа. Тен, унти ҫамрӑксене ҫавӑн пек пысӑка хурса хаклама уяв картин ҫӑл шывӗ пек шӑнкӑртатакан илемлӗ юрри те хистерӗ пулӗ. Хистенӗ, паллах, хистемесӗр. Халӗ те манаймасть-ха Старков ун чухне илтнӗ пӗр юрра. Чечеклӗ сарӑ пурҫӑн тутӑр ҫыхнӑ хӗр (эх, мӗн паман пулӗччӗ-ши уншӑн ҫамрӑк студент!) ҫепӗҫ сассипе юрӑ пуҫларӗ:

Атьӑр, хӗрсем, вӑрмана,
Атьӑр, хӗрсем, вӑрмана,
Кунтӑк ҫакса ҫырлана...

Унтан пурте, хаваслӑн кулкаласа, ерипен ҫак сӑмахсене тӑсрӗҫ:

Атьӑр, хӗрсем, леш каса,
Атьӑр, хӗрсем, леш каса,
Каччисене илӗртме,
Хӗрӗсене вӑрҫтарма...

Шӑпа темелле-и: ун чух Хӑвакассинче пулнӑ хыҫҫӑн Старков пӗтӗм канӑҫне ҫухатрӗ. Сисрӗ: туртнӑҫем туртать ӑна тем амакӗ ҫак яла. Шухӑшра ҫав пурҫӑн тутӑрлӑ ҫамрӑк хӗре кура пуҫларӗ вӑл ҫине-ҫинех. Вӑхӑт иртнӗҫем иртсе пычӗ. Институт пӗтерчӗҫ вӗсем Никодимпа. Наукӑна чун-чӗререн парӑннӑ Старкова кафедрӑрах хӑварчӗҫ. Никодим вара хӑйӗн тӑван ялне вӗрентме таврӑнчӗ.

Ҫулталӑк иртрӗ. Июнӗн юлашки кунӗсенче каллех тӗл пулчӗҫ икӗ юлташ. Никодим чӗннипе ҫеҫ те мар килчӗ Ухунькана Старков. Хӑвакассине мӗнле те пулин ҫитсе тухса, леш хӗре тепӗр хут курма ӗмӗтленчӗ вӑл. Анчах Хӑвакассине каймалла пулмарӗ хальхинче. Вӑтам шкул картишне кӗчӗ кӑна Старков, ӑна хирӗҫ — ак телей!— хайхи хӗр утса пыра парать. Шултра чечеклӗ шурӑ кӗпепе вӑл. Кӗлетки тӑп-тӑпланнӑ, ҫырӑ ҫӳҫлӗ ҫивӗчӗ кӑкӑрӗ ҫинче илемлӗн усӑнса тӑрать. Акӑ унӑн чакӑр куҫӗ Старковӑн куҫӗпе тӗл пулчӗ. Ним тӑвайман сине ҫул ҫинче тусанланнӑ куҫлӑхне сӑмси ҫинчен илсе алтутрипе тасатма пуҫланӑччӗ Николай Дмитриевич, анчах те асӑрханаймарӗ, те алли чӗтрерӗ, куҫлӑхӗ ҫат! турӗ ҫӗрте выртакан шурӑ чул ҫине.

— Ой!— мӗнпе те пулин пулӑшас тесе, чупса пычӗ хӗрача Старков патне. — Асӑрханаймарӑр-им? Вансах кайрӗ...

— Темех мар, темех мар,— ним калама аптрарӗ Старков. Хӗрачана ытла илемсӗр курӑнасран, куҫне сӑтӑркаласӑтӑркала илчӗ вӑл.

— Эсир Никодим Сергеевич патне пуль-ха?— ыйтрӗ хӗрача.

Ҫапла. Эсир ӑҫтан пӗлетӗр?— тӗлӗнчӗ Старков.

— Хăвакассинче курнăччĕ иксĕре,— именчĕклĕн каларĕ хĕрача.
— Ай-юй, унтанпа икĕ çул иртрĕ. Çавна та астăватăр-и?
— Астăватăп,— терĕ хĕрача.
— Эппин, эсир кунта ĕçлетĕр?— хăвăртрах пĕлесшĕн пулчĕ Старков.
— Кунта. Библиотекарь эпĕ.
«Никодим вырнаçтарнă,— кĕвĕçсе илчĕ Старков хăй ăшĕнче. — Пĕлет çав тути-масине. Ахалех килтĕм пулĕ те-ха...»
— Паян вечер пирĕн. Вуннăмĕш классене аттестат параççĕ,— терĕ хĕрача. — Никодим Сергеевич сире те илсе каять пулĕ-ха унта. Ав, вăл хăй килет. Эпĕ каям-ха ĕнтĕ.
— Эсир,— хĕрача куçĕнчен пăхрĕ Старков (çапах та куçлăхĕ унăн тĕлсĕр ванса кайрĕ, хĕрачан илемлĕ пит-куçне те витĕр кураймасть ĕнтĕ вăл),— эсир... мĕн ятлă?
— Валентина,— терĕ хĕрача.
Пурте пулчĕ каярах: шкул клубĕнче пĕр çамрăк купăсçă — шкул ачи ĕнтĕ — чăм-шыва ӳксе, «Амур вальсĕ» каларĕ, Старковпа библиотекарь хĕрача ыттисемпе пĕрле ташă картинче çаврăнчĕç. Шкул ачисем аттестат илнĕ ятпа мар, вĕсемшĕн, Валентинăпа иккĕшĕн телейĕшĕн килнĕн туйăнчĕ Старкова çак чаплă каç.
Унтан вăл Валентинăна Хăвакассине ăсатса ячĕ. Тем пакăлтатрĕ çул тăрăх, тĕнчери аслă ученăйсен пурнăçĕнче пулса иртнĕ кулăшла япаласем çинчен кала-кала кăтартрĕ.
Ача пек шутсăр телейлĕ туйрĕ хăйне Старков çав каç. Çав çамрăк хĕрача вăтăр çула çывхарса пыракан арçынран пĕртте ютшăнманни, ăна хăйĕн тантăшĕ пекех ăнланма тăрăшни питĕ килĕшрĕ ăна. Тепĕр тесен, вуникĕ çулхи уйрăмлăх ĕçе пăсаймасть. Хĕрĕ те ку сăпайлăскер, хулари хăшпĕрисем пек иртĕхсе кайман, çирĕп те лайăх çемье пулĕ вĕсен малашне.
«Çирĕп те лайăх çемье...» Мĕн çинчен кăна ĕмĕтленмест пулĕ этем! Хăйĕн пуласлăхне вăл чи çутă, чи хитре сăрăсемпе сăрлать, ăна хăй кăмăлĕпе, хăй еккипе çыхăнтарнă карта лартать, малашнехи пурнăçĕ пĕр пăркаланмасăр малтан шухăшласа хунă çулпа чупасса кĕтет. Анчах чăнлăх тепĕр чух чылай кăткăсрах. Миçе тĕрлĕ кĕтмен япала сиксе тухмасть пуль пурнăçра, мĕнле кăна пăтăрмах кĕтсе тăмасть пуль сана кашни кĕтесре. Чăн ĕнтĕ, Старков ĕмĕтленни çитрĕ темелле. Çав июнь каçĕ хыççăн тепĕр уйăхранах Валентина Шупашкар университетне вĕренме кĕчĕ. Çамрăк чухне ăна-кăна чухламан аспирантшăн ти-

нех юрату тапхăрĕ пуçланчĕ. Наукăра та, юратура та анса пычĕ ун пурнăçĕ, Акрамов профессор пулăшнипе диссертацине вĕçлерĕ вăл, физиксемшĕн халиччен паллă мар тĕпчев меслечĕ шухăшласа кăларчĕ, паян-ыранах ученăйсем хăйне чи ăшă сăмахпа саламласса кĕтрĕ. Çав савăнăçлă вăхăтра ĕнтĕ авланма шут тытрĕ Старков. Валентина хирĕç пулмарĕ. Профессор тăрăшнипех пĕр пӳлĕмлĕ хваттер пачĕç çĕнĕ çемьене: пурăн, шанчăк паракан çамрăк ученăй, çĕнĕ çитĕнӳсем ту, ача-пăчаллă пул. Хваттерĕ, чăнах ĕнтĕ, пĕчĕкрех пулчĕ Старковшăн, вырăнти комитет та, ректорат та хăйне тивĕçлипе хисеплесех çитереймен пек туйăнчĕ ăна. Анчах хăйне хăй йăпатма вăй çитерчĕ вăл: «Диссертаци хӳтĕлесе килем-ха акă, курĕç вара Старков камне».

Пытармалли çук, кăрккалăх пурччех çав ун хăтланăвĕсенче. Акрамов ăна ыттисенчен ытларах юратнăран та, суйласа илнĕ тема пĕлтерĕшĕ пысăк пулнăран та мăнкăмăлланма тивĕç пур пек туйăнатчĕ Старкова. Валентина умĕнче çеç унчченхи пек сăпайлă та йĕркеллĕччĕ Николай Дмитриевич. Юрататчĕ вăл ăна, шухăшламасăр, виçмесĕр пĕр-пĕр сăмах персе ярса çамрăк арăма хăйĕнчен сивĕтессрен хăратчĕ.

Анчах чăнлăх чылай кăткăсрах çав. Диссертаци хӳтĕлеме кăнтăрти пĕр хулана кайса килчĕ те Старков, унăн пурнăçĕ айĕн-çийĕн пăтранса кайрĕ. Халĕ те-ха уяр кун тип аça çапнă пек янăраççĕ хăлхара оппонент сăмахĕсем: «Тема çĕнĕ мар. Одессăра ку меслетпе ĕçлеме пуçланă ĕнтĕ». Пусăрăнса, çилĕллĕн таврăнчĕ Старков тăван Шупашкара. Хăйĕн хуйхи çинчен тӳрех Акрамова каласа кăтартрĕ вăл. Тĕлĕнсе, пуçне пăркала-пăркала итлерĕ профессор уп сăмахĕсене, унтан çапла каларĕ: «Алă усма кирлĕ мар. Наука çулĕ — кăткăс çул. Çĕнĕ ĕç пуçлăпăр».

Анчах çĕнĕ ĕçе унччехи пек хăюллăн та шанчăклăн тытăнаймарĕ Старков. Пĕрип хыççăн тепри иккĕленӳллĕ шухăшсем çуралчĕç ун пуçĕнче, профессор çине шанмасăртарах пăха пуçларĕ вăл. Акрамов та çакна сисмесĕр тăма пултараймарĕ. Мăкăртатма, ним çукранах чăкăлташма пуçларĕ старик. Çакă вара Старковăн ахаль те хавшак чĕрине пушшех çĕткелентерчĕ. Пурăна киле ĕçри хутшăнусен сулхăнĕ майĕпен çемье çине куçса пычĕ. Чи çывăх туссен сĕнĕвĕ те текех хавхалантарайманнине туя пуçларĕ Старков. Хăй ăшне путрĕ вăл, таврара, килте мĕн пулса иртнине курма, илтме пăрахрĕ.

* * *

Вакун кустăрмисем чĕриклетсе илнипе ыйхăран вăраннă Валентина хăй ăçтине тÿрех тавçăрса та илеймерĕ. Унталла-кунталла пăхкаларĕ: хăйне хирĕç упăшки выртать, аялти çÿлĕксем çинче вара никам та çук.

— Сакăрвун пĕрмĕш пуйăс виçĕ минут тăрать,— илтĕнчĕ хĕрарăм сасси урамри репродуктортан.

Хăйсем ăçта çитнине пĕлес тесе, Валентина кантăкран кармашса пăхрĕ. «Чердаклы» тесе çырса хунă сарăпа сăрланă çурт çине. Çур çĕр иртнĕ ĕнтĕ. Çапах хĕвĕшет халăх перронта. Çуллахи вăхăт-çке: пĕрин — отпуск, теприн — каникул.

Каллех вырăн çине майлашса выртрĕ Валентина. Часах пуйăс тапранчĕ, вакун кустăрмисем каллех пĕр евĕрлĕ юрă пуçларĕç: шăкăл-шăкăл, шăкăл-шăкăл. Тепĕр çич-сакăр сехет каймалла-ха вĕсен, унтан — тăван тавралăх. Анне çурчĕ. Темле-ха, Никодим Сергеич станцине машина та ярать пулсан, ыранах çитейĕç-и вĕсем амăш патне. Сывăх юлташне хăна тăвас тейĕ Никодим, е вăрмана, е Çарăмсан хĕррине илсе кайĕ. Ялан мĕн те пулин шухăшласа кăларать вăл. Тĕлĕнмелле пултаруллă çын. Çынсемпе пурăнма пĕлет. Шкулта икĕ çул ĕçлерĕ кăна, партком секретарĕ туса хучĕç ăна колхозри коммунистсем. Халĕ акă — председатель. «Шăпа»,— тенĕччĕ кун пирки пĕррехинче Николай Дмитриевич. Шăпа-и, шăпа мар-и, çакăн çинчен шухăшламан Валентина, анчах пĕлсе тăрать: Никодим Сергеич, чăн та, председателе юрăхлă çын ĕнтĕ. Унăн Старковĕпе танлаштарсан, çĕрпе пĕлĕт пек вĕсем: Никодим Сергеич — вăр-вар та çаврăнăçуллă, кирек мĕнле ыйтăва та çийĕнчех татса пама хăнăхнă çын. Николай Дмитриевич вара ĕçе васкамасăр, теплĕн, пур енчен те виçсе, хакласа тăвать. Анчах килĕштереççĕ вĕсем пĕр-пĕрипе; чылай вăхăт курмасăр тăрсан — тунсăхлаççĕ, тĕл пулсан — ача пек хĕпĕртеççĕ. Пытармасăр каласан, Валентина хăй Никодим Сергеич йышшисене ытларах кăмăллать. Анчах, акă, чавса çывăх та çыртма çук ĕнтĕ, кун хыççăн кун, çĕр хыççăн çĕр иртет, ун умĕнче пĕрре яланлăхах лартнă турăш пек, кукшаланса пыракан çак Старков явăнать. Лăпкăн, васкамасăр шăвать пурнăç. Тахçан, хĕр чухне, арлă-арăмлă пурнăç урăхларах, илĕртÿллĕрех курăнатчĕ Валентинăна. «Старков — тăнлă-пуçлă çын, ăс-хакăл хакне те, сисĕмтуйăма та лайăх пĕлсе тăрать,—шухăшланăччĕ ялти хĕрача çав çуллахи каç хыççăн. — Мĕнле-ха капла, çак ырă арçынна халиччен те хăйне савакан хĕр тупăнман?» Старков ăна хăй мĕн ĕçлесе, мĕн шутласа-ĕмĕтленсе пурăнни

ҫинчен каласа парсан, телӗнчӗ Валентина: «Мӗнле вӑйлӑ та харсӑр ҫын вӑл!» Университета вӗренме кӗрсен, ҫамрӑк студентка хӑй куҫӗпе хӑй курса ӗненчӗ: ҫапла, юрататъ ӑна Старков, Валентинӑсӑр пуҫне унӑн никам та ҫук, тен, пулман та. Ҫавӑнпах Николай Дмитриевич авланас пирки сӑмах тапратсан, турткалашса тӑмарӗ хӗрача, хӑшпӗр юлташӗсем апла-капла каланине пӑхмасӑрах, ӑна качча тухма килӗшрӗ. Туй пекки пулчӗ, хӑлхара Никодим шӳчӗсем янӑрарӗҫ (савӑнӑҫлӑччӗ вӑл, аякран пӑхсан, ҫав кун Старков мар, хӑй авланать теме пулатчӗ пуль), эрех-сӑра юхрӗ, турилкке ванса ҫӗмӗрӗлчӗ вӗсен телейӗшӗн.

Унтан килте иккӗшӗ кӑна тӑрса юлчӗҫ. Хӑратрӗ Валентинӑна ҫак шӑплӑх, хумханнипе лара-тӑра пӗлмерӗ вӑл, упӑшки хӑй юратӑвӗ ҫинчен тӗпӗ-йӗрӗпе каласа парасса, ачашласса кӗтрӗ. Анчах кӗтнӗ пек пулмарӗ. Старков тарӑн ыйха путсан, кӳтсе-кӳтсе ҫитрӗ те Валентина чӗри, вара ҫунса тӑракан питҫӑмартти тӑрӑх вӗри куҫҫуль юхса анчӗ. Ҫӗрӗпе ҫывӑраймарӗ вӑл ҫав каҫ, хӑй ачалӑхне, ҫамрӑклӑхри илӗм-тилӗм вӑхӑта аса илчӗ. Ҫукчӗ-и ун валли ҫак Старковсӑр пуҫне хӑй килӗштерекен каччӑ? Э-эх, вунҫиччӗре чух тӗл пулнӑ Харлампие тупаймӗ ӗнтӗ вӑл текех. Ухмах, мӗн тери ухмах пулнӑ-ҫке Валентина! Халӗ, акӑ, пурнӑҫ йывӑрлансах пынӑ вӑхӑтра, ҫине-ҫинех тӗлӗкре куракан пулчӗ вӑл ӑна. Чӗнет пек Харлампи, улма чӑпар урхамахпа килет пек ун патне. Анчах ыйхӑран вӑранса каятъ те Валентина—каллех ҫак пӑчӑ пӳрт кӑна ун йӗри-тавра. Пулнӑ-ха, Харлампи хыҫҫӑн та пулнӑ ӑна куҫ хывакансем. Анчах ун чух ӗнтӗ Валентина Старкова шеллерӗ, ҫывӑха та ямарӗ ыттисене. Эрнесем, уйӑхсем шуса иртрӗҫ. Ҫакна туя пуҫларӗ Валентина пурӑна киле: Старковӑн тӗп тӗллевӗ—наука, ӑна вӑл пурнӑҫра нимӗнпе те улӑштараймӗ. Упӑшки ҫӗм-ҫӗрлене юлса таврӑна пуҫласан, ырӑ мар шухӑшӗсем киле-киле кӗчӗҫ Валентина пуҫне, кӗвӗҫӳ туйӑмӗ ҫуралчӗ. Кӑлӑхах иккен — темиҫе хут шӑнкӑравласан та, Старкова кашниччех лабораторире тупрӗ вӑл. Каярах упӑшкин пӗрер, икшер уйӑхлӑх командировкӑсем пуҫланчӗҫ. Пӗччenлӗхре асапланчӗ Валентина, анчах ҫакӑншӑн кама айӑпламаллине пӗлеймерӗ. Ӗмӗчӗ-шухӑшӗпе каллех ирӗклӗхе ӑнтӑлчӗ вӑл. Анчах мӗнле тухмалла-ха ку танатаран?— ҫакӑ ҫеҫ паллӑ пулмарӗ. Уйӑлса кайсан, пӗччен амӑшӗ те савӑнса ӳкес ҫук,— пурнӑҫа тытма пӗлекен йӗркеллӗ ҫын вырӑнне хурать вӑл хӑй кӗрӳшне,— ялйыш та, тус-юлташӗсем те урӑхларах пӑхӗҫ Валентина ҫине. Ят кайсан, пурнӑҫ мар вара, тем те пакӑлтатӗҫ, кулӗҫ, савӑнӗҫ.

Анчах тепӗр майлӑ шухӑшласан... Ытла япӑх-и вара унӑн Старковӗ? Пӗвӗ-сийӗ пур, ӑсӗ пур. Хӑйӗн физикине парӑннӑ пултӑр. Мӗнрен япӑх? Камӑн малалла туртмалла наукӑна? Вӑл кунӗн-ҫӗрӗн Эйнштейнсемпе, Ландаусемпе, Резерфордсемпе ашашать. Вӗсен те пулнӑ пулӗ-ха арӑмӗсем. Хисепленӗ-тӗр, пулӑшнӑ пуль упӑшкисене пӗтӗм тӗнчипех паллӑ ученӑйсем пулса тӑма. Мӑнкӑмӑллӑх ку, тем тесен те, хӑйне ҫеҫ юратмасть-и Валентина?

Шухӑш, шухӑш... Кун килет те ҫӗр иртет, хӑтӑлаймасть вӗсенчен Старков арӑмӗ. «Хисепленӗ-тӗр, пулӑшнӑ-тӗр...» «Ҫук, ҫук, хисеп те пулӑшу вӑл пачах урӑхла япала. Юрату кирлӗ. Вӗресе, хӗмленсе тӑракан юрату. Арӑмӗ упӑшкине хисеплет пулсан, упӑшки арӑмне мӗншӗн хисеплемелле мар? Мӗншӗн Старковӑн Валентина ҫамрӑклӑхне шута илмелле мар?»

...Ыйхӑ вӗҫрӗ. «Шӑкӑл-шӑкӑл, шӑкӑл-шӑкӑл»,— кӑлтӑртатаҫҫӗ вакун урапиcем. Ҫуллахи ҫӗр те вӑрӑм иккен.

* * *

Чылай вылярӗ ҫак ҫутӑ тӗнче Харлампи шӑпипе. Вуниккӗре чухне ун урине тиха тапса сиктерчӗ, икӗ эрне пульницара выртрӗ вӑл. Тепӗр тӑватӑ ҫултан тӑххӑрмӗш класа ҫӳреме пуҫланӑччӗ кӑна — ашшӗсӗр тӑрса юлчӗ Харлампи. Тӗреклӗ старикехчӗ ашшӗ, ҫӗнӗ ҫурт ҫавӑра пуҫланӑччӗ — пулаймарӗ, варманта ӗҫлесе ӑшша пиҫнӗ те вӑл Хурӑн ҫӑлӗнчи шывпа ӑшчикне пусарнӑ. Пӗр эрне те пурӑнаймарӗ вара ҫавӑн хыҫҫӑн. Ҫапла Харлампи амӑшӗпе кӑна тӑрса юлчӗ. Вӑр-вар, ҫивӗч ӑслӑ йӗкӗт сасартӑках улшӑнма пуҫланинчен тӗлӗнчӗҫ ял ҫыннисем. Пусӑрӑнчӗ вӑл, кӗтмен ҫӗртенех аслӑланчӗ темелле. Хӑвакассине каччa тухнӑ Верук аппӑшӗ ӑс панипе шкула ҫӳреме пӑрахрӗ. Харлампи, ашшӗ ӗҫне кӳлӗнчӗ, колхоз лашисене пӑхa пуҫларӗ. Вунҫиччӗре вара... Ҫынпа калаҫнӑ чух ҫав вӑхӑтра мӗн пулса иртнине аса илме юратмасть вӑл... Ҫураҫнӑ хӗре вӗҫертрӗ Харлампи хӑй аллинчен. Ят сарӑлчӗ яла. Таҫта мур шӑтӑкне кӗрсе каясшӑнччӗ вӑл ҫын сӑмахне чӑтаймасӑр. Мур шӑтӑкне тупаймарӗ. Пурӑна киле вара ял ҫинче ырӑ ят илмелли урӑх майсем шырама тытӑнчӗ вӑл. Тӗрӗссипе, ҫав майсене шырама икӗ ҫын пулӑшрӗ ӑна. Пӗри Хусанти пӗр заводра инженерта ӗҫлекен Курьян пиччӗшӗ пулчӗ, тепри — Никодим Сергеевич. Ҫак икӗ ҫын вӗрентнипе ӗнтӗ Харлампи пурнӑҫ ҫине ҫӗнӗллерех пӑхма, ҫынсем хушшинче хӑйне урӑхларах тытма тапратрӗ. Майӗпен-майӗпен ҫакна ӑнланса пычӗ Харлампи: чӑнах ҫав, ҫакӑ ҫутӑ тӗнчере этемрен вӑйли ҫук, юхӑма май пыни унӑн хал-

сăрлăхне çеç кăтартать, чăн-чăн этемĕн хăй шăпине çирĕппĕн алла илмелле.

Сахал мар тĕлĕннĕччĕ çамрăк конюх пĕрре çапла Курьян пиччĕшĕ çуллахи отпуска яла таврăнсан. Ĕççине тухнăччĕ ял халăхĕ. Уяр çанталăк тăрать, комбайнсем хĕрсех тырă выраççĕ. Харлампин те ĕç нумайланчĕ; колхозра машинăсем пур та, лашасем те ахаль тăмаççĕ çав-ха. Çавăнпа унăн яра кунах лаша витинче пулмала: пĕрне ăсатса яр, тепĕрне кĕтсе ил, лайăх тăрантар, вăхăтра шăварма ан ман лашасене. Курьян пиччĕшне хăна пек пăхма та вăхăт тупăнмарĕ Харлампин. Хула çынни хăй те нумай пурăнса ĕçлĕ çынсене чăрмантарас темерĕ-ши, килте Харлампи алли çитеймен вак-тĕвек ĕçсене тукаларĕ те çула тухас пирки сăмах тапратрĕ. Шăп çав вăхăтра сиксе тухрĕ инкек. Пăрттас Якурĕ уйра йĕркеллех кĕрлеттеретчĕ хăйĕн çĕнĕ комбайнне. Тем пулчĕ, мотор чăхăмларĕ. Пĕр кун, ик кун иртрĕ çапла, анчах комбайнерсем хăйсем те, колхоз механикĕ Петр Фомич та инкек сăлтавне тупаймарĕç. «Сельхозтехника» специалисчĕ те кăлăхах тăрмашрĕ. Хаклă вăхăт иртсех пычĕ. Çакăн çинчен Курьян пиччĕшне станцие кайма çула тухсан калаçа пачĕ Харлампи. Чăнах та, вăрман хĕрринче хайхи комбайн ларнине курчĕç вĕсем. Сăмах-юмах вакламарĕ Курьян пиччĕшĕ. «Атя-ха, эппин, çитсе курар»,— терĕ те Харлампие, тем вăхăтрах вĕсен лавĕ çак капмар машина патне çитсе чарăнчĕ. Пăрттас Якурĕпе тем сăмахласа илчĕ Курьян пиччĕшĕ, мотор патне çӳле улăхса кайрĕ, ăна-кăна пускаларĕ, унтан костюмĕпе кĕпине хыврĕ те Харлампие ывăтса пачĕ. Шанмасăр, ĕненмесĕр пăхкаларĕ Харлампи пиччĕшĕ çине. Лешĕ мотор патне кукленчĕ, вара нумайччен пĕр сăмах чĕнмесĕр ун пайĕсене пăркаларĕ. «Ĕнтĕ пуйăса ĕлкĕресси пулмасть»,— шухăшларĕ Харлампи, вара хăй те пиччĕшĕ патне хăпарса, унăн ĕçне сăнама пикенчĕ.

Пĕр-ик сехет хушшинче йĕркеллех тăракан мотортан нимĕн те юлмарĕ. Пăрттас пулăшнипе пайăн-пайăн сӳтсе тăкрĕ ăна инженер. Кăнтăрла иртсен моторăн хăшпĕр пайĕсене лав çине тиерĕç те яла, мастерскоя, илсе кайрĕç. Çĕрĕпе киле таврăнмарĕ Курьян пиччĕшĕ. Ирхине мотор пайĕсене каллех комбайн патне турттарса кайрĕ Харлампи. Тепĕр ик-виç сехетрен вара Курьян пиччĕшĕ ун çине чеен куç хĕссе илчĕ те çапла каларĕ: «Хăлхуна хупла, Харлампи!» Чăнах та, Пăрттас Якурĕ ручкăна пĕр-иккĕ çавăрчĕ кăна,— мотор сасси, тикĕссĕн кĕрлесе, таврари шăплăха хупласа хучĕ.

Темле юмахри асамçа аса илтерчĕ Харлампие Курьян

пиччĕшĕ. Савăнса, мăнкăмăлланса пăхрĕ вăл ун çине. Каярах комбайн патне председатель çитрĕ. Шутсăр хĕпĕртенĕскер, Курьян пиччĕшне ыталаса илчĕ вăл, тав тăва пуçларĕ, тархасласах ăна колхоз правленине чĕнчĕ:

— Атьăр, атьăр халех, эп... мĕн, нумаях мар та, ну, пĕр аллă-утмăл тенкĕ, çул çине...

— Çук, çук, Илья Иванч, укçашăн мар вĕт, ак вăл,— сап-сарă ыраш пуссн енне пуçне сĕлтсе кăтартрĕ Курьян пиччĕшĕ,— ак вăл маншăн чи лайăх парне. Вăхăтра пухмалла ăна.

Кайран, пиччĕшĕ пуйăс çине ларнă чух, хăйне канăç паман ыйтăва татса пама шутларĕ Харлампи.

— Механиксем тăваймарĕç, специалист килсе кайрĕ, эс мĕн... асамçă мар пуль те?— ыйтрĕ вăл, ача пек хăюланса.

Курьян пиччĕшĕ Харлампи çине пăхса тăчĕ-тăчĕ те, пирусне сӳнтерсе, лăпкăн çапла каларĕ:

— Вĕренес пулать, Харлампи, вĕренес пулать.

...Акă вĕт мĕнле, çавăн чух инженер пиччĕшĕ яла ырă туса хăварчĕ те, Харлампи çине те çынсем урăхларах пăхма тапратрĕç. Курьян пиччĕшĕ мар, хăй сирсе ячĕ тейĕн çавăн чух сасартăк сиксе тухнă инкеке. «Вĕренес пулать»,— терĕ пиччĕшĕ. Ырă ят та пĕлӳсĕр килмест авă. «Ара, мĕншĕн вĕренес мар,— терĕ Харлампи,— каçхи шкул ялтах пур, унччен япăххисен шутĕнчех марччĕ-ха эпĕ те». Çапла Харлампи каллех тăххăрмĕш класа çӳре пуçларĕ. Вунтăххăра çитнĕ тĕле вара вăтам шкул пĕтерсе аттестат илчĕ. Каярах салтака кайрĕ вăл, унта та пĕлӳ патне туртăнчĕ йĕкĕт, шофера вĕренсе тухрĕ, руль умне ларчĕ. Тепĕр виçĕ çултан тăван яла таврăнчĕ те вăл председатель машинипе çӳреме тытăнчĕ. Никодим Сергеевича шутсăр килĕштерсе пăрахрĕ. Харлампи вĕреннĕ, салтакра пулнă чухне Ухуньккара учительте ĕçленĕ çак çын та, Курьян пиччĕшĕ евĕр, темле асамçă пек туйăна пуçланине сисрĕ вăл пурăна киле. Акă ĕнтĕ Никодим Сергеевичпа юнашар тăватă çул ĕçлет Харлампи. Çапах ăна лайăх пĕлсе çитрĕ теме иртерех-ха. Таçта-таçта çитсе курать вăл унпа, анчах çул çинче председатель мĕн шутланине, ун пуçне мĕнле ăс пырса кĕнине чухлаймасть, кая юлса ăнкарать. Пĕлтĕр, ав, таçти пилĕкçĕр çухрăмри пĕр хулана кайса килчĕç вĕсем, тепĕр уйăхран колхоза мунча котельнăйĕ килсе çитрĕ. Таврара çук халь Ухуньккари пек чаплă мунча! Мĕн кăна çук-ши унта: хырăнмалли, çӳç кастармалли пӳлĕмĕ те, прачечнăйĕ те, пăсланса тăракан вĕри ырлăхĕ те, çăванса тасалмалли те, чӳхенмелли те — пурте пĕр çĕрте.

Кăçал акă шурă çăнăх авăртакан арман туса лартрĕç. Ялта хулари театртан пĕртте кая мар Культура керменĕ пур — тата мĕн çитмест-ши ялта? «Шывпа газ кĕртмелле кашни çурта»,— тет Никодим Сергеевич. Тытăнчĕ-тĕк — кĕртетех.

Тахçан Курьян пиччĕшĕнчен ыйтнă пек, председательтен: «Асамçă-и эсĕ?»— тесе ыйтмасть ĕнтĕ Харлампи. Никодим Сергеевич пĕр-пĕр пысăк ĕç тапратсан, Харлампи ун çине шалт тĕлĕнсе пăхать те, лешĕ:

— Вĕренес пулать, Харлампи,— тесе хуравлать.

Çапла ĕнтĕ, хальхинче те хăй хытă хисеплекен çын сăмахĕ пулăшрĕ ăна. Техникума вĕренме кĕчĕ Харлампи. Кăçал хĕлле унăн юлашки экзаменсем тытмалла. Механик пулса тăрать вăл кĕçех. Мĕнле ĕç парĕç ăна малашне — çакăн çинчен шухăшламанччĕ-ха Харлампи, мĕншĕн тесен хăйĕн хальхи ĕçне чи кирли тесе шутлама хăнăхнăччĕ вăл. Анчах Никодим Сергеевичăн пĕр калаçăвĕнчен çакна сисрĕ шофер: ялан кун пек пурăнса пулмасть. «Асли хушнипе çеç ĕçлекен çын пурăна киле хăй пуçĕпе шухăшлама пăрахать»,— терĕ председатель. Сăмах хăй çинчен пымарĕ пулин те, Никодим Сергеевич мĕн калас тенине аванах тăна илчĕ йĕкĕт. Чылайччен пуçне çĕмĕрсе шухăшласа çӳрерĕ çакăн хыççăн Харлампи. «Тĕрĕс калать,— терĕ вăл хăй ăшĕнче,— хăнăхнă ĕçе пăрахма шикленетĕп, çыннăн ĕмĕтленмелле». Çутă тĕнче каллех хитре те илĕртӳллĕ туйăна пуçларĕ ăна.

* * *

Тепловоз чашлата-чашлата вокзал çурчĕ патне çывхарчĕ те палăртнă тĕлте тăпах чарăнчĕ. Хĕвĕшӳ пуçланчĕ: пĕри анать, тепри ларать. Харлампи шухăшĕ тӳрех Никодим Сергеевич хăнисем çине куçрĕ. «Ак çаксем пулĕ-ха, мĕнле йĕркеллĕ» — пулăшма чупрĕ вăл ватăрах сăнлă арçынпа хĕрарăма. Анчах пулăшма ĕлкĕреймерĕ, кĕтсе илекенсем хушшинчен икĕ хĕрача сиксе тухса пӳлчĕç Харлампи çулне, арçынпа хĕрарăма ыталама, чуптума пуçларĕç. Йăнăшрĕ Харлампи. Ав, пуйăс вĕçĕнчен пĕр типшĕмрех кĕлеткеллĕ кукша пуçлă арçынпа кăвак шăлаварлă, сăмси çине хура куçлăх утлантарса янă хĕр утаççĕ. «Ай-яй, епле вĕçкĕн ку хĕр»,— терĕ хăй ăшĕнче Харлампи, вара тепĕр еннелле утрĕ.

Пуйăс вăрăммăн кăшкăртса вырăнтан тапранчĕ. Малалла хытăран хытă кайма пуçларĕ. «Вăт япала,— тĕлĕнчĕ Харлампи,— килеймерĕç-и вара кусем? Иртсе кайрĕçши пĕлмесĕр? Мĕн калас-ха ĕнтĕ председателе?»

Çак шухăшсемпе вăл машина патне таврăнчĕ. Ак амак, арçынпа кăвак шăлаварлă хĕр тăра параççĕ машина патĕнче. Харлампи тĕлĕнерех пăхнăран арçынни тӳрех ун патне утса пычĕ те алă пачĕ.

— Старков Николай Дмитриевич, Никодим Сергеич хушнипе пуль?

— Ара, çавăнпа ĕнтĕ. Харлампи ятлă-ха эп.

— Питĕ лайăх,— терĕ Старков. — Вырнаçăпăр, эппин, Валентина.

Хăнасен пĕртен-пĕр чăматанĕпе пысăк хăмăр портфельне малти ларкăч çине вырнаçтарса хучĕ те Харлампи пассажирсене ларма пулăшрĕ. Хĕрĕ, Валентина текенни, хура куçлăхне машина çине ларсан та хывмарĕ-ха.

Çăмăл автомашина, аслă çул çине тухса, Ухунькка еннелле чуптарчĕ.

* * *

Валентина ăна тӳрех палласа илчĕ, акă вăл, унăн çамрăклăхĕнчи пĕр куна та пулин астăвакан этем. Ав, мĕнле пулса кайнă Харлампи — тĕрекленнĕ, сăн-питрен илемленнĕ. Çав-çавах йăвашшăн пăхать унăн кăвак куçĕ. Хăй паллаймарĕ, ах, паллаймарĕ-ха хăй, мĕн тунă пулĕччĕ-ши вăл ун чухне?

Пуйăспа килнĕ чухнехи йывăр шухăшсене манса кайрĕ Валентина. Кĕтмен тĕлпулу ырă кăмăл çуратрĕ.

Ем-ешĕл çăкалăх иртсе юлнă хыççăн çулăн икĕ айккипе çурта пек тӳрĕ хырсем чупса кайрĕç, тĕллĕн-тĕллĕн кăтрисене тураса ларакан шурă хурăнсем курăнчĕç. Вăрмантан тухсан, машина пучах кăлара пуçланă ыраш пуссипе ыткăнчĕ. Ăшă çу кунĕ тăрать тăван тавралăхра, мăнаçлăн хумханать куçпа виçейми анлă уй-хир. Вĕççĕр-хĕрсĕр ирĕклĕх чуна уçса ярать, кăкăра çĕкленӳллĕ кăмăл-туйăм вĕрсе кĕртет. Мĕн тери саватчĕ çак вăхăта Валентина! Июль пуçламăшĕ. Паян-ыран утă çулма тухать ялйыш. Шӳт, хаваслăх, çава сасси кăссс! та кăссс! янраса тăрать вара. Кăштах ĕшенетĕн те хĕрӳ кăварпа йăсăрланса выртакан вучах патне сиплĕ чей ĕçме васкатăн. Такам юрă пуçлама ĕлкĕрет, ун çумне ыттисен сассисем хутшăнаççĕ, эх, каять вара юрă чăтлăхсемпе уçланкăсем тăрăх юхса!

Çак енчен илсен, мĕн тери телейлĕ туять пуль хăйне Харлампи! Паллаймарĕ вăл. Тен, çапла лайăхрах та. Ан тив, Старков умĕнче ырă мар ан туйтăр, мĕскĕн пек ан тыттăр хăйне. Пĕр шутласан, уйрăмлăхĕ мĕнре? Кунĕнçĕрĕн пурнăçа курмасăр, çынпа хутшăнмасăр тĕрлĕ прц-

борсемпе аппаланса ларакан Старковăн хăйне çак Харлампирен çӳлерех тытма тивĕç пур-и-ха? Харлампи çамрăк, питрен-куçран илемлĕ, кăмăлĕпе савăнăçлă. Апла-тăк, телейсĕр çын мар.

...Шоферта тăватă çул ĕçлесе, чылай çынсене курма ĕлкĕрчĕ ĕнтĕ Харлампи. Пĕри яка çипуçпа килет колхоза, хăйне патша пек тыткалать, асту, калаçĕ шоферпа пĕр-ик сăмах. Тепри çулланма юратать, хăйне интеллигент пек тыткаласшăн та — пулсах пĕтеймест, ҫанашсем, сĕнӳсем пама хăтланать вара председателе, анчах Никодим Сергеевич ку е тепĕр ыйтăва хăй пек—ĕçе пĕлсе, тĕплĕн ăнлантарать те, хăна халсăрланса пынине уççăнах курать Харлампи. Виççĕмĕшĕ пирки вара, ун пеккисем те çук мар-ха çав, калама та аптăрамалла. Яла ĕçпе мар, канма килеççĕ тейĕн. Хурать те пĕр-ик черкке ăçта та пулин кĕрсе, эх, хаваслă хăй кун каçипех. Тепĕр чух район центрне çын мар, çурма çын турттарса çитерет вара Харлампи.

Паян, акă, ун машини çинче — икĕ палламан çын. Никодим Сергеичăн çывăх тусĕсем-ха ĕнтĕ. Анчах камсем вĕсем? Арçынни ку, паллах, вырăнта ĕçлет-ха ĕнтĕ. Хĕрĕ (тен, хĕрарăмĕ) —модăна хытă хисеплекенни пулмалла. Упăшкипе арăмĕ тес вĕсене, уйрăмлăхĕ пысăкрах пек, ашшĕпе хĕрĕ тес, каллех ни унталла ни кунталла. Арçынни пĕрмаях кантăкран пăхса пырать-ха, çутçанталăк илемĕпе киленет ĕнтĕ.

...Çук, ешĕл вăрманăн ытараймин илемне, çутă сăн илнĕ ыраш пуссинче ăрша вылянине асăрхамарĕ Старков. Шухăшпа каллех лабораторие куçрĕ вăл, хăй умĕнче Акрамов профессора курса пычĕ. «Мĕн чакаланать-ши старик, мĕн хивреленет-ши?— терĕ вăл. —Ретлĕ ученăях тес ăна— сăмах çаврăнмасть, пурнăçран кая юлнă тес — тапаланать. Çулăма геологрáфи принципĕсемпе тĕпчесси... Пĕлместĕп, старик, çунса каймăпăр-и çав çулăмпах унччен опытпа усă курса? Айванскер, мĕн хушнă — çавна тунă. Ак çак шофер пек. Пуççăр, шухăшламасăр. Халь акă, каллех çавăн пек ĕçлессе кĕтет вăл манран. Çук, старик...»

...Машина сасартăк чарăнчĕ те, Старков малалла ӳпĕнчĕ, çамкипе Харлампин тăнлавне пырса перĕнчĕ. Валентинăн хура куçлăхĕ тухса ӳкрĕ, сĕлĕ пĕрчи пек ванса кайрĕ. Харлампи руль çине тĕршĕнчĕ. Машинăри икĕ çын хыпăнса ӳксе кăштăртатма пуçласан тин ăнланчĕ шофер: çук, çывăрса кайман, тĕлĕк мар ку. Кабинăра хăй умне çирĕплетнĕ тĕкĕре пула пулчĕ пĕтĕмпех. Епле шăтарасла пăхрĕ ун çине хыçалта ларакан хĕр! Кама лартса килет Харлампи! Ав мĕншĕн хывмарĕ вăл паçăр хăйĕн хура куçлăхне.

— Хăюлла. Кун пекех пырсан, çитес çĕре часах çитетпĕр,— мăкăртатрĕ Старков.

— Қаçарăр... «Чим, кунта чечеклĕ уçланкă пур»,— аса илчĕ Харлампи. Вара, ним пулман пек, малалла калаçрĕ:— Эпĕ кăштах иртсе кайнă. Тăхтамалли пурччĕ. — Алăка уçрĕ те каялла чупса кайрĕ вăл.

Тунката çине ларса сывлăш çавăрчĕ Харлампи, çамки çинчи тарне шăлса илчĕ. Анчах вăрах кĕттерме юрамасть, уçланкăри шурă, хĕрлĕ, кăвак чечексене васкаса татрĕ те вăл каллех машина патне васкарĕ.

Халĕ ĕнтĕ Харлампи Валентинăна çывăхрах курма пултарчĕ. Чĕри сиксе тухасла тапать, алли чĕтрет.

— Тытăр,— васкаса хăтăласшăн пулчĕ вăл аллинчи чечексенчен.

— Тавтапуç,— йăвашшăн пуçне пĕкрĕ Валентина. Ним тума аптăраса, упăшки çине айăплăн пăхса илчĕ вăл. Анчах Старков нимех те сисмерĕ пулмалла.

Тархасшăн, хуллентерех,—терĕ вăл шофера. Çак сăмахсем Харлампие те, Валентинăна та кăштах лăплантарчĕç. Иккĕшĕ те асаилӳ тĕнчине кĕрсе кайрĕç вĕсем.

...Вунă класс пĕтернĕччĕ Валентина. Амăшĕ пĕччен пурăннă пирки вĕренме кайма васкамарĕ хĕрача. Қолхозри тĕрлĕ ĕçсене çӳрерĕ вăл: утă çулчĕ ялйышпа пĕрле, элеватора тырă турттарчĕ, улма кăларчĕ. Йышлăччĕ ялта çамрăксем. Қĕрлесе тăратчĕ ял варринчи клуб вĕсен юрри-ташшипе. Çав вăхăтра курчĕ вăл Харлампие. Қĕркуннехи пĕр тӳлек каç пулчĕ ку. Кӳршĕри Верук инкĕшĕ пычĕ те каçалапа хăйĕн шăллĕне, Ухунькκаран килнĕ хăна каччине, клуба илсе кайма ыйтрĕ. Валя хаваспах килĕшрĕ. Верук инкĕшĕн каварлă шухăш пуррипе ниепле те сиссе юлаймарĕ ăна-кăна чухламан хĕрача. Қлуба вĕсем, Харлампипе иккĕшĕ, ним пулман пекех тухса утрĕç.

...«Пурте аппаран пуçланчĕ»,— çав каç çинченех шухăшлать Харлампи те. «Авлanма вăхăт, аннене йывăр килет, пыр Хăвакассине, хĕр пăхса хунă сан валли»,— терĕ вăл. Ас вылятчĕ пуçĕнче, турткаланса тăмарĕ Харлампи, чи лайăх ăйăра, улма чăпар Чарлана, кӳлчĕ те вĕçтере пачĕ Хăвакассине. Қаç пуласпа Верук аппăшĕ кӳрше кайса килчĕ. Кăшт тăрсан вара пӳрте унăн... пулас арăмĕ килсе кĕчĕ. Мĕн тери хитреччĕ Валентина! Пĕрре пăхрĕ те уп çине, алли-ури çыхланма тытăнчĕ Харлампин, чĕлхи çĕтрĕ. Тем пакăлтатрĕ, тем перкелешрĕ Верук аппăшĕ. Асатса янă чух Валентинăна çапла каларĕ вăл:

— Çухатса ан хăвар вара хăна каччине, пĕрлех илсе кил.

— Ан пăшăрхан, Верук инке, аташтарса ямăп, çавăтсах килĕп,— терĕ Валя кула-кула.

...Хăй те килĕштерчĕ вал Харлампие. Ун йăвашлăхĕнче сăпайлăхпа чун-чĕре ыррине курчĕ Валентина. Клубра Харлампирен пĕртте уйрăлмарĕ вăл, ăна кам та пулин кӳрентересрен хăрарĕ. Ташлама пĕлеймест иккен хăна каччи, ирĕксĕр тархаслаcа намăс кăтартас темерĕ ăна Валентина. Клубран тухрĕç. Хăйсен урамĕпе утнă чух вара йăмра айĕнче чарăнчĕç. Валентина Харлампи аллинчен тытрĕ те, вальс çемми юрласа, качча çаврăнма вĕрентесшĕн пулчĕ. Унталла-кунталла пускаларĕ Харлампи, ĕç тухмарĕ. Вăтанчĕ те, тарăхрĕ те каччă. Çапах, арçын темерĕн, çатăрласа илчĕ те вăйлă аллисемпе хĕрача пилĕкĕнчен, ун питçăмартине сĕртĕнсе, чуптăвасшăн пулчĕ. Пĕр вăхăт аптăраса тăчĕ Валентина, унтан Харлампи ытамĕнчен вĕçерĕнчĕ те:

— Хăюллă эс кирлĕ мар чухне,— тесе татса каларĕ,— анчах ун пеккисене юратмастăп эпĕ. Туслашас тесен, йĕркеллĕ пул.

...«Йĕркеллĕ пул...» Ара, йĕркеллĕ пулмаллаччĕ çав,— малалла аса илчĕ Харлампи. Никам та мар, аппах айăплă. Хăй пуçларĕ те хăех пĕтерчĕ. Киле çитрĕç вĕсем Валентинăпа. Пӳрт тулли халăх. Сĕтел хушшине, тур кĕтессине, ларма сĕнчĕç вĕсене. Турткаланма пăхрĕ хĕрача, çапах ларчĕ. Ку та темех марччĕ-ха. Аппăшĕ васкарĕ.

— Ну, Валя,— терĕ вăл, черкке çĕклесе,— эпир те хĕрупраç пулнă, вăхăт çитсен, хĕр ĕмĕрĕпе сывпуллашнă...

«Ак хайхи!— вĕçсе илчĕ хĕрача пуçĕнче. — Качча параççĕ вĕт кусем!» Мĕн пулса иртнине сасартăк тавçăрса илчĕ те вăл уçă кантăкран вĕлт сикрĕ урамалла.

— Аташса ан çӳре,— кăшкăрчĕ Верук инкĕшĕ. — Аннӳпе килĕшнĕ. Çураçнă сана!

Епле çураçнă! Çак сăмах та хăратса пăрахрĕ ăна. Вара ним тăхтамасăр хĕр-тантăшĕ патне, Елюк патне, чупрĕ Валентина. Анчах кунта та хӳтлĕх тупаймарĕ вăл. Харлампи тăванĕсем хăйсен шухăшне пăрахăçлама шутламаççĕ иккен.

Илтĕнет хайхискер арçын сасси: «Аташса кайнă пушмак пăру çук-и сирĕн?» «Çук»,— тет Елюк амăшĕ иккĕленерех. «Кунтах пулмалла»,— тет çине тăрса арçын сасси. Харлампи йыснăшĕн Микулайăн сасси ку.

Тарăхса, тарăхса кайрĕ Валентина. Харлампие мар-ха, ун аппăшĕпе йыснăшне шутсăр çилленчĕ вăл. Вара хăех алăка уçрĕ. Кăнн! пăхрĕ Микулай çине. Лешĕ кĕтменччĕ

çакна, тӳрех йăвашланчĕ, анчах анăçлăх пуласса ĕненме пăрахмарĕ-ха.

— Мĕн эсĕ... тарса çӳретĕн? — терĕ вăл. — Килте аннӳ кĕтет. Пиртен хăратăн-и? Эпир мĕн, кăмăл пулмасан, ирĕксĕрлейместпĕр ĕнтĕ. Атя, лар аннӳ патне çитиччен.

Валентина хăюлланчĕ. Ĕненчĕ Микулая,—ирĕксĕрлес çук. Анчах тăрантас çине улăхса ларчĕ кăна, Микулай Харлампие çапла ăс пачĕ:

— Вĕçтер, Харлампи! Хĕр нихçан та качча пырап тесе каламасть!

Тепĕр самантран уй хапхине çеç курса юлчĕ хĕрача.

...Хăрарĕ Харлампи. Улма чăпар Чарлан çил пек вĕçтерсе, кустăрмасем çĕр çĕмĕрттерсе пынă вăхăтра чĕри сиксе тухасла тапнине илтсе пычĕ вăл. Çак каç аппăшĕпе йыснăшĕ манерсĕр ытлашши хăтланнишĕн çĕткеленчĕ вăл хăй ăшĕнче. Ун шăпине ыттисем алла илчĕç, илчĕç те — ячĕç кустарса, ăçта çитме пултарасса пĕлес тенĕ пек. Анчах, акă, çурма çула та çитеймерĕç вĕсем. «Антар, Харлампи»,—терĕ Валентина. Кусран пăхса ыйтрĕ. Хирĕçлеймерĕ Харлампи. Каçпа амалана пуçланă туслăх çакнашкал тăруках пĕтсе ларнишĕн кулянчĕ вăл. Тӳсме çук пысăк мăшкăл тӳсни асаплантарчĕ ăна. Кайран ят сарăлчĕ яла. Шăлне çыртса çапла каларĕ Харлампи: «Тек нихçан та хĕрсемпе çыхланасси ан пултăр!» Çирĕп тытса пырать вăл çав сăмаха. Çирĕм çичче пусрĕ кăçал çуркунне, çапах хĕрпе юнашар ларса курман-ха. Фермăра паян тесен паян пилĕк дояркăна çурас — чунне пама хатĕр Харлампишĕн вĕсем. Анчах Харлампин кăмăл тургмасть, Валентина пек чипер хĕр тĕл пулаймарĕ-ха вăл хăй пурнăçĕнче.

...Уринчи туфлийĕ ăçта ӳксе юлнине асăрхаймарĕ Валентина. Çарран, кĕпе вĕççĕн чупрĕ кĕрхи сивĕ çулпа. Хурланса, макăрса чупрĕ. Харламли аппăшĕпе йыснăшĕ çынна çын вырăнне хуманни ыраттарчĕ ун чĕрине. Мĕн васкатрĕ вĕсене? Харлампийĕ уксах-чăлах мар, илĕртӳллĕ каччă, тен, вăхăт шунăçемĕн хăйсемех тупатчĕç пулĕ пĕр сăмах. Çук вĕт. Ĕлĕкхи пек тумалла. Иккĕшĕ те мăшкăла юлчĕç мар-и? Мĕскĕн Харлампи... Чунсăр этем мар. Анчах мĕнле тĕл пулăн унпа тепре?

Çакăн хыççăн тепĕр икĕ çултан тĕл пулнăччĕ Валентина Харлампие. Район центрĕнче пулчĕ-ха ку. Çутĕç пайĕнче пĕр-пĕр ĕç тупса параймĕç-и тесе кайнăччĕ хĕрача. «Тархасшăн,— терĕç ăна,— Ухуньккари шкулта библиотекарь кирлĕ». Çавăн чух çутĕç пайĕнчен тухса урампа савăнса утнă вăхăтра чупса пычĕ ун патне Харлампи. Чупса пычĕ те тăп чарăнчĕ, нимкалама аптăрарĕ. Çӳçне кас-

тарнă хăй, пĕвĕ ӳснĕ кăштах. Тавçăрчĕ Валентина: салтака кайма пуçтарăнать Харлампи.

— Эс мана каçар,— пуçне пĕксе сăмах хушрĕ Харлампи. — Айван пулнă. Эпĕ, акă, часах тухса каятăп пулмалла. Кала, каçаратăн-и?

Тĕлĕнмелле ырă туйăнса кайрĕ Валентина чĕрине: «Каçаратăн-и?..» Эппин, шухăшлама пăрахман-ха каччă ун çинчен. Эппин, манса кайман!

Харлампи куçĕнчен пăхса тăчĕ-тăчĕ те Валентина пĕчĕк сумкинчен тĕрленĕ ал тутри кăларчĕ, пĕр сăмах каламасăрах ăна качча тыттарчĕ.

Çак вăхăтра юлташĕсем Харлампие машина çине чĕнчĕç. Тепĕр хут пăхса илчĕ вăл Валентина çине.

— Тавтапуç. Кĕт мана икĕ çул!— терĕ те Харлампи, аллине сула-сула, майĕпен тапранакан машина хыççăн чупрĕ.

Харлампи çартан таврăнасса кĕтсе илеймерĕ çав Валентина. Ун вырăнне яла ак çак Старков пырса лекрĕ...

Кĕтмен тĕлпулу. Ун аллинче — чĕрĕ чечексем... «Мĕн ку, чĕре хистени-и?»— савăнăçлă-савăнăçлă пулса кайрĕ ăна тăруках, машина тĕкĕрĕ çине пăхса, каллех Харлампи куçне шыраса тупрĕ вăл, йăл кулчĕ. Темшĕн-çке, юрлас килчĕ унăн.

— Астăватăр-и, арçынсем?— юриех Старков çине пăхса илчĕ Валентина. — Манман-и çакна:

Атьăр, хĕрсем, леш касса,
Атьăр, хĕрсем, леш касса,
Каччиссене илĕртме,
Хĕрĕсене вăрçтарма,—

юри кăшт тăсарах юрласа пачĕ вăл.

Арçынсем иккĕшĕ те çак юрă пĕр уншăн çеç тесе шутларĕç пулмалла, хаваслăхпа, телейпе çиçрĕç вĕсен сăнпичĕсем.

* * *

Çапла, Валентина пуйăс çинче шухăшлани тĕрĕсех пулчĕ: Никодим паян вĕсене нимçта та ямасть. Çул хыççăн çăвăнса тасалчĕç хăнасем, шăкăл-шăкăл калаçса, пĕрнепĕрн култара-култара, пĕрер черкке коньяк сыпрĕç, чей ĕçрĕç. Харлампи те вĕсемпе пĕрлех пулчĕ.

Калаçу шăкăл-шăкăл юхса пынă май пĕрре Никодим çинчен, тепре Павлина çинчен шухăшларĕ Старков. Кăмăллать хăйĕн ĕçне Никодим, ун пирки сăмах-юмах пумай

вакламарĕ пулин те, туйрĕ Старков: ăнса пырать юлташĕн пурнăçĕ. «Тумла чула шăтарать»,—темшĕн-çке çак сăмахсем аса килчĕç ăна. Каллех Акрамов профессор тухса тăчĕ ун умне. «Алă усма кирлĕ мар. Наука çулĕ — кăткăс çул...» Кам пĕлет, тĕрĕсех каларĕ-и, тен...

Анчах Никодимран та ытларах Павлина тĕлĕнтерчĕ Старкова. Тутлă апат-çимĕç тăп-тулли сĕтел çинче, арăмĕ упăшкине куçран пăхсах ăнланать, кирек мĕнле ыйтупа та калаçма пĕлет. Акă кам пулăшать иккен Никодима ăнăçлăхсем тума! Старкова вара? Юрĕ, Валентина çамрăк тейĕпĕр, çакнашкал сĕтел пуçтарма вăхăт çук унăн — вĕренет, апла пулсан, ăшă сăмахсемпе пулăшасчĕ хăйĕн упăшкине. Э, çук-çук, чылай пикенсе пăхрĕ вăл Старкова ăнланма, анчах ăнланаймарĕ, сиксе каçайми хӳме çеç курчĕ хăйсем хушшинче.

Хĕвел кăнтăрла урлă каçсан, пилĕк çын: Никодим Сергеичпа унăн арăмĕ Павлина, Старковпа Валентина тата Харлампи—ял хĕрринчи вăрман урлă каçса, Çарăмсан хĕрне пырса çитрĕç. Харлампи кунта кăçал пĕр-ик хутчен пулнăччĕ ĕнтĕ председательпе, ав, вучах вырăнĕ те сыхлански юлнă. Машинăран пулă хатĕрĕсене кăларса пăрахрĕ вăл, хĕрлĕ çыра анса, пĕр витре çăл шывĕ ăсса килчĕ. Хĕрарăмсем тĕмсем хушшине кĕрсе çухалчĕç те тепĕртакран шыва кĕмелли костюмсемпе тухрĕç. Валентинăн çурта пек йăрăс кĕлеткине курсан, Харлампи çӳçенсе илчĕ, хăйĕнчен хăй хăраса кайрĕ: никам та асăрхамарĕ-ши? Старков çине пăхса илчĕ вăл, Никодим Сергеич çине, çук иккен, пурте ĕçлĕ: председатель сĕрекене тĕрĕслет, Старков хăйĕн кĕпи-йĕмне çакса хума меллĕ турат шырать. Валентина çумĕнче вăл ытла та ырханкка та шупка курăнать.

— Ну, мĕн, тытăнатпăр-и, Харлампи?— янраса кайрĕ Никодим Сергеевичăн уçă сасси.

— Яланах хатĕр,— терĕ Харлампи, вара çыран хĕрне утса кайрĕ. Васкасах хывăнчĕ те тӳрех шыва чăмрĕ.

— Вăт вăтанчăкскер. Атя, Коля, тыт пĕр вĕçĕнчен. Эй, шыври туră, ăнăçлăх пар пире паян,— сăхсăхнă пекки туса илчĕ те Никодим Сергеевич, урине йĕпетсе, шыва тĕрĕслерĕ, тăр-тăр чĕтресе илчĕ, вара Çарăмсана шампăртатса кĕрсе кайрĕ.

Шыв сулхăнĕ Старкова та çӳçентерчĕ. Çапла, нумай пулать шыва кĕменни те, пулă тытманни те. Çапах мĕн тери лайăх Çарăмсан хĕрринче! Çутçанталăка пĕрре тухасси çеç иккен, вăл сапа пĕтĕмпех хăй ытамне ярса илет.

Тарăнрах çĕрте Харлампи сĕреке патаккине Старковран илчĕ те, хăрах аллипе питĕ меллĕн ишсе, сĕрекене

çыран хĕррипе илсе пычĕ. Вунă-вунпилĕк утăм кайрĕç çапла. Йывăрлансах пычĕ сĕреке, умра, шыва çурса, йăр та яр пулă тарни курăнать. Анчах тарса хăтăлаймĕç ĕнтĕ, çеремлĕ çыран хĕрринчи ункă ăшăхлансах, тăвăрлансах пырать.

Хĕвел ăшшинче ниçта кайса кĕреймесĕр çатăлтатса выртакан пĕр купа пулă пурне те хытă савăнтарчĕ. Анăçлăха сиссе, вучах патĕнче çĕрулми шуратса ларакан Павлинăпа Валентина та чупса килчĕç. Пĕр витрене яхăн пулчĕ пулăçсен тупăшĕ. Харлампи Никодим Сергеич çине пăхса илчĕ те, пуçне сĕлтсе: «Тепре кĕрер-и?»— тенĕ пек систерчĕ.

— Кирлĕ мар, Харлампи,— терĕ председатель. — Ăçта хурас ăна?

— Хам та çаплах шутлап çав, ара, ăçта хурас ытлашшине?— терĕ Харлампи.

Çав вăхăтра вăл хăй çине Валентина шăтарас пек пăхнине туйрĕ те каллех аптăраса ӳкрĕ. Пăлханса кайнипе, çаврăнса кĕпе-тумтир патне утасшăнччĕ вăл, асăрханаймарĕ, йĕпе патак çине пусрĕ те лап! шуса ӳкрĕ.

Пурте ахăлтатса кулса ячĕç.

— Ют хĕрарăмсем çине пăхсан, суккăр пулан, Харлампи, уруна хуçан,— шӳтлеме ĕлкĕрчĕ Никодим Сергеич.

— Ну, юрĕ,— терĕ Павлина,— çитет шăл йĕрсе, атьăр ушкăнпа тасатар пуллине. Шыв вĕреме кĕрет унта.

Тепĕр сехетрен пулă шӳрпи çиме ларчĕ туслă ушкăн. Каллех эрех туртса кăларчĕ Никодим Сергеевич, черккесене тултарса, хăнасен сывлăхĕшĕн ĕçме сĕнчĕ.

«Ах, мĕнле тутлă иккен пулă шӳрпи!»— шухăшларĕ Валентина. Тăван çĕр илемĕ, унăн пархатарĕ, ентешĕсен ырă кăмăлĕ килентерчĕç ун чĕрине. Ĕçсе янă эрех хăвачĕ сăрăлтатса, пуçа кайса пычĕ, юна вĕрилетрĕ.

Иккĕмĕш черккене Старков сĕнчĕ.

— Пирĕн ырă хĕрарăмсемшĕн,— терĕ вăл. Çак сăмаха Никодим е Харлампи каланă пулсан, хирĕçлесе тăмастчĕтĕр Валентина, анчах хальхинче вăл хăй черккине тӳрех çĕре лартрĕ. Ыттисене систермесĕр Харлампи çине пăхса илчĕ Валентина. Чим, ара, мĕншĕн ĕçмест-ха Харлампи? Э, шофер-çке. Çавăнпа ĕнтĕ.

— Харлампи,— терĕ Валентина, хăй черккине çĕклесе.— Хĕрарăмсемшĕн. Пĕр черкке юрать. Тыт-ха, шаккаса ĕçер.

— Атя, ĕçсе пар, Харлампи,— терĕ Никодим Сергеевич та. — Хĕрарăмсен кăмăлне ан пăс.

— Çук, çук,— хирĕçлерĕ Харлампи. — Руль умĕнче —

пӗр ҫавар та. Эсир мана ан пăхăр. Эп, акă, ҫăл патне анса чей вӗретем.

Ҫур сехете яхăнах аппаланчӗ Харлампи чей вӗретсе. Кăвайт ҫатăртатса ҫуннă вăхăтра паянхи тӗлпулăва тепӗр хут аса илчӗ вăл, Валентина ҫинчен шухăшларӗ. Упăшки ученăй авă унăн. Мӗн тери инҫетре вӗсем халӗ пӗр-пӗринчен. Ҫак тӗнчере вӗсене ҫывăхлатма пултаракан нимӗнле вăй та ҫук. Тӗлӗнмелле ҫак пурнăҫ. Кăштранах ӳпне ҫаврăнса кайма пултарать вăл, кăштранах ху ҫӗклейми телей пиллет. Кăштран уйрăлмарӗҫ-и Харлампипе Валентина ҫулӗсем? Кăшт вăхăт кирлӗччӗ, кăшт хăюллăрах пулмаллаччӗ те тепре курма тăрăшмаллаччӗ ăна. Тем тесен те, диалектика ҫук кунта. Диалектика вăл, хăй тӗллӗн аталанса, пурпӗрех пулмалли япала. Кунта вара Старков, Старков анчах Валентина упăшки пулмалла тесе никам та палăртса хуман. Ун упăшки Харлампи те пулма пултарнă. Эппин, Харлампи пурнăҫӗ те диалектика саккунӗсемпе шумасть? Тем, паллах мар кунта. Юратура та тӗллев кирлехши ҫынна?

Харлампи вӗри витре хăлăпне ешӗл хупахпа чӗркесе тытрӗ те ту ҫине улăхрӗ. Туссем хӗрсе ҫитнӗ, вӗсем калаҫни аякранах илтӗнет.

— Ан сӳпӗлтет, тархасшăн, кирлӗ мара. Пуҫларӗ пӗр кӗвӗ: юрату та юрату. Вунҫиччӗре кирлӗ вăл сан юратăву. Пӗр-пӗрне хисеплени тӗвӗлесе тăрать кашни ҫемьене...

Старков сасси ку. Харлампи чарăннă вырăнтах витрине лартрӗ те юпа пек хытса тăчӗ.

— Ватăлтăн эсӗ, Старков. Пурнăҫ курмасăрах ватăлтăн. Мана та, акă, хупа пӗрле ватлăха сӗтӗретӗн,— терӗ Валентина.

— Намăссăр эсӗ,— пат татса хучӗ Старков. —Тав тăвас вырăнне... «Ватăлтăн эсӗ...»

— Лăпланăр-ха эсир, лăпланăр-ха, тархасшăн,— аталанса пыракан пысăк инкеке сирсе яма хăтланчӗ Павлина. Анчах кая юлса каларӗ ҫак сăмахсене.

Кӗтменччӗ Харлампи ҫапла пулса тухасса: ун умӗнче Валентинăн ҫăмăл шурă кӗпи вӗлтлетрӗ, хӗрарăм ҫырма хӗррине чупса анса тăп чарăнчӗ те ӗсӗклесе макăра пуҫларӗ. Нимпе те пулăшма пултараймарӗ ăна ик-виҫӗ утăмра тăракан Харлампи. Хăй те аптăраса ӳкрӗ вăл, пирус чӗртсе ячӗ те каллех вучах умне куклепчӗ.

— Вăрла мана, Харлампи, тепӗр хут!— уяр ҫанталăкра тип аҫа ҫапнă пек янраса кайрӗҫ Валентина сăмахӗсем.

Тăр-тăр чӗтресе илчӗ Харлампи, хуллен Валентина енне ҫаврăнчӗ.

— Пурӑнасси пулмасть, йӑнӑшрӑм... Вӑрла мана, хӑтар мана ҫак читлӗхрен. Мӗн, ара, ватӑлтӑм-и, тӗссӗрлентӗм-и?— Пӗр утӑм, ик утӑм турӗ те Валентина, Харлампи мӑйӗнчен ыталаса, каллех ӗсӗклесе макӑрса ячӗ.

«Тӗлӗнмелле ҫак пурнӑҫ. Кӑштранах ӳпне ҫаврӑнса кайма пултарать вӑл...»— тӳрех пaҫӑрхи шухӑш йӗрӗ ҫине ӳкрӗ Харлампи. Анчах халь мар пулсан, хӑҫан-ха тата?! Кӑштах хӑюлӑх кирлӗ...

Ҫыран хӗрне чупса пынӑ Павлина, хӑй мӗн курнине хӑй ӗненмесӗр, пӗр вырӑнта шак хытса тӑчӗ. Қаялла ҫаврӑнчӗ вӑл вӑтаннипе. Анчах тепӗр самантран пӗр-пӗрне ыталаса тӑракан Харлампипе Валентинӑна курайманӗ вӑл: хӑвасем ҫеҫ силленсе юлчӗҫ вӗсем хыҫӗнчен.

## АЙӐПЛӐ-И ЭПӖ? *

Ку вӑл студент пурнӑҫӗнчи юлашки ҫӑва тухсан пулса иртрӗ. Пирӗн, ыран-паян геолог ятне илес ҫынсен, темиҫе уйӑха практикӑна каймалла. Пӗр хӗвеллӗ ир васкасах чӑматансем пуҫтартӑмӑр та чугун ҫул вокзалне васкарӑмӑр.

Марина та пурччӗ ӑсатса яракансем хушшинче. Эпӗ унӑн вӗри питҫӑмартинчен сӗртӗнтӗм, вара, тапраннӑ вакун пускӑчи ҫине хӑпарса тӑрса, сылтӑм алла ҫӗклерӗм. Сывӑ пул, тус-тантӑш! Манран ҫырусем кӗт, Марина!

Халӑх нумай мар вакунра. Пӗр купери кантӑк умӗнче ватӑ хӗрарӑм ларать. Сӗтел ҫине тӗрлӗ ӑпӑр-тапӑр кӑларса хунӑ. Тин ҫеҫ тапрантӑмӑр — хӗрарӑм вара апата хатӗрленет. Ҫӳлте, плацкарт ҫинче, пуҫне аллипе тӗрелесе, ман ҫулсенчи ҫамрӑк ҫын выртать.

— Сывлӑх сунатӑп. Йышӑнмӑр-и мана?

— Тархасшӑн,— каласҫас килмен евӗр сӑмах хушрӗ ҫамрӑк ҫын.

— Иртех, иртех, ывӑлӑм,— терӗ кинеми те вара, хыткан пӳрнисемпе почта ещӗкне ҫыру янӑ пек, хӑй ҫӑварне чейпе йӗпетнӗ шур ҫӑкӑр татӑкӗ чиксе хучӗ.

Рюкзака чи ҫӳлти ҫӳлӗк ҫине хӑпартса хутӑм та юнашар плацкарт ҫине тӑсӑлса выртрӑм. Кичемлӗхрен ҫӑлӑнма «Наукӑпа тӗн» журналӑн кивӗ номерӗ пулӑшрӗ.

Ҫур сехете яхӑн иртрӗ ҫапла. Кинеми апатпах аппаланчӗ-ха, кӳршӗ те малтанхи пекех тем шухӑша кайса выртрӗ. Тутине тӑкӑссӑн хупса хунӑ вӑл, икӗ хура куҫӗ салхулӑхпа тулнӑ.

* Д. Степановпа пӗрле ҫырнӑ.

— Туртса ямастăр-и?— пирус сĕнтĕм ăна.

Вăл, пуçне сĕлтсе, тав турĕ, пирус тĕтĕмне пĕр-икĕ хут ăшне çăтса, каллех шухăша путрĕ.

— Инçе каятăр-и, ывăлăмсем?— пирĕн енне пуçне çĕклерĕ кинемей.

— Çарăмсана, мăнакка,— хамшăн хуравларăм эпĕ.

Халиччен чĕнмесĕр пынă çамрăк çын ман енне вăрт çаврăнчĕ.

— Апла пĕр станцирех анмалла пирĕн?— савăннă пек пулчĕ вăл самантлăха.

— Чăпах-и? Атьăр паллашар, уп пек пулсан, Владимир.

— Вадим. Тепĕр чух — Михайлович.

Пуçланнă калаçу «çиппи» çакăнпах татăласран хăраса, васкасах ăна малалла тăсма тăрăшрăм:

— Эпĕ — студент-геолог. Практикăна каятăп. Хальхи вăхăтра пирĕн станци Çарăмсан тĕлĕнче тупнă нефть вырăнне тĕпчет. Пулманччĕ-ха эп унта, пирвайхи хут, акă...

— Эпĕ,— учитель, атте-анне Çарăмсанта. Тăван киле таврăнатăп,— терĕ те Вадим, çăварĕнчен çине-çине çăра тĕтĕм кăларса, каллех шăпланчĕ.

Телефон юписем, кĕпер карлăкĕсем мĕлтлете-мĕлтлете иртрĕç. Хирсенче лаптăк-лаптăк симĕс хунав ешерет, кукуруза уйĕнче тракторсем çӳреççĕ.

Виç сехет çурă хушшинче пирĕн поезд пысăкрах станцисенче те, пĕчĕк разъездсенче те темиçе хутчен чарăнса тăчĕ, пассажирсене улăштарчĕ.

— Ывăлăмсем, пулăшăр-ха, манăн час анмалла пулать,— васкасах пуçтарăнма тытăнчĕ ватă хĕрарăм.

Эпир иккĕн те кинемее ăсатма тухрăмăр, ăна станцире кĕтсе тăнă çынсемпе хăварса, купене таврăнтăмăр.

Акă каллех эпĕ хама ăсатнă юлташсене, Маринăна аса илтĕм. Вакунăн тепĕр вĕçĕнче пĕр ушкăн арçын картла çапать. Вадим çаплах чĕмсĕр. Чим, ара, юлташсен куччеnеçĕ пур-çке рюкзакра!

— Вадим Михайлович, кăштах çырткаласа илме вăхăт çитмен-и пире? Ачасем мана пуш алăпа ăсатманччĕ-ха...

— Тĕрĕс шухăш, Володя. Савăнсах килĕшетĕп. Икĕ талăк ĕнтĕ йĕркеллĕ çимен — анмасть. Тен, халь кăштах?...

Апат-çимĕçе васкасах сĕтел çине кăларса хутăм. Ман рюкзакра кукăль те, хăяр та, пĕр кĕленче портвейн та тупăнчĕ.

Çапла васкамасăр апатланнăçемĕн вăхăт сисĕнмесĕрех иртсе пычĕ. Ун енчен те сăмаха уçăрах тăвас тесе, Вадима хамăн пурнăçăм çинчен каласа патăм. Марина сăпӳкер-

чĕкне курсан, Вадим ман çине тунсăхлăн пăхрĕ те аллине каллех курка тытрĕ.

— Тыт. Сирĕн телейĕршĕн ĕçер.

— Мĕншĕн пирĕн телейшĕн кăна, сирĕннишĕн те...

— Çук, Володя, манăннишĕн пулаймасть пулĕ. Итлессӳ килсен, пурнăçри телей тепĕр чух хуйхăпа мĕнле улшăннинине каласа кăтартăттăм сана.

Эпĕ, пысăк пĕлтерĕшлĕ вăрттăнлăх пĕлессине туйса, ун çине чĕнмесĕр тинкертĕм. Вадим та шăпланчĕ. Кăшт тăрсан тин, хăйĕн шалти иккĕленĕвне çĕнтерсе, хуллен, васкамасăр калаçма пуçларĕ.

— Вĕренӳ çулĕ иртнĕпе пĕрехчĕ. Пушанса юлнă шкул коридорĕнче пĕчĕкшер ушкăнпа вунă класс пĕтерекенсем тăраççĕ. Пăлханса, экзаменсем тытакан юлташĕ мĕнлерех тертленнине тинкерсе, алăкри пĕчĕк шăтăкран пăхаççĕ вĕсем, лерен савăнăçлă тус-тантăшĕ тухса çăмăллăн сывласа ярсан вара шăплăх таçта кайса кĕрет:

— Ну мĕнле?

— Миçемĕш билет?

Кăшт вăхăт иртсен, каллех лăпланаççĕ: пĕри кантăк умне ларать те кĕнеке уçса хурать, тепри тетрадĕнче тем шырать, виççĕмĕшĕ вара, мана ним те мар тенĕ пек, аллине кĕсъене чиксе, коридор тăрăх уталла-кунталла утса çӳрет.

Акă вĕренекенсем юлашки экзамен та тытса пĕтерчĕç. Ыран вĕсен савăнăçлă уяв каçĕ пулать, эпĕ вара, отпуск илсе, атте-анне патне тухса каятăп.

Вадим Михайлович каллех пирус илчĕ, анчах ăна чĕртмерĕ, апла-капла тыткаласа ларнă хыççăн каялла хучĕ.

— Экзамен хыççăн тепĕр кунах мана директор патне чĕнтерчĕç. Иккĕншĕ пӳлĕмре — директорпа вĕренӳ пайĕн заведующийĕ. Иккĕшĕ те ура çинче Фемида пек тăраççĕ: Ольга Семеновна хăй сĕтелĕ хушшинче, вĕренӳ пайĕн заведующийĕ чавсипе чӳрече ани çине таяннă.

Тăшман çине сиксе ӳкме хатĕрленнĕ гладиатор евĕр пăхать ман çине Людмила Григорьевна. Пĕр хушă чĕнмесĕр тăнă хыççăн айăпа кĕнĕ çын сассипе Ольга Семеновна сăмах хушать:

— Акă сире хут, паллашма пултаратăр,— тет вăл, мана машинкăпа çаптарнă хут листи тыттарса.

Нимĕн те ăнланаймастăп, саспаллисем пĕр-пĕрин çине кĕрсе каяççĕ, йăмăх йĕркесем, шупкалса, таçта çухалаççĕ. Çак пӳлĕмре Ольга Семеновнăпа тĕл пулнă самант аса килет.

Проводница тин çеç килсе лартнă чей чашкине Вадим

хăй умнерех васкамасăр шутарчĕ те унта сахăр катăкĕ ячĕ.

— Институтран вĕренсе тухсан, шкула кайма ирттерех тесе, пĕр-икĕ уйăхлăха хуларах юлма шутларăм,— ма-лалла тăсрĕ вăл хăйĕн калаçăвне. — Çав хушăра ют çĕр-шыв туризчĕсене хулари паллă вырăнсемпе паллаштарса çӳрерĕм. Август варринче тин, икĕ эрне каяйă хыççăн, Çĕ-нĕ Йăмралла пырса çитрĕм.

— Сире, ют çĕршыв чĕлхи факультетĕнче аслă пĕлӳ ил-нĕ специалиста, çак ялтах хăварас тетпĕр,— терĕç ронора.— Ав, шкулĕ кунтанах курăнать. Директорĕ — Ташкевич — çамрăк та пултаруллă çын. Ыттине хăвăрах курăр.

Ронораи тӳрех шкула кайрăм. Коридора кĕтĕм те, ва-тă хуралçăран директор ăçта ларнине ыйтса, алăкран шак-карăм.

— Кĕрĕр,— илтĕнчĕ пӳлĕмрен.

Пӳлĕме кĕтĕм те... шак хытса тăтăм: çыру сĕтелĕ хуш-шинче Оля ларать. Оля! Ольга Семеновна!

— Вадим?— кĕтмен тĕлпулуран тĕлĕннипе ура çине тăрса хыçалалла чакрĕ директор.

Çутă кăвак куçсем... Çырă çӳçне тирпейлĕн пĕр кăшăла пуçтарнă. Яка та çутă сăнĕ палăрма пуçланă пĕркеленчĕк-сене пытарать. Карăнса тăракан йăрăс пӳ-сийĕ те нимĕн чухлĕ те улшăнман, унченхиллех илемлĕ, илĕртӳллĕ.

Чĕрери суран тепĕр хут уçăлчĕ.

Кăшт тăна кĕрсен тин сăвар уçрăм:

— Çапла, эпĕ ку. Анчах ронора мана çак шкулта Ташкевич ĕçлет терĕç.

— Ан тĕлĕнĕр, Вадим Михайлович. Тĕрĕс калана. Упăшка хушамачĕ вăл,— ман çине тем тĕрĕсленĕн пăхса илчĕ те Оля, чĕлхем каллех çĕтрĕ.

Калаçу малалла та ăнмарĕ. Эп кăтартнă хутсене пăх-каласа ларса, Ольга Семеновна мана шкулти ĕçсемпе кĕс-кен паллаштарчĕ. Текех чăтса тăраймасăр, пуçа сĕлтрĕм те алăк патнелле утрăм.

— Вадим Михайлович!

Эпĕ ун енне çаврăнтăм. Хăрах аллипе вăл хыçлă тенкел çине тĕреннĕ, тепринпе сĕтел çинчи кантăка унталла-кун-талла сăтăркалать.

— Вадим... мана йывăр сана ятран чĕнме, анчах эпир пĕр-пĕрне пĕлни çинчен малтанлăха та пулин пытарма тă-рăш. Çапла лайăхрах пулĕ.

Çакнашкал тĕлĕнмелле лару-тăрура эпĕ акăлчан чĕл-хин учителĕ пулса тăтăм.

Вадима калаçма малалла хавхалантарас тесе, эпĕ ăна пӳлсех çапла ыйтрăм:

— Қаçарăр-ха, Вадим Михайлович, эсир Ольга Семеновнăна унчченех питĕ çывăххăн пĕлнĕ апла?

Вадим ассăн сывласа ячĕ, вырăнтан тăчĕ те, аллисене брюки кĕсйине чиксе, чӳрече патне утрĕ, унтан каллех хăй вырăнне пырса ларчĕ, тунсăхлă куçĕсемпе таçта аякка тинкерчĕ.

— Çапла, Володя. Пĕчĕкренех пĕлнĕ... Шкултан вĕренсе тухсан, вăл педагогика институтĕнчи литература уйрăмне кайса кĕчĕ. Эпĕ те унран юласшăн пулмарăм, анчах ют çĕршыв чĕлхисен факультечĕн алăкĕ ытла та çӳллĕ пулчĕ ун чух маншăн — института конкурспа кĕреймерĕм те шоферсен курсне кайрăм. Малтан автомашинăсен гаражĕнче слесарьте ĕçлерĕм, каярахпа машина пачĕç. Çул çинче те Оля çинчен шухăшлама пăрахаймастăмччĕ, унпа пĕрле таçта инçе-инçе çулçӳреве тухса каясса ĕмĕтленеттĕмччĕ, кĕтмен çĕртен тĕл пуласса шанаттăмччĕ.

Анчах кĕркунне çитрĕ те, салтака кайма ят тухрĕ. Вакунра ирттернĕ тăватă талăк пирĕн хушăмăрсене тата ытларах вăрăмлатрĕ. Çав-çавах манаймарăм эп ăна. Иккĕмĕш çул службăра тăнă чух Октябрь уявне икĕ эрнене киле курма таврăнтăм. Ăнсăртран Ольăпа тĕл пуласса кĕтеттĕм,—ĕненетĕн-и?— чăнах та тĕл пултăмăр эпир: вăл та праçнике киле таврăннă иккен.

Акă иккĕн те ялти клубра тăратпăр: вăл — манăн хуса çитейми ĕмĕтĕм, эпĕ — унăн пĕр класра вĕреннĕ тантăшĕ. Ташă-кĕвĕ пĕтсен, урама пĕрлех тухрăмăр. Çук иртсе кайман иккен ачалăхриименӳ: унпа юнашар пынă чух каллех ăвăс çулçи пек чĕтретĕп. Тепĕр каç та манпа юнашарах пулчĕ вăл, анчах чĕрери шанчăкăм темшĕн-çке вăйланаймарĕ манăн. Оля хулана тухса кайрĕ. Манăн шутлă кунсем те хăвăрт вĕçсе иртрĕç, эпĕ вара çаçе таврăнтăм. Çакăн хыççăн пĕр-пĕрипе çырусем çӳретрĕмĕр эпир. Савăнтарчĕç те ун сăмахĕсем, хурлантарчĕç те. Уççăн палăртмастчĕ вăл хăйĕн шухăшĕсене—çакă хытă пăшăрхантаратчĕ мана.

Вадим, пĕчĕк кашăк тытса, стаканри сивĕннĕ чее пăлхатма пуçларĕ. Тепĕр самантран вара чей çинчен каллех манса кайрĕ.

— Юлашки çулччĕ ĕнтĕ службăра, «Стариксем» тесе шутлаттăмăр хамăра. Қалендарь çинче юлашки талăксене туртса пыраттăмăр. Ольăна чăтăмсăр курас килетчĕ, чи малтанах ниçта та мар, ун патне çул тытма шутлаттăм, анчах... чăнниппе вара урăхларах килсе тухрĕ.

Август пуçламăшĕнче пире округри пĕр инçе района тырпул пухса кĕртме ячĕç. Ялти ĕçсем ачаранпах çывăх

пулнăран-и, эпĕ савăнсах ĕçе кӳлĕнтĕм. Тырпул пухса кĕртсен те гарнизона васкасах илсе каймарĕç-ха пире. Хĕллехи сивĕсем пуçланиччен эпир ĕçлекен совхозра нумай вольтлă электролинин ĕçе яма палăртнă иккен: эпĕ вара, прицеп кăкарса, инçетри станцирен юпа турттарма пуçларăм. Астăватăп, октябрь уйăхĕн вӑррипче пĕр çумăрлă кун, хампа юнашар икĕ грузчик лартса, станцие тухса кайрăм. Йĕркеллех çитрĕмĕр. Туслăн ĕçлесе, йĕпе пĕренесене машина çине тиерĕмĕр те каялла килме тухрăмăр. Шухăшăмра каллех Ольăн ĕнерхи çырăвне вулатăп. «Пĕрремĕш курсра вĕренекенсем хушшинче хăшĕ-пĕри халĕ те-ха салтак тумĕпе çӳрет. Тĕлĕнетĕп, мĕншĕн эсĕ институтран чĕнсе ярсан та экзамен тытма килеймерĕн?»—тенĕччĕ вăл. Хирĕç çырса пĕлтерме ĕлкĕреймерĕм.

Çул çинчи ытти шухăшсем те канăç памарĕç. Каллех вĕтĕ çумăр пуçланчĕ. Сăртлă-туллă çул начарланнăçем начарланса пырать. Пĕр лупашкаран чиперех иртсе кайрăм. Тепĕр лапамĕ вара тата хаяртарах кĕтсе илчĕ пире. Анаталла аниччен пĕр грузчика антарса хăвартăм, тепĕрне, Федя пиччене, инкек-синкек сиксе ан тухтăр тесе, кабина алăкне уçă тытма хушрăм.

Акă хăва тĕмĕсем хушшинче пытаннă пĕчĕк кĕпер патне анса çитрĕмĕр. Халĕ çӳлелле улăхмалла. Мотор урса кайса кĕрлет. Çак тамăкран хăвăртрах хăтăлас тесе, газ пускăчне вĕçне çитиех тапса антартăм. Тӳремлĕхе çитесси темиçе утăм çеç юлнăччĕ ĕнтĕ,— машина чарăнчĕ, кустăрмисем пĕр вырăнта кусма пуçларĕç. Ытти вара самантрах пулса иртрĕ. Астăватăп: Федя пиччен шурса кайнă пит-куçĕ пĕр хускалми тăрать, хыçалта пысăк хăвăртлăхпа хăва тĕмĕсем çывхараççĕ. Сылтăм алăпа Федя пиччене тĕксе, халех сиксе юлма хушрăм, тепĕр самантран пуçа темле хытă япала перĕннине туйрăм...

Мĕнле лекнĕ эпĕ больницăна — халĕ те ăнланаймастăп. Ытти çеç паллă: больницăран госпитале самолетпа ăсатрĕç, унти хирургсем ӳт-пĕвĕме çичĕ уйăха гипспа тăлласа хучĕç: виç аяк пĕрчипе йĕтес шăмми хуçăлса кайнă иккен.

Госпитальте нумайранпа сас-хура паманшăн каçару ыйтса, медицина сестрине Оля патне çыру çыртартăм, анчах Оля хуравламарĕ. Тепĕр виçĕ эрнерен Оля амăшĕсем патне иккĕмĕш çыру çыртартăм — кăлăхах. Ним тума та çук, тем пек тăрăш — усăсăр...

Кайран киле таврăнтăм. Вырăнти врачсем, сывлăхăм тĕрекленсех çитейменнине тӳррĕнех пĕлтерсе, виçĕ уйăх ĕç тытма хушмарĕç. Тахçан ĕмĕтленекен факультета вĕренме кĕме тинех вăхăт тупăнчĕ манăн. Çапла эпĕ студент пул-

са тăтăм, анчах студентсем хушшинче Оля çукчĕ ĕнтĕ. Вăл, институт пĕтерсе, инçетри района ĕçе тухса кайма ĕлкĕрнĕччĕ.

Студент чухнехи вăхăт çинчен каласа пама кирлех те мар пуль. Эс ху студент акă. Маншăн та çав пилĕк çул сисмесĕрех иртсе кайрĕ. Унтан Çĕнĕ Йăмралла ячĕç.

...Тăратпăр акă директор пӳлĕмĕнче.

Пăхать вăл ман çине, айăпа кĕнĕ пек, Оля, Ольга Семеновна. Людмила Григорьевнăна вара тин çеç вăйлă вăкăра çĕнтернĕ тореадор тейĕн—çиçеççĕ унăн куçĕсем, ялтăраççĕ, мана, айăплă пулса тăнăскере, хыпса çăтма хатĕр.

Тăратăп. Алăра — приказ. Шухăшăмра пĕрин хыççăн тепри шкулта ĕçленĕ кунсем шуса иртеççĕ.

Вадим каллех шăпланчĕ.

— Тухар-ха, Володя, тамбура. Унта уçăрах. Вара эп сана çак ĕнепмс йывăр юмаха вĕçне çитиех каласа парăп,— терĕ вăл.

Эпир тамбура тухрăмăр та каллех пирус чĕртсе ятăмăр.

— Эпĕ саккăрмĕшпе вуннăмĕш классене вĕрентеттĕм. Нумайăшĕ ман предмета юрататчĕ, хăшпĕрисем вара эп урока пырасса кĕтсех те тăмастчĕç. Учительсен ачисем те хамăр шкултах вĕренетчĕç. Çавăнпа та ашшĕ е амăшĕ урокра хăй ывăлĕ-хĕрĕнчен ыйтин пикама та тĕлĕнтерместчĕ.

Завуч хĕрĕ Ирина та мана шанса панă 10-мĕш класраччĕ. Çак тĕксĕм çӳçлĕ, çинçешке кĕлеткеллĕ те йăпанчăк кăмăллă хĕрача хăйĕн юлташĕсем хушшинче чи маттурри пулнăран пулĕ ĕнтĕ малтанхи пухурах ăна ачасем класра комсорга суйласа лартрĕç.

Пăхатăп, пĕр вăхăтра Ирина акăлчан чĕлхи урокĕсене çителĕксĕр хатĕрленсе пыма пуçларĕ: пĕрре лайăх ответлет, тепре çăвар та уçмасть. Хăйне çĕткелентерсе ярас темесĕр, вăхăт тупса, çакăн çинчен Людмила Григорьевнăпа калаçса пăхрăм.

Тепĕр урокра каллех Иринăран ыйтрăм. Каллех вăл шыв сыпнă пек шăп.

— Юрать,— терĕм эпĕ. — Уроксем хыççăн юлатăр.

Шăнкăрав хыççăн, кĕнекесемпе тетрадьсене класа хăварса, учительсен пӳлĕмне йăпăртлăха кайрăм. Таврăнатăп — класра никам та çук. Кăмăл хуçăлса кайрĕ. Пăшăрханса киле таврăнтăм та ыранхи урока хатĕрленме пуçларăм. Мĕн ку? Кĕнеке хушшинче хут татки выртать. Çитĕнсе çитеймен ача аллипе унта çапла çырса хунă: «Аннесене евитличчен малтан çынна хăйне ăнланма тăрăшăр».

Куçăм хуралса кайрĕ. Хама педагог опычĕ çитменнишĕн

çак чăрсăр хĕрача питрен çупса янине туйса илтĕм. Ниепле те кĕтменччĕ çапла пуласса.

Тата темиçе кун иртрĕ. Уроксене ним пулман пек пыратăп, хама яланхи пек тытма тăрăшатăп. Ирина куçĕсем çеç тем кĕтнине пĕлтереççĕ, анчах вăхăтлăха ăна урăх чăрмантарас мар терĕм.

Çапла ноябрь те килсе çапăнчĕ. Хĕл ларманччĕ-ха. Йăла тăрăх, аслă классенче вĕренекенсем пĕр-пĕр учительпе пĕрле шăматкунхи каçсенче кинона çӳретчĕç. Акă манăн черет те çитрĕ. Астăватăп, Диккенс повеçĕ тăрăх ӳкернĕ «Пысăк шанчăксем» кăтартрĕç. Фильм пĕтсен, киле кайма тухрăм. Манпа пĕрле тăват-пилĕк ача утма кăмăл турĕ, çул тăршшĕпех хăйсем тин курнă фильм çинчен калаçаççĕ.

Людмила Григорьевнăсем пирĕн урам вĕçĕнче пурăнаççĕ. Ирина та пирĕнпех пырать акă, анчах нимĕн те шарламасть. Майĕпен ачасем пĕрин хыççăн тепри килĕсене саланса пĕтрĕç. Иринăпа çеç тăрса юлтăмăр.

— Картина сана килĕшмерĕ-и вара, Ирина?— ыйтрăм эпĕ, хĕрача хăй шухăшне каламаннине асра тытса.

— Питĕ килĕшрĕ, анчах темшĕн-çке пурнăçра çапла пулмасть.

— Сан шутупа, мĕншĕн апла?

— Çынсем расна пулнăран пуль.

Эпĕ вара Иринăна Диккенсăн çак кĕнеки мĕнле çурални çинчен каласа патăм:

— Чарлз Диккенсăн вуннăмĕш ачи çуралсан, вăл питĕ çамрăк ледие, Теннер хушаматлăскере, юратса пăрахнă та арăмĕнчен уйрăлнă, анчах Теннер леди ăна качча тухма килĕшмен. Çакнашкал ăнăçсăр юрату ĕнтĕ ăна кĕнеке çырма хистенĕ.

Çапла эпир ман хваттер тĕлне çитрĕмĕр. Эп чарăнтăм. Ирина та чарăнчĕ.

— Каçарăр, Вадим Михайлович, леш ухмахла хут таткишĕн,— терĕ те вăл, васкавлăн ырă каç сунса, килнелле ыткăнасшăн пулчĕ.

— Ирина!

— Мĕн, Вадим Михайлович?— пăлханса, пĕтĕм кĕлеткипе чĕтресе, хăюсăррăн ыйтрĕ вăл.

Эпĕ хамран хам хăраса кайрăм.

— Ирина, вăхăту пулсан, урок хыççăн кĕр пирĕн пата ыран. Шахматла выльăпăр (Ирина шкулта шахматла выляса чапа тухнăччĕ).

— Анчах эпĕ питĕ япăх вылятăп.

— Çавă аван та ĕнтĕ. Чи япăххисенчен те эпĕ сайра хутра çеç выляса илетĕп. Кĕрĕн-и?

— Юрать,— терĕ те вăл çăмăллăн килнелле васкарĕ.

Пелместĕп, мĕн шутланă-ши вăл ăшĕнче, анчах тепĕр кун чăнах та уроксем пĕтсенех пирĕн пата пырса кĕчĕ.

Пĕр-пĕринчен ютшăнса, аран-аран виçĕ парти выляса пĕтертĕмĕр. Унтан вăл сывпуллашма пуçларĕ. Эпĕ ăна ăсатма тухрăм.

— Килĕшрĕ пулсан, татах кил.

Тĕрĕс турăм-ши эпĕ çавăн чух, педагогикăн çирĕп правилисене пăхăнтăм-ши? Çавна çеç пĕлетĕп: халăх унашкал япаласене нихçан та ырласа йышăнмасть. Ăнланатăн-и, малтанах çак çамрăк хĕрачана юратса пăрахасси çинчен шутлама та намăс пек туяттăм хама. Анчах тепĕр кун иртсе кайрĕ çеç — Иринăна эпĕ ытларах та ытларах кĕтме пуçларăм: килĕ-ши, çук-ши? Калинкке чĕриклетмерĕ-ши? Калинкке сассине илтмерĕм. Ирина пўлĕме кĕрсе тăрсан, темшĕн-çке пĕрре те тĕлĕнмерĕм — хытă кĕтеттĕм ăна. Акă вăл ман умра — хир качаки пек яштака, пиçĕ, вăтанчăк.

Каллех шахмат хăми умне лартăмăр. Çук, пăхаймастăп текех ун çине яланхи пек. Кăкăрта, ерипен вăйланса, çамрăк чухне хумхантарнă туйăмсем тепĕр хут капланаççĕ.

Вăйă вăраха тăсăлчĕ, нимĕн ăнланаймасăрах темиçе хут та выля-выля ятăм. Вара, хулпуççи çине пиншак уртса, каллех Иринăна ăсатма тухрăм. Тĕттĕмленнĕччĕ ĕнтĕ.

Хĕллехи сивĕ çил, юр пĕрчисене вылятса, питрен çапать, çăмăлкка хĕрачана пăрлаклă çул тăрăх хăвалать. Акă вăл самантлăха чарăнса тăчĕ, ман енне çаврăнчĕ. Калинкке хупса, ун патне васкарăм, унăн ăшă аллине ачашшăн чăмăртаса, кăкăр патне илсе пытăм. Çапла эпир çиле май урам тăрăх утса кайрăмăр. Хăйсен çурчĕ тĕлне çитсен, Ирина чарăнса тăчĕ. «Çитрĕмĕр, уйрăлма вăхăт»,— тет вăл пăшăлтатса. Кантăкран ўкекен лампа çутинче унăн куç хăрпăкĕ айне пытаннă тунсăхлă куçĕсене, чĕтрекен тутине асăрхатăп. Пуç çаврăннă пек... Тепĕр самантран хамăн тута унăн вĕри тутипе сĕртĕннине туятăп...

Мĕн пулса тухрĕ? Мĕн туса хутăм?..

— Каçар, Ирина...

— Эсир каçарăр мана...

— Мĕн калаçатăн эс!

— Айлав ю-у-у... Айлав ю-у-у...—ман алран хăтăлса, лĕпĕш пек, хăйсен каликкинчен кĕрсе çухалать Ирина.

«Эп сире юрататăп, эп сире юрататăп...»—янăраççĕ пуçра Ирина тин çеç акăлчанла каланă сăмахсем.

Çапла çуралчĕ пирĕн юрату, çапла пулас пăтăрмах тĕвви тĕвĕленчĕ.

Манăн телее, шкулта та, ытти çĕрте те Ирина хăйне

питӗ лайӑх тыткаларӗ. Уроксене тӗплӗ хатӗрленсе пычӗ, ман ӗҫе ҫӑмӑллатас тесе, класра юлса пыракан ачасене пулӑшрӗ.

Декабрь ҫитрӗ. Пирӗн вӑрттӑн тӗлпулусем ҫаплах пӗтмерӗҫ-ха. Уроксем хыҫҫӑн Ирина кӑштах шкулта тӑрса юлма сӑлтав тупатчӗ, киле эпир пӗрле утаттӑмӑр. Кам шутланӑ ҫак ҫамрӑк хӗрача унашкалах вӗри чӗреллӗ, хӑхӗм ӗмӗтлӗ пулнине! Куҫ умӗнчех ҫурхи чечек пек илемленме, капӑрланма пуҫларӗ вӑл. Савӑнтаратчӗ те мана ҫакӑ, иментеретчӗ те. Унсӑр юлсан, тунсӑха путаттӑм, пӗрле чух вара хамра каласа ӑнлантармалла мар пысӑк айӑп пуррине туяттӑм.

Кая юлса килнӗ юратушӑн, чӗрене тытса чарайми хавааслӑх кӗрсе вырнаҫнӑшӑн шутсӑр хӗпӗртеттӗм эпӗ, анчах ҫак туйӑма Иринӑран пытарма тӑрӑшаттӑм. Малтанлӑха класс руководителӗпе комсорг тӑтӑш пӗрле пулни никама та тӗлӗнтерместчӗ пулсан, каярах Ирина амӑшӗ, хӑйӗн шалти туйӑмӗпе тем сиснӗн, ман ҫине асӑрханса пӑхма пуҫларӗ. Ана кашни тӗл пулмассерен пуҫа пӗкеттӗм, хальхаль айӑпласа, хӑтӑрса тӑкасса кӗтеттӗм. Вӑхӑтлӑха кӑна, Людмила Григорьевнӑна курсан ҫеҫ, пулатчӗҫ ҫак шиклӗ самантсем. Унтан каллех шухӑшсем Ирина ҫине куҫатчӗҫ, ҫав шухӑшсемпе савӑнма никам та чӑрмантармастчӗ.

— Мӗнле тумпа пырас-ши карнавала?— ыйтрӗ Ирина манран Ҫӗнӗ ҫул ҫывхарса килнӗ кунсенче. Чӑваш чӗлхипе чуна уҫса ярать вӑл, хура куҫӗсем ҫумӑр хыҫҫӑнхи ҫӑлтӑрсем пек йӑлтӑртатаҫҫӗ.

— Мӗн калас: лара-тӑра пӗлмен упӑте тумӗпе пуль е чапрас упа ҫури тумӗпе,— хама ҫак ыйту пӗрре те хумхантарман пек курӑнас тесе хуравлатӑп ӑна.

Вӑл ҫӗкленет, сӑмсине ача пек пӗрсе, ман умра мӑнкӑмӑллӑн тӑрленсе тӑрать.

— Чун-чӗререн парӑннӑ Джульетта е мӑн кӑмӑллӑ Анда пулас килет.

— Юрать, юрать, ху кӑмӑллаиине суйла, анчах маншӑн халиччен\и пек чиперук Иринах пул.

Пытармастӑп, каллех чун ҫамрӑкланнине, тахҫан-тахҫан иртнӗ вӑхӑт, ҫеҫке ҫурса, каялла таврӑннине туйма пуҫларӑм. Ҫулӑмпа ҫиҫекен таса юрату кивӗ сурантан хӑтарчӗ, чунне пама хатӗр Иринӑна эпӗ те хамӑн шалти мӗнпур хӗрӳлӗхе патӑм. Халӗ мана арҫынсен сӳпӗлти, ӑҫтиҫук сӑмахӗсем те, хӗрарӑмсен курнӑҫланса юратма тӑрӑшни те чӑтма ҫук тарӑхтарса яратчӗҫ. Иринӑн таса юратӑвне асӑрханса, тирпейлӗ упрама тӑрӑшаттӑм эпӗ. Пӗрремӗш юратупа ӑс ҫухатман-ши тесе, ӑна час-часах шухӑшласа пӑх-

ма хистеттӗм. Ҫулсем пӗр мар-ҫке пирӗн, курӑр-ха, мӗн чухлӗ аслӑрах эпӗ Иринӑран, ҫавӑн ҫинчен манмасть-и вӑл? Ирина хирӗҫетчӗ, хура куҫӗсем самантрах куҫҫульпе тулатчӗҫ.

— Кала, килӗшместӗп-и?

— Укӗнмӗн-и кайран?

— Нихҫан та!

Тахҫантанпа кӗтнӗ Ҫӗнӗ ҫул каҫӗ ҫитрӗ. Шкулта ытти чухне пулакан карнавалсенчи пекех, тӗрлӗ ташӑ ҫеммипе учительсем те, вӗренекенсем те пӗр пӳлӗмре ҫаврӑнаҫҫӗ. Юрӑсем шӑратаҫҫӗ, атӑ кӗллисем хитрен шӑкӑлтатни илтӗнет, хаваслӑх ҫиҫет.

Акӑ кӗвӗ татӑлчӗ те, зал варринче шурӑ кӗпе тӑхӑннӑ, куҫӗ ҫине хура маска лартса янӑ ҫамрӑк Аида акӑлчан чӗлхипе сӑвӑ вулама пуҫларӗ: «О, килсем, килсем, ман юрату, пирӗшти пек кил, сасӑ пек...»

Пӗр эпӗ анчах сиссе юлтӑм ҫак сӑмахсем камшӑн пулнине. Тӗнчери чи хаклӑ та чи лайӑх парне пек туйӑнчӗҫ маншӑн ҫав ҫулӑмлӑ, чуна хускатакан сӑмахсем.

Сасартӑк вальс кӗвви янӑраса кайрӗ. Ман пата Ольга Семеновна пырса тӑчӗ.

— Вадим Михайлович,—терӗ вӑл,— эсир халех ташша чӗнмесен, ҫакна эпӗ пуҫлӑхсене хисеплеменни вырӑнне хуратӑп.

— Анчах, Ольга Семеновна, ҫынсем мана ҫакӑншӑн чее те йӑпӑлти темӗҫ-и?

Эпир ташӑ картине тухрӑмӑр. Акӑ вӑл, унччен хи Оля!

Каллех пуҫра шухӑш вылять, каллех асаилӳ сукмакӗсем мана таҫта инҫе илсе каяҫҫӗ. Каллех ман куҫ умне тахҫанхи инҫетри юмах тӗнчи пек туха-туха тӑрать.

Пиллӗкмӗш класран пуҫласа пӗрле вӗреннӗ эпир, ҫиччӗмӗшӗнче чухне ман ҫамрӑк чӗрене пирвайхи юрату пырса ҫапнӑ. Урокра ун хыҫӗнче лараттӑм. Ҫырӑ ҫӳҫ пайӑркисем имшеркке хулпуҫҫи ҫине юхса анатчӗҫ, эпӗ вара ҫав ҫӳҫ пайӑркисене, асӑрханса, ручка вӗҫӗпе суйлама юраттӑм. Хӑвӑрт, питӗ хӑвӑрт чупса иртрӗ вӑхӑт. Сисмерӗмӗр те, уйрӑлу кунӗ ҫитрӗ... Ак хальхинче купӑсҫӑ хӑй кӗввине калама чарӑннӑ пекех...

Ольга Семеновнӑна тав турӑм та, ӑна упӑшкипе пӗрле хӑварса, аялти хута антӑм. Кирилл Афанасьевичпа, шкулти историкпе, пирус туртса тӑратпӑр. Сасартӑк пирӗн пата «Эфиопирен килнӗ ҫамрӑк хӑна» ҫитсе тӑчӗ. Пирӗн ҫине пӗр ывӑҫ конфетти сапрӗ те мана куҫран пӑхрӗ:

— Тин ҫеҫ пӗлтернӗ хӗрарӑмсен вальсне чӗнме ирӗк памӑр-ши, Вадим Михайлович?

Пусма тăрăх хăвăрт чупса хăпартăмăр та ташлакансем хушшинче çухалтăмăр.

— Айăп ан тăвăр, Аида синьорита, маска айĕнче тунсăхлă куçсем куратăп эпĕ. Мĕншĕн?

— Мĕн тăвас-ха ĕнтĕ. Родамес манран темшĕн-çке тарса çӳрет пулсан...

Иксĕмĕр те хавассăн кулатпăр. Малалла ытти ташăсенче те кашнинчех мăшăрлă пултăмăр. Вăхăтран вăхăта Ирина сулахай уринчи туфлине тем тӳрлетме пĕшкĕнчĕ.

— Египет фараонĕсен пушмакçисем пурте япăх ăстасем-им вара, синьорита?

— Чурари хĕрарăмсемшĕн тăрăшасшăн мар-çке вĕсем!— Қаллех ун пичĕ-куçĕ савăнăçпа йăлтăртатать.

...Унтан хĕллехи каникул пуçланчĕ. Ачасем, вăхăтлăха кĕнекесене пăрахса, коньки çине, йĕлтĕр çине тăчĕç. Мана та хăш чухне вĕсемпе пĕрле çӳреме лекетчĕ. Ирина юнашар пулни питĕ хавхалантаратчĕ мана.

Қаллех шкулта уроксем пуçланчĕç. Иринăпа туслă пулни никамшăн та вăрттăнлăх марччĕ ĕнтĕ текех. Утма вĕренекен ача çине пăхнă пек пăхатчĕç ман çине учительсем, вăрттăн юнатчĕç, асăрхаттаратчĕç.

Пĕрре çапла уроксем хыççăн пушанса юлнă класа эпĕ акăлчан чĕлхинчен шкулти театр валли пĕчĕк пьеса куçарса ларатăп. Ирина, мана тăрăхласа, доска çине карикатура тăвать. Сасартăк алăк уçăлчĕ те, класа Людмила Григорьевна пырса кĕчĕ. Эп шартах сикрĕм, Ирина шурса кайрĕ.

— Ирина, тух-ха класран,— терĕ вăл, ман çинчен куçне илмесĕр. Унтан сĕтел патне утса пычĕ. —Çак самантра эпĕ мĕн çинчен калаçма тивĕçлине эсир туятăр пулмалла ĕнтĕ? Юлашки вăхăтра эсир пачах ача-пăчалла хăтланнине хăвăр туятăр-ши тетĕп?

Эпĕ, чăнах та, пĕрремĕш класри айăпа кĕнĕ ача пек, пуçа усса ларатăп.

— Унччен путсĕр çын пулман, малашне те пулма шутламастăп...

Анчах, мана итлесшĕн мар пулса, вăл хăйĕннех перет:

— Сирĕн «унччен» кирлĕ мар мана, хальхи вăхăт пирки вара ыттисем пулăшмасăрах шухăшласа пăхма ыйтатăп. Юрĕ, ун пирки, апла пулсан, педсоветра калаçăпăр!

Вăрт çаврăнса, Людмила Григорьевна класран тухса кайрĕ.

Завуч хăратни те, çынсем хĕрсех «пăшăл пăтти» пĕçерни те чăрмантараймарĕç пире. Пăшăрханса ӳкме сăлтавĕ те çукчĕ. Ирина çаплах питĕ лайăх вĕренет, унсăр пуçне нумай-

рах пĕлме, курма, тĕпчеме тăрăшать, манпа акăлчанла калаçать... Ытлашшийĕ нимĕн те пулман пирĕн хушăра.

Апла пулин те, педсовет пухрĕç-пухрĕçех, унта мана тем тĕрлĕ айăппа айăпласа пĕтерчĕç, шкултан кăларса ярассипе хăратрĕç. Мораль тĕлĕшĕнчен пăсăлнă иккен эпĕ, çитĕнсе çитмен ача пуçне çавăрнă, тен, тата ăна... пăснă та... Намăс, чăтма çук намăс пулчĕ мана вĕсемшĕн, анчах эпĕ тӳрре тухаймарăм... Халĕ ак тепĕр хут директорпа завуч умĕнче. Алăра — хут. Мана малтанхи ыйтупах ронона чĕнеççĕ иккен...

— Сыв пулăр,— терĕм те шăппăн алăк патне утрăм. Чим, ыйтма маннă Людмила Григорьевнăран. — Эсир юлашкинчен Иринăпа тĕл пулма ирĕк памăр-и мана? — Ыран эпĕ хамăр яла каятăп, тен, урăх таврăнмăп та...

— Нихçан та!— татса хучĕ завуч.

Алăка уçрăм та тула тухрăм. «Нихçан та!»—çаплах янăрарĕ хăлхара.

Мĕн сиксе тухнине тавçăрса илеймесĕр, вокзалта ыран валли билет илтĕм те киле таврăнтăм. Тарье аппа, хулари хĕрĕ патне хăнана кайнăскер, халĕ те килсе çитеймен иккен-ха, хуçа-старик вара, Петĕр пичче,— пулăра.

Хамăн пысăк мар «хуçалăха» пуçтаркаланă хыççăн, вăхăтаниепле ирттерме пĕлеймесĕр, пӳртре чиtлĕхе хупса хунă кайăк пек унталла-кунталла утатăп та, ывăннăскер, кравать çине выртатăп, унтан каллех пирус чĕртсе яратăп.

Ял çине ерипен каç чаршавĕ анма пуçларĕ. Иринăпа тĕл пуласси çинчен шутламалли те çук — çутă çутмасăрах ыранхи куна кĕтетĕп.

Анчах акă калинкке чĕриклетрĕ. Эпĕ кравать çинчен сиксе антăм та, урай варрине тăрса, куçа алăк çине тĕллерĕм.

Алăкран хуллен шаккарĕç.

— Кĕрĕр, кĕрĕр!— пăлханса кăшкăртăм эпĕ. Алăк уçăлчĕ. Пӳлĕме хура кĕпеллĕ каçхи пирĕшти кĕрсе тăчĕ.

Тĕлĕннипе нимĕн те чĕнейместĕп. Вăл ман пата çывхарчĕ, шывланса хĕрелнĕ куçĕсене ман çине çĕклерĕ.

— Вадим, эп килтĕм сан патна, эпĕ, хам сăмаха калама...

Оля... Каллех Оля—тахçанхи ĕмĕтĕм, манăн çамрăклăхăм.

Алă лаш усăнчĕ, чĕлхе çĕтрĕ.

— Каçар, каçар, ман хаклă çыннăм... Каçар, Вадим, сана çакăн чухлĕ асап кӳнĕшĕн... Çулсем иртнĕ майăн эпир те, хĕрарăмсем, улшăнатпăр иккен. Мĕнлерех ăмсанатăп халь çамрăк Иринăна. Анлан, Вадим, мана та çăмăл мар.

Эс килнӗренпе мӗнпур канаҫа ҫухатрӑм. Каяр кунтан — пӑрахар та пӗрле каяр...

Куҫҫулӗ шӑпӑртатса юхать, кӗтни, тархаслани чуна ҫурать! Мӗн тери шел сана, Оля. Сӑнчӑрласа хунӑ пек, ним калама пӗлейместӗп. Ҫавна пула пӳлӗме Ирина мӗнле кӗнине те кураймарӑм.

Пӗр вӑхӑт вӑл куҫне аллипе хупса тӑчӗ, чалӑшса кайса, стенана перӗнчӗ, тепӗр самантран унӑн карӑнса таракан ӳт-пӗвӗ, пружина пек сиксе, алӑкра ҫухалчӗ. Оля аллисенчен пушанса, эпӗ ун патне тапса сикрӗм, анчах урама тухсан, Иринӑн ҫӑмӑл кӗпи вӗлтӗртетсе каҫ сӗмӗнче ҫухалнине ҫеҫ курса юлтӑм.

— Тӑхта, Ирина, чарӑн!

Ирина чарӑнмарӗ. Пӳрте кӗрсен пӑхатӑп — никам та ҫук. Пуҫ шавлать, сывлӑш питӗрӗнсе килет.

Сӗм-ҫӗрле Петӗр пичче пулӑран таврӑнчӗ. Эпӗ кровать ҫинче ҫывӑрмасӑр йӑшӑлтатса выртнине курса, сӑмах хушрӗ:

— Ҫанталӑк пӑсӑлать пулмалла — пулӑ лекми пулчӗ. Эс мӗн тӗттӗмрех выртатӑн.

Старик ҫутӑ ҫутрӗ. Пӳлӗме пӑхса ҫаврӑнчӗ те, тӗлӗнсе, ман ҫине пӑхрӗ.

— Ӑҫта кайма пуҫтарӑннӑ эс? Отпуск пачӗҫ те-и вара?

Ана шкулта паян мӗн пулса иртни ҫинчен каласа паратӑм. Ҫывӑраймарӑм эпӗ. Ҫӗр каҫах кӗхлетсе ӳсӗрчӗ хуҫа-старик те.

Ирпе, Тарье аппана юлашки хут курайманнишӗн пӑшӑрханса, хуҫапа сывпуллашрӑм. Халь акӑ эпӗ, ҫак самантра, хам каялла таврӑнассине ҫирӗпех шанатӑп ӗнтӗ, ӗнер вара урӑх таврӑнмастӑпах тесе шухӑшланӑччӗ.

— Нимӗн те ӑнланаймастӑп, нимӗн те,— терӗ ырӑ кӑмӑллӑ Петӗр пичче. — Ну, сыв пул, сыв пул, ывӑлӑм. Юратса пӑрахнӑччӗ эпир сана, тӑван ывӑл вырӑнне хураттӑмӑр.

Эпӗ те уппа аттепе сывпуллашнӑ пекех сывпуллашрӑм. Чӑматана йӑтса, станци ҫулӗпе ҫуран утрӑм...

Вадим, чӳречерен пӑхса, пӗр хушӑ чӗнмесӗр тӑчӗ, унтан йӳҫеккӗн кулса илчӗ те хӑй сӑмахне ҫапла пӗтерчӗ:

— Акӑ, юмах вӗҫне ҫитрӗмӗр те. Халӗ ӗнтӗ хупа пӗрле ларса пыракан юлташу ҫинчен ытлашшипех пӗлтӗн эсӗ. Пӗр япала пирки ҫеҫ (куҫран пӑхсах сисетӗп) тӳррӗн калаймӑн: айӑплӑ-и эпӗ, айӑпсӑр-и?

Урӑх нимӗн те чӗнмерӗ вӑл. Эпӗ те тӳрех хам шухӑша калаймарӑм. Вакун кустӑрмисем кӑна шӑкӑл-шӑкӑл, шӑкӑл-шӑкӑл шӑкӑлтатрӗҫ.

## ÇУЛ ПУÇЛАМĂШĔ

— Вера,— терĕн эсĕ хăв ятна çутĕç пайĕнче. — Тепĕр çур уйăхран — Вера Павловна.

Эпĕ Шупашкарта, эсĕ Хусанта институт пĕтерсе, çак района ĕçлеме килнĕ эпир. «Хурăнварти вăтам шкула»,— терĕç иксĕмĕре те. Ларса каймалли нимĕн те тупайман енне кĕнекесем тултарнă чăматансене çĕклерĕмĕр те вунă çухрăмри яла çуранах тухса утрăмăр.

Тусанлă çулпа утма йывăр, юрать-ха, унăн икĕ айккипе пархатарлă ял çыннисем вăрман лартса хăварнă. Самаях çӳллĕ ӳснĕ вăл, сулхăнĕ çак шăрăх кун чуна уçăлтарсах ярать.

Пĕрер пăта яхăн таякан çĕклемсене йăтса нумаях каяймăн, хушăран чăматансем çине лара-лара канатпăр, пĕрпĕрин умĕнче ытла кичем çын пек курăнас мар тесе, темтепĕр пакăлтататпăр. Эсĕ йывăçсен, кашни курăкăн ятне пĕлнĕрен, ун çинчен хавасланса калаçма пултарнăран эпĕ сана лайăх биолог вырăнне хутăм. Чăматанпа пĕрле эсĕ тăсмак шĕвĕр вĕçлĕ хура арча йăтса пыраттăн, çавна кура эпĕ хам ĕçлес ялти шурă колоннăсемлĕ клубра малашне чаплă сĕрме купăсçă концерчĕсене итлĕп тесе шутларăм.

Кана-кана инçех каяймарăмăр çапла, хыçалтан пĕр лав хуса çитрĕ пире. Лавçи ырăскер пулчĕ, лашине чарчĕ те ларма сĕнчĕ. Каярах пĕлтĕмĕр: ял çыннисенчен сĕт-çу пуçтаракан Савантей пичче пулчĕ ку.

Юрттипе нумаях чупасшăн пулмарĕ лаша. Çитменнине, вăрман тăрăхĕ вĕçленчĕ. Çĕртме тума ĕлкĕрнĕ уй урлă выртакан çул çинче кӳлленчĕксем йышланчĕç, кустăрмасене пылчăк явăнма пуçларĕ.

— Эсир, ачамсем, инçетрен пуль-ха?—чĕмсĕрлĕхе сирсе ыйтрĕ Савантей пичче.

— Ахă,— терĕ Вера. — Хурăнвара килетпĕр, шкулта ĕçлеме.

— Ак телей!— сăмси çунатти сике-сике илчĕ старикĕн.— Институтранах-и çапла?

— Институтранах,— терĕм эпĕ.

— Тин кăна аптăраса калаçса пычĕ-ха Дмитрий Акимыч шкул çинчен. Апла-капла, учительсем çитмеççĕ, тем тумалла ĕнтĕ тет.

— Сирĕн унта директорĕ Валентин Петрович мар-и вара?— ăнлапаймарĕ Вера.

— Эпĕ урăххи тетĕп-им? Колхоз председателĕ Дмитрий Акимч çинчен калатăп-çке,— терĕ лавçă.

— Шкул пирки пăшăрханать-и?—тĕлĕннине пытараймарăм эпĕ те.

— Ак япала!— куçран чăрр пăхрĕ Савантей пичче.— Мĕнле-ха апла шкулшăн пăшăрханас мар? Шкулта кам вĕренет? Пирĕн ачасем. Эпир камсем? Колхоз çыннисем. Апла-тăк...— куçне чеен хĕсрĕ те вăл лĕх-лĕх кулса ячĕ.

Лашана хăвăртрах утма хистесе тилхепене карт-карт турта-турта илет лавçă. Çулĕ йĕп-йĕпе, лаша урисем шăва-шăва каяççĕ, урапа çине пылчăк патлата-патлата ӳкет.

— Ирпе хам лартса кайрăм-ха станца,— малаллах калаçрĕ старик. — Лашана хурлать халăх, пĕрмай сумран кăларасшăн. Пĕрĕхсе каять те çумăр паянхи пек, пĕри те тепри чупса пырать вара: «Лартса кай, тархасшăн, Савантей пичче, апла-капла, вăхăта çитмелле». Лаша мĕн, сĕтĕрет, ик турта хушшине çакланнă та. Паян Дмитрий Акимч хăй ларса пычĕ. Çĕнĕ-ха вăл пирĕн, пĕрремĕш çул кăна колхозра. Кирлĕ-тĕк ăйăрĕ те пурччĕ те-ха — ман патах пычĕ. «Шупашкара каятăп, çĕрулми кăларма студентсене чĕнесшĕн»,— тет. Вăт, калаçса кайрăмăр вара. Мĕншĕн ĕç алли çитмест ялта? Çамрăксем çук. Мĕншĕн ялта тăрасшăн мар вăйпитти халăх? «Хулари хăтлă пурнăç илĕртет вĕсене,— тет Дмитрий Акимч. — Ялта пĕр-пĕр ĕçе вĕрентекен шкул пулсанччĕ,— тет. Анчах ăçтан тупса парам-ха вĕсене хула, специальность паракан шкул мĕнле уçам? Кунта, ав, вăтам шкула учительсем çитмеççĕ те»,— тет.

Савантей пичче чĕлĕм тивертсе ячĕ, шăрпăк пĕрчи çине иккĕ сурчĕ те, ăна, сӳнсĕскере, вĕçтерсе çĕре ӳкерчĕ.

— Çук пуль, Дмитрий Акимч,— терĕм ăна. Ĕçĕ кунта çав шкул пурринче кăна та мар пуль. Ну, калăпăр, хамăр вăйпа тракторист, шофер, комбайнер вĕрентсе хатĕрлĕпĕр. Хамăра çителĕклĕ таран. Ытлашшине ăçта чикĕпĕр-ха? Е тата пурте механизатор пулма килĕшмесен? Ман кӳршĕ Миканюр ывăлĕ пек. Тытрĕ те вĕçтерчĕ темле режиçура вĕренме. Кунта энтĕ шкул уçнипе кăна та çырлахаймăн. Хула мĕншĕн туртать çамрăка? Пур енчен те меллĕ пулнипе. Ху кĕрес тенĕ шкула кĕме май пуррипе. Тус-юлташ тупма ансатрах пулнипе. «Мĕнле апла, тус-юлташ тупма ансатрах пулнипе?»— ыйтать Дмитрий Акимч. А мĕн, тетĕп, шутласа пăхăр-ха: миçе арçын ялта, миçе хĕрарăм? Пĕр вунпилĕк-вунултă çула çитиччен пĕр пекрехех вĕсен хисепĕ. Леревле вара? Вĕт çитмеççĕ пирĕн хĕрсене каччăсем. Çара каяççĕ те пурте таврăнаççĕ-и каялла? Çурри те килмест. Мĕн тăвас ха хĕрсен? Арçын-тантăш кирлĕ. Çемьеллĕ пулмалла хăçан та пулин. Çавăншăн туртăнать хула-

на яш-кĕрĕм. Мĕн тăвăн-ха, чарса лартма çук çак япалана. Тĕрĕссипе, ялта та халĕ алă вăйĕ тем чухлех кирлĕ мар ĕнтĕ, машина тăвать пурне те. Тавтапуç, ĕлĕкхи мар. Ку пăшăрхантармасть паянхи ял çыннине...

— Мĕн-ха эппин?— Савантей пиччен ăслă калаçăвĕ кăсăклантарса ячĕ мана.

Лавçă, тем каласшăн пулнă пек, пуçне сиктерсе илчĕ те, каллех тилхепине турткалама пуçларĕ. Çул вĕтлĕх вăрмана кукăрăлса кĕчĕ. Анчах вăрах пыраймарăмăр çул хĕрринчи лапсăркка çăкасен уçă сулхăнĕнче, пирĕн лав анлă уçлăха сиксе тухрĕ, эпĕ вара малашне хам ĕçлес ялти пӳртсен хĕрлĕ, симĕс тăррисене, тĕл-тĕл тăваткал, тĕл-тĕл йӳплентерсе янă телевизор е радио антеннисене асăрхарăм. «Ялĕнче йывăç нумай ӳсет иккен»,— савăнса шухăшларăм ăшра.

— Темле, ял çине сурнă пек хăтланаççĕ хăшпĕр çамрăксем — акă мĕн тарăхтарать,— пĕр-пĕр куçа курăнман сăнара пĕр шелсĕр айăпланă пек татса каларĕ Савантей пичче. — Вĕт, шăпăрлан, хăй катăк йĕмрен тин çеç тухнине те манса каять тепри. Хулара пĕр-ик çул пурăнать те, яла таврăнсан никама палламасть, çӳрет пахчари мĕлке пек: шăлавар пĕççипе тусан шăлса пырать, çӳçĕ-пуçĕ мăрье тасатма питĕ чухлă — ĕмĕртен çурăм авнă чăваш ашшĕ-амăш мар, пĕр-пĕр акăлчан-ристакрат пăхса ӳстернĕ тейĕн. Теприсем тата, каçарăр та, сирĕн пек вĕренсе те килеççĕ яла. Малтанлăха савăнатăн. Ма савăнас мар, ял ачи тăван çĕр патне таврăнчĕ пулсан. Çук вĕт, сивĕннĕ чĕрисем ялтан, писнĕ хура çĕртен, пĕр çул-и, иккĕ-и ĕçлеççĕ те— вăшт кăтартаççĕ хӳрисене. Мĕншĕн? Каларăм-ха хула культури çинчен. Унта вăл ытлашшипех ĕнтĕ. Янтă япала. Ялта ăна хăвăн тума тивет. Пилĕк авмалла, пуça ĕçлеттермелле. Çамрăксем ку чухне ытла мăн кăмăллă, вĕсен, куратăр-и, аслă пĕлӳ пур. Талпăнать вара вăйпитти халăх, намăса пĕлмесĕр, каллех янтă майсем патне...

Пурте шăплантăмăр. Хăйĕн калаçăвне паçăртанпах пĕр йĕрпе илсе пынă лавçă хăй ĕçне турĕ: чĕмсĕр пултăмăр эпир Верăпа. Çак вăхăтра эпĕ хамăн тăван ял çинчен шухăшларăм. Савантей пичче пекех çăпайлă та лăпкă калаçакан çынсене аса илтĕм. Шел мар-и-ха чăнах та: пĕр çĕр çинче, пĕр лаптăк çинче çуралатăн, пĕр-пĕринчен ним уйăрмасăр ӳсетĕн; сана мĕнпур йăмра, ял варрипе юхса выртакан çырман кашни кукăрĕ, юнашар вăрманти кашни чăтлăхпа уçланкă çывăх, сана ялти кирек хăш çыннăн йăли-йĕрки те пилĕк пӳрне пек паллă, ĕнтĕ çакă пурте сан ӳсĕмӳ çине, ăстăн аталанăвĕ çине пысăк витĕм кӳрет —

çук вĕт, пĕрре уйрăлатпăр та эпир çак ырлăхран, писетпĕр, чăн-чăн этем тивĕçĕпе ăна тав тума манатпăр. Пухăнасчĕ халĕ тăруках тĕрлĕ вăхăтра ялтан тухса кайнă мĕнпур çынсен пĕр çĕре, мĕн тери пысăк вăй пулăттăмăр эпир, мĕн кăна çавăрттарман пулăттăмăр тăван кĕтесре!

Анчах, терĕм хама çав вăхăтра, Андриян космонавт та ялтанах тухнă-çке. Апла пулсан, çамрăксене мĕнпур майсемпе ялта хăварас тесе пурăнмалла-и? Çук пулĕ. Савантей пичче те çакăншăн çине тăмасть, авă. Тивĕçлĕ пĕлӳ илнĕ специалистсем çителĕксĕр пулнăшăн пăшăрханать старик.

Пирĕн лав, уй хапхинчен кĕрсе, чул сарнă кат тăрăх анаталла кустарчĕ. Кĕпер урлă каçсан, Савантей пичче лашине чарчĕ те сăрт çинчи вăрăм çурт çине тĕллесе кăтартрĕ.

— Шкулĕ çавă-ха,—терĕ вăл. Вара çапла хушса хучĕ:— Эсир мана, старике, нумай пакăлтатнăшăн каçарăр ĕнтĕ. Чăнах та, нумай килеççĕ пирĕн яла, анчах вăрах пурăнмаççĕ... Йывăрлăх тени вăл пĕремĕк мар ĕнтĕ... Ну, сывă пулăр-ха...

Ырă лавçа тав турăмăр та йăмраллă çырап хĕррипе утрăмăр. Тăвалла улăхса шкул патне çывхарсан, иксĕмĕр те тăп чарăнса тăтăмăр, пĕр-пĕрин куçĕнчен пăхрăмăр. Пĕлместĕп, те Савантей пичче сăмахĕ йĕкĕлтенипе, те хамăр пурнăçри пĕрремĕш утăмăн хакне çак самантра уйрăмах çивĕч туйнипе, иксĕмĕр те сылтăм аллăсене чăмăрласа çӳлелле çĕклерĕмĕр, пĕр хушă юпа пек хускалмасăр тăтăмăр.

Çирĕп пулĕ-ши пирĕн тупа?

Çырма хĕрринчи ултă-çичĕ çулхи арçын ача йĕм пĕççисене чĕркуççи таран тавăрнă та, тĕнчери мĕнпур япала çинчен манса кайса, пĕчĕк сăскăпа пулă тытма хăтланать. Пĕрре шыва ярать вăл ăна, тепре туртса кăларать. Пулли лекмест пулмалла, ача вара кĕсйинчен çăкăр чĕлли кăларать те ăна сăскă çине тытса тĕпретет. Каллех шыва чикет сăскине, тепĕр самантран кăларать те савăннипе тăпăртатса илет, кукленсе вак пулла пуçтарма пуçлать. Этем пĕр пĕчĕк вăрттăнлăха алла илсе пырать.

Тыттарар-и, Вера Павловна, çак пĕчĕк этеме, çак хăватлă этеме çутă тĕнчен уççине? Эс ăна çутçанталăк çинчен каласа кăтарт. Тĕлĕннипе, ниçта кайса кĕреймесĕр çӳретĕр ача, хăй аллипе хăй тытса пăхтăр вăл аслă çутçанталăка, ăна кăштах та пулин улăштарма пултарнăран хăйне вĕçĕмсĕр телейлĕ те вĕçĕмсĕр паттăр тесе шухăшлатăр. Е хура арчунтан туртса кăлар та сĕрме купăспа са-

мантлăха ун хĕлĕхĕсем мĕнле юрланине итлеме ирĕк пар çак пĕчĕк пулаçа. Аслăлантăр унăн чĕри. Çак пурнăçри мĕнпур савăнăçа, хуйха-суйха, çын хăватне витĕр туйма вĕрентĕрччĕ вăл. Эпĕ ăна аслашшĕн çĕрĕ çинчен каласа кăтартăп. Эпĕ ăна çак сăваплă çĕр çинчен, юнпа, куççульпе, тарпа шăварăннă çĕр çинчен ăнлантарăп. Эпĕ ăна тăван çĕрĕн юмах-халапне, сăвви-юррине каласа парăп, вĕсем мĕншĕн хурлăхлă, мĕншĕн çепĕç, мĕншĕн савăнăçлă, мĕншĕн хăватлă та янăравлă пулнин вăрттăнлăхне уçса парăп. Çакна пĕлсе-туйса тăракан çын пăсăк çын пулмĕ, вăл хăй çумĕнче аслă çупатсем пуррине туйса илĕ, вăл çак çĕр çинче хăй, хăй анчах хуçа пулнине ăнланĕ, ăна илемлетме, капăрлатма тапратĕ. Эпир вара санпа, Вера Павловна, çакăн хыççăн Савантей пичче патне пырăпăр та ун куçĕнчен тӳррĕн пăхăпăр. Вăл, çĕр çынни, хăй тахçан çак яла кама лартса килнине пĕр сăмахсăр ăнланĕ.

## КАНĂÇ ÇĔТНĔ КАÇ

Кам пĕлмест пуль Мирун Маклашкина!

Пĕлтĕр фермăран икĕ уйăх тислĕк турттарнине шутламасан, пилĕк çул ĕнтĕ ялти пушарникре ĕçлет вăл. Пилĕк çул ĕнтĕ пушар тухман ялта. Çакăн çинчен калаçу пуçланать те, çынсем: «Мирун Маклашкин сыхă тăрать. Мирун Маклашкин килне апат çиме те каймасть»,— тесе мухтаççĕ Мируна.

Тĕрĕс калаççĕ. Пилĕк çул ĕнтĕ Мирун амăшĕ Сăпани аппа ялăн пĕр вĕçĕнчен тепĕр вĕçне, пушарние ĕнтĕ, куллен виçĕ хутчен хутлать. Ашă апат йăтать Мирун валли. «Айвай тăрăшать, ай-вай ку Мирун, ăçтан пулма пĕлнĕ»,— пĕççисене шарт! çапаççĕ ял çыннисем.

Паян та Сăпани аппа пушарние тăхăр сехетре çитрĕ. Тссс! Шăпрах пул, вулаканăм. Мирун амăшĕ те, авă, чĕрне вĕççĕн çӳрет. Ак вăл, пушарнири ашак хăлхиллĕ пĕртен-пĕр кĕсрене, Кутамаса, Шапа кӳлли патне çавăтса каять, вак касать. «Эс ăçтаччĕ, кăвак куян» кĕвви майлă шăхăрса, Кутамаса шăварать, ăна каялла çавăтса пырать, сĕлĕ улăмĕ пăрахса парать, унтан каллех, чĕрне вĕççĕн утса, ăшă пӳрте кĕрет. Аф-иçç, ăф-иçç, ăф-иçç!— хуçаланать пĕртен-пĕр сасă лăпкă пӳртре.

Сăпани аппа лăпкăн çывăракан Мирун çине ытараймасăр пăхса тăрать. Алшăлли илсе, ывăлĕн тарласа кайнă сăмсине шăлса илет. Мирунăн тутисем йăлл кулаççĕ.

— Лисуук,— тет вал çепĕççĕн ыйха тĕлĕшепе, унтан сылтăм аякĕ çине çаврăнса выртать.

— Ачам!—шарт сикет Сăпани аппа. — Чирлемерĕн пуль, ачам? Аташатăн, тем? Ĕçле-ĕçле тем курăн.

— Лису-ук, кил-ха кунтарах,— каллех мăкăртатать Мирун.

— Тăр-ха, ывăлăм, тăр-ха, эпĕ ку, аннӳ. Чирлерĕн-им? Тарланă та ху,— хыпăнса ӳксе чупкалать Мирун амăшĕ.

Мирун куçне-пуçне ал лаппипе сăтăркаласа илет, тутлăн карăнать, çине-çине ик-виçĕ хут анаслать те тăрса ларать.

— Эсĕ-çке ку,— тет вăл юлхавлăн. — Хырăм питĕ выçрĕ. Яшка пĕçертĕн-и?

Амăшĕ наччас сĕтел çи хатĕрлет.

Мирун пăшлата-пăшлата салма яшки сыпма пуçлать.

— Авланатăп, анне,— тет вăл, ним пулман пек.

— Ак тамаша!— тăнă çĕртех кутăн кайса ларать амăшĕ. — Тата кама куç хыврăн? Хăçан авланатăн?

— Лисука илетĕп,— тет Мирун. — Кĕçĕрех.

— Лисука? Ай тур-тур! Ара, вăл Праски кинрен те çивĕчрех. Пĕр канăç кураймăн, ачам, пĕр канăç кураймăн,— ывăлне шелленипе, куççулĕ сиксе тухать Сăпани аппан.

— Авланатăп и... пăнчă,— тет Мирун.

— Ара, сăмах та татрăр-и ĕнтĕ?—йăл-йăл кулкаласа, кăсăкланать амăшĕ.

— Как ше,— кĕскен хуравлать Мирун.

Тепĕр самантран Сăпани аппа килне тухса вĕçет. Туй мĕн иккенне аван пĕлет вăл. Пуçласа авланмасть Мирун.

...Юлашки эрнере пушарнипе юнашар вырнаçнă ĕне фермине çӳреме вĕренчĕ Мирун Маклашкин. Дояркăсен пӳртĕнче каç пулсанах юрă-ташă янрама пуçлать. Çĕнĕ çул каçне хатĕрленет яш-кĕрĕм. Пĕри кĕрĕкне тавăрса тăхăнать, пичĕ çине хутран касса тунă пысăк куçлăх лартса ярать, иккĕмĕшĕ тилĕ тумĕпе ташша тухать, тепри Хĕл Мучи пулса тăрать. Кам камне пĕлсе пĕтерейместĕн. Шутсăр интереслĕ. Мирун пĕр-икĕ каç сăнарĕ те çак мыскарана хăй те питĕ авăрланса кайрĕ. Лисукпа юнашар пулас килет унăн. Килĕштерет вăл ăна. Лисукĕ вара Çĕнĕ çула мулкач тумĕ хатĕрлет иккен. «Чим-ха, ара, ман мĕн хатĕрлес?»— çамкине катăртаттарать Мирун Маклашкин.

Ухливан кĕтӳçе тавтапуç. Вăт, ун пуçĕ ылтăн-тăк ылтăн!

— Тăхтăр-ха,— терĕ вăл пĕррехинче. — Мулкач пулсассăн, Кашкăр та пулмаллах пирĕн. Телевизорта мĕнлерех унта? «Ну, погоди и!»—тет те Кашкăр пĕррех тапса сикет Мулкач хыççăн.

— Тĕрĕс,— савăнса кайрĕ Лисук. — Эп таратăп, вăл хăвалать. Хуса çитсен эпĕ те: «Ну, погоди!» тетĕп те, Кашкăра улталаса хăварса, каллех таратăп. Анчах кама тăварха Кашкăрне?

— Эп пулатăп!— вăйă картине сиксе тухрĕ Праски, çулталăк каялла Мирун арăмĕ пулнăскер.

«Ку пултарать. Кашкăр-тăк кашкăр»,— тӳрех хак пачĕ Мирун.

Ухливан Праски çине пăхса тăчĕ-тăчĕ те пуçне унталла-кунталла пăркаларĕ:

— «Ну, погоди!» тесе хулăн сасăпа кăшкăрмалла! Çук, çук, арçын кирлĕ. Ахă, Мируна тăвас. Мирун, кунтарах кил. Кашкăр пулатăн. Эсĕ, Лисук, ăна маска çĕлеме пулăшатăн.

Енер Лисук (ак телей!) кăнтăрла иртсен пушарние хăех пычĕ.

— Ну, Кашкăрăм,— терĕ вăл,— вырт, пур енчен те виçсе илетĕп сана.

Мирун выртрĕ. Лисук Мирун тăршшĕне виçрĕ. Урлăшне виçме тытăнсан, лешĕ чăтаймарĕ, и-хи-хи-хик! терĕ те чарăна пĕлмесĕр ахăлтатма тытăнчĕ.

— Эс мĕн?— хăраса ӳкрĕ Лисук.

— Кăтăклатăн та ху,— терĕ сар çу пек ирĕлсе кайнă Мирун. — Качча тух-ха мана, Лисук. Татах кăтăклаттарăп.

Аптранипе, Лисук пĕрре шуралса, тепре хĕрелсе кайрĕ. Ларчĕ-ларчĕ те, Мирун çине пăхса, йăл кулчĕ.

— Эс шӳтлеместĕн-и, Мирун?— терĕ вăл.

— Мĕн шӳтлемелли. Тахçанах авланас килет,— пытармарĕ Маклашкин.

— Хăçан?— ыйтрĕ Лисук.

— А хăть ыран. Мана çавах,— терĕ Мирун.

— Тухатăп, Мирун. Тухатăп,— çепĕççĕн калаçрĕ Лисук. — Фермăна иртерех пыр паян. Сĕт ĕçтерĕп.

— Пыратăп çав,— савăнсах килĕшрĕ Мирун. — Сĕт ĕçме юрататăп эпĕ.

— Чим-ха,— шухăша кайнă пек пулчĕ Лисук. —Праские ăçта хурăн-ха эсĕ капла?

— А мĕн, хăй айăплă. Канăç памасть. Кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлеме лаша-им эп?— тавăрчĕ Мирун.

— Ну, юрĕ. Сăмах татрăмăр. Анчах кун пирки никама та ан кала,— терĕ те Лисук тухса кайрĕ.

Пĕччен юлсан, хĕпĕртенипе, пĕр çаврăм «Сербиянка» ташласа илчĕ Мирун. Çавăнпа та унăн савăнăçĕ мĕн тери пысăк пулнине эсĕ те, хаклă вулаканăм, туйса илтĕн пулĕ ĕнтĕ.

Фермăра юлашки репетици пулчĕ. Мирун çипуçĕ —таварнă кĕрĕк, кăвак çăматă, кашкăр хăлхипе сăмси—вăккурат чуха килчĕç. Сиккелерĕç-сиккелерĕç те ялти клубалла çул тытрĕç çамрăксем. Пĕр шит те Мулкачран юлас темерĕ Мирун.

Унччен кăшт маларах вара, кӳршĕ ачине Çитăра, хăйĕн Кутамасне клуб патне кӳлсе килме хушрĕ вăл. Мĕнле калас та, сых енне, пушар ан тухтăр тесе ăнлантарчĕ çакна.

Клубра Хĕл Мучи — Ухливан кĕтӳç ял халăхне кучченеçсем пачĕ. Ун хыççăн Купăс Куçми хуткупăсне тăсса ячĕ те — пуçланчĕ вара маскарад. Мирун-Кашкăр пĕрмаях Лисук-Мулкача ҳăваласа çӳрет, лешĕ тыттарасшăн мар, тарать те тарать. «Ну, погоди!»—тет Мирун. Халăх лах-лах-лах кулать.

Ташласан-ташласан, сиккелесе чăм-шыва ӳксен, çаврăса тытрĕ-тытрех вăл Мулкача. Тытрĕ те: «Атя, каяр ĕнтĕ, авланма вăхăт»,— тесе пăшăлтатрĕ уп хăлхинчен. Лешĕ турткалашмарĕ. Вара вĕсем, çын сисиччен, вăшт турĕç клуб алăкĕнчен.

Юлхав Кутамас, çĕнĕ çынсене лартса, ял тăрăх Мирунсен çурчĕ еннелле лĕпĕстетрĕ.

Амăшĕ, Сăпани аппа, хăй ĕçне тунă иккен. Сĕтел тулли — ĕçме-çиме. Сăра пичкерен тулса тăкăнать. Тăванĕ-пĕтенĕ те тахçанах пухăннă.

Пӳрте кĕрсенех, çĕнĕ çын кăмака хыçне тарса пытанчĕ, Мулкач хăлхисемпе сухалĕсене илсе пăрахрĕ те пуçĕ çине шурă пĕркенчĕк уртса ячĕ.

Сĕтел хушшине ларнă çĕре клубри яш-кĕрĕм килсе кĕчĕ.

— Йӳçĕ! Йӳçĕ!— тӳрех кăшкăрса ячĕç çамрăксем.

Çакăн чух кăшкăрсан, мĕн тумаллине лайăх пĕлет Мирун Маклашкин. Акă вăл ура çине тăчĕ, хăйĕн çĕнĕ арăмне те тăма хистерĕ.

— Йӳçĕ!— тепĕр хут кăшкăрчĕç çамрăксем.

Мирун Маклашкин Лисука ыталаса илчĕ, чуптăвас тесе, унăн пĕркенчĕкне сирчĕ.

— Анчăххи!— терĕ те çĕнĕ çын шурă пĕркенчĕкне сирсе пăрахрĕ.

Пĕтрĕ пуç! Мирунпа юнашар каллех Праски тăрать. Хаш! сывласа ячĕ туй халăхĕ. Питне-куçне чалăштарса пăрахрĕ Мирун.

Купăс Куçми çухалса каймарĕ.

— Йӳçĕ!— терĕ те вăл туш калама пуçларĕ.

Çав вăхăтра Праски Мируна ик питçăмартинчен тытрĕ те чап! тутарса чуптурĕ ун тутинчен.

— Мирунăм!— терĕ вăл çепĕççĕн. —Юратнă Мирунăм. Эсĕ мана пĕлтĕр кăçал Лисука юратнă пекех юрататтăнччĕ. Эпĕ çав Праскиех. Нимĕн чухлĕ те улшăнман. Хĕрхенсе килтĕм сан патна. Пĕрмай ыйхăпа супса, сарра кайĕ ку терĕм. Унтан тата этем хăйĕн шăмшакне вылятмасан, ĕç-сĕр пурăнсан, ватлăх чирне каять, тет. Ан ватăл, Мирунăм. Эсĕ вĕт çирĕм пиллĕкре кăна-ха...

Хăйне хĕрхеннине туйса илчĕ пулмалла Мирун. Унăн кӳпчесе кайнă питçăмартисем тăрăх кавăн тĕшши пек шултра куççуль шăпăртатса анчĕ.

# ПУРĂН, ЮРАТУ!

## 1

Каллех сисрĕ çакна Вĕçелис: ун хыçĕнче — çывăхра та, аякра та мар — самантлăха сывлама чарăнса, вăл тăрать. Ун çине çаврăнса пăхма юрамасть çамрăк хĕрарăмăн, çавăнпа вăл, чăх чĕпписене апат пама кукленнĕскер, çак вăхăта мĕнле те пулин ытларах та ытларах тăсма тăрăшать, сăсăлпа хутăштарнă çĕрулмине тирĕкрен ывăçĕ çине хурать те чечен сăмсаллă чĕрчунсене алăранах çитерет. Чăх чĕписем, пĕр-пĕринпе ăмăртса, ывăç тупанне таккаççĕ. Вĕçелиса çакă чуна таккананах туйăнать. Çук, çук, тем тесен те хыçалалла çаврăнса пăхма юрамасть унăн. Кирек мĕн чухлĕ ирттĕр вăхăт, вăл чăтĕ, савăтри çĕрулми пĕтсен те хăйне ĕçлĕ çын пек тытма пăрахмĕ. Урамри çын вара пуçне йăвашшăн çĕрелле усĕ те, хултуйине чĕриклеттерсе, каллех урампа утса кайĕ. Чылайччен хăлхара илтĕнсе тăрĕ çак хурлăхлă сасă.

Чăтас пулать.

Тўссе ирттересех пулать çак саманта.

Тĕклĕ уралла ырханкка автан, унталла-кунталла чупса çўресе хăй валли пĕр турам апат та тупаймасăр аптранăскер, хăюлланса, сĕмсĕрленсех пычĕ. Малтан вăл кăлăк чăххине панă çĕрулми турамне туртса илсе тарчĕ, вара, вĕçкĕннĕн пускаласа, Вĕçелис патне çывхарчĕ те, ун аллинчи тирĕк çине вăрă-хурахла хăпарса кайса, мĕнпур апата çĕре такса ячĕ.

«Ах, путсĕр!» — чутах кăшкăрса ямарĕ Вĕçелис. Тăкăннă çĕрулминеваскамасăр пуçтарса каллех тирĕке хучĕ вăл чĕпсене паçăрхи пекех ывăçран çитерме пуçларĕ. «Ах, путсĕр!» — тепĕр хут аса илчĕ хĕрарăм хăйĕн сăмахĕсене. Вара хăйĕнчен хăй хăраса ўкрĕ. «Илтмерĕ-ши? Хăй çине илмерĕ-ши çав сăмаха? Анчах вăл та перре сĕмсĕрленес пулсан çакăн пек? Вăл та куллен хăюлланать авă. Вăл та хапха патне киле-киле тăракан пулчĕ. Асăрханса, васкамасăр пĕр утăм, ик утăм турĕ Вĕçелис патнелле. Иккĕшин

хушшинче ёнтё темле курăнман çип хиврен карăнса тăрать. Виççĕмĕш утăмне тăвас пулсан?

Урамри çын ассăн сывласа ярсан, Вĕçелис туйрĕ: «Пуçне усрĕ. Каять эппин». Чăн та, тепĕр самантран хултуйи чĕриклетсе илчĕ, хăрах ура йывăррăн малалла ярса пусни илтĕнчĕ. «Каять». Анчах темшĕн-çке çакă паян çăмăллăх кӳмерĕ Вĕçелиса. Хултуйи чĕриклетни аякка-аякка кайса пычĕ. Вĕçелис, унччен пек, хапха патне пырса куçĕпе ăсатмарĕ аманнă çынна. Вырăнтах ларчĕ. Вăйĕ çитмерĕ ура çине тăма.

Аякран пăхсан, çамрăк хĕрарăма йывăр шухăш кил-картиваррине пусарса лартнăн туйăннă пулĕччĕ. Урамри арçын, уксахла-уксахла, аслă урамран тăкăрлăка пăрăннă ёнтĕ. Вĕçелис умĕнчи чĕпсем, пур пек апата çисе ярса, тĕрлĕ çĕре саланнă. Хăй вăл çаплах хускалмасăр ларать-ха.

Çӳлерехрен, хăйăр илекен ту çинчен сăнас пулсан, ял алă тупанĕ çинчи пек тухса тăрĕччĕ. Аслă урамăн икĕ енĕпе — хăшĕ пĕчĕкрех, хăшĕ пысăкрах — çуртсем, хуралтăсем, пахчасем. Кашни виçĕ-тăватă пахчара — пĕрер мунча. Аслă урам варринче — ёлĕкрех Мăрса Палюкĕ пурăннă тимĕр витнĕ çуртра — колхоз правленийĕ. Ана хирĕç, урамăн тепĕр енче, тăррине илсе пăрахнă чиркӳре — ял клубе. Ял хĕрринче вара — ферма çурчĕсем. Тĕрлĕ çĕрте ушкăнăн-ушкăнăн ватă йăмрасем çилпе кашлаççĕ.

Ял варрипе кукăрăла-кукăрăла, çаврăна-çаврăна Çарăмсан юхать. Акă мĕн кивелместь, акă мĕн ватăлмасть нихçан та! Хĕл çитсен Çарăмсан шăнса ларать, çуркунне шатăртатса тапранать те, пăтранса, çырантан тухса, хăй çулĕпе анăçалла чупать, çу çитсен ун шывĕ тăрăлать, хĕвел çинче кĕленче пек йăлтăртатса выртать, кĕркунне çырма тĕксĕмленет, çӳçенсе илсе, каллех пăрпа витĕнме пуçтарăнать. Юнашар ӳсекен ешĕл хăвалăхпа хăмăшлăх юханшывăн ĕмĕрхи çамрăклăхне, унра асамлă вăйпа чăрсăрлăх паян кун та питĕ хăватлине палăртаççĕ.

Ку вăл — Виççырма ялĕ.

Хăйăр илекен тăвăн тепĕр енче — вак чуллă, кĕллĕ çĕр. Пĕр-икĕ çухрăмра хура вăрман кичеммĕн курăнса ларать. Вăрман леш енче — ялсемпе хуласем. Виççырмара та, вăрман леш енче те пурнăç вĕрет. Тăварлă, тертлĕ, пушаллă, куççуллĕ, çапах çăлкуç пек çуттăн тапса тăракан чĕрĕ пурнăç.

Таçта, Тăван çĕршыв тулашĕнче, вăрçă кĕрлет.

Виçĕ çул ёнтĕ чарăна пĕлмесĕр алхасать вăл.

Пĕр суран тӳрленет те, тепри хускалать. Ытти, савăнăçли, паян-ыран килес çук. Анчах вăхăт иртет те иртет,

кĕтетĕн, тархасласа йыхăратăн хаш сывласа ямалли çав ырă куна — вăл тарать те тарать санран, унтан та ытларах çĕнĕ асап, çĕнĕ арпашу, çĕнĕ ăшхыппи сике-сике тухать пурнăçра. Чăтмалла. Пурăнма çуралтăн пулсан, тӳсесех пулать.

2

Миçе хутчен иккĕленмен-ши Антун: хăçан, хăш самантра йăнăш турĕ вăл? Пĕччен марччĕ-çке, хăйпе пĕрле мĕн чухлĕ салтак чупатчĕ, анчах такăнасса, ав, Иванпа иккĕш кăна такăнчĕç вĕсем. Тен, малалла тимлĕрех пăхмалла пулнă? Тен, хăй патне вĕçекен хурçă таткине асăрхама май килнĕ? Пăхман çав Антун, асăрхаман. Командир приказĕ ăна малалла ыткăнма хистенĕ. Вăл васканă. Тăшман пĕртен-пĕр шухăшпа — таптас, çĕмĕрес, вĕлерес шухăшпа юлашки çапăçăва çĕкленни куçкĕретех паллăччĕ пулсан, мĕнле те пулин хӳтлĕх шырамаллаччĕ-и Антунăн? Хăйĕнчен çирĕм-вăтăр утăмра кăна чупакан фашистсене курса тăнă чухне кашни юн тымарĕ курайманлăхпа, тарăхупа тулнăччĕ те, çав çынçиенсене куçпа ăсатса ямаллаччĕ-и унăн? Çук, хăйне хăй айăплама пултараймасть Антун! Юлташĕсем те айăплаймаççĕ ăна. Тӳррĕн пăхнă вăл вилĕм куçĕнчен. Хăраман та, чакман та.

Анчах çак асаилӳ те çăмăллăх кӳреймест ăна. Курать Антун: Виççырмара вăл вăрçăран таврăннă пĕртен-пĕр салтак. Хăй ир таврăннăшăн ялти кашни çын — упăшкипе е ывăлне фронта ăсатнă кашни хĕрарăм е ватă тарăхса та сиввĕн пăхнă пек туйăнать ăна. «Эсĕ килнĕ, эсĕ уксах пулин те чĕрĕ, пирĕннисем ăçта?» — тет пек кашнин сăн-пичĕ. Кунта çуралса ӳснĕ пулсанах ун пек пăхмастчĕç пулĕ те — ют çын-çке Антун Виççырмашăн. Ыттисем кăна мар, Вĕçелис куçĕнче те — хăйĕн чи çывăх юлташĕн арăмĕн куçĕнче те ăшă туйăм çиçни курăнмасть-мĕн. «Юрĕ, килтĕн, хыпар пĕлтерсе «савăнтартăн» тата мĕн сулланса çӳретĕн ял тăрăх»,— тенине систернĕ пек, çаврăнса та пăхасшăн мар вăл Антун çине. Пĕр Микулай пичче çеç хăваламасть, вăл кăна ăнланать салтака.

Утать те утать Антун Виççырма урамĕпе. Хултуйи çине пĕтĕм кĕлеткипе тĕршĕнет те сылтăм урине йывăррăн малалла куçара-куçара пырать. Пĕр виç уйăх каялла телĕкре те тĕлленменччĕ вăл хăçан та пулсан çак ялта çӳрессе, ун ятне те Иванран кăна илтнĕччĕ, халĕ вара кашни урама, кашни кĕтесе хăйĕн пилĕк пӳрнине пĕлнĕ пек вĕренсе çитрĕ. Микулай пичче пӳртĕнчен тухать те тăкăрлăк-

па утать Антун, унтан аслă урам тăрăх анаталла анса, Вĕçелис пурăнакан çурт умĕнче сывлăш çавăрать те Çарăмсан хĕррине çул тытать. Ялĕ, вăйпитти арçынсем çуккипе, юхăнса кайнă пулин те, хăй евĕрлĕ хитре. Пысăк ту айккипе Çарăмсан çуталса выртни, унăн пĕр енĕпе хăвасем кашласа ӳсни уйрăмах илемлетет ăна. Кунта, юханшыв шурă хĕрлĕ вак чул çине тухса ăшăхланнă çĕрте, салтакăн хăй кăмăлланă вырăн пур: купăстапа сухан лартса хăварнă пахчан вĕрлĕк карти çумне таянать те вăл чикаркка пĕтĕрет, тăрать вара шыв шăнкăртатса юхнине сăнаса. Тепĕр чух кунта вĕт-шакăр ачасем пулă тытма анаççĕ, йĕм пĕççисене тавăрса шыва кĕрсе тăраççĕ те пулла ăманпа вăлтма пикенеççĕ. Вĕсене курсан, чĕри пушшех ыратса каять Антунăн, тăнлавĕсене темле вăй хыттăн хĕсме, çатăрлама пуçлать.

Çăмăл мар ĕнерхи салтака. Кашни кун тенĕ пекех ун куçĕ умне арăмĕпе ывăлĕ туха-туха тăраççĕ. «Эс пурăнатăп... эпир çук, акă»,— теççĕ пек вĕсем те. Çак ялти кашни утăмрах хăй çинчен Иван аса илтерет пек. «Ан пăрах Вĕçелиса, пулăш, хӳтĕле ăна»,— тет пек Антуна фронтра выртса юлнă юлташĕ. Анчах ĕмĕрлĕхех хăйĕнчен уйрăлса кайнă çывăх çыннисене нимĕнпе те пулăшма пултараймасть Антун. Вăхăт шăвать — чĕре асапĕ пĕтмест. Хăй пуçĕнчен арăмĕпе ывăлне хăваласа яраймасть вăл, Вĕçелиса вара нимпе те пулăшма пĕлеймерĕ-ха халиччен. Тем тесен те иртерех килчĕ пулĕ Антун Виççырмана, тата пĕр-ик çул кĕтсен аванрах пулатчĕ пуль, вăхăт сипленĕ пулĕччĕ чĕре суранне — хăйăнне те, Вĕçелисăнне те. Мĕн тăвăн, урăх çĕрте те кĕтсе тăракан çук ăна, килчĕ пулсан, вырнаçмалла — ялта учительсем çитмеççĕ, вырнаçмалла та, тем те чăтса ирттернĕ çамрăк хĕрарăма май пур таран пулăшма тăрăшмалла.

## 3

Кун хыççăн кун иртнĕçемĕн ытларах та ытларах канăçсăрланчĕ Вĕçелис. Аманнă çын ялтан кайма васкамарĕха, аслă урампа куллен икшер е виççер хут ута-ута иртрĕ. Виççырмара Вĕçелис пĕччен кăна пурăннă пулсан, тем марччĕ пулĕ, анчах çынсем-çке кашни килĕрех. Туяççĕ, сисеççĕ вĕсем Вĕçелиспа хултуйиллĕ çын хушшинче ăнланмалла мар çыхăну пуррине. Пĕри малашне мĕн пуласса чăтаймасăр кĕтет пуль, тепри Вĕçелиса аскăн хĕрарăм вырăнне хурать пуль, виççĕмĕшĕ, тен, тĕрĕсех ăнланать. Темле çав. Тĕрĕс ăнланаять-ши кам та пулин? Яла аманнă

çын килсе кĕнĕренпе Вĕçелис чĕринче мĕн пулса иртни уншăн хăйшĕн те пĕтĕмпех паллă мар-ха. Ăнланма çук-хутшăну мĕнпе вĕçленессе пĕлмест Вĕçелис, вăл тем кĕтет те кĕтет, ыранхи кун уçăмлăрах пуласса шанать.

Урамра вара хултуйи чĕриклетет те чĕриклетет. Ĕнтĕ пĕр-икĕ хутчен те куçа-куçăн тĕл пулчĕç вĕсем. Аманнă çыннăн ырă сăн-сăпачĕ, çамки çине кăтраланса анакан сарăхнă çÿç пайăркисем, хĕвелпе шупкалнă гимнастерки, сылтăм ури вырăнне чĕркуççи таран йăлтăртатса, çуталса кайнă йывăç татки, хул айĕнче, ан ыраттартăр тесе, çĕтĕкпе чĕркесе майлаштарнă хултуйи — çав-çавах пĕртте улшăнмасть çак çын, çав-çавах нимĕн те улăштармасть. Мĕн улăштарайтăр-ха ĕнтĕ, хăйпе пĕрле салтак кутамккине кăна çĕклесе килнĕ пулсан? Улăштармалăх кĕпе-йĕмĕ пур-ши тата? Пушарник патĕнче, пĕлтĕр арăмĕсĕр тăрса юлнă Микулай пичче патĕнче, пурăнать вăл. Мĕнле çукалать-ши пур пек кĕпе-йĕмне, мĕн пĕçерсе çиет-ши салтак? Эх, чунсăрла хăтланать пулĕ те Вĕçелис...

Çак шухăшсемпе ларчĕ вăл Мĕтри кĕпине сапласа. Мĕтри хăй, тулă пуссинче яра куна çум çумласа ĕшеннĕскер, апат çисенех тутлăн çывăрса кайрĕ. Пĕрре ассăн сывларĕ Вĕçелис, тепре, кĕпе саплама пăрахсах, хăйпе хăй пăшăлтатрĕ. Антун çак çурта пĕрремĕш хут мĕнле килсе кĕнине, унăн тăварлă, йÿçĕ, хăрушă сăмахĕсене аса илчĕ вăл. Вара чăтаймарĕ, пуçне чĕркуççи çине хучĕ те пĕтĕм кĕлеткипе чĕтреме, кăмăла ирĕке ярса йĕме тытăнчĕ. «Эх, Иванăм, Иванăм, мĕн туса хутăн-ха капла? Чуну пурччĕ-и санăн. Юлашки самантра та пулин эп санпа çеç пурăнма пултарни çинчен шухăшларăн-и? Çак нушаран, çак асапран санпа пĕрле кăна тухма май пуррине пĕлтĕн-ши эсĕ? Çапла ĕнтĕ, куçу ĕмĕрлĕхех хупăнас умĕн те эс ман çинчен шухăшланă. Эс хăвăн юлташна чĕнсе илнĕ те ман çинчен каласа панă. Эсĕ унран пулăшу ыйтнă. Анчах ун пек пулăшăва йышăнма мана çав тери йывăр пуласса шутланăши эс? Тен, эсĕ, хăвна ашшĕ тесе хисепленĕскер, манăн шăпа пĕр хăвăнтан кăна килет тесе шухăшланă пулĕ. Тен, вилĕм хăвăрт çывхарнине сиссе, сăмахусене васкарах каларăн пулĕ. Васканă эс, Иван, питĕ васканă. Васкаман пулсан, эс ман пата çыру çырса ярăттăн. Эс шухăшласа пăхма сĕннĕ пулăттăн. Унтан тата ман хамăн та чун пуррине аса илĕттĕн. «Çакăн пирки мĕн шухăшлатăн, Вĕçелис?» — тейĕттĕн эс. Ăнланатăп, усал тăвас тесе мар, манпа ĕмĕрлĕхе уйрăлнă чух чуну сивĕннине палăртас тесе те мар тунă-ха эс ку ĕçе. Çапах та, Иван, çапах та... сывăх çын пек, упăшка пек туман эсĕ. Халĕ, акă, салтак

асапланать. Пĕлетĕп, виçĕ çул хушшинче санăн унран çывăх юлташ та пулман. Шел ăна, питĕ шел. Çак тĕнчере вăл пĕр-пĕччен тăрса юлнă. Ăна та шанчăклă юлташ кирлĕ. Пултараймастăп, Иванăм! Мĕнле-ха капла, эсĕ, пĕртен-пĕр эсĕ пурччĕ ман пурнăçра. Малашне вара... Пултараймастăп, Иванăм!»

Сасартăк ыйхăран вăраннă Мĕтри сасси илтĕнчĕ.

— Инке, инкем, лăплан, тархасшăн,— терĕ вăл, хăраса ӳкнĕскер. — Çав урасăр салтак каллех кӳрентерчĕ пуль-ха. Эп ăна калатăп. Эп ăна ыранах калатăп. Тухса кайтăр вăл пирĕн ялтăн.

Çак сăмахсене илтсен, Вĕçелис шартах сикрĕ. Мĕтри кравачĕ патне майĕпен утса пычĕ те, ача куçĕнчен пăхса, çапла063 каларĕ:

— Ун пек ан ту, Мĕтри, ырă çын вăл. Пирĕн пекех асаплă, нушаллă çын. Вăл айăплă мар.

Чылайччен çывăраймасăр выртрĕ Вĕçелис.

Çур çĕр çитеспе çил тухрĕ пулмалла та, чӳрече кантăкне пилеш тураттисем лексе кăтăртаттарма пуçларĕç. Кăшт тăрсан, çиçĕм йăлтăртатса илчĕ, аслатин инçе сасси вăйсăррăн илтĕнчĕ. Каярах пĕр хушă вĕтĕ çумăр чăшăлтатрĕ.

Автансем авăтрĕç.

Кантăкăн çӳлти куçĕнче каллех çăлтăрсем выляма пуçларĕç.

...Ак çак çумăр хыççăнхи пек йăлтăртататчĕ пуль çав ĕнтĕ Ваçинкке çаранĕ. Эрне ытла лӳшкетрĕ ун чухне. Курăкĕ вара пилĕк таранах ӳснĕччĕ. «Хĕвел курăнчĕ пулсан, пуçлар, кайран тем пуласси, çăвĕпех йĕпе-сапа тăчĕ-тĕк, тур панине те илеймĕн»,— терĕç ял çыннисем. Лавсем çине темиçе кун пурăнмалăх тĕрлĕ ăпăр-тапăр тиерĕç те, шавлăн калаçа-калаçа, Ваçинкке çаранне утă çулма тухса кайрĕç.

Çанталăкĕ сасартăк уяртрĕ. Хĕвел, тин вăраннă çамрăк хĕр чӳрече каррине тирпейлĕн сирсе уçнă пек, явăнса шăвакан шурă пĕлĕтсене майĕпен унталла-кунталла хăваласа ячĕ. Кăнтăрла çитиччен чăшăл кайнă çаран пăсланса-мăкăрланса тăчĕ.

Куçа шартса яракан, пурне те ӳсĕртекен, чуна кăтăклакан çутă, асамлă, ырă кунсем пуçланчĕç.

Вунсаккăртаччĕ Вĕçелис.

Ун тавра хăй ачаран пĕлекен ял çыннисемччĕ, ешĕл çаранпа сулхăн кӳрекен çирĕк йывăççиччĕ, чечекчĕ, пыл хурчĕччĕ, лĕпĕшчĕ. Ун пуçĕнче хăватлă çунат паракан, паккус вĕçне çитсен канма ларма та мантаракан çутă шухăшсемччĕ.

Иванччĕ унпа юнашар.

Пĕрне-пĕри асăрхасси те, пуçласа сăмах хушасси те ытла ăнсăртран пулса тухрĕ вĕсен. Тĕрĕс ĕнтĕ, унччен те курман марччĕ-ха Ивана, пĕр ялта епле курмăн? Анчах çав кун... Халĕ аса илет те ăна Вĕçелис, пĕрре вăтанса, тепре чăтма çук тарăхса каfive.

Ухунькка вăрманне çырла татма кайнăччĕ вĕсем ушкăнпа. Клавье мăнаккăшĕ хăйĕн икĕ хĕрне, Верукпа Праские тата Вĕçелиса никам пырса тĕкĕнмен ĕшнесем тăрăх илсе çӳрерĕ. Çырли, чăнах та, нумайччĕ ĕнтĕ. Пĕр ĕшнинче питĕ хытă савăнчĕ Вĕçелис: пуç пӳрне пысăкăш хĕп-хĕрлĕ çĕр çырлине татса пĕтерме çук. Нумай вăхăт иртрĕ-и, сахал-и, пуракĕ тăп-тулли пулчĕ те ун, вăл пуçне çеклерĕ, ниçталла кайма аптраса тăчĕ. Темиçе хут кăшкăрса пăхрĕ, анчах хăй сассисĕр пуçне урăх сасă илсе килмерĕ вăрман. Чылайччен аташса çӳрерĕ вара Вĕçелис. Хĕвел анаспа кăна пырса тухрĕ Çарăмсан хĕррине. Çыран тăрăх тăсăлакан урапа çулĕ Виççырмана илсе кайнине тавçăрсан, лăштах пулчĕ вунсаккăрти хĕр. Вăл тӳрех шыв патне васкарĕ, кăштах канса илнĕ хыççăн çăвăнса уçăлма шут тытрĕ. Тулли пуракне хăва тĕми айне лартрĕ вăл, кĕпине хывса туратран çакса хучĕ. Вара, çӳçене-çӳçене, Çарăмсана кĕрсе кайрĕ.

Чылай шăмпăртатрĕ пулĕ çав Вĕçелис чуна уçăлтаракан кантăк пек таса шывра, такамран хăрасси е вăтанасси пуçра та пулмарĕ унăн, анчах «уй куçлă, вăрман хăлхаллă» тесе ахаль каламан-мĕн ваттисем, шывран тухам тесе шухăшланă кăначчĕ, çав самантра çыран хĕрринче самăртарах пĕр арçын хăй çинчен куç илмесĕр пăхса тăнине асăрхарĕ те сасартăках тăр-тăр чĕтреме пуçларĕ. Чим, Мăрса Мишурĕ вĕт ку. Мĕн туса тăрать-ха, эппин, кунта?

Шывран йăпăр-япăр тухса, кĕпине тăхăнма чупасшăнччĕ Вĕçелис, çав самантра Мăрса Мишурĕ хĕрлĕ çыртан йывăррăн сиксе анчĕ те ун çулне пӳлсе хучĕ. Кăкăрĕсене аллипе хупларĕ Вĕçелис, Мишур куçĕнчен тархасласа пăхрĕ: ан тĕкĕн, туршăн та, ан тĕкĕн! Анчах лешĕ, куçĕсене йăлтăртаттарса, ним уямасăр çывхарчĕ те çывхарчĕ ун патнелле. Вĕçелис вара, çари! çухăрса, каллех шыва сикрĕ.

— Кай кунтан! Кай, тархасшăн!— шывпа чыхăна-чыхăна тархасларĕ вăл Мăрса Мишурне.

— Тух,— терĕ арçын. —Тĕкĕнместĕп. Шыва путăн тата.

— Путăпин. Сан мĕн ĕç? Халех куçран тасал. Вара тухатăп,— хăюланчĕ Вĕçелис.

— Эх; Вĕçелис, Вĕçелис. Юрататăп эп сана. Пасăр, вăр-

манта, пирĕн утар ҫумĕнченех иртсе кайрăн эсĕ. Сан хыҫ-ҫăн килтĕм.

— Арăмна пăрахсах пуль. Намăссăр эсĕ! Ак тепре кăш-кăратăп та, тӳрех чупса килет.

— Уйрăлатăп эп унран. Сан пирки уйрăлатăп. Ан турт-калан, Вĕҫелис. Ан вĕҫерт телейне... Кайран туй тăвăпăр. Алă ҫинче ҫĕклесе ҫӳрĕп.

— Кай, тетĕп. Кăшкăратăп. Кăшкăратăп. Кай! А-и-и-и--и!

Ҫакă шиклентерчĕ-ши Мăрса Мишурне е паянхи ка-лаҫуран нимĕн те тухас ҫук тесе шутларĕ-ши, васкамасăр тăчĕ те мĕнле килнĕ ҫавăн пекех хăвăрттăн хăвасем хуш-шине кĕрсе кайса ҫухалчĕ.

Ҫыран хĕрне Иван хашкаса чупса ҫитнĕ ҫĕре Вĕҫелис, кĕпине тăхăнса, сывлăш ҫавăрма ĕлкĕрнĕччĕ ĕнтĕ.

— Мĕн пулчĕ?— ыйтрĕ Иван. — Кам кăшкăрчĕ кунта? Эп вутă хума килтĕм, такам хурах кăшкăрма пуҫларĕ.

Вĕҫелис пĕр вăхăт ним калама аптраса тăчĕ. Ҫапах тавҫăрчĕ, кунта пулни-иртни ҫинчен ҫынна каласа парсан, ялта тĕрлĕ сăмах сарăлĕ, пĕлсе пĕтер вара кайран кам тĕ-рĕс, кам айăплă.

— Эпĕ,— терĕ вăл Ивана. — Ҫакăнта, тĕм хушшине, ҫĕ-лен кĕрсе кайрĕ.

— Асăрханмалла пулнă. Сăхнă пулсан?— Вĕҫелиса хĕр-хенсе калаҫрĕ Иван.

— Сăхатчĕ ĕнтĕ. Юрать-ха, кăшкăртăм,— терĕ Вĕҫелис.

Ҫапла куҫа-куҫăн тĕл пулчĕҫ вĕсем чи малтан. Ҫапла утса кайрĕҫ Виҫҫырма еннелле.

Иван, Иван... Санран уйрăлнăранпа темиҫе ҫул та ирт-рĕ ĕнтĕ, ĕмĕр-ĕмĕр ялтăртатакан парнесем пек, асаилӳсем ҫеҫ тăраҫҫĕ куҫ умĕнче. Парнесем темелле-ши вĕсене е них-ҫан тӳрленми сурансем тесен тĕрĕсрех пулать-ши?

Чун ăшшине, ҫывăх ҫын ăшшине кăмăл туличчен ку-райманччĕ ҫав Вĕҫелис. Амăшĕ унăн выҫлăх ҫул ҫĕре кĕчĕ. Ашшĕ вара, вăрҫăран таврăннă хăрах уралла сал-так, иккĕри хĕрачине ҫавăтса, ялтан яла ыйткалама тухса кайрĕ. Астăваймасть ҫав вăхăта Вĕҫелис. Тен, ҫакă аван та пулĕ. Астунă пулсан, унăн куҫĕ умне кăрлачăн пĕр шарт-лама сивĕ кунĕ, вăрманти ансăр ҫул тăрăх вăйран кайнă икĕ ҫын—Вĕҫелиспа ашшĕ — хашкаса утни, вĕсене ла-шапа килекен ырă кăмăллă тутар хăваласа ҫитсе иккек-рен ҫăлни, анчах ҫакăншăн савăнма иртерех пулни, кай-сан-кайсан, лаша, тулхăрса илсе, тăп! чарăнса тăни, выҫ кашкăрсем улани, лаша, ăнсăртран ĕрĕхсе, Вĕҫелис ашшĕ-не хытă ҫул ҫине ӳкерсе хăварни, каҫпулттипе вара тутар пиччепе Вĕҫелис паллă мар яла пырса кĕни туха-туха

тăнă пулĕччĕ. Çавăн чух çухатрĕ те вăл хăйĕн чи çывăх çыннисене (ашшĕн йывăç ури кăна тăрса юлнă тетчĕç каярах). Ашшĕ-амăшĕн ăшши мĕн иккенне пĕлеймерĕ текех. Кĕркуннеччен тутар пичче патĕнчех пурăнчĕ хĕрача. Унтан вара амăшĕн аппăшĕ, Клавье мăнаккăшĕ, шыраса тупрĕ ăна, хăй патне, тăван яла, илсе кайрĕ.

Çупăрлама, ачашлама вăхăт пулнă-и мăнаккăшĕн —хăйĕн те çичĕ ача, пĕри тепринчен пĕчĕкрех, тăрантармалла, тумлантармалла, ăшăра тытмалла вĕсене, апла-тăк кунĕнçĕрĕн хирте е вăрманта пулмалла, упăшкипе пĕр тан ĕçлемелле.

«Çапах та тав сире, çынсем, тăвансем, пăрахмарăр мана, инкек çулсенче пĕтме памарăр»,— тет халĕ Вĕçелис, питçăмарти çинчи куççульне шăла-шăла илсе.

Асаилў, асаилў...

—...Качча тух мана, Вĕçелис. Сана чĕререн юрататăп эпĕ,— куçран ăшшăн та çывăххăн пăхса каларĕ Иван Вĕçелиса Таркăн çăлĕ патĕнче.

Тухăп та, тухмăп та тееймерĕ Вĕçелис. Хĕр сăпайлăхĕ çинчен манас темерĕ вăл. «Мĕн тăвăн-ха эсĕ манпа, тăлăх-туратпа, выртса тăма тўшек-минтер тăваймарăм, пĕртен-пĕр кĕпене усрамашкăн арчам çук»,— тесшĕн пулчĕ вăл Ивана. Анчах вăтанса пăхса илчĕ те ун çине — Иванĕ хăй те чухăн хресчен килĕнче çуралнă, тўшек-минтер е арча илĕртет-и ăна,— çук-çке, çук, хăй кăмăллакан, хăйне ăнланакан пурнăç юлташĕ пултăр ун валли,— калас сăмахне те калаймарĕ Вĕçелис.

«Ай-уй, ир пулать-çке санпа пуплесе, çывăрма вăхăт, кайса канар-ха хĕвел тухиччен»,— терĕ çеç хĕр.

Анчах Иванĕ хăй арçын пулнине кăтартасах терĕ пулмалла, Вĕçелис умне тăчĕ те малалла утма памарĕ ăна, ун куçĕнчен пăхрĕ.

« Мĕнле-ха капла,— шухăшларĕ хĕр,— юрату пирки нихăçан та калаçман эпир. Ак халь ун пирки пĕр сăмах каларăн та тўрех качча тухма ыйтрăн». Çапла шухăшларĕ те чĕри савăнăçпа тулнине сисрĕ. Сисрĕ те, Иван çине тўррĕн пăхрĕ, пĕр утăм, ик утăм турĕ ун çывăхнелле, вара, пĕр именсе-ютшăнса тăмасăр, пуçне ун кăкăрĕ çине хучĕ. Ыталаса илчĕ ăна Иван, Вĕçелис питçăмартисене ик аллипе ачашшăн çупăрларĕ, çилпе кушăрканă тутинчен чуптуса илчĕ.

Кăвак хуппи ялтăраса кайрĕ тĕнче çийĕн.

Кайăксем чĕвĕлтетрĕç таврара пĕр чарăнмасăр.

Вĕри, вĕри пулса кайрĕ Вĕçелис чĕринче.

Чуптурĕ.

Хăюсăррăн, çепĕççĕн чуптурĕ.

Юрататъ, эппин!

«Тĕнчеçĕм, çутă тĕнчем! Тавах сана, инкек кăна ямарăн иккен ман тĕле, мĕн пысăкăш телей йăтăнса анчĕ акă хăй тĕллĕнех! Çунăр, çăлтăрсем, юрлăр, кайăксем, лайăх та ырă мана кĕçĕрхи çак ăшă каç. Илсе кай мана, Иван, кирек ăçта — тĕнче хĕрне çитиччене илсе кай мана, эп юлмăп, эпĕ санăн пĕртен-пĕр юлташу, чи шанчăклă тусу пулăп. Халăм çитмест санран юлмашкăн. Кăтра Иванăм, сарă Иванăм, пысăк та тĕреклĕ Иванăм, илсе кай, ĕмĕр-ĕмĕр эп санăн пулăп, тем пулсан та уйрăлмăп, сивĕнмĕп санран...»— пĕр хăй çеç илтмелле чарăнмасăр пăшăлтатрĕ Вĕçелис.

Туйĕ вĕсен кĕркунне, тырпул пухса кĕртсен, пулса иртрĕ.

Сурăх тирĕнчен çĕлетнĕ кĕрĕкне тавăрса тăхăннă Купăс Куçми чăм-шыва ўксе купăс каланине, Клавье мăнаккăшĕ чупсах туй халăхне сăра ĕçтерсе çўренине, Иванăн шăллĕ — пĕчĕк Мĕтри хăйĕн тантăшĕсемпе туй ташши-юррине сентре çинчен сăнаса выртнине, хăй вара шурă пĕркенчĕк айĕнчен Иван çине вăрттăн-вăрттăн пăхкаласа ларнине питĕ лайăх астăвать Вĕçелис. Астăвать кăна мар, часчасах аса илет çав сенкер тĕлĕк пек тăрса юлнă куна. Вăхăт иртет, анчах çав сенкерлĕх тĕксĕмленмест, вăл халĕ те кашни палăрăмĕ-хусканăвĕ таранччен уççăн курăнать.

Хĕл иртрĕ. Çуркунне çитрĕ.

Пĕр виçĕ кун çырантан тухса, пĕтĕрĕнсе-çаврăнса юхнă Çарăмсан каллех хăй картне ларчĕ, çĕмĕртлĕх шурă шупăр уртрĕ те ăна майĕпен сирсе пăрахрĕ.

Çу пуçланчĕ.

Ашшĕ-амăшĕн пўрчĕ пĕчĕкрехчĕ çав. «Çĕнĕ çурт çавăрăпăр»,— терĕ Иван. Шыв-шур лăплансанах çав шухăшпа унта-кунта чупкалама пуçларĕ вăл.

Хавхаланса, çунатланса пурăнчĕ Вĕçелис. Акă вĕсен те ялти ятлă çынсенни пек çĕнĕ пўрт пулĕ, тырри-пулли сахалах мар-ха, ашшĕ-амăш килĕнче выльăх-чĕрлĕх те картиш туллиех. «Пурте йĕркеллех, пурте çынсенни пек пулĕ, тăванăм»,— çапла шухăшласа, ăшшăн ăсатса яратчĕ, ăшшăн кĕтсе илетчĕ вăл Ивана.

Вăйлă та пултаруллăччĕ унăн упăшки. Чăн-чăн хресчен юнĕ, çĕр çыннин юнĕ вылятчĕ ун ўт-пĕвĕнче. Тул çутăлнăçутăлманах сиксе тăратчĕ те вăл, пуртă-пăчкă е кĕреçе илсе, Тукас вĕçне, пулас çурт вырăнне, васкатчĕ. Вĕçелис ĕне сăватчĕ, кĕтў хăвалатчĕ, унтан, упăшки валли сĕт-турăхпа çăкăр пуçтаркаласа, ун патне чупатчĕ. Колхоз ĕçне

кайиччен пӗр-икӗ сехет хушши никӗс вырӑнне хатӗрлесе ап-паланатчӗҫ. вӗсем. Ӗҫрен таврӑнсан та ӗшенни-ывӑннине туймастчӗҫ, каллех пулас ҫурт патнелле ҫул тытатчӗҫ.

Хаваслӑх ҫиҫетчӗ Иван питӗнче. «Ак кунта,—ӑнланта-ратчӗ вӑл Вӗҫелиса,— ҫурт ҫумӗнче, эпир санпа кӗлет тӑ-вӑпӑр, ак ҫакӑнта, кӗлетпе юнашар, карта тытӑпӑр та сад ӗрчетме пуҫлӑпӑр. Ан тив, ҫын пахчине ан кӗччӗр пирӗн ачасем, панулмине хамӑр садранах татса ҫиччӗр».

Именсе йӑл кулатчӗ вара Вӗҫелис.

Ҫураки иртсен, колхоз вӗсене, вунсакӑр лаша уйӑрса, пӗрене турттарса пачӗ.

Эх, епле кӗрлерӗҫ ҫав ҫул нимесем! Пӗрене турттарса килсен, тепӗр эрнерен пӳрт пурама пуҫларӗҫ арҫынсем. Хӗрарӑмсем, юрла-юрла, шурта мӑк кӑларчӗҫ.

Сӑрине малтанах ҫителӗклӗ хатӗрлесе хунӑччӗ Вӗҫе-лис. Пура пураса пӗтерчӗҫ, мӑк типсе ҫитрӗ те ҫурт туса лартрӗҫ, кӑмака ҫавӑрчӗҫ ялйышпа,— шӑкӑл-шӑкӑл калаҫ-рӗҫ, шӳт турӗҫ, юрӑ юрларӗҫ. Мӗнле хитре, мӗнле хӳхӗм юрӑсем юхрӗҫ ял ҫийӗн!

Акӑшӗсем акӑш, йӑви мамӑк,
Епле акӑш тесе калас мар?
Тӑванӗсем лайӑх, чӗлхи ҫемҫе,
**Мӗншӗн тӑван тесе калас мар?**
Ӗҫер-ха, ҫиер-ха —
Пурте хамӑр тӑвансем,
Ют ҫынсем мар,
Ют ҫынсем мар...

Астӑвать Вӗҫелис, чупса, хашкаса, ҫӗнӗ сӗтел ҫине ӗҫме-ҫиме пуҫтаратчӗ те вӑл, самантлӑха та пулин Иван ҫумне пырса ларма май тупатчӗ. Пӗтӗм кӗреке вӗсем ҫинчен куҫ илмесӗр юрлатчӗ вара. Пӗрре ҫав юрра сӑмах вылятмалӑх ӑшӑнса ҫитнӗ Тимук татрӗ.

— Эх, тӑванӑмсем,— терӗ вӑл, ура ҫине яшт сиксе тӑр-са,— пӗрре пурӑнатпӑр ҫак тӗнчере,— унтан, хӑй питӗ ну-май ӑнланнине кӑтартас тесе, пуҫне силлесе, янаххине чӗт-ретсе илчӗ те: — Мӗн тери пурӑнма лайӑх, эх, лайӑх пу-рӑнма!— тесе, каллех хӑй вырӑнне ларчӗ.

— Ара, лайӑх пулмасӑр,— терӗ Иван ашшӗ, хӗрӗхсен-чен иртнӗ Таниле,— лавӗ-лавӗпе тырӑ килет вӗт кашни киле! Хӑҫан пулнӑ ун пекки?

Вӗҫелис та тав тӑватчӗ самапана. Ял ҫыннисенчен са-хал илтнӗ-и вӑл ӗлӗкхи нушаллӑ пурнӑҫ ҫинчен, ҫав пур-нӑҫ хӑварнӑ инкек-синкеке хӑй сахал тӳссеירттерне-и? Тӑлӑх хӗрача пулин те, ялтан яла ыйткалама тухса каймарӗ вӑл, мӑнаккӑш килӗнче — начар-и, лайӑх-и — ялти ача-пӑ-

чапа пĕр пекех ӳсрĕ, тăвата класс таран ялти шкула çӳрерĕ, арçынна юрăхлă пулчĕ, унтан та ытларах, хăшпĕр хĕрупраç тĕлĕкре те тĕлленеймен телейпе тĕл пулчĕ. Нимрен те мар, самани лайăх тăнинчен килчĕ çакă.

Çĕнĕ пӳрт кĕрекине пуш алăпа пымарĕç ял çыннисем. Иванăн ашшĕпе амăшĕ ывăлĕпе кинĕ патне пушмак пăру çавăтса килчĕç. Пĕри чăх-чĕп, тепри савăт-сапа, виççĕмĕшĕ пир тĕртмелли хĕç парнелерĕç. Çăпата калăпĕсем те, ухват-турчка та йăта-йăта пычĕ тăван-пĕтен. «Пурăнăр, ăшă йăва туса хурăр çак çуртра, ача-пăчаллă пулăр, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетĕр. Чашăк-тирĕк шăлтăртатмасăр пулмасть, çӳп-çапа килтен ан кăларăр, усал сăмаха киле ан кĕртĕр. Ырă курăр, телейлĕ пулăр, пĕр сăмахпа...»—терĕç çынсем.

«Телейлĕ пулăр...»

Унччен те, каярах та çакăн пек çăмăллăн, çĕкленӳллĕн пурăннине астумасть Вĕçелис. Ĕçлĕ кун — вăрăм-и, кĕске-и вăл — мĕнле вĕçленнине сиссе те юлаймастчĕ çамрăк арăм, утса мар, вĕçсе çитетчĕ тăван килне. Çитетчĕ те упăшкине, юратнă Иванне, кĕтме пуçлатчĕ ĕçрен. Çăмăл марччĕ унăн ĕçĕ — йăлăмри вăрманта йывăç касатчĕç вĕсем, ялти чи тĕреклĕ арçынсем. Ура çине çирĕппĕн тăнăччĕ ĕнтĕ колхоз, выльăх-чĕрлĕх валли вĕр-çĕнĕ пысăк витесем тума тытăннăччĕ.

Кашни кун, хуранти яшка лăкăртатса вĕренĕ вăхăтра, алăк сасси пулатчĕ те, пӳрте шур упа пек пулса кайнă Иван килсе кĕретчĕ. Чупса çитетчĕ те ун патне Вĕçелис упăшкин кĕрĕкне хур çуначĕпе шăлса тасататчĕ, хытса, пăрланса кайнă кăçаттисене кăмака çине лартатчĕ, Иванăн йĕпеннĕ çӳçне шăлкалатчĕ, пăрчăкан пек чĕвĕлтетме пуçлатчĕ: «Ывăнтăн пуль, чунăм, кунĕ те сивĕ тăчĕ, яшка антаратăп акă, чей лартса ятăм». Иванĕ ыталаса илетчĕ те ăна: «Ывăннăччĕ, Вĕçелис, ах, ывăннăччĕ! Сана куртăм та, ывăнни иртсе кайрĕ»,— тетчĕ кула-кула.

Çĕнĕ пӳртре хĕл каçса, çурхи кунсене кĕтсе илнĕ чух Иванпа Вĕçелис çакна асăрхарĕç: ашшĕпе амăшĕ кĕркунне парнеленĕ пушмак пăрăвăн çилли ӳссех, хырăмĕ сарăлсах пырать. Витене улăм ытларах сарса пама пуçларĕ Иван, каççерен-ирсерен сăнасах, пăхсах тăчĕ пĕтĕ пушмака. Пĕррехинче вара пӳрте савăнăçлăн чупса кĕчĕ те: «Çĕнĕ кайăклă пултăмăр, Вĕçелис, тăр часрах»,— терĕ шăппăн.

Вĕçелис кĕпе тăхăнма ĕлкĕриччен Иван улăмпа чĕркенĕ пăрăва пӳрте йăтса кĕчĕ. Вут пек çиçетчĕç упăшкин куçĕсем, хытă хĕпĕртенĕччĕ вăл çак çĕнĕ чуншăн. Сайхах çинчен наччас утă илсе анчĕ Иван, пăравус пек пашкакан ĕнене пӳрте çавăтса кĕчĕ.

Шăп çав вăхăтра, çамрăк ĕне пĕчĕк те вăйсăр пăрăва çуласа типĕтнĕ чухне, туйса илчĕ Вĕçелис хăйĕн варĕнче те темскер йăшăлтатса илнине. Ĕне çиллине çуса тасатма тесе, тăм плашкана хурантан лĕп шыв яма тăнăччĕ вăл, сасартăк кăлт тутарчĕ хырăмран аяларах. Аллинчи плашки урайне ӳксе чăл-пар саланчĕ, çакна кĕтмен Вĕçелис, аптранипе, пĕрре шуралса, тепре хĕрелсе кайрĕ, пӳлĕме чупса кĕнĕ Иван çине айăплăн пăхрĕ.

— Мĕн пулчĕ, Вĕçелис?—ыйтрĕ Иван, хыпăнса ӳксе.

— Пĕлместĕп,— терĕ Вĕçелис,— çакăнтан тем тапрĕ...

Иванĕ пĕр хушă чĕнмесĕр пăхса тăчĕ ун çине, унтан плашка ванчăкĕсене урипе сирсе ывăтрĕ те Вĕçелис патне ыткăнчĕ, ăна, пĕчĕк ачана йăтнă пек, хăй ытамне илсе, çӳлелле çĕклерĕ.

— Телее пултăр плашка çĕмрĕлни! Пурăнатпăр, эппин, Вĕçелис, туллин пурăнма пуçлатпăр малашне!— савăнăçне ниçта чикеймерĕ Иван.

Каллех телей куççулĕ шăрçаланса анчĕ Вĕçелис пичĕ тăрăх.

Нимĕн те ĕçлеттермерĕ ăна Иван çав кун, ĕне çиллине те хăех çуса тасатрĕ вăл, пăру, яка урисемпе шуçкала-шуçкала тăма хăтлансан, хевтесĕр чĕрчуна амăш чĕччине хăех хыптарчĕ, лешĕ, айванскер, çăткăннăн чаплаттарса чĕчĕ ĕмнине чылайччен чĕнмесĕр, шухăша кайса пăхса ларчĕ.

Кĕтетчĕ Иван хăйĕн пĕрремĕш ачине, епле кĕтетчĕ!

## 4

Çĕрлехи çумăр хыççăн пăсланса, тĕтĕмленсе тăракан тĕтрене ирхи пысăк хĕвелĕн пайăркисем шăтарса кĕчĕç те, Çарăмсанăн анлă улăхĕ тăрăх утă тавăрса кайнă пек, майĕпен анăçалла çавăрттарса кайрĕç. Çил тухрĕ.

Качакине сурĕ Вĕçелис, сĕте, хĕлĕх ала витĕр кăларса, нӳхрепе антарса лартрĕ. Ура айĕнче явăнса çӳрекен качакине кĕтĕве яма тухрĕ.

Хыçалкасри Хрĕсти тĕл пулчĕ урамра. Унченхи пек сывлăх сунмарĕ вăл Вĕçелиса, ун патне пырса, ним çукранах çанталăк е хăйĕн аскăн ĕни çинчен сӳпĕлтетме пуçламарĕ. Куçне чарса пăрахса, шăппăн, тĕсесе пăхрĕ хăйĕн тантăшĕ çине. Ĕнине кĕтĕве çитерчĕ те ним чĕнмесĕр килнелле çаврăнса утрĕ.

Маруç амăшĕ те, Хĕрхи аппа, темшĕн-çке сăмах вакласа тăрасшăн пулмарĕ хальхинче. «Васкать пуль-çке, Маруçăн ĕçе инçе çӳремелле, ун валли вăхăтра апат хатĕрлес пулать»,— шухăшларĕ Вĕçелис. Шухăшларĕ çеç, ун куçĕ

ёнесем хыçĕнчен сиксе тухнă Пехил Улькине асăрхарĕ. «Ку тем калать-ха ĕнтĕ,— вĕçсе илчĕ шухăш,— ку йĕплесе илмесĕр пултараймасть». Анчах лешĕ курмăш пулчĕ Вĕçелиса, санпа пакăлтатса тăма вăхăт çук тенĕ пек, вăрт çаврăнса, урам тăрăх суллана пачĕ.

Çапла, никампа калаçмасăрах, килне таврăнчĕ вара Вĕçелис. Чей лартса ячĕ.

Сасартăк ун хăлхине çак кунсенче ытла та хăнăхнă, ытла та палланă сасă — чĕрене çуракан, кĕлеткене тăр-тăр чĕтреттерекен хултуйин асаплă сасси пырса кĕчĕ. Васкасах чӳрече хушăкĕ патне, кантăкран çын курмалла мар вырăна, чупса пычĕ Вĕçелис, сывлама та хăрарĕ. Сасă çывхарнăçемĕн çывхарчĕ.

Нивушлĕ кĕрĕ? Нивушлĕ кунтах килет? Пĕр утăм, ик утăм... Ак чарăнса тăчĕ, акă, пуçне çĕклесе, кантăк çине пăхать пулĕ. Ан хускал, Вĕçелис, ху килте пулнине, тархасшăн, ан систер. Аманнă çын чунсăр мар, хăйне-кĕтсе тăманнине туймаллах унăн. Акă чикарккине туртса ярĕ те, хаш! сывласа, каллех Çарăмсан хĕрнелле анса кайĕ вăл. Вĕçелисăн вара кун пек хăраса, чĕтресе тăмашкăн вăхăт çук. Мĕтри валли апат пĕçермелле те часрах колхоз ĕçне чупмалла.

Ун шухăшне сисрĕ тейĕн аманнă çын.

Вăл васкамасăр Çарăмсан хĕрнелле анса кайрĕ.

5

...Танилепе пĕртăван Матвин, Иванăн пысăк пиччĕшĕн, сăнарĕ уçăмлă тăрса юлайман Вĕçелис пуçĕнче, мĕншĕн тесен вăл ун чух вуннăри хĕрача кăна пулнă-ха. Çакă вара ĕмĕрлĕхех асра: таçтан хуларан килнĕ музыкантсем сăмавар тĕслĕ пысăк шăхличсем вĕрсе пыраççĕ, пĕри, мăйăхлă та хытканскер, утнăçемĕн пысăк параппанне панлаттарать. Урам тăршшĕпе — халăх. Вĕçĕ-хĕррисĕр халăх.

Масар çине çитсен, таçтан килнĕ палламан çынсемпе ял Совет председателĕ Раман пичче, чăмăртанă аллисемпе сулкала-сулкала, хĕрӳллĕ сăмах каларĕç, кайран вара, хĕрлĕ пуставпа витнĕ тупăка шăтăка антарса, ăна тăпрапа хупласа хурсан, пĕри кĕсйинчен наган кăларчĕ те, пухăннă çынсен сехрине хăпартса, виçĕ хутчен сывлăшалла персе ячĕ.

Пулккари тимĕр палăка та çавăн чухнех лартнă теççĕ.

Каярах, упăшкипе çурт çавăрсан, пĕлчĕ Вĕçелис ăнланма та йывăр çав кунсен тупсăмне. Кăçатă тĕплесе ларатчĕ Иван. Темрен пуçланса кайрĕ калаçу.

— Матви пиччене астăватăн-и?— ыйтрĕ Иван.

— Кăшт кăна. Сан пекех пысăкчĕ пулмалла. Пытарнине лайăх астăватăп. Музыкăпа пытарчĕç. Унтан пăшал печĕç. Мĕншĕн çавăн пек чыс турĕç ăна?

— Нимĕн те пĕлместĕн иккен эсĕ. Мăрса Палюкне тытса кайнине те астумастăн-и?

— Мĕнле астумастăп? Кайран ун çуртне правлени турĕç. Пуян пулнă тетчĕç.

— Пуян пулнă çав. Вăт çав пĕтерчĕ те Матви пиччене.

— Мĕнле? Ăна вĕт Матви пăяхам виличчен чылай малтан тытса кайнă тетчĕç.

— Мăрса Палюкĕ Çĕпĕртен тарса килнĕ. Матви пичче председательччĕ ун чух. Вăл районтан килнине кĕтсе тăнă Палюк, çĕр çăтманскер, Пулккара сыхласа тăнă.

— Мăрса Палюкĕ кайран курăнмарĕ-çке.

— Тепĕр кунне ăна станцăра ярса тытнă. Пĕлместĕп, халиччен те пурăнать-ши, персе пăрахрĕç-ши?

— Итле-ха,— упăшки кусĕнчен пăхрĕ Вĕçелис,— çакна эс мĕншĕн паян аса илтĕн?

— Та-ак,— терĕ Иван,— пуçран тухмасть. Çынни лайăхчĕ. Унтан тата Мăрса Палюкĕн тăванĕсем те çук мар.

— Мĕн эсĕ?— хăраса ӳкрĕ Вĕçелис.

— Хăрама кирлĕ мар. Самани урăх. Çапах путсĕр çынсем вĕсем, Мăрса таврашĕсем.

— Мĕн те пулин сиксе тухмарĕ пуль те?

— Тухмарĕ, Вĕçелис. Мăрса кусĕсем ялапах сиввĕн пăхаççĕ, çавăнпа калатăп. А пичче ман, Матви, ăслă çын пулнă. Курса тăнă тейĕн паянхи куна, э, Вĕçелис?

— Эс мĕн çинчен?

— Пурнăç çинчен, тăванăм, пурнăç çинчен. Кур-ха эс, татăк-кĕсĕк çĕр çинче пĕрлешӳллĕ хуçалăх туса хутăмăр. Туслăхпа таванлăх хуçалăхĕ.

Çак калаçу хыççăн Мăрса тавращĕ çине сăнасарах пăхма тытăнчĕ те Вĕçелис, ун ăшĕнче иккĕлепӳллĕ шухăш çирĕпленсех пычĕ.

Пĕррехинче амăшĕпе пĕрле икĕ хур чĕппи киле пымарĕ. Унта-кунта чупкаларĕ Вĕçелис, шыв хĕрне анса пăхрĕ, çитмен шăтăк-çурăк хăвармарĕ — ниçта та тупаймарĕ хур чĕпписене. Вара, ним тăвайман енне, кӳрше-арша кайса пăхма шут тытрĕ вăл.

Хăйсенчен тăватă кил урлă Мишурпа арăмĕ, Шатра Марье, пурăнатчĕ. Вĕсен те, Вĕçелисăн та хур чĕпписем пĕр вăхăтрах тухнăран, Вĕçелис çак çурта кĕрсе пăхасах терĕ. Ун чух, çулталăк каялла, Çарăмсан хĕрринче Мăрса Мишурĕпе пулса иртнĕ айкашушăн хăй айăплă пек, хаю-

сăрран уçрĕ вал ырасла хапхана. Уçрĕ кăна, Мишуран пăру пысăкăш кăвак йытти сăнчăра татасла тулхăрса вĕрме пуçларĕ. Çакна илтсе, çенĕкрен Марье сиксе тухрĕ. Вĕçелис çине чăрр! пăхса илчĕ, пĕр хушă юпа пек хытса тăчĕ, куç харшине антарчĕ, тутине çыртрĕ.

«Çиллес ку,— шухăшларĕ Вĕçелис,— тем, упăшкипе вăрçнă пуль-и?»

— Мĕн ĕçсĕр аптраса çӳретĕн-ха? Уçрăн пулсан, хуп хапхана!— кăрран каласа хучĕ Шатра Марье.

— Уçас та теменччĕ те, икĕ хур чĕппи таçта кайса кĕчĕç. Аçта кăна шырамарăм, сасси те çук,—ăнлантарчĕ Вĕçелис.

— Апла вăрра тытма килтĕн пулать. Мана вăрра тытма килтĕн пулать-ха апла?—хуллен хаярланса, çивĕчленсе пычĕ кил хуçи хĕрарăмĕ.

«Турăçăм, ма килтĕм кунта пĕрех хутчен, ҫăвăртрах тухса каясчĕ хуть. Кӳршĕпе капла пурăнсан, тем курăн. Ассăрскер, малтан шутламалла пулнă та çав»,— хăйĕн шухăшне вĕçне те çитерейменрĕ Вĕçелис, Шатра Марье ун çине хур аçи пек тапăнса пыма пуçларĕ.

— Эсĕ... мана.... вăрра тытма... килтĕн-и-ха?!

— Вăрра мар, Марье, ăнсăртран сирĕн чĕпсемпе хутшăнса кайман-и, терĕм. Кӳрентертĕм пулсан, каçар....

— Намăссăр эс!— урмăш сасăпа кăшкăрчĕ Шатра Марье. — Кăтартăп сана хур чĕппи! Çапкаланчăк! Тăлăх мĕскĕн! Е çитмерĕ-и сире Палюка пĕтерни!? Е эсĕ, пĕлтĕрхи пек, ман упăшкана хăвăн çара кĕлеткӳне кăтартма килтĕн-и? Куртăм, çылăх çухатнăскер, йăлтах куртăм санăн хăтланăвна!.. Кай халех! Тĕсӳ ан пултăр урăх. Ярса ан пус текех пирĕн килкартине! Çапкаланчăк! Тăлăх мĕскĕн! Емĕр çапла утвит тытмасăр пурнас тетĕр пуль-ха. Ан савăнăр ытлашши! Ав, турă пурне те курать. Тулĕ-ха сирĕн шăпăр та пĕрре. Непсĕр тулĕ. Вăрра тытма килнĕ! Пăх-ха эс ăна!

Каяш шывпа чашлаттарса пуçĕнчен пуçласа ура тупанĕ таранчченех йĕпетнĕ çын пек васкаса тухса сирпĕнчĕ Вĕçелис Шатра Марье патĕнчен. Кил хуçин йĕп пек тирекен сăмахĕсем, унтан тата такама та туртса çурма хатĕр йытти антăхса кайса вĕрни çеç илтĕнсе юлчĕ хыçалта.

Килне çитсен те тӳрех лăпланаймарĕ Вĕçелис. Иванĕ те килейменччĕ-ха ĕçрен.

«Ав мĕнле çынсем пурăнаççĕ иккен кӳршĕре,— шухăшларĕ вăл, нимĕнле ĕç тытма пĕлеймесĕр. — Палюка асăнса пурăнать. Эппин, упăшкипе те час-часах калаçаççĕ ун çинчен. Манмаççĕ. Чим, мĕне пĕлтерчĕç Шатра Марье сăма-

хĕсем? «Ан савăнăр ытлашши, непсĕр тулĕ»,— терĕ Марье. Тем çинчен систерни, хăратни пулмарĕ-и ку?»

Çавăн чух ĕнтĕ, шăп çавăн чух Вĕçелис пуçĕнче халиччен пĕлмен хăрушă туйăм çуралчĕ. Çук, хăйшĕн мар, ытарайми Иванĕшĕн хыпăнса ÿкрĕ вăл сасартăк.

Иван ĕçрен киличчен пусăрăнчăк кăмăлпа çÿрерĕ Вĕçелис. Тытнă ĕç ăнмарĕ çав кун. Шыва кайса килчĕ — витрине асăрханмасăр лартрĕ пулмалла та, витри тÿнсе кайрĕ, шывне типĕтме пуçланăччĕ, хуранти яшки вĕрече тăкăнчĕ, унта чупса пычĕ Вĕçелис,— васканипе аллине пĕçертрĕ.

Иванĕ вара тĕттĕм пулсан тин таврăнчĕ. Пĕччен мар тата, чи çывăх тусĕпе, ялти пĕрремĕш трактористпа Çтуппаппа хаваслăн килсе кĕчĕ пÿрте. Кăштах сыпнăччĕ те пулмалла.

— Çĕтĕк-çурăкна вутта пăрах, Вĕçелис,— терĕ Çтуппан. — Пуйрĕ упăшку. Стаханов пек ĕçленĕрен сурăх памалла турĕ колхоз.

— У-ух, эсĕ те çав, халь каламаллаччĕ-и? Вĕçелис пĕрер курка сăра тултарса парсан тапратмаллаччĕ çакна,— кăмăлсăрланнă пек пулчĕ Иван.

Çакна илтсенех Вĕçелис, тĕпсакайне анса, сăра тултарса тухрĕ.

Сĕтел хушшине ларчĕç. Вĕçелис, пĕр чĕнмесĕр, кăпăкланса тăракан сăрана, йывăç алтăрпа ăсса, упăшкине тыттарчĕ.

— Эс мĕн?— тĕлĕнчĕ Иван.

— Чăнах, эс мĕн... салхуллă?— асăрхарĕ Çтуппан та.

— Ĕçĕр,— терĕ хĕрарăм, хăй вара васкасах пÿлĕме кĕрсе кайрĕ.

— Мĕн пулчĕ тетĕп!— сассине хăпартрĕ Иван,

— Шăплан, Иван,— лăплантарчĕ ăна Çтуппан. — Ĕç сăруна.

Тем вăхăтран сĕтел хушшинчи икĕ арçын Вĕçелис çинчен манса та кайрĕ тейĕн,—ĕç çинчен, ял çинчен, тĕнче çинчен шăкăл-шăкăл калаçма пуçларĕç. Хăй еккипе пыракан сăмах вăрçă çине куçрĕ.

Пушă вăхăт тупăнсанах аллине хаçат-журнал тытса ларакан Çтуппан тĕнче пурнăçне ыттисенчен лайăхрах ăнланатчĕ пулĕ çав. Кăна Вĕçелис çав каçхине те лайăх туйса илчĕ.

— Вăрçă тетĕн-и?— васкамасăр калаçрĕ Çтуппан. —Мĕн калас ун пирки? Пулма та пултарать. Польша халăхĕ икĕ çул ĕнтĕ фашистсен аллинче асапланать.

— Пире тĕкĕнмесçĕ пуль-ха, лектор, ав, пĕркун мĕн

каларĕ: Германипе пирĕн çĕршыв килĕшӳ тунă, вĕсем пĕрпĕрне тапăнмаççĕ терĕ,— хирĕçлерĕ ăна Иван.

— Пĕлместĕп, Иван, пĕлместĕп,— терĕ Çтуппан, шухăша кайса. — Анчах пирĕн иксĕмĕрĕн те çӳç кастармалла пулать кăçал. Эх, сан пек çĕнĕ пӳрт çавăрмаллаччĕ пулĕ те...

Пăрăç хучĕç-ши Вĕçелис чĕри çине, кăкăрĕнче тем хыпнине, пĕçертсе çуннине туйса илчĕ вăл, васкаса пӳлĕмрен тухрĕ, сĕтел çывăхне пырса ларчĕ, Çтуппан кусĕнчен пăхрĕ. Çакна курса хăраса ӳкнĕрен-ши, Вĕçелиса лăплантарас тесе-ши е тата хăй урăх сăмахсем шыраса тупайманран-ши, Иван чышкине чăмăртарĕ, пĕрре шуралса, тепре хĕрелсе кайрĕ те, касса татнă пек, çапла каласа хучĕ:

— Нумай пĕлетĕн пулин те, парах эс ку шухăша, Çтуппан. Йĕркеллĕ шухăш мар вăл. Мĕнле вăрçă пултăр? Ав, пĕлтĕр финсем тытăçма пăхрĕç пирĕнпе. Яппун йыт çури пек вĕрме хăтланчĕ. Мĕнпе вĕçленчĕ, э? Пирĕн халăх-и?.. Кирек мĕн пултăр, хăйĕн çĕрне никама та таптаттармĕ вăл текех. Юн нумай тăкнă уншăн, ăна тарпа шăварнă...

— Эс чăнах лектор пекех калаçма пуçларăн,— пӳлчĕ Çтуппан.

— А мĕн, тĕрĕс каларĕ вăл. Эпĕ хамăр ял çыннисем çинчен нумай шухăшларăм çавăн хыççăн. Тăраниччен çăкăр çинисем нумай пулнă-и ялта? Ну, Аркантей, Мăрсасем... Тата кам? Урăх çук та. А халĕ çăкăрĕ те çителĕклĕ, çипуçĕ те, вутти-шанки те. Ку — пирĕн ял. Çĕршывĕпе илес пулсан? Мĕн каламалли, çак рехете туртса илме парĕ-и хура халăх?— хăй сăмахĕ çинех тăчĕ Иван.

— Çапли çаплах-ха, Иван, анчах çав финн вăрçинчен Митра пичче урине таттарса килчĕ, Унихват Униçĕмĕ вара вуçех таврăнаймарĕ...

Шăпланчĕç.

Кашни хăй тĕллĕн шухăшларĕ.

Пурнăç çинчен Иван çакăн пек яка та уçăмлă калаçнине халиччен асăрхаманччĕ-ха Вĕçелис. Тĕрĕс, упăшкин тӳркăмăллăхне тахçанах пĕлет вăл. Ĕçре пулни-иртнине е ял хыпарĕсене Иван, тăванне-мĕнне пăхмасăр, этем йĕркелĕхне, чун тасалăхне кура хак парать. Упăшки вăрттăн шухăшпа çӳренине е, çынпа ыра пулас тесе, пылак йăпăлти сăмах каланине асăрхаман Вĕçелис. Çакăншăн хисеплет вăл ăна, çакăншăн шутсăр юратать Ивана.

— Маттур,— терĕ Çтуппан. — Санпа вăрçа кайма пулать.

— Каллех — вăрçă...— кăмăлсăрланчĕ Иван.

— Вăрçа мар-тăк, акатуйне, эппин,— сĕтел хушшинчен тăчĕ Çтуппан. — Ну, тавах яшка-çăкăршăн, каяс-ха ĕнтĕ.

Чăнах, акатуй-çке виçмпне. Канас, вăй пухас. Тен, кĕрешме тухмалла пулать, э, Иван?

— Карăшъелсем çĕнтерме пуçласассăн, эп тухатăп,— терĕ Иван, пĕр иккĕленмесĕр.

— Унсăр тухмастăн пуль?— йĕкĕлтерĕ Çтуппан.

— Мана ахаль те сурăх параççĕ. Хамăр ял ачи çĕнтертĕр, чысĕ çавах хамăрта юлать,— ăнлантарчĕ Иван.

— Ик сурăхпа хаваслăрах. Киле те усă,—терĕ те Çтуппан кула-кула пӳрт алăкне уçрĕ.

Чашăк-тирĕк çурĕ Вĕçелис, сĕтел çине шăлса типĕтрĕ. Иван вара арăмĕ пушанасса, кăмăлĕ мĕншĕн пăсăлни çинчен каласа парасса кĕтрĕ.

Хăйне алла илмелĕх вăхăт иртнĕççĕ çав ĕнтĕ. Шатра Марье сăмахĕсем пaçăр сĕтел хушшинче ларакан икĕ арçын калаçăвĕ айне, çав калаçу вăхăтĕнче çуралнă шухăшсем айне, пулса юлчĕç, майĕпен шупкалчĕç, хăйсен çивĕчлĕхне, наркăмăшне çухатрĕç. Лăпланчĕ Вĕçелис, Шатра Марьепе пулса иртнĕ калаçу çинчен упăшкине ним хумханмасăр каласа кăтартрĕ вăл. Упăшки вара итлесе ларчĕ-ларчĕ те пaçăрхи пекех кĕскен те витĕмлĕн Каларĕ:

— Сур эс вĕсем çине, Вĕçелис! Сур та тек ан çӳре унта. Аяккарах тăр вĕсенчен.

— Пуç çине хăпарса ларма тытăнсан? Тарса çӳрес-и?— ыйтрĕ Вĕçелис.

— Тарса ан çӳре. Хирĕç тавăр. Анчах сăмахна шухăшласа кала. Тĕрĕслĕх тимĕр тататъ, теççĕ,— ăс вĕрентрĕ Иван.

...Анчах тепĕр кун Мăрсасемпе каллех тĕл пулчĕ Вĕçелис. Каç енне сулăннăччĕ ĕнтĕ. Упăшкипе иккĕшĕ те ĕçрен иртерех таврăнчĕç вĕсем. Иван лашине тăварса тăмарĕ, пӳрте кĕрсе, пĕр курка сивĕ шыв ĕçрĕ те, ыран акатуйне кайма тесе, вăрмана утă çулма тухса кайрĕ. Вĕçелис çак вăхăтра килти ĕçсемпе аппаланчĕ, Çарăмсантан шыв ăсса килчĕ, помидор тĕмĕсене кăпкалатрĕ, хăяр калчисене, кишĕре шăварчĕ. Юлашкинчен, типĕ вутă илсе кĕрсе, яшка çакса ярам тесе, аслăк айне кĕнĕччĕ вăл, çак самантра хапха сасси пулчĕ те, Вĕçелис хăй патнелле такам çывхарнине туйрĕ. Тĕпне хурăн хуппи хунă хром атă сассинченех тавçăрчĕ Вĕçелис: хăйсем патне халиччен нихçан килсе курман Мăрса Мишурĕ вăл. Мĕн сăлтав тупрĕ-ха тата? Е вăл та, арăмĕ пекех, ĕнер пулса иртнишĕн мăшкăл кăтартма килет-и? Ывăçласа тытнă вут пуленкисене тӳрех çĕре пăрахрĕ хĕрарăм, Мишура хирĕç картишне тухма васкарĕ, анчах ĕлкĕреймерĕ. Аслăк айне кĕмелли пĕчĕк хапха юпи çумне таяннă Мăрса Мишурĕ Вĕçелис куçĕнчен хăюллăн

та ҫивӗччӗн пӑхрӗ. «Ырра мар ку»,— шухӑшларӗ хӗрарӑм, вара, малалла мӗн пуласса кӗтсе, паҫӑрхи пуленкесене каялла илме ҫӗре пӗшкӗнчӗ. Унччен Иванпа иккӗшӗ Мӑрсасем ҫинчен калаҫни аса килчӗ Вӗҫелиса. Ҫакӑ ӑна пушшех хӑратса пӑрахрӗ. «Мӗн ӑна мана вӗлерессн, ҫӑвара хупласа хур та пӑвса пӑрах, никам курас та, илтес те ҫук»,— ҫӳҫенсе шухӑшларӗ хӗрарӑм.

Анчах Мӑрса Мишурӗ вырӑнтах тӑчӗ-ха.

Иванӗ хӑвӑртрах килинччӗ, иҫмасса. Мӗн туса тӑратьха ҫак тӑсланкӑ? Мӗн шухӑшпа килнӗ вӑл?

— Ан чӗтре, ан хӑра манран,— тинех сӑмах хушрӗ Мӑрса Мишурӗ. — Арӑм ӗнер сӳпӗлтетнине манса кай. Эп сана пӗлтӗр пӗтӗм кӑмӑлтан каланӑччӗ. Итлемерӗн. Тем тупрӑн Иван ҫумӗнче. Анчах эп сана халӗ те юратма пӑрахман. Атя, тарар кунтан, Вӗҫелис, эп сана тӗнче хӗрне илсе кайӑп. Сана телейлӗ тумашкӑн вӑй ҫитет манӑн. Чунчӗре кӳтсе ҫитрӗ кунта пурӑнса. Ҫут тӗнчене курас килми пулчӗ.

— Арӑмупа тар,—Мӑрса Мишурӗ хӑйне нимпе те хӑратманнине курса, хӑюлланса хуравларӗ Вӗҫелис.

— Пӗлмене ан пер тархасшӑн. Аркантейсен унччен мулне шута илсе авлантарчӗҫ-ҫке тӑвансем. Юратса пӗрлешнӗ тетӗн-и? Улталантӑм, ни мулӗ ҫук, ни ача тумасть. Тарар, Вӗҫелис, тархаслатӑп сана. Нихҫан та кӳрентермӗп, пӗр усал сӑмах каламӑп, патша майри пек пурӑнӑн ман ҫумра,—ҫывхарса, ҫывхарса пычӗ те Мӑрса Мишурӗ аллине Вӗҫелис хулпуҫҫийӗ ҫине пырса хучӗ.

— Шел сана, телейсӗр эс,— хӗрхененҫи пулчӗ Вӗҫелис. Татах тем каласшӑнччӗ вӑл Мӑрса Мишурне, хӑйӗн татӑклӑ сӑмахне пӗлтерсе. Урӑх ан кил кунта, пирӗн ҫулсем пӗр мар, хамӑн Ивана эп никампа та улӑштармастӑп тесшӗнччӗ, ӗлкӗреймерӗ, унччен те пулмарӗ, ятлаҫа-ятлаҫа, хӑлаҫлана-хӑлаҫлана картишне Мишур арӑмӗ Шатра Марье килсе кӗчӗ, килсе кӗчӗ те тӳрех упӑшки ҫине мар, Вӗҫелис ҫине сиксе ӳкрӗ, ун тутӑрне сирсе ывӑтса, ҫӳҫӗнчен хыттӑн ҫатӑрласа илчӗ.

— Намӑссӑр! Ӗнер калани ҫитмерӗ-и сана? Ҫын упӑшкине кӑнтӑр варринчех аслӑк айне илсе кӗме тытӑнтӑн-иха? Тьфу, тьфу! Намӑсна ҫухатнӑскер! Ак сана! Ак сана!— унтан та кунтан ҫапкалашма, тапкалашма пикенчӗ Шатра Марье.

Чӑтма ҫук тарӑхса кайнӑ Вӗҫелис часах вӗҫерӗнеймерӗ упран. Мӑрса Мишурӗ пулӑшрӗ. Пысӑк ал лапписемпе арӑмӗн ҫухавинчен ярса тытрӗ те вӑл ӑна, ҫӳлелле ҫӗклесе, ҫӗре лаплаттарчӗ. Йынӑшрӗ, хӑрӑлтатрӗ Шатра Марье.

Сехри хăпса тухнă Вĕçелис вара темиçе пуссах пӳртум картлашки çине чупса çитрĕ те, алăка уçса, ăна шал енчен хăвăртрах питĕрсе лартрĕ.

...Çакăн çинчен Ивана каласа пама именчĕ Вĕçелис. Упăшки урăхла ăнланасран та шикленчĕ ĕнтĕ. Мăрса Мишурĕпе Шатра Марье çинчен шутласа çĕрĕпех асапланчĕ пулин те, Ивана палăртасшăн пулмарĕ çакна, хăйне хăй лăпкăн, ним пулман пек тытма тăрăшрĕ.

### 6

...Епле илĕртӳллĕ, епле тӳлек те савăк ирччĕ çав кун! Вĕçелис ăна паян та кĕвĕ калама ĕнерсе хунă кĕсле хĕлĕхĕпе танлаштарать. Ĕне сума тухсан, чăлт-шурă сĕтĕн çинçе пайăрки витре тĕпне пăн! туса сасă пачĕ те, пуçланчĕ вара кĕсле хĕлĕхĕн хӳхĕм юрри! Тухăçра пысăк хĕвелĕн ылтăн пуçĕ курăнчĕ, лĕп çил вăшăлтатса тăчĕ, хурсем, чĕпписене ертсе, какăлтата-какăлтата çырма хĕрне анса кайрĕç, урамра ир-ирех лашасем кĕçенни, урапа кустăрмисем васкавлăн кăлтăртатни, пĕкĕ айĕнчи шăнкăравсен сасси илтĕнсе тăчĕ.

Вут хутса ярса, икерчĕ пĕçерчĕ Вĕçелис, тĕпсакайĕнчен сăра ăсса тухрĕ, арчаран хăйĕн симĕс аркăллă кĕпине, шукăль чĕрçиттине, Иванăн тĕрĕллĕ кĕпипе кăвак шăлаварне, çутă аттине кăларса хучĕ. Шăп çак çипуçпа ларнăччĕ вĕсем туйра та.

Лаша кӳлме кайнă Иван нумай кĕттермерĕ. Тепĕр çур сехетрен Вĕçелисăн хитре тутăрĕсемпе илемлетнĕ лав, йĕс шăнкăравпа шăнкăртатса, урам тăрăх вĕçтерчĕ, яла хыçала хăварчĕ. Çарăмсан кукринчен улăха, акатуй пулакан вырăна, çул тытрĕ.

Кĕсле хĕлĕхĕ çул тăршшĕпех телей кĕвви каласа пычĕ. «Пурнăçăм,— пăшăлтатрĕ Вĕçелис,— пур-ши паян манран та савăнăçлăраххи! Юмахсенче тăлăх хĕрпе патша ывăлне час-часах асăнаççĕ. Акă вăл, патша ывăлĕ Иван, манпа юнашарах. Анчах юмахри пек ылтăн та, кĕмĕл те кирлĕ мар пире. Пĕрле пулни, малашлăха çакăн пек пĕрле ыткăнни мĕн тери лайăх! Эх, Иван, туятăн-ши эсĕ çак телее? Эпĕ чăтма çук савăннине куратăн-ши эсĕ?»

Юртать тур лаша. Çаранĕ, хирĕ, вăрманĕ, шывĕ — пĕрин хыççăн тепри улшăнать. Тăван çĕршыв хитре, юнашар ларса пыракан тăванран та тăван çын хитре — шухăшĕмĕт хитре. Шăрантар, кĕсле, иртен пуçланă савăк юрруна! Кайăксем, курăксем, Çарăмсан хумĕсем илтчĕр ăна. Илтчĕр те — хăйсен чĕвĕл сассипе, хăйсен пăшăлтатăвĕпе

çав юрă çумне хутшăнччăр. Сарăлтăр, хăватлантăр юрă, вăл мĕнпур чĕрĕ пурнăçа, аслă çутçанталăка, этемлĕхе, телее, юратăва мухтатăр!

— Иван!— урапа кустăрмисен шавне хуплас тесе, пĕтĕм вăйран кăшкăрать Вĕçелис. — Атя юрлар, Иван!

— Юрлар, Вĕçелис!— килĕшет вăл, унтан арăмĕ çинчен куç илмесĕр пуçласа ярать:

Ой, тусăм, Варвари,
Халь те качча кайман-и?
Халь те качча кайман-и те,
Халь те...

— Кăна мар, Иван, кăна мар,— пӳлет Вĕçелис. — Ак çакна:

Çăлтăр ӳкрĕ,
Çăлтăр ӳкрĕ,
Çăлтăр ӳкрĕ çут кӳлле,—
Алăпа тытма юрамасть...
Телей ӳкрĕ,
Телей ӳкрĕ,
Телей ӳкрĕ ман тĕле,—
Çынна пама юрамасть...

— Юрла,— хистет Вĕçелис. — Мĕн чĕнмесĕр пыратăн?— Унтан каллех юррине малалла тăсать:

Кăвак куçлă,
Кăвак куçлă,
Кăвак куçлă сар каччи-и-и...

— Кăвак куçлă сар хĕрĕ-ĕ-ĕ...— юрласа ярать Иван, вара иккĕшĕн сасси тĕлĕнмелле хитре пĕрлешсе каять те аслă улăх тăрăх çăмăл пĕлĕтсем пек юхма пуçлать.

Çурта пекех курăнать...

— Халь вăл манпа пурăнать,— хăйĕнчен хушса хурать те Иван, Вĕçелиса пилĕкĕнчен тытса, хыттăн чăмăртать.

— Намăса пĕл,— хирĕçленçи тăвать Вĕçелис. — Çынсем курсан тем калĕç. Уй куçлă, вăрман...

— Вăрман хăлхи питĕрĕнчĕк,— тет те Иван арăмне каллех ыталама ĕлкĕрет.

...Тĕлĕнмелле улшăнса пычĕ çав кун кĕсле хĕлĕхĕн асамлă кĕвви. Куç умĕнче акатуй ĕшнинчи пин-пин çыннăн пин тĕрлĕ сăн-пичĕ, пин тĕслĕ çипуçĕ кĕшĕлтетсе-явăнса тăчĕ, халăх сĕрлевĕ, унăн калаçăвĕ-кулли, темиçе çĕрте вырнаçтарса лартнă граммофонсен таçта илтĕнекен сасси, карусель патĕнчи хуткупăсăн васкавлă вылявĕ, параппан

тӳнклетни пӗр чаранми илтӗнчӗ халхара. Ҫапах хайӗн тимлӗхне унталла-кунталла салатмарӗ Вӗҫелис. Ытараймн Иванӗ ҫинчен куҫ та илмерӗ вăл.

...Кӗрешсе хайсен вăйне виҫнӗ ҫамрăксен шучӗ ҫирӗме те ҫитрӗ пулӗ ӗнтӗ. Пӗрре Карăшъел каччи, тепре Виҫҫырма йӗкӗчӗ ҫӗнтерӳҫӗ пулса тăрать. Пӗрин хыҫҫăн тепри тӗреклӗрех те вăйлăрах арҫынсем тухаҫҫӗ уҫланкă варрине. Акă, Виҫҫырмари Кирук тимӗрҫӗпе тытăҫма Карăшъел ҫынни, районӗпех паллă Чукмаров Энтри, тухрӗ. Лайăх пӗлет ăна Иван, пӗрре кăна кӗрешмен унпа. Вăйлă, мур илесшӗ, тӗреклӗ,— ҫичӗ пăт таять теҫҫӗ. Сан урусене ҫӗртен уйăрчӗ пулсан, пӗлсех тăр—ывăтатех хай урлă. Анчах ҫак меслетрех унăн вăйсăрлăхӗ те пур. Ан тив, ҫавăрса ҫаптăр, ан тив, савăнтăр вăл хай вăйӗпе, курнăҫлантăр ҫын умӗнче, эсӗ вара хăв чеерех пул, мӗнле пулсан та хул лапатки ҫине ан ӳк, шăпах ҫак вăхăтра ҫаврăнăҫуллă пул та ăна хăвăн айна пӗтӗрсе чикме пултар. Мӗнпур вăрттăнлăхӗ те ҫакăнта. Пӗлет-ши ҫак вăрттăнлăха Кирук? Темле ҫав. Ытти ҫулсенче кӗрешӳ вӗҫне ҫитиччене тытăҫайман вăл. Юлашки ҫул палăрмаллах тӗреклен-чӗ каччă. Тӗрекленчӗ те хайӗн вăйне виҫсе пăхма шутларӗ.

— Ан парăн, Кирук,— хавхалантарса, пур енчен те кăшкăрашаҫҫӗ виҫҫырмасем.

— Ху камне кăтарт, Энтри, хулпуҫҫи урлă ҫап!— парăнмаҫҫӗ карăшъелсем.

Унччен те пулмарӗ, Энтри Кирука ҫӗр ҫинчен йăтса илчӗ, пӗр вăхăт ăна сывлăшра тытса тăчӗ, унтан, пӗтӗм вăйне пухса, хай урлă ывăтрӗ те мӗнпур йывăрăшӗпе Кирука ҫӗр ҫумне пăталаса хучӗ.

Хаш! сывласа ячӗҫ карăшъелсем.

Шыв сыпнă пек тăчӗҫ виҫҫырмасем.

— Маттур, Энтри, пултаратăн, Энтри! Эс ҫӗнтерӳҫӗ!— пур енчен те кăшкăрчӗ халăх.

...Кӗпи ҫаннисене васкамасăр тавăрчӗ Иван. Лăпкăн Вӗҫелис ҫине пăхса илчӗ вăл, куҫӗпе Ҫтуппана шыраса тупрӗ, вара хуллен вырăнтан тăчӗ те Энтри патнелле утса кайрӗ. Кӗрешӗве тӗрӗслесе таракан клуб заведующийӗпе Карăшъел ҫыннине алă пачӗ, вӗсенчен Энтрипе кӗрешме ирӗк ыйтрӗ. Лешсем хирӗҫлемерӗҫ. Кӗрешӳ мӗнпе вӗҫленессе кӗтсе, халăх шăп тăчӗ.

Мӗн тери хумханмарӗ пуль Вӗҫелис!

Акă, икӗ хире-хирӗҫ автан пек, Иванпа Энтри пӗр-пӗрин ҫине ҫивӗччӗн пăхса тăраҫҫӗ. Ҫывхарчӗҫ. Пӗрне-пӗри меллӗрех ярса тытасшăн.

«Чаранăр! Мĕн çитмест сире!»—халь-халь кăшкăрса ярас пек ларать Вĕçелис.

Васкамаççĕ. Кашни меллĕ самант кĕтет.

— Эй, эсир, мĕн çывăратăр!— сасă пачĕ пĕри.

— Хăюллăрах, Энтри, паçăрхи пек ывăт ăна!—хистерĕ тепри.

—Ай-яй эс, паçăрхи пек.... Кампа кĕрешнине куратăн-и?—пÿлчĕ виççĕмĕшĕ.

«Мĕншĕн?— хăраса шухăшларĕ Вĕçелис. —Ансăртран амантас пулсан пĕрне-пĕри? Мĕншĕн? Ят кирлĕ-и, мухтав кирлĕ-и сире? Энтрийĕ ытла тĕреклĕ, мĕн те пулин туса хумĕ-и Ивана? Ашшĕсĕр юлтăр-и ачам? Эппин, халех чарса лартмалла çак кĕрешĕве. Вĕçелис мар-тăк, кам чарĕ ăна?»

Çак шухăшпа ура çине тăнă кăначчĕ Вĕçелис, Энтри Ивана, паçăр Кирука çĕкленĕ пек, сывлăша йăтса илчĕ те, икĕ арçын çĕре персе анчĕç, çăмха пек пĕтĕрĕнме пуçларĕç.

«Пĕтрĕ»,— чĕркуççийĕсем вăйсăрланнипе, хăй вырăнне ларчĕ Вĕçелис, пуçне усрĕ.

Çак самантра çынсем урса кайнă пек кăшкăрашма пуçларĕç:

— Пултаратăн, Иван! Маттур, Иван! Виççырмана намăса хăвармарăн! Такаллă пултăн, Иван!

Хăйне хăй ĕненмесĕр, Вĕçелис пуçне çĕклерĕ.

«Иван, Иванăм...»— саванса пăшăлтатрĕ вăл. Чăтаймарĕ, ун патне чупса тухрĕ, пĕтĕм халăх умĕнче чуптуса илчĕ упăшкине.

— Авă,— терĕ клуб заведующийĕ,— çав урапа çумне шурă така кăкарса хунă. Санăн. Çÿле çĕкле ăна, халăх куртăр.

— Чим-ха, чим, Иван,— чупса пычĕ ун патне Карăшъел çынни. —Акă пурçăн тутăр. Ялти чи хитре хĕрсем тĕрленĕ ăна. Таврари чи паттăр çынна пултăр терĕç.

Хура пурçăн тутăра Иван тÿрех Вĕçелис хулпуççийĕ çине уртса ячĕ. Хăй вара авмак мăйракаллă шурă така патне кайрĕ, кăкарчăкне вĕçертрĕ те, ăна икĕ аллипе çĕклесе, кĕрлесе-сĕрлесе тăракан халăх умĕнче пуç тайрĕ.

Халапри чăн-чăн паттăра аса илтерчĕ вăл.

Çак самантра Вĕçелиспа Иванран та телейлĕреххи пурччĕ-ши уçланкăра! Иванăн мĕнле пуль те, анчах Вĕçелис чĕри пĕлĕт таран, сар хĕвел таран çĕкленчĕ çак шăвшавра.

Унччен те пулмарĕ, уçланкă хĕрринчен — те хĕрарăмăн, те арçыннăн — çурăлса каясла урмăш сасси янраса кайрĕ:

— Ха-а-лă-ăх! Ха-а-лă-ăх! Ра-ади-о-! Вăр-çă-ă! Шăп-ла-анăр! Ха-а-лă-ăх!

Аçа çапнă хыççăн пулать çавăн пек шăплăх. Уçланкăри пиншер çын самантлăха шыв сыпнă пек пĕр вырăнта хытса тăчĕ. Куçĕсене пысăклатса, тин илтнĕ сăмахсене ĕненмесĕр пăхрĕç çынсем пĕр-пĕрин çине. Репродукторти арçын сасси ытти чухнехи пек мар пăлхавлăн та хăрушшăн кĕрлени тӳрех тыткăнларĕ халăха:

...Çавăнпа ĕнтĕ фашистла Германи тапăнса кĕнĕ çĕр-шыв шутланать...

— Тапăннă! Нимĕç тапăннă!— каллех янрарĕ лаçăрхи сасă.

— Чим-ха эсĕ, итлеме пар, тархасшăн,—пӳлчĕ ăна пĕр арçын.

—...Çак вăрçа Гармани халăхĕ мар, Германири рабочисем, хресченсем, интеллигентсем мар, вĕсен асапне эпир лайăх ăнланатпăр, çак вăрçа Германие ертсе пыракан юнĕçенсен ушкăнĕ, французсене, чехсене, поляксене, сербсене, Норвегие, Бельгие, Дание, Голландие, Греције тата ытти халăхсене чуралăха кĕртсе ӳкернĕ фашистсен ушкăнĕ пуçласа ячĕ...

— Халь пире чура тума килчĕ, эппин,— илтĕнмеллех мăкăртатрĕ тахăшĕ.

—...Правительство çакна хытă шанса тăрать: совет çыннисем Тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕçне чыслăн пурнăçлĕç. Пирĕн ĕç — тĕрĕс ĕç. Тăшман арканатех! Çĕнтерӳ пирĕн пулать!

Çук, çав самант пĕлтерĕшне тăруках ăнланса илеймерĕ Вĕçелис. Майĕ те çукчĕ ăнланма. Иванăн хулпуççийĕ çинче шурă така тапкаланать, йĕри-тавра вара — чĕмсĕр халăх. Вĕçĕ-хĕррисĕр халăх. Унталла-кунталла пăхкаларĕ Вĕçелис. Сасартăк ун куçĕ инçех те мар тăракан Шатра Марьеннипе тĕл пулчĕ. Малтанлăха ним пулман пек пăхрĕ Вĕçелис Марье çине, пăхрĕ те куçне тӳрех тартасшăн пулчĕ. Анчах тепĕр самантран вĕсен куçĕсем каллех тĕл пулчĕç. Сиввĕн, йĕкĕлтесе, намăссăррăн пăхать Шатра Марье, икĕ хура куçĕнче, сăннисене кăларса, икĕ çĕлен ларать тейĕн. Пуçне усрĕ Вĕçелис, тепре тинкерчĕ Марье çине. «Çапла!— чĕлхине кăларса, пуçне силлерĕ Шатра Марье,— çапла! Халь куратăн-и ĕнтĕ?»— «Куратăп,— хăй ăссĕн пăшăлтатрĕ Вĕçелис,— анчах мĕншĕн савăнатăн-ха эсĕ? Сан Мишуру арçын мар-и? Вăл каяс çук-и вăрçа?» «Çапла!»— куçĕнчен çиçĕм кăларса, хăйĕннех печĕ Шатра Марье.

Вĕçелис вара Иван еннелле çаврăнса тăчĕ.

Шурă така ялт сикрĕ те халăх хушшинче çухалчĕ.

Кун тĕксĕмленчĕ. Явăнса шăвакан пĕлĕт таткисем пĕр çĕре пухăнчĕç. Хĕвел хупланчĕ. Малтан майĕпен, унтан вăйлăрах та вăйлăрах вĕрекен çил вăтă йăмрасен тăррине аврĕ. Çиçĕм ялтăртатрĕ. Аслати мăнаçлăн кăлтăртатса илчĕ. Пĕлĕтрен сивĕ çумăр пĕрчисем татăлса анчĕç.

Хирлӳ пек карăнтарнă кĕсле хĕлĕхĕ çурмаран татăлчĕ.

Лашасем, чĕвен тăрса, хăрушшăн тулхăрчĕç. Урапасен шăлтăртатăвĕ çĕре кисретрĕ. Тепĕр çур сехетрен уçланкă пушанса юлчĕ.

— Иван,— терĕ Вĕçелис чĕмсĕр тăракан упăшкине. — Пурте саланчĕç, Иван.

Иванĕ чĕнмерĕ. Вăл, тĕреклĕ те пысăкскер, вăл, тин çеç çĕнтерӳçĕ пулса тăнă çын, çĕр çине пăхса, хăй кăкăрĕпе чалăшшăн çапса çăвакан çумăра тĕреленĕ пек, пĕртте хускалмарĕ. Ун çӳçĕ тăрăх, кăра та çилĕллĕ пичĕ тăрăх çумăрăн шултра пĕрчисем юха-юха анчĕç.

— Иван,— тепĕр хут шăппăн чĕнчĕ Вĕçелис. —Киле каяр, Иван.

Вара тин асăрхарĕ ăна упăшки, хăй ытамне илчĕ, сивĕ çумăртан хăйĕн кĕлеткипе хуплама тăрăшрĕ, анчах çумăрĕ çапрĕ те çапрĕ. Иванпа Вĕçелис вара йăмрасен хӳттине кĕчĕç, çумăр кăшт лăпланнă пек пулсан, ĕшне хĕррине тăварса хунă лаша патне чупса кайрĕç.

Пĕлеймест халĕ Вĕçелис: мĕн шухăшларĕ-ши çавăн чух акатуй ĕшнинче унăн Иванĕ? Çул тăрăх лашана урнă пек хăваласа, мĕншĕн пĕр чĕнмесĕр пычĕ-ши вăл? Пурнăç çинчен шухăшларĕ пуль çав, Вĕçелиспа пулас пепке çинчен шухăшларĕ пуль. Шухăшларĕ пуль те, пат татса, çав сехетрех, çав кунах вăрçă хирне тухса кайма йышăнчĕ пуль. Анчах хăй çапла шутлани çинчен пĕлтерсе, Вĕçелиса тӳрех хăратса ӳкерес темерĕ пулмалла. Эх, Иван, Иван...

## 7

Çакăн çинчен каламасан та пултаратчĕ пулĕ Вĕçелис: сăмахсăрах пурте паллă, анчах кам мĕн шутланине тĕрĕслесе пăхасах килчĕ унăн, тата та ытларах капланса ларнă шухăшсен йывăрăшне чĕре çинчен кăшт та пулин сирсе пăрахас килчĕ. Çавине ăвăс турачĕ çине çакса хучĕ те вăл, хăй хумханнине кăтартас мар тесе, йăл кулянçи турĕ, унтан çăмăллăнах çапла каларĕ:

— Калăр-ха, туссем, мĕн тăвас манăн çав салтакпа? Шел пула пуçларĕ, ытла асапланать...

Маруç хаш сывласа ячĕ те, васкамасăр, сăмахĕсене суйла-суйла, çапла сĕнчĕ:

— Хăвăн ирĕкӳ ĕнтĕ. Чуну хушнă пек ту. Çирĕмрен кăна иртнĕ вĕт-ха. Ĕмĕр сакки çарлака, теççĕ. Çавăн çинчен шутла. Çын калаçмасăр пулмĕ. Пĕр вăхăт калаçĕç те манса кайĕç. Санăн пурăнас пулать.

«Çапла, эпĕ çамрăк. Ватăличчен нумай-ха. Пĕчченлĕх пĕремĕк мар, вăл тамăкпа пĕрех иккенне паянах лайăх туйса тăратăп. Çын калаçĕ ĕнтĕ — чĕлхен шăмми çук. Анчах манăн пурнăçпа çын хуçа мар. Манăн хамăнах йĕркелесе ямалла ăна».

— Эп сана ăслă çын тенĕччĕ, Маруç,— никам çине пăхмасăр каларĕ Никăн арăмĕ. —Хут таткине шанса пурăнмалла-и? Ав, пĕрре кушеллĕ çын мĕн каларĕ? Астăватăн-и?

— Юмаха ĕненетĕн пуль?— йĕплерĕ Маруç.

— Юмах тес мар ăна, Маруç. Шанчăк тес пулать. Пинтен пĕр шанчăк тес пулать,— хăй сăмахĕ çинех тăчĕ Никăн арăмĕ.

«Маттур, Тяруç. Шанчăка çухатмастăн эсĕ. Шанчăк пуррисем телейлĕ. Анчах та шанмашкăн пĕр сăлтав та юлман пулсан? Шанни, кĕтни кăлăхах пуласса малтанах пĕлсе тăратăн пулсан?»

— Пирĕн арçынсем ун пек хăтланас çук,— татса хучĕ Маруç. — Аманнă пултăр. Урасăр, куççăр юлнă пултăр. Çапах пĕлеççĕ-çке вĕсем кунта эпир мĕнлерех шар курнине. Эпир кăна мар-тăк, ачисем пур-çке вĕсен.

Хĕрарăмсем мĕнле «юмах» çинчен калаçнине пĕлет Вĕçелис. Пĕрлех пулнăччĕ вĕсем çав кунхине. Қаç енне пĕр вăхăтрах çăя патне шыв ăсма аннăччĕ. Çакăнта тĕл пулчĕç апат çисе ларакан шĕвĕр сухаллă старикпе.

— Аякран утатăн-и, мучи,—ыйтрĕ Никăн арăмĕ Тяруç.— Ывăннă, курăнать.

— Çул ĕшентермест, ватлăх ĕшентерет,— лăпкăн хуравларĕ старик.

— Ута-ута тем те куратăн пуль. Қаласа кăтарт-ха мĕн те пулин. Вăрçă хăçан пĕтет теççĕ?— çаплах калаçма хистерĕ ăна Тяруç.

— Пĕтет, хĕрĕмсем, пĕтет, тӳсмелли нумай юлмарĕ ĕнтĕ,— майĕпен калаçрĕ палламан çын. — Упăшкăрсене кĕтетĕр пуль-ха?

— Кĕтеттĕмĕр те çав, шанчăк сӳнчĕ,— салхуллăн каласа хучĕ Маруç.

— Йывăр вăхăт. Турă чăтăм патăр сире.

Хĕрарăмсем витрисене тултарчĕç, палламан çынна ăнăçлă çул сунчĕç. Анчах лешĕ вырăнтан тапранмарĕ-ха.

— Ан хуçăлăр, йăмăкăмсем,—терĕ старик. —Тĕнчере тĕрлĕ пулать. Қунтан пĕр вăтăр çухрăмра Пылшу текен

ял пур. Илтнĕ те пулĕ-ха. Вăт çав ялта нумай пулмасть «вилнĕ» çын тупăннă.

— Мĕнле «вилнĕ» çын?— сиксе ӳкрĕ Вĕçелис. Хĕрарăмсем те шалт тĕлĕнсе кайрĕç, çĕкленĕ витрисемпе тăп чарăнса тăрса, мучи куçĕнчен пăхрĕç.

— Ара, чăн-чăн вилнĕ çынах,— ăнлантарчĕ старик.— Пĕр виç уйăх маларах кăна вилнĕ хучĕ килнĕ пулнă.

— Ак тĕлĕнтермĕш! Вара епле тупăннă-ха?— хăвăртрах пĕлесшĕн пулчĕ Маруç.

— Епле... Епле... Ăнсăртран тупăннă. Пылшу çынни тепле станца кайса лекнĕ те палласа илнĕ хайхискере,— каллех хăй сăмахне каласа пĕтермерĕ палламан старик.

— Вăрçăран тарса килнĕ пулать, эппин?— хăй пек ăнланчĕ Тяруç.

— Мĕнле тарайтăр? Ик ури те çук та,— чĕлĕмне табак тултарнă май шухăша кайнă пек пулчĕ старик. — Ăнлан сире, çамрăксене. Эсир вĕт ялан хитре, ялан илемлĕ пуласшăн. Пит çине пĕр-пĕр шĕпĕн сиксе тухсан та вăтанатăр. Ку вара — пушшех. Таврăнас темен, ахăр, арăмĕ патне. Станцăрах ĕçе вырнаçнă, атă-пушмак çĕлесе пурăннă.

— Станца çитнĕ-ха тата,— тĕлĕнчĕ Тяруç.

— Чунĕ кил енне туртнă пуль çав,— терĕ Вĕçелис.

— Вилнĕ çырăвĕ ăçтан килнĕ-ха вара?— çаплах лăпланаймарĕ-ха Маруç.

— Вăрçă акатуй мар-çке вăл. Тĕрлĕ пулать. Тен, ытти юлташĕсем пурте пĕтнĕ, тен, ку кăна шуса тухнă çапăçу хирĕнчен? Кайран сыватма ăсатнă пуль, çавăн чухнех урисене татма тивнĕ пуль. Çавăнпа калатăп: ан хуçăлăр, йăмăкăмсем, хура хыпар илтĕр пулсан та, çывăх çыннăрсене кĕтме ан пăрахăр,— тесе вĕçлерĕ те старик хăй сăмахне, хулпуççи çинчи кушелне лайăхрах майлаштарса, çула пуçтарăнчĕ.

Çакăн çинчен те нумай шухăшларĕ Вĕçелис. «Ансăртран пиптен пĕрре пулакан япала сиксе тухсан? Пулас çук. Аманнă салтак сăмахĕ ытла ĕненмелле янрать. Таврăнмасть Иван».

...Кăнтăрлахи апата ларнă хĕрарăмсем Вĕçелис шăпи çинчен каласаççĕ. Хĕвелĕ çунтарса ярас пек хĕртет, çавăнпа утă çулакансем вата ăвăс сулхăнне вырнаçнă. Васинкке çаранĕпе юнашарах — çĕртме уйĕ. Маруçпа вунтăватă çулхи Лявун плугарь виççĕмĕш кун ĕнтĕ унти уя сухалаççĕ. Утă çулакансене колхоз апат пĕçерсе парать, Маруçпа Лявун та çак кунсенче кăнтăрлана вĕсемпе пĕрлех лараççĕ.

— Пехил Ульки шанма пултарать çаван пек пуласса. Пăх-ха, чип-чиперех çырусем янă çĕртен таçта мура кĕçĕ кайрĕ Пехил. Госпитальте выртать тетчĕç. Çур çул хыпар кĕтет Улька — ни вилнĕ хучĕ, ни хăйĕн çырăвĕ. Çĕр çăтрĕ тейĕн,— сăмаха малалла тăсрĕ Хрĕçти.

— Эй, тупрĕ пуль, ара,— пĕлнĕ пек, çаплах кăшт иккĕленсе каларĕ Шурти Кулине. — Ялта та куçне вылятсах çÿретчĕ те...

— Эп пÿлсан, ют çын патĕнче усрамăттăм хам пата килнĕ салтака,— сăмаха малтанхи йĕр çине куçарчĕ Ярахви Веркки, утă паккусĕ çине тăсăлса выртнăскер.

— Ют арçынна хăвпа юнашарах вырттарăттăн-и?—йĕплесе ыйтрĕ Тяруç.

— Шухăшласа пăхнă пулăттăм. Тепĕр тесен, шухăшламалли те çук. Мĕн, хĕрарăмсем мар-им эпир? Чун çук-и, ÿт çук-и пирĕн?— питне çаннипе хупласа, куçне уçмасăрах калаçрĕ Веркка.

Çакна илтсен, кăвайт умĕнче чей вĕретсе, типĕ вутăшанкă хатĕрлесе тăракан Лявун, темле кĕвĕ шăхăрнă пекки тукаласа, вăрмана кĕрсе кайрĕ. «Кансĕрлес мар, хĕрарăм калаçăвĕ пуçланчĕ»,— терĕ пулас.

— Ача умĕнче намăса пĕлесчĕ хăть,— асăрхаттарчĕ Верккана Маруç.

— Вунтăватта çитсе, ăна-кăна чухламасть тетĕн пуль? Илттĕр, вĕрентĕр, ик-виç çултан авланма вăхăт,—хăйĕннех печĕ Ярахви Веркки.

Çак вак-тĕвек калаçăва Питтăпай Санюкĕ илтмерĕ те тейĕн. Вăл çапла каларĕ:

— Хăть те мĕн калăр та, аманнă салтака Вĕçелисăн йышăнмаллах. Вăл ун патне инçетрен килнĕ. Хисеплесе килнĕ.

— Чипер калаç-ха, Санюк. Çын мĕн калĕ? Ну, эппин, тепрер çул ирттĕр. Вăрçă пĕтиччен кĕтсе пăхтăр Вĕçелис. Хисеплет пулсан, пăрахса каяс çук. Пурăнтăр ялта. Учитель пулнă теççĕ. Вĕренттĕр ачасене,—Вĕçелис шăпишĕн чăннипех пăшăрханнине палăртса калаçрĕ Тяруç.

— Вĕренттĕр, эп хирĕç мар. Вĕçелис килĕшмесен, хам енне çавăратăп,— каллех çăмăлттайла персе ячĕ Ярахви Веркки.

— Çавăр,— терĕ Тяруç. — Сан çине пăхма ухмах пуль вăл.

— Типнĕ кăркка!— паккус çинчен хăвăрт siксе тăчĕ Веркка. — Сăн-пит çук-и, кĕлетке çук-и?

— Мухтанмалли те кĕлеткÿ çеç. Пуçра пулни кирлĕ,— тавăрчĕ Тяруç.

— Апла иккен. Ҫам, тетӗп, ку, шутсӑр ӑслӑскер, пуҫлӑхра ҫӳрег. Тяруҫ пулчӗ-иҫ? Утӑ ҫулма ма килтӗн-ха тата?— парӑнмарӗ Веркка.

— Тьфу!— тарӑхса кайрӗ Тяруҫ. — Ҫалаҫнинчен калаҫманни санпа.

— Ан калаҫ ҫав. Ҫалаҫас пулсан, шутласа калаҫ. Атту тупӑннӑ ӑслӑскер,— Веркка каллех утӑ ҫине сарӑлса выртрӗ.

Туйса илчӗ вара Вӗҫелис: ҫук, ҫын пулӑшаймасть ӑна. Алӑ-урана чуна тӑлласа ҫӳрекен шухӑшсене ун хӑйӗнех йӗркене кӗртмелле. Аманнӑ салтакпа та ун хӑйӗнех калаҫас пулать. «Ҫай» тейӗ-ши вӑл ӑна, «юл» тейӗ-ши? Татӑклӑ шухӑш патне пыраймасть Вӗҫелис. «Ҫай» теме хӑюлӑхӗ ҫитеймест, «юл» теме чунӗ хушмасть.

Вӑхӑт вара иртет те иртет.

Чӗрери арпашу кунран-кун вӑйлӑрах.

8

...Халӑха ял Совечӗ патне пухрӗҫ. Совет председателӗ Раман пичче нумайччен калаҫмарӗ.

— Вӑрҫӑ пуҫланчӗ, юлташсем,— терӗ вӑл. — Районти Ҫар комиссариатӗнчен ҫапла пӗлтерчӗҫ: ҫирӗм виҫӗ ҫултан пуҫласа вӑтӑрултта ҫитнӗ арҫынсен фронта тухса каймалла. Паян вӗсен пӗрремӗш ушкӑнӗ станцӑра пулмалла. Халӗ кам-кам каяссине вуласа паратӑп. Шӑпланӑр, юлташсем.

Пӗр вырӑнта шак хытса тӑчӗҫ ҫынсем. Раман пичче вулама пуҫларӗ:

— Алимов Никандр Алексеевич!..

— Ҫук!—кӑшкӑрса ячӗ Никӑн арӑмӗ Тяруҫ. —Ямастӑп! Ниҫта та ямастӑп эп ӑна! Никӑнӑм!— вара упӑшкине ыталаса илчӗ те, пӗтӗм кӗлеткипе чӗтресе, ӗсӗклеме тытӑнчӗ.

— Васильев Прокопий Васильевич,—кӑшт тӑхтанӑ хыҫҫӑн васкарах вулама пуҫларӗ Раман пичче. — Вырмаскин Иван Иванович!.. Галкин Петр Спиридонович!.. Гармошкин Кузьма Николаевич!..

— Купӑсҫа хӑварасчӗ хӑть. Ыттисене мӗнле ӑсатӑпӑр?— ҫын илтмелле мӑкӑртатса илчӗ шур сухаллӑ Трахвин мучи.

— Трофимов Семен Трофимович!..

— Ак сана—«ӑсатӑпӑр». Ывӑлу та Куҫмапах каять вӗт,—терӗ Ҫтуппан арӑмӗ Маруҫ. Ҫакна кӗтмен Трахвин мучи сасартӑк салхуланчӗ, пуҫне усрӗ, ҫамкине кивӗ

шĕлепкипе сăтăрса илчĕ те пĕр чĕнмесĕр килĕ енне çавăнса утрĕ.

Раман пичче хушаматсене вуласа пĕтерчĕ, куçлăхне хыврĕ, халăх çине пăхрĕ.

— Юлташсем,— терĕ вăл, сассине йăвашлатса. — Пĕлетĕп, йывăр пулать сире. Тăшман вăйлă та хăрушă. Анчах эпир тата вăйлăрах. Ман шутпа, вăрçă нумая пырас çук. Радио та çаплах калать: тăшмана аркататпăрах! Çĕнтерӳ пирĕн пулать! Апла пулсан, фронтра та, кунта, тăван ялта та, хамăрăн Виççырма ятне ярар мар, юлташсем. Арăслан пек çапăçса, вăкăр пек ĕçлесе, Тăван çĕршыва çĕнтерӳ тума пулăшар!

Раман пичче, хăйĕн юлашки сăмахĕсем çынсен чунĕсене витерчĕç-ши тенĕ пек, пĕр вăхăт ялйыш çине сăнаса пăхса тăчĕ. Унтан, куçлăхне сăран йĕнне вырнаçтарса, çапла каларĕ:

— Манăн çакăнпа пĕтрĕ, юлташсем. Камăн калаçмалли пур?

— Манăн,— терĕ Иван, кĕтмен çĕртен яшт çĕкленсе. Вара Вĕçелис хулпуççине лăпкаса хăварчĕ те, халăх умне тухса, председательпе юнашар тăчĕ. — Манăн калаçмалли пур, Раман пичче.

— Тархасшăн,— ирĕк пачĕ лешĕ.

— Халăх,— терĕ Иван. — Тăван ял çыннисем. Шутлатăп та, çак вăхăтра миçе пуху пулса иртмест пуль пирĕн çĕршывра! Юнĕçен нимĕç вăрă-хурахĕ пире чура тума килсе кĕчĕ пулать. А эпĕ калатăп: пулмасть ун пек!— Иван йĕри-тавра пăхса илчĕ. — Акă, Çтуппан та калать, Пракух пичче те, Çумкка та... Кулăс Куçми те çаплах калать: пулмасть ун пек! Пирĕн аттесем, пиччесем, юн тăкса, тар тăкса, çăмăллăн хăтăлчĕç тетĕр-и улпутсемпе пуянсенчен? Аркантейсемпе мăрсасенчен? Э, çук, текех эпир чура пулмастпăрах. Хамăрăн çĕр, хамăрăн кил-çурт, хамăрăн телей пур пирĕн паян. Çав телее сыхлакансем те хамăрах пулмалла. Çыр, Раман пичче, Данилов Иван Данилович хăй ирĕкĕпе фронта тухса каять тесе пĕлтер района! Эп пĕлетĕп, йывăр пулать мансăр Вĕçелиса, куратăр пулĕ, кĕçех ача çуралмалла пирĕн. Анчах манăн çав ача пурнăçне чунилли тăшман килсе таттăр тесе кĕтсе выртмалла-и? Манăн, ашшĕн, упа пек тĕреклĕ арçыннăн, арăмсем мăшкăл тӳсчĕр темелле-и? Çыр, Раман пичче, пĕлтер района...

— Чим-ха, Иван, ачапчалла ан хĕрӳлен эсĕ,— пӳлчĕ ăна председатель. — Вăхăт çитсен сана та ăсатăпăр.

— Паянах, Раман пичче!— çине тăрса, çирĕппĕн каларĕ Иван.

— Юрать, шăнкăравласа пăхăп та, темле çав,— иккĕленчĕ председатель.

Иванăн вара нимĕнле иккĕленӳ те пулмарĕ çакăн пирки. Ашшĕпе амăшне, Çтуппанпа Маруçа, Вĕçелисăн Клавье мăнаккăшĕпе Якур йыснăшне, пĕчĕк Мĕтрие шыраса тупрĕ те вăл пĕр тăхтаса тăмасăр хăйсем патне утма каларĕ. Паçăрах куççуль çăтса тăракан Вĕçелиса чунне хытарса, киле çитсе сĕтел çине хатĕрлеме хушрĕ. Хăй вара председательпе пĕрле ял Советне кĕрсе кайрĕ.

Çапла: «Чунна хытар, Вĕçелис, урăхла май çук»,— терĕ ăна Иван. Ăнланчĕ те, ăнланмарĕ те хăй упăшкине Вĕçелис. «Пĕлетĕп, вăхăчĕ йывăр, Тăван çĕршыва сыхлама вăйлă арçынсем кирлĕ. Виççырмаран вушиккĕн тухса каяççĕ, ытти ялсенчен, хуласенчен миçен пуль тата! Анчах эсĕ, Иванăм, мĕншĕн мана çак йывăрлăхра пĕр-пĕччен тăратса хăварса, хăвăн яту тухмасăрах манран тарасшăн-ха? Мĕншĕн, Иванăм, ача çураличчен те, кĕркуннеччен те кĕтесшĕн пулмарăн? Ай, яка калаçма вĕренсе çитрĕн-çке. «Телее сыхлакансем те хамăр», тетĕн. Ман телее кам сыхлĕ-ха вара? Ачаллă пуçпа пĕччен пурăнас-и, пĕччен çурт тытас-и, выльăхне пĕччен пăхас-и малашне? Эх, Иванăм, Иванăм, çăмăлттайлăх мар-и ку санăн?»

Хăйсем патне кайма тухнă ушкăн хыççăн çакăн пек йывăр та йӳçĕ шухăшсемпе утрĕ Вĕçелис. Пӳрте кĕчĕç. Кашни хуллен, пĕр-пĕрне ăнланса, пĕр-пĕрне мĕнпе те пулин пулăшас тесе калаçаççĕ. Иванăн ашшĕпе амăшĕ хăйсем те питĕ салхуллă, вĕсем çине пăхсан та уласа макăрса ярас килет Вĕçелисăн: «Чунна хытар»,— упăшкин çак сăмахĕсене асра тытни кăна чарса тăрать ăна вĕри куççультен.

Сĕтел пухма Маруç ытларах пулăшрĕ. Вăл та хурлăхлă. Хăйĕн Çтуппанĕпе паян-ыран çакнашкалах уйрăлмалла пулать унăн.

Çук! Ытти вак-тĕвеке, темле тăрăшсан та, астăваймасть Вĕçелис. Çавă çеç куç умĕнче: алăк сарлакан уçăлса кайрĕ те, Иван пӳрте кĕрсе тăчĕ, сĕтел патне иртрĕ, амăшĕн, ашшĕн, Вĕçелисăн, Мĕтрин, хăнасен куçĕнчен тинкерчĕ. Унтан, чĕринче ĕмĕрлĕхе асра хăварас тенĕ пек, пӳртри кашни шăтăк-çурăка сăнама пикенчĕ.

Пурте ун çине чĕнмесĕр пăхса тăчĕç. Ассăн сывласа ячĕ Иван, лăпкăн çапла каларĕ:

— Çăкăр кирлĕ пулать пуль çул çине. Унтан... Хутпа кăрапташ.

«Каять!»— Вĕçелис тӳрех тенкел çине тĕшĕрĕлсе анчĕ. Ун патне хĕрарăмсем чупса пычĕç, лăпланма ӳкĕтлерĕç.

Анчах куççульне текех чарма пултараймарӗ Вӗçелис, упӑшки патне пырса, такмакла-такмакла йӗме пуçларӗ.

Иван хӑй арӑмне ниепле те чараймарӗ. Шӑлне çыртса, ниçта кайса кӗреймесӗр, тем шыранӑ пек, алӑкӑн-тӗпелӗн çӳрерӗ вӑл. Амӑшӗ сӗтел хушшине ларма чӗнсен тин кӑштах сывлӑш çавӑрса илме май килчӗ. Вӗçелис куççульне шӑлса типӗтрӗ, упӑшкин куçӗнчен пӑхма хӑяймасӑр, ӑна илемлӗрех кукӑльсем сӗнчӗ: «Çи, выçӑ ан çӳре, çул çинче темле пулать унта...»

Анчах апат анмарӗ Иванӑн. Ашшӗ черккесем тултарса пачӗ, аллине чӗтрете-чӗтрете сӑмах каларӗ.

— Ывӑлӑм,— терӗ вӑл,— çул такӑр та çавракa пултар, паян ӑçтан тухса кайнӑ, çавӑнтах çавӑрса çитертӗр сана. Вӑрçӑ вӑл — вӑрçӑ. Сыхлан, Иван, пуçна йӗтре айне ан чик. Командирсем каланине итле, аçу-аннӳ ятне, арӑму ятне ан яр. Эпир кунта, ялта, пурӑнкалӑпӑр мӗнле те пулин, кине те инкек курма памӑпӑр. Кун пирки пӗртте ан пӑшӑрхан. Ху ирӗкӳпе кайса, тӗрӗс те тӑватӑн пулӗ. Кӗр çитсен, çав-çавах илсе каятчӗç. Ну юрӗ, чипер çӳре... Ӗçер-ха.

— Эпӗ те тупӑп-ха сана, Иван,— терӗ Çтуппан.— Ырантепӗр куннех тухса пырӑп. Тракторпа ӗçлеме Маруçа вӗрентетӗп те акӑ...

Тухса кайма вӑхӑт çитнӗччӗ ӗнтӗ. Иван каллех мачча çине, стенасем çине пӑхса илчӗ, шухӑша кайрӗ.

— Вӗçелис,— терӗ вӑл, кӑмака çине аллине хурса,— çак çуртри вучах ан сӳнтӗрччӗ, эпӗ таçта аякра пулсан та, вӑл мана ялан хӑй ӑшшипе киле турттӑрччӗ. Унтан тата... тӑван-пӗтен, тус-юлташ ан татӑлтӑрччӗ пирӗн патран.

— Ан пӑшӑрхан, Иван, хам пур чух вучах та сӳнмӗ, тӑвансем те килсе çӳреме пӑрахмӗç,— çирӗппӗн каларӗ Вӗçелис. — Ху кӑна йӗркеллӗ çаврӑнса çит.

...Тепӗр çур сехетрен вӑрçа каякансем тӑван ялпа сывпуллашса уй хапхинчен тухнӑ чухне Виççырма çӗрӗ те чӗтресе илсе çурмаран çурӑлса кайрӗ тейӗн. Карталанса, ал тутрисем сулласа пыракан вуникӗ арçын хӑватлӑ та хурлӑхлӑ юрӑ пуçларӗ:

Чупрӑм кӑна антӑм та
Çут шыв хӗрне,
Сикрӗм кӑна лартӑм та
Эп ким çине.
Мал енелле пӑхрӑм та —
Çул вӗçӗ çук.
Хыçал енне пӑхрам та —
Тӑвансем çук.

Макӑрчӗ, ӳлерӗ ял. Çак вӗççӗр çулпа, паллӑ мар çулпа тухса кайса, ӑçта çитсе хӑйсем валли вилӗм тупасса,

ăçта çитсе йывăр аманасса пĕри те шутламарĕ ун чухне. «Кĕтĕр мана, таврăнатăп!» — терĕ вуникĕ арçынтан кашниех. Мĕнле тĕреклĕччĕ, хитреччĕ, тăванран та тăванччĕ çав арçынсем! Купăс Куçмисĕр пуçне пĕри те таврăнаймарĕ каялла Виççырмана.

— Сывă пул, Вĕçелис, — терĕ Иван, ял халăхĕпе, тăванĕсемпе, тантăшĕсемпе сывпуллашнă хыççăн. — Хăвна сыхла. Эп вăраха мар... Ак çапса салататпăр та çав ирсĕре... Сывă пул, Вĕçелис...

Анчах Вĕçелис Иван сăмахĕсене илтмерĕ те, ăнланмарĕ те. Упăшки, унран уйăрлса, урапа çине кайса ларнине асăрхасан тин тăн пырса кĕчĕ ăна.

— Иванăм! — кăшкăрса ячĕ вăл хăрушшăн, лава хуса çитрĕ. — Иванăм! Илсе кай хăвпа пĕрле. Станцăна çитсе килем пĕрех хут.

— Укçа ывăтрăмăр, Вĕçелис, — ăнлантарчĕ Купăс Куçми. — Укçа ывăтсан, тек ăсатмаççĕ. Асту, Ивана йывăр ан килтĕр.

— Тĕшмĕш ку, Куçма, ĕненместĕп, — хирĕçлерĕ лавпа юнашар васкаса утакан Вĕçелис.

— Чар лашуна! — чăтаймарĕ Иван та. — Лартса каяр. Вăрмана çитиччен хăть.

Анчах çакă та çăмăллăх кӳреймерĕ Вĕçелиса. Тăватă лавпа пыракан арçынсем, йывăр та хурлăхлă юрăсем юрла-юрла, ту çине хăпарчĕç, вăрман хĕрнелле çул тытрĕç. Ытла хăвăрт иртрĕ-çке вăхăчĕ, ытла та кĕске пулчĕ çулĕ. Часах вăрманти çутă кӳлĕ курăнса кайрĕ. Çакăнта çитсен, Иван лашана чарма ыйтрĕ.

— Каç пулать, Вĕçелис, инçете ан пыр, пĕччен таврăнма хăрушă пулĕ, — терĕ вăл, арăмĕ çине пăхма хăяймасăр.

Арçынсем юррине итлесе пырса, кăмăлне хытарнăччĕ пулĕ çав Вĕçелис, тен, куççулĕ юлманччĕ пулĕ, тен, тата упăшки асĕнче ытлашши ачаш чунлă юлас темерĕ-и вăл, — макăрмарĕ, кăшкăрмарĕ хальхинче, сăпайлăн Иван куçĕнчен пăхрĕ те çапла каларĕ:

— Килшĕн ан пăшăрхан, пурте йĕркеллех пулать. Хăвăртрах таврăн. Çырусем яма ан ман...

— Ялан çакăн пек маттур пул, Вĕçелис, — мухтарĕ ăна Иван. — Пуçна çӳлерех çĕкле. Ан ман, çак тĕнчере пĕччен мар эсĕ, тĕнчере сана питĕ хытă юратакан çын пур. Кĕт, Вĕçелисăм, вăхăт нумай иртмĕ, таврăнăп.

— Ахă, — ним калама аптраса, пуçне сĕлтрĕ Вĕçелис.

Лав тапранчĕ. Иван, Вĕçелисран уйăрлса, пĕр утăм, ик утăм турĕ.

— Хăвна хытă сыхла, — хăвăрт-хăвăрт калама пуçларĕ

Иван. — Хăвна ача телейĕшĕн упра! Пĕччен йывăр килĕ. Ялпа пĕрле пурăн, Вĕçелис!

«Пурăн, Вĕçелис! Пурăн, Вĕçелис! Пурăн, Вĕçелис!»— пĕтĕм тĕнчене сасă пачĕ хура вăрман.

Иванпа Вĕçелис хушши, тăсăлакан çип пек, вăрăмланса-вăрăмланса пычĕ. Пĕр-пĕрин сăн-пичĕ часах палăрми пулчĕ, лав çинчи арçынсен ĕмĕлки, Иванăн çӳле çĕкленĕ алли кас сĕмлĕхĕнче шупкалчĕç, çул вăрманалла кĕрсе кайрĕ те, тăсăлакан çип патлатса татăлчĕ.

Йывăррăн утрĕ килс Вĕçелис. Ним шухăшсăр, васкамасăр утрĕ. Тăплавра юн тапни çеç илтĕнсе пычĕ.

Анчах, кайсан-кайсан, шухăш уçăмланчĕ. Киле çитсен мĕн-мĕн тумалли çинчен, ыранхи куна мĕнрен пуçламалли çинчен шухăшларĕ вăл. «Пахчара çумкурăк курăнкалать, çумлас пулать, паян хăярпа кишĕре те шăвараймарăм, ирхине манас марччĕ. Колхоз ĕçне тӳрех хушас çук-ха, мĕнле ăшаланнине ăнланма тивĕç. Чим, ара, хушаканни кам пулĕ, Пракух пиччене те вăрçа ăсатрăмăр мар-и?

Епле хĕрлĕ хĕвелапăç! Çуллахи чи вăрăм кун паян. Хĕвел çапла хĕрелсе анчĕ-ши? Е унта, анăçра, хуласемпе ялсем хытă çуннăран çапла-ши ку? Ытла хĕрлĕ».

Çулĕ паçăр сисĕнмерĕ. Чылаях инçе утмалла-çке Вĕçелисăн. Хирте сулхăн, çӳçентерет. Çавăнпа хăй уттине татах васкатрĕ вăл.

«Çапах хĕвел паян яланхи пек илемлĕн анман пулмалла. Мĕншĕн пĕлĕтсем çине те писев тĕс ӳкнĕ-ха?— çав-çавах канăçсăрланчĕ çамрăк арăм. — Кун пек пулакан марччĕ-çке».

Сăрт çине хăпарнă чух ун хăлхине таçта тем çуйăхашни илтĕнсе кайрĕ. «Турăçăм,— пăшăлтатрĕ Вĕçелис. —Асран тайăлатăп-ши ĕнтĕ? Хĕвел анни куçа урăхла курăнать, хăлхара шуйгтан туйĕ янрать. Хăвăртрах киле çитсе ӳкесчĕ, иçмасса...»

Сăрт çине утса мар, чупса хăпарчĕ вăл. «Хăвăртрах, хăвăртрах — яла, çынсем патне. Мĕнле мурсем çухăраççĕха çаплах? Мĕнле лашасем кĕçенеççĕ? Тем тесен те чирлерĕм пулĕ...»

Мăкăрланса явăнакан хура пĕлĕтсем хушшинче кĕрен хĕлхемсем ялтăртатса илчĕç. Сăрт çамкине улăхса çитсенех, Вĕçелис пичĕ çине хăрушă çутă ӳкрĕ.

«Ял çунать-çке! Тукас çунать!— чĕри çурăлса каймалла сехĕрленсе ӳкрĕ Вĕçелис. Тата хытăрах чĕтреме пуçларĕ вăл, чĕркуççийĕсем лăштах кайрĕç, сывлăш пӳлĕнчĕ. Васкать вăл, анчах урисем итлемеççĕ хăйне. Аран-аран уй хапхинчен кĕчĕ Вĕçелис, кĕчĕ те урамра кĕпĕрленсе тăра-

кан хĕрарăмсем патнелле çул тытрĕ. Çав вăхăтра аслати пек шатăртатса килекен урапа сасси илтĕнсе кайрĕ. Лав Вĕçелис умне çитрĕ, лавçи темшĕн лашине каялла çавăрчĕ те ăна тăп чарса тăратрĕ.

— Лар хăвăртрах, Вĕçелис!— кăшкăрчĕ лавçă.

— Мĕн пулнă кунта? Кам çунать?— хыпăнса ӳксе ыйтрĕ Вĕçелис.

— Лар хăвăртрах!— васкатрĕ лавçă.

Вĕçелис ларчĕ. Халĕ тин вăл Кирука палласа илчĕ.

Лаша каллех урам тăрăх сиккипе чуптарчĕ.

Тепĕр темиçе минутран ним ăнланман Вĕçелис, халăха сире-сире, ялкăшса, çатăртатса çунакан хăйĕн пӳрчĕ патне ыткăнасшăн пулчĕ, анчах темле вăй, такам ун çулне пӳлсе хучĕ. Вăл, тăнне çухатса, çĕр çине ӳксен, ăна каллех лав çине йăтса хучĕç, Иванăн ашшĕ-амăшĕ килне çитерсе вырттарчĕç.

...Çур çĕр çитеспе Вĕçелис хăйĕн çурчĕ вырăнне килчĕ-килчех. Кĕл купи çине, çунса пĕтеймен йывăç таткисем çине, кирпĕч ванчăкĕсем çине чылайччен пăхса ларчĕ вăл. Пĕр кун хушшинче акатуй пулни, çапса çумăр çуни, аслати авăтни, уяртни, Ивана ăсатни, мĕнпур тӳпене хĕретсе, хăйĕн пӳрчĕ хăрушшăн çунни ниепле те шăнăçаймарĕç унăн пуçĕнче. Упăшки кайнăранпа темиçе эрне иртнĕн туйăнчĕ.

— Вăрçă кунта та çитрĕ-им, Микулай пичче?— ыйтрĕ вăл хăй çумĕнче чĕлĕм паккаса тăракан пушарникрен.

— Пахчана паян кăмрăк тухса тăкманччĕ пулĕ те? Пушар хыçалтан, хуралтăран тухнă,— терĕ пушарник.

Сиввĕн, çисе ярасла йăлтăртататакан куçсем, Шатра Марье куçĕсем, тӳрех тухса тăчĕç Вĕçелис умне. Унтан ун хăлхинче пĕр чарăнмасăр тăванран та тăван сасă янрама пуçларĕ: «Пурăн, Вĕçелис! Пурăн!.. Пурăн!..»

## 9

Тĕлĕнетĕн этемрен. Амантрĕ, хуçрĕ, улталарĕ, таптарĕ ăна—ашшĕ-амăшĕсĕр, кил-çурчĕсĕр, юратнă çыннисĕр тăрса юлчĕ вăл — çапах пуç усмарĕ. Чун ыратăвĕ, чĕре хӳхлевĕ чылайччен лăпланаймарĕ пулин те, хăйне хытарчĕ, шăлне çыртса, пурнăç çинченех шухăшларĕ. Темле йывăр пулсан та, тепĕр чух ниçта кайса кĕме çук пек туйăнсан та, «пĕтрĕм» теме васкамасть этем. Унăн пурпĕрех таçта аякра, хăйĕн илĕртӳллĕ ĕмĕчĕ хĕрринче, шевле пек йăлйăл вылякан çутă шанчăкĕ пур. Тусĕсем, тăванĕсем, кӳршĕ-аршисем пур. Унăн хăйĕн халăхĕ пур. Халăх хăвачĕ,

халăх хавалĕпе тĕрĕслĕхĕ нихçан та иксĕлмест. Анса курха Çарăмсан хĕрринчи Тăрна куç текен çăлкуçа. Ĕмĕрсем тăршшĕпе шыв ăсаççĕ унтан Виççырма çыннисем. Чакмасть унăн чĕркĕмĕл пек асамлă шывĕ, темле çанталăкра та ăшăнмасть те, сивĕнмест те вăл. Халăх чунĕ те çавăн пекех.

...Пушанчĕ ял. Арçын сассисĕр тăрса юлчĕ. Иванăн çырăвĕ килсе те ĕлкĕрейменччĕ-ха, унăн ашшĕне Танилене, Çтуппан юлташне, Питтăпай пиччене, Кирука, Мăрса Мишурне фронта илсе кайрĕç. Уксах-чăлах, ватă-вĕтĕ тата хĕрарăмсем кăна тăрса юлчĕç Виççырмара. Колхозри мĕнпур ĕç Вĕçелиспа унăн тантăшĕсем çине, хĕрарăмсем çине, тиенчĕ.

Салхуланчĕç çынсем. Тĕксĕмленчĕ Виççырма сăн-сăпачĕ. Шăпланчĕ пурнăç. Каççерен-ирсерен йытă сасси кăна хуçаланчĕ ял урамĕсенче.

Юлашки вăхăтра, ывăлĕпе упăшкине вăрçа ăсатса, кинĕн чăтма çук хуйхине курса, вăйран кайнă Иван амăшĕ вырăнпах выртма тытăнчĕ. «Мĕтри çеç чирлесе ан ÿктĕр, ал-ура вуçех çыхланса ан лартăр»,— тесе хăрарĕ Вĕçелис. Вуниккĕри ачана вăл ĕне сумассерен вăйпах ăшă сĕт ĕçтерчĕ, вăхăтра çывратма тăрăшрĕ. «Инке пур-ха килте»,— терĕ пулмалла Мĕтри. Яра куна Çарăмсан хĕрринче пулăра çухалса çÿрерĕ вăл. Вĕçелис та чармарĕ ăна, уçă сывлăшпа сывлатăр, хĕвелпе пиçтĕр, чирлĕ амăшĕн асапне курса чунне ан ыраттартăр тесе шутларĕ. Хăй вăл çак кунсенче ĕçе каймарĕ-ха, çурчĕ хыçĕнчи пахча картине майларĕ, çĕрулмине çумкурăкран тасатрĕ, килте яшка пĕçерсе тăчĕ, хунямăшне пăхрĕ.

Председатель, счетоводра ĕçлекен уксах Митра пичче тата Микулай пушарник кăна тăрса юлчĕç хĕлле суйланă правлени çыннисенчен. Фронта тухса кайнă бригадирсем вырăнне хĕрарăмсене суйларĕç. Ответлă ĕçе кÿлĕнме шикленчĕç вĕсем, ĕçе тÿрех йĕркелесе яраймарĕç. Çавăнпа та фермăри хĕрарăмсемсĕр пуçне никам та, унччен пек кĕрепле е сенĕк йăтса, лаша кÿлсе, хире е вăрмана кайма васкамарĕ-ха.

Шухăша кайрĕ çавăн чух Вĕçелис. «Мĕнле-ха капла? Хĕвеллĕ ăшă кунсем тăраççĕ. Вaçинкке çаранĕнчи курăк тахçанах çитĕнсе çитнĕ. Вырăхсене мĕнле хĕл каçарĕ колхоз? Хамăр мĕнле пурăнăпăр? Чим-ха, вăрçăрисем мĕн çиĕç тата? Мĕн курĕç вĕсем эпир вĕсене сĕт-çу, аш-пăш парса тăмасан? Хула ăçтан илĕ апат-çимĕç? Кама кĕтсе выртатпăр-ха эпир?»

Çапла шухăшларĕ те Вĕçелис хăй килте темиçе кун ĕн-

тĕ ним тумасăр ларнăшăн ырăмарланса кайрĕ. Ķаç енне, Мĕтри Çарăмсан хĕрринчен таврăнсан, ăна вĕри яшка çитерчĕ те Маруç патне Шуркассине çул тытрĕ. «Ку часах аптраса ўкекен марччĕ-ха, мĕн шутлать-ши утă çинчен?»— терĕ вăл. Анчах Маруç килте пулмарĕ. Ķартлашка çинче улма шуратса ларакан икĕ карчăк, икĕ тăхлач — Маруçпа Çтуппан амăшĕсем кăна кĕтсе илчĕç ăна.

— Маруç килте çук, тем?— ыйтрĕ Вĕçелис.

— Ара, таврăнаймарĕ-ха çав, каçа юлчĕ паян,—канăçсăрланса калаçрĕç карчăксем.

— Ăçтан таврăнаймарĕ?— пĕлесшĕн пулчĕ Вĕçелис.

— Эс илтмен, эппин. МТСра тракторпа ĕçлеме вĕренет вĕт,— терĕ Маруç амăшĕ, Хĕрхи аппа.

— Хĕрарăм ĕçĕ марччĕ те, пирĕн сăмаха итлемерĕ ĕнтĕ,— сăмах хушрĕ Укçук аппа та.

Карчăксем яшка пиçиччен ларма, Маруç килессе кĕтме тем пек ўкĕтлерĕç пулин те, Вĕçелис килĕшмерĕ. Чунĕ канăçсăрланчĕ унăн, пуçĕнчи шухăш тĕлли-паллисĕр çаврăннине туйса утрĕ вăл Шуркасси тăрăх. Тăкăрлăкра Никăн арăмĕ Тяруç хăйĕн çичĕ çулхи Çерукĕпе вутă тататчĕç, те асăрхарĕç Вĕçелиса, те курмăш пулчĕç, те тата сăмах вакласа, вăхăта сая ярас темерĕç. Çул çинче лавккаран краççын йăтса килекен Трахвин пичче тĕл пулчĕ. Вăл та шарламарĕ, пĕр чĕнмесĕр иртсе кайрĕ. Аслă урама тухсан, Вĕçелис хыçĕнчен тулли лав нăтăртатса килни илтĕнчĕ. Пушарник Микулай пичче пулчĕ ку, вăрмантан çапă турттарса килет.

Кĕперсем тĕлĕнчи çырансен хĕрринче — ешĕл хăмăшлăх. Вĕсемпе юнашар шурти пахчасем тăсăлаççĕ. Çав пахчасенче çулленех сухан ăнса пулать. Ялти хăшпĕр çынсем, Ярахви Верккипе Пехил Ульки пеккисем, уппа самаях услам тăваççĕ, кĕр çитмессерен сухан сутма хулана тухса вĕçтереççĕ.

Çарăмсанăн иккĕмĕш кукăрĕнче ача-пăча яланах шывра шампăлтатаканччĕ. Паян унта никам та курăнмасть. Вĕт-шакăр та ĕçлĕ. Амăшĕсемпе, ват çынсемпе вăрманта вут-шанкă пуçтарать ĕнтĕ кашниех, утă хатĕрлет е ял хĕрринчи шурта хур-кăвакал кĕтет.

Хăрататьçак лăпкăлăх Вĕçелиса. Ялти чĕрĕ пурнăç сўнсе-сўнсе пынăн туйăнать ăна. Çак хăрушлăха мĕнле чарса лартмаллине пĕлеймест вăл. Анчах çакна лайăх чухлать: алă усма юрамасть. Тĕрĕс тăвать Маруç. Упăшкасем вырăнне хамăрăнах тăмалла. Никам килсе пулăшасса та шанмалли çук. Кĕтме юрамасть.

Çак шухăшсемпе колхоз правленине пырса кĕчĕ те Вĕ-

çелис хӑй ахалех канӑçсӑрланса çӳренине тӳрех ӑнланса илчӗ. Колхоз председателӗ, вӑтӑрсенчен иртнӗ Петр Павлович, ялти пек каласан, Петюк пичче, тин кӑна районтан таврӑннӑ иккен те çӗнӗ бригадирсене хӗрсех мӗн-мӗн тумаллине ӑнлантарать.

— Нӑйкӑшса лармалли вӑхӑт мар, юлташсем,— тет вӑл. — Халӗ кашни çын шутра пирӗн. Ӗçсем вара шутсӑр нумай. Апла пулсан, ӗçе тӗплӗ шухӑшласа, лайӑх йӗркелесе ямалла. Ыранах утӑ çулма тухӑпӑр. Бригадӑсем пӗрпӗринпе ӑмӑртчӑр. Пӗр эрне хушшинче пӗтӗм утта çулса, типӗтсе, капансене хывма тӑрӑшӑр. Ватти-вӗтти, арçынӗхӗрарӑмӗ — пурте ӗçре пулччӑр.

Çак вӑхӑтра Вӗçелис патне Раман пичче пырса тӑчӗ.

— Эс тата мӗн ӗçпеччӗ, Вӗçелис?— шӑппӑн ыйтрӗ вӑл, хӗрарӑм куçӗнчен ӑшшӑн пӑхса.

Вӗçелис ним калама аптӑрарӗ. Çӑмарти чӑххине вӗрентме килнӗ пек пулса тухрӗ-çке-ха. Çапах хӑйне алла илчӗ те пытарса тӑмарӗ калас шухӑшне.

— Эпӗ те çавӑн пиркиехчӗ,— терӗ вӑл. — Килте ӗçсӗр ларма намӑс. Утӑ çулма тухасчӗ хӑвӑртрах.

Раман пичче Вӗçелис çине тепре пӑхса илчӗ те çапла каларӗ:

— Маттур эсӗ. Анчах санӑн килтех юлмалла пулӗ. Утӑ çулмалли çын мар эсӗ.

— Ан пӑшӑрхан, Раман пичче. Ытлашши пулмӑп. Утине çулаймасан, апат пӗçерсе тӑрӑп,—хӑюланчӗ Вӗçелис.

— Хӑвӑнне ху пӗл ӗнтӗ,— терӗ вара Раман пичче.

...Ним шухӑшламасӑрах Вӗçелис Тукаса хӑпарчӗ. Çунса кайнӑ çурчӗ хыçӗнчи пахчана тӗрӗслерӗ вӑл, урлӑ-пирлӗ выртакан йывӑç таткисене пуçтаркаларӗ. Унтан тӗл-тӗл хӑрӑмпа хуралнӑ юман пукан çине ларчӗ. Вутӑ çуратчӗ Иван ун çинче.

Çак вырӑнтан Виççырма алӑ тупанӗ çинчи пек курӑнать. Çарӑмсанӑн çутӑ шывӗ, яла çурмаран пайласа, икӗ кукӑр тӑвать. Пӗр кукӑрӗнче, шӑпах аслӑ çул çырма урлӑ каçнӑ çӗрте, вӑл икке юпленет, çавӑнпа кӗперсем те иккӗ. Шыв арманӗ лартма тесе ятарласа тунӑ пӗр юппине. Авӑ, арманӑн хуралса кайнӑ хуп тӑрри кунтанах курӑнать. Анчах Çарӑмсан шывӗ паян арман чулне çавӑрмасть. Ăçта çӳрет-ши унӑн хуçи Питтӑпай пичче? Инçетре ӗнтӗ. Унта, хӗвеланӑçӗнче, паян урӑхла арман авӑрать—вӑрçӑ арманӗ...

Киле каяс тесе вырӑнтан тӑнӑ кӑначчӗ Вӗçелис, урамра сурӑхсене йыхӑракан Шатра Марье сасси илтӗнсе кайрӗ. Кунталлах утать. Вӗçелис вырӑнтан хускалмасӑр тӑчӗ.

Шатра Марье çывхарчĕ, каç сĕмĕнче ют çынна палласа илес тесе, куçран пăхрĕ.

— Эсĕ иккен. Сурăх тесе,— йĕплесе илчĕ вăл.

Вĕçелис чĕнмерĕ.

— Савăнăç пуль-ха. Пуштă Елинкка паçăр сирĕн пата кĕрсе кайрĕ. Çылăха çухатнисене те манмасть иккен турри,— ним пулман пек каларĕ Шатра Марье.

«Иван!— хыпăнса ӳкрĕ çакна илтсен Вĕçелис. —Иван çырăвĕ!»

— Мĕн кашни кун сулланатăн кĕл купи патне?— чĕрре кĕрсе ыйтрĕ Шатра Марье. — Е ĕç тупаймасни ху валли?

Вĕçелис хальхинче те шарламарĕ. Асăн сывласа çеç илчĕ вăл.

Шатра Марье хăйĕн унчченхи кӳрши çине ура тупанĕнчен пуçласа пуçри тутăрĕ таран пăхса илчĕ те çаврăнса утрĕ. «Параç-параç! Параç-параç!»— сăмахсене çăвар туллин кавлесе, хулăн сассипе йыхăрчĕ вăл киле таврăнман сурăхĕсене.

Вĕçелис вара — ăçта утса, ăçта чупса — килне васкарĕ. «Иванăм, сывă-и? Аса илтĕн иккен, Иванăм»,— хăй тĕллĕн пăшăлтатрĕ ун тути. Çак вăхăтра ытла хашкаса чупма юраманнине систерсе, хырăмра çивĕччĕн чиксе кайрĕ, Вĕçелис тăп чарăнса тăчĕ, темиçе хутчен тарăннăн сывларĕ, вара, асăрханса, хуллен малалла утрĕ.

## 10

Хултуйи сассине Вĕçелис аякранах илтрĕ пулин те, уçă кантăка чупса пырса хупма васкамарĕ хальхинче. Сĕтел хушшине ларчĕ, шухăшлăн урамалла тинкерчĕ, салтака кĕтрĕ. Лешĕн утти çывхарнăçемĕн Вĕçелис хумханăвĕ вăйлансах пычĕ, çапах вырăнтан тапранмарĕ вăл.

Пĕчĕк Мĕтри шурта хурсем кĕтет. Вĕçелис хăйне уйăрса панă каçалăка маларах вырса пĕтерчĕ те ĕçрен иртерех таврăнчĕ. Ыран вĕсен бригади тепĕр уя куçать. Каç енне сулăннă ĕнтĕ, анчах хĕвел аниччен вăхăт пур-ха. Паллах, салтак асăрханă Вĕçелис ĕçрен таврăннине. Асăрхаман пулсан, асапланса çӳремен пулĕччĕ.

Акă çитрĕ вăл, çав самант. Аманнă салтак Вĕçелис пӳрчĕ умĕнче, сывлăш çавăрнă пек туса, чарăнса тăчĕ, тарланă питне гимнастерка çаннипе шăлса илчĕ. Васкамасăр пуçне çĕклерĕ.

Вĕçелис кантăк патне пычĕ.

Салтак ăна курсанах пуçне пĕкрĕ, сулахай питçăмартине сиктерсе илсе, кайма пуçтарăнчĕ.

— Кĕр, салтак — терĕ ляпкан Вĕçелис.

Салтак пĕр вырăнта шак хытса тăчĕ.

— Кĕр, салтак,— тепĕр хут каларĕ Вĕçелис, унтан, кантăка хупса, алăк патиелле утрĕ.

Тепĕр самантран салтак темиçе хутчен пўрт алăкне пўрнипе шаккарĕ. Кăмака çумĕнче тăракан Вĕçелис нимĕн те чĕнмерĕ.

Салтак пўрте пĕр сассăр кĕрсе тăчĕ.

Пĕр вăхăт шухăша кайса, салтак çине пăхрĕ Вĕçелис. Унтан хăнана кутник çине ларма сĕнчĕ. Хăй сĕтел хушшинчи сак çине, паçăрхи вырăна, ларчĕ.

Пĕри те нимĕн чĕнмерĕ-ха. Кăмака хысĕнчи шăрчăк кăна пўртре чĕрĕ пурнăç пурри çинчен systerчĕ.

— Шăрăх,— терĕ салтак. —Çумăр ан çутăр.

— Тепĕр эрне тăрсан тем пекехчĕ те. Вырса пĕтерĕттĕмĕр,— салтак сăмахне малалла тăсрĕ Вĕçелис.

— Салтак тетĕн, манăн ят пур. Антун ятлă эпĕ. Ачасем тахçан Антон Кузьмич тетчĕç,— кĕтмен çĕртен каласа хучĕ хăна. — Каланăччĕ те сана, мантăн пулĕ.

Вĕçелис çак сăмаха илтмĕш пулчĕ. Пĕрремĕш тĕлпулăва аса илес килмест унăн.

— Апат çинĕ-и эсĕ?— ыйтрĕ вăл.

— Микулай пичче тин çеç кăнтăрлана килсе кайрĕ. Пĕрле апатлантăмăр. Тавах сана,— терĕ Антун.

— Мĕн пĕçеркелетĕр?— кăсăклапчĕ Вĕçелис.

— Выçă лармастпăр. Микулай пичче те тахçан салтак пулнă. Çĕрулми лайăх анать. Хуçа хăйĕн кĕсрине сума вĕрентнĕ. Сĕт те ĕçкелетпĕр,— ăнлантарчĕ хăна.

— Виççырмара вырнаçас тетĕн-и?— Антун çине пăхмасăрах ыйтрĕ Вĕçелис.

— Аçта каяс? Ниçта та кĕтекен çук. Виç кун каярах районтан килчĕç. Шкулта ĕçлеттересшĕн,— терĕ Антун.

— Килĕшрĕн-и?

— Килĕшес терĕм, Вĕçелис. Кăштăртатса пурăнкалăпăр çапла икĕ хусах,— Антун, ассăн сывласа ярса, пуçне каллех çĕрелле усрĕ. —Унтан тата... кунтан кайни те çĕнĕ асап çеç пулĕ.

— Менле асап?— ăнланмăш пулчĕ Вĕçелис.

Салтак чĕнмерĕ. Вăл сулахай питçăмартине туртăнтарса илчĕ те, ним калама аптраса, алă пўрнисене хуçлаткаларĕ.

Каллех шăрчăк сасси кăна илтĕнчĕ пўртре.

— Хуралтусем юхăннă. Килсе, унтан-кунтан тĕрткелес мар-и? Яра куна ĕçсĕрех çўретĕп,— терĕ Антун тем хушăран.

«Кирлĕ мар» тенĕ пек, Вĕçелис пуçне пăркаларĕ. Хăйĕн шухăшне çапла ăнлантарчĕ:

— Хуралтă сиплеме вăрман кирлĕ. Ăна илме те, сана тӳлеме те вăйăм çитмест. Пурăнкалăп. Вăрçă пĕттĕр-ха, акă. Иванап юлташĕсем, тăванĕсем килĕç. Пулăшĕç.

— Мана тӳлеме кирлĕ мар,— терĕ Антун. —Вăрманне тупма та хамах тăрăшăп. Микулай пичче кĕсрипе усă курма та пулĕ.

Вĕçелис килĕшмерĕ.

— Ну, юрĕ, кай ĕнтĕ, каç пулать,— терĕ вăл.

Антун ним чĕнмесĕр ура çине тăчĕ, хултуйи çине тĕреннĕ май Вĕçелис куçĕнчен пăхрĕ. Унтан çапла каларĕ:

— Ăнлан, Вĕçелис, Иван хушса янă пек, авланма килмерĕм эп сан патна. «Ниçта та кайса кĕрейместĕн, качча тух мана», тени кулăшла кăна пулнă пулĕччĕ. Апла-капла ан шухăшла ман çинчен. Кашни кун çак урампа çӳретĕп пулсан, çакна пĕлсе тăр: иртнине, вăрçăченхине, арăмпа ывăлăма аса илетĕп те, чĕрем çурăлса тухать. Эпĕ, арçын, çавнашкал асапланатăп та, эсĕ, çамрăк хĕрарăм, еплерех шар куратăн пуль? Пулăшас тетĕп-çке мĕнпе те пулин. Тархасшăн, ан ютшăн, ан вăтан манран. Эпĕ вĕт мĕнпур кăмăлтан, таса чĕрепе. Çынран та хăраса ан лар. Ку вăл япăх йăла — ял йăли.

«Куççуль сиксе ан тухтăр, çак саманта мĕнле те пулин чăтса ирттерес,— шухăшларĕ Вĕçелис. —Ăнланатăп эпĕ сана, Антун, е тата, мĕнле калапă-ха сана ачасем, Антон Кузьмич, ăнланатăп сана, чунăм чул мар: ырă тăвасшăн эсĕ мана, çак йывăрлăхра мĕнпе те пулсан пулăшасшăн. Иван сăмахне асра тытса çӳретĕн-ха ĕнтĕ кашни кунах.. Ху та пĕччен тата, ху та тăлăх. Мĕн тăвас-ха санпа, Антун, мĕнпе тав тăвас сана çепĕç чĕрӳшĕн?»

Антун алăк патнелле утса кайрĕ.

— Сывă пул,— терĕ вăл. —Чармастăн пулсан, татах килĕп.

— Кĕпӳ-йĕмне илсе кил, çуса парăп,— «кил, алăк яланах уçă» тенине систерсе каларĕ Вĕçелис.

Антун тухса кайсан тин хăйĕн юлашки сăмахĕ мĕне пĕлтернине пĕтĕм чунĕпе ăнланса илчĕ вăл.

«Ухмаха еретĕп пулмалла. Мĕн туса хутăм-ха, ăссăрскер,— шухăшларĕ Вĕçелис, хăй çине тарăхса. — Çын тем калĕ. Мĕтри мĕнле пăхĕ куçран?»

Анчах чун тарăхăвĕ хальхинче вăраха пымарĕ. Таçта, шалта, темле çăмăллăх кӳрекен юхăм пуçланчĕ те пĕтĕм кĕлеткене, пуç мимине сăрăлтатса саланчĕ. Ырă-ырă, лăпкă-лăпкă пулса кайрĕ тӳрех. Иртенпе тыра вырса ĕшенни

те, иртнĕ кунçулăн чăтма çук пысăк йывăрлăхĕ те çав çутă юхăма кĕрсе шупкаланчĕç, вăйсăрланчĕç, манăçрĕç. Куç-кĕскирен кăвак куçлă, çӳхе куç харшиллĕ, сылтăм питçăмарти çинче пĕчĕкçеççĕ турпаллиллĕ, сарă та хулăн çивĕтлĕ çамрăк хĕрарăм пăхать. Унăн ăслă куçĕсенче çутă ĕмĕт хĕлхемĕ çиçет.

## 11

Вăрçăчченхи пекех, темиçе лаша кӳлсе килчĕç вĕсем Ваçинкке çаранне. Анчах юрă юрламарĕç, шӳтле-шӳтле калаçмарĕç, шăппăн пычĕç.

Вĕçелис хĕвĕнче Иванăн çырăвĕ выртать. Каçхинех темиçе хут та вуласа тухнă ăна, кашни йĕркине халĕ пăхмасăр калама пултарать вăл. Йывăр, питĕ йывăр Ивана, вăрçă пырать, вут-çулăмпа, вилĕмпе юнашар тăрать унăн савнă çынни, çапах кăтартасшăн мар çавна, пурне те тĕрĕссипе çырса, арăмĕн чунне ыраттарасшăн мар, мăнтарăн.

Ялта калаçнă пекех, Раман пичче Вĕçелис валли типĕ вут-шанкă хатĕрлесе пачĕ те, ăна чей вĕретме, кăнтăрлахи апат пĕçерме хушса хăварчĕ, хăй вара, пĕчĕк сунталĕпе мăлатукне йăтса, хĕрарăмсем хыççăн Таркăн çăлĕ патĕнчи уçланкă еннелле çул тытрĕ.

Сĕтеклĕ курăка çăвар туллин кăмăртаттарса çиекен виçĕ лаша та Вĕçелис кăна тăрса юлчĕç халĕ ку вырăнта. Ватă ăвăс çулçисене çил чăштăртаттарать. Миçе çул ларать-ши çак ăвăс? Ун айĕнче, тен, Вĕçелис ашшĕпе амăшĕ те, вĕсемпе тантăшлă е вĕсенчен аслăрах çынсем те ларнă пулĕ. Çавна пĕлеймест Вĕçелис. Анчах кунта хăйĕн Иванĕ ларнине лайăх астăвать вăл. Çапла, ав çав шĕшкĕлĕх патĕнче Иванпа ытти арçынсем выртса тăракан хӳшĕччĕ. Вĕçелис хӳшши вара ав çав тӳпемри хурама çывăхĕнчеччĕ. «Мĕншĕн паян та çавăн пек мар? Мĕншĕн унăн Иванĕ таçта аякра, таçта тамăкра çӳрет çак кун? Мĕншĕн ăвăс ытла та салхуллăн пăшăлтатать?»

Вĕçелис хĕвĕнче Иванăн çырăвĕ. Хăй аллипе çырнă ăна упăшки. Апла-тăк çывăх вĕсем паян. Чĕре çумĕнчех выртать унăн çырăвĕ.

«Аван-и, юратнă Вĕçелисăм!

Ырă кун, ырă сехет тĕлне пултăр ман çырăва тытса вулама. Чи малтанхи йĕркерех хăвна хĕрӳллĕн ыталаса чуптăватăп. Манран аттепе аннене, Мĕтрие хĕвел пек пысăк салам кала...»

«Аçу та сан пекех вăрçăра çав ĕнтĕ, тăванăм. Пĕлеймес-

тĕн эсĕ, ăсатрăмăр ăна. Эс кайсан, тепĕр эрнеренех ăсатрăмăр. Аннӳ сан саламушăн шутсăр савăнчĕ. Аçу кайнăранпа вырăнпах выртать вăл, Иванăм. Çырăвна вуласа патăм та, сăнĕ-пичĕ çăлтăр пек çуталса кайрĕ. Апат та ванах çирĕ каçхине. Çыр çав, час-час çырса тăр, савăнтар аннӳне. Тен, сан çырăвусем тĕлĕнтермĕш эмел вырăнне пулĕç. Юрĕ, эп пĕлтермĕп сана аннӳн йывăр чирĕ çинчен. Халь санăн чунна хуçма юрамасть. Санăн çирĕп кăмăллă пулмалла. Мĕтри вара сиксех ташларĕ эс ун валли хĕрлĕ çăлтăр илсе килме сăмах пани çинчен пĕлсен. Лайăх ача вăл, Мĕтри. Каланине итлет. Кунĕпех хурсем кĕтет. Каçхине пулă тытса килсе çитерет...»

«...Пĕлетĕп, Вĕçелисăм, çак вăхăтра шутсăр йывăр сана. Эх, ыранхине курса тăнă пулсан, вăрçă хыççăн тин шухăшламаллаччĕ те ача çинчен. Мĕн тăвăн, тӳсесех пулать. Пĕтĕм çĕршыв тӳсет. Пĕтĕм халăх пысăк йывăрлăха кĕрсе ӳкрĕ. Чăт, Вĕçелис. Хĕл каçмалăх вутă-шанкă çитет-ха санăн. Ене пăрушне кĕркунне пусса çи. Сурăхсем пирки ху шухăшласа пăх. Мăрье тĕлĕнчен шыв каймасть-и? Хуплăп теттĕм те лайăхрах, ĕлкĕреймерĕм. Аттене кала-ха ун пирки...»

«Эх, Иванăм, Иванăм. Кăлăхах пуçна çĕмĕретĕн çурт пирки шухăшласа. Пурччĕ эс тунă çурт. Халĕ çук. Çунса кайрĕ. Эп айăплă мар. Такама канăç памарĕ иксĕмĕр çавăрнă йăва. Çакăн çинчен те çырса ямăп сан патна. Килсен, хăвах курăн. Таврăн çеç. Çĕнĕ çурт çавăрăпăр санпа. Çынна мăшкăллаттармăпăр урăх...»

«...Кунта эпĕ Антун ятлă хамăр енчи пĕр чăвашпа паллашрăм. Учитель пулнă хăй. Унăн питĕ пысăк хуйхă. Вăрçă умĕн вăл арăмĕпе икĕ çулхи ывăлне хунямăш патне Белоруссири пĕр хулана ăсатнă та халĕ тĕлне-йĕрне те тупаймасть. Вăл енче вăрçă чи малтан пуçланнă. Çăлăнса тухайрĕç-ши, тухаймарĕç-ши тесе, ниçта кайса кĕреймесĕр çӳрет Антун. Хăй ырă та харсăр чăваш.

«...Унта та хăв пекех ырă юлташ тупăннă сана. Пĕрле пул, ара, инкек тӳснĕ çынна сăмахпа та пулин пулăш. Айяй, йывăр пуль çав салтака. Пурăнаççĕ-ши хăть çывăх çыннисем? Шанчăкне ахаль упрамасть-ши сан юлташу? Пурăнаççех пуль-ха тесе, йăпат эс вăл çынна, Иванăм. Мĕн вĕрентмелли пур сана, чĕрӳ сан çу пек ырă та, çакна мансăрах лайăх пĕлетĕн ĕнтĕ эсĕ...»

Çакăн пек шухăшсемпе, савнă Иванĕпе калаçа-калаçа, ыратакан чунне йăпатса, Вĕçелис çĕрулми шуратрĕ, хăрăмланса пĕтнĕ пысăк хурана çурĕ те ăна юман кашта çине çакрĕ, кăвайт чĕртрĕ. Хурăн хуппи çатăртатса илчĕ, пĕтĕ-

рĕне-пĕтĕрĕне çуна пуçларĕ, йăлтăркка çулăм вакă çаппа лапах хыптарчĕ те, уçланкă çийĕн çӳхе тĕтĕм йăсăрланса хăпарчĕ.

Кăнтăрлахи апатчен вăхăчĕ чылайччĕ-ха. Пĕр тапхăр кăвайт çине пăхса ларчĕ Вĕçелис. Юнашар ларакан-çӳллĕ юмансен кашлавĕ, хутран-ситрен лашасем тулхăрни, пăвансем нăрăлтатса вĕçни пĕчченлĕх туйăмне пушшех вăйлатрĕç. Хăй ытла мĕскĕн те хӳтлĕхсĕр тăрса юлнине çивĕчрех те çивĕчрех туйрĕ çамрăк хĕрарăм. Сисмесĕрех тутар вĕçĕпе темиçе хутчен куç аяккисене шăла-шăла илчĕ вăл, çак аслă вăрман варринче, çак пысăк çĕр çинче ытла та пĕччен пулнишĕн хурланчĕ. Хăçан вĕçĕ пулĕ çак пурнăçăн? Пулĕ-ши пĕрре? Нивушлĕ каллех савăнăç çитĕ? Нивушлĕ таврăнĕ Иван? Вара паянхи кун та аса илме çеç юлĕ-ши? Е телей таврăнсан, каллех шăкăл-шăкăл килĕштерсе пурăнма пуçласан, çак вăхăта манса кайĕ-ши Вĕçелис? Эх, пултăрччĕ çав çапла, пултăрччĕ! Турăçăм, чăтăмлăх пар мана! Тĕрĕс-тĕкел илсе çитер Ивана тăван киле! Илсе çитер, турăçăм!

«...Чăт, Вĕçелис. Эс яланах маттур пулаканччĕ. Ачуна йĕркеллĕ çуратсан, тен, çăмăлрах пулĕ. Тен, вăрçи те ытла вăраха каймĕ. Вара таврăнăп та яла... Эх, Вĕçелис, акатуйĕнчен тата темиçе така илсе пырса парăп-ха сана!»

«...Ых, фашист! Мĕншĕн уйăртăн-ха пире?!— чăтса тăраймарĕ Вĕçелис, унтан пĕтĕм чунĕпе ăна ылханма пуçларĕ: — Çынçиен. Çĕлен-калта. Намăссăр. Çĕр çăттăр сана! Куçна çăхансем сăхса кайччăр!..»

Çак самантра Вĕçелис куçĕ тĕлне урапа вĕçĕнче йăлтăртатса выртакан çава тĕл пулчĕ. Çамрăк хĕрарăм ура çине тăчĕ, васкасах урапа патне утса кайрĕ, çавана алла илчĕ, унăн çивĕчĕшне тĕрĕсленĕ пек турĕ те хăюллăн уçланкă варрине çул тытрĕ.

Çава аврине пĕтĕм вăйпа çатăрласа тытнă хĕрарăм сарлака паккус пуçларĕ. Хĕр чухнехи пек, ывтăнса çулма пикенчĕ вăл çăра та çӳллĕ курăка.

Кăрсс! Кăрсс! Кăрсс!— туса тăчĕ çава сасси. Тайăлчĕ, ӳкрĕ курăк, умра хăватлă хум пек сирĕлсе пычĕ вăл. Шăлне çыртса тăрăшрĕ Вĕçелис. Пичĕ çине шăрçа пек тар тапса тухрĕ, çĕре шăпăртатса тăкăнчĕ, куçа тăварпа касрĕ. Виçĕ паккус тунă çĕре самаях тарларĕ вăл, çапах ларса сывлăш çавăрас темерĕ-ха хĕрарăм, тăваттăмĕш паккус пуçларĕ, хăй çаплах тарăхса пăшăлтатрĕ:

«Çук, фашист, эс пире пĕтереймĕн, килсе кĕр-ха пирĕн пата, сана эпир—ак çак çавапа, ак çак çавапа... ку-

рӑк ҫулнӑ пек... Сана эпир — сенӗкпе, кӗреплепе, хӗрарӑм шӑлӗпе. Тытамак тыттӑр сана, ҫӗр ҫӑттӑр. Ҫынна вӗлерме килнӗ этемӗн пурӑнма тивӗҫ ҫук! Ылхан, ылхан сана, фашист!..»

Укрӗ, ҫатӑртата-ҫатӑртата касӑлчӗ вӑрӑм курӑк; вӗри ҫапӑҫу хирӗнче пӗлӗт пек тапӑнса килекен вӑрӑ-хураха тӗпрен кӑкланӑ пек туйӑнса кайрӗ Вӗҫелиса, вӑл сулӑнчӗ, сулӑнчӗ, паккуса сарлакарах та сарлакарах илме тӑрӑшрӗ; ҫав хушӑра хӗвел ҫунтараса ярас пек хӗртрӗ, пӗтӗм ӳт-тир тӑрӑх пӑчӑртатса юхакан тар касрӗ, чӗпӗтрӗ; хӗрарӑм куҫӗсем хуралса-хуралса килчӗҫ, пилӗкӗ тӗлӗнче чӑтма ҫук ыратса кайнине туйрӗ вӑл, вӑйсӑррӑн ахлатса ячӗ, ҫавине аллинчен кӑларса пӑрахрӗ те тӗм айне тӗшӗрӗлсе анчӗ. «Турӑҫӑм,— пӑшӑлтатрӗ хӗрарӑм. — Тӳсӗм пар мана, ан пӑрах. Эпӗ хама кӑна мар, Ивана кирлӗ, эпӗ ҫуралас ачана кирлӗ. Ҫӑлсам, ҫӑлсам мана... Ай... Ай...»

Тем лутӑркарӗ хӗрарӑма, ниҫта кайса кӗреймесӗр, пӗрре аяк пӗрчи ҫине, тепре ҫурӑм ҫине выртрӗ вӑл, урисемпе тӗмӗсене тустарчӗ, вӑйсӑрланнӑ пӳрнисемпе курӑка ҫатӑрла-ҫатӑрла илсе хӑй айне хучӗ, ҫав вӑхӑтрах аялти тумран хӑтӑлма тӑрӑшрӗ. Анчах уҫланкӑ варринчех ларакан шӗшкӗ тӗми килӗшмерӗ Вӗҫелиса, ытла уҫӑ ҫӗрте пулнӑн туйӑнчӗ, вӑл вара, хӑйӗн асапне никам та ан куртӑр, ан пӗлтӗр тесе, шӑлне ҫыртсах, чӑтлӑхалла упаленчӗ. Ҫапах ытла шала кӗме ӗлкӗреймерӗ вӑл, темӗнле вӑй ӑна каллех ҫурӑм ҫине ҫавӑрса ҫапрӗ, тем хытӑ мекӗрлентерчӗ, икӗ куҫӗ сиксе тухасла ыратса кайрӗ, умӗнче вут-хӗм вылятма пуҫларӗ. Мӗн пулнине ӑнланаймасӑр, ҫари ҫухӑрса ячӗ хӗрарӑм: хӑй сассине кам та пулин илтсе пулӑшма килессе кӗтрӗ-ши е чӑтма ҫук ыратнине тӳсеймерӗ-ши? Пӗрре чӑм-шыва ӳкрӗ Вӗҫелис, тепре сивве тӳсеймесӗр чӗтрерӗ. Хӑйӗн икӗ енӗпе ӳсекен ҫап-ҫамрӑк хурӑнсене ҫатӑрласа тытнӑ хӗрарӑм пичӗ ҫине хӗвел пайӑрки ӳкрӗ те, Вӗҫелис ҫӑмӑллӑн шуса иртекен шурӑ пӗлӗт таткисене курса юлчӗ, ҫывӑхри вӗрене ҫине пӗр пӗчӗк кайӑк вӗҫсе пырса ларнине асӑрхарӗ. «Кайӑк,— терӗ Вӗҫелис хӑй ӑшӗнче,— кайӑк, Иван пулса вӗҫсе килмерӗн-и эсӗ? Ан кай-ха, эппин, ан кай-ха, пулӑш мана, мӗскӗне, пулӑш-ха мана, Иванӑм». Анчах кайӑк чӗрик! тесе хӑварчӗ те, пӑрӑлтатса, чӑтлӑха кӗрсе кайрӗ, курӑнми пулчӗ.

Каллех чӑтма ҫук хӗн-асап пуҫланчӗ.

...Каҫхине, хӑйӑ ҫутсан, район больницинче тӑна кӗчӗ Вӗҫелис. Хӑй ӑҫта пулнине тӳрех ӑнланаймарӗ вӑл. Куҫне уҫнӑ-уҫманах шап-шурӑ мачча курӑнса кайрӗ. Вӑйсӑррӑн унталла-кунталла пӑхкаларӗ хӗрарӑм: шурӑ стенасем,

шурăпа сăрланă алăк, шурăпа витнĕ краватьсем... Хирĕçех чӳрече иккен. Чим, ара, кантăкран Тяруç пăхса тăмасть-и? Тем тесен те вăлах. Хăйĕн тусне палласа илнишĕн савăнса, Вĕçелис йăвашшăн йăл кулчĕ, анчах лешĕ куçне тутăр вĕçĕпе хупларĕ те, васкасах кантăк умĕнчен пăрăнчĕ. «Ăçта-ши эпĕ?»— ăнланаймарĕ хĕрарăм. Çав самантра ун пуçĕнче пĕртен-пĕр шухăш çиçĕм пек вĕлтлетсе илчĕ: ача! Хăвăрт-хăвăрт хăйĕн пĕр енне, унтан тепĕр енне хыпаласа пăхрĕ вăл. Никам та çук. Кравать çине чавсипе тĕреленсе пуçне çĕклеме тăнăччĕ Вĕçелис, анчах çав вăхăтра таçтан шурă халатлă хĕрарăм чупса пырса чăрмантарчĕ.

— Юрамасть, юрамасть. Тăма та, ларма та. Сире халь канлĕх кирлĕ. Выртăр та ан хускалăр урăх,—çепĕççĕн, çав вăхăтрах хистесе каларĕ сестра.

— Ача... ача ăçта?— шăппăн ыйтрĕ Вĕçелис.

— Вăйсăр-ха эсир. Вăй илĕр те акă... Выртăр, выртăр. Пĕртте хумханма юрамасть халь сирĕн,— сестра Вĕçелиса утиялпа витсе хăварчĕ. Хăй вара, «манăн ĕçсем татах нумай-ха» тенĕ пек, васкасах пӳлĕмрен тухса кайрĕ.

«Çапах ăçта-ха ача? Кам çуралчĕ-ши? Ывăл кĕтетчĕ Иван. Тĕреклĕ-ши, сывă-ши?»— хăйпе хăй пăшăлтатрĕ Вĕçелис. Каллех чӳрече çине тинкерчĕ вăл, пĕр кана урамри хурăн çулçисем çилпе вĕлтĕртетнине сăнаса выртрĕ. «Пурăнатăп, эппин,— хăйпе хăй калаçрĕ Вĕçелис. — Каллех хĕвел пăхать, çил вĕрет. Ача ăçта-ши? Ара, тӳрех памаççĕ пуль-çке, больницăна илсе килнĕ авă. Апла-тăк, питĕ йывăр çуратнă. Çавах çăлса хăварчĕç иккен тухтăрсем. Чимха, тин кăна Тяруç сăнĕ курăнманччĕ-и?»

Вĕçелис çапла ăшталаннине пĕлнĕ пекех, кантăк умне каллех Тяруç пырса тăчĕ. Куçĕсем хĕрелнĕ хăйĕн, сăнĕ салху. Çапах Вĕçелиса курчĕ те хăй йăвашшăн йăл кулма тăрăшрĕ.

Вĕçелис каллех пуçне çĕклесшĕн пулчĕ, анчах вăхăтра аса илчĕ: сестра чупса кĕрĕ те апла-капла вăрçса пĕтерĕ, çуралнă ачана та часах илсе килсе памĕ. Çавăнпа вăл, питне чӳрече еннелле çавăрса, хăрах аякки çине выртрĕ, юнашар койка çинче пĕчĕкçеç ачине чĕчĕ ĕмĕртсе ларакан хĕрарăмран тăпсаллă кантăка кăшт та пулин уçма ыйтрĕ. Лешĕ ăнланчĕ. Пӳлĕме уçă сывлăш кĕчĕ. Тяруç сасси уçăмлăнах илтĕнме пуçларĕ.

— Хăвна мĕнле туятăн, Вĕçелис?— ыйтрĕ вăл.

— Йĕркеллех пек-ха,— хуравларĕ Вĕçелис,— анчах вăй çук. Темле тимĕр урапа таптаса лутăркарĕ тейĕн. Итле-ха, Тяруç, кунта мĕнле лекнĕ эпĕ?

— Халь ан та ыйт. Кайран каласа кăтартăп. Акă, сĕт-

пе чакăт илсе килтĕм. Санăн халь вăй пухас пулать,— Вĕçелис çине пăхма хăяймасăр калаçрĕ Тяруç.

— Ача... Пĕрремĕш ача...—шухăша кайса, хăй хĕпĕртенине, хăй тинех амăшĕ пулса тăнине палăртасшăн пулчĕ Вĕçелис. Анчах унăн юлташĕ çак сăмахсен пĕлтерĕшне хăй пек ăнланчĕ пулмалла, çавна пула тӳрлетме çук йăнăш туса хучĕ.

— Ан пăшăрхан, Вĕçелис,— терĕ вăл, пăлханса,— ачусем татах пулĕç-ха. Лăпланма тăрăш.

Тяруç мĕн каланине тӳрех тавçăраймарĕ Вĕçелис. Унтан пуçне тем çивĕччĕн пырса çапса ыраттарнине туйса илчĕ вăл, ĕненесшĕн пулмарĕ, вара пуçне çĕклерĕ те Тяруç çине шăтарасла пăхрĕ, тутине чĕтретсе, çапла каларĕ:

— Мĕн каларăн эсĕ?

— Лăпланма тăрăш терĕм-çке, Вĕçелис. Ачуна пытарчĕç пулĕ ĕнтĕ. Кăнтăрлах илсе кайрĕç те,— сăмахĕсене каласа пĕтеричченех хăй мĕн тери пысăк йăнăш тунине ăнланса, çапах халĕ ĕнтĕ тĕрĕс сăмахран пăрăнма май çуккине чунĕпе туйса, пăлханнине пытарма тăрăшса, икĕ куçне те тутăрпа хупласа хучĕ Тяруç.

— А-а-а!— хыттăн йынăшса илсе, тӳрех минтер çине лаплатрĕ Вĕçелис.

Палатăна шурă халат тăхăннă темиçе хĕрарăм чупса кĕчĕ. Тяруç вара, çак хĕвĕшӳшĕн хăй çеç айăплине пĕлсе, тăнă çĕртех çĕре тĕшĕрĕлсе анчĕ, хевтесĕр, хӳтлĕхсĕр, çылăхсăр ывăл ачана Вĕçелис мар, хăй çухатнă пек, тарăннăн сывлăш çăта-çăта, ĕсĕклесе йĕме пуçларĕ.

## 12

Петюк пичче хăй ирĕкĕпе вăрçа кайнă хыççăн килнĕ çĕнĕ председателе, Архип Иванович Громова, тахçан МТСра политпай начальникĕ пулнăскере, Вĕçелис хăйне куричченех килĕштерчĕ. «Çĕнĕ çын вăрçă нушине нумай тӳснĕ теççĕ, çав нушара вăл хăрах аллине çухатса хăварнă, çапăçу вăхăтĕнче, тен, Ивана та курма пултарнă»,— тесе шухăшларĕ вăл председатель чĕнтернипе колхоз правленине утнă чух. — Ун пекки хамăр çынах, ăнланакан çынах пулмалла-ха...»

Йăнăшмарĕ Вĕçелис. Вăл çитнĕ çĕре правлени умĕнче халăх чылайччĕ ĕнтĕ. Правлени алăкĕ умĕнче, çӳллĕ картлашка çинче, Раман пиччепе районтан килнĕ уполномоченнăй тата вăл — çĕнĕ председатель тăраççĕ. Председатель шупкаланнă гимнастеркăпа, галифе шăлаварпа. Сылтăм алă пулмалли вырăнта — пушă çанă, ăна пиçиххи хушши-

не хестернĕ. Хăй типшем питлĕ. Пысăках мар пулин те, тĕреклĕ. Вăтăрсенче пулмалла.

— Пуçлар, Архип Иванч,— терĕ Раман пичче. — Пур пек халăх пухăнса çитрĕ.

Председатель пĕр-ик утăм маларах, халăх умнерех, тухрĕ.

— Хĕрарăмсем, стриксемпе карчăксем, ачасем,— терĕ лăпкăн Архип Иванович. — Йывăр вăхăтра, çĕршывра хăрушă вăрçă пынă вăхăтра, паллашма лекет манăн сирĕнпе. Архип Иванч, теççĕ мана. Хушаматăм — Громов. Ан айăплăр, ан ятлăр. Çапла килсе тухрĕ,— председатель сылтăм хулпуççине сиктерсе илчĕ. — Пăшал тытас çын мар эп текех. Шел, тавăраймарăм тăшмана...

Хĕрхенчĕç хĕрарăмсем çĕнĕ çынна, пĕри тутăр вĕçĕпе куçне шăлса илчĕ, тепри, сасăпа макăрса ярас мар тесе, шăлне çыртрĕ. Мĕнле-ши унта хăйĕн савнă упăшки е ывăлĕ, пиччĕшĕ е шăллĕ? Вăрçă вăрçах-çке вăл...

— Анчах, юлташсем, туссем, тăвансем, макăрса лармалли вăхăт мар халĕ,— хĕрарăмсен кăмăлĕ çемçелнине туйса, хăйĕн сăмахне малалла тăсрĕ Архип Иванович.— Тăшман вăйлă та хаяр. Ăна çапса аркатас тесен, хамăрăн питĕ вăйлă пулмалла. Çĕнтерӳшĕн ырми-канми тăрăшмалла, ик çыншăн, виç çыншăн ĕçлемелле,— унтан кăштах сывлăш çавăрчĕ те хăйĕн сăмахне малалла тăсрĕ:—Çураки çывхарса килет. Çак тапхăр ял ĕçченĕсемшĕн уйчен те йывăрччĕ. Халĕ пире пушшех йывăртарах. Ĕç алли çителĕксĕр. Машинăсемпе тракторсем, лашасем сахалланчĕç, вĕсене вăрçа илсе кайрĕç. Анчах, юлташсем, туссем, тăвансем, Калинин юлташ пире çапла каларĕ: «Ялхуçалăх ĕçĕнче кая юлни вăл—вăрçăри пысăк çитменлĕхпе пĕрех пулнă пулĕччĕ»,—терĕ. Темле йывăр пулсан та, пĕтĕм ĕçе вăхатра тумалла пирĕн. Çавăнпа та ним кĕтмесĕр-тумасăр, вăрлăха çуракине хатĕрлеме тытăнмалла, мĕнпур ут таврашне малтанах хатĕрлесе хумалла. Лашасене лайăх тăрантармалла. Унсăр пуçне ĕнесемпе вăкăрсене кӳлме вĕрентмелле. Ĕç питĕ нумай, юлташсем. Эпĕ кунта пухăннă мĕнпур халăха, уйрăмах хĕрарăмсене, çирĕп шанса тăратăп. Вăрçă хăвăртрах пĕттĕр, савнă упăшкăрсем, каччăрсем, ывăлăрсем часрах киле таврăнччăр тесен, вăя шеллеме юрамасть.

— Пĕчĕк ачасене ăçта хурăпăр?— председателе пӳлсех ыйтрĕ хыçалкасри Вартюк. — Манăн, авă, виççĕн вĕсем. Пĕри тепринчен пĕчĕкрех.

— Тĕрĕс ыйту,— терĕ председатель. Ун çинчен те шухăшланă эпир. Ача яслийĕ уçăпăр. Унсăр пуçне çураки вăхăтĕнче уйра апат пĕçерсе тăма пуçлăпăр.

Тахăшĕ председательтен тем ыйтрĕ. Председатель сулахай аллине сулкала-сулкала хĕрӳллĕн ăнлантарма пуçларĕ, анчах Вĕçелис унăн сăмахĕсене илтмерĕ. Типшĕм питлĕ, вăрçă нуши-хуйхине самай чăтса ирттернĕ Архип Иванович шухăша ячĕ ăна. Вĕçелис пĕрмай председателĕн пушă çанни çине пăхса тăчĕ. «Иванăм, Иванăм,— хăйпе хăй калаçрĕ хĕрарăм,— çырусенче темле çĕкленӳллĕ сăмахсем çырса яратăн пулин те, халĕ аванах ăнланатăп ĕнтĕ,— йывăр сана. Мĕн вăл эпĕ тӳссе ирттерни, санпа танлаштарсан! Эсĕ кашни кун вилĕм умĕнче, хĕвелпе ĕмĕрхи каç чиккинче тăратăн. Малтан эс «вĕрентĕм, çав вăхăт çамăл пулчĕ», кайран «хĕвеланăçнелле каятпăр, нимĕçсем курăнмаççĕ-ха», унтан «пĕчĕкçеç çапăçу пулса иртрĕ», «вилнисем пулмарĕç», тата каярах «çапăçу ăнăçлă иртрĕ, тав турра, фашист пули кăшт çеç шăйăрттарса кайрĕ»,—тесе çыртăн. Ку йăлтах мана йăпатни ĕнтĕ. Çĕр кисренсе тăни, вут-çулăм ялкăшни, юнашар тăракан юлташусем виле-виле выртни çинчен пĕр сăмахпа та пĕлтермерĕн эсĕ. Леш, Антун ятлă тусу, вара мана ăнланнă, авă... Виçĕ кĕтеслĕ çыру, эс çырман çыру, килсе çитсен, «Пĕтрĕм иккен, татăлчĕ иккен ĕмĕтĕм», тесе шутланăччĕ. Тавах, пурте йĕркеллех пулчĕ. Антун çыру ăшне хаçат татки çеç чиксе янă. Анчах çав татăкра — пурте сан çинчен. Кашни кун вуланăран, пĕр пăхмасăр каласа пама пултаратăп эпĕ ăна. Акă вĕсем, çав йĕркесем:

«...Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн, çак ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Иван Данилов хĕрлĕ армееца Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă...»

Çак тĕлте хаçатри статьяна касса татнă та хĕррине: «Акă мĕнле пултаруллă вăл сан упăшку! Пĕлетĕп, Иван хăй ярса парас çук çакна. Унран эпĕ каçару ыйтăп. Антон Кузьмин»,— тесе çырса хунă.

«Акă мĕнле пултаруллă!— тепĕр хут шухăшларĕ Вĕçелис. — Юлташун çырса пĕлтермеллеччĕ-и çакăн çинчен? Паттăрлăх кăтартрăн пулсан, çавна çынран, унтан та ытларах, арăмунтан пытармаллаччĕ-и? Акă паян ялта пĕтĕм халăх пухăннă. Тухатăп та мĕнпур çын умĕнче вуласа паратăп. Мухтанччăр санпала. Эпĕ чăн-чăн герой арăмĕ пулнине кашни пĕлсе тăтăр».

Çак шухăшсемпе кĕсйинчи çырăва туртса кăларма хатĕрленнĕччĕ ĕнтĕ Вĕçелис. Туртса кăларас та хăюллăнах халăх умне тухас тенĕччĕ. Пĕрре унталла, тепре унталла пăхса илчĕ вăл. Шăп тăрать халăх. Чим, ара, мĕншĕн

пурте шăпланнă? Мĕншĕн пĕри те чĕнмест. Е Вĕçелис пек, пурте хăйĕн шухăшне шухăшлать-и?

— Кала, председатель, эс курнă-и ăна? Вăл çырă çӳçлĕччĕ, янаххин сылтăм енче пысăках мар турпалли пурччĕ... Июлĕн çирĕм саккăрмĕшĕнче тухса кайрĕ... Курнă пулсан, кала-ха, председатель, вилес умĕн мана асăнчĕ-и вăл?.. Хăш хулара, хăш ялта вĕлерчĕç ăна? Кала-ха, Архип Иванч! Вĕт манăн кунта мар, унта пулмалла паян. Вилтăприне те пулин тупмалла. Унтан... унтан... ăна вĕлернĕ нимĕçе тупмалла та, унăн куçне чавса кăлармалла...

Чылайччен хӳхлерĕ Уничĕм Укахвийĕ. Чылайччен пĕри те лăплантарамарĕ ăна. Ан тив, макăрса чунне кантартăр, çапла çăмăлрах терĕç пулмалла.

Председатель, шăлне çыртса, пĕр хускалмасăр çĕрелле пăхса тăчĕ. Унтан пуçне çĕклерĕ те, сассине хăпартмасăр, çапла каларĕ:

— Пытармастăп, курман эпĕ сан упăшкуна. Анчах çавна лайăх пĕлетĕп: вăл, сан упăшку, паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ, хăйĕн пурнăçне Аслă çĕнтерӳшĕн панă. Мухтанас пулать унпа.

## 13

Августăн хĕрӳ хĕвелĕ хĕртрĕ, çунтарчĕ, ӳт-тире тăварлă тарпа касрĕ. Ялан кукленсе ларса ĕçленĕрен пилĕк-çурăм чăтмалла мар ыратрĕ. Кăштах та пулин çил тухинччĕ хăть, хĕвел пĕлĕтсем айне пулинччĕ. Çук вĕт — шăрăх, шăрăх, шăрăх. Вунтăваттăри Лявун ватă кĕсрепе ялтан çăл шывĕ турттарса ĕлкĕреймест. Чуна уçăлтарса яракан пĕр курка сивĕ шыв ĕçетĕн те каллех алла çурла тытатăн. Кăçалăк анлăлансах, уçăлсах пырать, кĕлте хыççăн кĕлте, çĕмел хыççăн çĕмел хушăнать. Васкамалла. Çанталăк уяр тăнă чух тырпула йăлтах пухса кĕртме тăрăшмалла.

Пуç çĕклемесĕр ĕçлеççĕ хĕрарăмсем. Шăп хирте. Хутран-ситрен çеç чĕчĕ ачисен ĕсĕклевĕ илтĕне-илтĕне каять. Анчах çак сасă та вăраха пымасть. Амăшĕсем нумай ларма пултараймаççĕ вĕсемпе. Кăштах ĕмĕртнĕ хыççăн ачашлама-сиктерме вăхăт юлмасть, пĕчĕк айвансем вара, çакна ăнлансах тейĕн çав, каллех тĕлĕрсе каяççĕ, шарламаççĕ урăх. Вăйсăрскерсен, тăраниччен апат çиме те пултарайман пепкесен, шăпи çапла килсе тухнă-çке паян.

Хĕвел анăçалла тайăлчĕ кăна, таçтан аякран аслати хуллен кĕмсĕртетни илтĕнчĕ. Унта, анăçри вăрман çинче, пĕлĕт кăвакара пуçланă иккен. Анчах аслатийĕ те, çумăрĕ те питĕ инçе пек туйăнать-ха, тепĕр тесен, те çăвать, те ирт-

сех каять çуллахи çумăр, çавăнпа пĕри те шарт сикмерĕç, хăрамарĕ çанталăк пăсăласран. Килмесен те аван, килсен те лайăх,— сывлăш уçăлĕччĕ пăртак, кăштах канса илме май пулĕччĕ, пĕр касă çумăр иртнипех тырă сиенленес çук.

Анчах тепĕр çур сехетренех çаврăнса, мăкăрланса килекен хура пĕлĕтсем хĕвеле хупласа хучĕç, çине-çинех çиçĕм çиçрĕ, аслати шавĕ вăйланчĕ. Тепĕртакран ана çине çумăр тумламĕсем пăтăртатса ÿкрĕç те, тырă выракансем çĕмелсем айне вырнаçма, хÿтлĕхе пытанма васкарĕç. Акă ĕнтĕ йĕпе хура çĕр çинче пăрçа пек шурă пăр сиккелеме пуçларĕ.

Кашласа, шавласа, кĕмсĕртетсе тăчĕ тавралăх. Темле хăватлă вăй çап-çутă çивĕч хĕçпе сулса ячĕ тейĕн — çиçĕм вĕлтлетсе илме те ĕлкĕреймерĕ, çĕре кисретсе, аслати шартлатрĕ, çав вăхăтрах Киремет тăвĕ çинчи ватă хурăн çурмалла хăйпăнса кайрĕ, тип-типĕ хăйă пек çатăртатса çунма пуçларĕ, хăй çийĕн çăмламас мелке пек хура тĕтĕм кăларса ячĕ.

Кĕлтесем айне лайăхрах пытанма тăрăшнăччĕ Вĕçелис, анчах çывăхра аçа çапни шартах сиктерчĕ ăна: «Çук-çук, çĕмел айĕнче ларма юрамасть»,— шухăшларĕ вăл. Вара хул хушшине пĕр кĕлте хĕстерчĕ те васкасах çĕмелтен аяккарах тарма тăрăшрĕ: çапла шанчăклăрах. Витрелетсе çумăр çурĕ, çăпата сырнă урасем нăчăртатса тăракан пулчĕç. Кĕлте çине ларчĕ те Вĕçелис чĕрçиттине салтрĕ, унпа пуçне хупларĕ, йĕри-тавралла пăхкалама хăяймасăр, çак урăм-сурăм тамаша иртсе каясса кĕтрĕ. Пĕтĕм кĕлетки лачкам шыв пулчĕ унăн.

Вăрăм аркăллă пир кĕпине, тар каснăскерне, тахçанах улăштарма шутлать Вĕçелис. Анчах килне таврăнсан хирте пучах пухса ĕшеннĕ пĕчĕк Мĕтрие çитерме ĕлкĕрет кăна, ун куçĕ хăй тĕллĕнех хупăнма тытăнать, сăрăлтатса тăракан шăмшакĕ йывăç кравать патнеллех туртать. Кăштах канса илем-ха тесе, вырăн çине выртать те вăл ирччен пĕр хускалмасăр çывăрать. Ирпе вара каллех вăхăт çук, кăвак çутăллах уя васкамалла. Темиçе хут та хăйне çакăн пек сăмах панă вăл: çак тар-тăвартан мунча хутса тасалмаллах, кĕпе-йĕме çуса, çын йĕркине кĕмеллех. Çитет хăй еккипе пурăнса, ялан çĕтkеленсе çÿренĕрен хăйне хăй курайми те пулса çитрĕ ĕнтĕ вăл.

Паянхи аслатиллĕ çумăр, акă, ун ятнех пулчĕ тейĕн. Мунча кунĕ валли кунран меллĕреххи урăх пулас та çук.

Анчах, пылчăк çăрса килне çитсен, картишне кĕчĕ кăна Вĕçелис, вăл акă мĕн асăрхарĕ: пахчана тухмалли вĕрлĕк карта юсаннă, çĕнелнĕ, унта та кунта йывăç сункавĕсем

сапаланса выртаççĕ, аслăк айĕнчи çĕрĕк юпана картиш варрине кăларса хунă, лупас хыçĕнче такам пăчкăпа йывăç касать. «Антун!»— тӳрех ăнланса илчĕ Вĕçелис. Çухалса кайрĕ вăл, тӳрех хултуйиллĕ салтак патне пыма именчĕ, хапхана шăппăн хупрĕ те пӳрте кĕчĕ. Васкамасăр сак çине ларчĕ, пĕр вăхăт хускалма та хăрарĕ. Ним тума аптрарĕ Вĕçелис. «Акă иккен,— терĕ вăл,— каллех упăшкаллă пулса тăтăм пулать. Хам чĕнмесĕрех килсе хуçаланма тытăнчĕ Антун. Çын мĕн калĕ, çын мĕн калĕ? Çук, çук, пулмасть кун пек...»

Анчах çăпатине салтса, кĕпине хывса улăштарнă майăн урăхларах шухăш та килсе кĕчĕ унăн пуçне. «Çын, Вĕçелис нушине чун патне хурса, ăна хĕрхенсе, ырă тăвасшăн, мĕнпе те пулин пулăшасшăн. Айăплă-и вăл? Çын фронтри чи çывăх тусĕн сăмахне ялан асра тытса çӳрет пулсан, йăнăш тăвать-и? Эх, Иванăм, Иванăм, каллех сана пула арпашса каймарăм-и эпĕ? Мĕн тумалла, кала-ха, Иванăм!»

Çук, чĕнмест сăнӳкерчĕк çинчи Иван. Тулта кăна, чуна каснă пек, пăчкă сасси пĕр евĕрлĕн илтĕнет.

«Палăртас мар, тем тесен те палăртас мар пăлханăва,— шухăшлать Вĕçелис. — Тухас та, ним пулман пек, шыв ăсма каяс. Мунча хутас».

Çырма хĕрринче ларакан мунчаран часах таврăнмарĕ Вĕçелис. Пĕтĕм савăт-сапана шыв тултарчĕ, урайне, саксене, лапка хăмисене лайăх çуса тасатрĕ. Вара тин вутă илме килне хăпарчĕ. Антун çĕнĕ юпана лартма ĕлкĕрнĕччĕ ĕнтĕ. Пĕчĕк Мĕтри те унпах аппаланать иккен, аслăк тăрне хăпарса кайнă та, унта вĕр-çĕнĕ вĕрлĕксем вырнаçтарать. Антун вара çав вĕрлĕксене аялтан парса тăрать,

Йывăç çункавĕсене, вĕрлĕк таткисене карçинккана пухма пĕшкĕннĕччĕ Вĕçелис—тĕсесе пăхрĕ аманнă салтак çине, лешĕ тӳсеймерĕ, çаврăнчĕ те каллех ĕçе пикенчĕ. «Куç хупмалла выляса çитет,— шутларĕ Вĕçелис,— мĕн те пулин каламаллах. Çынсем пурпĕрех сисрĕç пуль. Хамăн та тимĕр чĕреллĕ пулас мар. Ав мĕнле йĕркеллĕ туса хучĕ килкартине».

— Эс те çав...— терĕ вăл лăпкăн, анчах Антуна ӳпкелешме хăяймарĕ текех. — Тепрер сехетрен мунча пулать... Хатĕрлен...

Хăй вара каллех çырма хĕрнелле анса кайрĕ.

...Тепĕр сехетрен Çарăмсан хĕрринчи пĕчĕк мунчара Мĕтрипе Антун ăхлата-ăхлата çапăнма, шыв сирпĕтсе çăвăнма пуçларĕç. Анчах вăрахчен пымарĕ çак хаваслă сасчӳ: те ют çынран именнипе, те вĕри лапка çинче тӳрех ĕшенсе каййипе, Мĕтри хăй пуçĕ тăрăх ăшă шыв ячĕ те,

мунча умне тухса, кĕпе-йĕмне тăхăннă-тăхăнманах сиккипе тăвалла хăпарса кайрĕ.

— Эп таврăнтăм, инке,— терĕ вăл килне çитсен. Вара сĕтел çинчен пĕр татăк çăкăр илчĕ те урамалла тухса сирпĕнчĕ.

Тĕпелте салма касса тăракан Вĕçелис ним калама та ĕлкĕреймерĕ ăна. «Ах, ачупа, хăнана, аманнă салтака, пĕчченех хăвармаллаччĕ-и мунчара? Шыв памалла, çурăмне çумалла, ăна, хăрах уралласкере, хултуйисĕр пĕр-ик утăм тума та шутсăр йывăр-çке.. Ах, ачупа...»— пăшăрханса ӳкрĕ вăл сасартăк. Унтан тӳрех çапла шутларĕ: «Хамăн каяс, мунча умĕнче ларас хăть, сивĕ шыв пĕтсен кӳрсе парас. Ай-яй-яй, мĕнле пулса тухрĕ!»

Пĕтĕм ĕçне пăрахса, Вĕçелис мунчана васкарĕ.

Мунча пӳртумне кĕрсен, шалта пĕр сас-чӳ те илтĕнменни хăратса пăрахрĕ хĕрарăма.

— Эй, кам та пулин пур-и кунта?— хыпăнса ӳксе ыйтрĕ Вĕçелис.

Тем мăкăртатса илни илтĕнчĕ.

—Ай турух, сывах иккен,— хаш сывласа ячĕ хĕрарăм. Çапла каларĕ те, çийĕнчи тумне хывса, пăтана çакрĕ, аялти кĕпипе çеç тăрса юлчĕ. Вара, алăк патне пырса, Антуна çапла каларĕ:

— Кĕретĕп, çурăмупа çаврăн та шăпăрт лар... Эй, ачупăчупа...

Алăкран кĕрсе тăрсан тин Вĕçелис хăй ытла та хăюллă хăтланнинчен тĕлĕнсе кайрĕ. Антун урай варрине, кĕске сак çине, вырнаçнă та пĕр хускалмасăр ларать. Пĕчченлĕхе сасартăк Вĕçелис килсе сирсе ярасса кĕтмен салтак чĕлхине çăтса янă тейĕн, пуçне уснă та, хĕрелсе кайнă çара çурăмне мĕнпе те пулин пытарас тесе, аллисене пилĕкĕ çине хĕреслесе хунă. Хăйĕн умĕнче кăштах сĕлтĕ шывĕ янă пысăк чара пур. Шывне хĕрхеннĕ-ши е шыв ăсса илме йывăр пулнă-ши Антуна? Ахăртнех, йывăр пулнă.

— Çаплах лар, ан хускал,— терĕ Вĕçелис. Вара, куçне хупса тенĕ пек, чул кăмака айĕнчи чугунтан чара туллиех шыв тултарчĕ, милĕксене лайăх çуса тасатрĕ, чул çине пĕр курка сапса ăшши пачĕ те ирĕксĕрех Антун куçĕнчен пăхрĕ: — Тата мĕнпе пулăшас-ха сана? Çурăмна çуса ярас-и?

— Мĕн эсĕ?— мăкăртатрĕ лешĕ. — Эпĕ хамах, Вĕçелис...

— Юрĕ, хăвах, эппин,— кăштах ырăмарланса кайрĕ Вĕçелис. — Эс чĕмсĕр ан лар, эп кунтах, мунча умĕнчех, пулатăп. Мĕн те пулсан кирлĕ-тĕк — тӳрех систер.

— Тавах, Вĕçелис,— сăмахне çăтса, сасă пачĕ Антун.
— Вĕçелис, мунча умне тухса, сак çине ларчĕ.

Çамрăк хĕрарăм çакăн пек хăюлланни пĕрре тĕлĕнтерсе, тепре çĕклентерсе ячĕ Антуна. Хăйĕнчен ютшăнма, шикленме, çын тем каласран хăрама пăрахрĕ, эппин, Вĕçелис. Пулăшма килчĕ Антуна. Анланчĕ. Шеллерĕ, хисеплерĕ ăна.

Çакăн пек шухăшсемпе шăмпăртатрĕ Антун Вĕçелис хатĕрлесе панă ăшă шывпа. Ӳчĕ те, чунĕ те кашни самантрах калама çук çăмăлланса пынине туйса ларчĕ вăл. Вĕçелис патне пӳртумне тухса, ун кусĕнчен ăшшăн пăхас килчĕ унăн, ăна чи çепĕç сăмахсемпе тав тăвас, хĕрӳллĕн ыталаса илес килчĕ. Эй, пур-çке çынсем тĕнчере, вĕсем юнашар пулни пысăк та таса ĕмĕтлĕ, сарлака çунатлă тăвать сана. Эсĕ вара хăв пуррине, хăв та çынна кирлĕ иккенне уçăмлăрах туйса илетĕн, эсĕ мĕнпур хуйха-суйха манса каятăн, пурăнас та пурăнас, савăнас, юрлас килет санăн. Антунăн та халĕ çавăн пекех пулчĕ. Çук, мĕн те пулсан ыйтса, Вĕçелиса чăрмантарас темерĕ вăл текех, çăвăнчĕ, çапăнчĕ, вара пуç тăрăх темиçе курка лĕп шыв ячĕ те Вĕçелиса çапла каларĕ:

— Акă пулчĕ те... Эс утах ĕнтĕ, эпĕ, акă, тумланатăп та...

— Тумлан та хăпар вара, чей ĕçĕпĕр,—терĕ Вĕçелис.— Эпĕ каярах çăвăнăп.

Ирĕклĕн, çĕнтерӳллĕн, хăйĕн тивĕçне пурнăçланине туйса утрĕ килнелле Вĕçелис. Çул çинче çăл патне шыв ăсма анакан Ярахви Верккине тĕл пулчĕ.

— Мунчаран хăпаратăн, тем?— ыйтрĕ Ярахви Веркки.— Ара, салтаку та мунчарах мар-и-ха?

Ним калама аптрарĕ Вĕçелис. Çĕрелле пăхрĕ те айăплăн кулса илчĕ.

Ярахви Веркки вара, тин кăна темле вăрттăнлăх пĕлнĕ пек, çăварне карса ăсатса ячĕ Вĕçелиса, унтан тем аса илчĕ пулмалла та çăл патне чупсах анса кайрĕ.

## 14

...Çавăн чух, яла çĕнĕ председатель килнĕ çул, пулса иртрĕ ку ĕç. Хура кĕркунне тăратчĕ.

Сентябрь варринчех пĕтĕм тырпула вырса авăна кĕртнĕ колхоз çыннисем хĕрсех тырă çапма пуçларĕç. Тулли пучахлă кĕлтесем йывăр та сулмаклă пулчĕç. Пĕр молотилкăпа кăна ĕлкĕрес çук тесе, хĕрарăмсем алла тăпачă та тытрĕç. Кунĕ-кунĕпе пуç çĕклемесĕр ĕçлерĕç пурне те чăтма хăнăхнă ял ĕçченĕсем.

Пĕри çапрĕ, тепри типĕтрĕ, виççĕмĕшĕ сăвăрчĕ, алларĕ.

Çанталăкĕ лайăх тăнă чух пур пек тырра элеватора ăсатма васкарĕç. Лашасем, вăкăрсем тата ĕнесем кӳлнĕ лавсем каçсерен ушкăнĕ-ушкăнĕпе вуникĕ çухрăмри станца туха-туха кайрĕç.

...Кутамас вăкăр лекрĕ çав каç Вĕçелиса. Нумай пулмасть кӳлме вĕрентнĕрен-ши е хăйĕн екки çапларан, çулпа йĕркеллĕ утасшăн пулмарĕ вăл — е кĕтмен çĕртен аякка пăрăнса кĕрет, е чарăнса тăрать те вăрахчен хăйĕн ĕçне тăвать, е чипер пынă çĕртех кăрт-карт туртăнса илет, ĕрĕхсе каять. Çапла аппаланса пырса юнашар вăрмана кĕриччен ытти лавсенчен чылай кая юлчĕ Вĕçелис. Тĕттĕмленсе çитрĕ. Вăрманĕ хура та аслă, йĕри-тавралла пăхма та хăраса пырать Вĕçелис. Анчах вăкăра хăть çап, хăть ăшшăн кала — хăй еккине ниепле те пăрахасшăн мар вăл, утмасть те утмасть. Аптранă енне Вĕçелис, лав çинчен сиксе анса, вăкăра çурăмĕнчен, мăйĕнчен лăпкаса илчĕ. Çук, пулăшмарĕ. Вара тавçăрчĕ Вĕçелис: çул хĕррине пăрăнса, темиçе ывăç курăк çăлса илчĕ вăл, ăна вăкăр çăварĕ патне илсе пычĕ. Вăкăр сĕтеклĕ курăка шăршласа пăхрĕ кăна — тапранчĕ лав. Нăтăртатса пычĕ вăл вăрманти кăшт нӳрленнĕ çулпа.

Анчах нумаях уттараймарĕ Вĕçелис хăйĕн вăкăрне. Çул вăрманти пĕр пĕчĕк çырма хĕрнелле пăрăннă чух унăн чĕри сасартăк карт! туса илчĕ те, вăкăра хăех чарчĕ. «Çырма шăнкăртатса юхнинчен хăраса ӳкрĕм, айван пуç»,—терĕ вăл. Вара каллех чĕлпĕрне малалла туртрĕ. Çак вăхăтра çыран хĕрринче ӳсекен çирĕк тĕми силленсе чăштăртатнă пек туйăнчĕ. Вăкăра каллех чарма тиврĕ. Шăп. Нимĕн те çук. «Чăх чĕри,— хăйне хăй вăрçрĕ Вĕçелис, пĕтĕм хăюлăхне пухса, вăкăра ӳкĕтлеме пуçларĕ. — Атя, атя, Ваçка, сăрт çине улăхса çитĕпĕр те, канăн кăштах. Атя, маттурăм, атя, Ваçка...»

Вăкăр, пĕтĕм вăйне пухса, тăвалла тапаланчĕ.

Унччен те пулмарĕ, çирĕк тĕми тепĕр хут силленсе илчĕ. «Çук, туйăнмарĕ, чăн-чăнах, эппин»,— терĕ Вĕçелис, малалла мĕн пуласса кĕтрĕ.

Тимĕр витре хăлăпĕ шатлатни илтĕнсе кайрĕ. Лав çирĕк тĕмипе танлашрĕ кăна, ун хыçĕнчен пысăк кĕлеткеллĕ çын сиксе тухрĕ, тӳрех йĕвен чĕлпĕрĕнчен ярса тытрĕ.

Сехри хăпнă Вĕçелис, ним тума аптраса, пĕр-ик утăм каялла чакрĕ, унталла-кунталла пăхкаларĕ: «Никам та курăнмасть, пĕтмеллиех çитрĕ-ши вара?»— шухăшласа илчĕ хĕрарăм.

Палламан çын ун патнелле çывхарчĕ. Каллех пĕр-икĕ утăм чакрĕ Вĕçелис. «Кам эс? Ан çывхар ман пата, хурах

кăшкăратāп, асту,— терĕ вăл, анчах хӑй сассине хӑй те илтеймерĕ, çав хушăрах хăрах аллипе михĕсем хушшине хĕстернĕ пĕчĕк пуртăна шырарĕ.

Çук, тупаймарĕ пурттине Вĕçелис, палламан çын ăна урапа çумĕнчен хăпăтса илсе вăрманалла çĕклесе кĕрсе кайрĕ.

Кĕтмен çĕртен капкăна лекнĕ тискер кайăк пек çатăлтатрĕ Вĕçелис ют çыннăн хăрушă ытамĕнче. Сывлăша пӳлме хăтланса, çăвара темле çĕтĕк чиксе хурасшăн пулчĕ палламан çын, хăйĕн пĕтĕм кĕлеткипе хупласа хурса, ыраттарчĕ, лутăркарĕ, пĕтĕм вăйран алăсене пăрса лартма тăрăшрĕ. Пăркаланчĕ, шăлне çыртса, çак усал çынна хӑй çинчен сирсе ывăтма тăрăшрĕ Вĕçелис. « Вăрă-хурах, пурпĕр чĕррĕн парăнмастăп сана»,— шухăшларĕ çамрăк хĕрарăм. Çакна лайăх курчĕ Вĕçелис: палламан çын хăйĕн питне сăмси таранах кивĕ пусмапа хупласа хунă. Çийĕнчи симĕс фуфайки тĕл-тĕл шăтса пĕтнĕ, çав шăтăксенче ваткă таткисем палăраççĕ. Пĕчĕк куçĕсем Мăрса Мишурăнни пек, хаяр, тискер.

— Яр! Яр, тархасшăн!— кăшкăрса ячĕ Вĕçелис, вăйĕ пĕтсе çитнине туйса.

Лешĕ ямарĕ. Вĕçелис пуçне вăл, хăйĕн тимĕр пек çирĕп янаххипе пусса, çĕр çумне пăталаса хучĕ. Унтан хăрах аллипе кĕпе тӳмисене вĕçертрĕ. Вăрă-хураххăн Вĕçелис кăкрисене ухтарма пуçларĕ палламан çын. Калама çук тарăхупа кӳтсе çитнĕ Вĕçелис, хăйĕн вăйсăрлăхне шута илсе, чееленме шутларĕ.

— Яр мана,— терĕ вăл тепĕр хут. — Хĕрарăмпа çапла пулмалла-и? Пурпĕр нимĕн те тухмасть сан. Тăр. Эп хамах...

Палламан çын лăштах пулчĕ.

«Апла ку чăвашла та пĕлет,— тĕлĕнсе шухăшларĕ Вĕçелис. Хӑй вара çулçăсем çине ларчĕ те, вăхăта кăштах та пулин тăсса, сывлăш çавăрма шутларĕ.

— Çапла юрать-и?— терĕ вăл, хашка-хашка. — Арçынсем те çав эсир. Хĕрарăмпа пĕр чĕлхе тупаймастăр.

Палламан çын илтмерĕ те тейĕн Вĕçелис калаçнине. Таçтан, атă кунчинчен, вăл темле çутă япала туртса кăларчĕ те ăна пĕр-икĕ хут сывлăшра вылятса илчĕ: çĕçĕ! Çав çĕççе арçын хăйпе юнашар ăвăс çине тăрăнтарса лартрĕ. «Итлемесен, акă мĕн кĕтет сана» тесе систерчĕ ĕнтĕ.

Вăрман тата хăрушăрах кашлама пуçланăн туйăнчĕ.

«Мĕн тумалла?! Пĕтрĕм!»— шухăшларĕ Вĕçелис. Çапах хăйне лăпкăн тытма тăрăшрĕ вăл. Çамрăк хĕрарăмăн питĕ пурăнас килчĕ.

— Юрать,— терĕ Вĕçелис. — Юрать, анчах ан васкат мана.

Аллине çамки çине хурса, тӳсме çук пуçĕ ыратса кайнине кăтартасшăн пулчĕ вăл палламан çынна. Хăй çав вăхăтра тĕпчесе, тем аса илсе пăхрĕ ун куçĕнчен. «Куç харши айĕнчен кăшт çеç палăракан пĕчĕк куçсем. Чим, ара, Мăрса Мишурĕ хăех мар-и ку? Çук, ăна вăрçа ăсатнăччĕ. Ансăр çамкин сулахай енче самаях палăракан шĕпĕн. Мăрса Мишурĕн те çавăн пек шĕпĕн пурччĕ. Эсĕ, эсĕ ку, тем тесен те эсĕ!»

— Ну!— хăрăлтатса илчĕ палламан çын.

— Ан курнăçлан, Мишур. Палларăм, эсĕ ку,— терĕ Вĕçелис, кăшт лăпланнă пек пулса.

Лешĕ, хăй ятне илтнипе, кăрт туртăнса илчĕ те чĕркуççи çине тӳрленсе тăчĕ, сăмси çинчи пусмана сирсе пăрахса, Вĕçелис куçĕнчен тӳррĕн пăхрĕ.

— Çапла, эпĕ ку,— терĕ Мăрса Мишурĕ. — Эпĕ ку, Вĕçелис. Чăтма çук курас килчĕ сана. Çавăнпа килтĕм.

— Тартăм теме чĕлхӳ çаврăнмасть-им? Арăму сана вăрçа ăсатнăччĕ. Эсĕ вара ав епле çапăçатăн иккен,— кĕпе тӳмисене тӳмеленĕ май хăй Мăрса Мишурĕнчен йĕрĕннине палăртса каларĕ Вĕçелис.

— Çук ĕнтĕ, Вĕçелис, эсĕ мана айăплаймăн. Вилĕм умĕнче пĕрре мар тăнă эпĕ. Халĕ те пĕлетĕп — вилĕм манпа юнашарах çӳрет.' Анчах чун пур манăн, Вĕçелис. Çынçке эпĕ! Кирек епле пулсан та, виличчен сана курас килчĕ. Пĕрре пăхса илем те сан çине, кайран вара мĕн пуласси пултăр, шăпаран, турă çырнинчен тараймăн терĕм. Ăнлан мана, Вĕçелис,— тархасласа, ӳкĕтлесе, хĕрӳллĕн калаçрĕ Мăрса Мишурĕ.

— Шăпа, турă çырни апла? Пирĕн упăшкасен шăпи çинчен манса кайрăн, эппин?— тарăхрĕ Вĕçелис.

— Кирек мĕн кала мана. Эпĕ чун хушнă пек турăм. Эпĕ сан патна инçетрен килтĕм. Аран-аран çитсе ӳкрĕм. Эсĕ паян çавна ăнланасшăн мар пулсан, эп сана урăхла. Ну!— пĕрре Вĕçелис çине, тепре ăвăс çумне тăрăнтарнă çĕçĕ çине пăхса илчĕ Мăрса Мишурĕ.

— Мĕн кирлĕ сана?— лару-тăру каллех çивĕчленнине кура хăраса ӳксе, сассине йăвашлатрĕ Вĕçелис.

— Кил, тетĕп, ман пата. Эп сана... ырăпа,— çине тăчĕ Мăрса Мишурĕ.

Чăтма çук тарăхса кайрĕ Вĕçелис. Çапах шăпи телейлĕ пулчĕ унăн. Çĕрлехи уçă çил пулăшрĕ-ши, вăрман шавĕ таçта аякран-аякран çывхарса килчĕ те Вĕçелиспа Мăрса Мишурĕ çийĕн вата ăвăса унталла-кунталла силлесе хăвар-

чĕ. Çывăхрах типĕ турат шаплатса ӳкрĕ. Мăрса Мишурĕ шикленсе те хăраса сасă пулнă еннелле çаврăнчĕ. Çак самантра ура çине тăма ĕлкĕрнĕ Вĕçелис Мишур патне шăппăн çывхарчĕ те ăвăс çине тăрăнтарнă çĕççе пĕтĕм вăйĕпе хăй еннелле туртрĕ. Хăйне улталанине сиссе, урса кайнă арçын пĕрре сиксех Вĕçелис аркинчен ярса тытрĕ. Хĕрарăм тайăлса кайрĕ. Анчах çĕре ӳкнĕ чух аллине çирĕп ярса тытнă çĕççе вăл арçын çурăмĕ çине тĕллерĕ. Йывăррăн ӳкрĕ Вĕçелис. Çĕçĕ аврине хăйĕн пĕтĕм кĕлеткипе пусарса хума тăрăшрĕ.

— А-а-а!— янраса кайрĕ вăрманта хаяр сасă.

Хăйĕнчен хăй хăраса кайнă Вĕçелис чĕтре-чĕтре çул еннелле чупрĕ. Вăкăрĕ вырăнтах тăрать, авă. Уншăн пулсан, нимĕн те пулман çак çур сехет пек вăхăт хушшинче. Вĕçелис ăна çул хĕррине илсе тухрĕ те пĕр хурăн çумне кăкарса хучĕ. Хăй вара, утнă çĕрте утса, чупнă çĕрте чупса, яла, председатель патне, васкарĕ.

...Çур çĕр иртсен вăрманти пĕчĕк кĕпер патĕнчи хурăнлăха ялтан виçĕ çын — районтан килнĕ уполномоченнăй Лаптев, колхоз председателĕ Архип Иванович тата Вĕçелис пынă çĕре милиционерсем те çитнĕччĕ ĕнтĕ. Вилейменччĕ-ха Мăрса Мишурĕ.

— Ав ăçта «фронт» тупнă вăл хăй валли,— терĕ Архип Иванович.

— Маттур, Данилова, çухалса кайман. Тискер кайăка çаклатнă. Тахçантанпах шыраттăмăр ăна,— мухтарĕç Вĕçелиса милиционерсем.

Шатра Марье вара следстви вăхăтĕнче хăйне хăй пĕтерчĕ. Ял Советĕнче Вĕçелиса курсанах, алкăм-шалкăм чашкăрса кайрĕ вăл. Вут сирпĕтсе тăратчĕç унăн усал куçĕсем.

— Ухмах, ухмах тетĕп хама хам,— çатăртатрĕ вăл.— Мĕншĕн ху килте чухне вут тĕртмерĕм, иçмасса! Мĕншĕн кĕлпе вĕçтермерĕм! Ылхан! Ылхан сана!

Шатра Марьене çав кунах района лартса кайрĕç.

## 15

Хăйă çутнă вăхăталла тин мунчаран таврăннă Вĕçелис алăка уçичченех пӳртре Антун пĕччен кăна мар иккенне пĕлчĕ. Шалта хĕрарăмсен сасси илтĕнет. Пĕри — хулăнраххи—каллех Ярахви Верккин сасси. Пурне те пӳле-пӳле çăвар туллин калаçать Веркка. Теприн сасси хутран-ситрен çеç илтĕнет — сăпайлă, çепĕç сасă. Маруç сасси. Антуне вара нимĕн те шарламасть, шыв сыпнă тейĕн.

Пĕр вăхăт алăка уçмасăр тăчĕ Вĕçелис.

— Ара, килет вӗт, Ярахви, килет,— уҫӑмлӑнах илтӗнчӗ Веркка сасси. —Ҫавӑнпа паян мунча кӗрсе тасалас тенӗччӗ. Мӗн кулянмалли, килсе ҫиттӗр кӑна, эпӗ те ӑна, Вӗҫелис пек, мунчана хамах илсе каятӑп. У-ху-ху, эй, кӗрӗттӗмӗр-ха мунчине...

— Ан сӳпӗлтет, Веркка, Вӗҫелис ан илттӗр. Унтан тата... ял хушшинче персе ан яр ку сӑмахсене,— пӳлме хӑтланчӗ Маруҫ.

— Ха, Вӗҫелис мана хӑй курмарӗ пуль? Антун Кузьмич, эсӗ те куртӑн вӗт мана? Э, Антун Кузьмич?..—йӗлпӗрсе пӑхрӗ Веркка чӳрече умӗнче хаҫат татки вуласа ларакан арҫын ҫине.

Лешӗ нимӗн те чӗнмерӗ.

Ҫак вӑхӑтра алӑк уҫӑлчӗ те, пӳрте Вӗҫелис кӗрсе тӑчӗ. Тин ҫеҫ пулса иртнӗ калаҫӑва палӑртас темерӗ Вӗҫелис. Кӗчӗ те ҫапла ҫеҫ каларӗ:

— Ха, хӑнасем те пур-ҫке. Чей лартса ярас. Мӗтри халь те килмен иккен. Тӑхтӑр-ха, турпас пухса кӗрем.

Ҫак вӑхӑтра Антун ура ҫине тӑчӗ.

— Эс унта, тӗпелтех, аппалан. Эпӗ часах,— терӗ те вӑл, хултуйине чӗриклеттерсе, картишне тухса кайрӗ.

Хӑнасем иккӗшӗ те ура ҫине сиксе тӑчӗҫ.

— Вӗҫелис,— терӗ, темӗн хыпӑнса ӳкнӗ пек, Ярахви Веркки,— эс мана каҫар-ха. Сана курнӑ хыҫҫӑн эпӗ тӳрех Маруҫ патне хӑпартӑм. Акӑ, кунта... пирӗн кӑштах сыхланса юлни тупӑнчӗ. Атьӑр-ха кӑштах тутанса пӑхар. Ӗҫ пӗтес ҫук вӑл. Куҫҫуль тӑкса та ывӑнтӑмӑр ӗнтӗ. Ан ятла, Вӗҫелис.

— Тыт, тыт, Вӗҫелис. Мунча хыҫҫӑн аванах пулӗ,— терӗ Маруҫ та.

Ҫакна кӗтмен Вӗҫелис пӗр самант аптраса тӑчӗ. Унтан кӗленчене илчӗ те сӗтел ҫине лартрӗ.

Вӑр-вар хӗрарӑмсем наччасах ҫӗрулми пӗҫерчӗҫ, ҫӑмарта та, турӑх та тупрӗҫ. Антун сӑмаварпа аппаланчӗ. Тепӗр-такран тӑвтӑ ҫын сӗтел хушшине вырнаҫрӗ. Самантлӑха пӳрте манӑҫрӗ темелле: паян уйра лачкам шыв пулни те, Вӗҫелис хӑй килӗнче Антуна курса тӗлӗнни те, мунчаран хӑпарнӑ чух Ярахви Верккипе тӗл пулни те...

Сӑмакуна Ярахви Веркки хӑй ӗҫтерчӗ.

— Сывлӑхшӑн ӗҫер те,—терӗ вӑл. Хамӑр сыв пулсан, ҫут тӗнче пӗтес ҫук.

Ӗҫрӗҫ. Шӑршлӑ та хаяр сӑмакунпа чутах чыхӑнса каймарӗ Вӗҫелис. Унччен, вӑрҫӑччен те пӗр тумлам ӗҫсе курманскер, вӑл чыхӑннӑ хыҫҫӑнах стакана калле лартасшӑнччӗ, анчах Ярахви Веркки ун ҫине тӳрех сиксе ӳкрӗ.

— Ęçсех яр, Вĕçелис, ĕçсех яр, эрех шăмшака çемçетет, хуйха-суйха мантарать,— ÿкĕтлерĕ вăл çине тăрсах.

— Ара, ĕç, Вĕçелис. Веркка тĕрĕс калать. Эпир те МТСра тутанкалатпăр тепĕр чух. Чăнах çапла. Пулăшать,— терĕ Маруç.

Вĕçелис итлерĕ. Сăмакуна вăл пĕр сывламасăр ĕçсе ячĕ. Ана кура Антун та хăйĕн стаканне ÿпĕнтерчĕ.

— Халь çийĕр,— ăна-кăна чухланă пекех калаçрĕ Маруç.

Çирĕç. Çак вăхăтра Вĕçелис темиçе хутчен те Антун çине пăха-пăха илчĕ. Именерех ларать вăл хĕрарăмсем хушшинче, пичĕ çинче ырăмарланни туйăнать, Маруçпа Веркка та ютшăнаççĕ-ха унран, анчах палăртасшăн мар çакна, ним пулман пек калаçма тăрăшаççĕ.

— Киремет патĕнчи ватă хурăна аçа çапнине куртăн-и паян, Вĕçелис?— шăплăха сирме хăтланса, сăмах çукранах ыйтрĕ Ярахви Веркки.

— Ара, курмасăр, чун сиксе тухатчĕ, хама çапрĕ пуль терĕм,— хуравларĕ кил хуçи хĕрарăмĕ.

— Ан та калăр ун çинчен. Эпĕ хамăн тракторпа юнашарах суха тăваттăм вĕт. Эх, шартлаттарчĕ! Çĕр кисренсе кайрĕ те, хăлха хуплансах ларчĕ,— шавлăн калаçрĕ Маруç.

— Трактора аça çапмасть, хăрама кирлĕ мар,— лăплантарчĕ Антун.

— Тракторпа лайăх сана. Хывăх пуç, мĕн чухлĕ чĕнчĕç виçĕмçул, атя МТСа, вĕрен, ÿкĕнмелле пулмĕ терĕç. Итлемерĕм вĕт. Ав, Маруç халь преми хыççăн преми илсе вырттать,— стакансене каллех сăмакун ярса, ăмсанарах калаçрĕ Ярахви Веркки.

— Çын аллинчи кукăль пысăк курăнать пуль, ара,— кăмăлсăрланчĕ Маруç. — Ыйт-ха эс манран, юлашки эрнере миçе сехет çывăрнă эпĕ? Е хăвăр çывăрса кайсан, уйра трактор кĕрлеинне илтми пулатăр-и?

— Мĕн каламалли, ытлашшипех тивет сана. Сăмсу та куçусем кăна тăрса юлчĕç ĕнтĕ,— терĕ Вĕçелис, юлташне хĕрхенсе.

— Тăрахтăр, тăрахтăр, аннÿ ĕçне пăрахтăр. Атьăр ĕçерха, елки-палки. Пурте ĕçлетпĕр, пурте тÿсетпĕр. Атя, салтак, атя, Антун Кузьмич, янклаттарар тепре!— çапла каласа, Антун стакан тытасса кĕтсе илеймесĕрех сăмакуна ĕçсе ячĕ те Ярахви Веркки, кăштах сывлăш çавăрса, юрă пуçласа ячĕ:

Ĕçер-ха, çиер-ха,
Пурте хамăр тăвансем,
Ют çынсем ма-а-ар,
Ют çынсем ма-а-ар...

Паçăрхи калаçу та, Маруç кăмăлсăрланни те тӳрех юрă айне пулчĕç. Антунсăр пуçне, пурте Верккана пулăшмаваскарĕç.

Тăванĕсем лайăх,
Чĕлхи çемçе-е-е,
Мĕншĕн тăван тесе те
Ка-а-алас мар?

Çаврăм хыççăн çаврăм юрă юрларĕ виçĕ тантăш, тата темиçе кĕвĕ килсе кĕчĕ вĕсен асне. Тулли саспа, хытă юрларĕç. Эрех хăйĕн ĕçне турĕ, Антунран ютшăнма пăрахрĕç хĕрарăмсем. Лешĕ те хăюлланчĕ кăштах, вăл та, икĕ хут каламалли ансат сăмахсене вĕренсе, хĕрарăмсемпе пĕрлех юрлама тытăнчĕ. Äшшăн, çав вăхăтрах тĕпчесе, Антун мĕн шутланине пĕлме тăрăшса пăхрĕ ун çине Вĕçелис. «Маруçпа Веркка сивлемеççĕ, айăпламаççĕ пек те, темле-çке, çавăн пек кăна туйăнмасть-ши?»— шухăшларĕ вăл юрланă хушăрах. «Çапах иккĕмĕш черккене ĕçмелле марччĕ пулĕ, ав еплерех пĕçертет кăкăрта, ав еплерех çăмăлланчĕ кĕлетке. Пуç кăштах çаврăнать. Намăс. Кун пек нихçан та ӳсĕрĕлменччĕ-ха вăл. Анчах ни кайса выртма, ни килнĕ çынсене хăваласа яма май çук, ун патĕнче вĕсем, хăнара. Çитменнине, сăмакунне те хăйсемех илсе килнĕ».

Юрланă вăхăтрах Ярахви Веркки çакăн пек каласа хучĕ:

— Туй выранне пултăр ку, Вĕçелис! Халĕ, çак вăхăтра, ĕçкĕ-çикĕ пухма вăй çитереймĕн...— хăй вара юлнă сăмакуна стакансене пайла-пайла тухрĕ.

— Ара, капла та юрать çав,— илтĕнчĕ Маруç сасси.

Те ăнланчĕ, те ăнланаймарĕ Вĕçелис çак сăмахсене. Пĕрре айăплăн Антун çине, тепре хăйĕн тантăшĕсем çине пăхрĕ вăл. Сĕтел çинчи стакансем, чашăк-тирĕк, çăкăр-тăвар тайăла-тайăла кайнă пек пулчĕç. Акă урай варринче такамăн ури кĕлисем тăрăслатни илтĕнчĕ. Унтан Вĕçелис хăлхине темле тĕлли-паллисĕр сăмахсем килсе кĕчĕç:

Туя туй... тăвар-и,
Ура... хуçар-и...
Эпир... киличчен
..туса хуччăр-и! И-их!

— Чимĕр-ха,— пуçне çĕклеме хăтланчĕ Вĕçелис, анчах пуçĕ çĕкленмерĕ унăн, çак вăхăтра вăл, чавсипе лектерсе, умĕнчи стакана урайне ӳкерчĕ. Кĕленче савăт ванса кайни шартах сиктерчĕ Вĕçелиса.

— Акă епле ăнать вĕт, акă епле ăнать,— сĕтел патне

чупса пычĕ Ярахви Веркки,— çынсем туйра юри саватсапа çĕмĕреççĕ. Кунта, ав, турри хăй çырнă тейĕн. Телей пултăр, Вĕçелис, тату пултăр пурнăçу. Хытă юраттăр упăшку...

— Чимĕр-ха,— тепĕр хут каларĕ Вĕçелис, мĕн пулса иртнине ăнланма тăрăшса,— мĕнле туй, мĕнле телей?..

—Унталла, кунталла пăхрĕ Вĕçелис. Сĕтел хушшинче, ыттисем çине пуç çĕклеме вăтаннă пек, питне аллисемпе хупласа, Антун шухăшлăн ларать. Тепĕр кĕтесре — Маруç, Ярахви Веркки вара урай варрине тăнă та аллисене сура-сура сăтăркалать.

— Чимĕр-ха,— каллех ыйтрĕ Вĕçелис. — Мĕнле савăнăç ку?

— Туй!— пĕр тăхтаса тăмасăр хуравларĕ Ярахви Веркки. — Санăн тую. Лайăх упăшка çаклатрăн, ан вĕçерт. Простой кăна мар, у-у-чи-тĕл!

Çак вăхăтра Антун вырăнтан сиксе тăчĕ, хултуйине илчĕ те карттусне пуçĕ çине лартрĕ. Анчах тухса кайма ĕлкĕреймерĕ вăл. Пĕтĕм пÿрте Вĕçелисăн кăшкăрса макăрса янă сасси хупласа хучĕ:

— Мĕн хăтланатăр эсир!? Эппин, тăр-пĕччен тăрса юлнă çынран кулма та юрать тесе шутлатăр-им? Нивушлĕ çавăн йышши çын пек курăнатăп? Нивушлĕ чыс çухатнă хĕрарăм пулса тăтăм ĕнтĕ? Тухса кайăр кунтан! Хăвăртрах, тухса кайăр, тархасшăн!

Вырăн çине кайса выртса, тата чылайччен ĕсĕклерĕ Вĕçелис. Çакна пачах кĕтмен çынсем, ним тума аптраса, шак хытса тăчĕç. Чи малтан Антун тапранчĕ. «Эх, эсир те çав»,— тенĕ пек, Верккапа Маруç çине куç айĕн пăхса илчĕ те вăл пÿртрен йывăррăн тухса кайрĕ.

— Ан хуçăл, Вĕçелис, ан хуçăл,— ним пулман пек персе ячĕ Ярахви Веркки. — Ку килĕшмест-тĕк, вăрçăран часах каччăсем таврăнаççĕ. Ан хуçăл...

Сĕтел çинчи пушă кĕленчене илчĕ те Веркка тайкалана-тайкалана алăка тĕртсе уçрĕ.

Маруç пÿртре тата тепĕртак ларчĕ. Хăй айăпне туйса, сĕтел çинчи апат-çимĕçе пуçтарчĕ вăл, чашăк-тирĕке çуса тасатрĕ. Унтан Вĕçелис выртакан вырăн патне пычĕ, юлташне ыталаса илсе, ун куçĕнчен пăхрĕ.

— Каçар, Вĕçелис,— терĕ Маруç,— тĕрĕс тумарăмăр. Манса кай çак куна.

Маруç тухса кайсан, каллех алăк сасси пулчĕ. Мĕтри килчĕ.

— Инке,— терĕ вăл,— яла салтак килчĕ. Ярахви пиччене пĕлетĕн вĕт? Çавă килчĕ. Хăйĕн пичĕ йăлтах çĕмĕрĕлнĕ. Пăхма та хăрушă.

Кравать ҫине тӑрса ларнӑ Вӗҫелис тутӑрне салтса ҫӳҫне тирпейлеме пикенчӗ.

— Инке,— асӑрхамарӗ-ха ҫакна пӗчӗк Мӗтри. — Ыран атте вилни икӗ ҫул ҫитет. Икерчӗ пӗҫерӗпӗр-и, инке?

Ҫакна илтсен, шартах сикрӗ Вӗҫелис. Епле астуман, епле манса кайнӑ! Анчах ҫакна Мӗтрие палӑртасшӑн пулмарӗ вӑл.

— Пӗҫерӗпӗр, Мӗтри, пӗҫерӗпӗр,— терӗ вӑл. — Ҫӑнӑхне лӑканӑ ӗнтӗ. Аҫуна та, аннӳне те пӗрле асӑнӑпӑр. Вӗсен хушши пӗр эрне кӑна вӗт.

Мӗтри ҫывӑрса кайсанах, Вӗҫелис, ҫӑнӑх лӑкаса, чуста лартрӗ.

## 16

«Манӑҫать иккен, манӑҫать... Пурнӑҫ малаллах шӑвать. Чӗррисен — хӑйсен ӗмӗт-шухӑшӗ, хӑйсен ӗҫӗ-терчӗ, хӑйсен хуйхи-суйхи,— ассӑн сывла-сывла шухӑшларӗ Вӗҫелис ирхине юлашки тулӑ ҫӑнӑхӗнчен икерчӗ пӗҫернӗ чухне. — Тен, вӑрҫӑччен пулсан, часах асран тухас ҫукчӗ пуль хуняшшӗпе хунямӑшӗ. Халӗ вара, кашни ҫурта тенӗ пек хура хыпар киле-киле кӗнӗ чух, уйрӑм ҫыннӑн хуйхи хӑйӗн пӗлтерӗшӗпе пӗчӗкрех, вӑйсӑртарах иккен». Хурланса, татӑлса йӗме, пӗчӗк Мӗтри шӑпи ҫинчен пуҫ-ҫӗмӗрсе ларма вӑхӑчӗ те тупӑнмарӗ. Кашни кун хӗрӳ ӗҫре пулчӗ Вӗҫелис, ялпа пӗрле тырӑ акрӗ, утӑ ҫулчӗ, вӑрман касрӗ. Колхоз выльӑхӗсене, апат ҫитменнипе халран кайнӑскерсене, вӗренпе ура ҫине тӑратни сахал пулнӑ-и тата! Кӗреҫине, лумне алран яман, арҫынсем пекех пуртӑ-пӑчкӑпа ӗҫлеме вӗреннӗ вӑл, каҫсерен фронтри салтаксем валли чӑлха-нуски ҫыхнӑ, ӑшӑ тумтир ҫӗленӗ. Ҫапах та икӗ ҫул каялла пулса иртнӗ хурлӑхлӑ кунсене аса илет те Вӗҫелис, каллех чунӗ ыратса каять унӑн. «Пурне те тӑвайрӑм-ши ун чух, мана ӳпкелесе вилмерӗ-ши хуняма карчӑк?»—ыйтать вӑл хӑйӗнчен хӑй. Вара ирӗксӗрех ҫакӑн пек шухӑш патне пырать: «Ҫук, Иван та, ялйыш та айӑпа кӗртеймӗҫ мана. Упӑшки вӑрҫа тухса кайсан, ытла та вӑйсӑрланчӗ карчӑк, ҫулталӑк та виҫӗ уйӑх вырӑнпах выртрӗ. Темле тӑрӑшса пӑхсан та текех ура ҫине тӑраймарӗ карчӑк. Кунта ман айӑпӑм ҫук».

...Куҫ умне пӗчӗк Мӗтри тухать.

Иртеннех тем сиснӗччӗ ҫав Вӗҫелис. Хӑйӗн каҫалӑкне пуҫланӑранпа ял ҫине темиҫе хутчен те пӑха пӑха илчӗ вӑл, тем кӗтрӗ, тем шырарӗ. «Мӗн те пулин манса хӑварман-ши эпӗ?— шухӑшларӗ хӗрарӑм. — Ҫук. Яланхи пекех. Ҫурла— акӑ вӑл. Виҫӗ ҫӑмарта та пӗр кӗленче сӗт. Пурте пур».

Çапах канăçсăрланчĕ те канăçсăрланчĕ унăн чĕри. Кăн-тăрла тĕлне Митра пичче бригадир хире килсе çитсен, Вĕ-çелис чăтаймарĕ, çапла каларĕ:

— Тем, чĕре вырăнта мар, апат вăхăтĕнче киле çитсе килем-ха эпĕ.

Килте мĕн кĕтсе тăрасса пĕлнĕççĕ пулĕ çав Митра пичче. Темшĕн-çке Вĕçелис çине тӳррĕн пăхма хăяймарĕ вăл.

— Çитсе кил, Вĕçелис. Эпĕ те часах яла пыратăп,—те-рĕ вăл ăшшăн.

Пĕчĕк Мĕтри хĕрелсе кайнă куçĕсене çанă вĕçĕпе сă-тăра-сăтăра картлашка çинче ларатчĕ. Виç кĕтеслĕ çыру пурччĕ ун аллинче.

— Мĕн пулчĕ?— тӳрех хыпăнса ӳксе ыйтрĕ Вĕçелис.

— Акă,— çырăва инкĕшне тăсса пачĕ Мĕтри. —Атте...

Вĕçелис шурса кайрĕ, тăр-тăр чĕтрерĕ.

— Аннӳне пĕлтертĕн-и кун çинчен?— ыйтрĕ вăл, васка-сах пӳртум алăкне уçма тăрса.

— Вăл манран çак хута вуласа пама ыйтрĕ. Хăй вара эпĕ вуланă чухнех икĕ хутчен туртăнса илчĕ те çывăрса кайрĕ,— сывлăш çăта-çăта ăнлантарчĕ Мĕтри.

«Çывăрса» кайнă карчăк вăранмарĕ текех. Вĕçелис ху-нямăшĕн шурса кайнă пичĕ çине чылайччен пăхса тăчĕ-тăчĕ те ун аллисене тирпейлĕн кăкăрĕ çине хучĕ.

...Масар çине икĕ хĕрес лартрĕç. Çавăнтанпа Мĕтрипе Вĕçелис килте иккĕшĕ кăна пурăнаççĕ. Пĕрне-пĕри çур сăмахранах ăнланаççĕ.

...Çапла, манăçать иккен хурлăх, тĕксĕмленет. Каç пу-лать те, ир килет, вăхăт шавĕ, кĕрлесе, уласа тăракан пурнăç урапи хăшпĕр пулăмсене хăй айне лутăркаса чи-кет, курăнми тăвать.

Анчах этем — этемех. Унăн чун-чĕри хăйĕн тăванран та тăван, çывăхран та çывăх асаилĕвĕсене, кашни самантра лăпланупа çутă шанчăк кӳрсе тăракан асаилӳсене, ман-масть. Мĕтри ашшĕпе амăшĕн ырă сăнарĕсене асран калар-масăр çӳрет. Мĕн шухăшлать-ши ашшĕнчен тăххăрта кăна юлнă ача, мĕн пырса кĕрет-ши унăн пуçне? Ашшĕн йăваш сасси-ши, йăваш утти-ши? Е пура пуранă чух ашшĕ мел-лĕн те ăнкайлăн пуртăпа ĕçлени-ши? Е сенĕк тытса утă-улăм хăпартнă чух тем пысăкăш чикĕмсене çӳле ывăтни-ши? Е сунартан таврăнсан уссийĕ çине хытса ларнă пăра сăтăркала-сăтăркала çăпата кантрисене канлĕн салтса ларни-ши? Ĕмĕрĕ тăршшĕпе ĕçлерĕ, ĕçлерĕ Таниле, ялта чи малтан колхоза кĕчĕ, йывăрлăхран, нушаран хăвăртрах хăтăлма васкарĕ; ĕнтĕ çитнĕччĕ хăйĕн ĕмĕчĕ патне, тис-лĕкпе пулăхлатнă пахча апат-çимĕçне ытлăн-çитлĕнех па-

ратчĕ, картиш тулли выльăх ĕрчетнĕччĕ, хуралтисем хăтлăччĕ.

«Акă,— тенĕччĕ пĕррехинче Ивана,— сан пӳртне çавăрса лартăпăр та аçу-аннӳ çуртне тĕпрен çĕнетĕпĕр. Эсĕ унччен чăн-чăн платник пулса тăрăн». Çапла, çитнĕпе пĕрехчĕ Таниле ĕмĕчĕ. Çук вĕт, тăшман килсе хупларĕ. Хупларĕ кăна мар, çав ĕмĕте тымарĕпех кăкларĕ.

Унăн арăмне—Çинахвие мĕнле тав тума пĕлес-ха тата Вĕçелисăн! Качча кайса пурнăç тути-масине туйнă хĕрарăмсем хăйсен хунямăшĕсем çинчен ырăпа калаçнине сайра хутра кăна илтнĕ вăл. Тавах турра, Вĕçелисăн апла пулмарĕ. Малтанхи кунтанах хăйĕн тăван хĕрне йышăннă пек ăшшăн, сăпайлăн калаçрĕ Çинави хăйĕн кинĕпе. Килти ĕçе, хĕрарăм ĕçне, тума вĕрентрĕ. Пĕрремĕш хĕллех хунямăш вĕрентнипе вунтăхăр хутăр хутăрнăччĕ Вĕçелис, темиçе питшăлли, кравать çине, саксем çине сармалли илемлĕ кавирсем тĕртнĕччĕ. Хуплу пĕçерме те, шăрттан тума та лайăх вĕренсе çитнĕччĕ Вĕçелис. Савăк кăмăллă пулнăран, çынсемпе сăпайлăн та ăшшăн калаçнăран, вĕсене май çитнĕ таран пулăшма тăрăшнăран пурте хисеплетчĕç Çинавине. Мĕн каласси, хăйĕн çинчен ыррине çеç хăварчĕ вăл ялта. Кĕске ĕмĕрне пархатарлă пурăнса ирттерчĕ.

Манăçать хурлăх. Ырри—манăçмасть. Сийĕн-сийĕн килсе кĕрет те асилӳ чĕрене ыраттарать. Вилĕмсĕр çутçанталăк илемлĕ те, тискер те. Этемрен килмен саккунпа аталанса, çутçанталăк хăйĕн аслă ытамĕнче ыррине те, усаллине те усрать. Пĕрне хĕрхенем те тепĕрне шар кăтартам тесе тăмасть. Ун умĕнче пурте пĕр тан иккен.

## 17

«Аван-и, Вĕçелис, анне тата Мĕтри!

Чи малтанах сире пурне те питĕ пысăк салам яратăп. Мĕнпур тăвансене, кӳршĕ-арша та манран салам калăр.

Вĕçелис, санăн çырăвна илтĕм, ялти хыпарсем çинчен пĕлтĕм. Мĕнле пурăнкаласа ирттерĕр ĕнтĕ çак хăрушă вăхăта? Пĕлетĕп, арçынсемсĕр шутсăр йывăр. Анчах халлĕхе эпир нимпе те савăнтараймастпăр-ха сире. Тăшман вăйлă та хаяр.

Çапах хăраса ӳксе каялла чакмастпăр эпир. Кашни салтак питĕ лайăх ăнланать: çапăçу хирĕнчи кашни утăм вăл — пирĕн çĕршыв, пирĕн кил, атте-анне, арăм, ача-пăча. Кашни утăмшăн пурнăçа шеллемесĕр çапăçмалла. Октябрь праçникĕнче, Мускавра Хĕрлĕ площадьре çар парачĕ пулнине пĕлетĕр-и эсир? Салтаксем çав парадранах вăрçа кĕр-

се паттăррăн çапăçни çинчен илтрĕр-и? Нумай та вăхăт иртмерĕ, пирĕн çарсем Мускав çывăхĕнчи Волоколамск, Клин хулисене ирĕке кăларчĕç. Гитлер шучĕпе, Мускав тахçанах ун аллинче пулмаллаччĕ. Ĕç тухмарĕ тăшманăн. «Апла-тăк малашне те путланать унăн ĕç-пуçĕ, çĕнтерӳ пирĕн пулать!»— тет пире политрук. Тĕрĕс калать.

Эсир унта, ялта, ытла хуçăлса ан ӳкĕр-ха. Сехрене хăпартса, алă усса лармалли вăхăт мар халĕ. Салтаксене апат çитмест, вĕсене ăшă тумтир кирлĕ.

Атте çыру çырать-и тата? Ун çулĕнчи çынсем пирĕн патра та пур. Салам ярăр ăна манран. Вăрçăра çыру çӳретесси питĕ йывăр, е вĕсем урăх çĕре куçаççĕ, е — эпир. Çар чаçĕ улшăнни те пулать. Çапах унăн адресне çырса ярăр ман пата.

Пурсăра та хытă ыталатăп сире. Анне, хăвăртрах ура çине тăр. Ан чирле текех. Эпĕ сывах, чип-чиперех.

Ыталатăп сире. Иван.

Декабрен 20-мĕшĕ, 1941 çул».

Арчара — фронтран килнĕ тата пилĕк çыру. Тăваттăшĕнче — Иван ăшши, Иван ытамĕ, Иван халалĕ.

Пĕрремĕшĕ.

«...Кăштах сывлăш çавăрмалăх вăхăт пуррипе усă курса çыратăп çак çырăва. Эпир окопсенче ларатпăр. Ăшăтрĕ. Сывлама çăмăл.

Акă халĕ, шăв-шав лăпланнă хыççăн, пуçа темĕнле шухăш килсе кĕчĕ. Юратма пĕлейрĕм-ши сана? Мĕнпе те пулин кӳрентермерĕм-ши?

Юрĕ. Ку вăл хам ялан сан çинчен шухăшласа çӳренĕрен пулать пулмалла... Çапах та манса ан кай мана. Таврăнсан, юратма та ĕлкĕрĕпĕр, лайăх пурăнма та...»

Иккĕмĕшĕ.

«...Питĕ шăрăх çанталăк тăрать. Паян тырă вырмаллаччĕ ĕнтĕ çак çĕрсем çинче. Анчах пирĕн умра бомбăсемпе, снарядсемпе шăйăрттарса пĕтернĕ хир выртать. Кичем ун çине пăхма. Чĕре Виççырмана туртать. Эх, сикĕттĕм пĕрре Çарăмсана, унăн уçă шывĕпе чуна килентерĕттĕм. Лашана хыркăчлăттăм. Унтан тырă пуссине вĕçтерĕттĕм. Лобогрейка çунаттисем хулăн хăмăла авăса-авăса пынине пăхса савăнăттăм. Пулать çавăн пек, Вĕçелис, паян-ыран мар пулин те — пулатех...»

Виççĕмĕшĕ.

«...Пурăнас килет, Вĕçелис, питĕ пурăнас килет. Почта лайăх мар хыпарсем илсе килет: пĕрин ашшĕ вилнĕ, теприн пиччĕшĕ е шăллĕ пуç хунă. Хамăр та кашни çапăçу хыççăн кампа та пулин уйрăлатпăр. Кашни çапăçăва кĕ-

мессерен пуҫа ирӗксӗрех лайӑх мар шухаш пырса кӗрет: юлашки мар-ши? «Йӗтрен куҫӗ ҫук»,— теҫҫӗ, тем те пулма пултарать. Ун пек-кун пек пулас пулсан, татӑлса ан йӗр маншӑн, Вӗҫелис. Пӗл, ку вӑл Тӑван ҫӗршывшӑн, малашнехи телейшӗн кирлӗ пулнӑ. Эп хӑравҫӑ пулман, халех ӗнтӗ манӑн икӗ орденпа икӗ медаль пур... Антун ҫав-ҫавах манпа пӗрле. Лайӑх та шанчӑклӑ юлташ. Вӑрҫӑ пӗтсен, Вис-ҫырмана илсе пыратӑпах...»

Тӑваттӑмӗшӗ.

«...Нумай ҫырса тӑма вӑхӑт ҫук — кӗҫех атака пуҫланать. Эпӗ сана питӗ хытӑ юрататӑп, Вӗҫелис. Хамӑр юратушӑн хӑрушӑ ҫапӑҫӑва кӗретӗп. Вӑйсем тан мар, ҫапах кӑмӑл-шухӑш ҫирӗп пирӗн. Эпир ҫӗнтеретпӗрех! Сывӑ пул, Вӗҫелис. Чӗррӗн-сыввӑн таврӑнасса кӗт. Кӗтсе илеймесен вара, лайӑх пурӑн. Телейлӗ пул. Иван».

. . . . . . . . . . . . . . . . .

Пиллӗкмӗшӗ.

Уйрӑм хунӑ ҫак ҫырӑва. Хура тутӑрпа чӗркенӗрен, тӗкӗнме хӑяймасть ӑна Вӗҫелис. Чылайранпа арча тӗпӗнче выртать пулин те, унӑн хӑрушӑ вӑйӗ паян кун та пысӑк-ха: вӑл халь-халь шартлатса ҫурӑлса кайма, пӗтӗм кӗлеткепе чун-чӗрене ҫӗнӗрен амантса хӑварма пултаракан усал хӗҫпӑшал пек туйӑнать. Ҫавӑнпа тӗкӗнмест, уҫса пӑхмасть ӑна Вӗҫелис. Унта мӗн ҫырнине ахалех лайӑх пӗлет вӑл.

«Хаклӑран та хаклӑ Василиса (каҫарӑр, аҫӑр ячӗпе чӗнме пӗлейместӗп). Тархасласа ыйтатӑп Сиртен, ҫак ҫырӑва илсен ан макӑрӑр, ан хуҫӑлӑр. Макӑрни нимпе те пулӑшас ҫук, унсӑр пуҫне Сире, чи ҫывӑх юлташӑн мӑшӑрне, ҫӗнӗ асап кӳрес килмест манӑн. Эсир хӑвӑрӑн упӑшкӑр паттӑрсен вилӗмӗпе вилни ҫинчен калакан хута илсен те нумай макӑртӑр пулӗ. Хӑвӑра хӗрхенӗр, ан макӑрӑр текех. Ман ҫинчен, акӑ, хура ҫыру илсе, никам та макӑрас ҫук, мӗншӗн тесен ҫывӑх ҫыннӑмсем, Иван пекех, ҫут тӗнчерен уйрӑлса кайрӗҫ, вӗсене те фашист тӗп турӗ.

Ҫак ҫырӑва ҫырма пуҫличчен чылай шухӑшларӑм эпӗ, Сире кӑштах та пулин лӑплантарма пултаракан чи кирлӗ сӑмахсем суйларӑм. Сирӗн хуйхӑр мӗн тери пысӑк пулнине пӗтӗм чун-чӗрепе туятӑп. Ҫак йывӑр вӑхӑтра хӑвӑра алла илни, чуна хытарни кирлӗ.

Мӗн тери чаплӑ упӑшка пулнӑ Сирӗн, хаклӑ Василиса! Ҫавӑн пек ҫынсен чун-чӗре ҫути ыттисем ҫине те ӳкет иккен. Унӑн ырӑ кӑмӑлӗ, юлташӗсемшӗн тем тума та хатӗр пулнипире хытӑ савӑнтаратчӗ. Харсӑр та хӑюллӑ ҫынччӗ Иван. Вӑл вилӗм пирки калаҫнине нихӑҫан та илтмен эпир—

çĕнтерессе çирĕп шанатчĕ, пурăнма ĕмĕтленетчĕ. Мана, хаклă Василиса, Сирĕн çинчен нумай каласа паратчĕ. Эпĕ яланах Сирĕн илемлĕ сăн пите, ăшă кăмăлăра туйса тăраттăмччĕ. «Ку вăл манăн арăм пекех питĕ чаплă хĕрарăм пулмалла»,— тесе шухăшлаттăм. Иван Сирĕн çырусене мана та вуласа паратчĕ. Маттур Эсир, хăвăра темле йывăр пулсан та, çакăн çинчен фронта пĕр сăмах та çырса ямарăр, упăшкăра, унпа пĕрле ытти салтаксене те юрату хĕлхемĕпе, çутă шанчăкпа хавхалантарса тăтăр. Тавах Сире уншăн. Сиртен те хаклă çын Иваншăн урăх никам та çукчĕ. Мĕн тери юрататчĕ вăл Сире!

Юлашки икĕ куна эпир унпа ирттертĕмĕр. Иксĕмĕр те йăвăр амантăмăр. Эпĕ иккĕмĕш кунне тин тăна кĕтĕм. Иван вăра тăнне çухатман та пулнă иккен. Вăл эпĕ куç уçасса чăтаймасăр кĕтнĕ. Хытă асапланнă, тен, вилĕме темиçе хут та хăваласа янă пуль, çапах эпĕ куç уçиччен вилĕме парăнман. Сирĕн пата çыру çырма пултарайман вăл, суранĕ шутсăр хытă ыратнă, вара темиçе сăмах та пулин мана каласа хăварма шухăш тытнă пулмалла.

Çук, Василиса, паян эпĕ ун сăмахĕсене çырса яма пултараймастăп. Анчах çав сăмахсене каламаллах манăн. Иван умĕнче парăма юлас теместĕп. Çавăнпа та госпитальтен тухсанах эпĕ Виççырмана çул тытасшăн.

Тепĕр хут калатăп, макăрса ларнипе хуйха пусараймăн. Çирĕп кăмăллă пулăр. Çĕнтерӳ çывхарсах килет.

Сире кирек хăçан та пулăшма хатĕр Антон Кузьмин».

## 18

Унтан вара... Унтан — Антунпа тĕл пулни. Кĕтмен тĕлпулу тееймĕн ăна — çыру çырса ячĕ Антун, çав тĕлпулăва чăтаймасăр кĕтрĕ Вĕçелис: «Мĕн калама пултарнă-ха Иван хăй вилес умĕн»,— тесе канăçсăрланчĕ. Тĕлпулăвĕ вара çуркунне, шыв-шур типсе çитсен, пулса иртрĕ.

Района ĕçпе кайнă Микулай пичче лартса килчĕ хултуйиллĕ салтака. Кăç пулнăччĕ. Шкултан таврăннă Мĕтри, апат çисе, урама тухса кайнăччĕ. Алăкран шаккарĕç. Вĕçелис хăех пырса уçрĕ. Пӳртумĕнче салтак тумĕпе тăракан аманнă çынна пĕрре пăхсах тавçăрса илчĕ хĕрарăм: Антун ку, Иван патĕнчен. Нимĕн те калама хăяймарĕ вăл хăнана, шăппăн тĕпел кукрине иртрĕ те уласа йĕрсе ярасран çăварне питшăллипе хупласа хучĕ, çине-çине нăшлатрĕ, куçне шăлчĕ. Салтак вара, кантăк умне пырса тăрса, тĕттĕм чӳрече çинчен куç илмерĕ.

Астăваймасть Вĕçелис, тахăшĕ малтан сăмах хушрĕ.

Çапах алла илчĕ вăл хăйне. Салтака шинельне хывма пулăшрĕ, сĕтел çывăхнерех ларма хушрĕ. Хăй вара сăмавар лартса ячĕ. Антун мĕн каласса питĕ кĕтрĕ.

Чей тултарчĕç. Иван çинчен пĕри те шарламарĕ-ха. Аманнă салтак хăй Виççырмана мĕнле хĕнпе çитни çинчен каласа кăтартрĕ, Микулай пиччене унăн ыра кăмăлĕшĕн мухтарĕ: «Чăвашра сахал мар-мĕн вĕсем, ăслă та кăмăллă мучисем, авă, каç вырма та хăй патнех чĕнчĕ, çурчĕ ăçта ларнине те кăтартрĕ...»

Тата темччен ларчĕç Вĕçелиспа Антун сĕтел хушшинче. Сăмаха тĕлли-паллисĕр вакламасть салтак, сăпайлă та ăнланулла пек туйăнать. Пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн ялти ĕçсем çинчен ыйтса пĕлчĕ вăл кил хуçи хĕрарăмĕнчен. Вĕçелис та нумай калаçмарĕ.

Çул çинче Микулай пичче Антун салтака Вĕçелис çинчен пĕтĕмпех каласа панине пĕлеймерĕ хĕрарăм. «Килте, акă, хăвăрах куратăр,— йĕркеллех»,— ассăн сывларĕ те Вĕçелис каллех тĕпел кукрине кĕрсе кайрĕ.

Иван пирки çав-çавах сăмах-юмах тапранмарĕ пулин те, иккĕшĕ те çивĕччĕн çакна сиссе-туйса тăчĕç: кунтах вăл, вĕсен хушшинчех. Пĕри, сăмаха вăхăтсăр пуçласа, калаçăва арпаштарса ярасран шикленчĕ, тепри, Иван çинчен никамăн та мар, хăйĕннех тапратмаллине пĕлсе тăрса, калаçăва каярах та каярах хăварма тăрăшрĕ. Хăйĕн пуçĕнче çав калаçăва хускатмалли темле-темле майсем те шыраса пăхрĕ Антун, анчах çак самантпа килĕшӳллĕ сăмах тупăнмарĕ те тупăнмарĕ. Микулай пиччен çул çинчи калаçăвĕнчен Вĕçелиса хăйне курса унпа пĕрер сехет ларнă хыççăн пĕр ыйту ытларах та ытларах шухăшлаттарчĕ салтака: ăçтан çавăн чухлĕ вăй çак пысăках та мар, типшĕм, анчах шутсăр илемлĕ çамрăк хĕрарăмра? Пĕр сăмахĕпе те, пĕр хусканăвĕпе те хăйне чăтмалла мар йывăр пулнине кăтартмарĕ вăл, хăйне çакнашкал шăпа килсе тухнишĕн ӳпкелешмерĕ. Акă мĕншĕн сĕтел хушшинче, йĕс сăмавар умĕнче, ларнă чух Антун вăрçăра Вĕçелис упăшкипе ирттернĕ юлашки самант çинчен каласа пама хал çитерейменĕ. Йывăр шухăшсемпе пусăрăннă салтак хĕрарăма мĕнле пулăшмаллине, ăна мĕнпе лăплантармаллине пĕлеймерĕ те пĕлеймерĕ. Унтан та ытларах, Иванăн юлашки сăмахĕсене каласа кăтартсан, Вĕçелис ăна ăссăр çын, йĕркесĕр çын тесе айăпласран хăрарĕ Антун.

...Никулино çывăхне вĕсен батальонĕ çĕрле çитрĕ. Разведка пĕлтернĕ тăрăх, кунĕпе темиçе тытăçура пулса ĕшеннĕ фашистсен самаях вăйлă ушкăнĕ шăпах çак яла капма чарăннă. Батальон умĕнче çакăн пек тĕллев тăрать: тăш-

мана пӗр систермесӗр пӗтӗм вӑйпа пырса ҫапмалла та ирччен Никулинӑна йышӑнмалла. Пурте чӑтаймасӑр сигнал кӗтрӗҫ.

Кӗҫех ялӑн сылтӑм енче, унччен калаҫса татӑлнӑ пекех, икӗ хутчен пӑшал пени илтӗнсе кайрӗ. Унччен те пулмарӗ, ракетӑн хӗрлӗ ҫути пӗтӗм тавралӑха ҫутатса ячӗ. Иккӗмӗш ракетӑна кӗтмесӗрех салтаксем, сухаланӑ ана тӑрах такӑна-такӑна чупса, ялалла ыткӑнчӗҫ. Пӗлӗтре сип-симӗс ҫутӑ ялтӑраса кайрӗ.

— Огонь!— команда пачӗ аслӑ лейтенант.

Винтовка-автоматпа, пулеметпа пенӗ сасӑ вӑхӑт-вӑхӑт гранатӑсем шартлатса ҫурӑлнӑ сасӑ айне пулчӗ. Ун хыҫҫӑн ял варринче, умлӑн-хыҫлӑн ҫӗре кисретсе, икӗ вут юпи ҫӗкленчӗ.

Сӑрт ҫинче позици йышӑннӑ артиллеристсем ялта мӗн пулса иртнине алӑ тупанӗ ҫинчи пекех курса тӑчӗҫ. Урамсем тӑрӑх, хӗп-хӗрлӗ юханшыв юхнӑ пек, танксем, автомашинӑсем ҫунаҫҫӗ. Вут-ҫулӑм пӗлӗте пӑрӑлтатса хӑпарать. Унта та кунта, вутпа та тӗтӗмпе чыхӑнса, ҫынсем кӗшӗлтетни курӑнать. Тумланма ӗлкӗреймен нимӗҫсем, тӗллипаллисӗр перкелешсе, пӗр ҫурт патӗнчен теприн патне чупаҫҫӗ.

Перкелешӳ ял варрине вӑйлӑрах та вӑйлӑрах куҫса пырать.

Тепӗр самантран артиллеристсем те яла вирхӗнтерсе кӗчӗҫ. Ял варринче вӗсене паҫӑрах кӗтеҫҫӗ-мӗн. Нимӗҫсем кӳлӗ хӗрринчи чул ҫурта вырнаҫнӑ та пулеметран шатӑртаттараҫҫӗ.

— Халех шӑпланаҫҫӗ,— татӑклӑн каларӗ Полещук. —А ну, йӗкӗтсем, пӗр виҫӗ хут вӗсене... Чӳречерен тӗллӗр!

Чӑнах та, виҫӗ хут пенӗ хыҫҫӑн ҫурт тӑрри ишӗлсе анчӗ, чӳречесенчен ҫӑра тӗтӗм мӑкӑрланса тухрӗ. Тепӗр самантран, аллисене ҫӳлелле ҫӗклесе, тыткӑна лекнӗ фашистсем ҫунакан ҫуртран кӗшӗлтетсе тухни курӑнса кайрӗ.

Ҫапла пӗтрӗ ҫӗрлехи ҫапӑҫу. Анчах батальон командирӗ Полещука ҫапла каланине илтрӗ Антун:

— Ку вӑл пуҫламӑшӗ кӑна-ха. Сыхӑ тӑрӑр. Ыран чӑнчӑн ҫапӑҫу пуҫланать.

— Ӑнланатӑп, комбат юлташ, нимӗҫсем ҫакӑн пек ҫухатупа килӗшсе ларас ҫук,— терӗ аслӑ лейтенант.

...Ҫур сехете яхӑн вут-хӗм сирпӗтсе тӑчӗ тӑшман. Ҫуртсем ишӗлчӗҫ, машинӑсем, йывӑҫсем сывлӑшалла сирпӗнчӗҫ. Ун хыҫҫӑн нимӗҫсем атакӑна ҫӗкленчӗҫ, ним уямасӑр автоматсемпе персе ял патнелле ҫывхарчӗҫ. Анчах пирӗн минометчиксем яла кӗртмерӗҫ-ха вӗсене. Миҫӑсене пере-

кетлес тесе, сайра хутра çеç персе тăчĕç пулин те, тăшмана пуç çĕклеме памарĕç вĕсем.

Уй варрине пысăк хăвăртлăхпа тăвата танк шуса тухрĕ. Çакăнпа хавхаланнă нимĕç салтакĕсем каллех ура çине тăчĕç. Пуç çийĕн пульăсем шăхăрма пуçларĕç.

— Огонь!— янăраса кайрĕ Полещукăн уçă та хаяр сасси.

Тĕл тивертрĕç Иванпа Антун. Сулахайри икĕ танк тăп чарăнса тăчĕç. Тепĕр иккĕшĕ, васкавлăн çаврăнса, каялла вĕçтерчĕç. Перкелешӳ кăштах лăпланчĕ. Нимĕçсем каллех çĕр çумне лăпчăнчĕç, çĕнĕ пулăшу килессе кĕтрĕç.

Унччен те пулмарĕ, çӳлтен моторсен сасси вăйланса килни илтĕнчĕ.

— Самолетсем!— кăшкăрчĕ такам.

Ял çийĕн самаях аяла анса, тăшман самолечĕсем вĕçсе иртрĕç.

— Вырăна тĕпчеççĕ,—илтĕнчĕ паçăрхи сасă. —Ак кĕçех тепĕр хут çаврăнса çитеççĕ.

Çаплах пулчĕ.

Улăм витнĕ пĕр лутра çурт çывăхĕнче ӳсекен лапсăркка хурăнсем айне шăтăксем алтса вырнаçнăччĕ Иванпа Антунан расчечĕсем.

Пĕрремĕш бомба çĕр çине майĕпен шăхăрса анчĕ.

Ана кĕтсе, пĕтĕм тавралăх пĕр вăхăт чĕмсĕрленнĕ пек туйăнчĕ Антуна. Бомба урамăн тепĕр енчи виçĕ чӳречеллĕ çуртăн тĕтĕм кăларса ларакан мăрйине тӳр килчĕ. Пӳрт пĕренисем, хăма татăкĕсем йĕри-тавралла вак-тĕвек турпас пек чăл-пар çӳлелле ыткăнчĕç те, ухлатса та шатăртаттса, çĕр çине ӳкрĕç. Тусанпа тĕтĕм сирĕлсен, çурт вырăнĕнче хура.шăтăк çеç тăрса юлнине асăрхарĕç Антунпа Иван.

Пĕрин хыççăн тепри тата темиçе бомба ӳкрĕ. Вăйланчĕ ахăрсамана, алхасрĕ, туллашрĕ. Çывăхри çурт çатăртатса çунма пуçланăран окопра çав тери вĕри пулса кайрĕ. Артиллеристсем, гранатăсем илсе, окопсенчен вирхĕнсе тухрĕç: çуртсен тикĕс речĕсен вырăнĕнче пĕрене таткисем сапаланса выртаççĕ, сыхланса юлнă пӳртсен тăррисем ишĕлсе пĕтнĕ, хуралтăсемпе картасем йăваннă, арканнă. Тусан, тĕтĕм, кĕл явăнса вĕçет урам тăрăх. Икĕ лаша, ниçта кайса кĕреймесĕр тискеррĕн кĕçенсе, сиккипе пĕр тăкăрлăка кĕрсе кайнине курса,юлчĕç Антунпа Иван.

Çак вăхăтра нимĕç салтакĕсем каллех атакăна çĕкленчĕç. Пахчасем хыçĕнчи окопсене йышăнма ĕлкĕрчĕç те вĕсем пирĕн салтаксене урамăн тепĕр енне хĕсее кăларчĕç.

— Çак енче лайăх çирĕпленсе, тăшман атакине сирсе ямалла, ун хыççăн, хамăрăн тапăнса, ăна ялтан кăларса

ыватмалла,— çакăн пек приказ илсе килчĕ комбат связнойĕ.

Вăтăр-хĕрĕх çын: автоматчиксем, артиллеристсем, санитарсем — сывви те, аманни те — сыхланса юлнă çурт хысĕнче йăпшăнса тăчĕç, атакăна çĕкленме команда кĕтрĕç. Пурте çак вăхăтра хăйсен ушкăнĕнчи Аксинин комиссар çине тинкерчĕç. Комиссар шăлне çыртрĕ, васкамасăр пиçиххине вĕçертрĕ те шинельне хывса çĕре пăрахрĕ, пистолетне кăларчĕ.

— Хатĕрленĕр,— терĕ вăл, сассине хăпартмасăр. —Тăван çĕршывшăн! Ман хыççăн! Ур-ра!

Салтаксем, кашни хăй сассипе хавхаланнăскерсем, çул çине сиксе тухрĕç, пĕр пĕринчен чупа-чупа иртме тăрăшрĕç. Çак хĕвĕшÿре Иван çурăмне курса юлчĕ Антун. Сулахайра та, сылтăмра та çул урлă тата темиçе ушкăн каçрĕ.

Умра каллех гранатăсем шартлатни, автоматсен тăрăлтатăвĕ тискеррĕн илтĕнме тытăнчĕ. Антун хăй умĕнче Иван чупнине курчĕ. Акă вăл пĕтĕм вăйран граната ыватса ячĕ те алла тепĕрне илме хатĕрленчĕ. Вăрахчен тăчĕ çумĕнчи гранатăна шыраса. Шыраса тăчĕ-ши? Тен, тăшманăн ылханлă пули пырса тивнĕччĕ ĕнтĕ унăн хырăмне? Çапла, пырса тивнĕччĕ çав. Пĕр самант, хыçалалла ÿкес мар тесе, каçăрăлса тăчĕ Иван, унтан хырăмне ярса тытрĕ, кукленчĕ, вара хăрах аяккăн çĕре тĕшĕрĕлсе анчĕ. Нимпе те пулăшаймарĕ ăна Антун, шăлне çыртса, малалла ыткăнчĕ. Анчах хăй те инçе каяймарĕ. Сылтăм урине чул татки пек япала перĕннине туйрĕ вăл, виçĕ-тăватă утăм турĕ кăна — пĕçĕре тем хытă пĕçертсе янине, сылтăм ури лăштах кайнине, атă ăшĕнче темле ăшă шĕвек лăчăртатма пуçланине сисрĕ. Антун та ÿкрĕ. Куçĕ хуралса килчĕ унăн, тăнне çухатиччен пирĕн салтаксем «ура» кăшкăрни аяккарах та аяккарах кайнине илтсе юлчĕ вăл...

«Çакăн çинчен каласа кăтартас-и паян Вĕçелиса?— ассăн сывласа шухăшларĕ Антун.— Çук,—терĕ вăл çирĕппĕн.— Çĕнĕ ырату çеç çуратĕ вăл хĕрарăм чĕринче. Лăпланма пулăшаймĕ. Хăçан та пулин, вăхăт иртсен, Вĕçелис çакăн çинчен çине тăрсах тĕпчес-тăвас пулсан. Халь юрамасть».

Сăмах тупăнмарĕ. Çакăн чухлĕ инçе çул туса, Иванăн юлашки саманчĕ çинчен, унан юлашки сăмахĕсем çинчен каласа пама килнĕ Антун хăйĕн шухăшĕнчен хăй хăраса ларчĕ, асапланчĕ, хăйне айăплăн туйрĕ. Паян çакăн пек пулса тухнăшăн вилнĕ Ивана вăрçма хал çитереймерĕ вăл, хăйне ятларĕ: «Манăн, шăтăк пуçăн, малтанах шухăшламалла пулнă çакăн çинчен, кунта сĕтĕрĕнсе киличчен паян-

хи асаплă вăхăта шута илмелле пулнă. Каярах вăхăт тупăнмастчĕ-и? Кăштах чунĕ пусăраннă пулĕччĕ Вĕçелисăн. Хăшĕ-пĕри манăçнă, сыпăннă пулĕччĕ...»

Урăхла тума та пултараймарĕ çав Антун. Ытла тархасласа ыйтрĕ те Иван, Антун ăна çирĕп сăмах пачĕ. Салтак сăмахĕ. Иван та, хăй те юн ăшĕнче выртнă вăхăтра. Çакăн пек сăмаха тытмасăр тăма пултараймарĕ вăл. Госпитальтен тухрĕ те тӳрех Вĕçелис патне васкарĕ.

...Тăна кĕнĕ Антун хăй ăçта выртнине тӳрех тавçăрса илеймерĕ. Шурă халатлă çынсем хыпăнса ӳксе чупкалани, унта та кунта арçынсем хыттăн ахлатни, хăсас килесле тăракан шăршă малтанах хура халăхпа тулса ларнă пĕр пĕчĕк вокзала аса илтерчĕ. Ăçта каяççĕ вĕсем? Мĕншĕн халăх хыттăн сĕрлет? Ăçта чупаççĕ шурă халатлисем? Мĕншĕн тата кравать çинче выртать Антун? Вăл чавсаланса пуçне çĕклеме тăчĕ кăна, аялта, сылтăм чĕркуççирен çӳлерех, касса кайрĕ, ун куçĕсенчен вут-хĕм сирпĕнсе тухрĕ, тĕнче тĕксĕмленчĕ. Каллех минтер çине ӳкрĕ унăн пуçĕ, вăйсăрланнă аллисем краватĕн икĕ айккине усăнса анчĕç. «Пĕтрĕм иккен,— терĕ Антун. — Акă ăçта кĕтет хăрушă вилĕм...» Вилес килмерĕ. Шăлне çыртрĕ вăл, çак чăнлăхран пытанас тесе, куçне хупрĕ. Анчах ыратни вăйланчĕ те вăйланчĕ. «Ăçта эсĕ, аслă вăй-хăват!— чун-чĕрипе тархасларĕ Антун. — Эй, хăватлă çутçанталăк! Уйăрса ан яр мана хăвăнтан. Манăн пурăнас килет. Манăн... манăн çемьешĕн тăшмана тавăрмалла. Манăн вилĕмшĕн вилĕм кӳмелле. Манăн çак çĕр çинче тĕрĕслĕх туса хумалла. Сан ывăлу эп, аслă çутçанталăк! Ăнлан мана. Пурнăç пар хăвăн ывăлна...»

Çак вăхăтра Антун, хăйне меллĕрех пултăр тесе, сулахай урине çĕклесе сылтăммипе юнашар вырнаçтарма пикенчĕ, анчах урапа ура пĕр-пĕрне лекмерĕç. «Мĕн амакĕ ку?»— шартах сикрĕ Антун. Каллех çĕкленме хăтланса пăхрĕ, анчах ку хутĕнче те, тымарсăр йывăç çĕре патлатнă пек, минтер çине вăйсăррăн йăванчĕ. «Сывă пул, эппин, сылтăм ура»,— мĕн пулнине тавçăрса илсе, йывăррăн хашлатса сывларĕ салтак.

Сасартăк çак тискер сĕрлевре çине тăрсах хăйне такам тархасласах чĕнни пырса кĕчĕ Антун хăлхине. Унталла-кунталла çавăрчĕ вăл пуçне, сасă ăçтан илтĕннине чухлаймарĕ.

— Антун, тетĕп, çĕр çăтманскер!— янраса кайрĕ сывăхрах палланă сасă. Вара тинех сулахай кравать çинчи шап-шурă сăн-питлĕ çын Иван пулнине тавçăрса илчĕ Антун.

— Эсĕ-çке,— вăйсăррăн пăшăлтатрĕ вăл.

— Эпĕ, Антун,— çавăн пекех шăппăн каларĕ Иван.— Санпа калаçса та юлаймăп тенĕччĕ.

— Сана ăçтан амантнă?— ыйтрĕ Антун.

— Амантман — вĕлернĕ. Сана каламалли сăмахсем çеç теплерен тăрса юлчĕç. Калаймăп тесе хăранăччĕ, тăна кĕтĕн, авă...

— Ан сӳпĕлтет, Иван.

— Куратăп, сана та йывăр. Анчах пĕлетĕп: эсĕ пурăнатăн. Сана кунта йлсе килнине курсах вырттрăм. Врач хăй


каларĕ: пурăнать ку терĕ. Итле, Антун...

Çак вăхăтра Иван пĕтĕм кĕлеткипе чĕтренсе илчĕ те, урисене хутлатса, вĕсемпе хырăмне тĕрелерĕ, сасăпах йынăшса ячĕ, шутсăр хытă ыратнипе, питне-куçне пĕркелентерчĕ.

— Итле, Антун,— терĕ вăл, ниме пăхмасăр. — Тем пулсан та, Вĕçелис патне çитме тăрăш. Кала, çитетĕн-и?

— Сăмах паратăп, Иван,— юлташĕ малалла мĕн каласса кĕтрĕ Антун.

— Эп сана шанатăп. Ахальтен мар эс манăн чи çывăх юлташ пулнă. Кала эс ăна, Антун, çĕре те эпĕ ун ячĕпе кĕретĕп. Ан макăртăр, ан хуçăлтăр. Кала эс ăна. Вăл пурне те ăнланма тивĕçлĕ. Çавăн пек çын вăл. Эх, Антун, хăвах курăн-ха эс ăна. Илтетĕн-и эсĕ мана?

— Илтетĕп, Иван.

— Шел, нимĕнпе те пулăшма пултараймастăп Вĕçелиса. Итле-ха, Антун, ун патне çитме сăмах паратăн-и эсĕ мана?

— Салтак сăмахĕ, Иван, ан иккĕлен.

— Апла пулсан, ан пăрах эс ăна... Шанатăп сана, тархаслатăп.

— Эс ан сӳпĕлтет-ха. Калаçса татăлнă. Вăрçă хыççăн пĕрлех каятпăр сирĕн яла...

— Пулмасть, Антун, пулмасть. Эсĕ пĕчченех каятăн. Тăна çухатасран хăратăп. Вара тек вăранаймăп та. Ан кансĕрле. Сăмахăма каласах хăварам. Итле... Енчен те эсĕ ăна курсан... Енчен те вăл сана килĕшсен... Çук-ха, капла мар... Ан пăрах Вĕçелиса... Ман вырăнта пул...

— Мĕнле?— ăнланаймарĕ Антун.

— Çук, çук, капла та мар,— юлашки вăйне пухса васкаса калаçрĕ Иван. — Пулăш эс ăна. Нумай асап тӳсрĕ вăл. Енчен вăл сана килĕшсен... Эп сана шанатăп, Антун. Ăнланакан çын эсĕ... Вĕçелис та ăнланать. Эсĕ ăна ман сăмахсене кала. Хăйне лайăх пултăр тесе, сана лайăх пултăр тесе калатăп-çке. Каятăн-и Вĕçелис патне? Каласа паратăн-и ман сăмахсене?

— Эс ыйтнине тăвăп, Иван,— терĕ Антун, çак самантра юлташне кÿрептерме хăяймасăр.

— Халĕ эпĕ лăплантăм. Сыв пул, Антун. Лайăх пурăнăр, телейлĕ пулăр. Вĕçелиса ыталаса чупту ман ятпа. Манса ан кайăр. Ман пата килсе курăр. Сывă пулăр...

Пурнăçăн юлашки хĕлĕхĕ çак самантчен мĕнле тытса тăма пултарнă-ши Ивана тесе, çавăн чухне те, каярах та нумай шухăшларĕ Антун. Юлашки сăмахĕсене каласа пĕтерчĕ кăна Иван, урисем майĕпен хырăмĕ çинчен шуса анчĕç унăн, кĕлетки темиçе хутчен тăр-тăр чĕтренсе илчĕ, янах шăммисем, чăтмалла мар асапа палăртса, унталла-кунталла хускалчĕç. Юлашки сывлăшĕпе пĕрле шăппăн та уçăмсăррăн пĕртен-пĕр сăмах сăрхăнса тухрĕ. Вĕç-ççç-е-ли-исс... Тепĕр самантран вокзал пек сĕрлекен пÿлĕм таçта çĕр тĕпне анса кайнăн туйăнчĕ Антуна. Сасартăк тавралăх шăпланчĕ, тĕксĕмленчĕ, хăйĕн пĕлтерĕшне çухатрĕ. Чĕри ниçта кайса кĕреймесĕр шаккани кăна хăй çак тĕнчере пуррине, пурнăç малаллах тăсăлнине астутарчĕ...

Çук, калаймасть Антун çак сăмахсене Вĕçелиса. Тем тесен те калаймасть. Хăйне чи юлашки сын вырăнне хурса айăпласран шикленет.

Темиçе хутчен те чикарккă çавăрчĕ вăл сĕтел хушшинче. Туртса яма хăяймарĕ. Кашни çавăрмассерен чикаркки-сене кĕсйине ярса пычĕ.

Вĕçелис кĕтрĕ. Васкатма пултараймарĕ вăл Антуна. Шăппăн кĕтрĕ. Темиçе хут та, сăмах пуçлать-ши тесе, салтак куçĕнчен пăха-пăха илчĕ вăл, анчах лешĕ шыв сыпнă пек ларчĕ, шухăша кайса, таçта инçетри çулсемпе çÿрерĕ. Кирлĕ, мĕн тери кирлĕ Вĕçелиса Иван сăмахĕ! Тен, çав сăмах мĕнпур хурлăха та асапа сирсе ярĕ, тен, вăл халиччен пек нушаллă та мĕскĕн мар, урăхла — мĕнлине пĕлеймест-ха Вĕçелис,— йăлтах урăхла пурăнмалли майсем тупса парĕ? Тен, вăл, çав асамлă сăмах, пĕрре куç хупса иличчен Вĕçелиса урăх тĕнчене — телей тĕнчине — куçарса кайĕ? Ача пек кăсăкланса, çав вăхăтрах хăраса та иккĕленсе кĕтрĕ Вĕçелис салтак мĕн каласса.

Салтак çав-çавах чĕнмерĕ. Вăл хăй шухăшне шухăшларĕ. «Çапла, эсĕ илемлĕ те ăслă,— терĕ вăл хăй ăшĕнче,— анчах Иван каланă пек пулас çуккине туйсах тăратăп. Çыннăн ăнкайсăр шăпи çинче хăвăн телейне тăваймăн. Иван сăмахне ниxçан та манмăп эпĕ, Вĕçелиса май килнĕ таран пулăшма тăрăшăп. Анчах вăл ман пулăшăва йышăнасшăн пулмасан? Мана вăл тĕрĕс мар ăнлансан?..»

Çак шухăшсемпе пуçне çĕклерĕ Антун. Вĕçелис куçĕсемпе тĕл пулчĕ. Пĕр вăхăт ун çине тÿррĕн пăхрĕ те: «Пуç-

на ан ус, пурӑнас пулать»,— тенӗ пек, куҫне вылятса илчӗ. Лешӗ, ӑнланса, пуҫне пӗкрӗ.

Антун ура ҫине тӑчӗ, пӳлӗм кӗтессине таянтарса хунӑ хултуйине илчӗ.

Вӗҫелис туйрӗ: кайма пуҫтарӑнать салтак. Анчах мӗншӗн нимӗн те каламарӗ вӑл Иван ҫинчен. Мӗншӗн ҫырури сӑмахсене манса кайрӗ вӑл? Мӗншӗн, ҫакӑн пек инҫе ҫулпа килсе, ним тӗлли-паллисӗр тухса каясшӑн Антун?

Вӗҫелис чӑтаймарӗ, шинельне тӑмелесе таракан Антун патне пычӗ те, ун куҫӗнчен пӑхса, шӑппӑн ҫапла ыйтрӗ:

— Мӗн каларӗ Иван?

Антун пӗр самант ним чӗнме аптраса тӑчӗ. Каллех Иванӑн вилес умӗнхи шуранка сӑнӗ тухрӗ ун куҫӗ умне. Сӑмахӗсем аса килчӗҫ: «Кала, Антун... сӑмах паратӑн-и, Антун?...»

— Каҫар мана, Василиса,— терӗ Антун,— Иван та питӗ тархасларӗ, ху та ҫине тӑрсах ыйтатӑн. Вӑл... пурнӑҫ ҫинчен калаҫса вилчӗ. Сан ҫинчен, ман ҫинчен... «Кун пек пулмасть»,—терӗм эпӗ ӑна. Вӑл хӑйӗннех печӗ, «Вӗҫелис ӑнланать, пӗчченлӗхре ан асаплантӑр, телейлӗ пултӑр»,—терӗ... Юлашки сӑмахӗ те унӑн сан яту пулчӗ... Мӗнле те пулин пулӑшу кирлӗ-тӗк, тӳрех кала. Микулай пичче патӗнче пулатӑп. Тепӗр хут ыйтатӑп: каҫар мана, Василиса, хам шухӑшласа каланӑ сӑмахсене мар, Иванӑн юлашки сӑмахӗсене каларӑм сана.

Пӗрре тӗлӗнсе, тепре тин илтнӗ сӑмахсене ӗненес темесӗр шак хытса тӑчӗ Вӗҫелис. Пӗрре манса кайма тӑрӑшрӗ Антун сӑмахӗсене, тепре ҫӗнӗрен аса илчӗ. Иван сӑмахӗ-и? Ҫук, ҫук, ҫук! Пустуй ку, пӗтӗмпех пустуй! Калама пултарайман ҫапла. Пултарайман!

— Кай,— халь-халь йӗрсе ярасран хӑйне-хӑй чарса, паҫӑрхи пекех шӑппӑн, анчах тарӑхса каларӗ Вӗҫелис.— Кай та — урӑх ан кил...

## 19

Анчах Антун итлемерӗ Вӗҫелис сӑмахне. Ялтан кайма шутламарӗ вӑл. Икӗ хусах — ватӑлса ҫитнӗ Микулай пиччепе аманнӑ салтак — пӗр чӗлхе тупрӗҫ пулмалла, килӗштерсе, шӑкӑл-шӑкӑл пурӑнчӗҫ, пӗр-пӗрне пӗччевлӗх туйӑмне сирсе яма пулӑшрӗҫ. Микулай пичче пушарникре ӗҫлерӗ, Антун вара кӗркунне ҫитсен шкулта ачасене вӗрентме тытӑнчӗ. Ҫав кун хыҫҫӑн та, мунча кӗрсе тухсан тӑвагтӑн ларнӑ чух шӑв-шав пулса иртнӗ хыҫҫӑн та, Вӗҫелис пурӑнакан урампа ҫӳреме пӑрахмарӗ Антун. Ҫурт умӗнче ча-

рăна-чарăна тăчĕ вăл, куçĕпе Вĕçелиса шырарĕ, чĕнсе кĕртессе, пĕр-пĕр самах каласса кĕтрĕ.

Вăхăт шурĕ те шурĕ. Юр ларчĕ, сивĕтрĕ, çил-тăман алхасрĕ те лăпланчĕ, урамсенче çутă кӳлленчĕксем йăлтăртатма пуçларĕç. Пĕр ирхине Çарăмсанти кăваккăн çиçсе выртакан пăр шатăртатса илчĕ те майĕпен, мăнаçлăн вырăнтан тапранчĕ. Таниле лартса хăварнă хурăн çине икĕ шăнкăрч килсе ларчĕç, çунат çапса шăхăра-шăхăра çурхи куна, хĕвеллĕ тĕнчене мухтаса юрлама пуçларĕç.

Яра куна фермăра ĕçлесе, хăй унччени пек хытă ĕшеннине туймарĕ Вĕçелис. Çурхи çанталăк чĕрĕлĕх кӳчĕ ăна. Қайăк пек, кăвак тӳпере вĕçесси килчĕ унăн, хăй юррине юрласси килчĕ.

«Вăрçă вĕçленсе пырать, пирĕн çарсем Германире çапăçаççĕ, асаплă кунсем кĕçех иртеççĕ, хĕрсем»,— тет председатель. «Мĕнле пулĕç вĕсем, вăрçă хыççăнхи кунсем?— шухăшлать Вĕçелис. Хăйне хăй çапла хуравлать: — Тӳрех ырă-ырă пулса кайĕ, шăмшак ыратма пăрахĕ, апат-çимĕç тулăх пулĕ, çĕнĕ çуртсем лартса парĕç, çынсем тăраниччен çывăрма пуçлĕç, пĕр-пĕринпе килĕшӳллĕ пурăнĕç, таврара юрă-кĕвĕ илтĕнсе тăрĕ. Пулĕ-ши çавăн пек? Пулать! Вăрçăччен çаплаччĕ. Мĕншĕн хăвалаcа ятăмăр тăшмана? Телейлĕ пулас тесе. Тутă пурăнас тесе. Анчах кам тăвĕ-ха телейне? Арçынсем вăрçăра вилчĕç. Çĕнĕ çурт кам лартса парĕ пире? Эй, çук-ха çав, вăрçă пĕтсен те ырлăх пĕлĕтрен тӳрех йăтăнса анассăн туйăнмасть. Тĕрĕс, арçынлă хĕрарăмсем ура çине хăвăртрах çĕкленĕç. Вĕçелисăн вара... Эх, Мĕтри пĕчĕкрех. Мĕтри? Қам вăл Вĕçелисшăн? Ӳссе çитĕ те вĕçтерĕ хăй çулĕпе. Авланса ярĕ. Пурăн вара, Вĕçелис, тăлăххăн-турăтăн. Мĕн ватăличчен, çĕре кĕриччен...»

Çапла, Антуна хăйĕнчен пистерме юрамасть Вĕçелисăн. Ăслă арçын, кăмăлĕ лайăх. Мĕн тери пулăшасшăн тăрăшать. Қашни хĕрарăмах çакăн пек çын тĕлне пулас çук. Эппин, Вĕçелисăн та шанчăка çухатма кирлĕ мар.

...Пĕр каçхине Мĕтри шкултан хаваслăн çиçсе таврăннине аса илчĕ Вĕçелис. Хăй вал кĕпе çума пикенчĕччĕ. Алăкран кĕнĕ-кĕменех Мĕтри пир сумкине Вĕçелиса тыттарчĕ.

— Уçса пăх-ха, инке, унта сана валли те темĕскер пур,— терĕ вăл, чеен кулкаласа.

— Ак тата,— йĕпе аллисене аркă вĕçĕпе сăтăркаларĕ Вĕçелис. — Мĕскер-ши?

Сумкăран хутпа чĕркенĕ çемçе япала туртса кăларчĕ те ăна салатма тытăнчĕ Вĕçелис. Хура пурçăн çинчи темиçе тĕслĕн ялтăртатакан тĕрĕсене курсанах тавçăрчĕ

вăл: тутăр, шерепеллĕ пурçăн тутăр! Шутсăр савăнса ӳкнĕ Вĕçелис тутăра хăй умне тытса пăхрĕ, ним калама аптрарĕ.

— Ăçтан тупрăн?— тӳрех ыйтрĕ Мĕтрирен.

— Учитель пачĕ,— терĕ лешĕ. — Антон Кузьмич. Эпĕ шкултан таврăнаттăм. Вĕсем Микулай пиччепе таçтан лашапа килетчĕç. Района кайнă пуль. Вăт, чĕнсе илчĕ те: «Çакна инкӳне пар»,—терĕ. Питĕ лайăх учитель Антон Кузьмич. Мĕн кăна пĕлмест пуль вăрçă çинчен! Пăлтах каласа парать.

Хĕпĕртерĕ те, шикленчĕ те çавăн чух Вĕçелис. Тутăра çыхса пăхмарĕ вăл, ăна тӳрех арчана тирпейлесе хучĕ.

Тепрехинче Мĕтри хăйĕн инкĕшне тăваткăл шурă конверт тыттарчĕ.

— Кăна та Антон Кузьмич пачĕ, инке,— терĕ вăл. — Вула-ха, ман пирки çырса ямаи-и сан патна?

Анчах хальхинче Мĕтри умĕнче ырăмарланса кайрĕ Вĕçелис.

— Çук, сан пирки мар,— терĕ вăл Мĕтрие. Вара çийĕнчех урăх сăлтав тупрĕ. — Антон Кузьмича эпĕ районтан справка илсе килме хушнăччĕ, çавă вăл.

Кайран, Мĕтри урама тухсан тин Вĕçелис конверта уçрĕ. Уçрĕ те хăйне хăй ĕненмерĕ. Конверт ăшĕнче — хут укçасем. Шурă хут çине çырса хуни те пур: «Мĕтри пĕрмай çăпатапа çӳрет. Халĕ, йĕпе-сапара, шăнса пăсăлĕ. Атă илсе пар. Хăвăн çинчен те манса ан кай. Кирлĕ пулсан, систер, укçа-тенкĕрен татăк мар. Антон».

Анчах çак укçа-тенке тĕкĕнме те хăяймарĕ Вĕçелис. Ăна та арчана тутăрпа юнашар чиксе хучĕ...

— Асту, Вĕçелис, телейне çухататăн,— тет ăна Маруç.

— Йышăн, Вĕçелис, кам кирлĕ тата сана,— çине тăрса ӳкĕтлет Ярахви Веркки. — Ухсах тесе пăхса ан тăр. Пурпĕрех арçын вăл. Манăн Ярахви те аманса таврăнчĕ те, пурпĕрех... Мĕнле савăнтарать иншо!

— Пуласси çинчен шухăшла. Ара, тин çурăлнă чечек кăна вĕт-ха эсĕ, авă, пĕвӳ-сийӳ мĕнлерех илемлĕ,— куçкĕретех ăмсанса калать Питтăпай Санюкĕ.

— Типет, çунать саншăн Антун салтак, эс хăнк та тумастăн. Эх, хулăччĕ те çав сана!— вăрçать Вĕçелиса Микулай пичче.

— Инке, Антон Кузьмич пирĕн пата пурăнма куçтăр-и? Лайăх çын вăл шутсăр. Сана та, мана та питĕ кăмăллать. Пичче вырăнне пултăр, э? Куçтăр-и, инке?— пысăк çын пек куçран ăслăн пăхса ыйтать Мĕтри.

Çак сăмахсене аса илет те, пуçĕ çаврăнса каять Вĕçе-

лисӑн. Пӗр тесен, тӗрӗсех калаҫҫӗ ҫынсем. Миҫе арҫын вӑрҫа тухса кайрӗ ялтан? Хӑшӗ таврӑнчӗ? Ярахви. Йывӑр аманса, питне-куҫне ҫӗмӗрттерсе. Миҫен таврӑнчӗҫ тата? Сахаллӑн. Ытла нумай хура хут килсе тулчӗ Виҫҫырмана. Кампа пурӑнас, эппин, ялти хӗрарӑмсен? Кама кӗтсе ларас, мӗне шанас?

...Тӑвайккире ем-ешӗл курӑк тапса тухрӗ. Садри йывӑҫсем папка ҫурчӗҫ, ҫӗмӗрт йывӑҫҫи йӗркеллӗн ҫулҫӑ кӑларма та ӗлкӗреймерӗ, хӑйӗн кашни тураттинчен вӗтӗ-вӗтӗ симӗс шерепесем ҫакса ячӗ те пӗр ирхине шап-шурӑ шупӑрпа пӗркенчӗ. Тӗлӗнмелле илемлӗ кунсем тӑчӗҫ Виҫҫырмара.

20

Ял хӗрринчи ту ҫинчен, хӑйӑр шӑтӑкӗ патӗнчен, пӑхас пулсан, Виҫҫырма ал тупанӗ ҫинчи пекех курӑнать. Ял варрипе юпленсе юхакан Ҫарӑмсан шывӗ ҫутӑ та тӑрӑ. Тӳпере пӗр вӗҫӗмсӗр тӑри юрри илтӗнет. Епле чыхӑнса каймасть ирӗке, уҫӑ сывлӑша, хӗвеле юратакан пӗлтӗрти пӗчӗк кайӑк, епле ывӑнмасть вӑл ҫак илеме мухтамашкӑн!

Хутран-ситрен ял урамӗсенче йытӑ вӗрет, автансем авӑтаҫҫӗ. Лере, Ваҫнкке ҫаранӗпе юнашар, Ҫатта тӗпекӗнче, Маруҫӑн тракторӗ пӗр чарӑнмасӑр тӑрӑлтатать. Ҫынпа ҫын калаҫни, урапа кӑлтӑртатни, алӑк-хапха уҫӑлса хупӑнни пӗр самантлӑха та лӑпланмасть.

...Ене суса пӗтерчӗҫ дояркӑсем, ӗнисене кӗтӗве ячӗҫ, ҫамрӑк пӑрусене апат ҫитерчӗҫ, тислӗк тасатрӗҫ. Унтан ферма заведующийӗ Ярахви пӳрне те хурал пӳртне кӗме хушрӗ. Вӗсем патне Архип Иванч Громов килнӗ-мӗн. Пӗрре пӑхсах паллӑ: уйчченхи пек кӑра та ывӑннӑ сӑнлӑ мар, савӑнӑҫлӑ вӑл паян. Кашниппех кӑмӑллӑ калаҫать, шӳт тӑвать. «Ҫанталӑк илемлӗ тӑни председателе те савӑнтарать ӗнтӗ»,— тесе ӑнланчӗ Вӗҫелис.

Ун чух, виҫӗ ҫул каялла, Архип Иванч ҫинчен лайӑх шухӑшлани, ӑна ӑнланакан ҫын тесе хисепленни питӗ тӳрре килчӗ. Тӗрӗс, хытӑ ӗҫлеттерчӗ вӑл хӗрарӑмсене, вӑхӑт-вӑхӑт куҫ хупма памарӗ, анчах ҫакӑншӑн председателе пӗри те ӳпкелешмерӗ. Пӗр-пӗр ӗҫе пуҫӑниччен унӑн пӗлтерӗшне ӑнлантарма, ҫынсене хавхалантарма пултарать Архип Иванч. Кашни ҫынпа уйрӑммӑн калаҫса, унӑн нушисене пӗлме тӑрӑшать, вӑхӑтра пулӑшу пама пикенет.

Ҫав кӗркунне, Мӑрса Мишурӗпе пулса иртнӗ тамаша хыҫҫӑн, ҫывӑхрах паллашнӑччӗ унпа Вӗҫелис. «Килте питӗ йывӑр пулсан,— вутӑ-шанкӑ кирлӗ-и, тырӑ пӗтсе ҫитнӗ-и,— именсе ан тӑр, тӳрех правление кил, епле пулсан

та çураçтарăпăр»,— терс председатель. Кайран та — ĕçретĕк ĕçре, урамра-тăк урамра — Вĕçелис мĕнле пурăнни çинчен ыйтса-пĕлсех тăчĕ Архип Иванч. Мĕн каламалли, Виççырма çыннисемшĕн чăн-чăн тăван пекех пулчĕ колхоз пуçлăхĕ. Тепри пулсан, çавăн пек вырăнта ларса, хăй çинчен шухăшлĕччĕ чи малтан, ку ун йышши пулмарĕ. Хваттерте ватă Хĕрхи аппа патĕнче пурăнать вăл, арăмне ытти хĕрарăмсемпе пĕрлех ĕçлеттерет, çăва тухсан вунвиççĕри ывăлне те колхоз ĕçне хăвалать. Çавăнпа виççырмасем «хамăр ял, хамăр çын» теççĕ Архип Иванч çинчен.

Çапла, савăнăçлă паян председатель. Хурал пӳртне пурте пухăнса çитсен, сĕтел хушшинчен çĕкленчĕ те Архип Иванч пĕр вăхăт çынсем çине ăшшăн пăхса тăчĕ. Унтан тин хăйĕн çăмахне пуçларĕ.

— Ĕçсем ăнсах пыраççĕ, юлташсем, туссем, тăвансем,— терĕ вăл. — Çураки вĕçленчĕ. Лайăх вĕçленчĕ тес пулать. Пурте тăрăшса ĕçлерĕмĕр, тĕплĕн ĕçлерĕмĕр. Районтан тата çапла пĕлтерчĕç: патшалăха сĕт парассипе те малта пыратпăр эпир. Куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялав каллех пирĕн алла куçать. Акă, мĕн чухлĕ савăнăç паян виççырмасен! Э, юлташсем? Мĕншĕн алă çупмастăр?

— Çупас, ара, мĕншĕн çупас мар!—чи малтан сиксе тăчĕ Ярахви Веркки, ал лаппи çине сурам пекки турĕ те хыттăн алă çупма пуçларĕ. Ун хыççăн ыттисем те хĕрсе кайсах алă çупрĕç.

— Паян ирхине эпир правлени ларăвĕ ирттертĕмĕр,— малалла калаçрĕ Архип Иванч. — Юлташсем, туссем, тăвансем! Урнă тăшмана çапса аркатма мĕн тери йывăр пулнине сире калама та кирлĕ мар. Эсир фронтри салтаксем пекех чăтăмлă та паттăр пултăр. Нăйкăшмарăр, пуç усмарăр. Куç хупмасăр, пуç çĕклемесĕр ĕçлерĕр. Çăмăл пулмарĕ. Çывăх çыннăрсене мĕн чухлĕ çухатрăр эсир, мĕн чухлĕ куççуль тăкрăр. Пĕлетĕп, паян-ыранах иртсе каяс çук сирĕн асапăр. Анчах, юлташсем, туссем, тăвансем, эпир — çĕнтертĕмĕр. Хамăрăн ачасем умĕнчи, килес ăрусем умĕнчи таса тивĕçе пурнăçларăмăр эпир. Хамăртан мĕн килнине пурне те турăмăр. Колхозри парти организацийĕ ячĕпе, правлени ячĕпе сире, хаклă юлташсем, пурне те чун-чĕререн тав тума ирĕк парсамăр. Чи хастарлисене вара правлени членĕсем колхоз ударникĕ ятне пама йышăнчĕç. Тепĕр виçĕ кунтан, вырсарникун, колхозра акатуй ирттерме палăртрăмăр. Çавăн чух эпир вĕсене хаклă парнесем парса пĕтĕм халăх умĕнче чыс тăвăпăр. Малтанлăха сире ударниксен ячĕсене вуласа парам...

...Çĕкленӳллĕ кăмăлпа, йăл-йăл çиççе утрĕ Вĕçелис кăн-

тăрлахи апата. «Эй, çынсем, курăр, эпĕ вăл — колхоз ударницц!»— тенĕн хĕмленчĕ унăн çамрăк та илĕртӳллĕ сăнпичĕ. Килне çитсен, сад пахчине кĕрсе, хитрен хумханса ларакан темиçе чечек татса илчĕ вăл, пӳртре вĕсене тăм чӳлмеке вырнаçтарчĕ. Уяв чухнехи пек кăмăл-туйăм ăна пӳрте тата лайăхрах тирпейлеме хистерĕ. Вĕçелис кусарпа хыра-хыра урай çума пуçларĕ.

Çав вăхăтра шкултан Мĕтри килсе çитрĕ. Сумкине вырăн çине печĕ те, сĕтел çинчи чечексене курсан, тĕлĕннипе, тăп чарăнса тăчĕ вăл, унтан каллех алăк патнелле васкарĕ.

— Эс каллех васкатăн-и-ха? Лар, часах яшка антаратăп,— пӳлчĕ ăна Вĕçелис.

Мĕтри инкĕшĕ çине айăплăн пăхса илчĕ.

— Инке, мана унта кĕтеççĕ, вăрмана каятпăр, майра хуххи татма. Час килетпĕр. Кайран хамах антарса çиетĕп,— терĕ те Мĕтри Вĕçелис сăмах чĕнме ĕлкĕриччен пӳртрен тухса вĕçтерчĕ.

Апатне вара пĕчченех çирĕ Вĕçелис. Хултуйи сассине сĕтел хушшинче ларнă чух илтрĕ вăл. Ура çине сиксе тăчĕ. Васкасах сĕтел çинчи чашăк-тирĕке пуçтарчĕ. Тĕкĕр умне чупса пырса, çӳçне-пуçне тирпейлерĕ. Хăйне хирĕç пăхса тăракан илемлĕ хĕрарăмăн çухалса кайнă сăн-пичĕ, унăн куçĕсенче тем кĕтни, тем пуласса шанни кăштах шиклентерчĕ Вĕçелиса, тĕкĕрти хĕрарăм çине вăл тӳррĕнрех, хăюллăнрах пăхма тăрăшрĕ.

Хултуйи сасси çывхарнăçемĕн çывхарчĕ.

Антун çил хапхана çĕклесе уçнине, картишне кĕрсе тăрсан пĕр самантлăха сывлăш çавăрса илнине таçта пытанса мар, кантăк умне пырса тăрсах сăнарĕ Вĕçелис. Уççăн пăхрĕ ун çине. Антунăн çӳллĕ çамки, хура куç харши айне пытаннă çивĕч куçĕ, тӳрĕ сăмси, путăклă янахĕ, сарлака хулпуççийĕ пуçласа тухса тăчĕç тейĕн Вĕçелис куçĕ умне. «Мĕн тери илемлĕ»,— шухăшларĕ вăл савăнса, унтан хăйне хăй вăрçса илчĕ: «Çавна маларах асăрхамалла пулнă та çав...»

Куççем тĕл пулчĕç. Вĕçелисăн хаваслă питне курсанах йăл кулса илчĕ Антун, Вĕçелис ăна кĕтсе илме хатĕрленчĕ, алăк патнелле утрĕ. Анчах салтак пӳрте кĕрсе тăрсан, ăшшăн сывлăх сунсан, Вĕçелис хăюлăхĕ таçта кайса кĕчĕ, Антуна ни сăмах хушма, ни вырăн тупса пама пĕлеймерĕ вăл. Юрать-ха, Антун хăй çухалса каймарĕ, картиш енчи чӳрече патне ларчĕ те хултуйине кутник çумне тайăнтарса хучĕ.

— Вăт епле ăшă кунсем çитрĕç,— терĕ вăл, çамки çинчи тарне алă тутрипе шăла-шăла.

— Чей лартса ярас-и?— ыйтрĕ Вĕçелис.

— Эй, таваx, тавах, тин çеç сĕтел хушшинчен,— хураврĕ Антун.

— Эппин, мĕн тăвăпăр?

— Ларăпăр пĕр-пĕрин çине пăхса,— шÿтлерĕ Антун.

— Юрать,— хаш сывласа ярса килĕшрĕ Вĕçелис. —Хăшĕ малтан пăхать?

— Эпĕ,— терĕ Антун.

— Мĕншĕн эсĕ?

— Мĕншĕн тесен эс ман çине вăрттăн пăхса тăтăн, эпĕ вара сана тахçанах курман.

Пигçăмартисем пĕçерсе кайнине туйса илчĕ те Вĕçелис Антун çине пăхма хăяймарĕ текех, пуçне усрĕ.

Антун хăюланчĕ, Вĕçелис çумне, сĕтел хушшине, пырса ларчĕ.

— Çитет, Василиса, чуна çунтарса,—терĕ вăл, хуллен Вĕçелис хулпуççийĕнчен сĕртĕнсе. — Куратăп, эсĕ те асаплататăн пĕччен. Мана та çăмăл мар. Пĕрле пулмалла пирĕн. Тархасшăн, лайăх мар ан шухăшла çак сăмахсем пирки. Халиччен путсĕр çын пулман. Малашне те этем чысне ярас çук. Килĕш, Василиса, кала хăвăн татăклă сăмахна. Хăрах ура çукки... Пурăнаççĕ çынсем. Мĕн ватăличченех. Вăрман касма çÿреймĕп. Шкулта вара... Чăрмантармасьха халлĕхе...

— Ан калаç, кам сан уру çинчен шухăшланă,— пуçне çĕклемесĕр калаçрĕ Вĕçелис. — Чи хакли — чун ăшши, теççĕ халăхра.

— Тĕрĕс калаççĕ,— хăйĕн сăмахне малалла тăсрĕ Антун. — Килĕштерсе пурăнасса пĕлсех тăратăп. Сăмаха — ăшшине те, сиввине те — вăрттăн пытарса çÿреме хăнăхман. Эсĕ те çавах. Туятăп вĕт.

— Лайăх çын эсĕ,— шанса, ĕненсе пăхса илчĕ Вĕçелис юнашар ларакан Антун куçĕнчен. Самантлăха шухăша кайса, вăл хăйĕн малашнехи пурнăçĕ мĕнлерех пулассине те уçăмлăн курчĕ. Çак ырă çынпа юнашар нихçан та япăх пулас çук ăна. Çулла Антун кашни ир ĕçе ăсатса ярĕ Вĕçелиса, киле юлсан, картишĕнче ĕçпе аппаланĕ, чутлĕ, каскалĕ, хуралтăсене йăлтах йĕркене кĕртсе çитерĕ, вăхăт çитсен, çĕнĕ çурт çавăрасси пирки шухăшлама пуçлĕ, укçатенкĕ пухĕ. Сивĕ сăмах каласа Вĕçелиса та, Мĕтрие те кÿрентерес çук Антун — чĕлхи çепĕç унăн, чунĕ чăнах та ăшă. Кĕркунне çитсен, Антун каллех шкула çÿреме тытăнĕ. Каçсерен тетрадьсем тĕрĕслесе ларĕ, вулĕ, çырĕ. Вĕçелис вăл ĕçленине вăрттăн пыра-пыра пăхĕ, ăна чăрмантарас мар тесе, пÿртре чĕрне вĕççĕн çÿрĕ. Арлама ларĕ, пир тĕртĕ. Эй, çук-çук, пир кĕпе тăхăнса çÿремĕ учитель. Вĕçели-

са та килте тёртнипе çӳретмĕ.... Тем каласан та, ытлă-çитлĕ, шăкăл-шăкăл пурнăç кĕтет Вĕçелиса. Çав пурнăç паян, халь, ак çак самантра Вĕçелис пĕртен-пĕр сăмах каланинчен —«юл» е «кай» тенинчен килет.

Антунăн «юл» тенине илтес килчĕ. Тĕрĕссипе, Вĕçелис паян çакăн пек кăмăллă пуласса кĕтменччĕ вăл. Татăклă калаçу шăп паян пулса иртессе те шутламанччĕ. Шкул ачисем ытти учительсемпе пĕрле вăрмана кайрĕç, Антуна питĕ кичем пулчĕ, Вĕçелис кăнтăрлахи апата таврăннине шкул кантăкĕнченех курчĕ вăл. Чуна пусарма кĕчĕ Вĕçелис патне. Ăна мĕнле те пулин пулăшу кирлĕ мар-ши терĕ. Ак мĕнле пулса тухрĕ. Виççырмара виçĕ çулталăк пурăннă Антун та хăйĕн малашнехи çул-йĕрĕ мĕнле пуласине тинех пĕлме пултарать. «Юл» тейинччĕ Вĕçелис. Хăшкăлчĕ, ывăнчĕ вăл пĕчченлĕхре. Вăрçăн малтанхи кунĕсенчех вилнĕ арăмĕпе ывăлĕ (пĕлчĕ каярах Антун, çав тамăкран аран-аран хăтăлса тухнă Петро, арăмĕн шăллĕ, тĕплĕн çырса пĕлтерчĕ вĕсен юлашки саманчĕ çинчен) çавçавах хытă ыраттарчĕç ун чĕрине, анчах ним тума та çук, пурнăçа çĕнĕрен пуçласа ямалла терĕ вăл. Телее, акă, ун çулĕ çинче ырăран та ырă, хаклăран та хаклă Вĕçелис тĕл пулчĕ. Антун та шухăшра курсах тăчĕ хăйĕн пуласлăхне, Вĕçелис унпа мĕн тери çепĕç, мĕн тери ăшă пуласса пĕр иккĕленмесĕр шанчĕ.

Çывăхрахчĕ вĕсем. Пĕр-пĕрин патне пĕр утăм тумалли кăна юлнăччĕ.

Çурхи хĕвел çĕр çине ăшшăн пăхрĕ, çӳл тӳпери тăрисем хăйсен юррине паçăрхи пекех ăмăртса шăрантарчĕç. Вĕçĕмсĕр илĕртӳллĕ кĕрен çутă тăчĕ Виççырма çийĕн. Çак çутăпа йăлтăртатса, авалхи Çарăмсан хăйĕн шывне хĕвеланăç еннелле лăпкăн хăваларĕ. Шурă тум тăхăннă çĕмĕрт йывăççисем çинче пыл хурчĕсем нăрлатса вĕçрĕç.

Катара, Ваçинкке çаранĕ тĕлĕнче, пĕр пĕчĕкçеççĕ пăнчă, пĕр пĕчĕкçеççĕ пĕлĕт татки çуралнине никам та асăрхамарĕ-ха. Вăл вара, çав пăнчă, çав пĕлĕт татки, çутçанталăк еккине пăхăнса, пĕчĕккĕн кăна юлас темерĕ, вăл майĕпен сарăлчĕ, ӳсрĕ; унăн мĕлки малтан ик-виçĕ йывăç çине ӳкрĕ, унтан пĕтĕм çарана хупласа хучĕ; сывлăш сулхăнланчĕ, йывăç-курăк тăр-тăр çӳçенсе илчĕ, çулçă чаштăртатни ерипен вăйлă шава куçрĕ; хура пĕлĕт пăтранмаяваланма пуçларĕ, вăрман çинче, такам хĕрлĕ хĕçпе хăватлăн сулса янă пек, çиçĕм вут ялтăртатрĕ те, тавралăх шатăртатса, кисренсе илчĕ. Çарăмсанăн икĕ енĕпе тăсăлакан Виççырма ялĕн пӳрчĕсем, хур ами хăйĕн чĕпписене çунат айне хупланă пек, сасартăк пусăрăнса ларнăн, çак

ахăрсамана йĕркеллĕ иртсе каясса пăлханса кĕтнĕн туйăнчĕ.

Çил вăйланчĕ. Малтан пĕр чăрмавсăр анлă хир тăрăх чупрĕ вăл, Виççырмара ун çулне пӳртсемпе хуралтăсем пӳлсе хучĕç, çил çакăнпа килĕшесшĕн пулмарĕ, мĕн тӳр килнĕ çавна хăйĕн пин-пин аллипе тустарчĕ, тăпăлтарчĕ, сӳрĕ, пĕр вырăнта кăлтăрмач пек çаврăнса, пĕлĕте тусан, çулçă, улăм тата ытти вак-тĕвек пăраласа кăларчĕ.

Кантăка шултра çумăр пĕрчисем тӳнккеме пуçларĕç.

Тĕнче çакнашкал сасартăк пăсăлса кайни хăратрĕ Вĕçелиса. Ырă та савăк туйăма шикленӳ килсе хупларĕ, темшĕн-çке хăй ытла вăйсăр пулнине çивĕччĕн туйса илчĕ вăл, хӳтлĕх шыраса, айăплăн Антун çине пăхрĕ, анчах лешĕ, тарăн шухăша путнăскер, хĕрарăм пăлхавне асăрхаймарĕ, Вĕçелис вара, ним тума аптраса, пӳрт алăкне тĕртсе уçрĕ те пусма çине вирхĕнсе тухрĕ, витрелетсе çăвакан çумăр айне тăчĕ. Çапрĕ, хĕнерĕ, лăскарĕ ăна сивĕ çумăр. Туххăмрах лачкам шыв пулса тăнă тумтирĕ ӳт çумне çыпăçса чуна çӳçентерчĕ, анчах çак туйăм нумая пымарĕ, тепĕр самантран хăйне каллех ăшă пулса кайнине туйрĕ хĕрарăм. Çумăр шавларĕ, çине-çине аслати кăлтăртатрĕ—вĕçĕмсĕр кĕрлерĕ тĕнче, вĕçĕмсĕр явăнчĕ, пăтранчĕ.

Туйăнчĕ кăна-ши е уçă саслă пĕр арçын ача, çак кĕрлеве çĕнтерсе, чăнахах кăшкăрса ячĕ-ши,—«Салтаксем килеççĕ!» тенине илтрĕ те Вĕçелис хăва вулли пек яшт тӳрленсе тăчĕ, ним ăнланмасăр унталла-кунталла пăхкаласа илчĕ, хапха патне тапса сикрĕ, ăна васкаса уçрĕ те çумăр айĕнче çухалчĕ.

Вĕçелиспа ĕмĕрлĕхех сывпуллашнине туйса, кантăк умĕнче таракан Антун салхуллăн пуçне усрĕ. Вĕçелис пӳртĕнче юлма пултараймарĕ вăл текех, хултуйине шаклаттарса урама тухрĕ, çӳлелле тинкерчĕ,— хура пĕлĕт ăçтан та пулин уçăлса килни курăнмарĕ, утрĕ вара Антун — асаплăн, тертлĕн, йывăррăн. Мĕн кĕтсе тăрать ăна малта, мĕн савăнтарать, мĕн хурлантарать — çак халĕ те паллă мар, çумăр кăна хăяккăн вĕтелет унăн пит-куçне. Урамра шӳсе кайнă çĕр çинче, Антун кашни утăм тумассерен, хултуйипе йывăç ура йĕрĕсем тăрса юлчĕç, çаврака хура пичет лартса пынă тейĕн аманнă салтак хăй хыççăн. Вăрçа, ирсĕр фашизма пĕтĕм ăсĕпе, пĕтĕм чунĕпе курайманнине çирĕплетсе лартнă хура пичет.

...Чупрĕ Вĕçелис. Йĕпресе кайнă çĕр çине темиçе хутчен те шăва-шăва ӳкрĕ вăл, алли-ури, пĕтĕм кĕлетки пылчăкпа вараланчĕ, анчах çавна асăрхамарĕ хĕрарăм, шав малалла ыткăнчĕ. «Çак çумăр хăçан та пулсан чарăнмаллах,

чарӑнмасан та, умри сӑн мӗнпе те пулин улшанмалла, чалӑшшӑн ӳкекен ҫумӑр пӗрчисем вырӑнне пӗртен-пӗр ҫын пит-куҫӗ тухса тӑмалла. Аҫта вӑл, ҫав пит-куҫ? Уй хапхинчен тухрӗ Вӗҫелис, малалла чупрӗ, паллан ҫын сӑн-пичӗ курӑнмарӗ те курӑнмарӗ. «Эппин, маларах, тата лererex пулма кирлӗ вӑл. Пулмаллах!» Хӑлхи ҫивӗч Вӗҫелисӑн, уҫӑ caслӑ ача сӑмахӗсене питӗ лайӑх илтрӗ вӑл. «Ҫул ҫинчех пулмалла салтаксем. Ҫитеҫҫех, пурпӗр ҫитеҫҫӗ. Аплатӑк, вӑрман хӗррине чупас, ҫывӑх сӑн-пите чи малтан никам та мар, Вӗҫелис хӑй куртӑр. Пӗрре ҫеҫ пӑхса илесчӗ ун ҫине, эх, пӗрре ҫеҫ пӑхса илесчӗ!»

Ҫумӑр мӗнле килнӗ, ҫавӑн пекех сасартӑк чарӑнчӗ. Вӑрманта халтан кайнӑ хӗрарӑм йӗпе тунката курчӗ те, хаш сывласа, ун ҫине ларчӗ. Ҫӳҫне, кӗпе аркисене пӑрчӗ.

Катрашка пӗлӗтсене сире-сире, хӗвел пайӑркисем сӑрхӑнса тухрӗҫ. Тавралӑх шӑпланчӗ. Чӗри сиксе тухасла кӑлт-кӑлт тапнине ҫеҫ илтсе ларчӗ Вӗҫелис. Вӑхӑтлӑха хӑй ҫакӑнта мӗншӗн килнине те манса кайрӗ вӑл, куҫӗ кӑна, сӳрӗккӗн пулин те, авкаланса тӑсӑлакан ҫутӑ ҫул ҫине пӑхрӗ.

Шухӑшӗ ҫухалчӗ, туйӑмӗсем пӗтрӗҫ, курма-илтме пӑрахрӗ хӗрарӑм. Чылайччен ларчӗ ҫапла, чылайччен асӑрхамарӗ ҫут тӗнчене.

Хӗвел вара ӑшӑтрӗ те ӑшӑтрӗ ун ҫурӑмне. Такам пӗрмай чӑрмантарнине туйса, хӑй сисмесӗрех темиҫе хутчен те ҫав ӑшша аллипе сире-сире хӑвалама пикенчӗ Вӗҫелис, анчах чӑрмав пӗтмерӗ, вӑйланса пычӗ, хӗвел ӗнтӗ унӑн ҫурӑмне кӑна мар, ҫӳҫне-пуҫне те, пӗтӗм кӗлеткине те пӗҫерте пуҫларӗ,— хӗрарӑмӑн ирӗксӗрех тунката ҫинчен тӑма тиврӗ. Чи малтан ун хӑлхине ҫулҫӑсем ҫинчен патлата-патлата тумла ӳкни, унтан ҫывӑхрах пӗр кайӑк шӑхӑрса яни пырса кӗчӗ. Хуллен пуҫне ҫӗклерӗ Вӗҫелис. Куҫӗ умне Иванпа сывпуллашнӑ вырӑн тухса тӑчӗ. Лавӗ тахҫанах курӑнми пулнӑ ӗнтӗ. Анчах тӑванран та тӑван сасӑ ҫаплах уҫҫӑн янӑрать, асамлӑ вӑрман ҫав сасса тата хӑватлӑнрах пӗтӗм таса тӗнчене салатать: «Пурӑн, Вӗҫелис! Пу-у-ур-ӑн! Пу-у-урӑн!»

Малалла усӑннӑ ҫӳҫне хыҫалалла ывӑтасшӑнччӗ Вӗҫелис, анчах алли ҫинчи пӗр пайӑрка ҫине пӑхрӗ те шартах сикрӗ: ҫӳҫӗ кӑн-кӑвак, ҫӳҫӗ хӑйӗн мар иккен.

## ПĔРТЕН-ПĔРРЕ

Эккей, мĕнле асăрхаман çакна маларах: пуç тăрринче — вĕçĕ-хĕррисĕр çап-çавракā тӳпе йăлтăртатать, кунтан, ачаляха ирттернĕ Çавракa сăртран, ал тупанĕ çинчи пек курăнакан мĕнпур тăван çĕр çап-çавракан тăсăлать. Пĕр шутласан, çĕршер кукăр-макăр туса, çаврăна-çаврăна юхакан Çарăмсан та çавракa çулпах чуптарть иккен: Куйбышев облаçĕнчи Клевлĕ таврашĕнче пуçланать те вăл, Куйбышев облаçĕнчех аслă Атăла юхса кĕрет.

Кашни чĕрĕ чунăн çулĕ те çавракa. Авă, пĕлĕтре хура хăмăр хурчка явăнать, сарлакан-сарлакан тăсса ярать те хăйĕн икĕ çунаттине ярăнать, ярăнать вара пысăк та канлĕ çаврăмсемпе — çулне-йĕрне кĕскетме урăх меслет пĕлмест те, шырамасть те тейĕн.

Çур иртет те çу çитет, кĕр пулать те хĕл ларать — çап-çавракa çулпа чуптарать аслă Çутçанталăк.

Çын çуралать, яшлáха çитет, ватăлать те çĕре кĕрет, анчах хăй хыççăн çĕнĕ ăру хăварать те — тăсăлать вара пурнăç çаврăмăн-çаврăмăн.

Кур-ха эсĕ, çын вилсен те ун тăприне çавракан витсе хăварать-çке этем тени! Хăçан тата кам ăс панă-ши ăна çавăн пек тума? Аслă Çутçанталăк! Этем, унăн уйрăлми пĕр пайĕ пулса, çакă çутă тĕнчепе кăвапаран çыхăннăскер, Аслă саккуна ниепле те пăсма пултарайман иккен. Апла-тăк этемĕн пурнăçĕ те, ăна ăслă та тăрлавлă пурăнса ирттерсен, тӳпе пек, çĕр пек, хĕвел пек, уйăх пек — çап-çавракa пулмалла.

...Пуçне çакăн пек шухăшсем ăнсăртран пырса кĕнĕрен малтанлăха савăнчĕ те, тĕлĕнчĕ те Эриван. Август пуçламăшĕн канлĕхлĕ хĕвелĕ, кăшт çеç сисĕнекен çилпе çатăлтатакан хурăн çулçисем, пысăк пĕвен çутă йăлтăртатăвĕ, лере, çыран леш енче, çăра симĕс тăсăлакан анлă уй-хирпе вăрман тăрăхĕсем унăн чун-чĕрине калама çук ырлăхлă йăпатупа тултарчĕç, ешĕл тӳшек пек туйăнакан çак ăшă çерем çинче урăх нимĕн çинчен те шухăшламасăр ытларах та ытларах выртасси килчĕ Эриванăн. Анчах çăтмахри пек ырлăх кăтăшне путма тем чăрмантарчĕ те чăрмантарчĕ ăна. Кăкăрĕнче темле çивĕч япала чике-чике илнине, пырне йывăр чăмакка пыра-пыра капланнине сирсе яма пултараймарĕ вăл, вара майĕпен куçне уçрĕ те мĕнпур тавралăх йĕпе тĕтрелĕх витĕр курăннине туйса илчĕ, тепĕр самантран, унăн питçăмартине пĕçертсе, тумлам хыççăн тумлам юхса анчĕ. «Çĕр çавракa,— хăй çеç илтмелле пăшăлтатрĕ

Эриван,— этем вилтăпри çавракa... Ак çак Çавракa сăрт тата?... Тахçан Улăп тăпри теместчĕç-и ăна? Тĕрĕсех... Çапла калатчĕç. Мантăм пулать, эппин? Вĕсен шăммисем çинче çутçанталăк ырлăхĕпе киленсе выртатăп пулать?

Анчах та çерем çинчен йăпăр-япăр сиксе тăма пултараймарĕ-ха вăл, Улăп тăприне кăкăрĕпе хупласа, аллисене иҫ еннелле сарса ячĕ, шалта, çак тăпра ăшĕнче, мĕн пулса иртнине пĕлесшĕн ăнтăлнă пек, сылтăм хăлхипе çĕр çумне лăпчăнса выртрĕ. Туйăнчĕ кăна-ши Эривана е сантлăха тĕлĕрсе кайрĕ-ши вăл, анчах çакна питĕ уçăмлăн астуса юлчĕ Эриван: унта, аялта, паян кун та пурнăçри пекех хĕрӳллĕ шăв-шав тăрать; çав шăв-шавра, çав курăнура атте-асаттесен, анне-асаннесен, кукаçей-кукамайсен шăкăл-шăкăл калаçăвĕ те, вĕсен ытарма çук хӳхĕм юрри-кĕвви те, савăнăçĕ-юратăвĕ те, тарăхăвĕ-ятлаçăвĕ те, хуйхисуйхи те, çапăçăвĕ-кĕрешĕвĕ те — пурте пур иккен. Ансăртран килнĕ çак шухăшран тепĕр хут шарт сиксе илчĕ те Эриван, куçне уçса, каллех тавралăха сăнарĕ. Хурăнсем пăшăлтатаççĕ, курăксем çилпе тайăлаççĕ, çĕр тăрăх тĕрлĕ хурт-кăпшанкă кĕшĕлтетет, çӳлте, тĕрлĕ сасă парса, кайăккĕшĕк вĕçет. Акă вăл, аслă çутçанталăкăн хăватлă ылмашăну саккунĕ — пĕри ватăлать те тепри çитĕнет, пĕри тĕп пулать те тепри çуралать. Нимĕн лартма та юраман вĕтха çак Улăп тăпри çине, анчах курăк та, темĕнле йывăç та шăтса тухнă унта ĕмĕрсен тăршшĕнче: юман та, хурăн та, çăка та, хурама та, шĕшкĕ те, катăркас та. Пĕри тĕреклĕ те яштака, тепри кукăр-макăр та йăмшак, виççĕмĕшĕ çинçе те имшер. Кайăкĕсем тата! Кунта хăлат та хурчка, карăш та ăсан, саркайăк та çерçи — пурте юнашарах.

Вилнĕ хыççăн мене çаврăнĕ-ши Эриван?

Тӳпере хăйĕн çавракa çулĕпе çав-çавах хура хăмăр хурчка ваcкамасăр вĕçет, ăçта та пулин аманнă, вăйсăр е вилĕ чун тĕлне пулмăп-ши тесе, тавралăха тĕпчет, вуншар та çĕршер кукăр-макăр туса, çаврăна-çаврăна Çарăмсан юхать, кăшт çеç сисĕнекен çилпе çулçă пăшăлтатать.

Ĕмĕрхи кĕвĕ, ĕмĕрхи юрă, ĕмĕрхи пурнăç малалла тăсăлать.

## 1

Амăшĕпе ĕмĕрлĕхех сывпуллашнă хыççăн тăван килне тӳрех пушă хăварма пултараймарĕ Эриван. Çывăхран та çывăх çурт чӳречисене хăма çапса питĕрме хал çитереймерĕ вăл — ку вăл ун пурнăçĕнчи чи тискер те чи чунсăр ĕçĕ пулнă пулĕччĕ, пăгасене вăл ашшĕ-амăш пӳртне мар,

хӑйӗн тӑвӑлса кӳтсе ҫитнӗ чӗрине ҫапса кӗртӗччӗ те юлнӑ пек ӗмӗрне никам тӳсейми асапра ирттерӗччӗ. Ҫак виҫӗ кун хушшинче ялти мӗнпур ҫын — тӑван-пӗтен те, тус-пӗлӗш те, пач палламан-туман ҫамрӑксем те — шӑпах ҫак ыйтӑва хуравлама ыйтса куҫран тинкернӗ пек туйӑнчӗ Эривана: мӗн пулӗ малашне, хулара сан хӑвӑн ҫемье пур, чаплӑ хваттерте пурӑнатӑн теҫҫӗ, хупма е сутма шутлатӑн-и аҫу-аннӳ ҫуртне? Мӗн тӑвӑн?..

Пӗрремӗш кун та, ҫӑва ҫинчен таврӑннӑ чух, хӑйӗн сӑмахне епле те пулин каяраха хӑварас тесе, ури айӗнчи пылчӑка халӑхпа пӗрле ҫӑрса, пӗр чӗнмесӗр утрӗ вӑл ял варринчи тӑлӑха тӑрса юлнӑ ҫавна пула пушшех те тӗксӗмленсе кайнӑ пек туйӑнакан тӑван ҫурт патнелле. Пуҫӗ те, чӗри те пуш-пушӑ пулнӑран, нимӗнле уҫӑмлӑ шухӑш та тупӑнмарӗ унӑн. Тӑнлавра вара, пушар чанӗ пек, пуҫ мимине пӑраласа, ҫак ыйту ҫеҫ янӑрарӗ: «Мӗн тӑвӑн — хупӑн-и е сутӑн-и аҫу-аннӳ ҫуртне?»

Тӗрӗснех калас-тӑк, хӑҫан та пулин ҫакнашкал самант килсе тухасса пач та кӗтмен марччӗ-ха Эриван. Ывӑлӗ-хӗрӗ ашшӗ-амӑшӗпе ӗмӗрлӗхех сыпуллашни ҫинчен, тӑван кил вучахӗ яланлӑхах сӳнсе ларни ҫинчен е тата пӗртӑван ачасем ваттисенчен юлнӑ тупрана пайлассишӗн вӑрҫса-харкашса кайни ҫинчен повеҫ-романсенче те вуланӑччӗ вӑл, кинофильмсем те сахал мар курнӑччӗ. Анчах ку вӑл ҫыравҫӑсем шутласа кӑларнӑ тӗнчери пек туйӑнатчӗ, чӑн пурнӑҫра вара кунашкал япала пулас пулсан та, урӑх ҫӗрте, Эриванран аякра, пулас пекчӗ. Ҫапах та ҫичӗ ҫул каялла, чире кайнӑ ашшӗ вилсен, ӑна пытарма та ҫитеймен Эриван ҫӑва ҫине пӗр-пӗччен кайса ларсан, паянхи пек лару-тӑру пурпӗрех пӗрре пуласса уҫӑмлӑнах ӑнланчӗ вӑл. Ҫапла, ӑнланнӑччӗ. Анчах ҫук-мӗн, тарӑннӑн витерейменрӗ курӑнать амӑшӗн куҫҫулӗ ывӑлӗн чӗрине. «Тӗреклӗ ҫӳрет-ха, ӑнлӑпуҫлӑ калаҫать, вилӗм чирӗ ун патне паян-ыран килсе ҫулӑхас ҫук»,— тесе хӑйне хӑй лӑплантарчӗ те вӑл, тӑван килтен тухса кайсан, пӗччен юлнӑ амӑшӗ патне хутрансипрен укҫа-тенкӗ яркаларӗ, ҫырусем ҫыркаларӗ, пурӑна киле вара ҫак тивӗҫе пурнӑҫлама та майӗпен манса пычӗ.

...Ҫӑва ҫинчен таврӑнсан, лӑпкӑ пумилкке пулса иртрӗ. Арҫынсем, шӑтӑк чавма е тупӑкпа хӗрес тума пулӑшнӑ вӑйпиттисем, сӗтел хушшинче нумай лармарӗҫ, те чылайранпа курман Эривантан ютшӑнчӗҫ, те ҫуллахи кун тесе, хӑйсен килӗсене вак-тӗвек ӗҫсем тума васкарӗҫ — икшер черкке ҫуттине ӗҫсе ӑна-кӑна ҫырткаларӗҫ те, Эривана алӑ памасӑрах сывпуллашса, пурте пӗр харӑс тенӗ пекех тухса кайрӗҫ. Килте кӳршӗллӗ пурӑнакан ик-виҫ карчӑкпа

Ҫулине аппа — амӑшӗпе пӗртӑван херӗ кӑна тӑрса юлчӗҫ. Унччен шӑпӑртах ларнӑ карчӑксем, акӑ, пирӗн самант та ҫитрӗ тенӗ пек (пӗрер черкке кагор сыпни те пулӑшрӗ пуле ҫав), чӗрӗлсе-чӗрӗлсе кайрӗҫ те, сӑмах хыҫҫӑн сӑмах ваклама пуҫларӗҫ.

— Турӑ ҫырнинчен иртме ҫук иккен, ҫӗр ҫулах ҫитет пулӗ тенӗччӗ Укруҫ аппана. Ара, йӗс пек хытса ҫирӗпленсе кайнӑччӗ те...— терӗ Ҫинави кинемей.

— Пурӑнатчӗ те пуль, тем тесен те чӗри вӑйлӑ пулнӑ ун. Пӗчченлӗхе тӳсеймерӗ вӑл,— купӑста кавленӗ май сӑмах хушрӗ Уксах Крахвине.

— Пӗчченлӗхӗн ырри ҫук ӗнтӗ,—терӗ Варушка карчӑк.— Хамах илем-ха, акӑ. Пӗр татӑк ҫӑкӑр анмасть вӗт яри кунӗпе. Кӳршӗсем сӗт те, турӑх та илсе пыраҫҫӗ вара, ҫи-ха, Варушка инке, ҫи-ха, ҫӗртсе ан яр паха апата теҫҫӗ. Анмасть пулсан, мӗн тӑвас-ха ман? Хӑймине пухса ҫу уҫлатӑп та, ҫавна хулари хӗрӗм илсе каять вара. Ҫавӑн пек вӑл пӗчченлӗх.

— Эп те калаттӑм, ҫи-ха, Укруҫ аппа, ҫи-ха теттӗм. Ҫиес килмест тетчӗ те ҫӳретчӗ вара чӳречерен пӑха-пӑха. Ялан чӳречерен пӑхатчӗ. Ывӑлне кӗтетчӗ пуль те ҫав,— куҫне тутӑр вӗҫӗпе шӑлса илчӗ Ҫулине аппа.

— Ара, мӗнле кӗтес мар-ха пӗртен-пӗр ывӑла. Асапланса ҫурат та ӑна, нушаланса ӳстер-ӳстер те...— Крахвине аппа тӳрремӗнех хӑйне айӑпланине тӳрех тавҫӑрса илчӗ Эриван.

— Эх, тӗнчи ҫапла кайрӗ-ҫке, тӗнчи ҫапла кайрӗ. Улюка та миҫе хут каларӑм эпӗ, хӗрӗм, терӗм, хулара унта никам та янтине хатӗрлесе хуман терӗм, куллен ӗҫе каймалла та каҫсерен лавккара черет тӑмалла, ҫамрӑк ӗмӗрӳ иртсе кайнине те сиссе юлаймӑн терӗм. Ҫук, итлемерӗ ҫав мӑнтарӑн хӗрачи,— ассӑн сывларӗ Варушка карчӑк.

— Улюк вӑл, ман хӑраххӑм, ӗмӗр иртterme пӗр-пӗр арҫын тупӑп терӗ пуль те, лаша пек ӗҫлекене ӑна качча пӑхмасть ҫав. Арҫынсем вӗсем янкӑлтатса, сӑрланса ҫӳрекенсене хӑвӑртрах асӑрхаҫҫӗ,— терӗ Ҫулине аппа.

— Эй, сӳтӗлсе ан лар-ха эс, Ҫулине, сан чӗлхӳ ҫинче ялан пӗр сӑмах вара, хӑлхана ҫӗртрӗн ӗнтӗ ҫав сӑмахупа,— чӗрре кӗчӗ Варушка карчӑк. — Ӗҫлӗ ҫыннӑн ӑҫтан арҫын шухӑшӗ пултӑр-ха?

— Эс ху ӗҫлемен-тӗр ӗнтӗ. Улюка мӗнле ҫуратрӑн-ха, эппин?— парӑнмарӗ Ҫулине аппа.

Хӗрарӑмсем татах темтепӗр калаҫрӗҫ сӗтел хушшинче, анчах та вӗсен сӑмахӗсем Эриван хӑлхине кӗреймесӗрех вӗҫсе иртрӗҫ, вӑл хӑй вара, сӗтел ҫине икӗ аллипе те чав-

саланнăскер, малти кĕтесе вырнаçтарнă тур амăш куçĕнчен пăхса, тарăн шухăша путрĕ. Ку çуртра халиччен мĕн-мĕн пулса иртнине çак кивелсе, хуралса кайнă, ĕмĕр-ĕмĕрĕпех куççуль кăларса ларакан тур амăшĕ çеç тĕпĕ-йĕрĕпе пĕлсе тăнăн туйăнчĕ Эривана... Кивĕ, питĕ кивĕ турăш пулмалла вăл, мĕншĕн тесен — тин çеç аса илчĕ ывăлĕ амăш каланине — тахçан, граждан вăрçи кĕрлесе иртсен, çак çурта çĕнĕ мăшăр, Эриванăн ашшĕпе амăшĕ, венчетрен килсе кĕнĕ те, ваттисем ăна çак турăша чуптутарса пил панă. Тахçан авал вара ваттисем хăйсем те пĕрлехи пурнăçа çак турăша чуптуниччен пуçланă имĕш. Эппин, çĕр е икçĕр çул маларах ăсталанă çак çветтуй анне сăнне пĕр-пĕр художник. Авă мĕншĕн ĕмĕрлĕхех пурăнать иккен вĕсен килĕнче турă сăнарĕ. Тĕне ĕненнĕ-и, ĕненмен-и Эриван несĕлĕсем, çапах та искусство произведенине — куççуль тăкса ларакан хӳхĕм Марийăна — вĕсен тăван вучаха, телейпе шанчăка упракан талисман вырăнне хурса хакланă.

«Аве, Мария... Халь мĕн тăвас-ха ĕнтĕ манăн санпа,— шухăшларĕ Эриван. — Искусство музейне кайса парас-и, пасарта сутса укçаллă пулас-и? Хулари хваттере кайса çакас-и? Чăн та, ку вăл хальхи вăхăтра модăна кĕрсе кайнă пулмалла. Кивĕ турăшсем пух, ĕлĕкхи тухъясемпе шӳлкемесем тупма пултар, эсĕ тӳрех «пысăк культурăллă», «пуян чун-чĕреллĕ» çын пулса тăратăн...»

«Мĕнех вара?— тейĕччĕ арăмĕ Виолетта, енчен те вăл халĕ Эриванпа пĕрле пулас пулсан. — Эсĕ пĕрремĕш çурт хупатăн-и ялта? Кӳршӳсем те ялтах пурăнаççĕ-и? Мĕн эсĕ йĕрмĕшетĕн те йĕрмĕшетĕн амăшĕнчен хăпайми çумçакки ача пек? Нимĕртен тунă-и сан чĕлхӳне? Парах эс хăвăн йывăр шухăшусене. Хăп вĕсенчен. Хăп та ирĕккĕн сывлама пуçла...»

«Тĕрĕсех калать арăму,—тейĕччĕç ăна хулари тус-пĕлĕшĕсем.— Пирĕн ĕмĕрте кашни пур-çука çĕр тĕнĕлĕ вырăнне хума кирлĕ мар, çынсем пек пурăнмалла, кашни кăткăс ыйтăва, пин те пĕр меслет тупса, ансатлатма пĕлмелле. Вара сана инфаркт та, шалкăм та çапса ӳкереймĕ...»

«Анчах,— шухăшларĕ Эриван,— ман чĕрене нимĕртен те, тимĕртен те туман. Çав чĕрене мана атте-анне панă. Çак ялта, çак çуртра. Панă кăна та мар-ха, ун хыççăн мĕн чухлĕ çăрнă-ха, мĕн чухлĕ унанă-ха тата! Çав чĕрере çынлăх, ăнланулăх пултăр, кирлĕ чухне вăл тарăхма та, макăрма та пултартăр тенĕ пуль. Эх, çакăн çинчен кăшт маларах шухăшласа пăхнă пулсан...» ·

...Çак шухăшсенчен Эривана Çинави кинемей татрĕ.

— Эй, ҫав веренне ҫынсемпе,— терĕ вăл, Эриван хулпуҫҫийĕнчен темиҫе хут та тĕксе,— ялан шухăшлă вĕсем, ялан шухăшлă. Халь шухăшлани мĕн усси пур-ха ĕнтĕ, унччен шухăшламалла пулнă, ывăлăм, унччен шухăшламалла пулнă.

— Тавах сире... пулăшнăшăн,— ним калама аптраса, сăмах хушрĕ Эриван, карчăксем тухса кайма пуҫтарăннине туйса.

— Ун пек ан кала, ачам,— ăс вĕрентрĕ ăна Уксах Крахвине. — Виле пытарнăшăн тав тума хушман. Тепре куриччен тесе кала пĕрех хут.

— Тепре куриччен...— тӳрех килĕшрĕ Эриван.

Кайрĕҫ. Эриван амăшĕпе пĕрле ӳснĕ, пĕрле вылянă, пĕрле пурнăҫ тунă, тертленнĕ-нушаланнă ҫынсем кайрĕҫ. Сĕтел ҫинчен пуҫтарнă, урайне ҫуса кайнă, акă ĕнтĕ амăшĕн шăрши те тăрса юлмарĕ тăван килте. Астăвать-ха Эриван ҫынсем каланине, ҫичĕ ҫул каярах, ашшĕ ҫакăн пекех ăнсăртран вилсе кайсан, амăшĕ сĕтел ҫинчен пуҫтарма та, урайне сĕрсе кайма та хушман имĕш, вăл хăйĕн савнă упăшкин, аллă ҫул ытла пĕр ҫавартан пурăннă сывăх ҫыннин шăрши те пулин тăруках сĕвĕрĕлсе ан пĕттĕр тенĕ пулас. Эриван, акă, кил-ҫурт тирпейлекен хĕрарăмсене пĕр сăмах та чĕнмерĕ. Чĕнетчĕ те пуль, анчах лешсем ĕҫ пуҫличчен хăй сăмахне калама ĕлкĕреймерĕ.

Ҫапла, чылай япалана вăхăтра тума ĕлкĕреймерĕ вăл. Тĕнче — ҫаврака. Хăйĕн пеҫĕлĕнчи миҫе ăрăва, миҫе ҫаврăма астăватчĕҫ-ши ашшĕпе амăшĕ?— ҫавна та ыйтса пĕлеймерĕ Эриван. Кăштах сыпсан, ашшĕ хăйĕн ҫамрăклăхне, граждан вăрҫинче ҫӳренине аса илме юрататчĕ. Ăҫта ҫӳренĕ-ши, ăҫта ҫапăҫнă-ши, кампа пĕрле пулнă-ши вăл унта? Иртнĕ вăрҫăран йывăр аманса килнĕччĕ, кăкăрĕ ҫинче хăйĕн тем чухлĕ медаль те орденччĕ. Мĕншĕн, ăҫти ҫапăҫусемшĕн панăччĕ-ши вĕсене хĕрĕхрен иртнĕ салтака? Ăҫта аманнăччĕ-ши ашшĕ?

Амăшĕ шутсăр нумай юрă пĕлетчĕ, юррисем тата авалтан-авалтан, ăруран ăрăва чи хаклă пурлăх пек куҫса пынисемччĕ. Халĕ, хула ҫыннисем ҫав авалхи фольклор умĕнче ҫӳҫенсе те чĕтресе тăнă вăхăтра, мĕн тери ырă пулмаллаччĕ Эриваншăн хăйĕн хваттерĕнче амăшĕн юрри янраса кайсан. Магнитофон та хатĕрлесе хунăччĕ вăл, ҫĕнĕ кассетăсем те туяннăччĕ, ҫырса илем-ха анне юррисене тенĕччĕ,— ĕлкĕреймерĕ.

Халĕ ĕнтĕ ҫак йăпăша нимĕнле майпа та, нимĕнле хакпа та тӳрлетеймĕн. Кама кирлĕ паян кая юлнă куҫҫуль, кама кирлĕ кая юлнă ӳкĕнӳ? Тĕрĕсех каларĕ Ҫинахви

кинемей — унччен шухăшламалла пулнă иккен Эриванăн.
Хăйне валли вырăн тупаймасăр кĕтесрен кĕтесе, алăк патĕнчен тĕпелелле, тĕпелтен алăк патнелле утрĕ те утре вăл. Кусĕпе пӳртри мĕнпур япалана хыпашласа тухрĕ. Акă, мачча каштине тимĕрçĕре тутарнă хулăн çекĕл çапса лартнă. Мĕншĕнни паллă: çак çекĕл сăпка çакмалли пĕкечене вырнаçтарма кирлĕ пулнă. Ку çуртра урăх ача-пăча пулманнине шута илес-тĕк, тӳрех ăнланмалла: Эриван чуччу сикнĕ çав сăпкара. Акă тата кивелсе те хуралса кайнă, кăшт тексенех хăйăлтатса тăракан пулнă йывăç кутник. Ашшĕпе амăшĕ хушшинче пĕчĕк Эриван выртнă унта мăшăлтатса. Каярах, шкулта вĕреннĕ чухне те, çитĕнсе çитсен те унтах çывăратчĕ вăл. Çемçех мар пулин те, канлĕччĕ çав йывăç кутник çинче. Чи хитре тĕлĕксене шăп çакăнта курнă Эриван. Акă, пĕчĕкçеç кĕпеке çӳлĕкĕ. Ашшĕ вĕрентсе тăнипе Эриван хăех ăсталанăччĕ ăна тăххăрмĕш класра вĕреннĕ чухне. Мухтанăччĕ ашшĕ ывăлĕн аллисем вăр-вар та çыпăçуллă пулнишĕн. Çавăн хыççăн вăл ăна пуртăпа, пăчкă-савапа ĕçлеме хавхалантарсах тăратчĕ.
Халĕ ĕнтĕ, акă, çакă пĕтĕмпех нихçан таварайми иртнĕ пурнăçра. Чун тĕпĕнчен кăшкăрса йыхăр паян çав пурнăça — каялла çак çурта ахрăм та çитес çук.
Ашшĕ-амăшĕн савăнăçне-хурлăхне вĕсен пĕртен-пĕр ачи те пулин пĕлсе юлаймарĕ пулсан, мĕнле йĕр хăварчĕç-ха ĕнтĕ ватăсем хăйсен пурнăçĕнче? Вĕсем çинчен мĕн каласа кăтартĕ-ха Эриван хăйĕн пĕртен-пĕр ывăлне?
Тепĕр тесен, каласа кăтартнин усси пулас та çук. Ывăлĕ, кăçал çеç вунă класс пĕтернĕ Эдик, чăвашла виç сăмах та пĕлеймен ханттар, ашшĕн кичем асаилĕвĕсене итлесе вăхăт ирттерес çуках. Асаилӳ те, аса илекене итлеме пĕлни те чун тулăх та сарлака пулнинчен килет, хăйĕн пĕртен-пĕр ачине вара çавăн пек пахалăхсем параймарĕ пулас Эриван. Хулара ӳсекен чылай çамрăксем пекех пурнăç çине çиелтен, çăмăллăн пăхма хăнăхса кайрĕ Эдик, ăна ытларах вăхăта йăкăл-йăкăл иртерни илĕртет, чикĕ леш енче кăларнă çипуç шыраса туп ăна валли, магнитофон е транзистор туянса пар. Вунсаккăра çитнĕ пулин те, малашнехи кунçулĕ пирки тĕплĕн шухăшласа хуман-ха ывăлĕ, пĕр-пĕр техникума е института кĕресси çинчен тĕлленмест те, куллен-кун амăш таçтан тупса панă, Японире кăларнă «Соня» магнитофона йăтать те, Атăл хĕрне шыва кĕме тухса сулланать.
Ывăлĕпе хăй вăхăтĕнче пурнăç çинчен калаçма та, ăна ĕçе хăнăхтарма та ĕлкĕреймерĕ, эппин, Эриван.
Ĕлкĕреймерĕ çав, вăхăт тупаймарĕ.
«Тĕпчи çапла кайрĕ»,— терĕ-ха паçăр Варушка карчăк.

Çапла, «тĕнчи çапла кайни» те айăплă пулĕ кунта. Утмăлмĕш çулсенчен пуçласа ялсем пушанса-пушанса юлма тытăнчĕç, хулана тĕрлĕ ĕçсене куçса, ял яш-кĕрĕмĕпе хĕрупраçĕ чăн-чăн хула çыннисем пулса тăраймарĕç, унта, хулара, пĕр-пĕр кĕтес тупас тесе, çамрăк мăшăрсен чылай вăхăт пуç çĕклемесĕр ĕçлеме тиврĕ, çуралнă ачисем ялти пек, аслашшĕ-асламăшĕн, кукашшĕ-кукамăшĕн ырлăхлă хӳттинче хавасланса, ĕмĕрхи йăла-йĕркесене вĕренсе юлаймарĕç,-вĕсен ашшĕ-амăшĕсем те ни вырăс, ни чăваш çӳреççĕ те, ачисем пирки вара калама та кирлĕ мар — хăпнă вĕсем унчченхи ăрусенчен, сивĕннĕ, писнĕ. Пух-ха эсĕ паян тăван ялăн Эдикпа ун çулхи мăнукĕсене — çук, кунта текех чуна çĕклентерсе яракан вăйă юрри те, туй юрри те, йăла-йĕрке юррисем те янăраса каяймĕç. Ĕмĕртенпе пынă «ниме» сăмаха та пĕлеймĕç çав çамрăксем, «чипер хĕр», «сар хĕр», «кĕçĕн ывăл», «пултăр», «пăяхам», «хунякам» сăмахсем пачах та ют пулĕç вĕсемшĕн. «Тĕнчи çапла кайни», нимĕнле вăйпа та чарса лартма май çук наукăпа техника утти, кашни килте телевизорпа радиола, магнитофонпа транзисторла приемниксем пурри хула халăхне (нумай пулмасть ялта пурăннă çынсене пушшех те пулĕ) кахаллатрĕ, вĕсен ăс-пуçне сахалтарах ĕçлеттерме пуçларĕ, çамрăксемпе аслăрах ăрусен çыхăнăвне пушатса ячĕ. Çуралнă кĕтесĕн, тăван çĕрĕн туйăмĕ çухалчĕ çамрăксен чĕринче. Тĕрĕс ĕнтĕ, пĕрлешӳллĕ садсенче пысăках мар каçалăксем каса-каса параççĕ-ха хула çыннисене, анчах кайса кур-ха унта: çав каçалăк хуçисем, пĕр-пĕринпе ăмăртса тенĕ пек, пĕр-пĕрин умĕнче хăй камне кăтартас тенĕ пек икĕ-виçĕ хутлă керменсем тăва-тăва лартаççĕ, вĕсен йĕри-тавра кайăк та вĕçсе кĕрейми картасем çавăраççĕ, алăк е хапха çине йывăр çăра çакса яраççĕ. «Пĕрлешӳллĕ» сăмах хăйĕн пĕчĕк тĕнчине кĕрсе ӳкет, çĕр пулăхне хăй пултарнă таран хăйпăтма тăрăшать. Ĕрчесе каяççĕ вара пасарта иквиç чечеке ик-виç тенке, пĕр витре çырлана çирĕм-çирĕм пилĕк тенке, пĕр хĕрен тымарне пĕр тенке е тенкĕ çурра ярăнтаракансем. Çук ĕнтĕ, ку вăл тем тесен те халăха çĕре юратма вĕрентни пулаймасть, ку вăл, вырăсла каласан, потребительсем ĕрчетме ытларах пулăшать пулĕ.

Çак шăпа, «тĕнчи çапла кайнин» пĕр вĕçĕ Эривана хăйне те пырса лекмерĕ-и вара?

...Вăрçă вăхăтĕнчи тата ун хыççăнхи йывăр ачалăх Эривана чăтăмлă та çаврăнăçуллă пулма вĕрентрĕ. Фронтран суранланса килнĕ ашшĕ ялан йывăр чирпе аптратчĕ, çавна пула вунă-вуникĕ çула çитсенех ывăлĕн кулленхи ĕçе кӳлĕнме тиврĕ. Çăкăр хакне, пурнăç тути-масине питĕ ир

туйса илчĕ вăл, нумай-нумай ыйтăва хăй пуçĕпе тĕшмĕртсе, хăй татса пама вĕренчĕ, килти йывăр пурнăçа мĕнле те пулин çăмăллатма тăрăшрĕ. Çемьери мĕнпур шанчăк амăшĕпе Эривантаччĕ. Хулă пек тăрса юлнă амăшĕ мĕнле чăтрĕ пуль, унăн, мăнтарăнăн, иртен пуçласа каçчен колхоз ĕçĕнче пулмаллаччĕ, халăхпа пĕрле вăрман хатĕрлемеллеччĕ, утă çулмаллаччĕ, çурлапа тырă вырмаллаччĕ, ăна тăпачăпа çапмаллаччĕ, хĕлĕпе хиртен улăм турттармаллаччĕ, çав вăхăтрах килти пĕтĕм ĕçе тума ĕлкĕрмеллеччĕ. Анланчĕ Эриван амăшĕн нуши-тертне. Вуннăра чухнех колхоз вăкăрне кӳлсе пачĕç ăна, вăл вара йышпа пĕрле кĕлте те, тырă та, вут-шанкă та турттарчĕ, тепрер çултан шутлама-хутлама лайăх пĕлекен ачана колхоз бригадирĕ, шута-хисепе ытла пĕлсех те кайман Вехтĕр пичче, хăйне пулăшакан туса хучĕ. Çӳрерĕ вара Эриван виç кĕтеслĕ вершука йăтса колхоз хирĕсем тăрăх. Çак çĕр çинче вăл ура ярса пусман лаптăк та юлмарĕ темелле. Ачалла мар ĕçне кура хисеплетчĕç ăна ял çыннисем, унпа пысăк çынпа калаçнă пекех сумлăн калаçатчĕç.

Тен, Вехтĕр пичче шанса панă çак хисеплĕ ĕç те пулăшрĕ пуль Эривана ĕçре çирĕп кăмăллă, çынсемпе хутшăнна чух çыпăçуллă та ăшă чĕлхеллĕ пулма. Тен, тата вăл кăна та мар? Ашшĕн кăмăлĕ питĕ ырăччĕ. Вăл, ĕмĕрхи хресченсен тĕпренчĕкĕ, çак çĕр çинче мĕн-мĕн тумаллине, мĕнле тумаллине тĕпĕ-йĕрĕпе пĕлсе тăратчĕ тейĕн. Шел, хура тăшмана пула пĕтĕм ăшчикне тураса, каскаласа пĕтернĕрен хăйĕн вăйне те, ăсталăхне те туллин кăтартма пултараймарĕ вăл, хăш-хăш сывлакансксер, килтен инçерех тухса çӳреймерĕ. Çапах та камăн та пулсан пура пураламалла-и, çĕнĕ çуртра урай-мачча сармалла-и, чӳрече янаххисем лартмалла-и—çавăнта пĕр чĕнмесĕр кăштăртатса çитетчĕ те вăл, çамрăкрах платниксене хăйĕн ыра канашĕсене паратчĕ. Тепĕр чух ашшĕне пĕр-пĕр «ĕçе» ăсатма Эриван та пыратчĕ. Пысăках мар пулин те, шăнăрлă, вăйпиттин курăнакан ашшĕ ыттисем хушшинче халĕ вăйсăр та хевтесĕр туйăннăран чунĕ ыратса каятчĕ Эриванăн. Пелетчĕ Эриван, çамрăкрах чухне шутсăр вăйлă пулнă унăн ашшĕ. Пĕрре çапла ялти акатуйне Клемтел «кĕрешĕ», таврари ялсенчи чи паттăр çын килсе лекнĕ те ялăн чи пиçĕ арçыннисене хулпуççи урлă тыта-тыта ывăтма пуçланă. Халăх тӳрех Эриван ашшĕ патне чупса пынă, тет. «Тух, Ваççук, пĕтĕм шанчăк та санра кăна, намăса кĕртет пире ку упа», тенĕ пулать ăна. Килĕшнĕ, тет, вара Эриван ашшĕ. Килĕшнĕ, тет те, леш мухтанчăка питĕ меллĕн хăй урлă тытса пене, тет. Лешĕ сиксе тăнă, тет: «Атя тепре кĕре-

шер»,— тесе калать, тет. «Паттăр иккĕ кĕрешмест»,—пат татса хунă, тет, хăйне хăй йӳнетсе яма юратман Эриван ашшĕ. Çапла каланă, тет те, Клемтел паттăрĕ умĕнчен питĕ мăнкăмăллăн утса иртнĕ, тет. Çапла вара Йăмраллă халăхĕ пысăк намăсран хăтăлса юлнă, тет.

Шкула пăрахма юраманнине те (ун çулхисем чылайăшĕ çичĕ класс та пĕтереймерĕç авă) ашшĕ ăс пачĕ Эривана, ывăлĕ вара вĕреннĕ çынра кăна пысăк шанчăк пуррине лайăх ăнланчĕ те, пĕтĕм вăйне хурса, çине тăрса вĕренчĕ. Тăххăрмĕш класа çитиччен унăн дневникне «тăваттăсем» те «пиллĕксем» кăна илем кӳретчĕç, тĕрлĕ пухусенче учительсем Эриван ятне тĕслĕх вырăнне хурса асăнатчĕç, унăн сăнне Хисеп хăми çинче тытатчĕç. Уйрăмах математикăпа физикăна килĕштеретчĕ Эриван. Числасен вĕçĕмсĕрлĕхĕ, çутçанталăк саккунĕсен вăрттăнлăхĕ çĕнĕрен çĕнĕ тупсăмсем шырама хистени шутсăр илĕртетчĕç çамрăк çынна. Ун телейне, Йăмраллă шкулне хăйĕн ĕçне шутсăр юратакан Михаил Петрович ĕçлеме килнĕччĕ ун чух. Унăн çивĕч ăсĕ, анлă тавракурăмĕ, хăюлăхĕ, ĕçченлĕхĕ, вăл ачасен кăмăл-туйăмне витĕр курса тăни шалт тĕлĕнтерсе ячĕ те Эривана, вăл çав учительпе çывăхарах та çывăхарах пулма, унăн мĕнпур сăмахне итлеме, ăна ырă тума тăрăшрĕ. Физика лабораторийĕнче тĕрлĕ опытсем тунисĕр пуçне ачасем Михаил Петрович таçтан илсе килнĕ кивĕ телескоппа мĕн ирччен çăлтăр тĕнчине тĕпчетчĕç, çывăхри вăрмана çӳресе тĕрлĕ кайăк юрри-кĕввисене магнитофон çине çыра-çыра илетчĕç, йĕлтĕр похочĕсене туха-туха каятчĕç, çуркуннепе шкулта волейбол секцийĕ ĕçлеме тытăнатчĕ, самаях лайăх вылякан шкул команди ăмăртусем ирттерме ялтан яла çӳретчĕ, районти ăмăртусенче мала тухатчĕ. Учителĕн вăйлă характерĕ, пуçланă мĕнпур ĕçе тем пулсан та вĕçне çитерме пултарни ачасен, уйрăмах Эриванăн, кăмăл-туйăмне çирĕплетме нумай пулăшрĕ. Хăйсем сисмесĕрех ӳсрĕç, тĕрекленчĕç, чăн-чăн арçынсем пулса тăчĕç ĕнерхи çемçешке те вăйсăр ачасем.

Шăпах ĕнтĕ çавăн чух, тăххăрмĕш класра вĕреннĕ вăхăтра, çуркунне çитеспе, туйса илчĕ Эриван: çакă çутă тĕнчере никам ăнлантарма пултарайман хăйне евĕрлĕ тепĕр саккун та пур иккен.

Хăйпе пĕр класра вĕренекен Рита тăххăрмĕш класа çитсен тĕлĕнмелле хитре хĕр пуласса унччен маларах шутлама та пултарайман Эриван. Çитменнине тата пĕр урамрах, пĕр касрах пурăнаççĕ вĕсем. Ачаранпах пĕрле вылянăкулнă, пĕрле пучах пуçтарнă, вăй çитнĕ таран колхозра

пĕрле ĕçленĕ çак хăйпашка, имшер хĕрача куç умĕнчех самайланса, самайланса пычĕ те, пĕрре сасартăк, клуб сцени çине тухса, халиччен никам илтмен чăваш юрри юрласа пачĕ:

Ан хумхан, çăкалăх,
Ан хумхан, сирень.
Халь ăçта-ши, тусăм,
Эс иртсе çӳрен?

Те кĕввинчен, те юррин сăмахĕсенчен, те тата Рита шутсăр сăпайлă та вăтанчăк çавна пула тата хитререх те илĕртӳллĕрех пулнинчен тĕлĕнсе хытсах кайрĕ Эриван çав концертра. Ăçтан тупса кăларнă-ши вăл çав юрра, ăçтан вĕренсе килнĕ-ши? Кам валли юрларĕ-ши тата? Ара, юрри кашнин валли мар-çке. «Халь ăçта-ши, тусăм, эс иртсе çӳрен?»— тенĕ унта. Апла пулсан, тусĕ валли юрлать. Кам-ши Ритăн тусĕ? Пĕр-пĕр хĕр-тантăшĕ мар-ха вăл. Уншăнах ассăн сывласа юрлас çукчĕ Рита. Эппин, арçын ача пирки пырать юрăри сăмах. Кам-ши çав арçын ача?

Ыйхăсăр каççем пуçланчĕç. Малтанлăха Эриван волейбол команди кашни ир ирттерекен зарядкăна (ултă сехетре тăр та, Çарăмсан хĕррине чуп) çывăрса юлакан пулчĕ. Пĕрре пырса вăратрĕç ăна юлташĕсем, иккĕ пычĕç, кайран вара, шанчăкран тухрĕ тесе, алă сулчĕç ун çине. Вăл хăй вара çак ирхи тутлă сехетсенче ырă ыйхăра сцена çинче юрлакан Ритăна курса выртрĕ, ун патне çывхарасшăн пулчĕ, анчах лешĕ упран аяккарах та аяккарах тарса пычĕ. Шкулта тата пушшех те йывăрччĕ Эривана. Çак путăк питçăмартиллĕ хĕрача хăй çине пăхса илсенех хăйĕн йывăрăшне, хăй ăçта тăнине манса каятчĕ арçын ача, çакна кам та пулин ан систĕр тесе, Ритăран аяккарах тарма пикенетчĕ. Хĕрача ларакан парта чӳрече патĕнчеччĕ, Рита çине хĕвел ӳкетчĕ те вара, унăн пĕтĕм кĕлетки йăлтăр çутă салатса ларнăн туйăнатчĕ Эривана. Ара, мĕншĕн салатас мар-ха унăн çав çутта, йĕтĕн пек сарă çӳçлĕччĕ Рита, сар çу пек çутă ӳтлĕччĕ. Унтан та ытларах унăн кăмăлĕ, унăн савăк чĕри темрен те çутăрах пулнăн туйăнатчĕ. Кур-ха эс ăна, мĕн тери хитре юрăсене кăмăллать хĕрача. Тем тесен те, класра та, пĕтĕм шкулĕпе те уп пек хĕрача çуках. Пĕвĕпе иккĕшĕ те пĕр танччĕ те, Эриван вара хăй мĕншĕн кăштах та пулин вăрăмрах мар-ши тесе, мĕншĕн тата хăй тĕксĕм сăнлă-ши, илемсĕр-ши тесе кулянатчĕ. Ăш хыпнă вăхăтра учительсен сăмахне илтмесĕр юлнишĕн, дневникра «виççĕсем», тепĕр чух «ик-

кёсем» те ĕрчеме пуçланишĕн шăпах çак ăнланма май çук вăхăт айăплă пулчĕ. Çĕтĕлчĕ, тарăхрĕ, чунне хĕнерĕ Эриван, çапах та çак тертрен хăтăлма пултараймарĕ, Рита патне пырса ăна хăйĕн чунне уçса пама хăю çитереймерĕ. Вунă класс пĕтерсен уйрăлу каçĕнчи ташăра кăна пĕр-икĕ сăмах калама пултарчĕ вăл Ритăна.

— Эсĕ,— терĕ вăл,— тарăннăн сывлăш çавăрса,— эсĕ... кирек ăçта пулсан та эпĕ яланах санпа пĕрле пулăп.

— Ырă кăмăллă эс,— терĕ ăна Рита. — Ялан çакăн пек пул. Нихçан та ан хуçăл, нихçан та ан таптаттар хăвна.

Ритăна тата тем-тем каласшăнччĕ Эриван, ăна вăл хăйĕн асаплă юратăвĕ çинчен систересшĕнччĕ, анчах ташă сасартăк вĕçленчĕ те, унăн ирĕксĕрех арçын ачасен ушкăнне кайса тăма тиврĕ. Тепĕр ташша чĕнме те ĕлкĕреймерĕ вăл Ритăна, ун патне пыма шухăшласа хунă кăначчĕ, çав вăхăтра хĕрачана кўршĕ класри ырăс ачи Слава Спирин чĕнсе кăларчĕ те унпа меллĕн те çăмăллăн çаврăнма пуçларĕ. Чунĕ ыратрĕ Эриванăн, хăй хăюсăр та ленчешке чĕреллĕ пулнишĕн тарăхрĕ вăл. Урама тухрĕ, хăйĕн çурчĕ патне çитрĕ те, сад пахчи карти çине таянса, нумайччен пĕчĕк ача пек ĕсĕклерĕ. Ашшĕ-амăш хўттинчи йывăр, çапах та ырă ачалăхĕ иртсе кайни те, тус-юлташĕсемпе сывпуллашни те, хăйĕн ăнăçсăр пĕрремĕш юратăвĕ тăрукках татăлни те — пурте пулчĕç çав вĕри куççульсенче. Ирхи кĕрен шуçăм майĕпен, майĕпен çĕкленчĕ те, темле, чуна хăратакан тасалăхпа, пĕтĕм кĕлеткене пăлхатса яракан йыхравпа çур тўпене хупласа хучĕ.

Эриван пурнăçĕнче иккĕмĕш çаврăм пуçланчĕ.

Ашшĕ кăштах самайланнăччĕ ĕнтĕ, килти ĕçсене аванах тытса пыма тытăннăччĕ. Амăшĕ çаплах кунне-çĕрне пĕлмесĕр колхоз ĕçĕнче те килте тĕрмĕшетчĕ.

Юлташĕсем пĕри те тепри—хăшĕ ĕçлеме, хăшĕ вĕренме — хулана туха-туха кайрĕç. Рита та кайрĕ. Шупашкар хулинче темле аякри тăванĕсем пур иккен унăн, çавсем йыхăрнипе ялхуçалăх институтне кĕрес тесе тухса кайнă Рита. Шел, сывпуллашма ĕлкĕреймерĕ унпа Эриван. «Эпĕ те каятăп,— шухăш тытрĕ вăл. — Строительство институтне кĕме хăтланса пăхатăп». Çак хыпара илтсен, ашшĕ те, амăшĕ те пуçĕсене усрĕç, пусăрăнчĕç. Пĕртен-пĕр чĕппи тăван йăваран вĕçсе тухса кайни ашшĕ-амăш чĕрине хуçса, амантса хăвараслi пирки пач та шухăшламарĕ Эриван, ашшĕн йывăç чăматанне кĕнекесем тултарчĕ те ваттисем панă пур-çук укçана илсе, шăппăн кăна тăван килтен тухса кайрĕ.

Телей пулчӗ. Ыттисем пек ытлашши пӑлханмасӑр-хумханмасӑрах кӗрсе кайрӗ вӑл строительство инженерӗсем хатӗрлекен института. Ҫапах та каярах питӗ йывӑр килчӗ ӑна. Тӑван килтен пулӑшу тавраш параймарӗҫ, каҫсерен е канмалли кунсенче пӑрахут е вакун пушатса ҫӳрерӗ вӑл, йӳнеҫтерчӗ, тӑрӑшрӗ.

Рита вара майӗпен-майӗпенех манӑҫа тухрӗ.

* * *

Виҫҫӗмӗш курсра вӗреннӗ чух таса та ҫылӑхсӑр чунлӑ, пурне те ӗненекен ял ачи хӑйӗн пурнӑҫӗнче пӗрремӗш, анчах пысӑк та каярах нумай-нумай ҫулсем хушши асаплантаракан йӑнӑш туса хучӗ. Авланса ячӗ Эриван. Тӗрӗсрех каласан, ӑна авлантарчӗҫ. Мыскари ку ҫапларах пулса тухрӗ.

Ҫур енне кайнӑччӗ, анчах урамсем юртан тасалса пӗтменччӗ-ха. Хула Хӗрарӑмсен кунне хаваслӑн палӑртма хатӗрленетчӗ. Лекцирен таврӑнсан, вӑхӑт нумай та иртменччӗ, пӳлӗме хӑйсемпе пӗрле вӗренекен мӑкшӑ ачи Иван Калякин васкаса пырса кӗчӗ те чугун ҫул станцийӗнче ик-виҫ сехетлӗх «тупӑшлӑ» ӗҫ пурри ҫинчен пӗлтерчӗ. Тӑватӑ студент — ҫав шутра Эриван та — хӑпӑл-хапӑл ӗҫ тумӗ тӑхӑнчӗҫ те хыпалансах ӗҫ вырӑнне тухса кайрӗҫ. Ӗҫӗ, чӑнах та, ӳте ҫыпӑҫаканни пулмарӗ — пушатса кур-ха эс цемент е ҫӗр кӑмрӑкӗ, куҫ шурри те шӑл шурри кӑна палӑрать сан питӳнте, ҫуршар сехет душра тӑма лекет, ик-виҫӗ кун хушши тусан сурса ҫӳретӗн вара. Хальхинче вӗсем контейнерсенчен тушки-тушки ӗне какайӗ пушатрӗҫ. Самаях тарларӗҫ, хӑшкӑлчӗҫ, ӗшенчӗҫ ҫамрӑксем, ҫапах хӑйсен ӗҫне вӑраха ямарӗҫ, ӑна каҫ пуличченех вӗҫлерӗҫ, унтан чуна тивӗҫлипех савӑнтаракан укҫана алла илчӗҫ те каллех общежитине ҫул тытрӗҫ. Ку укҫапа чылаях пурӑнма пултаратчӗҫ студентсем, анчах кӗсъене чикнӗ тенкӗсен шӑпи урӑхларах килсе тухрӗ хальхинче. Ҫав Иван Калякинах вӗсене укҫаллӑ турӗ, вӑлах кӗтмен-туман тупӑшран хӑтӑлма та пулӑшрӗ.

— Паян манӑн ҫуралнӑ кун пулман пулсан, укҫа-тенкӗ ҫинчен аса илес те ҫукчӗ эпӗ,— терӗ вӑл. — Юрать-ха шанчӑклӑ туссем пур. Йӗркеллӗ ӗҫ те, тивӗҫлӗ хак та майлаштарса пачӗҫ акӑ.

— Палӑртас пулать сан менелникне. Юрать-ха эсӗ Хӗрарӑмсен кунӗ ҫуралман. Ҫавӑншӑн та пулин савӑнса палӑртасах пулать санӑн ҫирӗм ҫулхи юбилейне,— сӗнӳ пачӗ Миша Кулиш, яланах хаваслӑ белорус йӗкӗчӗ.

Туссем общежитие ҫитсе ҫӑвӑнчӗҫ, якалчӗҫ те Иван Ка-

лякинӑн ҫуралнӑ кунне палартма «Заря» хӑна ҫурчӗн пысӑках мар ресторанне ҫул тытрӗҫ.

Унччен маларах эрех тути-масине пӗр-ик хутчен ҫеҫ тутанса пӑхнӑ Эриван кӑшт сыпсанах ӳсӗрӗлсе кайрӗ. Темле чахохбили текен кавказ апатне астивсе пӑхнине, сӗтел хушшинче тем пирки хӗрсе кайса калаҫнине, оркестр шавлӑ музыка каланине, кӗтесри сӗтел хушшине вырнаҫнӑ хӗрсене ташша чӗннине кӑштах астуса юлчӗ вӑл. Ытти вара...

Ирхине ҫӑварӗ шутсӑр типсе ҫитнипе, пуҫӗ ҫӗмӗрӗлсе тухас пек ыратнипе вӑранса кайрӗ те вӑл куҫне уҫрӗ. «Турӑҫӑм, ӑҫта-ши эпӗ?»— мӗлтлетрӗ пӗрремӗш шухӑш.

Хӑйпе юнашар ӑшӑ ҫапса выртакан ҫын ҫине ҫаврӑнса пӑхрӗ Эриван. Кам ку?! Куҫ тӗлне тӳрех хӗрӗн нимӗнпе те хӳтӗлемен шап-шурӑ кӑкӑрӗсем тухса тӑчӗҫ. «Нивушлӗ эпӗ ку? Ӑҫтан, мӗнле майпа лекрӗм-ха кунта?»— канӑҫсӑрланчӗ Эриван. Ара, хӑй те ҫап-ҫарамас выртмасть-и вӑл ҫак хӗрпе юнашар? Апла пулсан?..

Намӑс, чӑтма ҫук намӑс пулса кайнине туйса илчӗ вӑл, хӑвӑртрах сиксе тӑрса ҫак ҫуртран пӗр тӑхтаса тӑмасӑр тухса тарасси килчӗ унӑн. Юнашар выртакан хӗре систермесӗр вырӑн ҫинчен ҫӗкленме ҫеҫ хатӗрленнӗччӗ Эриван, тутлӑн ҫывӑрса выртакан сарӑ ҫӳҫлӗ хӗр сасартӑк йӑшӑлтатса илчӗ те, куҫне уҫмасӑрах, хӑй аллине унӑн пилӗкӗ ҫине хучӗ, кӗлеткипе ун ҫумнерех ҫыпӑҫрӗ. Сисрӗ вара Эриван: мӗн пуласси ҫӗрлех пулса иртнӗ иккен, вӗсем иккӗшӗ те турӑ панӑ тумпах. Хӑйне хӑй чарса тӑмарӗ вара текех, юнӗ вӗриленсе кайрӗ Эриванӑн, кӗлетки чӗтрерӗ, сывлӑшӗ пӳлӗне-пӳлӗне ларчӗ. Чуптурӗ, ачашларӗ хӗре, савӑнчӗ, чунӗнче унччен нихӑҫан пулман туйӑмсем ҫуралнипе хӗпӗртерӗ.

— Эпӗ сана шанатӑп, эпӗ сана ӗненетӗп. Эсӗ мана ҫӗр каҫах чи лайӑх сӑмахсем каларӑн,— пӑшӑлтатрӗ хӗр, сӑрланӑ куҫ хупахӗсем айӗнчен кӑвак куҫӗсене уҫса. — Мана санпа ялан шанчӑклӑ пулӗ.

«Эсӗ тутлӑ ҫеҫ мар, эсӗ илемлӗ те иккен»,— кӑмӑллӑн шухӑшларӗ Эриван.

Анчах тепӗр самантранах хӑйӗн чунӗ те, ӑсӗ те лӗштӗрех каясса, пӗтӗм тӗнче пушхир пек пушанса юласса пӗрре те кӗтменччӗ вӑл.

— Мӗнле лекнӗ-ха эпӗ кунта?... Ӑҫта эпӗ? Эсир тата хӑвӑр мӗн ятлӑ?— шутсӑр канӑҫсӑрланса, хӗре тӳрех темиҫе ыйту пачӗ Эриван.

— Ӗнер каҫхине эсӗ питӗ хӑюллӑ та паттӑрччӗ, манӑн шыва сикме те, вута кӗме те хатӗрччӗ. Мана курса-

нах: «Ăкă манăн пулас арăм»,—тесе çунатланса пытăн, пĕр тăхтаса тăмасăр качча илетĕп терĕн. Куçусем ытла та ĕненӳллĕ пулнăран санран тарас темерĕм эпĕ, хамăн телее вĕçертес темерĕм... Виолетта эпĕ... Ан хăра, ют çын патĕнче мар, хамăн хĕр-тантăш патĕнче. Санăн Иван юлташу та кунтах, тепĕр пӳлĕмре вĕсем, Риммăпа пĕрле... Риммăн ашшĕ-амăшĕ ĕнер яла тухса кайрĕç те...

Чăтма çук киревсĕр ĕç туса хунине туйса, Эриван вырăн çинчен сиксе тăчĕ; çăвăнчĕ, тумланчĕ, анчах çак пĕр пĕлмен хваттертен, халиччен палламан Виолеттăран тӳрех хăпмашкăн пултараймарĕ.

— Қаçарăр, Виолетта,— терĕ вăл, вăрăм çӳçне тураса тăракан хĕр патне çывхарса,— эпĕ ĕнер шутсăр ӳсĕр пулнă.

Виолетта хулпуççийĕсене сиктерсе илчĕ те кĕтмен çĕртен çапла каласа хучĕ.

— Анчах та манран тарма ан шухăшла. Эсĕ ача-пăча мар, пĕлме тивĕçлĕ, вырăн çинчи алхасуран çĕнĕ чун çуралать. Ун пек-кун пек пулас пулсан, ху вĕренекен институтах пырса парнелетĕп.

«Тăлласа лартрĕ иккен пурнăç ал-урана»,— ассăн сывласа шухăшларĕ Эриван.

«Сурса хур,— канаш пачĕ ăна каярах Иван Қалякин.— Сан пек арçынсем унăн кашни каçах пулаççĕ пулĕ те, санăн ответ тытмалла-и пепке çуралас пулсан?»

Чăнах та çапла тăвасшăнччĕ Эриван, çав çурхи ӳсĕр каç çинчен аса илме хăраса пурăнатчĕ, каçсерен Виолеттăн куçне курăнас мар тесе, урама тухма та хăраса çӳретчĕ, анчах лешĕ, ача пуласса малтан пĕлсе тăнă пекех, шыраса тупрĕ-тупрех ăна. Тупрĕ те çапла каларĕ:

— Манран тарса пытанма шухăшларăн, эппин? Çук ĕнтĕ, куккукăм, Виолеттăна улталанă çын халиччен пулман-ха. Е авланатăн, е институтран тухса кайса, вунсакăр çул алимент тӳлесе пурăнатăн. Саккунсене пĕлмест-ха ку тесе ан шухăшла. Свидетельсем шанчăклă манăн... Ачи вара пулатех пирĕн...

Çапла Эриванăн ирĕксĕрех Виолеттăсем патне, хула хĕрринчиултă кĕтеслĕ хӳхĕм çурта, пурăнма куçмалла пулчĕ. Қăмăлĕсем шутсăр хуçăлчĕç Эриван ашшĕпе амăшĕн, ывăлĕ, килсĕр йытă пек, хăш чух выçă, хăш чух шăнса та кӳтсе çӳренине, унсăр пуçне тата хăй пурнăçĕнче чăтма çук пысăк йăнăш туса хунине ăнланмасăрах юлчĕç ватăсем. Сивĕнчĕç, ютшăнчĕç вĕсем ывăлĕнчен, хăйсен пĕртен-пĕр шанчăкĕ сӳнсе-сӳнсе пынăран питĕ хытă тарăхрĕç. Çавăнпа Виолеттăна та (ăна, яла пырсан, пĕрре курнипех тивĕçлĕ хак пачĕç пулмалла çав) кин вырăнне йы-

шăнасшăн пулмарĕç вĕсем, çамрăк арăм çавна тӳрех сисе илчĕ те, яла туртăнмарĕ вара текех, ялтисем хăйсем те хулана пĕрре те пырса курмарĕç.

Ир авланса, чăнахах та йывăр лава кӳлĕннине ăнланса илме вăхăт нумаях кирлĕ пулмарĕ Эривана. Малтанхи кунсенчех пуçласах Виолетта ашшĕ Яков Павлович Петухов, утмăлтан иртнĕ самаях самăр, çапах та чĕрĕ те пиçĕ арçын, хăйне хăй мĕнле тыткалани, пурнăç çине мĕнлерех пăхни, таврари çынсемпе еплерех калаçни шухăшлаттарма тытăнчĕ ăна. «Шутларăн — ту, тĕл пултăн — ил, пĕр пус çумне иккĕ хушма тăрăш, çын хурри ан пул, кашни лару-тăрурах хуçа пулма пĕл, кашни йăх-яха ху çуртна ан кĕрт, çынсен айванлăхĕпе меллĕн усă кур»,— çакăн пек пулчĕç Яков Павловичăн çĕнĕ кĕрӳшне калана пĕрремĕш сăмахĕсем. Хăй вăл ĕçрен хăракан, ӳркенсе тăракан çын мар-мĕн, тул çутăли-çутăлми вăранать те хăйпе пĕрле арăмне, урисем ыратнипе аран-аран çӳрекен, юн пусăмĕ хăпарнипе час-час аптракан Евлали Степановнăна тăратать. Пуçланать вара ир-ирех кĕмсĕр-кĕмсĕр пурнăç: хыçалти пӳлĕмре, кухньăра, кăмака хутса яраççĕ те вылйăхсем валли апат ăшăтаççĕ — килкартинче, аслăк айĕнче, Петуховсен яланах тăват-пилĕк сысна нăриклетет, вĕсене тивĕçлĕ виçене çитиччен самăртса пусас та юнашарти пасара илсе тухас пулать кил хуçисен. Çуртпа юнашар самаях пысăк пахча та, сад та пур, ӳркенмеççĕ Яков Павловичпа Евлалия Степановна — çĕрулми те, панулми те, тĕрлĕ çырла та, пахчаçимĕç те, чечек те ăнса çитĕнет, йăт та йăт вĕсене пасара, хула халăхĕ çак хӳхĕм тавара тиркесе тăрас çук. Килшĕн Виолетта столовăйра кассирта ĕçлени те шутсăр чуха килнĕ авă, институт шоферĕ хăех куллен ик-виçĕ фляга апат каяшĕ илсе килет — еплерех самăрăлас мар-ха яланах тутлă апат чыхса тултарнă сыснасен? Шоферне Яков Павлович, хĕрлĕ эрех илмелĕх тесе, хутран-ситрен тенкĕ çурă укça тыттарма манмасть иккен.

Çук, пурнăçĕ çăмăлланса каяймарĕ Эриванăн. Института лекцие каяс умĕн ик-виçĕ сехет, лекцирен килсен тĕттĕм пуличченех Петуховсен килĕнче тĕрлĕ ĕçсем туса тăрăшатчĕ пулин те, Яков Павлович ăна харам пыр вырăнне хурса йышăннине аван ăнланатчĕ вăл. Çавăнпа та виççĕмĕш курс пĕтерсен заочно йĕркепе вĕренме куçрĕ Эриван, çав вăхăтрах хăй умне çирĕп тĕллев лартрĕ: çемье валли мĕнле те пулсан уйрăм кĕтес тупмалла та çак «ăшă» йăваран хăвăртрах тухса тармалла.

Хăйне хăй хĕрхенмерĕ вара студент-заочник, тарларĕ,

мекĕрленчĕ. Пĕр вăхăтрах грузчик та, кочегар та, хуралçă та пулчĕ вăл, институт программине пурнăçласа пыма та чăтăмлăх çитерчĕ. Тепĕр икĕ çултан инженер дипломĕпе пĕрле кооперативăн икĕ пÿлĕмлĕ хваттерне илчĕ-илчех Эриван. Виçĕ çынлă çемье (Эдик çуралнăччĕ ĕнтĕ, ку вăхăт тĕлне хăй тĕллĕн утма та вĕреннĕччĕ) хĕвелпе йăлтăртатса тăракан пысăк кантăксемлĕ, паркет урайлă, ваннăллă, балконлă çĕнĕ хваттерне куçрĕ. Тинех хаш сывласа ярăп, пĕлĕве кура канлĕ ĕç тупăп та йĕркеллĕ пурăнма пуçлăп тесе шухăшланăччĕ кил хуçи. Анчах кĕтнĕ пек пулаймарĕ.

Уйрăм йăвара хăйне мĕнле тытмаллине, çемье «телейне» мĕнлерех тумаллине Виолетта унччченех витĕр курса тăнă тейĕн. Питĕ хăйне евĕрлĕ хуçаланма пуçларĕ вăл çĕнĕ çуртра. Çемьере пĕртен-пĕр ача пулса, ачашланса ÿснĕскер, пурнăç тути-масине чĕрне хури тăршшĕ те тутанса пăхаймаyскер, кил-çурта тытса пыма пĕртте хăнăхманччĕ вăл, тытнă пĕр ĕçĕ вĕçне çитейместчĕ унăн, çавна пула тата ытларах çĕткеленетчĕ, тарăхатчĕ, Эриванпа хăр-хар та хăр-хар калаçатчĕ Виолетта. Эдик çуралсан, тата икĕ çул ĕçсĕр ларчĕ çамрăк арăм. «Тен, пĕчченлĕх кăшлать ăна, тен, çынсемпе хутшăнманни вĕчĕхтерет унăн чунне?»—канăçсăрланса шухăшлатчĕ Эриван. Анчах, акă, ывăлĕ садике те çÿреме пуçларĕ. Виолетта ĕçе те тухрĕ — çук, упăшкин чунне таптама, пĕр сăлтавсăр-мĕнсĕрех йĕрмĕшсе-хуçăлса çÿреме пăрахмарĕ-ха вăл. Мĕншĕн кăна çĕтĕлмест-ши Виолетта: «Кÿршĕсем хаклă йышши сĕтел-пукан туяннă, мĕншĕн пирĕн çавăн пекки çук?» «Ĕçри çав-çав юлташ кашни çулах Хура тинĕс хĕррине канма каять, хăçан çав ырлăха кăтартăн эс мана?» «Çав-çав пĕлĕшсен çуртĕнче кавирсем те палассем куçа илĕртеççĕ, эпир пур кĕлмĕçе персех ирттерĕпĕр-ши ĕнтĕ хамăр ĕмĕре?»— тата ытти те, тата ытти те.

Чăтаймарĕ пĕррехинче Эриван, арăмне çапла тавăрса хучĕ:

— Эсĕ, тăванăм, кашни кунах хăвăн ĕçÿнте сахал мар укçа-тенкĕ тытса куратăн, пĕрре те пулсан шухăшларăн-и хăть çав пуянлăх ăçтан тата мĕнрен пулнине?

— Ун пирки арçынсем шухăшлама тивĕçлĕ. Авă, курха, ман атте çемье пурнăçне мĕнлерех тытса пырать,— пат татса хучĕ Виолетта.

— Çапла,— терĕ Эриван,— ун укçи-тенки çĕрсе те пĕтес çук пулĕ. Кам валли усрать-ши вăл ăна? Мĕншĕн пĕртен-пĕр хĕрне пĕр пус та парса пулăшмасть-ха вăл?

— Сан ĕçÿ çук унта. Хура кун валли усрать пуль. Тăр-

лавсăр кĕрӳшĕ пурнаç тăваяс çуккине лайăх курса тăрать пуль. Тăван хĕрĕ çинченех шухăшлать пуль. Кама кирлĕ санăн çак кĕнекӳсем? Мĕн эсĕ, профессора тухăп тетĕн-им?..

Çук, кĕнекисем ытла нумаях марччĕ-ха Эриванăн. Хăй пуранакан хулара чăваш писателĕсен кĕнекисене хутранситрен кăна сутатчĕç те, савăнăçне пытармастчĕ вара тахçан ял ачи пулнă çамрăк çын. Çав кĕнекесене вуласан, ялта тепĕр хут пулса курнă пекех, ашшĕ-амăшĕпе, тăванхурăнташĕсемпе, пĕрле ӳснĕ тус-юлташĕсемпе шăкăл-шăкăл калаçса ларнă пекех туйăнатчĕ, çавăнпа та тăван чĕлхепе тухнă кĕнекесем сутнине курсанах вĕсене май килнĕ таран туянма тăрăшатчĕ Эриван. Унтан тата строительство архитектури çинчен, çуртсен илемĕ çинчен çырнă кĕнекесене вулама юрататчĕ вăл. Ĕмĕчĕ çунатлăччĕ-ха унăн — инженерта пĕр-ик çул ĕçлесе опыт пухсан, вăл, заочно йĕркепе те пулин, тĕп хулари архитектура институтне кĕме шухăшлатчĕ, çынсем ĕмĕр савăнса пурăнмалăх илемлĕ те хăтлă çуртсем проектласшăнччĕ. Апла ку ĕмĕте те кăкранах тĕплесшĕн-ха Виолетта.

«Хура кун валли упрать-ха, эппин, Яков Павлович хăйĕн мĕнпур туприне,—тарăхса шухăшларĕ Эриван.—Çавăн çинчен хăйĕн хĕрне те систернĕ пулмалла ĕнтĕ вăл. Анчах мĕн пирки пырать-ха ку сăмах? Çемье уйрăлса, сапаланса каясса кĕтсе пурăнмасть-ши Виолетта? Çавă пулмасть-ши хура кун тени? Пĕчĕк Эдика ăçта кайса хумалла пулать-ха ун чухне?»

Çук ĕнтĕ, çемьене аркатса ят яракан пулман-ха Эривансен йăхĕнче. Хăй пурнăçĕнче тем те тӳсĕ, тем те чăтĕ вăл, анчах айăпсăр ачана тăлăха хăвармĕ-хăвармех.

Çак тăван тĕпренчĕке, çак пĕчĕк мăшăл-мăшăл ачана чунтан юратни ĕнтĕ арăмĕн кашни сăмахне, кашни мăкăртатăвне итлеттерме вĕрентрĕ те Эривана. Малтанлăха дипломлă специалист проект институтĕнче ĕçлесе пăхрĕ, ĕçĕ унччен ĕмĕтленсе хунă пекех марччĕ пулин те, пуçпа шухăшламалличчĕ, анчах çĕр çирĕм тенкĕ ĕç укçи арçынна апатлăх та çитмест тесе, Виолетта ăна кунта çур çул та тытмарĕ. Те ашшĕ, Яков Павлович, пулăшрĕ, те Виолетта хăех çаврăнăçуллă пулчĕ,— ăшă та тупăшлă вырăн тупăнчĕ-тупĕнчех Эриван валли — вăхăт нумай та иртмерĕ — вăл хулари тĕрлĕ каяшсенчен тасатакан управлени прорабĕ пулса тăчĕ.

— Асту,— терĕ ăна Виолетта,— ху ăслăрах пул та çынсемпе йӳнеçтерме пĕл.

«Йӳнеçтерме пĕл» тенин пĕлтерĕшне часах туйса илчĕ вара Эриван. Вĕсен бригадирĕ Петуховсен çывăх тăванĕ

иккен. «Пурăнма» вĕренсе çитнĕ, стройкăра «ăна-кăна» лайăх пĕлекен Илья Ильич Дубасов пулчĕ çав çын. Халĕ те тăр-тăр чĕтресе илмесĕр аса илме пултараймасть-ха ăна Эриван: пĕчĕк те чее куçлăччĕ вăл, сăмаха нумай ваклама юратмастчĕ, хăй вара калама çук вăр-варччĕ.

— Эсĕ,— терĕ вăл çĕнĕ прораба ĕçе илсенех,— кивĕ детальсене çĕннисемпе улăштарма пит ан васка, пачах тутăхса çĕрмен пулсан, вĕсен «пурнăçĕ» вĕçленмен-ха, сăрласа хăвармалла та—çĕнĕ пекех курăнаççĕ. Çĕнĕ детальсене вара перекетлĕ тыткала, вĕсем сана та, мана та лайăхрах пурăнма пулăшĕç. «Тĕрĕсех калать,—шухăшларĕ Эриван,— киввисем йĕркеллех пулсан, вĕсене мĕншĕн вăхăтсăрах кăларса пăрахас-ха? Тĕплĕ çын иккен бригадир, перекетлĕ хуçа».

Çĕнĕ прораб та хăй ĕçĕнче питĕ перекетлĕ пулма тăрăшрĕ вара. Юсав ĕçĕсем валли уйăрса панă вĕр-çĕнĕ материала нумай тăккаламарĕ, запас пайĕсен хисепне ӳстерпĕçемĕн ӳстерчĕ, вĕсене бригадира йĕркеллĕн тавăрса парса пычĕ. Çакăншăн ырă сăмах калама та манса каймарĕ Илья Ильич. Ырă сăмах кăна та мар-ха... Ресторана чĕнчĕ вăл Эривана: «Эпир тăвансем-çке, пĕр-пĕринпе çывăх пулмалла пирĕн»—терĕ. Килĕшрĕ çĕнĕ прораб, чаплă çипуç тăхăнаймарĕ пулин те, шăлаварне якатса, туфлисене çутатса пычĕ палăртнă вырăна. Анчах кунта та сăмаха нумай вакламарĕ Илья Ильич. Пĕрер черкке сыпрĕç, апат çырткаларĕç. Çакăн хыççăн тин бригадир Эривана пĕр хушă куç айĕн тĕпчесе-тĕпчесе пăхса ларчĕ те, кĕсйинчен çыпăçтарнă конверт кăларса, ăна кĕрӳшĕн аллинчен тыттарчĕ.

— Ил, ку вăл сана лайăх ĕçленĕшĕн,— терĕ хăй лăпкăн. — Тепрехинче ресторана çĕнĕ костюмпа килĕн.

Çакна пĕртте кĕтмен Эриван сасартăк çухалса кайрĕ, хăйĕн ытла тарават тăванне ним калама та пĕлеймерĕ.

— Чимĕр-ха, чимĕр,— тытăнчăклăн та йăвашшăн тухрĕ унăн сасси. — Мĕнле лайăх ĕçленĕшĕн-ха?

— Преми,— татса хучĕ лешĕ. — Нумай ан пакăлтат, чиксе хур часрах.

— Анчах премие ăна... алă пусса илекенччĕ...

— Шăплан,—васкатрĕ ăна Илья Ильич,—курмастăн-им, официант килет...

Шăпланчĕ Эриван. Дубасов ăна çийĕнчех тепĕр черкке ярса пачĕ. Пуçĕ хĕрсех, кĕлетки çемçелсех пычĕ çĕнĕ прорабăн. Çапах та вăл Илья Ильичăн сăмахĕсене, унăн тĕп шухăшне лайăх ăнланса юлчĕ çав кaç.

— Санăн,— терĕ бригадир,— арçын пулма вăхăт çит-

нĕ ĕнтĕ. Эс пур институтра профессорсем каланă сăмахсенчен тухаймастăн. Теоретиксем вĕсем тĕтре ăшĕнчен тухаймаççĕ. Кулленхи пурнăçра, авă, пачах урăхла. Кам ĕлкĕрет — çав тутă. Эс мар-тăк — тепри, тепри мар-тăк — виççĕмĕшĕ. Курмастăн-и, «Жигули» те «Москвич» хуçисене? Уйăхра çĕр аллă тенкĕ илнипе туянаймăн çав пурлăха. Эппин, шăхăртаççĕ. Эпир санпа мĕнрен кая-ха вĕсенчен? Çапла, кĕрӳçĕм, пуçа лайăх ĕçлеттерсен, асăрхануллă пулсан... ă-ă-ăм... эпир санпа!..

Халь пулсан, çуллахи çав шавлă та тĕтреллĕ каçа хăй пурнăçĕнчен ним хĕрхенмесĕр туртса пăрахĕччĕ Эриван. Туртса пăрахĕччĕ те пуçне унччснхи пекех çӳлелле каçăртĕччĕ, тĕнче çине, çынсем çине тӳррĕн, ним айăпсăр пăхĕччĕ. Анчах, акă, чавса çывăх та çыртма çук. Мĕншĕн хăй сăмахне çирĕппĕн каламарĕ-ха вăл Дубасова, мĕншĕн тавăрса памарĕ харам укçана? Тавăрса çеç памаллаччĕ-и? Мĕн пулса иртнине администрацие пĕлтермеллеччĕ, тивĕçлипе айăплама тăрăшмаллаччĕ Илья Ильича. Пĕр сăмахпа, сурмаллаччĕ ун питĕнчен. Мĕншĕн çапла тумарĕ-ха Эриван? Тĕрĕсси тĕрĕсех ĕнтĕ, хăй кĕсйинче çуралнăранпа та ытлашши укçа-тенкĕ пулса курманччĕ унăн, Дубасов та çавăн пиркиех каларĕ ав, инженерта ĕçлесе те шукăль çипуçпа çӳресе курайманччĕ-ха вăл. Тумланам терĕ-ши пĕрре, ашшĕ-амăшĕ мĕн ачаран вĕрентнĕ чыс çине ала сулам терĕ-ши? Е вăл Петуховсен юмахри пек юхакан хăтлă пурнăçне ăмсанчĕ-ши? Çук, нимĕнпе те ăнлантараймасть Эриван çавăн чухнехи хăйĕн вăйсăрлăхне. Сутрĕ вăл çав каç ашшĕ-амăшĕн ĕмĕртенпе тытса пыракан чыслăх, йĕркелĕх никĕсĕсене, хăйĕн таса чунне вараланчăк укçапа улăштарчĕ. «Темех мар, темех мар,— лăплантарчĕ вăл хăйне хăй,— акă çын çине тухмалăх кăшт тумланатăп та...»

Кĕтмен укçа ăнсăртран килсе лекнĕшĕн шутсăр савăннă Виолетта тепĕр кунне Эриван валли питĕ шукăль костюм туянса пачĕ. «Укçа çеç пултăр, ăçтан мĕн тупмаллине лайăх пĕлетĕп,— терĕ вăл хăйĕн пултарулăхĕпе мухтанса. — Куратăн-и, питĕ илемлĕ. Анчах ку костюмпа тăхăнма сана модăпа çĕлетнĕ пушмак, тăпăл-тăпăл плащ, хитре шлепке кирлĕ. Тăрăш, Эриван, тăрăш, тăрлавсăр ан пул».

«Çитет, çитет»,— çĕткеленчĕ хăй ăшĕнче çамрăк прораб, пушмак та, плащ та, шлепке те туяннă хыççăн. — Вăхăтра чарăнма пĕлмелле, ку ямăт укçан вĕçĕ пулас çук, ăна пула эпĕ хамăн ята та манса кайăп». Анчах Дубасов Эривана каллех хăй вырăнне лартрĕ. «Ан пăркалан,— терĕ вăл, сассине хытарса,— эпир санпа тахçанах хысна

çуртĕнче сахалтан та вуншар çул лармалăх «ырă» ĕçсем тунă. Эс мĕн, хăвăн пепкӳне тăлăха хăварас тетĕн-и?»

Пĕчĕк Эдика тăлăха хăварас темерĕ Эриван. Çапла хăй сисмесĕрех ăçтиçук пулса тăчĕ (çапла чĕнеççĕ ун пек çынсене). Чăн та, пĕвĕпе пĕкĕрĕлчĕ вăл, çынсем хушшинче асăрханса, сехĕрленсе çӳреме тытăнчĕ. Çав вăхăтрах Виолетта каçăрланчĕ, мăнаçланчĕ, хăйне хăй чăн-чăн патша арăмĕ пек тыткаларĕ. Халĕ те лайăх астăвать-ха Эриван,— вăрçă хыççăнхи çулсенче хăй çуралнă çуртран виç килĕ аяккарах витре тĕплекен Самантей пичче пурăнатчĕ. Фронтран йывăр аманса килнĕскер (йывăç ури паян кун та куç умĕнчех), колхоз ĕçне тухаймастчĕ вăл. Унччен тимĕрçĕ пулнăран килĕнчех витре тĕплетчĕ, сăмавар е кăмкан юсатчĕ, ытти çавнашкал ĕçсемпе аппаланатчĕ. Кам кăна пырса лекместчĕ-ши ун патне? Ырă кăмăллă Самантей пичче кашнинпех шăкăл-шăкăл калаçатчĕ, ĕçне тĕплĕ тăватчĕ, хăй патне татах килсе çӳреме ыйтатчĕ. Анчах витре е сăмавар юсаттарма килнĕ çын хапхаран тухса кайма та ĕлкĕрейместчĕ, ăна пӳртӳм картлашки çине тухса тăнă Сертюкăн, Самантей арăмĕн, хулăн та мăнаçлă сасси тытса чаратчĕ:

— Эс мĕн, çапкаланчăк, сăпаççип каланипех çырлахас терĕн-и? Кур-ха эс ăна, кур-ха сала майрине, намăсĕ те, симĕсĕ те çук. Килсе ларт сăмаварна ак çакăнта!

— Ара, мĕн-ха, эпĕ кĕçех çĕрулми е тырă илсе килсе парăп тенĕччĕ. Ялта пурăнатпăр-иç, таçта тухса тармăп-ха эп, Сертюк инке,—çапларах тӳрре тухма пăхатчĕ вăл е ку хĕрарăм.

— Эс илсе кил малтан, вара илсе кайăн! Сан пек суллăнчăксем нумайăн çӳреççĕ кунта... Кашнине шанса пĕтерсен...

Çавăн пек хăр-хар самантсенче пĕр систермесĕр таçта кайса çухалатчĕ Самантей пичче. Намăса чăтаймастчĕ. Каярах та, ĕç тытсан, чылай вăхăт ал-ури чĕтретчĕ унăн.

Витре тĕплекене масар çине ăсатнине та астăвать-ха Эриван. Тăванĕ-пĕтенĕсĕр пуçне пĕр çын та кĕрсе курмарĕ Сертюк инке çуртне. Анчах лере, масар çине, ялти пĕтĕм халăх пухăннăччĕ Самантей пиччепе сывпуллашма.

Сертюк инки хăй те тахçанах çĕре кĕнĕ ĕнтĕ — йывăр тăпри çăмăл пултăр,— анчах, авă, парса хăварнă-çкĕ-ха вăл такама хăйĕн тӳрккес те хăлтăрти кăмăлне. Такама та мар, шăпах Виолеттăна çакланнă вăл темле майпа.

Совеç тени пĕтсех çитейменччĕ пулас çав Эриванăн; Дубасовпа тытакан çыхăнусене хăюллăнах татма шутларĕ вăл пĕррехинче. Çапах, кăмăлĕ çемçе пирки тата брига-

дир кусӗнчен тӳррӗн пӑхма пултараймӑсӑр, ҫакна вӑл Илья Ильич отпуска кайсан турӗ. Ӗҫрен тухма заявлени ҫырчӗ вӑл, расчетне-мӗнне илсе тӑмарӗ, хӑйне тивекен пӗтӗм укҫана патшалӑх шутне куҫарма ыйтса хут ҫырчӗ те, кирлӗ документсене илсе,васкасах тӑван ялне тухса вӗҫтерчӗ.

Килте амӑшӗ пӗр-пӗчченех пурӑнатчӗ ун чухне. Ашшӗ ҫултаӑк маларахах ҫӗре кӗнӗччӗ. Ҫитеймерӗ Эриван ӑна пытарма. Ӗҫӗ ҫапла пулса тухнӑччӗ. Шефла пулӑшу пама тесе, прораб хӑйӗн рабочийӗсене пӗр аякри колхоза выльӑх-чӗрлӗх комплексӗн канализаци системине вырнаҫтарма илсе кайнӑччӗ. Ӗҫсем питӗ кал-кал пычӗҫ, хӑйсем палӑртса хунине чылай маларах туса пӗтерчӗҫ те вӗсем питӗ лайӑх хакпа колхозри пӗр бригадир валли автомашина гаражӗ туса пама килӗшрӗҫ. Ҫӗр ҫывӑрмасӑр тенӗ пек ӗҫлерӗҫ. Шӑп ҫавӑн чухне килсе ҫитрӗ Эриван патне хӑрушӑ хыпар: ашшӗ вилсе кайнӑ. Лӑштӑрах усӑнчӗ ывӑлӗн алли. Почтальон килсе панӑ телеграммӑна (ӑна Виолетта янӑччӗ) лутӑркаса, чылайччен ним чӗнмесӗр ларчӗ вӑл, унтан кӑштах тӑна кӗнӗ пек пулчӗ те хӑйӗн хурлӑхӗ ҫинчен юлташӗсене каласа пачӗ.

— Эх-эх-эх, ыранччен кӗтеймен сан аҫу, ара ӗҫ вӗҫленетчӗ пирӗн,— терӗҫ ӑна юлташӗсем. — Паян тата тӑрӑшарах ӗҫлер те, каҫхине тухса кайӑн пӗрех хут. Бригадир сана хӑйӗн машинине те парӗ-ха.

Эриван килӗшрӗ. Туйрӗ вӑл, юлнӑ ҫак куна сиктерсен, укҫине те чылай сахалтарах параҫҫӗ ӑна (шабашниксен саккунӗ ҫапла), вилсе кайнӑ ашшӗ тесен вара, мӗнех ӗнтӗ, тепӗр хут чӗртсе тӑратаймӑн, пытарма вара, пурте йӗркеллех пулсан, ҫав-ҫавах ӗлкӗрет-ха вӑл. Ӗҫлерӗ, тарларӗ Эриван. Ҫапах ун куҫӗ умне ҫине-ҫинех ашшӗ тухатуха тӑчӗ, юлашкинчен чӑтса тӑраймарӗ вӑл, пурттине пӗрене ҫине шаплаттарса лартрӗ те, никама ним каламасӑр, бригадира шырама тухса кайрӗ. Телее, бригадирӗ колхоз правленийӗнчех пулчӗ.

— Атте вӑл тӗнчере пӗрре кӑна, ӗлкӗрес пулать, йӗркеллех ӑсатас пулать ӑна юлашки ҫула,— терӗ вӑл пӗр турткаланса тӑмасӑр. — Ҫулӗ, чӑнах та, ҫывӑх мар ӗнтӗ, анчах сан пек пултаруллӑ ҫынна ҫакнашкал лару-тӑрура пулӑшмасан, турӑ та каҫарас ҫук мана. Акӑ, шофер та ӗҫрен пушанчӗ, вӗҫтерӗрех, ыран, каҫ еннелле, каялла ҫитме тӑрӑшӑр вара.

Лӑпланчӗ Эриван. «Тӗнчере ырӑ ҫынсем пурах ҫав»,— тесе савӑнтарчӗ хӑйӗн чунне. Анчах ҫак пӗчӗк савӑнӑҫ та нумая пыраймарӗ. Ялтан тухсан инҫе те каяйманччӗ, хура

пĕлĕтсем тĕнчене йăлтах хупласа хучĕç те асар-писер вуттăвăл кăлара пуçларĕç. Кăшт тăрсан, каткаран тăкнă пек шултра çумăр чашлаттарса ячĕ. Уйпа чупакан симĕс «Жигули» кустăрмисем йăкăш та якăш унталла-кунталла йăкăртатма тытăнчĕç.

— Çитрĕмĕр!— терĕ шофер, машина пĕр лупашкара шанчăксăрах лакса ларнине ăнланса. — Çылăхлă эс. Аçу та темшĕн кĕтмест, ав, сана.

Тапаланчĕç, тĕртрĕç, хăшкăлчĕç, иккĕшĕ те чăм-шыва ӳкрĕç, çук, тапратаймарĕç машинăна вырăнтан. Çумăрĕ вара ишрĕ те ишрĕ, çĕре çунтарса ярасла çиçĕм çиçрĕ, урса кайса аслати авăтрĕ.

...Ашшĕне ял çыннисем Эривансăрах тирпейлесе пытарчĕç. Унччен чиперех çӳрекен амăшĕ çавăн чух урараи ӳксе чире кайрĕ пулмалла. Эриван вара ашшĕ вилтăпри çине тепĕр хĕрĕх кунтан тин çитме вăхăт тупрĕ. Чылайччен ларчĕ вăл юман хĕрес умĕнче, тăпра çине эрех тумлатрĕ. Хăй черкке хыççăн черкке ӳпĕнтерчĕ, чунне хĕнерĕ, макăрчĕ, куççулленнĕ питне çанă вĕçĕпе типĕтрĕ.

Тепĕр çул вара, çав ăшхыппине пусарма тесе амăшĕ патне тарса килсен, вăл вăйсăр карчăк умĕнче чăтма çук пысăк айăпа кĕнине туйса, хăй мĕн тума пултарнине йăлтах тума тăрăшрĕ. Пайтах вутă хатĕрлесе хăварчĕ ун валли, пахча картисене юсарĕ, çав ĕçсем вăхăтĕнче кӳршĕаршăпа, тăван-пĕтенпе хутăшса, каллех вĕсен ăшшине, вĕсен ырă кăмăлне туйса илчĕ. Вĕсен шăкăл-шăкăл калаçăвĕнче, вĕсен, пĕрре пăхсан, нихăçан та ниçта та васкамасăр ĕçленинче, анчах кун каçа темтепĕр тума ĕлкĕрнинче, уяв-мĕн çитсен чăн-чăн этемле савăнма пĕлнинче çын пурнăçĕн чи аслă телейĕ, хăтлăхĕ, канлĕхĕ вырнаçнăн туйăнчĕ Эривана. Хăй çак телейпе хăтлăха чылайранпа курмасăр илтмесĕр пурăннăшăн ӳкĕнчĕ вăл ăшĕнче, хăйĕн арпашса кайнă пурнăçне харам иртсе кайнă вăхăт вырăнне хучĕ. Пурте-пурте чăтма çук тăван та çывăх кунта, таса та çутă, ăшă та сиплĕ.

Чун канлĕхне тупма е, тĕрĕсрех каласан, ăна, çамрăк чухнехи пек, тепĕр хут хускатма тепĕр сăлтав та тупăнчĕ ун çавăн чухне. Ку вăл шăрăх кун уçă шыва чăмнă пек, кун каçипе йывăр ĕçре ĕшеннĕ хыççăн тутлă-тутлă ыйха путнă пек, анлă-анлă тӳпен тăрă сывлăшне çăта-çăта ыррăн та телейлĕн вĕçнĕ пек туйăнса кайрĕ Эривана.

...Кĕтмен-туман çĕртен тĕл пулчĕç вĕсем тăван ялта. Ирхи тĕтререн тасалса çитнĕ ешĕл çĕр хăйĕн кăкăрне куçа шартса хăпаракан çамрăк хĕвеле çупăрлама ирĕк панă хӳхĕм вăхăтчĕ. Чĕлтĕр-чĕлтĕр юхакан Пыллă çырма

хĕрринчи вăйлă çăлкуç валакĕнчен шăла тивекен çута шыв шăнкăртататчĕ. Çав çăл шывĕпе çăвăнса, хăйне хăй каллех калама çук чĕрĕ те харсăр, çивĕч шухăшлă та витĕр куçлă туякан Эриван, кĕпине тăхăнма тесе, çăл пури çине ларнăччĕ. Хăш вăхăтра, мĕнле майпа лекрĕ ун куçĕ тĕлне çак ĕмĕлке?! Ту çинчен ăна хирĕç, хăйĕн ылтăн çӳçĕ тавра хĕвелĕн пин-пин пайăркине сапаласа, ирхи тавралăх тĕсĕпе пĕрешкел кĕрен кĕпеллĕ тăпăл-тăпăл хĕрарăм, кĕвенти çине икĕ çута витре çакса, шыв ăсма анать. Шартах турĕ Эриван чĕринче. Ах, анне-асанне, кукаçи-кукамай! Хăçан тата ăçта пулнăччĕ-ха çакăн пек самант? Ара, пулнăччĕ-çке тахçан, пулнăччĕ!

Хĕрарăм ун патнелле çывхарнăçемĕн Эриван хăй ăшĕнче темле хивре те пултăклă вăй капланса килнине, çав вăй ăна халиччен курман-илтмен ырă-ырă, çутă-çутă тĕнчене йыхăрса кĕрессе туйса илчĕ. Темĕн пулатех, темĕн кĕтетех унăн тулланса, кӳтсе çитнĕ чунне! Пулмаллах, ара, пулмаллах, ун тĕллĕн те уçăлмаллах вĕт-ха пĕрре кунçул шăпи. Епле те пулин хăратса ярас марччĕ çак саманта! Епле те пулин...

Анчах кĕрен кĕпеллĕ хĕрарăм çывхарчĕ те çывхарчĕ ун патнелле. Эривана вара ун патне çак самантра хĕрĕхе çитсе пыракан Рита мар, тахçан-тахçан пурнăç авăрĕ айне кĕрсе кайнă хитре ачалăх, шкулта вĕреннĕ чухнехи хӳхĕм вăхăт, пирвайхи вăрттăн та таса, çавах вĕри те тăвăллă ăшхыпни туйăмсем тепĕр хут çаврăнса килнĕн туйăнчĕ. «Ан хумхан, çăкалăх...»— тӳрех аса илчĕ вăл Ритăн темле чаплă юрăçсенинчен те илемлĕрех сассине.

Шартах сикрĕ Рита çăл патĕнче тăракан Эривана курсан. Çук-ха, тӳрех палласа илеймерĕ вăл ăна. Палланă пулсан, мĕн те пулин калатчех ĕнтĕ. Спорт тумĕ тăхăннă арçын кĕтмен çĕртен сиксе тухнăран çӳçенсе илчĕ вăл, ырăмарланчĕ, унăн унченхи пекех илемлĕ питçăмарти çинче йăмăх путăк палăрчĕ. Çук, çамки çинче пурнăç хăварнă картсем пурри те, çӳçĕнчи тĕл-тĕл кăвак пайăркасем те, кĕлетки кăштах тулса чăмăртанни те çак хĕрарăма унченхи харсăр та хăюллă хĕрачапа, унченхи Ритăпа, танлаштарма нимĕн те чăрмантармасть. Вăхăт варкăшĕ вăйсăр пулнă иккен çак хĕрарăм умĕнче.

Мĕн калас-ха Ритăна паян? Мĕнрен пуçлас-ха Эриванăн хăй сăмахне? Мĕншĕн Рита ăна тӳрех палламарĕ-ши?

Хăратса ярас марччĕ çак саманта!

Рита пĕр витрине валак айне вырнаçтарчĕ те витре кĕмĕл пек чĕрĕ шывпа тулнă вăхăтра ирĕксĕрех Эриван çине пăхса илчĕ. Тӳрех асăрхарĕ Эриван Рита куçĕнче хĕлхем

ялкăшса çуталнине. Тулли витре лăштах анса кайрĕ те унăн хăлăпĕ кĕвенте çекĕлĕнчен вĕçерĕнчĕ, тепĕрне, пушă витрине, чутах çĕре ӳкермерĕ Рита.

— Эриван?— кăшт çеç илтĕнмелле пăшăлтатрĕç унăн тутисем.

— Эпĕ,— терĕ Эриван, çакăн хыççăн тата мĕн пуласса кĕтсе.

— Кама кĕтетĕн эс кунта?— чăнне пĕлес тесех ыйтрĕ хĕрарăм.

— Сана,— персе ячĕ Эриван хăйĕн чăрсăрлăхĕнчен кăшт тĕлĕнсе. — Сана, Рита. Çирĕм çул...

— Ай-юй,— терĕ лешĕ, хĕрелсе кайса,— тахçан эсĕ кун пекех хăюллă марччĕ.

— Пурнăç пăсать çылăхсăр чунсене,— терĕ те Эриван, ку вăйăран малашне ним ыррине те кĕтме çуккине ăнланса, Рита еннелле алă тăсрĕ, — Ну сывă-и, Рита? Чăнах та, кĕтменччĕ сана çакăнта тĕл пуласса.

— Эпĕ те,— хуравларĕ Рита, ăна алă парса. — Шкул çулĕсем те тĕлĕкри пек кăна тăрса юлчĕç.

— Çамрăк чух йышпа тупа тунăччĕ, кашни пилĕк çулта пĕрре тĕл пулăпăр тенĕччĕ, ав кур, çирĕм çул та иртсе кайрĕ, пĕрне-пĕри, акă, аран паллакан пултăмăр,— хăйсен сăмахне тытайманнишĕн ӳпкелешнĕ пек калаçрĕ Эриван.

— Пурнăçăн ун хăйĕн екки-йĕрки-çке-ха. Çемье, ача-пăча, ĕç-пуç — ăçтан йăпăр-япăр хăпса тухăн. Эсĕ, Эриван, улшăнман та темелле, çамку çеç кирлинчен ытларах çуталнă,—ун çине куçне хĕсерех пăхса асăрхарĕ Рита.

— Аслă çӳç ухмах пуçран тарать, теççĕ-и-ха? Эсĕ вара унччен хинчен те хитререх,— Ритăшăн чăннипех савăнчĕ Эриван. —Шупашкар çанталăкĕ килĕшнĕ, эппин, сана. Тахçан эс унта агронома вĕренсе тухнă тетчĕç.

— Ай-юй, унтанпа ĕнтĕ виç ĕмĕр те иртсе кайрĕ,—терĕ те Рита, сăртран тепĕр хĕрарăм шыв ăсма аннине асăрхаса, васкасах витрисене тултарма пĕшкĕнчĕ.

— Халь ăçтарах вăй хуратăн-ха, Рита?— ыйтрĕ Эриван, ăна куçран вĕçертме хăраса.

— Кунтах, Эриван, хамăр колхозрах,— тавăрчĕ Рита.— Кĕçех çулталăк çитет ĕнтĕ. —Унтан пĕр хушă чĕнмесĕр тăчĕ те кĕтмен çĕртен çапла хушса хучĕ:— Каях, Эриван, авă, пĕр хĕрарăм анать... Уй куçлă...

Кĕтменччĕ Эриван Рита çапла каласса. Çавнашкалах кĕвĕç чунлă-шим ун упăшки? Анчах Рита кăмăлне хăварасси килмерĕ унăн, вăл вара, юрать, ăнлантăм тенĕн пуçне сĕлтрĕ те çăл патĕнчен васкамасăр утса кайрĕ. Ăнланма

çук темле вăрттăнлăх пытаннăн туйăнчĕ ăна Рита сăмахĕсенче. Мĕн-ши çав вăрттăнлăхра?

Тепĕр виçĕ кун пурăнчĕ Эриван тăван амăшĕ патĕнче. Ритăна тепĕр хут курмасăр хулана тухса каясшăн пулмарĕ вăл.

Çарăмсан хĕрринче туса лартнă пысăках мар теплицăсенче колхоз хăярпа помидор çитĕнтерет иккен. Çавăнта пырса тухрĕ Эриван каçпулттипе. Хĕрарăмсемпе ача-пăчан хĕвĕшÿллĕ сас-чĕвĕ тÿрех пырса кĕчĕ ун хăлхине. Апла пулсан, нумаййăн ĕçлеççĕ пулас. Çапла, самаях пысăк хĕрарăмсен ушкăнĕ çум çумлать иккен, калчасене кăпкалатать, ачи-пăчи вара чупсах витри-витрипе çывăхри пĕверен шыв йăтать. «Ăмсанмаллах мар ку ĕç. Петуховсен килти теплицинче механизаци тавраше чылай вăйлăрахчĕ,— шухăшларĕ Эриван. — Кунта, ав, темшĕн пăрăхсем те хурса тухман». Çав вăхăтра вăл хăй çине ыйтуллăн пăхса тăракан Ритăна асăрхарĕ.

— Ну, мĕнле, килĕшет-и пирĕн хуçалăх?— терĕ Рита, Эриван хăюллăнах хĕрарăмсем патне пырса тăрсан. —Çĕнĕ ĕç-ха ку пирĕншĕн. Пĕлтĕр туса лартрăмăр та, кăçал, акă, пĕрремĕш çимĕç пухса илес тетпĕр.

— Ытла йывăра килмест-ши сире капла?— ыйтрĕ Эриван,— Ĕç вăйĕ нумай тăкаклатăр-çке. Ку халăхпа тем пысăкăш плантации çитĕнтерме пулать.

— Мĕн тăвăн, ĕçе çăмăллатма хатĕрсем çитмеççĕ-çке. Акă, шыв пăрăхĕсем тупаймасăр хăшкăлатпăр, насуссем çитмеççĕ, смесительсем тупаймастпăр. Аçта кăна кайса пăхмарĕç пуль председательпе главнăй инженер,— пăшăрханса калаçрĕ Рита.

Шыв пăрăхĕсем, насуссем, смесительсем... Эриван алли витĕр мĕн чухлĕ тухман пуль вĕсем юлашки çулсенче? Пĕлнĕ пулсан, çав детальсем шăпах Ритăна кирлине сиснĕ пулсан... Халĕ акă ăна нимĕнпе те пулăшма пултараймасть Эриван — пулнă, иртнĕ, пĕтнĕ.

«Çапах та...— вĕçсе илчĕ ун пуçĕнче,— çапах та...—анчах шухăшне вĕçне çитерейменĕ, ун çине тÿрех алă сулчĕ: — Çук, таврăнма юрамасть, тĕвĕленĕ çыхха тепĕр хут салтма кирлĕ мар!»

Ĕç вĕçленĕ хĕрарăмсемпе ачасем, унччен пекех шавлăн калаçа-калаçа, ушкăнăн-ушкăнăн килĕсене тухса утрĕç. Рита васкамарĕ-ха. Хăй ĕçлекен вырăна Эриван пĕр ахаль килменнине сисрĕ вăл, ачалăхри юлташĕ ăна тунсăхланă курăнать, пĕр-пĕринпе калаçса ялалла пĕрле утнинчен ним япăххи те пулас çук. Ĕç хатĕрĕсене вырăна латса тирпейленĕ хыççăн икĕ теплицине те çăрапа

питĕрсе лартрĕ Рита, пĕве хĕрринче шухăша кайса тăракан Эриван патне пычĕ.

— Пĕвине лайăх пĕвеленĕ вара,— терĕ Эриван. —Тинĕс пекех сарăлса кайнă.

— Çул-йĕр тăвакансем савăнтарса хăварчĕç,— хураврарĕ Рита. — Пирĕн телее, çырма урлă пысăк трасса хыврĕç, пĕвине те бетонласах турĕç. Кĕçех пулă ĕрчетме пуçлатпăр акă. Пĕлетĕн-и, çуркунне кунта икĕ кайăк кăвакалĕ килсе илешрĕç. Чĕп кăларчĕç кăçал.

— Пĕр-пĕр усал çын хăратса ан ятăрччĕ вĕсене,— терĕ Эриван.

— Хăрамаççĕ. Çынсене иленчĕç ĕнтĕ. Куллен апат лартса паратпăр...

Рита, Рита. Ав мĕнле çепĕç чунлă иккен эсĕ.

— Астăватăн-и, çав Çаврака сăрт патĕнче Елля кукри текен тарăн вар пурччĕ. Пĕрле шыва кĕреттĕмĕр унта,— аса илчĕ Эриван.

— Мĕнле астумастăп пуль. Пĕве шывĕ ăна та хупласа хучĕ...

Хĕвел анчĕ, каç пулчĕ, çырана сивĕ ĕнтрĕк çапрĕ, анчах сивĕ пулмарĕ Ритăпа Эривана. Çырма хĕрринчи кивĕ çатан карта хĕрринче пĕчĕк кăвайт хурса ячĕç, калаçрĕç, иртнине аса илчĕç, пĕр-пĕрин пурнăçĕ çинчен ыйтса пĕлчĕç вĕсем. Çук, Рита пурнăçĕ те, Эриванăнни пекех, ăмсанмалла килсе тухман иккен. Институтран вĕренсе тухсан, Çĕпĕрти пĕр совхоза ĕçлеме кайнă вăл, çавăнта тепĕр икĕ çултан пĕр пултарулла учителе качча тухнă, ачаллă пулнă. Телей тени туллин тапса тăнă вăхăтра, упăшки наука кандидачĕн диссертацине кĕç-вĕç хÿтĕлес умĕн, пăсăлса кайнă унăн пурнăçĕ — ялти учитель, математикăн пулас «çăлтăрĕ», «ешĕл çĕлене» унччен те тиркесех тăманскер, ĕçке ерсе кайнă. Темиçе хут та больницăсенче сыватнă ăна, ÿкĕтленĕ, йăлăннă арăмĕ, анчах усси пулман. Пĕлтĕр вара ывăнса та хăшкăлса çитнĕ Рита этем ĕретĕнчен йăлтах тухса кайнă упăшки çине алă сулнă та, унпа уйрăлса, вунпиллĕкри ачипе пĕрле тăван яла таврăннă.

— Κураймастăп, чăтма пултараймастăп ĕçке ерсе кайнă çынна. Мĕншĕн çуралнине, мĕншĕн тата камшăн пурăннине манса каякан этем выльăхран мĕнпе уйрăлса тăрать-ха, Эриван?— тесе вĕçлерĕ Рита хăйĕн сăмахне.

«Авă мĕншĕн вăхăтсăрах темиçе йĕр палăрнă иккен санăн çамку çинче, ав мĕн тума кăвак çÿç пайăркисем курăнаççĕ сан пуçунта»,— тавçăрса илчĕ вара Эриван.

Хăй те вăл пурнăçĕнче мĕн пулса иртнине пытарса тă-

марĕ вара. Виолетта тепĕр чух, Эдика ашшĕ-амăшĕ патне хăварса, киле икшер-виçшер кун пырса лекменни çинчен çеç калама хал çитерейменрĕ — ку вăл кил хуçине, упăшкана (Эривана, эппин) калама çук намăса хăварнине уçса пама пултараймарĕ вăл Рита умĕнче.

Кайран вĕсем, иккĕшĕ те йывăр шухăш айне путса, ним калаçма пĕлеймесĕр ялалла утрĕç.

— Çырăн-и ман пата?— ыйтрĕ Эриван Ритăпа сывпуллашнă чух. — Хулана. Тĕп почтамта. «До востребования» тесе?

— Çук, Эриван,— терĕ Рита. — Эпир текех çамрăк мар ĕнтĕ. Ывăл умĕнче чыса ярас марччĕ. Кĕмĕл ĕмĕтсемпе текех йăпатас марччĕ хамăра. Эсĕ вара,— куçран пăхса házарĕ вăл,— тӳрленме тăрăш, хăвăртрах хăвăн çылăхусенчен тасал...

— Çапах та çыр эс, Рита, кĕтетĕп,— тархасласах тенĕ пек ыйтрĕ те Эриван, ачалăхри тусĕпе сывпуллашса, тепĕр куннех тăван ялтан та тухса кайрĕ.

Çавăн чух сывă амăшне юлашки хут курса юлнине те пĕлеймерĕ-ха вăл.

Колхоза пĕртен-пĕр çыру çырса ячĕ Эриван çавăн хыççăн. Рита патне. Питĕ кĕске пулчĕ çав çыру. «Васкасах облаçри РАПОна пирĕн управленирен теплица валли кирлĕ хатĕрсем ыйтса, заявка ярса парăр. Эриван Пайтуллов».

Тăван çĕр, тăван колхоз умĕнчи, Рита умĕнчи тивĕçне тем пулсан та пурнăçлама тăрăшрĕ вăл. Хулана çитсен тепĕр куннех отпускран тин кăна таврăннă Дубасова шыраса тупрĕ, ăна тӳррĕн те хăюллăн çапла каларĕ:

— Акă мĕн, Илья Ильич, сана ыран е тепĕр кун управлени пуçлăхĕ леш хатĕр пăрăхсем пирки чĕнтерет пулсан, эс турткаланса ан тăр. Колхозра кĕтеççĕ вĕсене.

— Эс мĕн, кĕрӳçĕм, тилпĕрен çимен пулĕ те?— ăнланмана печĕ Дубасов.

— Питĕ кĕтеççĕ, Илья Ильич,— сассине хăпартрĕ Эриван. — Асту вара, эп кáланине тумасан, хăвна мĕн кĕтнине ху пĕлетĕн.

— Сана вара?— чеен куç хĕссе каларĕ Дубасов.

— Манăн хваттер ытла та пĕчĕк, Илья Ильич. Санăн кермену вара тахçанах патшалăх пурлăхĕ пулма хатĕрленет.

— Сысна!— чăтса тăраймарĕ бригадир. — Сутма шутларăн апла? А эс кам-ха кунта? Эс кунта ĕçлеместĕн-çке текех.

— Ĕçлеместĕп те, сана витĕр пĕлетĕп. Ан пăркалан,

вёсем санăн «перекетленĕ» материал фондĕнче. Асту, ревизи ан килтĕр.

Çапах парăнтарчĕ вăл çав кун чее те выçă куçлă Дубасова. Нумай та вăхăт иртмерĕ, «перекетленĕ» материала пĕтĕмпех Çарăмсан хĕррипчи колхоза турттарса кайрĕç.

«Колхозстрой» пĕрлешĕвне ĕçлеме куçрĕ Эриван çавăн хыççăн, пĕрмаях районсене тухса çӳрерĕ. Дубасовпа пулса иртнĕ хирĕçӳ хыççăн Петуховсем, уйрăмах килти патша арăмĕ, унпа калаçма та пăрахрĕç. Çапах хулана килсен кашнинчех тĕп почтамта кĕре-кĕре тухрĕ Эриван, Ритăран тĕмсĕлсех çыру кĕтрĕ, кĕтни вара усăсăрах пулчĕ. Çук, çывăха ярасшăн мар иккен ăна Рита. Çапах та шанчăка çухатмарĕ вăл, паян-ыран пурпĕрех мĕн те пулин пуласса кĕтрĕ.

* * *

Амăшĕ йывăр чирлени çинчен калакан телеграммăна вăл хулара илчĕ. Ĕлкĕрчĕ ун патне Эриван, унăн чĕрĕ куçĕсене те курса юлчĕ. Тĕлĕнсе пăхрĕ амăшĕ ывăлĕ çине, анчах, тăнне çухатманччĕ пулин те, Эривана каçаратăп та каçармастăп та тесе каламарĕ. Ывăлĕ хăй те сăмах чĕнме пултараймарĕ, вилекен амăшĕ çине шăппăн пăхса тăчĕ, макăрса ярас мар тесе, çине-çинех сывлăш çăтрĕ. Чи юлашки самантра çеç пуçне сĕлтсе илчĕ амăшĕ, «сывă пулăр» тесе каласшăн пулчĕ пуль, çавăн хыççăн кăштах хăрăлтатса илчĕ те вăйсăррăн куçне хупрĕ.

* * *

«Нивушлĕ кĕрсе тухаймасть-ши Рита?»— канăçсăрланчĕ Эриван.

Пуçĕ çĕмĕрĕлсе тухасла ыратрĕ унăн. «Сывлăш, сывлăш кирлĕ»,— терĕ вăл хăйне хăй. Çак шухăшпа пӳрт алăкне уçрĕ, алăк ани урлă ула кушак сиксе каçрĕ те, Эриван ури çумне тĕршĕнсе, мăрăлтатма пуçларĕ. «Хырăму выçнă-çке сан,— тавçăрчĕ Эриван, пӳлĕме кĕрсе, ăна-кăна пăхкаларĕ, пĕр чӳлмек тĕпĕнче сĕт юлнине асăрхарĕ, ăна кăмака кĕтессинче ларакан хуралса кайнă турилккене ярса пачĕ те килкартипе тухрĕ. Кунта та Эривантан пулăшу ыйтакан тупăнчĕ, картлашка патĕнчех тăватă чăх та пĕр автан кĕпĕрленсе тăраççĕ.

«Ахă,— терĕ Эриван,— сирĕн те хырăм выçнă-çке. Мĕн тупса парам-ха эп сире?» Кĕлете кĕчĕ вăл, тӳрех ун мач-

ча каштн çĕрсе хуçăлса аннине, çурт тăрринче темиçе çĕр-те уçă хушăксем пуррине курчĕ. Пĕр пăтавккара (ача чух тыткаланă савăта вăл тӳрех палласа илчĕ) кăштах пĕлтĕр-хи тулă сыхланса юлнă иккен, çавна пĕр йĕкĕр ывăç илчĕ те чăхсене сапса пачĕ. «Вăт сана,— шухăшларĕ вăл,— тӳрех хăпса каясси пулмасть-ха ку çуртран, чĕрĕ чунсене ăçта та пулин вырнаçтармаллах».

Çуралнă çурт çине картишĕнчен те, урамран та чылайччен пăхса тăчĕ Эриван. Мĕн чухлĕ асаилӳ çыхăннă унпа! Малти пӳртне ниме туса çĕклеттернĕччĕ ашшĕ, хыçалти ик кĕтесне вара ашшĕпе ывăлĕ, ĕнепе вăрман турттарса, икĕ çул хăпартрĕç. Илсе килеççĕ те виçĕ пĕрене, вĕсене чутласа, мăкласа вырнаçтараççĕ, çапла çĕнĕ сыпăк пулса тăрать. Унтан каллех вăрмана каяççĕ вĕсем, лесник кăтартса панă визир тăрăхĕнче юрăхлă кĕреш шыраççĕ, йăвантарса сыпăлаççĕ, хашка-хашка тăрăхла урапа çине хураççĕ, ашшĕ каллех вăрманта юлать, Эриван вара, вăрман сĕмлĕхĕнче кăшт çӳçенсе, çапах çавна ашшĕне кăтартас темесĕр, йĕвен чĕлпĕрне тытать, тапаçланса утакан ĕнене хисте-хисте ялалла çавăтать. Килне çитсен, кĕреше çĕр çине антарма вăл урамри ачасене тупать, унтан кăшт сывлăш çавăрать, ĕнене шăварать те каллех вăрманалла çул тытать. Кунĕсем шăрăх тăраççĕ, ĕнене шăна-пăван сыпăçать, хӳрине çапкалантарать ула ĕне, куçĕсем ĕмĕрех шывланса тăраççĕ унăн, куççуль юхтараççĕ. Мĕн тăвăн, тулли лавран пушанаймасть Хушкапуç, çемьен йывăр пурнăçне вăл, килти çынсем пекех, чăтăмлăн туртать.

Халь ав, пусăрăннă тайăлнă, кивелсе тĕссĕрленнĕ çак çурт. Мĕн каласси, вăтăр çул ытла иртрĕ-çке унтанпа. Ашшĕ çурчĕ вара çакăн пек мĕскĕнленсе, кĕлмĕçленсе юлнине паян тин асăрхарĕ вăл.

«Нивушлĕ кĕрсе тухмасть-ши Рита?»

Ял çине кaç ĕнтрĕкĕ анса-ансах пычĕ. «Çук,— терĕ Эриван хăй ăшĕнче,— ниçта та каймастăп эпĕ, ниçта кайса та хама хĕрхенме ыйтмастăп. Çывăрас пулать, хăвăртрах çывăрса каяс та ыратакан чуна канăç парас».

* * *

Ир выртнăскер, ир-ирех вăранса кайрĕ Эриван. Çанталăк мĕнлерех пулнине пĕлес тесе, тӳрех малти чӳрече патне пырса тăчĕ вăл. Пырса тăчĕ те, шалт тĕлĕнсе, хытса кайрĕ.

Август ирĕн çăра тĕтри, такам, юмахри пек вăйлă та тĕреклĕскер, манирсĕр пысăк сенĕкпе типнĕ утă валемĕ-

сене çавăра-çавăра пынă пек, малалла та малалла кусать. Çӳлерех — тахăшĕ тăп-тăрă сенкерлĕхе куçпуçа лăпкакан, татти-сыпписĕр ырлăх-пиллĕх пиллекен, ӳсĕртсе яракан йăмăх кĕренпе калама çук пĕлсе хутăштарса янă та—ун çути тĕнчене тĕлĕнмелле килĕшӳлĕх парса тăнăн туйăнать. Тухăçра çак çутçанталăкăн аслă хуçи — куçа шартса яракан хĕвел — шăранса, çаврăнкаласа хăпарать. Çавракa çĕр çинчи тĕтрене хăваласа, ун пит-куçне сывлăшпа çуса тасатать-мĕн ырă хĕвел. «Ырă кун пултăр, савнă çĕрĕм, канлĕ пулчĕ-и санăн иртсе кайнă çĕр? Ырă кун сире, тĕрлĕ йывăç-курăк, тĕрлĕ чĕрчун та тĕрлĕ вĕçен кайăк! Ырă кун сире, çынсем! Ĕнерхи канăçсăр куна, хĕвĕшĕве, харкашăва, пĕр-пĕрне çиллентернине, пĕр-пĕринпе çапăçнине, пĕр-пĕринпе сывпуллашнине, тарăхнине, макăрнине манса кайрăр-и эсир? Темле йывăр пулсан та, лăпланăр, эпĕ сире каллех нумай-нумай ырлăх парăп-ха малашне, сирĕн хуйхăра, сирĕн суранăра сиплеме тăрăшăп. Эпĕ—сирĕнпех, апла пулсан, пурнăç малаллах тăсăлать...» Çапла саламлать пек çĕр çинчи мĕнпур чĕрĕлĕхе ирхи хĕвел. Паллах, çавăн пек саламлать. Эриван ăна хăй хăлхипе хăй илтет, хăй куçĕпе хăй курать. Авă, картишĕнче çунат çапса, автан авăтать, чăх кăтиклетет, кĕтĕве васкавлăн пăру, тăват уран сиксе, урам тăрăх ĕрĕхет, садра кайăксем пĕр чарăнмасăр чĕвĕлтетеççĕ. Вăранчĕ çĕр, вăранчĕ тесутă хĕвеле, аслă çутçанталăка пĕтĕм кăмăлтан тав тума пуçларĕ. Савăнăçне ниçта чикеймесĕр, ĕнерхи вăйсăрлăха, çуйхашăва, харкашăва тĕпренех манса кайса, паян тасарах та çутăрах, сывлăхлăрах та ăслăрах пулас тесе.

Çак вăхăтра илтрĕ Эриван шушулкка сассине. Хапха ерипен уçăлчĕ те, картишне Рита кĕрсе тăчĕ. Тӳрех тĕл пулчĕç вĕсен куçĕсем: Эриван чӳречерен пăхса тăрать, картишĕнче — хăй çине тӳррĕн тинкернĕрен сасартăк çухалса кайнă Рита. Хыпăнса ӳкнĕ Эриван ним шутласа тăмасăр алăк патне чупрĕ.

— Каçар эс мана, Эриван, пысăк хуйхă сан,— пăшăлтатрĕ Рита. — Эпĕ килеймерĕм, ĕçпе хулана кайнăччĕ, каç пулсан тин çитсе ӳкрĕм...

* * *

...Рита тухса кайсан, Эриван ашшĕн тутăхса кайнă пурттине тупрĕ, пӳрт йĕри-тавра пăхса çаврăнчĕ, кашни пĕренене шаккаса пăхрĕ. «Кирлĕ материал та хăйне пулăшакан икĕ-виçĕ çын тупăнсан, ĕçĕ кунта икĕ-виçĕ эрнелĕх»,—шухăшларĕ вăл.

...Август уйăхĕ тин çеç пуçланнăччĕ-ха.

# ТИП МУНЧА

Тахçан-тахçан пĕр аякри районта, пĕр аякри ялта пулса иртнĕччĕ ку мыскара. Миçе çул иртрĕ-ши унтанпа тесе, ĕнсене темиçе хут та кăтăртаттарса пăхрăм, анчах çук çав, аса илеймерĕм хăçанне. Ирĕксĕрех хама хам çакăн пек лăплантартăм вара: хăçанĕ-мĕнĕ çыраканшăн та, вулаканшăн та темех мар-ха вăл, чи кирли — ĕçĕ пўлнă, çавă паха терĕм. Пĕр шутласан, пулмасан та пултарнă-çке-ха кунта çырса кăтартнă ĕç-пуç. Ай тур-тур, çак шухăш ăнсăртран килсе çакланни те çўçе-пуçа вирелле тăратать: мĕнле-ха апла пулман пултăр? Çав териех кичем пурăнатпăр-и вара эпир? Эй, çук ĕнтĕ... тарла-тарла ĕçлетпĕр, кирлĕ чух юрататпăр та, ташлатпăр та. Шўт тăватпăр, чике тăршшĕ лартатпăр, кăпăр-кăпăр мухтанса илмесĕр те тўсейместпĕр... Хĕвел çинче те хура пăнчăсем пур теççĕ те, пирĕн вара, чĕрĕ-сывă çынсен, йăнăшасси те, айăпа кĕресси те пулмасть мар ĕнтĕ. Шуйттан та хĕтĕртет пире, эрех те улталать, тўп-тўрĕ çулпа таплаттарса пыма кăмăл-туйăм тени те чылай чăрмантарать. Тепĕр чух пĕр чĕмсĕр ларакан тункатана ăмсанса илесси те çавăнтах — вăт ку çылăхсăр-тăк çылăхсăр тетĕн вара. Анчах чĕрĕ чунсен пурнăçри çулĕ-йĕрĕ ялан пĕр йĕрпе мар çав.

Эй, çав халăх сăмахĕ-шухăшлавĕ! Пĕрех хут упа шăтăкĕнче пурăнмалла пулнă та этемĕн. Темле йăнăш тусан та, темле çылăха кĕрсен те намăс пулмĕччĕ вара сана. Çапах та халлĕхе пире халăхпах пурăнмалла тунă-ха. Чăтас пулать, тўсес пулать. Шăла çыртса, шăнăрсене хытарса.

Çапла, пулнă-ши ку мыскара пирĕн пурнăçра, пулман та-ши тесе, темиçе хут та ĕнсене кăтăртаттарса илтĕм эпĕ. «Ара, епле пулман-ха?—терĕм вара хама хам,—«унсăрăн пирĕн пурнăç ытла та кичем пулнă пулĕччĕ, пирĕн вулакан та, Ухсай каларăш, шăрттан хулăнăш романсем вуласа, салхулăх ытамне кĕрсе ўкĕччĕ те, ыйхăллăн анасласа ларса, тутлă кăтăша путĕччĕ. Акă мĕншĕн, хама çак шухăшпа

канăçлантарса, тӳп-тӳррĕнех калама хăюлăх çитеретĕп эпĕ: пулнă, атьсемĕр, кун пекки, пулнă! Тахçан-тахçан пĕр аякри районта, пĕр аякри ялта».

Ытах та пĕри-пĕри çак хăйлава вуласа тухсан: «Çук, ĕненместĕп! Халап ку, юмах ку!»— теме пăхсан, мĕнех ĕнтĕ, манăн хамăн та чун çылăхсăр мар, çыракана та, вулакана та пĕр чустаранах унанă.

Унтан тата çакна та палăртса хăварам: хăшĕ-пĕри повеçри çынсем сăвăлларах калаçнинчен тĕлĕнме пултарĕ. Мĕншĕн çапла-ши тесе пуç çĕмĕрме кирлех мар пулĕ тетĕп, ма тесен асăннă ялта питĕ хаваслă халăх пурăнать. Хаваслă халăх вара, хăвăрах пĕлетĕр, юптарса та кукăртса, шăл йĕрсе те шахвăртса калаçать.

Çапах та пулни-иртнине пĕр суймасăр каласа кăтартас килет манăн. Пĕр суймасăр!

* * *

Шĕшлĕвăрри ял клубĕн алăкĕ умĕнче çав каç сылтăм çаннине хĕрлĕ хăю çыхнă Петĕр комсомолец тăратчĕ. Çав ятлă механизатора пĕлетĕр-и эсир? Çук тесе пуçăра ан пăркалăр, пирĕн таврара ăна сăмсине шăлайман путиш ача таранах пĕлет, ма тесен — ятлă. Çитменнине, дружинник тата. Ахальтен тăратнă тетĕр-и ăна клуб патне? Асту, ахаль пултăр. Илтместĕр-им, шалта сурчăк сирпĕтсе калаçаççĕ? Ĕнтĕ тавçăратăр пулĕ — шавлă пуху пырать Шĕшлĕвăрри клубĕнче. Пурнăç вăл пурнăçах, пухусăр, канашлусăр ниепле те май килменнине паян ача садне çӳрекен кашни шĕвĕрех ăнланать. Пуху вăл — тапкă пару та, хăлха пăру та, çав вăхăтрах пуху — халăх шухăшĕ, пуху — йĕрке, пуху — ыраппи пирки шухăшлани, лайăхрах, ĕçченрех, пуянрах пулас тесе тапаçлании. Çавăншăн хисеплет те халăх тĕрлĕ пухусене. Ав епле çапса хĕссе лартнă ял клубне — алăкĕнчен пăс мăкăрланать, шалта — вĕри мунча чулĕ çине çичĕ курка ăшши панă тейĕн. Ан тив, калаçчăр; ан тив, тарлаччăр; ан тив, хăлаçланччăр-ха шалтисем; кунта, алăк умĕнче, кĕтмен калаçу пулса иртрĕ пирĕн.

Шĕшлĕвăрринче пĕр çур сехет те пулин пулса курнă çын кунта пурăнакан çирĕм çула çитнĕ Малание те питĕ лайăх пĕлмелле ĕнтĕ. Астурăр-и? Ара, ара, шăпах çавă, кĕлеткин аялти пайне çат тытса тăракан джинс тăхăнса, сăмси çине йăлтăр та ялтăр хура куçлăх лартса, аллине шукăль сунчăк тытса çӳрекенни. Шăп та шай çавă килсе тухрĕ ятлă механизатор (вăлах дружинник) Петĕр комсо-

молец куçĕ умне. Картлашкапа хăпарнă чухне чутах такăнса ӳкмерĕ Малани.

— Эй, мур илесшĕ çав арçынсем, картлашкана та путлĕ тăваймăн,— мăкăртатрĕ вăл çилĕллĕн.— Чут урана хуçаттăм.

— Малтан сан, тусăм-сухапуçăм, куçлăхна хывмаллаччĕ,— ăс парасшăн пулчĕ ăна Петĕр. Анчах та çак сăмахсем лешне пушшех тарăхтарса ячĕç курăнать.

— Сан мĕн ĕç пур ман куçлăх çумĕнче?— пат татса хучĕ Малани.

— Эппин, ан мăрăлтат сăвăслан пек,— парăнмарĕ Петĕр комсомолец.

— Те «сăвăслан» тени килĕшрĕ Малание, те тата чăнчăн арçын сасси кăтăкласа илчĕ унăн хăлхине (пĕлсе пĕтер-ха хĕрупраçăн ăрша хумĕ пек выляса тăракан ăсне), анчах куçлăхне хыврĕ те вăл Петĕр çине чăрр пăхса тăчĕ пĕр хушă. «Дружинник пулин те, эс те арçынах»,—тесе шутларĕ пулмалла вăл, унтан тӳрех çакăн пек персе ячĕ:

— О, кей! Паян эс, Петĕр, шукăль джентльмен! Атя, клуба кĕрер те твист ташлар.

— Унта халь твистсăрах мунчарн пек,— терĕ Петĕрĕ.— Аçун ӳт-тирне кирĕкрен тасатаççĕ.

— Эй-эй, эс шăл йĕретĕн,— куланçи турĕ Малани. — Ман атте ĕнер каçпа кăна мунча кĕрсеччĕ.

— Тасалайман пулас çав кирĕкрен,— иккĕленчĕ Петĕр, хăй те кăштах хыçаланса илсе.

— Ай, саппа,— тесе аллине сулчĕ те Малани, клуб алăкне карт туртса, хӳри вĕçне кăшт çеç кăтартса хăварчĕ.

— Мерси, тархасшăн,— ĕнсине сăтăркаласа мăкăртатрĕ вара ним тума аптраса юлнă Петĕр дружинник.

Пирĕн купта, хисеплĕ вулаканăмăр, ирĕксĕрех декорацие улăштарма тивет. Малани хыççăн кĕрлесе-сĕрлесе тăракан ял клубне эпир те кĕрес терĕмĕр. Чăннипе каласан, тăвăртарах кунта. Çĕрулми тултарнă михĕсем лартса тултарнă, кантăксене хĕреслĕн-хĕреслĕн çапса лартнă. Малта, сцена пулмалли вырăнта, чылаях шултра ăвăс пĕрене выртать. Унта — президиум: Иван Иванч, Шитă-крытă бригадир, пушарни начальникĕ Утаманов (вăлах пуху председателĕ), хуçалăх заведующийĕ Савали. Сылтăмри пĕр пукан çине кивĕ витре ӳпентерсе лартнă та, унта темле хутсем сарса хунă. Трибуна пулас ĕнтĕ ку. Ун умĕнче тăракан Савали çапларах сăмах калать:

— Ара, мĕн хăтланатăр-ха эсир? Çынна çапла элеклесе, кӳрентерсе калаçмалла-ши пирĕн? Пĕр шутласан, нервăсем килте те кирлĕ пулĕç-ха вĕсем. Ак, сăмахран, сана

вăрçма пуçлать те арăм, ёнтет вара, ёнтет, тĕкне татать... Тăна илес-тĕк, шухăшĕ ун тарăн, хĕрарăм çеç те — тĕрĕс-нех калать. Шăлна çыртса ларан вара — чĕнместĕн, пуç-на хыçан — ним калама пĕлместĕн. Мĕн чухлĕ нервă кир-лĕ арçынна!

Çак сăмахсене илтсен, клуба тин кăна кĕрсе тăнă Маланин куçĕ тӳрех шывланса кайрĕ те, вăл, хура куçлăх-ӗе хывса, питне çанă вĕçĕпе сăтăрса илчĕ.

— Эй, мĕскĕн арçынсем,—хăйне çеç илтмелле пăшăлтат-рĕ Малани. — Эп акă нихçан та вăрçмăттăм сире...

— Эс ĕç пирки кала ху сăмахна!— пӳлчĕ Савалие çĕр-улми миххи çинче ларакан Носов платник. — Пуçларĕ юптарма. Вăт хăвилосăв...

Савали тӳрех сасă еннелле çаврăнчĕ.

— Эс сăмсуна таçта ан чик-ха, Носов, лар шăпăрт ырат-ман кутна пусса,— терĕ хайхи.

— Вăл санăн ыратмасть сăпса сăхсан та,— тавăрчĕ ва-ра ăна Носовĕ.

Çак вăхăтра пĕтĕм клуба кисретмелле Утамановăн ху-лăн сасси янраса кайрĕ (шăпах унăн çирĕп сассине шута илсе лартнă ăна пушарни начальникне — пушар чанĕ те кирлĕ мар имĕш, паянхи пухура та, акă, унăн сасси шăп та лăп вырăнлă ĕнтĕ):

— Çитет унта йĕрке пăсса ларса!

Çак сăмахсене илтсе хĕпĕртесе ӳкнĕ Савали Носова пи-тĕ меллĕ тĕксе илчĕ вара:

— Куратăн-и,— терĕ вăл платнике,— эс йĕркене пăса-тăн. — Унтан хăйĕн унчченхи сăмахне малалла тăсрĕ.— Кĕскен çапла каласшăн. Председатель Иван Иванăч йĕркеллех ĕçлет. Тахçан пире вăл клуб тумашкăн сăмах пачĕ. Ак курăр — клуб. Яла илем кӳрет. Шӳт мар клуб тăвасси. Çĕр çывăрмасăр ĕçе вĕçлес тесе тăрăшмалла. Тар-ламалла...

— Ара, çапла пулмасăр!— купарчаран сасартăк шăр-пăк тăрăнтарнă евĕр йĕплесе илчĕ пĕр çамрăкки (ял те-мĕн çав, тĕнчере тĕрлĕ кĕнчеле тенĕ пек, темле çын та ту-пăнать мар-и унта).— Çапла пулмасăр! Клубра ун çĕрул-ми усрамалла. Кантăксене чуспа питĕрмелле те...

— Эк-кей,— тӳрех тавăрчĕ ăна Савали. — Сан чăтăм çук иккен пĕрре те. Ара, кăшт кĕт, ав, çĕрулми кĕлечĕ тăвас тесе шутлатпăр малашне.

Çапах леш çамрăккине тивĕçтерсех пĕтерейменпе пулас Савалин шерпет сăмахĕ.

— Каçса кайса савăнмалли пĕлтерчĕ,— тăрăхларĕ вăл

Савалирен, унтан сассине кӑшт ҫирӗплетрӗ: — Эп савӑнмастӑп. Мӑшкӑл ку. Чӗр мӑшкӑл!

Ҫакна илтсен, Шитӑ-крытӑ бригадир йӑмпӑлт! сиксе тӑчӗ хӑй вырӑнӗнчен.

— Вӑт, ҫамрӑк темерӗн,— ҫамрӑк ҫын чӑнах та пурнӑҫа сахал курнӑран тӗлӗнчӗ Шитӑ-крытӑ. — Эс курманха мӑшкӑл. Ак эп пӗрре кайсаттӑм хӑнана хунькассине. Ҫаран хӗрсех ӗҫтерчӗҫ — ирхине хӑть пӗр тумлам памарӗҫ мухмӑра. Вӑт ҫав, ачамккӑ, чӗр мӑшкӑл-тӑк чӗр мӑшкӑл.

Пӗри те хирӗҫлеме пултараймарӗ вара Шитӑ-крытӑ бригадира, мӗн-ма тесен пӗлеҫҫӗ, ӑнланаҫҫӗ ял ҫыннисем— чӑн та сахал мар чӑтса курнӑ бригадир. «Шитӑ-крытӑ» тени те ахаль мар ҫыпҫӑннӑ ун ҫумне. Пӗррехинче вӑл аякри хулана ҫӗрулми сутма кайнӑ иккен те Вархунькка шоферпа иккӗшӗ, самаях хӗрӗннӗскерсем, яла сӗм-ҫӗрле таврӑннӑ. Ял урамӗнче пӗр кӗтӳ сурӑх выртнине те асӑрхайман апӑршасем, кустӑрма айне тем лекнине туяҫҫӗ хайхисем. Машинӑна чарса тухса пӑхаҫҫӗ ӳсӗрсем, ҫылӑхсӑр сурӑх чунӗ тухса та вӗҫнӗ иккен. Вӑт инкек, иккӗшӗ те аптӑраса ӳкеҫҫӗ. Мӗн тумалла халь?

— Куншӑн пире лектереҫҫӗ, штраф шаплаттараҫҫӗ,— тесе калать, тет, Вархунькки.

Паллӑ, пуҫӗ ӗҫлемен ҫынна бригадира лартмаҫҫӗ. Кунӑн та тупсӑмӗ часах тупӑнчӗ, тет, вара: вилнӗ сурӑха часрах кӗпер айне кайса пӑрахас та ҫӳп-ҫаппа витсе хӑварас — ӗҫӗ те пӗтрӗ.

Шутланӑ — тунӑ.

— Шитӑ-крытӑ!— терӗ, тет, бригадир ун чух, хаш! сывласа ярса.

Бригадир арӑмӗ Акриппи ирпе тӑрать те киле килмен сурӑхсене шырама тухса каять. Тупать хайхи тӗнче касса ҫӳрекен выльӑхсене, анчах.... пӗри ҫук—ҫӗр ҫӑтнӑ тейӗн.

Мухмӑрпа чӗтрекен аллипе хӑй ӗнсине кӑтӑрт-кӑтӑрт хыҫса илчӗ, тет, те ҫав ирхине бригадир тӳрех Вархунькка шофер патне вӗҫтерчӗ, тет. «Апла-капла, ҫав сурӑх... пирӗн пулнӑ вӑл, ҫуррине те пулин тӳле-ха хӑть»,— тесе каларӗ, тет. «Э-э, ара, хӑвах каларӑн-ҫке шитӑ-крытӑ тесе, ман кунта ӗҫӗм ҫук»,— тавӑрчӗ, тет, лешӗ.

Халӗ ӗнтӗ бригадирӑн чӑн-чӑн ятне те манса кайрӗ халӑх, ӑна пурте Шитӑ-крытӑ тесе чӗнеҫҫӗ. Тӗрӗс ӗнтӗ, хӑйне ҫавӑн пек чӗннӗ чух ҫӳҫӗ шӑртланса каять бригадирӑн, анчах шӑлне ҫыртать те хирӗҫ сӑмах чӗнеймест вӑл. Тӳсет, асапланса та пулин чӑтса ирттерет ҫав саманта.

...Пирӗн пуху малаллах пырать-ха. Ӑна ертсе пыракан

Утаманов, хăйĕн хулăн сассипе хăй киленсе, халăх сăрлевне ак çапла нĕтĕмлетсе хурать:

— Сăмахăм ман çапла: хăвармалла хăй ĕçĕнчех Иван Иванăча. Хуттяп... çĕнĕ кĕлет туса пĕтертĕр. Унтан кайран хăй шухăшне пĕлтертĕр: татах ларасшăн-и вăл пуçлăхра е малашне пуласшăн-и хуралçă?

— Иван Иванч! Нивушлĕ эс хăравçă?— каллех сиксе тăчĕ лара-тăра пĕлми Савали. — Қала халех, мĕн килĕшет сана? Çынсем илтесшĕн санăн сăмахна. Эс пуçлăхрах юласшăн-и?

Сăмах хăй çине куçнине илтсе юлма ĕлкĕрчĕ иккен кăшт тĕлĕререх ларакан председатель.

— Юласшăн,— терĕ вăл мăр-мăр кушак аçин юлхав сассипе. Унтан халăх çине тин вăраннă пек пăхса илчĕ те кăшт васкавлăрах калаçма пуçларĕ. — Ну, тусăмсем, панулмисем, тархасшăн, эсир мана хăварăр вырăнтах. Кайран вара тав тăвăр хăвăрах... •

— Хавшарĕ-çке колхоз! Мĕн чул кивçен укçа памарĕ пуль пире патшалăх!— янраса кайрĕ Регина агрономăн чĕрре кĕрсе кайнă сасси.

— Кивçен укçа эпир кăна илмен, ав, кӳршĕсем те шав тăсаççĕ алă,— агроном ыйтăвне малтанах кĕтнĕ пек лăпкăн хуравларĕ председатель.

— Ара çав,— хавхалантарчĕ пуçлăха Шитă-крытă,— кӳршĕсем илни те пире паллă.

— Юлса пыраççĕ-çке кĕрхи ĕçсем,— каллех çĕткеленчĕ Регина.

— Ан пăшăрхан,— терĕ ăна хирĕç Иван Иванч,— кĕç килмелле шефсем.

— Ара, ара,— çунатланчĕ Шитă-крытă,— ыран-паян çитеççĕ ак вĕсем.

— Ку яхăн пит хавшарĕ дисциплина,— парăнмарĕ агроном.

— Çын вăкăр мар,— ним пулман пек тавăрчĕ председатель. — Қанас пулать-çке çынпăн.

— Ара, ăçтан çын вăкăр пултăр-ха?— тĕлĕннине пытараймарĕ Шитă-крытă та.

Иван Иванч вара хăй тин çеç каланă шухăшне малалла тăсма шутларĕ курăнать.

— Мĕн чухлĕ нервă кирлĕ арçынна тесе, ав, Савали чăнне каларĕ,— терĕ вăл. Унтан, Регина çине пăхса, хăй сăмахне малалла тăсрĕ: —Чиперĕм, хĕрхенетĕп эп сана. Сăну шуркам. Қанмашкăн вăхăт мар-и?

— Вăл хĕрхенет! Мĕнле вăл ыр чĕреллĕ! Эй, халăх, сасăлар Иван Иванчшăн!— ик ал лаппипе çич çулхи ача

пек пуçлăх пуçне сăтăркаласа илчĕ сасартăк хĕпĕртесе ӳкнĕ Савали.

— Епле вăл ăслă та çемçе чĕлхеллĕ. Ĕпле тата вăл калаçать йăвашшăн. Эй, халăх, сасăлар эппин часрах, кун пек хуçа тек тупаймастпăрах,—темшĕн-çке питĕваскатма хăтланчĕ пухăва ертсе пыракан Утаманов. Анчах ăна Петĕр комсомолец (вăлах механизатор-дружинник) сасси пӳлсе хучĕ:

— Çав «Сельхозтехника» çынни ĕнер мĕн чухлĕ пыл çаклатрĕ-ха запчаçшăн?

— Э, çав завсклад-и?— тӳрех тавçăрчĕ Иван Иванч.— Илчĕ çур пăт пек. Мĕскер вăл çур пăт колхозри утаршăн. Пыл хурчĕн ĕçĕ — янтă япала. Мĕн çавăншăн сăмах вакламалла?

— Ара, завсклад та пыл тутанмаллах,— терĕ Шитăкрытă. — Вăл та этемех.

— Қатсмпи пек хĕрӳ пур — Маланп,— янраса кайрĕ каллех Носов платник сасси. — Мĕн-ма ĕçлесшĕн мар вăл колхозра?

Çак ыйту Иван Иванча тарăхтарсах ячĕ пулмалла. Унăн сăн-пичĕ хур ури пек хĕрелсе-хĕремесленсе кайрĕ. Хăй вара çапла каларĕ:

— Эс, ывăлăм, кăшт шухăшларăн-и? Кăшт пур-и сан ак çакăнта, пуçра,— хăйĕн кукши çине тĕллесе кăтартрĕ председатель. — Е ĕçлемест-и сан унта пачах? Ман Малани ача вĕт-ха, ача!..

— Çитет нăрăлтатса!— пĕтĕм шăв-шава хупласа хучĕ Утамановăн мăнаçлă сасси.— Сасăлама лартатăп. Кам та кам «Пучах» колхоз председателĕнче Иван Иванч юлтăр тет...

Çак вăхăтра çари! çухăрса ячĕ пĕр хĕрарăм.

— Эй, кăраву-ул!— терĕ вăл. — «Пучах» колхоз пĕтет!

Анчах пуху председателĕ ăна-кăна пăхса тăмарĕ, хăйĕн ĕçне малалла тăсрĕ.

— Кам та кам колхоз председателĕнче Иван Иванч юлтăр тет...—тепĕр хут каларĕ вăл хăй сăмахне аллинчи шăнкăравне шăнкăртаттарнă хыççăн,— çавсене алă çĕклеме ыйтатăп.

— Ахă, ыйтах эс, эп вара шутлатăп,— терĕ ниçта кайса кĕрейми Савали, вара, чăнах та, шутлама пуçларĕ. — Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă... Эй-эй, юлташ, мĕн çывăрса ларатăн? Халех çĕкленĕ пултăр аллуна! Эс ма ларан?— терĕ вăл, пĕр мучие хул лапаткинчен тӳнк! тутарса.

Вăранса кайнă мучи хăпăл-хапăл ик аллине те çĕклерĕ, кайран тин хăй ăçта пулнине тавçăрса илчĕ пулмалла

та, ик аллипе те хăйĕн питне-куçне сăтăркалама пуçларĕ.

— А... мĕншĕн ал çĕклес?— терĕ вăл, кăшт хăюлланса.

— Иван Иванчшăн пар ху сассуна,— хушрĕ ăна Савали.

— Эй... пурпĕрех — хăть питлĕх, хăть хуткупăс,— терĕ те ыйхăллă мучи аллине тепĕр хут çĕклерĕ.

— Вăт тоттă!— терĕ Савали, хĕпĕртесе. — Ак халĕ пулчĕ улттă.

— Кам та кам Иван Иванча председателе суйлас мар тет...— хальхинче питĕ шăппăн каларĕ Утаманов,—çавсене...

— Эй, халăх, халь йăлтах пиртен килет!— тесе, хăйĕн кўршисене алă çĕклеме хистесшĕн пулчĕ Носов платник, шел, лешсем питĕ тутлăн çывăрса кайнăччĕ те, вĕсене вăратма нимле меслет те тупаймарĕ вăл.

— Пĕрре, иккĕ, тăваттă,— шутларĕ Савали, пиллĕкмĕшне асăрхамăш пулчĕ, вара савăнăçлăн кăшкăрса ячĕ:— Иван Иванч! Сана эп саламлатăп! Каллех эс председатель, тепĕр срук!

— Çапла вара,—пухăва пĕтĕмлетрĕ пушарни начальникĕ Утаманов,— председателе Иван Иванчах хăварас!..

— Çĕн пуçлăха, атьсем, урра йăтас!— савăнăçне ниçта чикеймерĕ Шитă-крытă.

— Мĕнле вăл çĕнĕ пултăр-ха?— килĕшмерĕ унпа Савали.

— Çăвас!— терĕ Шитă-крытă,— вăраха ямасăр!

— Çăвас тесен, эп хирĕç мар, хавас,— хушса хучĕ Утаманов хулăн саслăн.

Вăт çапла иртсе кайрĕ пуху. Пурте пулчĕ унта: усал сăмах та, юнани те, йăпатни те, юптарни те. Пуху вăл пухăвах, тем те пулать, тем те сиксе тухать унта. Ан тив, йĕплесе критиклерĕç пултăр хăшпĕрисем (унсăрăн пулмасть), ан тив, пуррине пур, çуккине çук тесе ятранах каларĕç пултăр, çапах та Иван Иванович хăйĕн вырăнĕнчех юлчĕ.

Хĕвĕшсе, пĕрне-пĕри пўле-пўле калаçса, шавлăн тухса кайрĕç пуху çыннисем. Пушанса юлнă клубра Маланипе Петĕр каллех тĕл пулчĕç.

— Ак куртăн-и? Каллех эп магдолина,— пуçне каçăртса, хăй камне пĕлтерчĕ Малани.

— Çапла, çапла,— килĕшрĕ унпа Петĕр,— каллех эс манкалина...

— О, парăр аллăра! Эй, музыка ăçта? Маэстро, ма шăплантăр? Вас ис дас?— аллисене маччаналла çĕклерĕ Малани.

Унччен те пулмарӗ, хаваслӑ кӗвӗ янранса кайрӗ. Сунчӑкне сарса ярса, темӗн тӗрлӗ те хуҫкаланса-кукӑрӑлса ташлама пикенчӗ Малани.

— Епле хитре те савӑнӑҫлӑ кун.
Ман кӑкӑртан тухса ӳкет пуль чун.
Каллех тӗл пултӑм эпӗ Петӗре,
Ах, кӑркка пек кӑлтӑртатать чӗре,—

чӗтре-чӗтре такмакларӗ Малани. Петӗрӗ ӑна ҫапла тавӑрчӗ:

— Епле илемсӗр, тӗссӗр кун паян.
Кун пеккине хам ӗмӗрте курман.
Ҫав услапа хӑварчӗҫ пуҫлӑхра,
Ак халь тарать ун хӗрӗ ман умра.

Анра-сухра,— юлашки икӗ сӑмахне вӑл хӑй илтмелле ҫеҫ каларӗ.

Малание ҫак вӑйӑ килӗшрӗ пулмалла та, хӑйӗн такмакне вӑл малалла тӑсрӗ:

Ай-юй, ун пек калаҫар мар.
Ман ӑшӑмра ҫунать вӗри кӑвар.
Ну кил, тӑванӑм, кил ҫывӑхарах,.
Сана эп калас тетӗп пӗр сӑмах.
Тур каҫарах!

Ёлкӗрчӗ ҫав, ёлкӗрчӗ Малани хӑй патне ҫывхарнӑ Петӗре чуптуса илме! Лешӗ, тӗлӗннипе, куҫне чарсах пӑрахрӗ ҫавӑн хыҫҫӑн:

— Ай тур-тур-тур,— терӗ вӑлваскаса,—
Пулать те кӗрт ами,
Мана чуптурӗ — ку вӑл чӗр камит.
Тьфу — тьфу. Ҫак самантра Хветуҫ курсан,
Манпа калаҫас ҫук вӑл нихӑҫан.
Тасал, шуйттан!—

Маланине хӑй патӗнчен хӑвалама тытӑнчӗ вӑл. Лешӗ уйрӑласшӑн марччӗ унран, анчах Петӗр шӳт туманнине курса, парӑнмах тиврӗ унӑн.

— Ну, чао, джентльмен! Ах, питӗ шел...— терӗ Малани.

— Чавтарӑп эп сана... Мадмуазель...— тавӑрчӗ вара Петӗрӗ, ним тӑвайман енне.

Уйрӑлчӗҫ ҫапла пӗр сӑмах тупаймасӑр.

...Ялта унта та кунта шавлӑ юрӑсем илтӗнме тытӑнчӗҫ.

Клуб умне Регина агроном килсе тухрĕ те хăйпе хăй калаçма пуçларĕ.

«Ĕçеççĕ,— терĕ вăл, ассăн сывласа. — Ял параппан пек янрать. Ĕçеççĕ. Савăнăç. Туй çитнĕ тейĕн. Хăçан килсе çитет-ши Йăкăнат? Вăл çук та — вăхăт чарăнчĕ кутемĕн. Чее Иван Иванч, Йăкăната тĕп хулана ăсатрĕ те ĕçпе, кĕтсе çеç тăнă пек çак вăхăта, пуху ирттерчĕ хăй ушкăнĕпе. Эпир те çав — тăмарăмăр çине. Кăшт çивĕчрех, хăюллăрах пулсассăн, пӳлеттĕмĕр Иван Иванч çулне. Мĕн калĕ Йăкăнат килсен пире?»

Çак вăхăтра çывăхра лĕр арçын кăххăмлатса илчĕ.

«Ăхă, кунта, ав, пĕр этем çӳрет,— сехĕрленсе ӳкрĕ Регина. — Ах, пулас марччĕ манăн ун тĕлне. Эп пытанам-ха çав тĕмсем хыçне». Вара йывăç тĕми хыçне пытанчĕ.

Клуб заведующийĕ Микуль килсе тăчĕ кунта. Хĕрĕнкĕ хăй. Клуба кĕрсе кайрĕ те çатăр-патăр кĕвĕ тапратса ячĕ вăл, каллех урама сиксе тухрĕ, юрла-юрла ташша ячĕ:

Литр çурă ĕçетпĕр,
Метр çурă сикетпĕр.
Ĕç, ĕç, ĕç тесе,
Ĕшеленме пĕлместпĕр,
Кун сиктерсе ĕçлетпĕр,
Пурпĕр укçа илетпĕр.
Хальччен çурăма авман,
Хальччен пилĕке авман.
Пуçлăх пирĕн пит аван,
Çав тăмсай Иван Иванч.

Юлашки икĕ йĕркине питĕ меллĕ шутласа кăларнăшăн пушшех савăнса кайрĕ пулмалла Микуль, ăна вăл темиçе хут та門 каларĕ вара. Анчах çак вăхăтра — аça çаптăрах!— Иван Иванчпа Савали килчĕç кĕчĕç. Шак! хытса тăчĕ Микуль тĕлĕннипе. Анчах çак тапхăр пĕр вăхăта кăна пычĕ унăн. Ара, пуçĕ ĕçлемест-и Микулĕн — тавçăрчĕ йăпăша мĕнле тӳрлетмеллине.

— Пуçлăх пирĕн пит аван,
Ылтăн çын Иван Иванч,—

тесе хучĕ вара васкасах. Унтан çапла ыйтрĕ:

— Вăт, куртăр-и, Иван Иванч, хам шутласа кăлартăм. Мĕнле пек, э?

— Ну, пултаран та вара, Микуль, ну пултаран,— мухтарĕ ăна председатель, анчах çавăнтах тӳрккес ыйту пачĕ: — Малтан мĕнле юрларăн-ха?

— Кхăм, кхăм,—такăнчĕ Микуль. — Вăт, манса кайрăм. Пуç йĕркеллех ĕçлемест-ха ман паян, Иван Иванч. Эпĕ... мĕнччĕ-ха, сирĕн уявăра палăртса, кăштах... мĕнччĕ... и-и, вара çав... Хăвăрах ăнланатăр...

— Малтан юрланине урăх ан юрла,— ырă канаш пачĕ ăна Иван Иванч. — Кайранхине юрла, çав лайăххах, мĕнлеччĕ-ха?

— Пуçлăх пирĕн пит аван,
Ылтăн çын Иван Иванч,—

тӳрех персе ячĕ Микуль.

— Илтетĕн-и, янрать,— терĕ Иван Иванч Савалине, унтан калех Микуль еннелле çаврăнчĕ. — Поэт эс,— терĕ вăл.— Ху та ылтăн пуç. Шел, сăмакун нумай кӳпетĕн. Эс çыр, çыр çакăн пек такмаксем. Ытларах çыр. Халăх умĕнче юрла вĕсене.

— И-и, Иван Иванч,— терĕ вара Микуль. — Эп çырăттăм та... Мĕн çав... Шалу пĕчĕк ман.

— Кхăм,— терĕ каллех Иван Иванч. — Эс çыр, çыр. Стена хаçатĕнче пичетлĕпĕр. Укçине вара.. шутласа пăхсан, тен, тӳлĕпĕр те.

— О, ырă çыннăм, Иван Иванч!— савăнăçне пытараймарĕ вара Микуль. — Сирĕн çинчен тата тапаланса...— пардон, каçарăр, урăх рифма çине лекрĕм — сирĕн çинчен тата тапаланса... хăм! аталанса — аталанса! — пыракан колхоз çинчен эпĕ кунне вăтăр такмак та çырма хатĕр.

— Пултарать ку, пултарать, Иван Иванч!— мухтарĕ Микуле Савали те. — Сыхлас пулать ăна пирĕн. Таçта района с тата, тур çырлахах, облаçа илсе ан кайччăр ăна.

— Эп облаçра та Иван Иванч çинченех такмак çырнă пулăттăм,— терĕ Микуль сăпайлăн.

— Пĕр такмакшăн пĕр тенкĕ тӳлĕпĕр сана,—кăмăлĕ çемçелнипе шывланнă куçне шăлса илчĕ Иван Иванч.

— О-о, ырă çыннăм, Иван Иванч,— çунат хушăннă пек кăшкăрса ячĕ вара Микуль. — Мĕнпе тав тăвăп-ши эпĕ сана? Кунне эпĕ хĕрĕх икĕ такмак çырăп. Чим-ха, чимха...— пуçне чаплă шухăш пырса кĕнĕрен кĕсйинчен хутпа кăранташ туртса кăларчĕ те вăл, çамкине пĕре-пĕре, тем шутлама пикенчĕ.

Иван Иванч Савали патне мăнаçлăн пырса тăчĕ те ăна кăчăк туртрĕ.

— Ну, кайрăмăр, тăванăм Савали,— терĕ вăл.

Анчах Микулён ыйтмалли татах тупăнчĕ.

— О, ырă çыннăм, Иван Иванч, тепĕр пĕ-ĕ-ĕчĕк ыйту манса юлнă-çке,— ыйтăвĕ чăнах та пысăк мар пулнине палăртса каларĕ вăл. — Эсир мана тепĕр ултă уйăхран... «Жигуль» илме пулăшмăр-ши?

— Хăм,— терĕ Иван Иванч, сассине мăнаçлатса.— Пурте манран, кăштах кăна санраҥ хăвăнтан килет, Микуль.

— Тавах, ырă çыннăм, Иван Иванч,— тав турĕ ăна Микуль. — Çĕр çул пурăн! Нихăçан та мухмăр-сухмăр ан пултар сан.

— Апчхи!— сунасласа илчĕ Иван Иванч, çапах хăйне тĕреклĕ çын пек кăтартса, Савалие çавăтрĕ те сумлăн тухса кайрĕ.

Ача пек хĕпĕртерĕ Микуль. Савăнăçне ниçта чикеймесĕр шăхăрчĕ, амăшай пăру пек сиккелерĕ. Шăп çак вăхăтра асăрхарĕ вăл тĕмсем хушшинче ларакан Регинăна, ун патне чĕрне вĕççĕн чупса пычĕ те ун куçĕсене аллипе хупларĕ.

— А-уу! Хветуç! Мĕн туса ларатăн эс кунта?—терĕ вăл палламасăр. — Тĕм хушшинче мана кĕтетĕн пуль? Хăлху сан витĕр пулчĕ-и тата? Эс илтрĕн-и — кĕçех пулать «Жигуль».

Хĕре ачашшăн чуптуса илесшĕнччĕ Микуль, анчах хĕрĕ аллине вăйлăн сулса ячĕ те, Микуль хыçалалла чикмекленсех кайрĕ.

— Эс мĕн, Хветуç?— ăнланаймарĕ Микуль. Анчах хĕр çине чăрр! пăхрĕ те Регинăна палласа илчĕ.

— Ой-ой!— терĕ вара. — Тур каçарах!

— «Жигуль» эппин?— йĕплесе ыйтрĕ Регина.

— «Жигуль», ара,— таврăнчĕ такмакçă.

— «Жигуль» апла?— тăрăхларĕ хĕр-агроном.

— «Жигуль» çав, «Жигуль»,— çирĕплетрĕ Микуль. — Тăвата кустăрма, тăвата алăк, руль. Тăвата ларкăч та хитре кабина. Сулахайра Микуль те, сылтăмра—Регина. Малта вара — тап-такăр пурнăç çулĕ. Эх, пурнăçĕ пылак та тутлă пулĕ! Качча пыратăн-и? Атя ял Советне. Нихçан та пĕлмĕн ӳкĕнӳ мĕнне.

— Ах, вăхăт çук, Микульăм,— ассăн сывларĕ Регина.

— Питĕ шел,— таврăнчĕ такмакçă.

— Ăнлантăм-ха, пит хулăн сан кушел,— мухтарĕ ăна хĕр-агроном.

— Сахал пулмасть. Шăпах «Жигуль» илмелĕх,—сăмсине каçăртрĕ Микуль. — Вăт, шухăшла пуласлăху çинчен.

— Сăмах та çук, хавăслă та илемлĕ шăпа мана кĕтсе

тăрать иккен. Анчах каçар, тăванăм, çав «Жигуль» сан аллуна лексйĕмĕ вăл, Микуль,— пат! татса хучĕ Регина.

— Мĕн-ма тата?— ăнланаймарĕ Микуль.

— Мĕн-ма тесессĕн илтрĕм эп йăлтах,— ним пулман пек калаçрĕ Регина. — Сана, Микуль, тыттарчĕ вăл хытах. Колхоз ăçтан тупайтăр-ха укçа?

— Эс мĕн пĕлен?— тарăхса кайрĕ такмакçă. — Иван Иванч хуçа!

— Лекмест сана «Жигуль», Микуль, лекмест!— терĕ Регина.

— Эп Микуль мар, «Жигуль»,— пач арпашса кайрĕ такмакçă. — Микуль, «Жигуль»... Микуль... Эп камччĕ-ха, эс астăватăн пуль?

— «Жигульсĕр» тăрса юлнă çын — Микуль,—пĕр икĕленмесĕр каларĕ Регина.

• • •

Ирхине, сарă хĕвел чылай çӳле кармашсан, колхоз правленине пысăк портфель йăтнă Иван Иванч пырса кĕчĕ. Кĕсйинчен çăра уççисен самаях йывăр çыххине кăларчĕ вăл, унтан «Председатель пушă мар» тесе çырнă алăка уçса кĕчĕ. Хĕрлĕ сăранпа çаптарнă хыçлă пукан çине реххетленсе кĕрсе ларчĕ пуçлăх, умĕнчи шăкăрин вырнаçнă телефон аппарачĕсене шĕвĕр пӳрнипе шутласа тухрĕ, çав пӳрнипех магнитофон пускăчне пусрĕ — хура илемлĕ ещĕкрен хаваслă кĕвĕ сăрхăнса тухрĕ. Çак хӳхĕм кĕвĕрен, чӳречерен кĕрекен хĕвел ăшшинчи сар çу пек çемçелсе кайрĕ пулас Иван Иванч екки — хăй те сисмерĕ вăл, кĕвĕ майлă савăк юрă пуçласа ячĕ.

— Эх, мăнтарăн хĕвелĕ
Пĕçертет, ăшăтать.
Эх, çак пуçлăх сĕтелĕ
Кăмăла йăпатать.
Кăмăла йăпатать те, —
Пуçа канлĕх парать те,
Хырăма тăрантать те
Ыра ятлă тăвать.
Эх, мăнтарăн хĕвелĕ
Пĕçертет, ăшăтать...
Эхе-хе, хе-хе-хе-хе...

Çак вăхăтра алăкран шаккарĕç. Иван Иванч портфелĕнчен йăпăр-япăр темле хутсем туртса кăларчĕ те, хăйне шутсăр ĕçлĕ пек кăтартса, пуçне сĕтел çинелле пĕкрĕ.

— Кĕрсемĕр, кам унта?— терĕ вăл, алăкран тепĕр хут шакканă хыççăн.

— Ку эпĕ-ха, хăта,— хăюсăррăн хуравларĕ шăппăн кĕрсе тăнă счетовод.

— Хăта, хăта...— тавăрчĕ пуçлăх. — Кутна пĕрре тăрăнтăрах пăта.

— Пăти пăта-ха. Памĕç-ши суда?—темме-çке канăçсăрланчĕ счетовод.

— Кама — суда?— ыйтрĕ нимĕн те ăнланайман Иван Иванч.

— Сана, ара, суда,— терĕ счетовод, чăрсăрланса. — Ак, кур-ха эсĕ, сводкăра кунта ĕнертенпе пĕр процент та ӳсĕм çук. Ĕçсем çаплах пырсан, эпир — каюк. Кĕç çумăрсем пулаççĕ, тет, прогноз.

Çук, счетоводăн сăмахĕсене ĕненесси килмерĕ пуçлăхăн. Вăл чӳрече патне пырса тăчĕ, тӳпенелле тинкерчĕ. Унтан вара татăклăн çапла каласа хучĕ:

— «Пулаççĕ» парăп эп сана, прохвост! Але, але, але! Эй, канцеляри!— терĕ вăл, телефон кĕпчекне ярса тытса.

— Çук телефон унта. Монтер лартса памарĕ,— терĕ счетовод.

— Епле памарĕ, тет, вăл? Ак хайхи...— ăнланаймарĕ пуçлăх.

— Илле пророкăн хытнă, тет, хăлхи,— тавăрчĕ счетовод.

— Эппин, йӳтенĕ вăл,— пĕр иккĕленмесĕр каларĕ Иван Иванч.

— Йӳтенĕ. Сан пекех,— лăпкăн хуравларĕ счетовод.

— Э, çук, хăта, илтетĕп йĕркеллех,— килĕшмерĕ унпа пуçлăх. Хăй каллех телефон ункине çавăрма тытăнчĕ:

— Але, але!— терĕ вăл. — Завод е институт! Завод? Ара, сире миçемĕш хут килме ыйтатăп пирĕн колхоза! Енчен те çĕрулми хиртех юлсан, ун чух вара астăвăр, утвит тытатăр хăвăр! Але! Ку институт-и? Институт! Сана çĕр çăттăрахчĕ пĕрех хут! Хăмла татман! Процент ӳсмест, процент! Халех ярса парсамăр çĕр студент! Хăçан? Хăçан çитеççĕ тетĕр çав эсир? Юрать, юрать, кĕтетпĕр ыран ир...

Хаш! сывласа ячĕ вара Иван Иванч.

— Вăт куртăн-и?— терĕ вăл счетовода. — Ак халĕ шитă-крытă. Хăюллăн «хĕрĕх виççĕ» тесе çыр та пĕр тăхтамасăр района пĕлтер. Кунта ахаль лармаççĕ те. Вĕçтер!

Тухса кайрĕ вара счетовод, пуçне пăркаласа.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, алăкран каллех шаккарĕç.

— Кĕрсемĕр, кам унта?— ыйтрĕ Иван Иванч питĕ ĕçлĕн.

Пӳлӗме шлепкеллӗ, лутрарах шукӑль ҫын кӗрсе тӑчӗ. Пӗр аллине блокнот, теприне магнитофон хӗстернӗ хӑй.

— Корреспондент?— тӗлӗнчӗ пуҫлӑх

— О, ҫук, ҫук, ҫук!— пуҫне пӑркаларӗ хӑна.

— Мӗнле интеллигент!— тӗлӗнмесӗр чӑтаймарӗ Иван Иванч.

— Мӗнле ӑнлантарас,— терӗ хӑна. — Тӗпчевҫӗ, социолог. Аваллӑха уҫса пӑхасшӑн алӑк. Тата кӑштах культура тенине унтан-кунтан хыпаласа пӑхасшӑн.

— Мӗнех, чармастпӑр, хыпала, тархасшӑн,— терӗ Иван Иванч, унтан хӑна ҫине тӗсесерех пӑхрӗ те ҫапла каласа хучӗ:

— Эс кӑшт Наполеон пекрех, ачам.

— Ҫапла теп ҫав,— килӗшрӗ унпа тӗпчевҫӗ.

— Мӗне, кама тӗпчетӗр? Мӗн тума?—пӗлесшӗн пулчӗ Иван Иванч, вара, хӑнана кӑштах хӗрхенчӗ пулас та, ӑна ларма сӗнчӗ: — Иртех, иртех, вырнаҫ ак ман ума. Вӑрах тӑрсассӑн хырӑм час выҫать.

— Эп халь те выҫӑ,— тунмарӗ хӑна.

— Выҫӑ диссертант.. — шухӑшлӑн каларӗ Иван Иванч.

— Мана йӑла-йӗрке шутлаттарать,— терӗ тӗпчевҫӗ, пукан ҫине вырнаҫса. — Ак, калӑпӑр, туйсем.

— Туйсем эппин?— терӗ пуҫлӑх.

— Ҫапла, шӑпах ҫавсем,— тавӑрчӗ хӑна.

— Эппин, туйсем?— тепӗр хут ыйтрӗ Иван Иванч.

— Туйсем, шуйттан илесшӗ,— терӗ тӗпчевҫӗ. — Туй юррисем янранине илтесшӗн.

— Чӑнне калатӑн-и?— хӑй илтнине ӗненмесӗр, тепӗр хут ыйтрӗ пуҫлӑх.

— Чӑнне, ара,— терӗ хӑна. — Наука пӗлме хистет аваллӑх кунҫулне.

— Тӗлӗнмелле!— терӗ те Иван Иванч хӑй те шутсӑр ҫӗкленсе-ҫунатланса кайрӗ. — Апла пулсан, а ну-ка кунта чӗнсе илер-ха хӗрсене,— тӳрех селектор ҫине пусрӗ вӑл.— Дуняша, Маша, кӗрӗр-ха кунта. Да, да, ку эпӗ, кӗрӗр ман пата.

Тӗпчевҫӗ ҫине куҫне хӗстерсе, чеен пӑхрӗ Иван Иванч.

— Кӗҫех кунта,— терӗ вӑл,— кассирпала курьер кӗреҫҫӗ. Вӗсем, ачамккӑ, мӗн кӑна пӗлмеҫҫӗ.

Чӑн та, вӑхӑт нумай та иртмерӗ, пуҫлӑх пӳлӗмне икӗ кинемей кӗрсе тӑчӗҫ.

— Туй юррисем пӗлетӗр-и эсир?— тӳрех ыйтрӗ Иван Иванч.

— Ахӑ, пӗлетпӗр,— терӗҫ пӗр харӑсах Дуняшӑпа Маша.

— Апла пулсассӑн ҫыр,— хушрӗ тӗпчевҫе пуҫлӑх.

Наполеон-тĕпчевçĕ хăйĕн магнитофонне хăпăл-хапăл хатĕрлесе лартрĕ те, Пысăк театр дирижерĕ пек хăлаçланса, команда пачĕ:

— Иккĕ, виççĕ, кайрăмăр, и-и-и!

Тĕлĕнмелле уççăн, хитрен, ирĕклĕн юрласа ячĕç вара Дуняшăпа Маша:

— Чăнкăрт-чăнкăрт чей чашки,
Чей ĕçме те юрать-и?
Пыл çиме те юрать-и?
Ой, кинĕм Нинук пур:
Хурласан та юрать-и,
Мухтасан та юрать-и?—
Ни мухтас мар, хурлас мар,—
Хамăр кинех пулмалла.

Анкартине тухсассăн,
Симĕс сухан пур унта,—
Унтан тутлиййĕ те пур,
Унтан йўççиййĕ те пур.
Пирĕн пата пырсассăн,
Лайăххи те пур унта,
Усалли те пур унта—
Яла тухса ан кала...

Иван Иванч та тўссе тăраймарĕ, качакан пек сассипе çĕкленсе кайсах хĕрсем юрлакан юрра тăсрĕ:

— Пирĕн пата пырсассăн
Лайăххи те пур унта,
Усалли те пур унта —
Яла тухса ан кала...

— Эх-эх!— терĕ вăл, юрă вĕçленсен,— пăчăртанса тухать куççулĕ! Нумай пĕлеттĕм эп туй юррисем... Хам пурнăçра пин туй та тунă пулĕ, ку яхăн темшĕн пĕтрĕç çав туйсем... Тăван чĕлхе те пĕтĕ-ши пĕрре?— ыйтрĕ вăл тĕпчевçĕ-социологран, канăççăрланса.

— Не то, чтоб так сказать,— терĕ лешĕ. — Поэт, кажется, каланă: эпĕр пулнă, пур, пулатпăр. Так что, йĕркеллех.

— Апла, живем!— терĕ пуçлăх, вырăс чĕлхине хăй те кăштах ăнкарнине кăтартасшăн пулса. — Ну, халь ĕнтĕ, хăна, вĕçтер апат çиме. Кала, бесплатно сана унта çитерччĕр.

— Латнă, латнă,— савăнăçне пытараймарĕ Наполеон-тĕпчевçĕ. — Часах каясшăн мар-ха эп ялтан.

— Эй, пурăн, пурăнах апла пулсан, сана тăрантнăшăн кам мĕн калатăр? Наука çеç малтан мала чуптартăр,— чунĕ хăйĕн чăнах та сарлака пулнине палăртма тăрăшрĕ Иван Иванч.

Тĕпчевçĕ, шлепкине хывса, хитре реверанс турĕ те Дуняшăпа Машăна çавăтса тухса кайрĕ.

Телефон шăнкăртатрĕ, пуçлăх тем-тем калаçма тытăнчĕ — ун каллех хĕрӳ ĕç пуçланчĕ.

Фойере вара, «Председатель пушă мар» тесе çырса хунă алăк умĕнче, пĕрин хыççăн тепри ĕçпе килнĕ çынсем йышланчĕç те йышланчĕç. Кунта аллине трактор уççи тытнă Петĕр механизатор та, пуртă йăтнă Носов строитель те, доярка тумĕ тăхăннă Хветуç та, Регина агроном та пур.

Пĕчĕк Наполеон-тĕпчевçĕ сăмсине каçăртса тухса кайнине курсан, шутсăр тĕлĕнчĕç вĕсем.

— Кăркка ку, тĕл пулманччĕ кун пекки,— терĕ Носов.

— Ара, Юркка-иç, Утаман Юркки. Шкула пĕрле çӳреттĕмĕр унпа,— ним пулман пек тавăрчĕ Хветуç.

— Мĕн-ма-ха калаçмарăн тусупа?— тĕлĕнчĕ Петĕр.

— Калаçăн,— хуравларĕ Хветуç. — Кур-ха эс, авторитечĕ кăвапинчен те çӳлерех пулас. Задачăсем манран çырса илетчĕ.

— Эппин, шултра ученăй, мĕн калас,— калаçăва пĕтĕмлетрĕ Носов.

Тарăхнипе унталла-кунталла уткалакан Регина тӳсеймерĕ, хаш! сывларĕ те хăйĕнчен хăй ыйтрĕ:

— Хăçан килет-ши пирĕн Йăкăнат!?

— Пире ку пуçлăх выçă хăварать,— лач! сурчĕ Носов.

— Кĕрхи хĕвел епле хĕртсе пăхать!— карттусне хывса, урайне шаплаттарчĕ Петĕр.

— Иван Иванăч туй юрри юрлать,— шăлне çыртса каларĕ Хветуç.

— Пулмасть кун пек чĕнмесĕр пурăнса!— чышкисене чăмăртарĕ Регина агроном.

— Çапла, çитет, туссем, çын култарса!—тарăху вĕçнех çитрĕ Носов.

— Пӳлĕмĕнчен перер-и кăларса?— карттусне урайĕнчен илсе, унăн сăмсине татса илчĕ Петĕр механизатор.

— Çук, ун пек мар. Пăхар-ха шутласа,— терĕ Хветуç.

Кĕпĕрленсе, пĕр çĕре пухăнчĕç вĕсем, пăшăлтатрĕç, пĕрне-пĕри пӳле-пӳле тем ăнлантарчĕç, чăл-пар саланчĕç те каллех уткаласа çӳрерĕç. Шутларĕç.

Çак вăхăтра хăй пÿлĕмĕнче ларакан Иван Иванч вара каçса кайсах телефонпа калаçрĕ.

— Але! Але!— терĕ вăл. — Илья Ильич! Ĕçсем мĕнле? Ман хамăн-и? Ман хамăн — йĕркеллех. Паян тĕпчевçĕ килчĕ-ха. Тĕпчет. Туй юррисем çыра-çыра илет... Хирти ĕçсем? Хирте те чиперех. Процент? Процентчĕ иртрĕ хĕрĕхрен. Кĕçех шефсем килеççĕ, студентсем... Кунта? Ан кил. Ытла начар çулсем. Паян ан кил-ха тетĕп. Ĕç пĕтсен... Çĕрулмине йăлтах пухса кĕртсен, çула кăшт юсăпăр...

Телефон кĕпчекне хучĕ те ахăлтатсах кулса ячĕ вара Иван Иванч.

— Хе-хе-хе! Вăл тракторпа та çитеймест кунта. Юратьха çулсене юсаттармарăм. Атту пулсан...

Алăкран шаккани илтĕнчĕ.

— Кĕрсемĕр. Кам унта?— пуçне çĕклерĕ пуçлăх, унтан çапла каласа хучĕ. — Хĕрÿллĕ кун паян. Нумай хашкарăм.

Пÿлĕме çăра мăйăхлă ырхан çын кĕрсе тăчĕ. Аллинче унăн — мольберт ещĕкĕ.

— Каллех тĕпчевçĕ-и?— куçне чакăртса пăрахрĕ Иван Иванч.

— О, çуккă, çуккă,— хирĕçлерĕ ырханни,— искусствоведени — кичем наука. —Художник эп,— терĕ килнĕ çын, мăйăхне шăлкаласа. — Ман ятăм — Сенивер.

— Хăрушă,— мăкăртатрĕ Иван Иванч.

— Мĕн?— ăнланаймарĕ ырханни.

— Яту ытла тискер,— хăй шухăшне пытармарĕ пуçлăх. — Аçу-аннÿ ят хунă-и çапла?

— Ята ан тĕкĕнĕр, ман ятăм — мертвă!— терĕ художник. — Искусство яланах ыйтать вăл жертвă. Ваççукчĕ эп, халь Сенивер, тăванăм.

— Хитре ята та хĕрхенсе тăмарăн?— тĕлĕнчĕ пуçлăх.

— Тăмарăм,— терĕ мăйăхли, унтан, çамкине пĕрсе хурса, çапла каларĕ: — Атя-ха, калаçар ĕç-пуç çинчен. Пĕлетни кам Винсент Ван Гог, Гоген?

— Илтмен, ачам, илтмен,— пуçне пăркаларĕ Иван Иванч. — Аçтан пĕлем? Эс ху тата пĕлетни Микуле?

— Микуль?— каллех çамкине пĕркелентерчĕ ырханни.— Мигель? Мигель де Сервантес?

— Микуль теп, йĕкел мар,— ахăлтатсах кулса ячĕ пуçлăх.

— Ана пĕлместĕп,— тунмарĕ художник.

— Çапла,— терĕ вара Иван Иванч кăмăллăн. — Сан хăвăн шайкка пур, кунта — ман хамăн. Мĕнле-ха унсăр? Унсăр пурăнаймăн.

— Винсент Ван Гог, Сезанн та Поль Гоген...—темĕн каласшăн пулчĕ художник, анчах ăна тӳрех Иван Иванч пӳлсе хучĕ.

— Юлташусем хранцуз-им?— ыйтрĕ вăл.

— Винсент Ван Гог, Сезанн та Поль Гоген...—тепĕр хут каларĕ ырханни.

— Хранцуз-им тетĕп-çке юлташусем?— тарăхсах кайрĕ пуçлăх.

— Мĕнле француз?— çĕткеленчĕ художник та. — Художниксем вĕсем!

— Эрех ĕçеççĕ-и?— пĕлесшĕн пулчĕ Иван Иванч.

— Ах, ах, ӳкетĕп!— чăн та тайăлсах кайрĕ мăйăхли.

— Куратăп-ха час ӳкессе, сисетĕп,— терĕ пуçлăх лăпкăн. — Ытла ырхан. Эрне çимен пулас. Сана та, тен, столовăя ярас?

— Ван Гог, Сезанн, Гоген — художниксем вĕсем, тăванăм, вилĕмсĕр çынсем,— çапах та хăй калас сăмахне каласах пĕтерме шутларĕ ырханни.

— Апла пулсан ĕçеççĕ те çиеççĕ. Эс мĕн тарăхтарса тăран мана,— тулхăрчĕ Иван Иванч.

— Картинисем, картинисем вилмеççĕ. Хăйсем çĕрсе çĕр пулнă тахçанах,— ăнлантарчĕ художник. — Шăпах вĕсен шкулне эп хисеплетĕп, вĕсен стильне алла илесчĕ тетĕп...

— Апла пулсан, эс шкул та пĕтермен?— каллех тĕлĕнсе кайрĕ пуçлăх.

— Ак ман ĕçсем,— ещĕке уçса темиçе картина кăларчĕ те ырханни пуçлăха тăсса пачĕ.

— Аха, епле иккен! Ай, тю-тю-тю!—шăхăрса ячĕ Иван Иванч, куçне йăлтăртаттарса. — Куна эс мунчара пăхса ӳкертĕн-и? Эс кур-ха — çап-çара! Питӳ те хĕрелмерĕ-и вара? Майри те вăтанмарĕ-и санран? Ай-юй, ай-юй, эп хам чĕтре пуçларăм! Çакна курсан, мĕн калĕччĕ ман арăм?!

— Шутлатăр примитивно. Ку — илем,— татса хучĕ художник.

— Илем, илем,— килĕшнĕ пек пулчĕ пуçлăх. — Хама епле алла илем?

— Кĕскен, çапла,— тӳррĕн каларĕ мăйăхли. — Эп сирĕн колхозра картинăсем тăвасшăн, портретсем. Историне кĕртесшĕн эп сире. Ан тив, курса ăмсанччăрах çынсем.

— Ак çакăн пек портрет-и?— шĕвĕр пӳрнипе хут листи çине кăтартрĕ Иван Иванч. — Ни-ни-ни! Тар çарамас. Эс мĕн, куласшăн-и?

— Çук,— терĕ художник. — Эп кăвапа таран анчах,— хăй вара тӳрех ĕçе пикенчĕ. — Ак лар-ха кунтарах, кăшт çуттарах. Çапла, çапла. Шăп-шăпăрт, ан хускал.

— Итле-ха эс, мĕн хак ку?— ыйтрĕ шалт аптраса ӳкнĕ пуçлăх.

— Пит сахал,— хуравларĕ ырханкки. — Кайран калаçăпăр укçа çинчен.

— Юрать эппин,— парăнчĕ Иван Иванч,— ӳкер, Пауль Гоген. Анчах та кăвапа таран кăна. Аяларах ансассăн эп сана!..— юнаса илчĕ вăл леш шĕвĕр пӳрнипе мăнаçлăн.

— Ăнлантăм. Та-ак,— мăкăртатрĕ художник, мольберт умĕнче пуçне пăркаласа. — Арбуз пек чăмăр пуç, чее те намăса пĕлмен ик куç, лутра çамка, лутра пулин те пур кăшт ăспуç тени.

— Ара, пулмасăр!— кăшкăрсах ячĕ пуçлăх. — Шухăш куллен ыраттарать ман пуçăма.

— Ахă,— шута илчĕ ырханни. — Ун пуçĕ ыратать. А мĕн тума?

— Колхозшăн, ĕçшĕн ыратать, ара,— суйрĕ Иван Иванч.

— Çакна та эп кăтартăп портретра,— терĕ художник.

— Тата... ачасене пит юрататăп,— хушса хучĕ председатель.

— Мĕн терĕн эсĕ?— ăнланаймарĕ мăйăхли. — Кам ачисене?

— Килтисене,— ăнлантарчĕ пуçлăх. — Юта питех киймастăп. Тата... Ыхра çимен эп ĕмĕрне,—çак япала та художника кирлĕ пулĕ тесе шухăшларĕ вăл.

Анчах художник çакăнпа ниепле те килĕшесшĕн пулмарĕ.

— Кăна эс ахалех вара — ыхра пит кирлĕ компонент вăл хырăмра,— терĕ вăл.

— Ахă,— тавăрчĕ ăна Иван Иванч. — Вуник пĕрмеллĕ пыршăра ларать пулсассăн язва!

— Япăхрах сан ĕçӳсем,— хĕрхенчĕ ăна ырханни. — Эппин, эрех-сăра сыпмастăн эс?

— Çутти пулсан — пырать,— терĕ пуçлăх, анчах пĕр вĕççĕр мар. Апат анмалăх е, каç пулсассăн, çывăрса каймалăх, хăна килсен, автан пуссан, е ĕç ăнсан, е ăнмасан, е арăм ятласан — пĕрер черкке пăсмасть вăл арçынна. Мĕнпе-тĕр пусарас пулать чуна. Мĕскер усси пĕр вĕççĕр ĕçнинчен?

— Вăй-вай!— тĕлĕнчĕ унран художник. — Эс шутсăр тĕрĕс çын иккен!— унтан ӳкерчĕк çине пуçне пăркала-пăркала пăхса илчĕ те кăшкăрсах ячĕ: — Ак пулчĕ! Пулчĕ! Пулчĕ, апăрша!

Кăсăкланса кайнă Иван Иванч тӳрех хут çине пăхрĕ. Çук çав, çуталса каяймарĕ унăн сăнĕ.

— Халтурщик эс,— кăмăлссăррăн персе ячĕ вăл. — Вуник пĕрмеллĕ ман пырша мĕн-ма эс туса хутăн чăннипех?

— Эс ун çинчен шутлатăн кунĕпех,— ним пулман пек каларĕ мăйăхли.

— Тасат халех!— хирĕçлерĕ пуçлăх. — Мĕн-ма тата хĕвел ман пуç йĕри-тавра?

— Мĕн-ма, мĕн-ма,— тавăрчĕ художник. — Каларăн-çке, ара,— çветтуй çын эсĕ — çутă сапалатăн çак аскăн, вараланчăк тĕнчене.

— Эхе,— килĕшрĕ вара Иван Иванч. — Апла пулсассăн пултаратăн. Ан тив, çынсем те курччăр тĕрĕсне. Ак çак тата — ик куçăм вырăнне лартса эс хунă икĕ эрешмен? Кулатăн-и манран, Пауль Гоген?

— Пыл хурчĕ ку!— ăнлантарчĕ ырханни. — Сан çивĕч куçпуçна пыл хурчĕпе танлаштарам-ха терĕм.

— Каçар апла,— кăххăмлатса илчĕ пуçлăх. — Эп санăн шухăшна нимле те тĕрĕс хак пама пĕлмерĕм.

— Ну, хакĕ-мĕнĕ...— терĕ мăйăхли, вара çапла персе ячĕ:— Виççĕр тенкĕ теп.

— Мĕскер?— шартах сикрĕ Иван Иванч. — Çак виç минутшăн-и? Ну, шеп!

— Искусство, тусăм, жертвăсăр пулмасть,— хăйĕннех печĕ ырханни. — Кунта эп тăвап чаплă галерея. Шутлаха эс — çынсен портречĕсем, чи варринче — шăп та лăп пуçлăх сăнĕ. Историе кĕрсе юлатăн эс. Вилсессĕн те яла эс çутă кўрĕн, леш тĕнчере те канлĕн, лăпкăн çўрĕн.

Çак сăмахсене илтсен çемçелсе кайрĕ вара председатель чун-чĕри.

— Юрать, ыр çыннăм,— алă сулчĕ вăл. — Аппалан эппин.

— Ал тытрăмăр,— хĕпĕртесе ўкрĕ художник. — Курап: эс чăн-чăн çын.

— Каях апла колхоз столовăйне, — хушрĕ пуçлăх. — Кала, бесплат çитерччĕр апатне.

Алăк патĕнче сĕрлесе тăракан халăх ырханкка художника та тўрех палласа илчĕ иккен.

— Ваççук-çке пулчĕ!— терĕ Носов строитель. —Савалин Ваççукĕ. Палламарăм эсреле. Сухалĕ çукчĕ ун ялта чухне.

— Çав пулчĕ-и?— ыйтрĕ Петĕр механизатор.

— Шăп çавă,— иккĕленмерĕ Носов.

— Мĕскер туса çўрет тата кунта вăл?— кăсăкланчĕ Хветуç. — Студент пуль. Пулăшасшăн пуль пире. Шефсем пирки сўпĕлтетет пуçлăх.

— Кăларăн Ваççука эс уй-хире,— пуçне пăркаларĕ

Носов.— Курмарăн-им, епле вăл выçă куçлă. Укçа çапмашкăн килнĕ хуларан. Чăтать колхоз!

— Чăтать!— çирĕплетрĕ Петĕр.

— Хăçан, хăçан килсе çитет-ши Йăкăнат яла?— хăйĕнчен хăй ыйтрĕ Регина агроном.

— Ларатпăр ĕçсĕр пуçлăха пула,— тарăхрĕ Хветуç.

— Çапла, туссем, çапла,— ĕнсине хыçкаларĕ Носов.

— Çитсе пырать, атьсемĕр, кăнтăрла,— кантăкран курăнакан хĕвел çине кăтартрĕ Петĕр.

— Эп тупрăм шутласа!— сасартăк савăнăçлăн кăшкăрса ячĕ Хветуç. — И-хик! Эп тупрăм! Клуба каяр та таврăнар кунтах. Часрах, часрах! Микуль патне эп чупрăм. Мĕн пуласса ăнланăр ак йăлтах...

Çамрăксем тухса кайсан, каллех Иван Иванчăн кăмăллă, хăйпе хăй йăпанса ларнине кăтартакан уçăмлă сасси илтĕнсе кайрĕ.

— Çапла, Илья Ильич,— терĕ вăл, телефон кĕпчекĕ тытнăскер, — художник пур ялта. Хăй шутсăр маттурскер те хытканскер. Ятне ыйтатăн-и? Ун ячĕ — Сенивер. Эп хам та сан пекех шутлап — тискер. Кунта вăл галерея тусанах, тÿрех ăна яратăп района. Ан тив, историе сире те кĕрттĕр. Хирти ĕçсем? Аçтан-ха вăхăт çиттĕр хире тухма? Пашкапашка паян йăлт хăшкăлтăм. Шефсем? Килмен-ха. Çук. Курман... Юрать, Илья Ильич. Сăмах паратăп... Тăватăп... Тултаратăп... Пурнăçлатăп!..

Телефон кĕпчекне хăй вырăнне хучĕ те хаш! сывласа ячĕ пуçлăх.

— Вăт кун паян!— терĕ хăй. — Мунчари пек вĕри.

Çав вăхăтра каллех алăкран шаккарĕç.

— Пĕри каять кăна, килет тепри,— мăкăртатрĕ Иван Иванч. Çапах кĕрес текене кĕме чармарĕ.

— Юрать, юрать. Кĕрсемĕр. Кам тата хĕрÿ ĕçрен тарса çÿрет унта?— ыйтрĕ вăл пуçне çĕклемесĕр.

Аллине магнитофон йăтнă Малани килсе кĕчĕ. Ашшĕпе хĕрĕ хушшинче çакăн пек калаçу пулса иртрĕ вара. Остап Вишня çырса кăтартнă пекех пулчĕ çак калаçу.

— Аттеçĕм,— терĕ Малани, Иван Иванча ыталаса илсе. — Аттеçĕм, апат çиме те манса кайрăн та, эпĕ сана кăнтăрла çитнине хамах килсе систерес терĕм. Апат вăхăчĕ çитрĕ, аттеçĕм, ĕçне пăрах та киле каяр.

— Лăплан, хĕрĕм, лăплан,— терĕ Иван Иванч, тÿрех шывланса кайнă куçне çанни вĕçĕпе шăлса илсе. — Эп хам та хĕрхенетĕп хама хам. Анчах та мĕн тăвас-ха ман—кăнтăрла та ĕç, каçхине те ĕç. Çулла та, кĕркунне те, хĕлле те, çуркунне те ĕç. Ĕç пĕтсен те ĕç. Хăçантанпа чуна уçса калаç-

са курман санпала, хĕрĕм. Ах, ӳсетĕн-ҫке, ӳсетĕн, пепкеҫĕм. Ҫала-ха мана, мĕнле вĕренетĕн, путенеҫĕм? Миҫемĕш класа куҫрăн-ха ĕнтĕ?

— Эс мĕн, атте!— хура куҫлăхне хывса, куҫне чарса пăрахрĕ Малани. — Эп ĕнтĕ вăтам шкултан вĕренсе тухни кĕҫех икĕ ҫул ҫитет. Астăватăн-и, эсĕ директорпа калаҫса татăлтăн та, мана медаль памалла турĕҫ. Манса та кайрăн-и вара?

— Астунă пек, астунă пек,— терĕ, ним пулман пек, ашшĕ.— Мĕнле медальне ҫеҫ манса кайнă... Ҫапла, ҫапла. Эх, иртет пурнăҫ... Ҫăнтăрла та ĕҫ, каҫхине те ĕҫ. Ҫулла та, кĕркунне те ĕҫ. Ĕҫ пĕтсен те ĕҫ. Ара, миҫе ҫула ҫитрĕн-ха, хĕрĕм?

— Эп ĕнтĕ, аттеҫĕм, ҫирĕмре пыратăп,— ашшĕн ҫамкине тытса пăхрĕ Малани.

— Ан тĕлĕнтер!— ҫăварне карса пăрахрĕ Иван Иванч.— Эх, вăхăчĕ ирте-ет. Ĕҫлетĕн пуль апла? Е вĕренетĕн-и?

— Ҫалаҫмăпăр, атте, кичем ыйту,—тутине усрĕ Малани.

— Ну, Эдик мĕнлерех тата унта?— ыйтрĕ ашшĕ. —Ача садне ҫӳрет пуль-ха ҫаплах?

— Шӳтлетĕн эс, атте,— терĕ Малани. — Эдик улттăмĕш класра ĕнтĕ. Ҫăҫал та иккĕмĕш ҫула юлчĕ. Хăйне тыткалама пĕлмест вăл. Сан унпала калаҫса пăхмаллах, аттеҫĕм. Лайăх ача мар пирĕн Эдик.

— Мĕнле иккĕмĕш ҫула тата?— ферма вăкăрĕ пек мĕкĕрсе ячĕ Иван Иванч. — Мĕнле вăл тыткалама пĕлмест!? Ман ача — иккĕмĕш ҫула? Ҫиле пырсан, тирне сĕветĕп-ха!

— Ҫунтах вăл,— терĕ Малани. — Алăк патĕнчех тăрать.

— А ну-ка чĕн!— терĕ воспитани пама хатĕрленнĕ ашшĕ.

Малани чĕнчĕ. Фирмăллă джинс тăхăннă Эдик ҫăварне пирус хыпса кĕчĕ.

— Эс Эдик-и?— тӳрех тавҫăраймарĕ ашшĕ. —Эс манăн Эдик-и? Эй, вăхăчĕ,— пăшăлтатрĕ вара хăй ҫеҫ илтмелле. —Ҫăнтăрла та ĕҫ, каҫхине те ĕҫ. Ҫулла та, кĕркунне те, хĕлле те, ҫуркунне те ĕҫ. Ĕҫ пĕтсен те ĕҫ. Эй, пурнăҫĕ!..

— Сан тĕслĕ мар-им?— куҫ айĕн пăхса илчĕ ашшĕ ҫине Эдик.

— Парах теп пирусна!—тытамак тытнă пек чĕтренсе илчĕ Иван Иванч. —Тăван аҫупа мĕнле калаҫатăн?! Хĕнесе вĕлерĕп!

— Ха-ха!— шăл йĕрчĕ ывăлĕ. Ҫакăн пек хăр-хар кăшкăриччен санăн мана мотоциклет илсе парасчĕ. «Хĕнесе вĕлерĕп!» тесе ҫухăрма намăс пулмалла сана. Интеллигент тата хăй. Ҫивелнĕ меслет ку, папахен. Пурнăҫран тăрса юлнă эсĕ...

Çук, ниепле те кĕтменччĕ ашшĕ хăйĕн ывăлĕ ăна çакăн пек «çупкă» парасса. Чăнах та кивелнĕ-ши вара воспитанин унчченхи меслечĕсем? Чăнах та пурнăçран тăрса юлчĕ-ши Иван Иванч! Çапах та çак шĕвĕр умĕнче хăйне ăнакăна пĕлекен ашшĕ пекех тытма тăрăшрĕ, унтан та ытларах çак пĕчĕк çерçие тĕлĕнтерсе пăрахма шут тытрĕ.

— Пĕлетĕн-и эс, йĕпе сăмса, Пауль Гоген камне?— паçăрхи ырхан художник сăмахне аса илсе персе ячĕ вăл.

— Поль Гоген? Импрессионист,— ним пулман пек таврчĕ ывăлĕ.

— Çĕпре ĕçни, çĕпре ĕçни... Мĕн ĕçнине кам пĕлет? Художник пулнă вăл! То-то! Хранцуз! Сезанн та... Иван... Кук та — хранзузсем! Ха-ха-ха, çавна та пĕлместĕн-и?!

— Сезанн — француз, Ван Гог вара — голландец, папахен,— килĕшмерĕ ывăлĕ.

— Эс тата ăçтан пĕлен?— шалт тĕлĕнсе кайрĕ Иван Иванч.

— Кунĕпех телевизор курмастăп-им?— ыйтăва ыйтупах хуравларĕ Эдик.

— Çавăнпа иккĕмĕш çула юлтăн-и-ха?— йĕплесе илчĕ ашшĕ, унтан урайне лач сурчĕ те:— Ханттар!—тесе хучĕ!

— Кая юлнă меслет, папахен,— пирусне ури кĕли çине пусса сÿнтерчĕ ывăлĕ.

Çак сăмахсемпе вăл ашшĕне иккĕмĕш хут аптратса ÿкерчĕ.

«Тен, чăнах кая юлтăм?— иккĕленсе шухăшларĕ Иван Иванч. Кур-ха эс, çак йĕпе сăмса та тαçти ют çĕршыври художниксене пĕлет. Малашне мĕн курăпăр ку çамрăксемпе? Пуласлăх вĕсенче вĕт-ха...»

Çакăн пек шухăшлани пуçлăх ашшĕн кăмăл-туйăмне пач урăхлатса ячĕ. «Темле-темле хушаматсем пĕлет те, тен, ăслă-тăнлă этемех пулать ку шĕпĕнрен?»— терĕ вăл хăй ăшĕнче. Çапла каларĕ те ывăлĕ патне пĕр-икĕ утăм турĕ, ун янаххине ачашласа илчĕ, куçĕнчен пăхрĕ, вара тÿрех сар çу пек çемçелсе кайрĕ.

— Ывăлăм, ывăлăм,— пăшăлтатрĕ хăй шутсăр туйăмлăн. — Ÿсетĕн-çке, ÿсетĕн, тем те пĕлекен пултăн. Никама та мар, хамах хывнă эсĕ. Тĕсÿ те манăнни пекех, авă, Эх, асăрхаман... Пурнăç çапла-çке — кăнтăрла та ĕç, çĕрле те ĕç, ĕç пĕтсен те ĕç... Мĕн терĕн-ха эс паçăр? Э, мотоциклет терĕн-иç. Туянах, ывăлăм, туянах, асту тулькăш, пуçна ан çухатах, çулсен латти çук пирĕн таврара...

Пĕр шутламасăр-тумасăр кăларчĕ те тыттарчĕ вара пĕр тĕркем укçа.

— Пурăн, ывăлăм, ырă кур, эпир чăтнине тÿсмелле ан

пултăрах,— терĕ юлашкинчен, асаплă сăн-питне ывăлĕнчен пытарма тăрăшса.

— Адью, папахен!— ашшĕ умĕнче урайне çити пĕкĕрĕлсе сывпуллашрĕ те ывăлĕ хўрине çеç кăтартса хăварчĕ.

Тата та тарăнрах шухăшсем пăталаса лартрĕç пулмалла пуçлăха — вăл, çамкине икĕ аллипе те хĕстерсе ларасканскер, Эдик хыççăн тухса кайман Маланине те асăрхамарĕ.

— Лăплан, атте, поп-музыка итле,— терĕ Малани, магнитофон пускăчне пусма хатĕрленсе.

— Мĕскер?!— шартах сикрĕ Иван Иванч. — Колхоз кантурĕнче — пуп музыки?

Анчах хĕрĕ кĕвĕ пуçласа яма ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ. Пыр тĕпĕнчен урса кайса кăшкăракан юрă çеммипе вăл темтепĕрле хуçкаланса, чĕтрене-чĕтрене ташлама пуçларĕ.

— Ой-ой!— пĕрре пуçне, тепре чĕри вырнаçнă тĕле яра-яра тытрĕ Иван Иванч. — Ой-ой, инфаркт килсе ан çаптăрччĕ мана!

— Лăплан, атте, лăплан!— терĕ Малани, хашка-хашка.

— Кай, хĕрĕм, эс те кай,— малтан лăпкăн каларĕ ашшĕ. Кăшт тăрсан, сассине хăпартмах тиврĕ унăн: — Вăрман касма яратăп эп сана! Çулталăк сĕлĕ çинĕ кĕсре пек, ниçта кайма пĕлми тăпăртататăн!

— Мĕскер, атте?— ыйтрĕ Малани, самантлăха ташлама чарăнса.— Мĕскер мăкăртататăн? — Вара чупса пырсах ашшĕн питçăмартинчен чуптуса илчĕ. — Ну, акă иртрĕ те,— терĕ хăй. Унтан каллех тепĕр авăк ташласа илчĕ. Те ĕшенчĕ, те чунне пусарчĕ вăл çак ташăпа — кĕвве чарчĕ те ашшĕпе юнашар пырса ларчĕ, ун куçĕнчен пăхрĕ.

— Атя, татах калаçăпăр санпа... Ну, ан кўрен, ну, ан çиллен, атте... Тахçан авал эс ху та çамрăк пулнă. Кичем. ытла....— терĕ вара.

— Кичем пирки уратăн?— чĕрре кĕчĕ ашшĕ.

— Пĕр çамрăк та юлмарĕ-çке ялта,— тўрре тухма пăхрĕ Малани.

— Мĕнле юлмарĕ?— ăнланаймарĕ пуçлăх. — Носовпа Хветуç, Микуль те Пăкăнат, Регина, Петĕр?..

— Ах, ан култар!—чăхлатрĕ Малани. — Мĕнле туссем вĕсем? Ĕçленисĕр пуçне урăх нимĕн те пĕлмеççĕ...

— Туссем-и, туссем мар-и — çамрăксем,— хăйĕннех печĕ Иван Иванч.

— Атте, саланчĕç манăн каччăсем. Мĕн чухлĕн кайрĕç кўршĕ колхоза,— терĕ хĕрĕ, хаш! сывласа.

— Ма кайрĕç-ха?— пĕлесшĕн пулчĕ пуçлăх.

— Вăт лар çав шутласа,— терĕ те Малани ура çине

тăчĕ, шухăша путса, унталла-кунталла уткаларĕ, ашшĕ илтмелле çапла каларĕ: — Вĕсен унта темле механизаци — машинăсем, автоматсем пур, тет. Дояркисем шур халатпа çӳреççĕ, тет. Сĕт сăваканăн кнопка пусмалла та — хăймаллă сĕт хăй тĕллĕн юхать, тет.

— Тĕлĕнмелле!— те ĕненсе, те ĕненмесĕр кăшкăрса ячĕ Иван Иванч, çапах та хăй çапла хушса хучĕ: — Сармантейĕн сар чăххи сар çăмарта тунă, тет. Вăл та ылтăн пулнă, тет.

— Ку халап мар, атте,— хăй сăмахне малаллах тăсрĕ Малани. — Унти хĕрсем кана-кана ĕçлеççĕ, тет. Мăшăрлансан-тусан, çамрăксене тӳрех хваттер уççи пэраççĕ, тет.

— Ай-юй! Ытла тĕлĕнмелле-çке ку чăнах!— тасти, сичĕ пĕлĕт леш енчи пурнăçа хăй куçĕпе курнă пек персе ячĕ вара Иван Иванч.

— Хăйсем пуян, тет. «Нива», «Жигули» асфальт çулпа кумаççĕ, тет, анчах.

— Ан тĕлĕнтер-ха! Ку чăнах юмах!— тутисене чаплаттарса илчĕ Иван Иванч.

— Ĕç пĕтерсен вара Культура керменне çӳреççĕ, тет, хĕрсем те каччăсем. Унта ялан концерт та дискотека хаваслăн ирттереççĕ, тет, вĕсем.

— Концерчĕ паллă-ха,— шĕвĕр пӳрнипе тăнлавне кăтăртаттарса илчĕ пуçлăх. — Мĕскер вăл дискотека?

— Аçтан пĕлем? Курман эп. Илтнĕ çеç,— тавăрчĕ хĕрĕ. Унтан каллех малалла калаçрĕ: — Садсем кашлаççĕ, тет, вылять, тет, пулă çав кӳршĕ колхозри пĕвесенче. Медаллĕорденлă çӳреççĕ, тет, ман тантăшсем. Ман, акă, ним те çук...

— Тĕлĕнмелле!— терĕ тепĕр хут Иван Иванч, унтан хĕрĕ çине чăрр! пăхрĕ. — Тен, сан,— тăнлавĕ çинех тĕллесе кăтартрĕ вăл,— кунта та çук?

— Сан хăвăн çук!— тарăхса кайса тутине усрĕ Малани. — Каятăп ак унта. Ан тив, сана чăтма çук намăс пултăр. Каятăп акă кӳршĕ колхоза...

Çак сăмахсем хыççăн тӳрех чĕмсĕрленсе ларчĕ Иван Иванч, лăпчăнчĕ, пĕкĕрĕлчĕ.

— Ан кай, тархасшăн, хĕрĕм,— терĕ вăл, чылай вăхăт шухăшласа ларнă хыççăн. — Эс ан хăвар мана пĕччен,— чутах куççулĕ сиксе тухмарĕ мĕскĕнĕн.

— Саратăн-и асфальт?— сĕмсĕрленчĕ Малани.

— Мĕнле сарам?— хăйĕнчен хăй ыйтрĕ ашшĕ.

— Апла каятăп!— татса хучĕ хĕрĕ.

— Тăрăшса пăхам...— теме тиврĕ пуçлăхăн.

— Пулать-и дискотека?— хăюлансах пычĕ хĕрĕ.

— Мĕн шуйттанĕ?— каллех ăнланаймарĕ ашшĕ.
— Пулать-и, тетĕп?— тапăнчĕ хĕрĕ.
— Ну, пулать, пулать...— парăнчĕ ашшĕ.
— Атте!— савăнсах кăшкăрса ячĕ вара Малани. — Эс мана юратсан, килйыша юратсан, унтан тата... çак яла юратсан, тем тума та пултаратăн-çке! О, ырă кăмăллă аттеçĕм!

Ашшĕ кантурĕнчен качака путекки пекех сиккелесе тухса кайрĕ вара Малани.

Пĕччен юлнă Иван Иванч, темшĕн-çке, çине-çинех анаслама пуçларĕ. Маччаналла пăхса, тем аса илчĕ вăл, шухăшларĕ, йăл кула-кула ĕмĕтленчĕ. Каллех çине-çине анасларĕ. Аякра купăс сасси илтĕнсе кайсан кăна пуçлăх кăштах тĕлĕннĕ пек пулчĕ, ним ăнланаймасăр унталла-кунталла пăхкаласа илчĕ. Купăс сасси çывхарса-çывхарса пычĕ те, председатель пӳлĕмне маска тăхăннă çынсем килсе кĕчĕç. Кусем — Микуль (хуткупăсли), Петĕр, Хветуç, Носов тата Регина пулчĕç. Паянхи кунран тĕлĕнме пăрахнă Иван Иванч вĕсем çине ним пулман пек пăхрĕ те каллех анасласа илчĕ. Ыйхă пуснăçемĕн пуссах пырать ăна.

— Иван Иванăч! Карнавал пуçлатпăр!— терĕ Микуль, хуткупăсне тăсса ярса.

Анчах пуçлăх нимĕн те чĕнмерĕ, хупăнакан куçĕсене çеç ал тӳртĕшĕпе сăтăркаласа илчĕ.

Ун патне Хветуç чупса пычĕ, пуçлăха епле те пулин калаçтарма тăрăшрĕ.

— Иван Иванч,— тархасларĕ вăл. — Тĕпчевçĕпе калаçрăн, художникпа калаçрăн аванах. Эпир ку, артистсем! Вăран, Иван Иванч! Эпир те хуларан — хисеп тусам!

— Ахă, мĕскер?— чăнах та вăраннă пек пулса мăкăртатрĕ пуçлăх. Камсем пулатпăр тетĕр?

— Эпир те хуларан-ха. Ар-тист-сем!— терĕç пурте.

— Эсир те выçă-и?— ыйтрĕ пуçлăх.

— Çук, выçă мар-ар,—терĕ Хветуç. — Пире директор лайăх çитерет, малтан тарлаттарса ĕçлеттерет, унтан нумай-нумай укçа тӳлет, хваттер парать, ташлаттарать, юрлаттарать. Пире вăл чăн-чăн атте пек пăхать. Кунта эпир сире концерт парасшăн-ха.

Вара купăсçă Микуль «И-и-и, кайрăмăр!» теме те ĕлкĕреймест, Носов платник хăйĕн юррине юрласа та ярать:

Пирĕн колхоз япăх мар,
Тĕп хуларан çывăх мар.
Кунта килсе ӳкес тесен,
Ура хуçма ним те мар.

Ма тесессĕн çулĕ çук,
Çулне тума укçи çук.

Ун хыççăн Регина агрономăн уçă сасси илтĕнсе каять:

Хĕвел пăхать, ăшăтать.
Хире тухма васкатать.
Хăмла татман, улма пухман —
Агроном çеç кулянать.
Ма тесен ун канăç çук,
Ĕçлеттерме çынни çук.

Регина хыççăн Петĕр тухать:

Пĕр эрне ларать, ав, трактор,
Уй варринче пĕчченех.
Запас пай кĕтсе ларатăп
Кантурта эп эрнипех.
Пирĕн хуçан ерçӳ çук,
Ĕçшĕн çунас кăмăл çук.

Петĕре Хветуç ылмаштарать:

Выльăх валли çук апат,
Фермăра çил шăхăрать,
Пуçлăх çавна пĕртте пĕлмест—
Уйăхра пĕрре пырать.
Ун нихçан та вахăт çук,
Вăхăт çук та намăс çук.

Микуль вара хуткупăса вылянтарать те вылянтарать. Тӳссе тăраймасăр, вăл хăй те юрласа ярать:

Клуб та клуб тееттĕмĕр,
Ташлăпăр тееттĕмĕр,
Клубне туса пĕтерсенех,
Склад пуласса пĕлтĕмĕр.
Председатель çамрăк мар,
Пире ăнланасшăн мар.

Ак çакăн пек хаваслă такмакпа вĕçленчĕ вара «карнавал» текенни. Ăна темиçе сасăпа пурте пĕр харăс юрларĕç:

Чăтрăмăр та тӳсрĕмĕр,
Ĕнтĕ урăх тӳсес çук.

Пирĕн тăван колхоза
Çак пуçлăхран усси çук.
Кăларар та ывăтар,
Кун пек пуçлăх кирлĕ мар!

Пулăшрĕç-ши, пулăшмарĕç те-ши çак такмаксем Иван Иванча, анчах тарăннăн анасласа илчĕ те йăх-йăх-йăх кулма тытăнчĕ.

— Э-э-э,— терĕ вара, кăшт тăрсан. — Палларăм эпĕ сире, тусăмсем, палларăм. Микуль, Регина, Петĕр, Хветуç тата Носов. Анчах, калам сире, ахалех вăрçатăр эсир мана, пĕр ахалех...

— Эпир, Иван Иванч, хамăр колхозра художество пултарулăх кружокĕ уçас тетпĕр-ха,— хăюсăррăн каларĕ Микуль.

— Мĕскершĕн? Кам валли?— кăсăкланчĕ пуçлăх.

— Ял çыннисем валли,— ăнлантарчĕ Хветуç.

— Ара, эс шутлама пĕлетĕн-и?— тӳррĕн ыйтрĕ пуçлăх.

— Шкулта вĕрентнĕччĕ,— терĕ Хветуç.

— Ялта шăп вун арçын та вăтăр виç хĕрарăм, вĕсем те шăлсăр юлнисем кăна. Кирлех-ши вĕсене эсир юрланă юрă?

— Епле-ха юрăсăр пурăнмалла?— ăнланаймарĕ Регина.

— Туянччăр радио е телевизор. Е кĕнеке туянччăр та вулаччăр.

— Ăçта вăл пирĕншĕн йĕркеллĕ кĕнеке?—тарăхса ыйтрĕ Носов платник.

— Çавна та пĕлейместĕн — хулара,— ăнлантарчĕ пуçлăх. — Ак эпĕ илтĕм иртнĕ пухура шăп çичĕ штука. Тăваттăш хĕрлĕ хуплашкаллă, виççĕш сип-симĕс тĕслĕ — кĕрхи уçăм пек. Йăлтăртатса тăрать халь пирĕн кил.

— Вуларăр-и? Кам çырнă? Мĕн çинчен?— пĕлесшĕн пулчĕ Петĕр механизатор.

— Э, шăллăм,— терĕ Иван Иванч. — Мĕнпурне пĕлес тесен, часах кукша çамкаллă пулса ларăн. Ну, юрĕ, кайăр, ман канас пулать. Ахаль те эп паян ĕшентĕм хытă.

Çук, тухса кайма ĕлкĕреймерĕç çамрăксем. Иван Иванч тепре тарăннăн анасласа илчĕ те сĕтел хушшинчех харлаттарса çывăрса кайрĕ.

— Иван Иванч! Иван Иванч!— чупса пычĕ ун патне Микуль. — Мĕн хăтланатăн? Ма çывăрса кайрăн? Вара эс мана ,кашни такмакшăн тенкĕ те пилĕк пус тӳлетĕп терĕн-çке! Вăран-ха, Иван Иванч! Вăран-ха, теп! Эх, пĕтрĕ «Жигуль»!

— Вăл çывăрса кайрĕ!— пăшăрханчĕ Хветуç та. — Эпир

ăна ыйхăран вăратасшăнччĕ, вăл пур тата та хытăрах çывăрса кайрĕ! Мĕн пулчĕ-ха ăна? Тен, чирлесе ӳкрĕ пирĕн Иван Иванч?

— Чăнах та, мĕн пулчĕ-ха пирĕн пуçлăха?— хаш! сывласа ячĕç пурте.

— Мĕн кĕтмелли? Хăвăртрах васкавлă пулăшу чĕнтермелле! Района, пульницана шăнкăравлас!— тӳрех тавçăрса илчĕ Петĕр механизатор.

— Ăçтан çитейччĕр пирĕн колхоза?— терĕ Носов платник,— курман-им эс çулсем мĕнлерехне?

— Çапах та калаçса пăхас, чирлĕ çынпа мĕн тумаллине ыйтса пĕлес!— хăй сăмахĕ çинех тăчĕ Петĕр.

— Эс тĕрĕснех калан,— терĕ те Регина агроном телефон кĕпчекне ярса тытрĕ. —Але! Але! Пульница парăр мана, пульница, васкавлăрах! Але! Але! Кам итлет? Мунча? Мĕнле мунча?

— Тип мунча пуль-çке,— йĕплерĕ Микуль, хăй вара питĕ кăмăллăн ихиклетсе илчĕ.

— Эс ан йĕпле!— хăтăрса тăкрĕ ăна Регина, телефон кĕпчекне аллинчен пăрахмасăр. — Але! Але! Васкавлă пулăшу! Пульница кирлĕ тетĕп! Аха, аран-аран çаклантăм, хăямат... Инкек кунта!.. Инкек-ха тетĕп, Шĕшлĕвăрринче!.. Çывăрса кайрĕ-ха Иван Иванч... Ларнă çĕртех çывăрать!.. Кун пеккине курман эпир... Мĕн тумалла?.. «Ан пăшăрханăр»,— тетĕр-и? Мĕскер? «Кашни уйăхрах тĕрĕслетпĕр»,— тетĕр-и? Мĕскер-мĕскер?.. «Тахçантанпах çывăрать»,— тетĕр-и? Мĕскер?.. «Темиçе çул та çывăрать»,— тетĕр-и? Хальччен асăрхаманччĕ-çке... Мĕскер?.. «Никам та асăрхасшăн мар»,— тетĕр-и? Тен, ку вăл летаргиллĕ ыйăх пуль? Мĕскер?.. «Кахалсен ыйхи»,— тетĕр-и? Мĕскер?.. Ара халь пирĕн мĕн тăвас пулать? Але!.. Але!.. Васкавлă пулăшу!.. Ых, хăямат, çак çыхăну та путлĕ ĕçлемест!

Шаплаттарса хунипе телефон кĕпчекĕ катăлсах кайрĕ.

— Пĕтрĕ!— терĕ те Регина юлташĕсем çине пăхрĕ:— Илтрĕр-и, темиçе çул та çывăрать терĕç. Мĕнле вăратмаллине каламарĕç. Мĕнле вăратмалла-ши, Хветуç? Хветуç Петĕр çине пăхса илчĕ те:

— Мĕнле вăратмалла-ши, Петĕр?— тесе хучĕ.

Петĕр Микуль çине тинкерчĕ.

— Мĕнле вăратмалла-ши, Микуль?— терĕ хăй тĕллĕн.

Микуль те аптрарĕ.

— Носов,— терĕ вăл. — Мĕнле вăратмалла-ши?

Носовĕ Регина еннелле çавăрăнчĕ:

— Мĕнле вăратмалла-ши?— ыйтрĕ вăл. — Шутла-ха, Регина, эсĕ хулара вĕреннĕ çын...

Регина вара алăк патнелле утрĕ.

— Пулăшăр!— терĕ вăл, çак самантра алăкран такам килсе кĕрес пек.

Сасартăк çак самантра, чăнах та, алăк сарлакан уçăлса кайрĕ те, пӳлĕме темле тĕркесем, чăматансемпе рюкзаксем йăтнă Йăкăнат килсе кĕчĕ.

— Мĕншĕн пулăшас мар, тангенс-котангенс, уписательнă пулăшатпăр,— терĕ вăл хулăн саслăн, пӳлĕме чĕтретсе. — Сывлăх пултăр тарласа ĕçлекенсене. Мĕнпе пулăшмаллаччĕ-ха сире?

...Каçар-ха эс мана, ырă кăмăллă, пысăк чăтăмлă, хисеплĕ вулаканăм, çак тĕлте эпĕ сана Йăкăнат камне тата вăл мĕнлерех çын иккенне кăштах та пулин каласа кăтартам.

Тем те пулать мар-и пурăнан пурнăçра, алăри пӳрнесем те тан мар теççĕ те, çак Йăкăнат та пирĕн шутсăр хăйне евĕрлĕ çын пулса çуралнă, ыттисен калăпне ним парсан та кĕрсе ӳкме васкаман. Пур ĕçе те хăй пĕлнĕ пек, хăйне евĕрлĕ тума юратнă. Шкулта вĕреннĕ чух учительсене мĕн чухлĕ тарăхтарман пулĕ вăл хăйĕн чăрсăр та тӳрккес кăмăлĕпе? Калăпăр, математикăпа вĕрентекен ăна пĕр-пĕр задача шутлама хушать, мĕнле шутламаллине ăнлантарать, меслечĕсене те уçса парать — çук вĕт, пач урăхла çавăрать хурать «Шĕшлĕвăрринчи Лобачевский» çав задачăна. Хăй пĕлнĕ пек, хăйĕн меслечĕсемпе тупать унăн тупсăмне. Шкул пĕтерсен те, ялти пĕтĕм халăха тĕлĕнтерсе, института шик! шăхăрса кĕрсе кайсан та, унти кукша çамкаллă, пысăк куçлăхлă проферссорсене чылай чĕмсĕр тунă, тет, вăл хăйĕн çивĕч ăспуçĕпе. Диплом илме вăхăт çитсен вара çав Йăкăната институтрах юлма та нумай ӳкĕтленĕ, тет, анчах вăл ăс-хакăл вучахĕнче юлма ним парсан та килĕшмен пулать, пĕр тăхтамасăр-тумасăр хăй çуралнă Шĕшлĕвăррине вашлаттарать.

Халĕ ĕнтĕ çак колхозра Йăкăнат çĕнĕ çын пулин, унта вăл темиçе уйăх çеç ĕçлени вулаканшăн та тепĕр хут каламасăрах паллă.

Шăпах çак Йăкăнат килсе кĕчĕ те ĕнтĕ пуçлăх пӳлĕмне.

— Мĕнпе пулăшмаллаччĕ-ха сире?— ыйтрĕ вăл тепĕр хут.

— Инкек пирĕн, Йăкăнат,— чутах макăрса ямарĕ Регина.

— Мĕнле инкек тата, тангенс-котангенс?— ăнланаймарĕ Йăкăнат.

— Акă, пуçлăх çывăрса кайрĕ. Вăранаймасть,— пĕлтерчĕ Регина. — Пульницана шăнкăравлярăмăр. Ан пăшăр-

ханăр, вăл ĕнтĕ темиçе çул та çывăрать терĕç. Мĕнле сыватмаллине вара каласа ĕлкĕреймерĕç. Мĕн тумалла, Йăкăнат?

— Мĕн тумалла?— терĕç пурте пĕр харăс.

Тĕлĕнмелле мар-и-ха: Йăкăнат, çакна илтсен, нимĕн чухлĕ те тĕлĕнмерĕ, юлташĕсем пек вĕчĕрхенмерĕ. Пачах урăхла — хăйĕн тантăшĕсене итлесе пĕтерчĕ те вăл, питĕ лăпкăн, шутсăр лăпкăн темелле, лах-лăх-лăх кулса ячĕ. Унтан çапла каларĕ:

— Иван Иванч çывăрнине тахçанах эпĕ сиснĕ те, туйнă та, курнă та. Сирĕн те тахçанах туймалла пулнă, тангенс-котангенс. Çапах та,— терĕ вăл тепĕртакран,— хулара пулса, эпĕ вăхăта ахаль ирттермерĕм, этем ыйтăвĕсене тĕпчекен наукăпа халăх медицини академине шыраса тупрăм, тангенс-котангенс, унта Иван Иванчăн хăрушă чирĕ пирки каласа патăм. «Мĕнех, ку чиртен сыватма пулать те пуль, кун пек чирпе чирлекенсем çĕршывĕпе сахаллăн мар та, ку проблемăпа эпир чылай ĕçлерĕмĕр,— терĕç мана.— Акă, пирĕн проект та пур, анчах ăна ял условийĕсенче тĕрĕслесе пăхман-ха эпир. Хăюлăх çитеретĕр пулсан, хăтланса пăхăр»,— терĕç.

Йăкăнат вара пĕр тĕркеме салатрĕ те, «акă çав проект, тангенс-котангенс» тесе, ăна юлташĕсене кăтартрĕ.

— Т-и-ип му-ун-ча-а...— вуларĕç пурте пĕр харăс. Тĕлĕннипе, çăварĕсене карса пăрахсах, пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç.

— Кăсăк япала,— терĕ Регина.

— Ытла кăсăк япала,— хушса хучĕ Носов.

— Ытла та шутсăр кăсăк япала,— сас пачĕ Хветуç.

— Калама çук шутсăр кăсăк япала,—ĕнсине хыçса илчĕ Петĕр.

— Этем курман-илтмен калама çук шутсăр кăсăк япала,— юлташĕсен шухăшне пĕтĕмлетрĕ Микуль.

— Акă тата инструкцийĕ. Тип мунча вăл Иван Иванча кăна мар, тĕрĕс çултан пăраннă кашни çынна, кашни кахала, хăйшĕн çеç çунакана, кашни йĕксĕке — пĕр сăмахпа, пурне те сыватать,— ăнлантарчĕ Йăкăнат.

— Ман хамăн ун пек-кун пек чир çуккă вара,— тесе хучĕ Микуль, кăшт мухтанарах.

— Э-э, тăванăм, кăна эс ахалех,— тавăрчĕ Йăкăнат.— Тип мунчан диагностика пӳлĕмĕнче унта ху пĕлеймен чирсене те самантрах шыраса тупаççĕ. Кибернетика вăл шӳтлеме юратмасть. Хам та кĕрсе пăхрăм çав пӳлĕме — манăн та чир тупăнчĕ, авă. Вăт çапла, ачасем.

— Эсӗ те чирлӗ-и, Йӑкӑнат?— темме-ҫке тӳрех хыпӑнса ӳкрӗ Регина.

— Чирлӗ ҫав, анчах унран пӗччен сывалма май ҫук терӗ мана аслӑ эпи карчӑк,— хуравларӗ Йӑкӑнат.

— Мӗнле карчӑк?— ӑнланаймарӗ Хветуҫ. — Эс юмӑҫра пулнӑ-им? Хӑвна коммунист тетӗн тата.

— Мӗн карчӑкӗ пултӑр,— каллех лӑпкӑн калаҫрӗ Йӑкӑнат,— аппаратурин ячӗ ҫавӑн пек.

— Тӗлӗнмелле,— терӗҫ каллех пӗр харӑс.

— Кала-ха, Йӑкӑнат,— ыйтрӗ вара чӑтма ҫук кӑсӑкланса кайнӑ Хветуҫ,— тата миҫе эпи карчӑк ӗҫлет унта, ҫав кибернетикӑпа ӗҫлекен тип мунчара?

— Тата тепре кӑна,— ӑнлантарчӗ Йӑкӑнат. — Пӗри— асли, диагноз лартать, тепри чирлӗ ҫынна сыватмалли пӳлӗмсене кӗртсе питӗрсе илет те ятарласа тунӑ пульт умӗнче процедура мӗнле иртнине сӑнаса тӑрать.

— Ҫӑрапах питӗрет-и?— пӗлесшӗн пулчӗ сехӗрленсе ӳкнӗ Микуль.

— Автоматика, тангенс-котангенс,— терӗ Йӑкӑнат. — Алӑк пӗрре питӗрӗнсе ларать те, ҫын сывалса ҫитмесӗр те уҫӑлмасть.

— Процедура текенни мӗнлерех иртет тата?— калаҫӑва хутшӑнчӗ Петӗр механизатор та.

Ҫак вӑхӑтра — ӑна пурне те куракан Йӑкӑнат кӑна асӑрхаса юлчӗ-ха — харӑлтатса ҫывӑракан Иван Иванч хӑрах куҫне пысӑккӑн уҫса пӑхрӗ те каллех хупса хучӗ.

— Процедура текенни вӑл, тӑванӑм, кашни ҫыншӑн расна,— тӗплӗн шухӑшласа каларӗ Йӑкӑнат. Унтан хӑй сӑмахне малалла тӑсрӗ: — Пӑхӑр-ха эсир проект ҫине. Унта тӗрлӗ кабинетсем тума палӑртнӑ. Ак ҫак, сулахайри, сӑмахран, вӗлтренпе ӑшаламалли кабинет, унпа юнашар— талпиҫен ҫине лартмалли, акӑ — йӗплӗ ҫӑмах кабинечӗ, ак ҫак, сылтӑмри, кирлӗ ҫӗртен пӑрӑҫ сапмалли, чи юлашки вара — капкӑна хӗстермелли кабинет. Вӑт ҫапла, тангенс-котангенс...

Каллех сисрӗ Йӑкӑнат: хӑйӗн ҫак сӑмахӗсем хыҫҫӑн ун умӗнче тӗлӗрсе ларакан Иван Иванч пӗтӗм кӗлеткипе туртӑнчӗ те тӑр-тӑр чӗтресе илчӗ.

— Иван Иванча ыйхӑран вӑратас тесен, ӑна хӑш пӳлӗмӗнче сыватмалла пулать-ши вара?— тесе ыйтрӗ Носов, пуҫлӑха пӗтӗм чунтанах пулӑшма тӑрӑшнине палӑртса.

— Ӑна аслӑ эпи карчӑк ҫеҫ татса парать,— хуравларӗ Йӑкӑнат.— Анчах, ман шутпала, унӑн чирӗ питӗ вӑраха кайнипе, ӑна кашни кабинетрах сыватмалла. Пӗлетӗп, ҫав эмелсене тӳссе ирттерме шутсӑр йывӑр пулать пирӗн

пуçлăха, анчах... хăй айăплă-çке-ха, тангенс-котангенс...

Çак сăмахсем хыççăн хăрăлтатса сывăракан Иван Иванч тепĕр куçне уçса пăхрĕ те кĕтмен çĕртенех иклетме пуçларĕ.

— Кăна мĕн пулчĕ тата?— тавçăрма тăрăшрĕ Микуль.

— Чи тĕлĕнмелли акă мĕн,— хăйĕн сăмахне малаллах тăсрĕ Йăкăнат. — Диагностика пӳлĕмĕнчи кибернетика аппаратури кашни çыннăн тĕп-тĕрĕс характеристикине перфолентăсем çине çырса хурать те, çавна вăл пĕр пытармасăр кирек хăçан та, кирек кама та каласа пама пултарать.

— Ай, тур-тур, ку тата хăрушăрах-çке,— хăй те сиссесĕр каласа хучĕ Микуль.

— Хăрушă пулмасăр,— терĕ Йăкăнат ним пулман пек.— Акă, хулари çав тип мунчана пĕр ушкăн çын пырса кĕчĕ. Эпĕ çавăн чух хĕрĕх çулалла çывхаракан пĕр мăшăра уйрăмах асăрхаса юлтăм. Илтнĕ те пуль-ха эсир, хулара унта хусах çынсене пĕр-пĕринпе паллаштаракан бюро ĕçлет-çке. Шăп çав бюро сĕннипе пынă-мĕн шукăль шлепкеллĕ шыçмак арçынпа балерина евĕрлĕ хӳхĕм хĕрарăм тип мунчана. Аслă эпи карчăк вĕсене тӳрех аппаратура умне илсе пычĕ. Малтан арçынна тăратрĕç. Темле йăлтăр-ялтăр çутăсем чăлтлатса илчĕç те çӳле вырнаçтарнă экран тăрăх куçакан саспаллисем чупса кайрĕç: «Кукуков Тюркасан Ханттарович, çав-çав султа, çав-çав районта çуралнă, йывăрăшĕ, çӳллĕшĕ çавăн чухлĕ,— каçарăр та, адресне-мĕнне, цифрине-числине астуса юлаймарăм эпĕ,— çав-çав çулта çав-çав гражданкăпа ача çуратнă, ачине хăй çине çыртармасăр алиментран тарса çӳрекен намăссăр çын...» Чалт! çутăлтарса ячĕ балерина евĕрлĕ хӳхĕм хĕрарăм çак шыçмака, тангенс-котангенс...

— Çав кирлĕ ăна!— терĕ Хветуç.

— Унтан, унтан тата мĕн пулчĕ?— ыйтрĕ Йăкăнат сăмахĕпе авăрланса кайнă Носов.

— Унтан вара тепĕр çынна кĕртрĕç,—аса илнĕ пек, çамкине пĕркелерĕ Йăкăнат. — Çыравçă пулчĕ пулас, мĕншĕн тесен вулакан çавăтса пычĕ ăна. Каллех куçакан саспаллисем шуса тухрĕç. Туршăн та, хушаматне астăваймастăп, калама çук ĕрчесе кайрĕ те çыракансен шучĕ, анчах уn пирки тухса тăнă сăмахсем шалт тĕлĕнтерсе пăрахрĕç мана. «Халăх юмахĕ-халапĕсене, юрри-такмакĕсене хăйĕн тесе пичетлекен плагиатор»,— тесе хак пачĕ çавскере кибернетика аппарачĕ. Вăт пыр та ĕнен çавăн хыççăн хăшпĕр çыравçăсене, тангенс-котангенс!

— Ай-юй, ун пекки те пулать-и?— тĕлĕнчĕ Петĕр механизатор.

— Ҫайран,— терӗ Йӑкӑнат, хӑйӗн калаҫӑвӗпе хавхаланса кайса,— ҫайран, тепӗр икӗ кунтан, каллех кайса пӑхрӑм та унта аппарат ҫинчи «К» саспалли ҫине пусрӑм. Ҫав саспаллипе пуҫланакан пиншер хушамат вылянса туха пуҫларӗ экран ҫине. Список хайхи «Кукуков» патне ҫитрӗ те, эпӗ чаркӑч ҫине пусрӑм. Экран ҫине ҫав сӑмахсемех сиксе тухрӗҫ: «Кукуков Тюркаҫан Ханттарович... ҫав-ҫав гражданкӑпа ача ҫуратнӑ... алиментран тарса ҫӳрекен намӑссӑр ҫын...» Ав мӗнле унта, ӗмӗрлӗхех ҫырӑнса юлать...

Ҫав вӑхӑтра икletсе сывӑракан Иван Иванч, йӑпӑр-япӑр хусканусем туса, пуҫне пиншак ҫухави ӑшнелле пытара пуҫларӗ.

— Ах, чӑнах та тӗлӗнмелле-ҫке!—те Йӑкӑнат сӑмахӗнчен, те Иван Иванч хӑтланӑвӗнчен шак! хытса кайса, хаш! сывласа ячӗҫ пурте пӗр харӑс.

— Ну, унтан вара милици тумӗ тӑхӑннӑ пӗр ҫамрӑк ҫын ҫак аппарат умне шурӑ мӑйӑх ӳстерсе янӑ шутсӑр интеллигентлӑ ҫынна ҫавӑтса пычӗ. Вулатпӑр экран ҫинче: «Кӗҫҫепиттов Аксиом Теоремович, доцент... экзаменра манипуляци туса, ҫав-ҫав абитуриент ашшӗнчен ҫичҫӗр тенкӗ укҫа сӑптӑрса илнӗ». Вӑт епле, тангенс-котангенс, ученӑйсем те шик! шӑхӑрса пурӑнаҫшӑн, э!— хӑйӗн сӑмахне питӗ тарӑхса вӗҫлерӗ Йӑкӑнат.

Иван Иванч пуҫӗ вара пиншак ҫухави ӑшне кӗрсех-кӗрсех пычӗ те тепӗр самантран курӑнмиех пулчӗ.

— Эсӗ, Йӑкӑнат, ҫав тип мунчан проекчӗпе инструкцине кӑна илсе килтӗн-и-ха халлӗхе?—пӗлесшӗн пулчӗ Регина.

— Курмастӑр-им рюкзаксемпе чӑматансене?— лӑпкӑн хуравларӗ Йӑкӑнат. — Кибернетика вӑл нумай вырӑн йышӑнмасть. Вӗлтренне-пиҫенне, пӑрӑҫне-капкӑнне вара кунтах тупса хатӗрлӗпӗр эпир. Вӑраха ямастпӑр. Акӑ сирӗнпе, ҫапна тавӑрса, кӗрхи ӗҫсене вӗҫлетпӗр те... Халӗ ӗнтӗ, тенгенс-котангенс, хӗрсе ӗҫлеме Иван Иванч та чӑрмантараймӗ пире. Ҫывӑртӑр... Сыватитпӑр. Ох, сыватитпӑр!

Пӗр чӑматанӗнчен пӗчӗк магнитофон туртса кӑларчӗ Йӑкӑнат, ӑна тапратса ячӗ те, пӳлӗм илемлӗ юрӑпа тулса ларчӗ:

Ҫамрӑк йыш ӗҫе тухсассӑн,
Тинӗс пек хумханӗ хир,
Вӑйӑн-шӑйӑн ӗҫлемешкӗн
Тӳрӗ-пилӗк мар эпир.
Ой-ой! А-ля-ля!
Тинӗс пек хумханӗ хир,
Вӑйӑн-шӑйӑн ӗҫлемешкӗн

Тӳрĕ пилĕк мар эпир.
Ҫамрăк йыш тĕллев тытсассăн,
Хула тăвăпăр яла.
Пурнăç пулĕ пит хаваслă
Кашни çын ăмсанмалла.
Ой-ей! А-ля-ля!
Хула тăвăпăр яла,
Пурнăç пулĕ пит хаваслă
Кашни çын ăмсанмалла...

— Ну, мĕн пăхса тăратпăр-ха эппин?—терĕ йыхравлăн Регина. — Атьăр çанна тавăрса ĕçлеме! Сывă пултăр çĕкленӳ!

— Сывă пултăр аслă çĕкленӳ!— Регина сăмахне кăштах тӳрлетрĕ Носов.

— Сывă пултăр этем курман-илтмен шутсăр аслă çĕкленӳ!— пуриншĕн те каласа хучĕ Микуль. Унтан пĕрре Йăкăнат çине, тепре унăн рюкзакĕсемпе чăматанĕсем çине шиклĕн пăхса илчĕ те çапла хушса хучĕ: — Эпĕ те хăмла татма каятăп, Йăкăнат.

— Тĕрĕс тăватăн, Микуль — тавăрчĕ Йăкăнат. — Кибернетика аппарачĕ вăл тӳрĕ кăмăлпа ĕçлекен çынна чи лайăх характеристика парать, унччен тунă пысăк мар йăнăшсене те каçарать. Ну, мĕнех, тантăшăмсем,васкăр эппин ĕçе, унта пирĕн шефсем, рабочисемпе студентсем, ĕçле-ĕçле те ывăнчĕç пулĕ ĕнтĕ. Манпа пĕрлех килчĕç вĕсем. Юлашки пултăр хуларан пулăшу ыйтасси. Малашне эпир хамăр вăйпах йӳнеçтерĕпĕр.

Ҫак самантра юнашар пӳлĕмрен Дуняшăпа Маша тата счетовод килсе кĕчĕç.

— Эпир,— терĕ счетовод Йăкăната,— пĕр тăхтаса тăмасăр колхоз уйне çĕрулми кăларма тухса каясшăн. Ҫитет пире суя цифрăсем çырса ларса.

— Тĕрĕс тăватăр,— терĕ вĕсене Йăкăнат. — Халĕ, хĕвел хĕртсе пăхпă чух, пĕтĕм халăх уй-хирте пулмалла. Ку тип мунчана вара кĕрхи ĕçсем хыççăн хута ярăпăр эпир. Кашниех тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесен, тен, вăл кирлĕ те пулмĕ-ха пире.. Ну, юлташсем, ăнăçу сунатăп сире. Эпĕ те кĕçех çитетĕп уя.

— Малалла! Атакăна!— кăшкăрса ячĕ Микуль. Хăй вара çавăнтах хуткупăсне туртса ячĕ те тахçанхи юрра пуçларĕ:

Комсомолецсем хăюллă,
Комсомолецсем маттур...

Ун хыççăн пĕтĕм ушкăн тухса кайрĕ председатель пӳлĕмĕнчен.

Сĕтел айне кĕрсе кайса, пач курăнми пулнă Иван Иванча шутламасан, Йăкăнат çак пӳлĕмре пĕр-пĕчченех тăрса юлчĕ темелле. Ассăн сывласа, кăштах шухăша кайса, йăл кулса илчĕ вăл, унтан хăйĕн пĕр чăматанне уçрĕ те тĕрлĕ хутсем турта-турта кăларчĕ.

— Та-ак,— мăкăртатрĕ хăй,— ку акă, ĕç коллективĕсем çинчен, ку — дисциплинăна çирĕплетесси çинчен, ку — агропромышленность комплексĕсем пирки... Ку тата — шкул реформи, ачасене ĕç воспитанийĕ парасси çинчен... Ку тата — юлашки указ — ĕçкĕпе иртĕхнине пĕтересси çинчен... Вĕсене чи курăнмалли вырăна çакса хурам-ха... Ничего-о, пулать йĕрке, пулать, ох, пулать, тангенс-котангенс!..

Ун хыçăн вăл председателĕн пушă кресли патне пычĕ те, шĕвĕр пӳрнипе шаккаса, çапла каларĕ:

— Ку хутсем сана та нумай çывăратмĕç-ха, тăванăм. Пĕлсех тăратăп, вăранмаллах пулать санăн тутлă ыйхăран. Çапларах самана килсе тухрĕ ку чухне. Вăранмаллах пулать!

Шăп та лăп çак самантра сĕтел айĕнчен чăтма çук сехĕрленсе ӳкнĕ Иван Иванч кăлтăрмач пек сирпĕнсе тухрĕ.

— Йăкăнат!— терĕ вăл хашка-хашка. — Йăкăнат! Йăкăнат Тимофейчă! Ылтăнăм! Вăхăтсăрах пĕтме ан пар мана, тархасшăн! Çын кулли ан тăвах! Эпĕ... мĕн-ха... манăн алăсем... çăпата та туса курнă, вăрман та каснă... Эпĕ мĕн... пĕр ĕçе те манса кайман... Ан ярах эсĕ мана... çав... тип мунчана... Çав... пĕтеретика аппарачĕ умне ан тăратах... Эпĕ... шантарсах калатăп... саççимех пĕтнĕ çын мар... Пура пурама та... Хăмла татма та... тислĕк тасатма та пултаратăп... Эпĕ... вăрçă вăхăтĕнче те, вăрçă пĕтсен те колхозри чи йывăр ĕçсенче пулнă...

— Мĕншĕн час манса кайрăн-ха çавна?— ыйтрĕ Йăкăнат.

— Ара, çăтмахри пек пурăнса, тир хулăнланать пулинех,— тавăрчĕ пуçлăх. — Ан пĕтерех мана... Эпĕ саншăн... ют çын пулман... Ан тăратах мана... çакăн умне,— Йăкăнат илсе килнĕ рюкзаксемпе чăматансем çине тĕллесе кăтартрĕ вăл.

— Мĕн эсĕ, председатель юлташ?— Иван Иванч хăтланăвĕнчен тĕлĕннĕ пек пулчĕ Йăкăнат. — Мĕнле тип мунча, мĕнле аппарат?

— Эс мана улталаймăн, Йăкăнат Тимофейчă, ман хăлха та шăтăк. Эсĕ каланă кашни сăмаха илтсе лартăм эпĕ.

Турă пул, тархасшăн, ан пĕтерех мана!..—тепĕр хут тилмĕрсе тархасларĕ Иван Иванч.

— Çапах та çак постановленисем, Иван Иванч, ача вăййи мар. Вĕсене-пурнăçламах тивет пирĕн,— терĕ Йăкăнат çирĕппĕн.

— Тăватпăр! Тултаратпăр! Пурнăçлатпăр!— тавăрчĕ Иван Иванч хăнăхнă йăлапа. — Анчах... Йăкăнат Тимофейчă, ылтăнăм, ан ярах эсĕ мана леш... тип мунчана... Çын кулли ан тăвах!.. Хамăн çылăхсене паянах каçарттарма хатĕр эпĕ. Халех... çĕрулми кăларма тухса каятăп. Икĕ норма паратăп!.. Ан ярах мана тип мунчана!.. Мĕн туса тăратăп-ха? Эпĕ халех... халех каятăп çĕрулми уйне... Эх, питĕ шел телефон аппарачĕсене... Шăнкăр та шăнкăр, шăнкăр та шăнкăр тăвĕç... Мĕн курĕç мансăр?.. Ҫайрăм эпĕ, Йăкăнат Тимофейчă! Хам ирĕкпе кайрăм, çавна шута илме ыйтатăп...

...Çиçĕм хăвăртлăхĕпе саланчĕ Шĕшлĕвăрри ялĕ тăрăх тип мунча хыпарĕ. Урамран урама, килтен киле, çынран çынна çитсе, пурне те ура çине çĕклерĕ вăл, кашни утакан-утайманăн аллине ĕç хатĕрĕ тыттарса, такам темле вăрттăн тревога панă пек, пĕрлешӳллĕ ĕçе васкатрĕ. Çак самантра Шитă-Крытă бригадир меллĕн усă курма шутларĕ. Халăх кĕпĕрленсех уя утнине курсан, вăл пĕр тăхтамасăр колхоз правленине чупрĕ.

— Йăкăнат Тимофейчă,— терĕ вара пӳлĕме килсе кĕнĕ-кĕменех. — Халăх, пĕр çын пек пулса, ĕçе тытăнчĕ. Вăхăтрах вĕçлетпĕр кĕрхи ĕçсене. Йăлтах шитă-крытă пулать. Ах, хашкарăм юлташ колхозниксене ура çине çĕклесе! Мĕнши... çав тип мунча аппарачĕ... çавна шута илет-ши?

— Чăнах тăрăшатăн пулсан, шута илет,— хуравларĕ Йăкăнат. — Ячĕшĕн çеç пулсан вара...

— Çук, çук, ячĕшĕн мар,— тӳрех хăрах куçĕ вылянма пуçланине ниепле те чараймарĕ Шитă-крытă. — Ячĕшĕн мар. Эп вĕçтертĕм, Йăкăнат Тимофейчă! Çĕрлеччен ĕçлетпĕр. Икĕ норма паратпăр! Йăлтах шитă-крытă пулать!— Унтан васкасах чупса тухса кайрĕ.

Вăхăт нумай та иртмерĕ, правлени çуртне колхозри хуçалăх заведующийĕ Савали килсе кĕчĕ.

— Петĕр тракторне хута ятăмăр, Йăкăнат Тимофейчă,— терĕ вăл, хăйне мухтасса кĕтсе. — Ара, шыракан тупать, теççĕ-çке. Хамăрăн складранах чакаласа кăлартăмăр запас пайне. Пĕрре кăна та мар, вуннă таранах! Пĕр шутласан, ахальтен пыл кӳптернĕ-и эпир çав «Сельхозтехника» çыннине. Сăмах май, Йăкăнат Тимофейчă, каллех пирĕн колхоза персе çитрĕ-ха çав çын. Пылне пĕтĕмпех каялла ил-

се килнӗ. Вӑл та тип мунча ҫинчен илтнӗ иккен. Взяткана ҫиеймех тавӑрса панине шута илме ыйтать вӑл. Унтан тата... Йӑкӑнат Тимофейчӑ... ватӑлтӑм эпӗ, тахҫанах пенси ҫулне ҫитнӗ.... Пӗр-пӗр ҫамрӑка памалла мар-ши тетӗп хамӑн ӗҫе...

— Ҫавӑн пек ятлӑ-сумлӑ ӗҫе пӑрахасшӑн-и?— ыйтрӗ Йӑкӑнат, пуҫне пӑркаласа.

— Ахӑ ҫав, пӑрахасшӑн,— терӗ лешӗ, кӗххӗм-кӗххӗм ӳсӗрсе. — Куратӑн-и, пӑштик-пӑштик сывлакан пултӑм. Тӗрӗссипе, тахҫанах тивӗҫлӗ канӑва каймалла пулнӑ манӑн.

— Кхӑм,— терӗ вара Йӑкӑнат та. — Куна эс тӗрӗсех тӑватӑн пулмалла. Кашни ватӑ ҫын хӑй ватӑлнине вӑхӑтра сиссен, тем пекех лайӑх пулнӑ пулӗччӗ, тангенс-котангенс...

— Ҫапах та эп паян тракторсем ӗҫленӗ ҫӗрех каятӑп. Унта ман вырӑн. Ух, пашкарӑм! Тип мунчана лекес марччӗ, тупата!— терӗ те вӑл алӑкран пӑрӑҫ сапнӑ пек тухса вӗҫтерчӗ.

Йӑкӑнат хӑй пуканӗ ҫине ларма та ӗлкӗрейменччӗ, алӑкран каллех шаккарӗҫ.

— Юрать-и кӗме, Йӑкӑнат Тимофейчӑ!—янраса кайрӗ Утамановӑн ҫӗр кисретекен сасси. Ҫак самантра пӳлӗмри кантӑксем те тӑр-тӑр-р! чӗтресе илчӗҫ.

Йӑкӑнат пуҫне ҫӗклерӗ. Ун умӗнче пӗр ҫамрӑк ҫынна ҫухавинчен ҫатӑрласа тытнӑ пушарни начальникӗ тӑрать.

— Итлетӗп,— терӗ Йӑкӑнат.

— Эх, Йӑкӑнат Тимофейчӑ,— темшӗн ҫунатланса кайрӗ Утаманов. — Аса кӗртрӗм-ха паян ҫак ханттара. Ара, мӗн тери хӗрӳ вӑхӑтра, магнитофон йӑтса, ял тӑрӑх сулланса, туй юррисем ҫырса ҫӳремелле-и чӑн-чӑн арҫыннӑн! Капла вӗт тип мунчана лекесси ним те мар. Акӑ вӑл хӑй те ҫавна питӗ лайӑх ӑнланчӗ-ха. Шанмастӑр пулсан, унпа хӑйӗнпе калаҫса пӑхӑр, Йӑкӑнат Тимофейчӑ. Эпӗ вара ӗҫе васкам. Эх, мӗнле хитре кун тӑрать паян! Кашни ҫеккунчӗ хаклӑ!

— Чӑнах ӑнлантӑр-и?— ыйтрӗ Йӑкӑнат Дон Кихот пекрех тӗпчевҫӗрен унӑн ашшӗ васкасах тухса кайнӑ хыҫҫӑн.

— Анлапасса ӑнлантӑм-ха эп,— терӗ тӗпчевҫӗ. — Анчах, ман шутпа, ялти ҫак идиллие напрасно пӑсас тетӗр эсир.

— Мӗншӗн апла?— ӑнланаймарӗ Йӑкӑнат.

— Мӗншӗн? Хӑм, ҫапла, тен, ҫав,— кирлӗ йӗр ҫине тӳрех ниепле те ӳкеймерӗ тӗпчевҫӗ. — Ну, калӑпӑр, писательсенех илӗпӗр. Ялсем имшерленсе пыни, унти йӑлайӗркесем манӑҫа тухни ҫинчен куҫҫуль кӑларса ҫыракансем мӗн чухлӗ пулнине пӗлетӗр-и эсир? Ҫавсен ҫӑкӑрне туртса илетӗр-ҫке. Эпир те, тӗпчевҫӗсем, ҫавӑн пек

произведенисене тишкерме пит лайăх хăнăхса çитнĕччĕ. Мĕн хăтланатăр эсир? Мĕншĕн хĕрхенместĕр пире?

— Тата мĕн тĕпченĕ эсир?— пĕлесшĕн пулчĕ Йăкăнат.

— Литература вăл сложнăй япала,— тавăрчĕ тĕпчевçĕ. — Акă тата тепĕр злободневнăй проблема: мĕншĕн-ха чăваш писателĕсем Шукшин пек те Айтматов пек çырмасçĕ? Пĕр-иккĕшĕ Шукшин пек, пĕр-иккĕшĕ Айтматов пек çырсан, эпир тахçанах мировой аренăна тухмалла-çке-ха. Вăт, çак чăнлăха писательсен пуçне до мозга костей çапса кĕртсе лартсан тин эпĕ хамăн ĕмĕт пурнăçланнă тесе шутлană пулăттăм.

— Чăваш писателĕсене эсир тем пулсан та Шукшинпа Айтматов пек çыртарасшăн ĕнтĕ,— тĕпчевçĕн тарăн шухăшне тавçăрма тăрăшрĕ Йăкăнат.

— Рациональнăй меслет пире çав çулпа çеç пыма хушать,— татăклăн хуравларĕ лешĕ.

— Усă сывлăш сывласа пăхас килмест-и?— ыйтрĕ Йăкăнат тепĕртакран.

Тĕпчевçĕ çак сăмахсене илтмĕш пулчĕ.

— Калăр-ха,— хуравлас вырăнне хăй ыйтрĕ вăл Йăкăнатран. — Çав... тип мунча аппарачĕ... йĕркеллех ĕçлет-и сирĕн?

— Тĕрĕслесе пăхар-и? Пĕлер-и эсир камне?—пĕр тăхтамасăр каласа хучĕ Йăкăнат.

— Хăм, çапла тен çав,— пуçне хыçкаласа мăкăртатрĕ тĕпчевçĕ-Дон Кихот.—Хăмла татма каятăп эп. Да-а, колхоз столовăйĕнче апат çинĕччĕ. Акă пĕр тенкĕ хăваратăп... Шута илĕр... Вăхăтра тӳленĕ...

Тĕпчевçĕ-Дон-Кихот тухса кайрĕ çеç, ырханкка художник килсе кĕчĕ Йăкăнат ларакан пӳлĕме.

— Импрессио! Импрессио!— терĕ вăл, майăхне сиркелесе. — До свиданья, депрессио! Вăт, ăнланатăп та вара эп сире, Игнатио Тимофейч! Эпĕ художник, эпĕ — ирĕклĕ художник. Сирĕн колхозри çак тапрану шутсăр килĕшет мана, Игнатио Тимофейч! Эпĕ кунтах юлма шутларăм. Яланлăхах! Илĕр мана хăвăр колхоза. Эпир кунта художество шкулĕ уçăпăр. Эпир кунта çамрăк художниксем ӳстерĕпĕр!

— Мĕнех,— терĕ Йăкăнат. — Шӳтлеместĕр пулсан...

Çак тĕлте, манăн хисеплĕ вулаканăм, мĕн каласси вĕçленчĕ тесе, юлашки пăнчă лартма та шутласа хунăччĕ эпĕ. Анчах пурнăç вăл пурнăçах-çке! Нумаях пулмасть тепре çитсе куртăм Шĕшлĕвăррине. «Ай-яй-яй, пурăнаççĕ те вара! Ял мар — чăн-чăн хула!»— терĕм хама хам. Чи малтанах çатма пек яп-яка асфальт çулсем тĕлĕнтерсе парах-

рĕç мана. Çурчĕсем çине пăхрăм та — шăкăрин эрешлесе пĕтерне курницасем. Ял варринчи Культура керменĕ те, унпа юнашар — художество шкулĕ те питĕ илемлĕ. «Савали пичче Ваççукĕ чăн-чăн художниксем вĕрентсе кăларать»,— мухтанмасăр чăтаймарĕç шĕшлĕвăррисем. Культура керменĕнче вара тахçанах эстрада ансамблĕ чаплă концертсем парать иккен, дискотекăсем ирттерет. Çакăншăн уйрăмах Малани хытă савăннă. Хăй вăл тахçанах ятлă-сумлă, орден илнĕ доярка пулса тăнă. Тĕрĕс ĕнтĕ, эпĕ пынă чухне ĕç вырăнĕнче пулаймарĕ вăл. «Ырă сăлтавпа килĕнче ларать-ха»,— терĕç ун пирки. Каярах пĕлтĕм вара: пĕлтĕр вăл Микуле качча тухнă иккен те, нумаях пулмасть ялти, ялти кăна та мар-ха, районти кăна та мар-ха, республикăри, çĕршыври халăха тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтерсе пăрахнă—тӳрех виçĕ ывăл çуратса панă Малани! Савăнипе телейлĕ ашшĕ черетсĕр-мĕнсĕр çийĕнчех «Жигули» автомобиль туяннă иккен. «Вăт,—тенĕ, тет, Микуле, ял çынисем,— «Жигуль» вăл тар тăкмасăр пулмасть». «Çапла çав,— килĕшнĕ, тет, лешĕ,— эпĕ ĕнтĕ халь тар тăкса ĕçленĕ« жигуллĕ» Микуль».

Малани ашшĕне — Иван Иванча та куртăм эпĕ çавăн чухне. Выльăх-чĕрлĕх комплексĕнче куралçăра ĕçлетчĕ унччензи пуçлăх. «Çав Эдик ывăлăма отличнике кăлартăм-кăлартăмах эпĕ,— терĕ вăл мана.— Пĕлетĕн-и, шкул программине букварьтен тытăнсах çĕнĕрен вĕренме пуçларăмăр унпа. Çав вĕренӳ Эдике çеç мар, хама та нумай пулăшрĕ. Халĕ ĕнтĕ эпĕ икке икĕ хут хутласан пиллĕк мĕнле пулнине те пĕлетĕп. Пуç чӳлмек мар иккен, ăна ĕçлеттерсех тăмалла». Шутсăр ăсланса кайнă пек туйăнчĕ мана Иван Иванч.

Юлашкинчен эпĕ çĕршывĕпех чапа тухнă председательпе — Игнатий Тимофеичпа калаçса пăхма шутларăм.

— Игнатий Тимофеич, тип мунча аппаратурине ĕçлеттерсе пăхрăр-и эсир çавăн чухне?— кăсăклантăм эпĕ.

— Çук,— терĕ вăл кĕскен. — Кирлĕ пулмарĕ. Унтан тата... сире уп çинчен калама та юрать, рюкзаксемпе чăматансенче манăн... спорт хатĕрĕсем çеç пулнă — кире пуканĕсем, тĕрлĕ мечĕксем, шашка-шахмат... Колхоз ĕçченĕсене тĕрлĕ енлĕн аталанмашкăн... Питĕ пулăшрĕç. Халĕ те пулăшаççĕ...

## ТУПМАЛЛИ

**Калавсем**

Арçури . . . . . . . . 3
Хуркайăк çулĕ . . . . . . . . 22
Вĕçет кăвакарчăн . . . . . . . 34
Виçĕ кĕмĕл укçа . . . . . . . . 45
Çураçнă хĕр . . . . . . . . 56
Айăплă-и эпĕ? . . . . . . . . . 75
Çул пуçламăшĕ . . . . . . . 89
Канăç çĕтнĕ каç . . . . . . . 93

**Повеçсем**

Пурăн, юрату! . . . . . . . . . 98
Пĕртен-пĕрре . . . . . . . 184
Тип мунча . . . . . . . . 215

---

**Порфирий Васильевич Афанасьев**

**ЖИВИ, ЛЮБОВЬ!**

*Повести и рассказы*

**На чувашском языке**

Редактор В. В. СИНИЧКИН
Художник Е. Е. МИХАЙЛОВА
Художественный редактор Э. М. ЮРЬЕВ
Технический редактор Г. С. САМСОНОВА
Корректор Р. К. КУПРИЯНОВА

ИБ 1659

Сдано в набор 16.01.85. Подписано в печать 18.07.85. НТ 35190. Формат 84×108¹/₃₂. Бумага типографская № 3. Гарнитура литературная. Печать высокая. Усл. печ. л. 13,44. Усл. кр.-отт. 13,61. Уч.-изд. л. 15,01. Тираж 10 000 экз. Заказ № 216. Изд. № 34. Цена 1 руб. 10 коп.

Чувашское книжное издательство, 428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Государственного комитета Чувашской АССР по делам издательств, полиграфии и книжной торговли, 428019, Чебоксары, Канашское, шоссе, 15.

1 т. 10 п.

ЧĂВАШ
КĔНЕКЕ
ИЗДАТЕЛЬСТВИ

Поэт, прозаик тата драматург Порфирий Афанасьев хăйĕн пĕрремĕш «Çарăмсан кĕввисем» кĕнекине Чăваш кĕнеке издательствинче 1975 çулта пичетлесе кăларнăччĕ. Унтанпа тата ултă кĕнеке çырчĕ вăл. 1982 çулта «Чун çути» кĕнекешĕн П. Афанасьев Чăваш комсомолĕн Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премине илме тивĕçлĕ пулчĕ.